бланк (-а) *сущ. муж.* бланк (*ĕç хучĕн ĕлки*); **запо́лнить бланк** бланка́ çырса́ хур

бледне́ть *глаг. несов.* шура́л, тĕссĕрле́н, шупка́л; **бледне́ть от стра́ха** хăранипе́ шуралса́ кай

бле́дный *прил.* (*кратк. ф.* бле́ден, бледна́, бле́дно; *множ.* бледны́ и бле́дны), **бле́дно** *нареч.* **1.** (*ант.* я́ркий, румя́ный) тĕ́ссĕр, сắнсăр, шупка́, шуранка́; **бле́дное лицо́** шуранка́ сăн-пит **2.** (*син.* невырази́тельный, сла́бый) шупка́, я́пăх; **бле́дный расска́з** я́пăх кала́в

блеск (-а) *сущ. муж.* **1.** (*син.* сия́ние) çу́тă, ялтăру́, ялкăшу́; йăлтăртатни́, çиçни́, ялкăшни́; **блеск мо́лнии** çи́çĕм çиçни́ **2.** (*син.* великоле́пие) чап, ăста́лăх, мухта́влăх; **арти́ст вы́ступил с бле́ском** арти́ст пи́тĕ ăста́ выля́рĕ

блесте́ть (*наст.* блещу́, блести́шь *и* бле́щешь; *прич. действ. наст.* бле́щущий *и* блестя́щий) *глаг. несов.* **1.** *чем и без доп.* (*син.* сия́ть, сверка́ть) йăлтăртат, çиç, ялкăш, çуталса́ тăр; **в небе бле́щут звёзды** тӳпере́ çăлтăрсе́м çиçе́ççĕ **2.** (*син.* отлича́ться, выделя́ться) палăрса́ тăр, тĕлĕнте́р; **де́вушка бле́щет красото́й** хĕр хắйĕн илемпе́ палăрса́ тăра́ть; **он не бле́щет умо́м** вăл пи́тĕ ăсла́х мар

блестя́щий *прил.* **1.** (*син.*сверка́ющий; *ант.* ту́склый) çу́тă, ялтăркка́, çи́çкĕн; **блестя́щий шёлк** ялтăркка́ пу́рçăн **2.** (*син.* великоле́пный, замеча́тельный), **блестя́ще** *нареч.* ча́плă, мухта́влă, пи́тĕ ла́йăх; **певе́ц вы́ступил блестя́ще** юра́çă пи́тĕ ча́плă юрла́рĕ

бле́ять *глаг. несов.* мекеклéт, мáкăр *(сурăх-качака çинчен)*; **ягня́та бле́ют** путексéм мекеклетéççĕ

ближа́йший *прил.* чи çы́вăх, çывăхри́, юнашáр, юнашарти́; **ближа́йшее отделе́ние свя́зи** çывăхри́ çыхăнý ýйрăмĕ; **в ближа́йшее вре́мя** часáх, çы́вăх вăхăтрáх

бли́зкий *прил.* (*кратк. ф.* -зок, -зкá, -зко; *множ.* -зки́ *и* -зки; *сравн. ст.* бли́же; *превосх. ст.* ближа́йший) **1.** (*син.* недалёкий; *ант.* да́льний, далёкий) çы́вăх, çывăхри́; инçé мар; **бли́зкий путь** инçé мар çул; **Подойди́те бли́же!** Çывăхарáх кúлĕр! **2.** (*син.* ско́рый) часáх, çы́вăх, часáх пулáс, çы́вăх вăхăтрú **3.** *по чему, в чем* (*син.* схóдный, похóжий; *ант.* отли́чный) çы́вăх, пĕрешкéл, пĕр пек, пĕр éвĕрлĕ; **бли́зкие взгля́ды** пĕрешкéл шухăшсéм ◆ **бли́зкий ро́дственник** тáчă тăвáн; **бли́зкие друзья́** çы́вăх туссéм

близнецы́ (-óв) *сущ. множ.; един.* **близне́ц** (-á) *муж.* йĕкĕрéш; **Пе́тя и Ка́тя — близнецы́** Петьăпá Кáтя — йĕкĕрешсéм

близору́кий *прил.* (*ант.* дальнозóркий), **близору́ко** *нареч.* çы́вăх кýçлă, çы́вăх куráн *(инçетрине япăх куракан)*

бли́нный *прил.* икéрчĕ -ĕ; **бли́нная мука́** икéрчĕ çăнăхĕ

блины́ (-óв) *сущ. множ.; един.* **блин** (-á) *муж.* икéрчĕ, çатмá икерчи́, пĕ´лĕм; **печь блины́** икéрчĕ пĕçéр ◆ **пе́рвый блин ко́мом** *посл.* çĕ´нĕ ĕç трукáх ăнмáсть

блок[1] (-а) *сущ. муж.* шăлтăрмá *(йывăр япаласем çĕклемелли хатĕр)*

блок[2] (-а) *сущ. муж.* **1.** (*син.* объединéние) пĕрлешý´ (*патшалăхсен, политика ушкăнĕсен*); **предвы́борный блок** суйлáв уменхи́ пĕрлешý´ **2.** блок (*пĕр йышши хатĕрсен пĕрлĕхĕ*); **блок цили́ндров мото́ра** мотóрăн цилúндр блóкĕ ◆ **дверно́й блок** áлăк кăшкáрĕ; **керами́ческий блок** шултрá киpпĕч

блокно́т (-а) *сущ. муж.* блокнóт; **записа́ть а́дрес в блокно́т** адресá блокнотá çырсá хур

блонди́н(-а) *сущ. муж.* (*ант.* брюнéт), **блонди́нка** (-и) *жен.* (*ант.* брюнéтка) сáрă çын, çутáм çын

блоха́ (-и́) *сущ. жен.; множ.* **бло́хи** (блох, бло́хам *и* блохáм) пăрçá; **уку́с блохи́** пăрçá çыртни́ ◆ **блоху́ подкова́ть** пăрçанá таканлá *(питĕ кăткăс ĕçе ăста туни çинчен)*

блу́зка (-и) *сущ. жен.* блу́зка (*çýхе кофта*)

блю́до (-а) *сущ. сред., множ.* **блю́да** (блюд, блю́дам) **1.** (*син.* тарéлка) чáшăк; **глубо́кое блю́до** тáрăн чáшăк **2.** (*син.* кýшанье) апáт, çимé; **пе́рвые блю́да** пĕррéмĕш çимесéм *(яшка тавраш ĕ)*; **вторы́е блю́да** úккĕмĕш çимесéм *(шаркку, пăтă, катлет тавраш ĕ)*; **тре́тьи блю́да** виççĕмĕш çимесéм *(чей, компот тавраш ĕ)*; **чува́шские национа́льные блю́да** чăвáш хáлăх апачĕсéм

бобы́ (-óв) *сущ. множ.; един.* **боб** (-á) *муж.* ни́мĕç пăрçи́; **стручки́ боба́** ни́мĕç пăрçи́ хутаççисéм

бобр (-á) *сущ. муж.* хă´нтăр (*шывра пурăнакан паха тирлĕ чĕр чун*); **до́мик бобра́** хă´нтăр йăви́

бобро́вый *прил.* хă´нтăр -ĕ; **бобро́вая плоти́на** хă´нтăр пĕви́; **бобро´вый воротни́к** хă´нтăр тир çухи́

Бог *и* **бог** (-а, *звательная форма* бóже) **1.** тýрă *(тĕн ĕненĕвĕнче)*; **языческие бóги** ыр-усăл тĕ´нĕн турриссéм; **ве́ра в бо́га** туррá ĕненни́ **2.** Тýрă *(христиан тĕнĕнче — тĕнчене тытса тăракан виçĕ сăпатлă хăват — атте Турă, ывăл Турă тата таса сывлăш Турă)* ◆ **Дай Бог!** Тýрă патăрáх!; **Бог в по́мощь!** Тýрă пýлăштăр! *(ĕçлекенсене ăнăçу сунса калани)*; **Бог зна́ет?** Тýрă пĕлéт-и?; **Не дай Бог!**

Ту́рă ан хуштăра́х!; **Ра́ди Бо́га!** Тарха́сшăн!; **Упаси́ Бог!** Ту́рă çырлахтăра́х! **Сла́ва Бо́гу!** Турра́ шĕ́кĕр!; **Бо́же мой!** *межд.* Ту́рăçăм!; **Бо́же упаси́!** Ту́рă сыхлатăра́х!

богате́ть *глаг. несов.* (*ант.* беднéть) пуй, пуянла́н; **одни́ богате́ют, други́е беднéют** пĕрисéм пуя́ççĕ, теприсéм çука́ юла́ççĕ

бога́тство (-а) *сущ. сред.* (*син.* изоби́лие; *ант.* бéдность) пуя́нлăх, илпéклĕх, мул, тупра́; **приро́дные бога́тства** çут çанта́лăк пуя́нлăхĕ; **жить в бога́тстве** пуя́н пу́рăн

бога́тый *прил.*, **бога́то** *нареч.* **1.** (*син.* зажи́точный; *ант.* бéдный, неиму́щий) пуя́н, пу́рлăхлă, му́ллă; **бога́тый челове́к** *пуян çын* **2.** (*син.* оби́льный; *ант.* ску́дный) ту́лăх, илпéк, ыт-лă-çи́тлĕ; **бога́тый урожа́й** илпéк тыр-пу́л; **вы́бор това́ров бога́т** тĕ́рлĕ тавáр ыт-лă-çи́тлĕ **3.** (*син.* роскóшный; *ант.* убóгий) ча́плă, ха́клă, паха́; **бога́тые наря́ды** ча́плă *тумти́р*

богаты́рский *прил.* улăпла́, хăвáтлă, тĕрéклĕ; **богаты́рское сложе́ние** улăпла́ ýт-пу́

богаты́рь (-я́) *сущ. муж.* у́лăп, па́ттăр; **ска́зочные богатыри́** юмахри́ паттăрсéм

боги́ня (-и) *сущ. жен.; множ.* **боги́ни** (-и́нь) хĕра́рăм ту́рă *(авалхи тĕнсенче)*

богома́терь (-и), **богоро́дица** (-ы) Ту́рă а́мăшĕ *(христиан тĕнĕнче Таса хĕр Мария — Иисус Христос амăшĕ)*

богослуже́ние (-я) *сущ. сред.* кĕ́лĕ, чиркӳ́ кĕллú; **соверша́ть богослуже́ние** кĕ́лĕ ту

бода́ть *глаг. несов.* тĕк, сĕк *(мăйракапа, пуçпа)*

бода́ться *глаг. несов.* тĕ́кĕш, сĕ́кĕш; **бара́ны бода́ются** такасéм тĕкĕшéççĕ

бо́дрый (*кратк. ф.* бодр, бодра́, бóдро; *множ.* бóдры и бодры́) *прил.* (*син.* энерги́чный; *ант.* вя́лый), **бо́дро** *нареч.* чĕ́рĕ, хаста́р, çĕкле́нчĕк; **бо́дрое настрое́ние** çĕкле́нчĕк кăмăл

боеви́к (-а́) *сущ. муж.* **1.** боеви́к *(хĕç-пăшалла террорист, пăлхавçă)* **2.** боеви́к (*çивĕч сюжетлă фильм*)

боево́й *прил.* **1.**(*син.* боéнный) çар -ĕ; вắрçă -ĕ; çапăçý -ĕ; **боева́я подгото́вка войск** çарсéн çапăçý ха́тĕрлĕхĕ; **боевы́е това́рищи** вăрçăри́ туссéм **2.** (*син.* смéлый, бóйкий) хастáр, маттýр, сатýр; **боево́й па́рень** маттýр ка́ччă

боеприпа́сы (-ов) *сущ. множ.* вắрçă хатĕрĕсéм *(снарядсем, ракетăсем, патронсем т. ыт.)*; **подвози́ть к фро́нту боеприпа́сы** фронта́ вắрçă хатĕрĕсéм кӳ́рсе тăр

боéц (бойца́) *сущ. муж.* (*син.* солда́т, вóин) салта́к, боéц; **бойцы́ пехóты** пехóта салтакĕсéм

божéственный *прил.* **1.** (*син.* религиóзный, церкóвный) тĕн -ĕ, чиркӳ́ -ĕ; **божéственнные кни́ги** тĕн кĕнекисéм **2. божéственно** *нареч.* (*син.* прекрáсный, замечáтельный) пúтĕ ча́плă, хӳ́хĕм, илéмлĕ, паха́; **он поёт божéственно** вăл пúтĕ ча́плă юрлáть

божество́ (-а́) *сущ. сред.; множ.* **божества́** (-éств) тýрă; **чува́шские языческие божества́** чăва́ш туррисéм *(Мăн турă, Кепе, Пихампар т. ыт.)*

бóжий *прил.* Тýрă -ĕ; тýрă -ĕ; **бóжья во́ля** Тýрă ирĕкĕ ◆ **бóжья коро́вка** уя́р *(пĕчĕк кăпшанкă)*; **свет бóжий** çут тĕнчé; **в нём и́скра бóжья** ýнăн тýрă пани́, пултарýлăх пур; **бóжьей ми́лостью** тýрă ырлăхĕпе́; **я́сно как бóжий день** пĕтĕмпéх пáллă, куç кĕретéх

божни́ца (-ы) *сущ. жен.* тýрăш кĕтесси́, тýрăш выра́нĕ

бой (бóя, о бóе, в бою́ *и* в бóе) *сущ. муж.* (*син.* сраже́ние) çапăçý, тытăçý; **воздýшный бой** сывлăшри́ тытăçý; **вступи́ть в бой** çапăçăвá кĕр;

вести́ бой ҫăпăҫ; **на по́ле бо́я** вắрҫă хирĕнчĕ́, ҫапăҫу́ пы́нă ҫĕртĕ́; ◆ **кула́чный бой** чышкăпа́ ҫапăҫни́ *(ăмăртса)*; **стекля́нный бой** ва́нчăк кĕленчĕ́

бо́йкий (*кратк. ф.* бо́ек, бойка́, бо́йко; *множ.* бо́йки; *сравн. ст.* бо́йче и бойчĕе), **бо́йко** *нареч.* (*син.* расторо́пный, живо́й, подви́жный; *ант.* вя́лый, медли́тельный) правý́р, йắрă, ҫи́вĕч, вăр-вăр; **бо́йкая де́вушка** правý́р хĕр; **бо́йкий ум** ҫи́вĕч ăс

бок (бо́ка, о бо́ке, на боку́) *сущ. муж.; множ.* **бока́** (-о́в) ая́к, а́йăк, ен *(айккинчи)*; **ле́вый бок** сулаха́й ая́к; **воро́чаться с бо́ку на́ бок** айăкра́н айăка́ ҫаврăнкаласа́ вырт ◆ **под бо́ком** а́лă айĕнчĕ́х; **идти́ бок о бок** алла́-а́ллăн пыр

бока́л (-а) *сущ. муж.* (*син.* фуже́р) черккé *(пысăкки)*; **подня́ть бока́л за хозя́ина до́ма** кил хуҫи́шĕн черккé ҫĕклé

боково́й *прил.* айккинчи́; **боковы́е места́ в ваго́не** вагóнăн айккинчи́ вырăнĕсéм

бо́ком *нареч.* а́йăккăн, хăя́ккăн; **лежа́ть бо́ком** хăя́ккăн вырт

бокс (-а) *сущ. муж.* бокс *(ятарлă перчеткесемпе чышса ҫапăҫмалли спорт)*; **занима́ться бо́ксом** боксá хýтшăн; **соревнова́ния по бо́ксу** бокс ắмăртăвĕ

боксёр (-а) *сущ. муж.* боксёр; **боксёр-тяжелове́с** йы́вăр виҫéллĕ боксёр

болга́рин (-а) *сущ. муж.*, болга́рка (-и) *жен.; множ.* **болга́ры** (-ар) болгарсéм, пăлхарсéм *(Болгарире пурăнакан, авалтан чăвашсемпе пĕр несĕллĕ халăх)*

болга́рский *прил.* болга́р -ĕ, Болга́ри -ĕ; Болгарири́; **болга́рский язы́к** болга́р чĕлхи́; **болга́рские куро́рты** Болгарири́ курортсéм

бо́лее *нареч.* **1.** *образует сравн. ст.* -рах (-рех); **бо́лее бы́стро** хăвăртра́х; **бо́лее ме́лкий** вĕтĕре́х **2.** ытла́, ытлара́х; **бо́лее двухсо́т тонн** ик ҫĕр то́нна ытла́ ◆ ***бо́лее или ме́нее*** хăш-пĕр тара́н, вăта́ммăн; **бо́лее того́** *вводн.сл.* унта́н та ытлара́х; **тем бо́лее** *частица и союз* уйрăма́х; ҫийĕнчĕ́н; тата́; **вещь э́та сли́шком дорога́я, тем бо́лее де́нег у нас ма́ло** ку япала́ ытла́ та хăкла́, тата́ укҫи́ те пи́рĕн сахал

боле́зненный *прил.*, **боле́зненно** *нареч.* (*син.* нездоро́вый; *ант.* здоро́вый) чирлĕре́х, сýсăр, сыва́х мар, имшéр; **боле́зненный ребёнок** имшéр ача́ **2.** (*син.* ненорма́льный, чрезме́рный) ытла́, виҫéсĕр; ҫав тери́; **он боле́зненно воспринима́ет кри́тику** вăл хăйне́ тиркéнĕшĕн ҫав тери́ пăшăрхана́ть

боле́знь (-и) *сущ. жен.* (*син.* заболева́ние) чир, чир-чĕ́р; **зара́зная боле́знь** ерекéн чир; **де́тские боле́зни** ача́-пăча́ чир-чĕ́рĕ

боле́ть[1] (*наст.* -éю, -éешь, -éет, -éют; *повел. ф.* -éй; *прич. действ. наст.* -éющий, *прош.* -éвший; *деепр.* -éя) *глаг. несов.* **1.***чем и без доп.* чирле́, аптăра́ *(чирпе)*; **боле́ть анги́ной** пыр шыҫҫипе́ аптăра́; **он боле́ет уже́ бо́льше неде́ли** вăл эрне́ ытла́ чирле́т ĕ́нтĕ **2.** *о ком-чем и за кого-что* (*син.* переживáть, тревóжиться) хумха́н, пăшăрха́н, чуна́ пар; **боле́ть за де́ло** ĕ́ҫшĕн чуна́ пар; **боле́ть за футбо́льную кома́нду** футбóл командúшĕн хумха́н

боле́ть[2] *1 и 2 л., также повел. ф. и деепр. не употр.* (*наст.* боли́т; *прич. действ. наст.* -я́щий, *прош.* -е́вший) *глаг. несов.* ырáт, сур; **зу́бы боля́т** шăл сура́ть; **голова́ боли́т** пуҫ ыратáть

боло́тистый *прил.* шýрлăхлă, ушáх, шыв-шýрлă; **боло́тистая ме́стность** шýрлăхлă вы́рăн

боло́тный *прил.* шýрлăх -ĕ; шурлăх-

ри́; **боло́тные расте́ния** шу́рлăх ӳсе́н-тăра́нĕ; **боло́тные сапоги́** шу́рлăх аттѝ, вă´рăм а́тă

боло́то (-а) *сущ. сред.* шу́рлăх, шур, ушáх, лачакá; **торфяно́е боло́то** торф шу́рлăхĕ; **осуше́ние боло́т** шурлăхсене́ типĕтни́

болта́ть[1] *глаг. несов., что* (*син.* пустосло́вить) сӳ́пĕлте́т, пакăлта́т, сăмáх çап; **Не болта́й вздор!** Ан сӳ́пĕлте́т ки́рлĕ мара́!

болта́ть[2] *глаг. несов.* **1.** *что* (*син.* разме́шивать) пăтра́т, пăлхáт, чӳхенте́р *(савăтри шĕвеке)* **2.** *чем* (*син.* раска́чивать) сулла́, суллантáр; **сиде́ть, болта́я нога́ми** ура́ сулласá лар

боль (-и) *сущ. жен.* ыратӳ́, ыратни́, сурни́; **зубна́я боль** шăл сурни́; **крича́ть от бо́ли** ыратнипе́ кă´шкăр

больни́ца (-ы) *сущ. жен.* больни́ца; **райо́нная больни́ца** райóн больниц и́; **положи́ть в больни́цу** больницăна́ выртта́р

больни́чный *прил.* больни́ца -ĕ; больницăри́; **больни́чная ко́йка** больницăри́ выр ắн; **больни́чные зда́ния** больни́ца çурчĕсе́м ◆ **больни́чный лист** больни́ца листи́ *(чирлени çинчен панă документ)*

бо́льно *нареч. и в знач. сказ.* **1.** ыратмалла́; ыраттармалла́; **бо́льно уда́риться** çапăнсá ыраттáр, ыратмалла́ çапăн **2.** (*син.* оби́дно, неприя́тно) пăшăрханмалла́; тарăхмалла́; **бо́льно за дру́га** ту́сшăн пăшăрханмалла́; **бо́льно слы́шать э́то** куна́ илтсе́ тарăхмалла́

больно́й 1. *прил.* (*кратк. ф.* бóлен, больна́; *множ.* больны́) сӳ́сăр, чи́рлĕ, сы́вă мар; чирлекéн; **больно́й стари́к** сӳ́сăр вáтă; **больно́е се́рдце** сы́вă мар чĕре́; **ребёнок бóлен** ача́ чи́рлĕ **2. больно́й** (-о́го) *сущ. муж.*, **больна́я** (-о́й) *жен.* чи́рлĕ çын, чирли́; **лече́ние больны́х** чирлисене́ сыватни́ ◆ **вали́ть с больно́й головы́ на здоро́вую** айăпсăра́ áйăп ту, айăпа́ çын çине́ йăвантáр

бóльше 1. *прил.* (*сравн. ст. к* большóй) пысăкрáх, мăнăрáх, аслăрáх; **на́ше село́ бóльше ва́шего** пи́рĕн ял сирĕннинче́н пысăкрáх **2.** *нареч.* (*сравн. ст. к* мнóго) ытларáх, нумайрáх; **мы зарабóтали бóльше вас** эпи́р сирĕнте́н ытларáх ĕçлесе́ ѝлтĕмĕр **3.** *нареч.* ытлá, ытларáх; **ждать бóльше ча́са** сехе́т ытлá кĕт **4.** *нареч.* (*син.* да́лее, впредь) тек, у́рăх, малашне́; **бóльше я его́ не ви́дел** тек э́пĕ ăна́ курмáн ◆ **бóльше того́** *вводн. сл.* унтáн та ытларáх

большинство́ (-á) *сущ. сред.* (*ант.* меньшинство́) ытларáхăшĕ, нумайрáхăшĕ; **большинство́ собра́вшихся** пухăннисенче́н нумайрáхăшĕ◆ **в большинстве́ слу́чаев** ытларáх чухне́

большо́й *(сравн. ст.* бóльше; *превосх. ст.* бóльший) прил. **1.** (*ант.* ма́ленький) пы́сăк, мă´нă, капмáр; **большо́е зда́ние** пы́сăк çурт; **больша́я переме́на** пы́сăк тăхтáв *(шкулта)* **2.** (*син.* многочи́сленный) пы́сăк, йы́шлă; **больша́я семья́** йы́шлă çемьé **3.** (*син.* выдаю́щийся, значи́тельный) пы́сăк, чáплă, áслă; **больша́я побе́да** пы́сăк çĕнтерӳ´; **большо́й пра́здник** чáплă уя́в **4. большо́й** (-о́го) *сущ. муж.*, **больша́я** (-о́й) *жен.* (*син.* взро́слый; *ант.* ма́ленький) çитĕнни́, пысăкки́, асли́; **больши́х на́до слу́шаться** аслисене́ итлéс пула́ть ◆ **большо́й па́лец** пуç пӳ́рне́; **больша́я вода́** ейӳ´ шы́вĕ; **бóльшей ча́стью** ытларáх; **са́мое бóльшее** чи нумайѝй

бо́мба (-ы) *сущ. жен.* бóмба; **зажига́тельная бо́мба** вут тивертекéн бóмба; **сбро́сить бо́мбу с самолёта** самолёт çинчéн бóмба пăрáх

бомбардирова́ть (*наст.* -ру́ю, -ру́ешь, -ру́ет, -ру́ют; *прич. страд. прош.* -ро́ванный) *глаг. сов. и несов., кого-*

что (*син.* бомби́ть) бомбӑлá, бóмба пӑрáх, бóмба тӑк; **авиáция бомбардировáла городá протúвника** авиáци тӑшмáн хулисéм çинé бóмба тӑ́кнӑ

бомбардирóвка (-и), **бомбёжка** (-и) *сущ. жен.* бомбӑлáв; бомбӑланú, бóмба пӑрахнú

бомбардирóвщик (-а) *сущ. муж.* бомбардирóвщик *(бомба пӑрахакан самолёт)*; **тяжёлый бомбардирóвщик** йы́вӑр бомбардирóвщик

бомби́ть (*наст.* -блю́, -би́шь, -би́т, -бя́т) *глаг. несов., кого-что* (*син.* бомбардирова́ть) бомбӑлá, бóмба пӑрáх, бóмба тӑк; **бомби́ть позúции протúвника** тӑшмáн позицийёсéм çинé бóмба пӑрáх

бомж (бóмжа *и* бомжá) *сущ. муж.; множ.* **бомжú** (-éй) бомж *(кил-йӗрсӗр, ӗçлемесӗр пурӑнакан çын)*

бор (-а, о бóре, в бору́) *сущ. муж.; множ.* **боры́** (-óв) хы́рлӑх, хыр вӑрмáнӗ

борéц (-рцá) *сущ. муж.* **1**. кӗрешӳ́çӗ *(спортра)*; **борéц тяжёлого вéса** йы́вӑр виçéллӗ кӗрешӳ́çӗ **2**. кӗрешӳ́çӗ; кӗрешекéн; **борцы́ за свобóду** ирӗклӗхшӗн кӗрешекенсéм

бормота́ть (*наст.* -очу́, -óчешь, -óчут; *повел. ф.* -очú; *прич. действ. наст.* бормóчущий, *прош.* -отáвший; *деепр.* -очá) *глаг. несов., что и без доп.* мӑкӑртáт, мӑ́кӑр-мӑ́кӑр ту; **он что́-то бормóчет про себя́** вӑл хӑй ӑ́сӗн тем мӑкӑртатáть

бóров (-а) *сущ. муж.; множ.* **бóровы** (-ов) кастáрнӑ сысна́

борода́ (-ы́, бóроду) *сущ. жен.; множ.* **бóроды** (борóд, -áм) сухáл; **борода́ лопа́той** кӗреçé сухáл; **отпусти́ть бóроду** сухáл ӳ́стерсé яр

борода́вка (-и) *сущ. жен.* шӗ́пӗн; **своди́ть борода́вки** шӗ́пӗн пӗтéр

борода́тый *прил.* (*ант.* бри́тый) сухалéй, сухáллӑ, мӑн сухáллӑ; **борода́тый стари́к** мӑн сухáллӑ стари́к

борозда́ (-ы́, борозду́ *и* бóрозду) *сущ. жен.; множ.* **бóрозды** (борóзд, -áм) сухá кассú, сухá йӑрáнӗ ◆ **Ста́рый конь борозды́ не пóртит** *посл.* Ват лашá сухá кассинé пӑсмáсть

борозди́ть (*наст.* -зжу́, -зди́шь, -здя́т; *деепр.* -здя́) *глаг. несов., что* **1**. (*син.* пахáть) кас, кáсӑ ту; йӗр ту; **борозди́ть плу́гом зéмлю** çӗрé акá пуçӗпé сухалá; **морщúны бороздя́т лицó** сӑнпитé пӗркелéнчӗк картлáнӑ **2**. кас, кассá пар, çурсá пыр; **кораблú борозда́т мóре** карапсéм тúнӗс шывнé кассá çӳ́рéççӗ

борона́ (-ы́, бóрону *и* боронý) *сущ. жен.; множ.* **бороны́** (борóн, -áм) сӳ́рé; **дúсковая борона́** дúсклӑ сӳ́рé; **зу́бья бороны́** сӳ́рé шӑлӗсéм

боронúть *глаг. несов., что* сӳ́рé, сӳ́релé; **боронúть по́ле** пуссá сӳ́релé

боро́ться (*наст.* борю́сь, бóрешься, бóрются; *повел. ф.* борúсь; *прич. действ. наст.* бóрющийся, *прош.* борóвшийся; *деепр.* борясь) *глаг. несов.* **1**. *с кем* (*син.* состязáться) кӗрéш, тытӑç, вӑй виç; **пáрни бóрются** каччăсéм вӑй виçéççӗ; **боро́ться по прáвилам** правилăпá кӗрéш **2**. *с кем-чем, против кого-чего* (*син.* сражáться, би́ться) çáпăç, кӗрéш; пӗтéр; **боро́ться с врагóм** тӑшманпá çáпăç; **бóрющиеся а́рмии** пӗр-пӗринпé кӗрешекéн çарсéм **3.** *за что* (*син.* стоя́ть, добивáться) кӗрéш, тӑ́рӑш, тӑр; **боро́ться за зва́ние чемпио́на** чемпиóн я́чӗшӗн кӗрéш

борт (бóрта, зá борт *и* за бóрт, за бортóм *и* за бóртом, о бóрте, на бортý) *сущ. муж.; множ.* **бортá** (-óв) **1**. (*син.* край, стéнка) хӗ́рӗ, хӗррú, борт; **лéвый борт сýдна** карáпăн сулахáй хӗррú; **откúнуть зáдний борт грузовикá** грузовúкăн кайрú бортнé уç **2**. (*син.* сýдно; самолёт) карáп, самолёт; **самолёт с пассажúрами на бортý** пассажирсéм лáртнӑ самолёт

3. а́ркă; **пра́вый борт пиджака́** пинша́кăн сы́лтăм арки́

бортпроводни́ца (-ы) *сущ. жен.* (*син.* стюарде́сса) бортпроводни́ца; **бортпроводни́ца разнесла́ пассажи́рам чай** бортпроводни́ца пассажирсене́ чей пырса́ па́чĕ

борщ (-а́) *сущ. муж.* борщ, кăшма́н яшки́; **свари́ть борщ с мя́сом** ашпа́ кăшма́н яшки́ пĕçе́р

борщеви́к (-а́) *сущ. муж.* пултăра́н *(çиме юрăхлă курăк)*; **щи из борщеви́ка** пултăра́н яшки́

борьба́ (-ы́) *сущ. жен.* **1.** (*син.* сраже́ние, би́тва) кĕрешӳ́, вắрçă; кĕрешни́, вăрçни́; **вести́ вооружённую борьбу́** хĕç-пăшалпа́ кĕре́ш; **борьба́ за мир** ми́ршĕн кĕрешни́ **2.** (*син.* состяза́ние) кĕрешӳ́; кĕрешни́ *(спорт)*; **во́льная борьба́** и́рĕклĕ мелпе́ кĕрешни́; **борьба́ дзюдо́** дзюдо́ кĕре́шĕвĕ

босико́м *нареч.* çарра́н, çара́ ура́н; **де́ти бе́гают босико́м** ачасе́м çарра́н чупса́ çӳре́ççĕ

боsóй *(кратк. ф.* бос, боса́, бо́со, *множ.* бо́сы) *прил.* çарра́н, çара́ ура́ллă; **боsóй ма́льчик** çара́ ура́ллă арçы́н ача́

босоно́жки (-жек) *сущ. множ.* у́çă ту́фли, çắмăл ту́фли *(çуллахи)*

бота́ника (-и) *сущ. жен.* бота́ника *(пур тĕрлĕ ӳсен-тăрана тĕпчекен ăслăлăх)*; **уче́бник бота́ники** бота́ника уче́бникĕ

ботани́ческий *прил.* бота́ника -ĕ; **ботани́ческий сад** бота́ника са́чĕ *(ӳсен-тăран пухса ĕрчетекен, сăнавсем тăвакан учреждени)*

ботва́ (-ы́) *сущ. жен.* (*син.* сте́бли, ли́стья) çеçке́, çӳлçă, а́вăр; **ботва́ карто́феля** çĕр улми́ аври́; **ботва́ свёклы** кăшма́н çеçки́

боти́нки (-нок) *сущ. множ.; един.* **боти́нок** (-нка) *муж.* (*син.* башмаки́) пушма́к; **ко́жаные боти́нки** сăра́н пушма́к; **лы́жные боти́нки** йĕ́лтĕрçĕ пушма́кĕ

бо́цман (-а) *сущ. муж.* бо́цман (*карап çинчи кĕçĕн командир*)

бо́чка (-и) *сущ. жен.* пичке́; **дубо́вая бо́чка** юма́н пичке́; **бо́чка для воды́** шыв пички́; **о́бручи бо́чки** пичке́ кăшăлĕсе́м

боязли́вый *прил.* (*син.* ро́бкий, трусли́вый; *ант.* хра́брый, сме́лый), **боязли́во огля́дываться** ши́клĕн çаврăнса́ пăхкала́

боя́рышник (-а) *сущ. муж.* катăрка́с (*йĕпленчĕк туратлă йывăç*); **я́годы боя́рышника** катăрка́с çырли́

боя́ться (*наст.* боюсь, боя́шься, боя́тся; *повел. ф.* бо́йся, бо́йтесь; *прич. действ. наст.* боя́щийся, *прош.* боя́вшийся; *деепр.* боя́сь) *глаг. несов.* **1.** *кого-чего и с неопр. ф.* (*син.* страши́ться, тру́сить, пуга́ться) хăра́; **боя́ться соба́ки** йытăра́н хăра́; **я не бою́сь их** э́пĕ вĕсенче́н хăрама́стăп **2.** *чего и с неопр. ф.* (*син.* спаса́ться, остерега́ться) хăра́, шикле́н, асăрха́н; **я бою́сь опозда́ть на по́езд** э́пĕ поезда́ ĕлкĕреймесре́н шиклене́тĕп **3.** *1 и 2 л. не употр., чего* хăра, ан чăт, ан ту́с; **э́ти цветы́ боя́тся моро́за** ку чечексе́м сивве́ ту́сейме́ççĕ ◆ **Волко́в боя́ться — в лес не ходи́ть** *посл.* Кашкăртан хăраса́н вăрмана́ каймалли́ çук

бра́во *межд.* бра́во, маттӳ́р *(ырланине, мухтанине палăртса калани)*

бра́вый *прил.* (*син.* му́жественный, молодцева́тый) маттӳ́р, сатӳ́р; **бра́вый солда́т** маттӳ́р салта́к

брак[1] (-а) *сущ. муж.* (*син.* супру́жество) мăшăрлану́; **вступи́ть в брак** мăшăрла́н, пĕрле́ш; **расто́ргнуть брак** ӳйрăл; **зарегистри́ровать брак** мăшăрланнине́ çыртăр

брак[2] (-а) *сущ. муж., множ. нет* (*син.* изъя́н) кắлтăк, çитме́нлĕх, брак; **брак в рабо́те** ĕçри́ çитме́нлĕх; **това́р с бра́ком** кắлтăклă тавăр

браковáть *глаг. несов.* тиркé, бракла́, ан йы́шăн; **браковáть дефéктную продýкцию** кăлтăкла́ продукциé бракла́

браконьéр (-а) *сущ. муж.* браконьéр *(закона пăсса çут çанталăка сăтăр тăвакан)*; **охóтник-браконьéр** браконьéр суна́рçă; **задержáть браконьéров** браконьерсенé ярсá тыт

браконьéрский *прил.* браконьéр -ĕ; браконьерла́; **браконьéрские рыболóвные снáсти** браконьерла́ пу́лăçă хатĕрĕсéм

брани́ть (*наст.* -ню́, -ни́шь, -ня́т) *глаг. несов., кого-что* (*син.* руга́ть; *ант.* хвали́ть) ятла́, писте́р, вăрç; **мать брани́т детéй за шáлость** áмăшĕ ачасенé áшкăннăшăн ятла́ть

брани́ться (*наст.* -нюсь, -ни́шься, -ня́тся) *глаг. несов.* ятла́ç, вăрç, харка́ш; **брани́ться с сосéдями** кýршĕсемпе́ ятла́ç

браслéт (-а) *сущ. муж.* **1**. сýлă *(алă сыппине илемшĕн тăхăнаканни)*; **золотóй браслéт** ылтăн сýлă **2.** сехéт сăнчăрĕ, сехéт çыххи́ *(металран туни)*

брат (-а) *сущ. муж.; множ.* **бра́тья** (-ьев) ар тăва́н; пиччé, тетé *(манран аслăраххи)*; шăллăм *(манран кĕçĕнреххи)*; **мой стáрший брат** мáнăн пиччé; **егó млáдшие бра́тья** ýнăн шăллĕсéм ◆ **свой брат** хáмăр çын

брати́шка (-и) *сущ. муж.* шăллăм; **мой брати́шка Пéтя ýчится в пéрвом клáссе** мáнăн шăллăм Пéтя пĕррéмĕш класра́ вĕренéт

бра́тский *прил.*, **бра́тски** *нареч.* тăва́н -ĕ; тăванла́, çывăх; **бра́тская дрýжба** тăванла́ тýслăх ◆ **бра́тская могúла** ýшкăнла вил тăпри́

брать (*наст.* берý, берёшь, берýт; *прош.* брал, брала́, бра́ло; *повел. ф.* бери́; *прич. действ. наст.* берýщий, *прош.* бра́вший; *деепр.* беря́) *глаг. несов.* (*сов.* взять), *кого-что* **1**. (*син.* хвата́ть) ил, тыт, алла́ ил; **брать из рук** алăра́н ил; **брать топóр** пýртă тыт **2**. *с собóй или без доп.* (*син.* уноси́ть, увози́ть, захва́тывать; *ант.* оставля́ть) ил, илсé кай, пĕрлé ил; **брать детéй с собóй** ачасенé пĕрлé илсé кай; **брать в дорóгу нýжные вéщи** çул çинé мĕн кирлинé ил **3.** (*син.* получа́ть, приобрета́ть; *ант.* отдава́ть) ил, туя́н, тыт; **брать дéньги взáймы́** кивçéн укçá ил; **брать такси́** такси́ тыт; **брать молокó в магази́не** лавккара́ сĕт туя́н **4.** (*син.* овладева́ть, захва́тывать; *ант.* отдава́ть, лиша́ться) ил, çĕнсé ил, ярсá ил; **брать гóрод штýрмом** хулана́ çĕнсé ил; **брать в плен** тытăна́ ил **5.** (*син.* принима́ть) ил, йы́шăн; **брать ребёнка на воспита́ние** ачана́ усрава́ ил; **магази́н берёт вéщи на коми́ссию** магази́н япала́ сутма́ йышăна́ть ◆ **смех берёт** кулáс килéт; **зá душу берёт** чуна́ пырсáх тивéт; **ры́ба хорошó берёт** пу́лă ла́йăх туртáть; **брать обязáтельство** тумá пул; **брать хи́тростью** чеелансé ăнтăр; **брать начáло** пуçла́н; **брать штраф** штраф тýлеттéр; **бри́тва хорошó берёт** бри́тва ава́н каса́ть; **брать влéво** сулахаялла́ пắрăн; **брать примéр** тĕслĕхé хур

бра́ться (*наст.* беру́сь, берёшься, беру́тся; *прош.* бра́лся, брала́сь, бра́лось; *повел. ф.* бери́сь, бери́тесь; *прич. действ. наст.* беру́щийся, *прош.* бра́вшийся; *деепр.* беря́сь) *глаг. несов. (сов.* взя́ться) **1**. *за что* (*син.* хвата́ться) тыт, тыта́н, тыта́ç; ярсá тыт; **бра́ться за́ руки** алла́-а́ллăн тыта́н; **бра́ться за ру́чку двéри** а́лăк хăлăпнé ярсá тыт **2.** *за что* (*син.* принима́ться, начина́ть) тыта́н, пикéн, пуçла́; **бра́ться за учёбу** вĕренмé пикéн; **бра́ться за кни́гу** кĕнекé вуламá пуçла́ **3**. *за что и с неопр. ф.* (*син.* обя́зываться) тумá пул, сăмáх пар; **я берýсь помóчь вам** э́пĕ сирé пулăшмá пула́тăп **4**. (*син.* появля́ться, воз-

ника́ть) тух, ту́пăн; **Отку́да у него́ де́ньги беру́тся?** Ăçта́н тупăна́ть-ши у́нăн укçа́? ◆ **бра́ться за ум** ăсá кĕр, тăнла́н

бра́чный *прил.* мăшăрлану́ -ĕ; **бра́чное свиде́тельство** мăшăрлану́ хýчĕ; **бра́чный сою́з** мăшăрлану́ ◆ **бра́чный наря́д птиц** кайăксе́н туй ту́мĕ *(çуркунне пĕрлешнĕ вăхăтри)*

бревéнчатый *прил.* пĕрене́..., пурасá туни́; **бревéнчатый мост** пĕрене́ кĕпéр

бревнó (-á) *сущ. сред.; множ.* **брёвна** (брёвен, бревнам) **1.** пĕрене́; **сосно́вое бревнó** хыр пĕрене́; **отеса́ть бревнó** пĕрене́ чутлá **2.** (*син.* бум) пĕрене́ *(спорт хатĕрĕ)*; **упражне́ния на бревне́** пĕрене́ çинчи́ хăнăхтарусéм

бред (-а, о бре́де, в бреду́) *сущ. муж.* аташу́; аташни́ *(тăнсăрланса)*; **больно́й ме́чется в бреду́** чи́рлĕ çын аташа́ть

бре́день (-дня) *сущ. муж.* (*син.* не́вод) сĕрекé; **лови́ть ры́бу бре́днем** сĕрекепé пýлă тыт

бре́дить (*наст.* бре́жу, бре́дишь, бре́дят; *повел. ф. не употр.; прич. действ. наст.* бре́дящий, *прош.* бре́дивший; *деепр.* бре́дя) *глаг. несов.* **1.** ата́ш *(тăнсăрланса)*; **бре́дить во сне** ы́йхă тĕлĕшпе́ ата́ш **2.** *кем-чем* (*син.* мечта́ть, стреми́ться) айка́ш, ĕмĕтлéн, çун; **он бре́дит сла́вой** вăл чáпшăн çуна́ть

бре́згать (*наст.* -аю, -аешь, -ают; *повел. ф.* -ай; *прич. действ. наст.* -ающий, *прош.* -авший; *деепр.* -ая) *и* **бре́зговать** (*наст.* -ую, -уешь, -уют; *повел. ф.* -уй; *прич. действ. наст.* -ующий, *прош.* -овавший; *деепр.* -уя *(глаг. несов., кем-чем и с неопр. ф.* йĕ́рĕн, тирке́; **он ниче́м не бре́згует** вăл нимé те тиркесé тăмáсть

брезгли́вый *прил.*, **брезгли́во** *нареч.* йĕ́рĕнчĕк, тиркéвлĕ; йĕрĕнекéн; **брезгли́вый челове́к** йĕрĕнекéн çын; **брезгли́во помо́рщиться** пит-куçá йĕ́рĕнчĕклĕн пĕркелé

брезе́нт (-а) *сущ. муж.* брезéнт *(хулăн пир)*; **накры́ть во́рох зерна́ брезе́нтом** тырă кăшăлнé брезентпá вит

брезе́нтовый *прил.* брезéнт ...; брезéнт -ĕ; **брезе́нтовые рукави́цы** брезéнт алсá

брести́ (*наст.* бреду́, бредёшь, бредýт; *повел. ф.* бреди́; *прич. действ. наст.* бредýщий, *прош.* бре́дший; *деепр.* бредя́) *глаг. несов.* (*син.* тащи́ться) сĕнкĕлтéт, лăкăштатсá пыр, сĕтĕрĕнсé пыр, арáн уткалá; **стари́к е́ле бредёт** вáтă çын арáн сĕнкĕлтетсé пырáть

бригáда (-ы) *сущ. жен.* **1.** бригáда *(пĕрле ĕçлекен ушкăн)*; **плóтничья бригáда** платниксéн бригади́ **2.** бригáда *(полкран пысăк çар чаçĕ)*; **бригáда морско́й пехóты** ти́нĕс пехоти́н бригади́

бригади́р (-а) *сущ. муж.* бригади́р; **бригади́р строи́телей** строительсéн бригади́рĕ; **назна́чить бригади́ром** бригадирá уйăрсá ларт

бригáдный *прил.* бригáда -ĕ; **бригáдное собра́ние** бригáда пýхăвĕ

брике́т (-а) *сущ. муж.* (*син.* кирпи́ч, плúтка) брикéт *(преспа хытарнă шакмак)*; **торфяны́е брике́ты** торф брикечĕсéм

бриллиа́нт *и* **брилья́нт** (-а) *сущ. муж.* кевéр чул, бриллиáнт *(якатса илемлетнĕ алмаз)*; **пе́рстень с бриллиа́нтом** кевéр кýçлă çĕ́рĕ

бриллиа́нтовый *прил.* кевéр чýллă; бриллиáнт -ĕ, бриллиáнтлă ◆ **бриллиа́нтовая сва́дьба** бриллиáнт туй *(мăшăрланнăранпа 75 çул çитнине уявлани)*

бри́тва (-ы) *сущ. жен.* бри́тва; **безопа́сная бри́тва** лéзвиллĕ бри́тва; **электри́ческая бри́тва** электри́чество бритви́ ◆ **язы́к как бри́тва** чĕлхи́ касáть кăнá

бри́твенный *прил.* бри́тва -ĕ; хырăнмалли́; **бри́твенный прибо́р** хырăнмалли́ ха́тĕр-хĕ́тĕр

брить (*наст.* бре́ю, бре́ешь, бре́ют; *повел. ф.* брей; *прич. действ. наст.* бре́ющий, *прош.* бри́вший; *прич. страд.* бри́тый; *деепр.* бре́я) *глаг. несов., кого-что* хыр (*сухала, çӳçе*); **бри́тва бре́ет чи́сто** бри́тва таса́ хыра́ть

бри́ться (*наст.* бре́юсь, бре́ешься, бре́ются; *повел. ф.* бре́йся, бре́йтесь; *прич. действ. наст.* бре́ющийся, *прош.* бри́вшийся; *деепр.* бре́ясь) *глаг. несов.* хыр̆ăн; **бри́ться электри́ческой бри́твой** электри́чество бритви́пе хыр̆ăн

бро́ви (-е́й) *сущ. множ.; един.* **бровь** (-и) *жен.* куç харши́; **нахму́рить бро́ви** куç харшине́ пĕркеле́ ◆ **Не в бровь, а в глаз** *погов.* Тĕлне́х, шăп вы́рăнлă *(сăмах калани)*

брод (-а *и* -у) *сущ. муж.* ка́çă, кĕре́ ка́çă *(шыври ăшăх вырăн)*; **найти́ брод че́рез ре́чку** çырма́ у́рлă ка́çă туп ◆ **Не зна́я бро́ду, не су́йся в во́ду** *посл.* Ка́çă тĕлне́ пĕлме́сĕр шыва́ кĕрсе ан кай

броди́ть[1] (*наст.* брожу́, бро́дишь, бро́дят; *деепр.* броде́) *глаг. несов.* (*син.* таска́ться) суллансá çӳре́, сĕтĕрĕнсе́ çӳре́; **броди́ть без де́ла** ĕ́ççĕр суллансá çӳре́

броди́ть[2] *1 и 2 л. не употр.* (*наст.* бро́дит) *глаг. несов.* йӳç; **пи́во бро́дит** сăра́ йӳçе́т

броде́га (-и) *сущ. муж. и жен.* (*син.* скита́лец) çапкала́нчăк, сĕ́тĕрĕнчĕк; **безде́ломные броде́ги** ки́лсĕрçӳ́ртсăр çапкаланчăксе́м

бро́кер (-а) *сущ. муж.* (*син.* посре́дник) бро́кер (*хакла́ хут, тавар сутма е туянма пулăшакан специалист*); **биржево́й бро́кер** би́ржа бро́керĕ

бро́керский *прил.* бро́кер -ĕ; **бро́керская конто́ра** бро́кер кантӳ́рĕ

бронебо́йный *прил.* броня́ шăтаракáн; **бронебо́йный снаря́д** броня́ шăтаракáн снаряд

броневи́к (-á) *сущ. муж.*, **бронемаши́на** (-ы) *жен.* броневи́к, бронемаши́на; **экипа́ж бронемаши́ны** бронемаши́на экипа́жĕ

бронепо́езд (-а) *сущ. муж.* бронепо́езд *(хăватлă, хĕç-пăшаллă, броньăллă поезд)*

бронетранспортёр (-а) *сущ. муж.* бронетранспортёр *(салтаксен ушкăнне турттармалли çар машини)*

бро́нза (-ы) *сущ. жен.* бро́нза *(пăхăрпа тăхлан хутăшĕ)*; **изде́лия из бро́нзы** бро́нза япаласе́м

бро́нзовый *прил.* бро́нза ..., **бро́нзовый подсве́чник** бро́нза шанта́л *(çурта лартмалли)*; **спортсме́н завоева́л бро́нзовую меда́ль** спортсме́н бро́нза меда́ль çĕнсе́ и́лнĕ

бронирова́ть (*наст.* -ру́ю, -ру́ешь, -ру́ют; *прич. страд. прош.* -ро́ванный) *глаг. несов., что* броньăла́, броньăпа́ вит; **бронирО́ванный автомоби́ль** броньăла́нă автомоби́ль

бро́нхи (*-ов*) *сущ. множ.; един.* **бронх** (-а) *муж.* тип пыр

бронхи́т (-а) *сущ. муж.* бронхи́т, тип пыр шыççи

броня́ (-и́) *сущ. жен.* броня́ *(хурçă хӳтлĕх)*; **броня́ та́нка** танк броня́

броса́ться (*наст.* -аю́сь, -аешься, -аю́тся) *глаг. несов.* **1.** *см.* **бро́ситься 2.** *чем* перкеле́ш; **де́ти броса́ются снежка́ми** ачасе́м юрпа́ перкелешéççĕ

бро́сить (*будущ.* бро́шу, бро́сишь, бро́сят; *повел. ф.* брось; *прич. действ. прош.* бро́сивший; *прич. страд. прош.* бро́шенный; *деепр.* бро́сив) *глаг. сов.* **1.** *кого-что и чем* (*син.* ки́нуть, швырну́ть) пер, ывăт, пăра́х; **бро́сить ка́мнем** чулпа́ пер; **бро́сить грана́ту** грана́та ывăт; **бро́сить оку́рок** чĕ́лĕм тĕпне́ пăра́х **2.** *кого-что* (*син.* напра́вить, посла́ть) яр, хыв, пăра́х; кĕрт;

бро́сить войска́ в бой çарсене́ çапăçăвắ кĕрт; **бро́сить все де́ньги в строи́тельство** пур пек укçа́-тенке́ строительствăна́ хыв **3**. *кого-что и с неопр. ф.* (*син.* оста́вить, поки́нуть) пăра́х, хăва́р, пăрахса́ кай; ча́рăн; **бро́сить дом** киле́ пăрахса́ кай; **бро́сить кури́ть** туртма́ пăра́х; **Бро́сьте шали́ть!** Ча́рăнăр ашкăнма́! ◆ **бро́сить взгляд** йăлт пăхса́ ил; **бро́сить жре́бий** шăпа́ яр; **бро́сило в жар** вĕрилентерсе́ пăра́хрĕ

бро́ситься (*будущ.* бро́шусь, бро́сишься, бро́сятся; *повел. ф.* бро́сься, *бро́сьтесь; деепр.* бро́сившись) *глаг. сов.* **1**. (*син.* устреми́ться, ки́нуться), ы́ткăн, ắнтăл, тапса́ сик; **бро́ситься в бой** çапăçăвắ ы́ткăн; **мы бро́сились им на по́мощь** эпи́р вĕсене́ пулăшма́ васка́рăмăр **2.** (*син.* прыгнуть) сик, чăм; **бро́ситься в во́ду** шыва́ сик ◆ **бро́ситься в глаза́** куç тĕлне́ пул; **вино́ бро́силось в го́лову** эре́х пуçа́ ка́йрĕ

бро́шка (-и), *множ.* **бро́шки** (-шек) *и* **брошь** (-и), *множ.* **бро́ши** (-ей), *сущ. жен.* бро́шка (*хĕрарăм капăрлăхĕ*); **бро́шка в фо́рме цветка́** чечек е́вĕрлĕ бро́шка

брошю́ра (-ы) *сущ. жен.*(*син.* кни́жка) брошю́ра, кĕнеке́ (*çу́хи*); **методи́ческая брошю́ра** мето́дика кĕнеки́

брус (-а) *сущ. муж.*; *множ.* **бру́сья** (-ьев) **1.** (*син.* ба́лка) пắрăс, каштá; **потоло́чные бру́сья** мачча́ каштисе́м **2.** **бру́сья** каштасе́м *(спорт хатĕрĕ)*; **выполня́ть упражне́ния на бру́сьях** каштасе́м çинче́ хăнăхтарусе́м ту

брусни́ка (-и) *сущ. жен.* кĕтме́л (*шурлăх çырли*); **собира́ть брусни́ку** кĕтме́л пуçта́р

брусо́к (-ска́) *сущ. муж.* (*син.* точи́ло) хăйра́, пĕле́в; **точи́ть нож на бруске́** çĕççе́ пĕлевпе́ хăйра́

бру́тто *неизм. прил. и нареч.* (*ант.* не́тто) бру́тто (*япалан, таварăн ещĕкĕпе пĕрле шутланă йывăрăшĕ*)

бры́згать (*наст.* -згаю, -згаешь, -згают *и* -зжу, -зжешь, -зжут; *повел. ф.* -згай *и* -зжи; *прич. действ. наст.* -згающий *и* -зжущий, *прош.* -згавший; *прич. страд. наст.* -згаемый; *деепр.* -згая *и* -зжа) *глаг. несов.* **1.** (*син.* разбра́сываться, рассе́иваться) си́рпĕн, пĕ´рхĕн, пĕ´рĕх, сала́н; **вода́ бры́зжет из кра́на** шыв кранра́н пĕрхĕнсе́ тухáть **2.** *на кого-что и что* (*син.* окропля́ть, опры́скивать) си́рпĕт, пĕрĕхте́р, сапала́; **бры́згать во́ду** шыв си́рпĕт

бры́зги (брызг) *сущ. множ.* си́рпĕнчĕк, тумламсе́м; тĕпренчĕксе́м; **бры́зги гря́зи** пы́лчăк си́рпĕнчĕкĕ

брю́ки (брюк) *сущ. муж.* шăлава́р; **лы́жные брю́ки** йĕ´лтĕрçĕ шăлава́рĕ; **гла́дить брю́ки** шăлава́р яка́т

брюне́т (-а) *сущ. муж.*(*ант.* блонди́н), **брюне́тка** (-и) *жен.* хура́ çын, хура́ çу́´çлĕ çын

брю́хо (-а) *сущ. сред.* вар, хы́рăм; **брю́хо аку́лы** аку́ла хы́рăмĕ

брюшно́й *прил.* вар-хы́рăм -ĕ; **брюшна́я по́лость** вар-хы́рăм хă´вăлĕ

бу́бен (бу́бна) *сущ. муж.* бу́бен *(пĕр енлĕ, хăнкăрмаллă параппан)*; **бить в бу́бен** бу́бен кала́, бу́бен çап

бубенцы́ (-о́в) *сущ. множ.; един.* **бубене́ц** (-нца́) *муж.* хăнкăрма́; **дуга́ с бубенца́ми** хăнкăрма́ллă пĕ´кĕ

бубно́вый *прил.* бу́бнă ...; **бубно́вая да́ма** бу́бнă майра́

бу́бны (бубён *и* бу́бен, бубна́м *и* бу́бнам) *сущ. множ.* бу́бнă *(карт вăййинче — хĕрлĕ тăваткаллă картсем)*; **ко́зыри — бу́бны** козырьте́ бу́бнă

бугó́р (бугра́) *сущ. муж.* тĕме́, тĕмеске́, тӳпе́м; **дом стои́т на бугре́** пӳрт тӳпемре́ ларать

буди́льник (-а) *сущ. муж.* буди́льник, вăра́ткăч *(палăртнă вăхăтра*

шăнкăравласа вăратакан сехет); **поста́вить буди́льник на семь часо́в** будильника́ çи́чĕ сехетĕ ларт

буди́ть (*наст.* бужу́, бу́дишь, бу́дят; *прич. действ. наст.* будя́щий, *прош.* буди́вший; *деепр.* будя́) *глаг. несов.* **1.** *кого* вăра́т *(ыйхăран)*; **буди́ть ра́но** ир-ире́х вăра́т **2.** *что* тапра́т, хуска́т, çура́т; **буди́ть мечты́** ĕ´мĕт çура́т

бу́дка (-и) *сущ. жен.* бу́дка, пу́рт; **сторожева́я бу́дка** хура́лçă пу´рчĕ; **трансформа́торная бу́дка** трансформа́тор будки́

бу́дни (-ей) *сущ. множ.* аха́ль кунсе́м, ĕç кунĕсе́м; **в пра́здники и в бу́дни** уяв кунĕсенче́ тата́ аха́ль кунсенче́

бу́дто 1. *союз* (*син.* как, сло́вно) пек, пекех, е́вĕр, е́вĕрлĕ; **вы́глядит бу́дто живо́й** чĕ´рĕ пекех курăна́ть **2.** *союз* (*син.* что) иккен, и́мĕш, тет, те́ççĕ; **говори́т, бу́дто сам э́то ви́дел** вăл çавна́ хăй ку́рнă тет **3.** *частица, выражает сомнение, недоверие* пу́лĕ, туйăна́ть, пек; **лицо́ бу́дто знако́мое** сăнра́н палла́нă пек туйăна́ть

бу́дущий[1] *прил.* (*син.* предстоя́щий, гряду́щий; *ант.* про́шлый, мину́вший) пула́с, кила́с, çитес; у́лĕмри́; **в бу́дущем году́** кила́с çул; **бу́дущее вре́мя** пула́с вă´хăт (*грамматикăра*) **2.** бу́дущее (-его) *сущ. сред.* (*ант.* про́шлое) пула́слăх, мала́шлăх, пуласси́; **в бу́дущем** малашне́, ӳ´лĕм; **его́ ждёт блестя́щее бу́дущее** у́нăн мала́шлăхĕ ча́плă

бу́дущность (-и) *сущ. жен.* (*ант.* про́шлое) пула́слăх, пуласси́; **бу́дущность страны́** çĕршы́в пула́слăхĕ

бу́йвол (-а) *сущ. муж.* бу́йвол *(ĕне йышши пысăк выльăх)*

бу́йный (*кратк. ф.* бу́ен, бу́йна *и* буйна́, бу́йно, *множ.* бу́йны) *прил.*, **бу́йно** *нареч.* **1.** (*син.* неи́стовый, бу́йный; *ант.* ти́хий) вă´йлă, а́вăк, аса́р-писе́р; **бу́йный ве́тер** а́вăк çил **2.** (*син.* своенра́вный, непоко́рный; *ант.* сми́рный) хая́р, кăра́, алхасу́ллă; **он ведёт себя́ бу́йно** вăл алхасса́ ка́йнă **3.** (*син.* оби́льный; *ант.* ску́дный) вă´йлă, илпе́к, а́кăш-ма́кăш; **бу́йные побе́ги** вă´йлă хунáв

бу́йствовать (*наст.* -вую, -вуешь, -вуют) *глаг. несов.* (*син.* неи́стовствовать) алха́с; ур, кă´тăр; **урага́н бу́йствовал весь день** çил-тă´вăл кунĕпе́ алха́срĕ

бу́ква (-ы) *сущ. жен.* сас палли́; **прописны́е бу́квы** пы́сăк сас паллисе́м (*А, Т, Ф т. ыт.*); **строчны́е бу́квы** пĕ´чĕк сас паллисе́м *(а, т, ф т. ыт.)*; **в сло́ве пропу́щена бу́ква** сăмахра́ сас палли́ сиктерсе́ хăвăрнă ◆ **бу́ква в бу́кву** шăп та шай; **сле́довать бу́кве зако́на** закона́ пĕр пăрăнмасăр пурнăçла́

буква́льный *прил.*, **буква́льно** *нареч.* **1.** (*син.* досло́вный) сăмахра́н сăма́х, улăштарма́н; **буква́льный перево́д** сăмахра́н сăма́х куçарни́ **2.** (*син.* то́чный, *прямо́й*) ту´рĕ, тӳрте́н, чăн; **испо́льзовать сло́во в буква́льном смы́сле** сăмаха́ ту´рĕ пĕлтерĕшпе́ кала́ **3.** (*син.* действи́тельно) чăна́х, чăннипе́х, шăп та лăп; **буква́льно пять мину́т наза́д** шăп пи́лĕк мину́т каялла́

буква́рь (-я) *сущ. муж.* буква́рь; **буква́рь с карти́нками** ӳке́рчĕклĕ буква́рь; **учи́ться чита́ть по букварю́** букварьпе́ вуламá вĕре́н

буке́т (-а) *сущ. муж.* чечек çыххи́; **буке́т черёмухи** çĕ´мĕрт чечекĕн çыххи́

букси́р (-а) *сущ. муж.* букси́р *(баржа туртакан карап)* ◆ **взять на букси́р** пулăшу́ пар

букси́рный *прил.* букси́р ..., букси́р -ĕ; **букси́рный ка́тер** букси́р ка́тер; **букси́рный трос** букси́р тро́сĕ

буксова́ть (*наст.* -су́ю, -су́ешь, -су́

ют) *глаг. несов.* буксăлá *(урапи çавpăнсан та малалла каяйман машина çинчен)*

булáвка (-и) *сущ. жен.* булáвка, майрá йĕппú; **скрепúть булáвкой** булавкăпá тытăнтáр

бýлка (-и) *сущ. жен.* бýлка, кулáч; **бýлка с мáком** мăʹкăньлĕ кулáч

бýлочная (-ой) *сущ. жен.* бýлочнăй, çăʹкăр лавккú

булы́жник (-а) *сущ. муж.* чăʹмăр чул, якá чул *(çул çине сармалли)*

бульвáр (-а) *сущ. муж.* бульвáр *(йывăç лартнă сарлака урам)*; **гулять по бульвáру** бульвартá уçăлсá çýрé

бульдóг (-а) *сущ. муж.* бульдóг *(кĕрнеклĕ, пуклак сăмсаллă йытă ăрачĕ)*

бульдóзер (-а) *сущ. муж.* бульдóзер *(çĕр хырса тĕкмелли кĕреçеллĕ машина)*; **очищáть бульдóзером ýлицу от снéга** урамá юртáн бульдозерпá тасáт

бульóн (-а) *сущ. муж.* (*син.* отвáр) шýрпе, бульóн *(аш е пахча çимĕç пĕçерни)*; **курúный бульóн** чăх шýрпи; ***грибнóй бульóн*** кăмпá бульóнĕ

бульóнный *прил.* шýрпе -ĕ, бульóн -ĕ; шýрпéлĕх, бульóнлăх; **бульóнное мя́со** шýрпéлĕх аш; **бульóнные кýбики** бульóн кубикĕсéм *(аш шýрпин концентрачĕ)*

бум (-а) *сущ. муж.* (*син.* подъём, оживлéние) çĕкленýʹ, аталанý; **строúтельный бум** строительствăрú çĕкленýʹ

бумáга (-и) *сущ. жен.* **1.** хут; **газéтная бумáга** хаçáт хýчĕ; **пúсчая бумáга** çырмаллú хут; **обёрточная бумáга** чĕркемеллú хут **2.** (*син.* докумéнт, рýкопись) хут; **деловы́е бумáги** ĕç хучĕсéм ◆ **цéнные бумáги** хáклă хутсéм (*банкрисем*); **Бумáга всё стéрпит** *посл.* Хут мĕн çырсáн та чăтáть

бумáжник (-а) *сущ. муж.* пăртманéт, карман (*укçа хумалли*)

бумáжный *прил.* хут ...; хут -ĕ; **бумáжная фáбрика** хут фабрикú; **бумáжный пакéт** хут хутáç

бундесвéр (-а) *сущ. муж* бундесвéр (*Германи çарĕ*)

бундесрáт (-а) *сущ. муж.* бундесрáт (*Германи парламенчĕ*)

бунт (-а) *сущ. муж.* (*син.* восстáние, мятéж) пăлхáв; **поднять бунт** пăлхáв çĕклé

бунтовáть (*наст.* -тýю, -тýешь, -тýют) *глаг. несов.* (*син.* восставáть) пăлхáн, пăлхáв çĕклé

бур (-а) *сущ. муж.* пăрá; **ледянóй бур** пăр пăрú (*пулăçсен*)

бурáв (-á) *сущ. муж.* пăрá (*алăпа ĕçлемелли*)

бурáвить (*наст.* -влю, -вишь, -вят) *глаг. несов.* пăралá (*алă пăрипе*)

бурáн (-а) *сущ. муж.* çил-тăмáн; **разыгрáлся бурáн** çил-тăмáн алхассá кáйрĕ

буржуази́я (-и) *сущ. жен.* буржуази́ *(капитализм чухне пуçпулса тăракан класс)*; **мéлкая буржуази́я** вак буржуази́

буржуáзный *прил.* буржуази́ -ĕ; буржуалла́; **буржуáзная демокрáтия** буржуалла́ демокрáти

бури́ть (*наст.* бурю́, бури́шь, буря́т) *глаг. несов.*, *что* пăралá (*машинăпа*); **бури́ть нефтяну́ю скважи́ну** нефть шăʹтăкĕ пăралá

бурли́ть *1 и 2 л. не употр., глаг. несов.* (*син.* кипéть, клокотáть) сиксé вĕрé, кĕрлé, лăкăртáт; **в котлé бурли́т водá** хурантá шыв сиксé вĕрéт ◆ **бурли́т нéнависть** куймáнлăх çĕкленéт

бýрный (*кратк. ф.* бýрен, бýрна *и* бурнá, бýрно, *множ.* бýрны) *прил.*, **бýрно** *нареч.* **1.** тăʹвăллă, çил-тăʹвăллă, асáр-писéр; **бýрное мóре** тăʹвăллă тúнĕс **2.** (*син.* рéзкий, стремúтельный) áвăк, çúвĕч; **бýрные порывы вéтра** áвăк çил **3.** (*син.* страстный,

нейстовый) хĕрӳ́, вắйлă; **бу́рно аплоди́ровать** хĕрӳ́ллĕн а́лă çуп

буровóй *прил.* пăралу́ -ĕ; пăраламаллú; **буровáя вы́шка** пăраламаллú вы́шка

бурундýк (-á) *сущ. муж.* пắрăнтăк *(çĕр çинче пурăнакан пакша евĕр чĕр чун)*; **норá бурундукá** пắрăнтăк щắтăкĕ

бу́рый *прил.* хắмăр, пắвăрлă; **бу́рый у́голь** хắмăр çĕр кắмрăк; **бу́рый конь** пắвăрлă ут; **бу́рый медве́дь** хắмăр упá

бурья́н (-а) *сущ. муж.* хыт хурá, çум кӳ́рăк (*вăрăмми*); **забро́шенный сад поро́с бурья́ном** пăрáхнă пахчанá çум кӳ́рăк пӳ́снă

бу́ря (-и) *сущ. жен.; множ.* **бу́ри** (бурь, бу́рям) тắвăл, çил-тắвăл; **бу́рей снесло́ кры́шу до́ма** тắвăл çурт тăрринé сӳ́сé пăрáхнă ◆ **бу́ря восто́ргов** каççá кайсá савăннú

бу́сы (бус) *сущ. множ.* шăрçá; **стекля́нные бу́сы** кĕленчé шăрçá; **носи́ть бу́сы** шăрçá çаксá çӳ́рé

бутербро́д (-а) *сущ. муж.* бутербро́д (*çăкăр татăкĕ тата ун çине хунă çимĕç*); **бутербро́д с ма́слом** çупá çắкăр; **бутербро́д с кра́сной икро́й** хĕ́рлĕ вăлчáллă бутербро́д

бутóн (-а) *сущ. муж.* папкá, чечéк папкú; **бутóны ро́зы** ро́за папкисéм; **бутóн раскры́лся** чечéк папкú çӳ́рăлнă

буты́лка (-и) *сущ. жен.* кĕленчé; **пивна́я буты́лка** сăрá кĕленчú; **литро́вая буты́лка** литр кĕленчú

буфéт (-а) *сущ. муж.* **1.** (*син.* стóйка) буфéт *(ĕçме-çиме сутакан пӳлĕм е вырăн)*; **буфéт в фойé теáтра** теáтр фойинчú буфéт **2.** буфéт (*савăтсапа, ĕçме-çиме тытмалли шкап*); **резнóй буфéт** кассá эрешлéнĕ буфéт

буха́нка (-и) *сущ. жен.* буха́нка *(кирпĕч евĕр çăкăр)*; **буха́нка чёрного хлéба** хурá çắкăр

бухга́лтер (-а) *сущ. муж.* бухга́лтер; **рабóтать бухга́лтером** бухгалтертá ĕçлé

бухгалте́рия (-и) *сущ. жен.* **1.** бухгалте́ри *(укçа-тенкĕ шутне туса пыни)*; **изуча́ть бухгалте́рию** бухгалтерие вĕрéн **2.** бухгалте́ри *(укçа-тенкĕ шутне тăвакан пай)*; **бухгалте́рия завóда** завóд бухгалтéрийĕ

бухга́лтерский *прил.* бухга́лтер -ĕ; бухгалте́ри -ĕ; **бухга́лтерские ку́рсы** бухгалтерсéн кýрсĕ; **бухга́лтерский учёт** бухгалте́ри шутлáвĕ

бушева́ть (*наст.* бушӳ́ю, бушӳ́ешь, бушӳ́ют; *повел. ф.* бушӳ́й; *прич. действ. наст.* бушӳ́ющий, *прош.* бушевáвший; *деепр.* бушӳ́я) *глаг. несов.* **1.** *1 и 2 л. не употр.* áхăр, алхáс; **мóре бушу́ет** тúнĕс ахăрáть **2.** (*син.* бӳ́йствовать) кắтăр, тúлĕр, тулáш; **бушева́ть в гне́ве** çилĕ́пé тулáш

бы, б *частица, употр. с глаг. прош. вр. или в неопр. ф.; выражает возможность действия, пожелание, опасение*: **купи́л бы, е́сли захоте́л** кắмăл пулсáн туя́нăттăм; **ты бы отдохну́л немно́го** канáсчĕ сáнăн кăштáх; **как бы де́ти не заблуди́лись в лесу́** ачасéм вăрмантá çухалсá ан кáйччăрччĕç

быва́ло *вводн. сл., при воспоминании прошлого*: **быва́ло, по́лные корзи́ны гриб о́в набира́ли** тéпĕр чухнé карçинккипé кăмпá пухáттăмăр

быва́ть (*наст.* -áю, -áешь, -áют; *повел. ф.* -áй; *прич. действ.наст.* -áющий, *прош.* -áвший; *деепр.* -áя) *глаг. несов.* **1.** *1 и 2 л. не употр.* (*син.* случáться, происходúть) пул, пулсá ирт; **в жи́зни вся́кое быва́ет** пурнăçрá тем те пулáть; **Не быва́ть э́тому!** Кун пек пӳ́лмĕ! **2.** пул, пулкалá; пырсá çӳ́рé, çитсé кур; **я ча́сто быва́ю у них** эпĕ вĕсéм патĕнчé час-часáх пулáтăп ◆ **как ни в чём не быва́ло** хăнк та мар; **Быва́йте здоро́вы!** Сы́вă пӳ́лăр! (*уйрăлнă чухне ырă сунни*)

бы́вший *прил.* (*син.* про́шлый; *ант.* ны́нешний)... пу́лнă; **он бы́вший полко́вник** вăл полко́вник пу́лнă; **её бы́вший муж** у́нăн упăшкú пулнăскéр

бык (-á) *сущ. муж.* вă´кăр; **племéнной бык** ăрáтлă вă´кăр; **дúкие быкú** кáйăк вăкăрсéм ◆ **здорóв как бык** сып-сы́вă

быстротá (-ы́) *сущ. жен.* (*син.* скóрость, стремúтельность) хă´вăртлăх; **с быстротóй мóлнии** çúçĕм пек хă´вăрт

бы́стрый *(кратк. ф.* быстр, быстрá, бы́стро, *множ.* бы́стры *и* быстры́; *сравн. ст.* быстрée *и* быстрéй; *превосх. ст.* быстрéйший) *прил.* (*син.* скóрый; *ант.* мéдленный), **бы́стро** *нареч.* хă´вăрт, васкáвлă, час; **бы́страя речь** хă´вăрт пуплéв, васкасá калаçни́; **быстрée всех** пуринчéн те хăвăртрáх; **я бы́стро приду́** э́пĕ часáх килéтĕп; **здесь течéние óчень бы́строе** кунтá шыв пúтĕ хă´вăрт юхáть

быт (-а, о бы́те, в быту́) *сущ. муж.* йăлá, кулленхú пу́рнăç; **э́то вошлó в быт** ку вăл йăланá кĕ´нĕ ◆ **слу́жба бы́та** йăлá службú *(çынсен кулленхи ыйтăвĕсемпе нушисене тивĕçтерекен учрежденисем)*

бытовóй *прил.* йăлá -ĕ, кулленхú пу́рнăç -ĕ; йăларú, кулленхú пурнăçрú; **бытовы́е услóвия** кулленхú пу́рнăç условийĕсéм; **предприя́тия бытовóго обслу́живания** кулленхú нушасенé тивĕçтерекéн предприятисéм

быть *(в наст. только 3 л.* есть; *прош.* был, былá, бы́ло, не был, не былá, нé было, *множ.* нé были; *будущ.* бу́ду, бу́дешь, бу́дут; *повел. ф.* будь; *прич. действ. прош.* бы́вший; *деепр.* бу́дучи) *глаг. несов.* **1.** (*син.* существовáть, имéться); пул, пур; **у нас есть собáка** пúрĕн йы́тă пур; **нé было свобóдного врéмени** ерçу́ пулмáрĕ **2.** (*син.* присýтствовать, находúться; *ант.* отсýтствовать) пул (*ăçта та пулин*); **Я цéлый день был в шкóле** Э´пĕ кунĕпéх шкултá пу́лнă; **Ты бу́дешь зáвтра дóма?** Э´сĕ ырáн килтé пулáтăн-и? **3.** (*син.* происходúть, случáться) пул, пулсá ирт; **э́то бы́ло давнó** ку вăл тахçанáх пу́лнă; **вчерá былá я́сная погóда** ĕнéр çантáлăк уя́рччĕ **4.** *употр. как часть составного сказуемого*: **самолёт был сбит** самолёта персé антáрнă; **мы бу́дем игрáть в шáшки** эпúр шашкăллá вы́льăпăр ◆ **былá не былá, будь что бу́дет** мĕн пулúн пулáть; **кто бы то нú был** кам пулсáн та; **что бы то нú было** мĕн пулсáн та

бюджéт (-а) *сущ. муж.* бюджéт *(тупăшпа тăкака шайласа тунă смета)*; **государ́ственный бюджéт** патшáлăх бюджéчĕ; **приня́ть бюджéт на год** çултáлăк бюджетнé йы́шăн

бюджéтный *прил.* бюджéт -ĕ; бюджетрú; **бюджéтный год** бюджéт çултáлăкĕ; **бюджéтные срéдства** бюджетрú укçá-тéнкĕ

бюллете́нь (-я) *сущ. муж.* **1.** (*син.* сообщéние) пĕлтерýˊ; хыпáр хýчĕ; **вы́весить бюллете́нь** хыпáр хýчĕ кăларсá çак **2. избира́тельный бюллете́нь** суйлáв бюллетéнĕ **3.** бюллетéнь *(чирлени çинчен панă хут)*; **закры́ть бюллете́нь** бюллетенé хуп; **находи́ться на бюллете́не** бюллетеньпé лар *(чирленĕ пирки)*

бюро́ *сущ. нескл. сред.* **1.** бюрó *(ертсе пыракан ушкăн)*; **профсою́зное бюро́** профсоюз бюрóвĕ **2.** бюрó (*организаци*); **а́дресное бюро́** адрес бюрóвĕ

бюрократ (-а) *сущ. муж.*, **бюрокра́тка** (-и) *жен.* бюрократ *(ĕçе ячĕшĕн тăвакан)*; **он поступа́ет как бюрокра́т** вăл бюрократлă хăтланáть

бюрократи́зм (-а) *сущ. муж.* бюрократлăх *(ĕçе ячĕшĕн туни, вăраха яни)*

бязь (-и) *сущ. жен.* пýс, катáн пир; **сорóчка из бя́зи** пýс кĕпе

В

в, во *предлог с вин. и предл. п.* **1.** *на вопросы «куда», «во что»* -а (-е); -на (-не); -ла (-ле); **войти́ в дом** пӳртӗ кӗр; **вовле́чь в рабо́ту** ӗҫӗ явӑҫтар; **пода́ть заявле́ние в институ́т** института́ кӗме́ заявле́ни пар; **игра́ть в ша́хматы** шахматла́ выля́ **2.** *на вопросы «где», «в чем»* -та (-те); -ра (-ре); -па (-пе); -лӑ (-лӗ); **мы живём в дере́вне** эпи́р ялта́ пурӑна́тпӑр; **ходи́ть в шу́бе** кӗрӗкпе́ ҫӳре́; **рома́н в трёх кни́гах** ви́ҫӗ кӗнеке́ллӗ рома́н; **конфе́ты в обёртке** чӗркенӗ канфе́т; **в пяти́ киломе́трах отсю́да** кунта́н пи́лӗк километрта́ ◆ **во мно́го раз бо́льше** нума́й хут ытлара́х; **он весь в отца́** вӑл ка́сна ла́ртна а́шшӗ; **не в оби́ду будь ска́зано** ан ҫилленсе́мӗр калани́шӗн; **э́то бы́ло в про́шлом году́** ку вӑл пӗ ́лтӗр пу́лнӑ

ваго́н (-а) *сущ. муж.* вакӳ́н, вагӧ́н; **проводни́к ваго́на** вагӧ́н проводни́кӗ; **купе́йный вагон** купе́ллӗ вагӧ́н; **разгружа́ть ваго́ны** вагонсене́ пуша́т; **прицепи́ть вагон к по́езду** вагона́ по́езд ҫумне́ кӑка́р

ва́жность (-и) *сущ. жен.* **1.** (*син.* значи́тельность) паха́лӑх, ки́рлӗлӗх, пӗлте́рӗш; **ва́жность сообще́ния** хыпа́р пӗлтерӗшӗ **2.** (*син.* горделивость) мӑна́ҫлӑх, каппа́йлӑх, мӑн кӑ ́мӑллӑх; **он напусти́л на себя́ ва́жность** вӑл мӑн кӑмӑлланата́ть

ва́жный (*кратк. ф.* ва́жен, важна́, ва́жно, *множ.* важны́ *и* ва́жны; *сравн. ст.* важне́е *и* важне́й, *превосх. ст.* важне́йший) *прил.*, **ва́жно** *нареч.* **1.** (*син.* значи́тельный; *ант.* незначи́тельный, пустя́чный) паха́, ки́рлӗ, пы́сӑк пӗлтерӗшлӗ; **ва́жный вопро́с** ки́рлӗ ыйту́; **ва́жное сообще́ние** пы́сӑк пӗлтерӗшлӗ хыпа́р **2.** (*син.* го́рдый, горделивый) мӑна́ҫлӑ, капа́йчӑк, мӑн кӑ ́мӑллӑ; **говори́ть с ва́жным ви́дом** мӑна́ҫлӑн кала́ҫ

ва́за (-ы) *сущ. жен.* ва́за *(чечек лартмалли е ҫимӗҫ хумалли шлемлӗ савӑт)*; **хруста́льная ва́за** хруста́ль ва́за; **поста́вить цветы́ в ва́зу** чечексене́ вазӑна́ ларт

вазели́н (-а) *сущ. муж.* вазели́н *(медицинӑра, техникӑра усӑ куракан маҫ)*; **сма́зать вазели́ном ру́ки** алла́ вазели́н сӗр

вака́нсия (-и) *сущ. жен.* вака́нси, вы́рӑн, пу́шӑ вы́рӑн, йышӑнма́н вы́рӑн *(ӗҫре)*; **на заво́де есть вака́нсия инжене́ра** заводра́ инжене́р вы́рӑнӗ пур

вака́нтный *прил.* (*син.* неза́нятый, свобо́дный) и́рӗклӗ, пу́шӑ, йышӑнма́н; **вака́нтная до́лжность** и́рӗклӗ ӗҫ вы́рӑнӗ

винто́вка (-и) *сущ. жен.* винто́вка; **малокали́берная винто́вка** пĕ́чĕк калúбрлă винто́вка; **стреля́ть из винто́вки** винтовкăрáн пер

виолонче́ль (-и) *сущ. жен.* виолончéль *(хĕлĕхлĕ музыка инструменчĕ)*; **смычо́к виолонче́ли** виолончéль сĕ́ркĕчĕ

виртуа́льный *прил.* (*син.* возмóжный; *ант.* действи́тельный, реа́льный) пулмá пултаракáн, шухăшрú *(чăн пурнăçри мар)*; **он живёт в виртуа́льном ми́ре** вăл шухăшрá сĕмленекéн тĕнчерé пурăнáть

ви́рус (-а) *сущ. муж.* ви́рус *(чир ертекен микроорганизм)* ◆ **компью́терный ви́рус** компью́тер ви́русĕ *(компьютерсен йĕркеллĕ ĕçне пăсакан ятарлă программа)*

ви́русный *прил.* ви́рус -ĕ; ви́руслă; **ви́русное заболева́ние** ви́руслă чир

виси́ть (*наст.* вишý, виси́шь, виси́т; *деепр.* висú) *глаг. несов.* çакăнсá тăр, усăнсá тăр; **шу́ба виси́т на гвозде́** кĕ́рĕк пăтарá çакăнсá тăрáть; **во́лосы вися́т пря́дями** çýç пайăркáн-пайăркáн усăнсá тăрáть

висо́к (виска́) *сущ. муж.* тăнлáв; **во́лосы на виска́х поседе́ли** тăнлаврú çýç кăвакáрнă

високо́сный *прил.*: **високо́сный год** тĕкéл çул *(тăватă çулта пĕрре килекен 366 кунлă çулталăк)*

витами́н (-а) *сущ. муж.* витами́н *(организмшăн питĕ кирлĕ органикăлла япала)*; **о́вощи — бога́тый исто́чник витами́нов** пахчá çúмĕç витаминрáн пúтĕ пуян

витами́нный *прил.* витами́н -ĕ; витами́нлă; **витами́нные препара́ты** витами́нлă эмелсéм; **витами́нное голода́ние** витами́н çитменнú *(анатра)*; **витами́нные корма́** витами́нлă вы́лăх апáчĕ *(сăм., утă çăнăхĕ)*

вито́к (витка́) *сущ. муж.* (*син.* оборóт) çáврăм, çаврá; ýнкă, çаврăннú; **вито́к про́волоки** пралýк унки́;

витóк спýтника вокрýг Земли́ спýтник Çĕр тавра́ пĕр хут çаврăнни́

витри́на (-ы) *сущ. жен.* витри́на, чӳречĕ́ *(таварсем хурса кăтартни)*; **газéтная витри́на** хаçа́т витрини́; **витри́ны магази́на полны́ проду́ктами** магази́н чӳречисенче́ апа́т-çи́мĕç нума́й

вить (*наст.* вью, вьёшь, вьют; *прош.* вил, вила́, ви́ло; *повел. ф.* вей; *прич. действ. наст.* вью́щий, *прош.* ви́вший; *прич. страд. прош.* ви́тый) *глаг. несов.* **1.** (*син.* скрýчивать, сплета́ть) яв, явала́, пĕ́тĕр; **вить верёвку** вĕре́н яв **2.** (*син.* де́лать, стро́ить) çа́вăр, хыв, ту; **пти́ца вьёт гнездо́** ка́йăк йăва́ çавăра́ть

ви́ться (*наст.* вьюсь, вьёшься, вьются; *прош.* ви́лся, вила́сь, вило́сь *и* ви́лось, *множ.* вили́сь *и* ви́лись; *повел. ф.* ве́йся; *прич. действ. наст.* вью́щийся, *прош.* ви́вшийся) *глаг. несов.* **1.** (*син.* обвива́ться) я́вăн, явкала́н; **вью́щиеся расте́ния** явăнака́н ӳсе́н-тăра́н **2.** (*син.* кружи́ться, изгиба́ться) пăтра́н, кускала́; **соба́ка вьётся у ног** йы́тă ура́ айĕнче́ кускала́ть **3.** (*син.* поднима́ться, кружи́ться) я́вăн, çĕкле́н, йăсăрла́н, мăкăрла́н; **над доро́гой вьётся пыль** çул çи́йĕн туса́н йăсăрлана́ть

вихрь (-я) *сущ. муж.* çавра́ çил; çил-тӑ́вăл; **ви́хрем снесло́ кры́шу до́ма** çил-тӑ́вăл çурт тăрринé сӳсé пăра́хрĕ

ви́це-адмира́л (-а) *сущ. муж.* ви́це-адмира́л *(флотри аслă командирсен — адмиралсен иккĕмĕш пусăмĕ, вăл çарти генерал-лейтенантпа танлашать)*

ви́це-президе́нт (-а) *сущ. муж.* ви́це-президе́нт, президе́нт çӳмĕ; **ви́це-президе́нт США** США ви́це-президе́нчĕ

вишнёвый *прил.* **1.** чиé -ĕ; **вишнёвый сад** чиé пахчи́; **вишнёвое варе́нье** чиé варе́нийĕ **2.** йĕ́пкĕн хĕ́рлĕ, чиé тĕ́слĕ; **вишнёвое пла́тье** чиé тĕ́слĕ кĕпе́

ви́шня (-и) *сущ. жен.* чиé; **я́годы ви́шни** чиé çырли́; **ви́шня цветёт** чиé чечĕ́к çӳрнă

вклад (-а) *сущ. муж.* **1.** укçа́-те́нкĕ, укçа́, ха́клăх (*банка хывни*); **вкла́ды населе́ния в сберега́тельном ба́нке** ха́лăх перекéт банкнé хы́внă укçа́ **2.** (*син.* достиже́ние) çитĕнӳ́, ӳ́сĕм; **вклад учёного в медици́ну** ӑ́слăхçă медицинăра́ тӳ́нă çитĕнӳ́

вкла́дчик (-а) *сущ. муж.*, **вкла́дчица** (-ы) *жен.* укçа́ хывака́н *(банка)*

включи́ть (*будущ.* -чу́, -чи́шь, -ча́т; *прич. страд. прош.* -чённый; *деепр.* -чи́в) *глаг. сов.* **1.** *кого-что во что* (*син.* ввести́, внести́; *ант.* исключи́ть, вы́вести) кĕрт, хушăнта́р; **включи́ть в спи́сок студе́нтов** студентсе́н списокнé çырса́ кĕрт **2.** *что во что* (*син.* присоедини́ть; *ант.* отключи́ть) çыхăнта́р, пĕрлеште́р; **включи́ть телефо́нный аппара́т в сеть** телефо́н аппаратнé сетьпé пĕрлеште́р **3.** (*ант.* вы́ключить) тапра́т, яр; **включи́ть дви́гатель** двигателé тапратса́ яр; **включи́ть свет** сӳ́тă çут

включи́ться (*будущ.* -чу́сь, -чи́шься, -ча́тся; *прич. действ. прош.* -чи́вшийся; *деепр.* -чи́вшись) *глаг. сов., во что* **1.** (*син.* присоедини́ться) хӳ́тшăн, пĕрле́ш, пӳ́çăн; **включи́ться в о́бщую рабо́ту** пĕрлехи́ ĕçé хӳ́тшăн **2.** *1 и 2 л. не употр.* тапра́н, ĕçлемé пуçла́; **мото́р включи́лся** мото́р ĕçлемé пуçла́рĕ

вкопа́ть (*будущ.* -а́ю, -а́ешь, -а́ют; *прич. страд. прош.* вко́панный) *глаг. сов., что во что* чавса́ ларт; **вкопа́ть в зе́млю столб** çĕре́ юпа́ чавса́ ларт; **стои́т как вко́панный** юпа́ пек хытса́ тăра́ть

вкра́дчивый *прил.* (*син.* льсти́вый, притво́рный), **вкра́дчиво** *нареч.* йăпăлти́, чеé; **говори́ть вкра́дчиво** йăпăлтатса́ кала́ç

вкра́сться (*будущ.* -адýсь, -адёшься, -адýтся; *прош.* -áлся, -áлась; *повел. ф.* -адúсь, -адúтесь; *прич. действ. прош.* -áвшийся; *деепр.* -áвшись) *глаг. сов., во что, 1 и 2 л. не употр.* кĕр, кĕрсé кай; **в текст вкра́лась оши́бка** текстá йăˊнăш кĕрсé кáйнă ◆ **вкра́сться в дове́рие** йăпăлтатсá шанăçá кĕр

вкра́тце *нареч.* кĕскéн; **рассказа́ть о де́ле вкра́тце** ĕç çинчéн кĕскéн каласá пар

вкруту́ю *нареч.* (*ант.* всмя́тку) хытăллá, чăмăрлá; **свари́ть я́йца вкруту́ю** чăмăрлá çăмартá пĕçéр

вкус[1] (-а) *сущ. муж., только един.* ту́тă ту́йăмĕ, ту́тă; **вкус пи́щи** апáт тутú; **го́рький на вкус** йӳˊçĕ ту́тă калáть; **про́бовать на вкус** тутансá пăх

вкус[2] (-а) *сущ. муж.; множ.* **вку́сы** (-ов) çурçý ту́йăмĕ, илéм ту́йăмĕ, илéм чухлáвĕ; **же́нщина со вку́сом** илемé туякáн хĕрáрăм ◆ **войти́ во вкус** еккинé яр, кăмăлá уç; **О вку́сах не спо́рят** *посл.* Илéм ту́йăмĕ кашнúн ăрасná

вку́сный *прил.* (*кратк. ф.* -сен, -снá, -сно, *множ.* сны́ *и* -сны; *сравн. ст.* -снée *и* -снéй; *превосх. ст.* -снéйший), **вку́сно** *нареч.* ту́тлă, тéхĕмлĕ; **вку́сный пиро́г** тéхĕмлĕ кýкăль; **здесь вку́сно ко́рмят** кунтá апатá ту́тлă çитерéççĕ

вла́га (-и) *сущ. жен.* (*син.* сы́рость) нӳˊрĕ, нӳˊрĕк; **по́чвенная вла́га** тăпрари́ нӳˊрĕк; **во́здух насы́щен вла́гой** сывлăш пúтĕ нӳˊрĕ

владе́лец (-льца) *сущ. муж.*, **владе́лица** (-ы) *жен.* хуçá хáрпăрлăхçă; **владе́лец магази́на** магазúн хуçи́

владе́ние (-я) *сущ. сред.* **1.** (*син.* иму́щество, со́бственность) хáрпăрлăх, пу́рлăх; **земе́льное владе́ние** харпăрлăхри́ çĕр **2.** (*син.* облада́ние) хуçá пулнú, пу́рлăх тытнú, харпăрлăхрá тытнú; **вступи́ть во владе́ние до́мом** çурт хуçи́ пулсá тăр

владе́ть (*наст.* -éю, -éешь, -éют) *глаг. несов.* **1.** *кем-чем* тыт, хуçá пул, харпăрлăхрá тыт; **владе́ть землёй** çĕр тыт **2.** *чем* пĕл, пултáр; **владе́ть ору́жием** хĕç-пăшáл тыткаламá пултáр; **он владе́ет англи́йским языко́м** вăл акăлчанлá пĕлéт

вла́жность (-и) *сущ. жен.* (*син.* сы́рость; *ант.* су́хость) нӳˊрĕлĕх; **вла́жность во́здуха** сывлăш нӳˊрĕлĕхĕ

вла́жный (*кратк. ф.* -жен, -жнá, -жно, *множ.* -жны́ *и* -жны) *прил.* (*син.* сырóй; *ант.* сухóй), **вла́жно** *нареч.* нӳˊрĕ, йĕпé; **вла́жная по́чва** нӳˊрĕ тăпрá; **вла́жная оде́жда** йĕпé тумти́р; **обтере́ться вла́жным полоте́нцем** нӳˊрĕ ал шăллипé шăˊлăн

вла́стный (*кратк. ф.* -тен, -тна *и* -тнá, -тно) *прил.*, **вла́стно** *нареч.* **1.** власть -ĕ; **вла́стные полномо́чия госуда́рственных о́рганов** патшáлăх органĕсéн власть полномочийĕсéм; **2.** кăрá, хы́тă кăˊмăллă; **он вла́стный челове́к** вăл хы́тă кăˊмăллă çын ◆ **не вла́стен над собо́й** хăйнé хăй чарáймáсть

власть (-и) *сущ. жен.; множ.* **вла́сти** (-éй) **1.** власть *(общество пурнăçне тытса, йĕркелесе пырас право)*; **государственная власть** патшáлăх влáçĕ; **о́рганы вла́сти на места́х** вырăнти́ власть органĕсéм **2.** úрĕк, ви́тĕм, вăˊйăм; **роди́тельская власть** áшшĕáмăшĕн úрĕкĕ; **власть употреби́ть** пăхăнтáр, витéр; **находи́ться во вла́сти предрасу́дков** тĕˊшмĕшлĕх витĕмĕнчĕ пу́рăн

вле́во *нареч.* (*ант.* впрáво) сулахаялá; **поверну́ть вле́во** сулахаялла пăˊрăн

влете́ть (*будущ.* влечу́, влети́шь, влетя́т; *деепр.* влетя́) *глаг. сов.* (*ант.* вы́лететь) вĕçсé кĕр; **в откры́тое окно́ влете́л воробе́й** úçă чӳречерéн çерçи́ вĕçсé кĕˊчĕ **2.** (*син.* вбежáть, ворва́ться) чупсá кĕр, ыткăнсá кĕр; **в ко́мнату влете́ли де́ти** пӳлĕмé ачасéм

чупсá кĕ´чĕç **3**. *безл., кому* (*син.* достáться) лек, тив; **шалунý влетéло от отцá** ашкăнчăкá ашшĕнчéн лéкрĕ

влия́ние (-я) *сущ. сред.* **1**. (*син.* воздéйствие) ви́тĕм, вă´йăм; **оказáть влия́ние на ход дел** ĕç-пуçá ви́тĕм кӳр **2**. (*син.* авторитéт) ят-сýм, ви́тĕм; **человéк с бóльши́м влия́нием** я́тлă-сýмлă çын

влия́тельный *прил.* (*син.* авторитéтный) я́тлă-сýмлă, ви́тĕмлĕ; **влия́тельный руководи́тель** я́тлă-сýмлă ертӳ´çĕ

влия́ть (*наст.* -я́ю, -я́ешь, -я́ют; *деепр.* -я́я) *глаг. несов., на кого-что* ви́тĕр, ви́тĕм кӳр, вă´йăм кӳр; **он плóхо влия́ет на детéй** вăл ачасенé я́пăх ви́тĕм кӳрéт

вложи́ть (*будущ.* вложý, влóжишь, влóжат; *прич. страд. прош.* влóженный) *глаг. сов., что во что* **1**. хыв, чик, кĕртсé хур; **вложи́ть письмó в конвéрт** çырăвá конвéрт ăшнé чик **2**. (*син.* поместúть, инвестúровать) хыв, хур; **вложи́ть дéньги в строи́тельство дóма** çурт тумá укçá хыв

влюби́ться (*будущ.* влюблю́сь, влю́бишься, влю́бятся; *повел. ф.* влюби́сь, влюби́тесь; *прич. действ. прош.* влюби́вшийся; *деепр.* влюби́вшись) *глаг. сов., в кого-что* (*ант.* разлюби́ть) юрáт, сав, юратсá пăрáх, савсá пăрáх; **Кóля влюби́лся в Вéру** Кóля Верăнá юратсá пăрáхнă

вмéсте **1**. *нареч.* (*ант.* отдéльно, врозь) пĕрлé, пĕр çĕ´рлĕн; **соберёмся все вмéсте** пýрте пĕрлé пуçтарăнáтпăр **2**. **вмéсте с** *кем-чем, предлог с твор. п.* -па (-пе) пĕрлé; **он пришёл вмéсте с отцóм** вăл ашшĕпé пĕрлé киĕлнĕ ◆ **вмéсте с тем** *союз* çавăнпá пĕрлéх

вмести́тельный *прил.* áслă, пысăк, шăнăçýллă; **вмести́тельный зал** áслă зал; **вмести́тельный фургóн** шăнăçýллă фургóн

вмéсто *кого-чего, предлог с род. п.* (*син.* взамéн) вырăннé; **я пóйду́ вмéсто тебя́** я́пĕ сан вырăннá кáйăп ◆ **вмéсто того́ что́бы** -ас (-ес) вырăннé; **Вмéсто того́ что́бы болта́ться по у́лице, де́лал бы ты уро́ки!** Урамрá çапкалансá çӳрéс вырăннé урóк тăвáсчĕ сáнăн!

вмеша́тельство (-а) *сущ. сред.* сĕкĕнӳ´, хутшăнý; сĕкĕнни́, хутшăнни́; **вооружённое вмеша́тельство** хĕçпăша́ллă хутшăнни́ *(ют çĕршыв ĕçĕсене)* ◆ **хирурги́ческое вмеша́тельство** хирýрг операци туни́

вмеша́ться (*будущ.* -а́юсь, -а́ешься, -а́ются; *прич. действ. прош.* -а́вшийся; *деепр.* -а́вшись) *глаг. сов., во что* (*син.* ввяза́ться) кĕр, хýтшăн, сĕ´кĕн; **вмеша́ться в спор** тавлашăвá кĕр

вмиг *нареч.* (*син.* моментáльно, срáзу) самантрáх; куç хупсá иличчéн; **самолёт вмиг исчéз из глаз** самолёт самантрáх куçрáн çухáлчĕ

внаймы́ *и* **внаём** *нареч.* тарá; **сдать дом внаймы́** çуртá тарá пар

внача́ле *нареч.* малтáн, малтанáх; **внача́ле нам пришло́сь тру́дно** малтанáх пирé йы́вăр ти́врĕ

вне *предлог с род. п.* **1**. (*ант.* в) тулашĕнчé; **отдыха́ть вне го́рода** хулá тулашĕнчé кан **2**. *чего* (*син.* помúмо) -сăр (-сĕр); **получи́ть това́р вне о́череди** тавáрá черéтсĕр ил ◆ **быть вне себя́** тарăхсá кай; **вне опáсности** хăрýшлăх çук; **объяви́ть вне зако́на** закóнсăр тесé пĕлтéр *(айăплă çынна, организацие)*; **вне вся́кого сомне́ния** ним иккĕленмеллú те çук

внебра́чный *прил.*: **внебра́чный ребёнок** мăшăрланмáсăр çурáтнă ачá

внедре́ние (-я) *сущ. сред.* **1**. ĕçé кĕртни́, ĕçé яни́; **внедре́ние изобрете́ния даёт большо́й эффе́кт** изобретениé ĕçé кĕртни́ пысăк пайтá парáть **2**. кĕртсé яни́, вă´рттăн кĕртни́;

внедре́ние аге́нта в престу́пную организа́цию преступникся́н организацине́ аге́нт кӗртсе́ яни́

внедри́ть (*будущ.* -рю́, -ри́шь, -ря́т; *прич. страд. прош.* -рённый; *деепр.* -ри́в) *глаг. сов.* **1.** *что во что* ӗçе́ кӗрт, ӗçе́ яр; **внедри́ть но́вую техноло́гию** çӗ́нӗ технологие́ ӗçе́ кӗрт **2.** кӗртсе́ яр, вӑ́рттӑн кӗрт *(разведка тума)*; **внедри́ть сотру́дника мили́ции в ба́нду** вӑ́рӑ-хура́х ушкӑнне́ мили́ци çыннине́ кӗртсе́ яр

внеза́пный *прил.* (*син.* неожи́данный), **внеза́пно** *нареч.* саса́ртӑк, са́рӑмсӑр, кӗтме́н çӗртӗ́н; **внеза́пная смерть** са́рӑмсӑр ви́лӗм; **внеза́пно подняла́сь мете́ль** кӗтме́н çӗртӗ́н çилтӑма́н ту́хрӗ

внекла́ссный *прил.* класс тулашӗнчи́; **внекла́ссные мероприя́тия** класс тулашӗнчи́ ӗççе́м

внеочередно́й *прил.* (*ант.* очередно́й) чере́тсӗр; **внеочередна́я се́ссия Госуда́рственного Сове́та** Патша́лӑх Кана́шӗн чере́тсӗр се́ссийӗ

внепла́новый *прил.* плана́ кӗртме́н, планпа́ пӑхма́н, планра́н ытла́; **внепла́новая проду́кция** планра́н ытла́ проду́кци

внести́ (*будущ.* внесу́, внесёшь, внесу́т; *прош.* внёс, внесла́, внесло́; *прич. действ. прош.* внёсший; *прич. срад. прош.* внесённый; *деепр.* внеся́) *глаг. сов.* **1.** *кого-что во что* (*ант.* вы́нести) йӑтса́ кӗр, çӗклесе́ кӗр; **внести́ в дом охо́тку дров** пӳрте́ пӗр çӗкле́м вӳтӑ çӗклесе́ кӗр **2.** *что* (*син.* уплати́ть) ту́ле́, хыв; **внести́ де́ньги в ка́ссу** кассӑна́ укса́ ту́ле́ **3.** *что* (*син.* предста́вить, дать) пар, тӑра́т, сӗн; **внести́ предложе́ние** сӗнӳ́ пар **4.** *кого-что во что* (*син.* включи́ть; *ант.* исключи́ть) кӗрт, хуш, хушса́ çыр; **внести́ попра́вки в зако́н** законна́ юсавсе́м кӗрт ◆ **внести́ раздо́ры** хирӗçтерсе́ яр; **внести́ я́сность** ӑнлантарса́ пар

внешко́льный *прил.* шкул тулашӗнчи́; **внешко́льные учрежде́ния** шкул тулашӗнчи́ учрежденисе́м

внешнеполити́ческий *прил.* (*ант.* внутриполити́ческий) тулашри́ поли́тика -ӗ; **внешнеполити́ческая де́ятельность госуда́рства** патша́лӑхӑн тулашри́ поли́тика ӗ́çӗ-хӗ́лӗ

внешнеторго́вый *прил.* тулашри́ суту́-илу́ -ӗ; **внешнеторго́вый оборо́т страны́** çӗршы́вӑн тулашри́ сутӳ-илӳ́ çӑвӑрнӑшӗ

вне́шний *прил.* (*ант.* вну́тренний) **1.** (*син.* нару́жный), **вне́шне** *нареч.* тула́ш, тулашри́, çиелти́; **вне́шняя среда́** пи́рӗн тулашри́ хӳтлӑх; **вне́шне всё обстои́т благополу́чно** çиелте́н пӑхма́ йӑлтах йӗркеллӗ; **вне́шние устро́йства компью́тера** компью́терӑн тулашри́ хатӗрсе́м **2.** тулашри́; **вне́шняя поли́тика** тулашри́ поли́тика ◆ **вне́шний вид** тула́ш ку́рӑм, сӑн-пи́т

вне́шность (-и) *сущ. жен.* **1.** (*син.* вид) тул, тула́ш, ку́рӑм; **вне́шность това́ра** тавӑра́н тула́ш ку́рӑмӗ **2.** (*син.* о́блик, нару́жность) сӑн-пи́т; **челове́к с прия́тной вне́шностью** чипе́р сӑн-пи́тлӗ çын

вниз *нареч.* (*ант.* вверх) **1.** аяла́, аялалла́, çӗрелле́; **спусти́ться вниз** аяла́ ан; **ветла́ кло́нится вниз** йӑмра́ çӗрелле́ та́йӑлнӑ **2.** анаталла́, юхӑм май; **теплохо́д идёт вниз** теплохо́д анаталла́ ана́ть **3. вниз по** *чему, предлог с дат. п.:* **идти́ вниз по ле́стнице** пусмапа́ ан

внизу́ 1. *нареч.* (*ант.* вверху́, наверху́) аялта́; **внизу́, под горо́й** аялта́, сӑрт айӗнче́ **2.** *чего, предлог с род. п.* айӗнче́; **приме́чание внизу́ страни́цы** страни́ца айӗнче́ асӑрхаттарса́ çырни́

вни́кнуть (*будущ.* -ну, -нешь, -нут; *прош.* вник, вни́кла, вни́кло; *прич. действ. прош.* вни́кший *и* вни́кнувший; *деепр.* вни́кнув *и* вни́кши) *глаг.*

сов. (*син.* поня́ть) ăнла́н, ăнланса́ ил, ăса́ ил; **вни́кнуть в суть де́ла** ĕç тупсăмне́ ăнланса́ ил

внима́ние (-я) *сущ. сред.* **1.** ти́млĕх, тим, тинкерӳ́; **слу́шать со внима́нием** ти́млĕн итле́; **обрати́ть внима́ние** асăрха́, тимле́; **приня́ть во внима́ние** ăса́ хыв **2.** (*син.* забо́та, чу́ткость) ти́млĕх, тăрăшу́лăх; тимлени́, тăрăшни́; **окружи́ть ветера́нов внима́нием** ветерансе́мшĕн тắрăш

внима́тельный *прил.*, **внима́тельно** *нареч.* **1.** (*син.* сосредото́ченный; *ант.* рассе́янный) ти́млĕ, тинкерӳ́ллĕ; **внима́тельно смотре́ть** тинкерсе́ пăх **2.** (*син.* забо́тливый, чу́ткий) ти́млĕ, тăрăшу́ллă; вашава́т; **внима́тельный уход за больны́ми** чи́рлĕ çынсене́ ти́млĕ пăхни́

вничью́ *нареч.* çĕнтерӳ́сĕр; **игра́ зако́нчилась вничью́** вắйă ника́м та çĕнтерменнипе́ вĕçле́нчĕ

вновь *нареч.* **1.** (*син.* сно́ва) калле́х, çĕнĕре́н, те́пĕр хут; **по́сле переры́ва мы вновь приняли́сь за рабо́ту** тăхта́в хы́ççăн эпи́р калле́х ĕçе́ ты́тăнтăмăр **2.** (*син.* впервы́е) çĕнĕре́н, халь çеç; **вновь постро́енные дома́** çĕнĕре́н туса́ ла́ртнă çуртсе́м

внук (-а) *сущ. муж.; жен.* **вну́чка** (-и) мăну́к; **у старико́в бо́лее десяти́ вну́ков** стариксе́н мăнуксе́м ву́ннăн ытла́

вну́тренний *прил.* (*ант.* вне́шний, нару́жный) **1.** шал -ĕ, шалти́, ăшĕнчи́; **вну́тренняя сторона́** шал е́нĕ; **вну́тренние о́рганы челове́ка** эте́мĕн шалти́ органĕсе́м **2.** чун -ĕ, чун хава́л -ĕ; ăшри́, чунри́; **вну́тренние побужде́ния** чун ту́ртăмĕ **3.** шалти́, çĕршыври́, патшалăхри́; **вну́тренняя поли́тика** шалти́ поли́тика; **вну́тренний ры́нок** çĕршыври́ ры́нок

вну́тренность (-и) *сущ. жен.* **1.** ăш, шала́ш; **вну́тренность избы́** пӳрт шала́шĕ **2.** **вну́тренности** (-ей) *множ.* ăш-чик, пы́ршă-а́ршă; **вну́тренности овцы́** су́рăх ăш-чи́кĕ

внутри́ **1.** *нареч.* (*ант.* снару́жи) шалта́, ăшра́; **внутри́ всё гори́т** ăшра́ йăлта́х çуна́ть; **покра́сить бак внутри́ и снару́жи** бака́ шалта́н та, тулта́н та сăрла́ **2.** *предлог с род. п.* (*син.* в; *ант.* вне) ăшĕнче́, варринче́; -ра (-ре); **фра́кции внутри́ па́ртии** партири́ ушкăнсе́м; **дупло́ внутри́ де́рева** йы́вăç ăшĕнчи́ хắвăл

внутрь **1.** *нареч.* (*ант.* нару́жу) ăша́, шала́; **приня́ть лека́рство внутрь** эме́л ăша́ ил, эме́л ĕç **2.** *предлог с род. п.* ăшне́, варрине́; -а (-е); **внутрь ле́са** вăрма́н варрине́, вăрмана́

внуше́ние (-я) *сущ. сред.* **1.** (*син.* возде́йствие) ĕнентерӳ́, ви́тĕм; ĕнентерни́, ви́тĕм кӳни́; **лече́ние больно́го внуше́нием** чи́рлĕ çын ăс-пуçне́ ви́тĕм кӳнипе́ сиплени́ **2.** (*син.* наставле́ние, поуче́ние) ăс пани́, тăн пани́, хытарса́ калани́; **оте́ц сде́лал внуше́ние сы́ну** а́шшĕ ывăлне́ хытарса́ кала́рĕ

внуши́тельный *прил.* **1. внуши́тельно** *нареч.* ви́тĕмлĕ, витермелле́, ăса́ тивмелле́; **внуши́тельно говори́ть** ăса́ тивмелле́ кала́ **2.** (*син.* большо́й) пы́сăк, капма́р (*япала, çурт*); кĕрне́клĕ, мắнă *(кĕлетке, тăлпу)*

во́бла (-ы) *сущ. жен.* во́бла, ву́плă, тип пу́лă

вовле́чь (*будущ.* -еку́, -ечёшь, -еку́т; *прош.* -ёк, -екла́, -екло́; *повел. ф.* -еки́; *прич. действ. прош.* -ёкший; *прич. страд. прош.* -ечённый; *деепр.* -ёкши) *глаг. сов., кого-что во что* (*син.* привле́чь) явăçта́р, ерт, хутшăнта́р; **вовле́чь в рабо́ту** ĕçе́ хутшăнта́р; **уча́щиеся вовлечены́ в спорти́вные се́кции** вĕренекенсене́ спорт секцийĕсене́ явăçта́рнă

во́время *нареч.* (*син.* своевре́менно) вăхăтра́, вắхăтлă, чуха́х; **мы пришли́ во́время** эпи́р шăп вăхăтра́ çи́трĕмĕр

во́все *нареч.* (*син.* совсе́м, соверше́нно) пача́х, вуҫе́х; кӑшт та; **я во́все не хоте́л его́ оби́деть** э́пӗ пача́х та ӑна́ ку́рентерёс темӗ́н

во-второ́ых *вводн. сл.* иккӗ́мӗшӗнче́н

вода́ (-ы́, на́ воду *и* на во́ду, по́ воду, по́д воду *и* под во́ду) *сущ. жен.; множ.* **во́ды** (вод, во́дам, во́дами, о во́дах) **1.** шыв; **роднико́вая вода́** ҫӑлку́ҫ шы́вӗ; **морска́я вода́** ти́нӗс шы́вӗ; **ведро́ воды́** пӗр витре́ шыв; **идти́ за водо́й** шыв ӑсма́ кай **2.** (*син.* напи́ток) шыв, ӗҫмӗ́; **газиро́ванная вода́** газла́нӑ шыв; **минера́льная вода́** минера́ллӑ шыв **3.** шыв, шыв-шу́р; **вну́тренние во́ды страны́** ҫӗршы́вӑн шалти́ шывӗсе́м *(юхан шывсем, тинӗссем, кӳлӗсем)*; **территориа́льные во́ды** чикӗри́ шывсе́м *(ҫӗршыв чиккине кӗрекен тинӗс тӑрӑхӗсем)* **4.** пуш сӑма́х, сӳ́пӗлтетӳ́; **в докла́де мно́го воды́** докладра́ пуш сӑма́х нума́й ◆ **как во́ды в рот набра́л** ҫӑварне́ шыв сы́пнӑ пек *(шарламасть)*; **их водо́й не разольёшь** вӗсене́ шыв сапса́ та уйӑра́ймӑн; **как в во́ду гляде́л** пӗлсе́ тӑ́нӑ пекех; **вы́йти сухи́м из воды́** шывра́н ти́пӗ тух; **вы́вести на чи́стую во́ду** тӑ́рӑ шыв ҫине́ кӑла́р

водеви́ль (-я) *сущ. муж.* водеви́ль *(кӗске камит)*; **поста́вить водеви́ль** водеви́ль лартса́ пар

води́тель (-я) *сущ. муж.* води́тель; **води́тель тролле́йбуса** тролле́йбус води́телӗ

води́тельский *прил.* води́тель -ӗ; **води́тельские права́** води́тель прависе́м *(документ)*

води́ть (*наст.* вожу́, во́дишь, во́дят; *прич. действ. наст.* водя́щий, *прош.* води́вший; *прич. страд. наст.* води́мый; *деепр.* водя́) *глаг. несов.* **1.** *кого-что* ертсе́ ҫӳ́ре́, ҫавӑтса́ ҫӳ́ре́; илсе́ кай, ертсе́ кай; **води́ть шко́льников на экску́рсию** шкул ачисене́ экскурсие́ илсе́ кай **2.** *что* (*син.* управля́ть) тыт, ҫӳ́ре́, тытса́ пыр; **учи́ться води́ть автомоби́ль** автомобильпе́ ҫӳремӗ́ вӗре́н **3.** *чем по чему* (*син.* дви́гать) шутя́р, хуска́т, йӗрле́; **води́ть карандашо́м по листу́ бума́ги** кӑранташпа́ хут листине́ йӗрлекеле́; **за́яц во́дит уша́ми** мулка́ч хӑлхине́ хускаткӑла́ть ◆ **води́ть дру́жбу** тусла́ш, ту́слӑ пу́рӑн

во́дка (-и) *сущ. жен.* эре́х, шу́рӑ эре́х

во́дный *прил.* шыв -ӗ; **во́дный тра́нспорт** шыв тра́нспорчӗ

водоворо́т (-а) *сущ. муж.* а́вӑр, ҫа́врӑнӑҫ шыв

водоём (-а) *сущ. муж.* шы́влӑх; **есте́ственные водоёмы** шыв-шур *(кӳлӗ, пӗве)*; **иску́сственные водоёмы** хайла́влӑ шыв усравӗсе́м

водола́з (-а) *сущ. муж.* водола́з *(шыв айӗнчи ӗҫсене тӑвакан)*

водола́зный *прил.* водола́з -ӗ; **водола́зный костю́м** водола́з тумти́рӗ

водопа́д (-а) *сущ. муж.* шыв сикки́, шарла́к, шарла́нкӑ

водопо́й (-бя) *сущ. муж.* шӑвару́; шӑварни́; **пригна́ть скот на водопо́й** выльӑха́ шӑвармӑ хӑваласа́ кил

водопрово́д (-а) *сущ. муж.* водопрово́д, шыв пӑ́рӑхӗ

водопрово́дный *прил.* водопрово́д -ӗ; шыв пӑ́рӑх -ӗ; **водопрово́дный кран** шыв пӑ́рӑх кра́нӗ

водоро́д (-а) *сущ. муж.* водоро́д *(хими элеменчӗ — ҫӑмӑл газ)*

водоро́дный *прил.* водоро́д -ӗ; **водоро́дная бо́мба** водоро́д бомби́

во́доросли (-ей) *сущ. множ.; един.* **во́доросль** (-и) *жен.* шыв ӳ́сӗмлӗхӗ, шыв ку́рӑкӗ; **пруд заро́с во́дорослями** пӗвене́ шыв ку́рӑкӗ пусса́ и́лнӗ

водохрани́лище (-а) *сущ. сред.* шыв усра́вӗ; **есте́ственные водохрани́лища** ҫут ҫанта́лӑк шыв усравӗсе́м; **во-**

дохрани́лище Чебокса́рской ГЭС Шупашка́р ГЭСĕн шыв усра́вĕ

водяни́стый *прил.* **1.** шыва́к, лечекé; **водяни́стый карто́фель** шыва́к çĕр улми́ **2.** (*син.* бесцве́тный) шупка́, тĕ́ссĕр; **водяни́стые глаза́** тĕ́ссĕр куç

водяно́й *прил.* шыв -ĕ; **водяно́й пото́к** шыв юххи́; **водяна́я ме́льница** шыв арма́нĕ

воева́ть (*наст.* вою́ю, вою́ешь, вою́ют; *повел. ф.* вою́й; *прич. действ. наст.* вою́ющий, *прош.* воева́вший; *деепр.* вою́я) *глаг. несов.* **1.** (*син.* сража́ться) ҫăпăҫ, вăрҫ; **воева́ть с врага́ми** тăшмансемпе́ ҫăпăҫ **2.** *с кем-чем и против кого-чего* (*син.* боро́ться) кĕре́ш; **воева́ть с предрассу́дками** ки́вĕ йăласемпе́ кĕре́ш

военко́м (-а) *сущ. муж.* (*сокр.*: вое́нный комиссáр) военко́м, ҫар комиссáрĕ; **военко́м респу́блики** респу́блика ҫар комиссáрĕ

военкома́т (-а) *сущ. муж.* (*сокр.*: вое́нный комиссариáт) военкома́т, ҫар комиссариáчĕ; **городско́й военкома́т** хулá ҫар комиссариáчĕ

вое́нно-возду́шный *прил.* сы́влăш ҫар -ĕ; **вое́нно-возду́шные си́лы страны́** ҫĕршы́вăн сы́влăш ҫар вăйĕсéм

вое́нно-морско́й *прил.* ти́нĕс ҫар -ĕ; **вое́нно-морско́й флот** ти́нĕс ҫар фло́чĕ

военнообя́занный (-ого) *сущ. муж.*, **военнообя́занная** (-ой) *жен.* ҫарá ти́вĕҫлĕ ҫын *(закон тăрăх ҫар службинче пулмалли)*

военноплéнный (-ого) *сущ. муж.*, **военноплéнная** (-ой) *жен.* вắрҫă тыткӑнҫи́; **ла́герь для военноплéнных** вắрҫă тыткӑнҫисéн ла́герĕ

вое́нно-промы́шленный *прил.*: **вое́нно-промы́шленный ко́мплекс** ҫар промы́шленность ко́мплексĕ

военнослу́жащий (-его) *сущ. муж.*, **военнослу́жащая** (-ей) *жен.* ҫар службинчи́ ҫын

вое́нный *прил.* **1.** вắрҫă -ĕ; вắрҫăллă; **вое́нное положе́ние** вắрҫăллă лару́-тăру́; **в вое́нное вре́мя** вắрҫă вăхăтĕнчé **2.** ҫар -ĕ; **вое́нная промы́шленность** ҫар промы́шленноҫĕ; **вое́нная фо́рма** ҫар формú; **нача́льная вое́нная подгото́вка** пуҫлáмăш ҫар вĕре́нĕвĕ **3. вое́нный** (-ого) *сущ. муж.* ҫар ҫынни́; **гру́ппа вое́нных** ҫар ҫынниséн ӳшкăнĕ

вождь (-я́) *сущ. муж.* ҫулпу́ҫ, ертӳ́ҫĕ; **вождь пле́мени** йăх пу́ҫĕ

во́жжи (-е́й) *сущ. множ.; един.* **вожжá** (-и́) *жен.* тилхепе́; **осла́бить во́жжи** тилхепенé пушáт

воз (-а *и* -у, о во́зе, на возу́) *сущ. муж.; множ.* **возы́** (-о́в) лав *(урапа е ҫуна)*; **воз с се́ном** ӳтă лáвĕ; **гружёный воз** тиéнĕ лав, тулли́ лав ◆ **це́лый воз новосте́й** ҫĕ́нĕ хыпáр лавĕпе́; **а воз и ны́не там** ĕҫ малá каймáсть

возбуди́ть (*будущ.* -ужу́, -уди́шь, -удя́т; *прич. страд. прош.* -уждённый) *глаг. сов.* **1.** *что* (*син.* вы́звать) хускáт, тапрáт, ҫурáт, вăрáт; **возбуди́ть аппети́т** апáт ҫиéс килтéр; **возбуди́ть любопы́тство** кăсăкланта́р **2.** *кого-что* (*син.* взволнова́ть) пăлхантáр, хумхантáр; **изли́шне возбуди́ть ребёнка** ачанá ытлашши́ пăлхантарсá яр **3.** *что* (*син.* поста́вить, предложи́ть) пуҫáр, пуҫлá, сĕн, ларт; **возбуди́ть вопро́с** ыйтý ларт; **возбуди́ть де́ло в суде́** судрá ĕҫ пуҫáр

возбужде́ние (-я) *сущ. сред.* **1.** (*син.* волне́ние) пăлханý, хумханý; **прийти́ в возбужде́ние** хумхансá кай **2.** пуҫарý, сĕнӳ́; пуҫарни́, пуҫлани́, сĕнни́, лартни́; **возбужде́ние уголо́вного де́ла** уголо́влă ĕҫ пуҫарни́

возбуждённый *прил.* (*син.* взволно́ванный), **возбуждённо** *нареч.* пăлха́нчăк, хумха́нчăк; **он говори́т возбуждённо** вăл пăлха́нчăклăн калаҫáть

возвести́ (*будущ.* -еду́, -едёшь, -еду́т; *повел. ф.* -еди́; *прич. действ. прош.*

-е́дший; *прич. страд. прош.* -едённый; *деепр.* -едя́) *глаг. сов.* **1.** *что* (*син.* соруди́ть, постро́ить) ларт, хăпа́рт, тусá ларт; **возвести́ зда́ние** çурт тусá ларт; **фунда́мент це́ха возведён бы́стро** цех никĕсне́ хăва́рт хăпа́ртнă **2.** *кого-что во что* (*син.* возвы́сить) хыв, хур, шутла́, кăла́р; **возвести́ в при́нцип** при́нцип вырăнне́ хур; **возвести́ во́ина в геро́и** салтака́ пăттăр тесе́ шутла́ ◆ **возвести́ клеве́ту** эле́к ту; **возвести́ на престо́л** патшана́ ларт; **возвести́ в сте́пень** степене́ ил *(математикăра — хисепе хăй çине степеньре кăтартнă чухлĕ хутлани)*

возврати́ть (*будущ.* -ащу́, -ати́шь, -атя́т; *прич. страд. прош.* -ащённый; *деепр.* -ати́в) *глаг. сов., кого-что* (*син.* верну́ть) та́вăр, тавăрса́ пар, каялла́ пар; **возврати́ть долг** па́рăм тат, кивçене́ тавăрса́ пар ◆ **возврати́ть к жи́зни** чĕрт, сыва́т *(виле пуçланă çынна)*

возврати́ться (*будущ.* -ащу́сь, -ати́шься, -атя́тся; *повел. ф.* -ати́сь, -ати́тесь; *прич. действ. прош.* -ати́вшийся; *деепр.* -ати́вшись) *глаг. сов.* (*син.* верну́ться) та́врăн, каялла́ кил; **возврати́ться из путеше́ствия** çул çу́ревре́н та́врăн

возвра́тный *прил.* **1.** (*ант.* безвозвра́тный) тавăру́ллă, тавăрмаллú; **возвра́тная ссу́да** тавăрмаллú ссу́да **2.** таврăну́ -ĕ *(грамматикăра)*; **возвра́тный глаго́л** таврăну́ глаго́лĕ *(сăм., вырăс чĕлхинче: мыться «çăвăн», смеяться «кул» т. ыт.)*; **возвра́тное местоиме́ние** таврăну́ местоиме́нийĕ *(вырăс чĕлхинче — себя)*

возвраще́ние (-я) *сущ. сред.* таврăну́; таврăнни́; **возвраще́ние из а́рмии** çартáн таврăнни́

возвыша́ться (*наст.* -а́юсь, -а́ешься, -а́ются) *глаг. несов.* (*син.* вы́ситься, поднима́ться) çĕкленсе́ тăр; **над го́родом возвыша́ется телевизио́нная ба́шня** хула́ çи́йĕн телеви́дени башни́ çĕкленсе́ тăра́ть

возвы́шенность (-и) *сущ. жен.* **1.** (*ант.* низи́на) сăрт, тӳпе́м, ви́ркĕс; çӳ́ллĕ вы́рăн; **дом стои́т на возвы́шенности** çурт çӳ́ллĕ вырăнта́ лара́ть **2.** (*ант.* ни́зменность) сắртлăх, тӳпе́м çĕр; **Валда́йская возвы́шенность** Валда́й сắртлăхĕ

возвы́шенный *прил.* (*ант.* ни́зменный) çӳ́ллĕ, ви́ркĕс, сắртлă; **возвы́шенное ме́сто** сắртлă вы́рăн **2.** (*син.* благорóдный; *ант.* ни́зменный) ча́плă, мăна́çлă; **возвы́шенный стиль** ча́плă стиль

возгла́вить (*будущ.* -влю, -вишь, -вят; *повел. ф.* -вь, -вьте; *прич. страд. прош.* -вленный) *глаг. сов., что* пуçа́р, пуç пул, ертсе́ пыр; **возгла́вить обще́ственное движе́ние** óбщество юхăмне́ ертсе́ пыр

возде́йствие (-я) *сущ. сред.* (*син. влия́ние*) *ви́тĕм, вắйăм, хисте́в*; *лека́рство оказа́ло положи́тельное возде́йствие* эме́л ы́рă ви́тĕм кӳ́чĕ

возде́йствовать (*наст.* -вую, -вуешь, -вуют) *глаг. сов. и несов., на кого-что* (*син.* повлия́ть) витĕ́р, хисте́, вăйăмла́, ви́тĕм кӳ́р, вắйăм кӳ́р; **возде́йствовать на умы́ люде́й** çынсе́н ăс-тăнне́ ви́тĕм кӳ́р

возде́лывать (*наст.* -аю, -аешь, -ают) *глаг. несов.* **1.** (*син.* обрабáтывать) çĕр ĕçле́, сухала́-сӳреле́; **возде́лывать зе́млю** çĕре́ сухала́-сӳреле́ **2.** (*син.* выра́щивать, разводи́ть) аксá ӳсте́р, лартсá ӳсте́р, аксá ту, лартсá ту; **возде́лывать карто́фель** çĕр улми́ лартсá ӳсте́р; **возде́лывать пшени́цу** тӳ́лă аксá ту

воздержа́ться (*будущ.* -жу́сь, -жишься, -жатся; *повел. ф.* -жи́сь, -жи́тесь; *прич. действ. прош.* -жа́вшийся; *деепр.* -жа́вшись) *глаг. сов., от чего* **1.** (*син.* отказа́ться) тытăнсá тăр, пăра́х; **воздержа́ться от куре́ния** чĕ́лĕм

туртмá пăрáх **2.** тытăнсá тăр, ан сасăлá; **воздержáщихся от голосовáния нé было** сасăламá тытăнсá тăракансéм пулмáн

вóздух (-а) *сущ. муж.* сывлăш; **свéжий вóздух** úçă сывлăш; **поднятьсá в вóздух** сывлăшá çĕклéн ◆ **поднятьсá на вóздух** сирпĕнтéр, аркáт, взрыв ту; **выйти на вóздух** пўртрéн тух, тулá тух; **нýжен, как вóздух** нимрéн ытлá кúрлĕ; **Вóздух**! Сывлăшрá хăрýшлăх! *(тăшман самолечĕсем килнине пĕлтерни)*

воздýшный *прил.* сывлăш -ĕ; сывлăшри; **воздýшное прострáнство** сывлăш хўтлăхĕ *(Çĕр тавращĕнчи)*; **воздýшный бой** сывлăшри çапăçý; **воздýшный трáнспорт** сывлăш трáнспорчĕ

возúть (*наст.* вожý, вóзишь, вóзят; *прич. действ. наст.* возя́щий, *прош.* возúвший; *прич. страд. наст.* возúмый; *деепр.* возя́) *глаг. несов.* **1.** *кого-что* (*син.* транспортúровать) туртта́р, илсé çýрé *(транспортпа)*; **возúть кирпúч на стрóйку** стройкăнá кúрпĕч туртта́р **2.** *чем по чему* (*син.* размáзывать) сĕр, сĕркелé, шăл; **возúть рукавóм по столý** сĕтелé çанăпá сĕркелé

возúться (*наст.* вожýсь, вóзишься, вóзятся; *прич. действ. наст.* возя́щийся, *прош.* возúвшийся; *деепр.* возя́сь) *глаг. несов.* (*син.* суетúться, хлопотáть) аппалáн, тăрмáш, айкáш; **возúться с велосипéдом** велосипедпá тăрмáш; **дéти вóзятся с игрýшками** ачасéм теттесемпé айкашáççĕ

вóзле 1. *нареч.* (*син.* ря́дом, блúзко) юнашáр, çýммăн, çывăхрá; **сесть ря́дом** çýммăн лар **2.** *кого-чего, предлог с род. п.* патĕнчé, çывăхĕнчé, çумĕнчé; **дерéвня раскúнулась вóзле рéчки** ял юхáн шыв хĕрринчé лара́ть

возместúть (*будущ.* -ещý, -естúшь, -естя́т; *прич. действ. прош.* -естúвший; *прич. страд. прош.* -ещённый; *деепр.* -естúв) *глаг. сов., что чем* (*син.* компенси́ровать) саплá, саплашта́р; **возместúть расхóды** тăкаксенé саплá

возмóжность (-и) *сущ. жен.* май, мел; **у нас нет возмóжности помóчь вам** пúрĕн сирé пулăшмá май çук ◆ **дать возмóжность** май пар; **по возмóжности** май пур тара́н, май пулсáн

возмóжный (*кратк. ф.* -жен, -жна, -жно) **1.** *прил.* (*син.* осуществúмый) пулмá пултарáс, пулмá пултаракáн; **зáвтра возмóжен дождь** ырáн çýмăр çумá пултараťь **2. возмóжно** *нареч. со сравн. ст.* май пур тара́н; **возмóжно скорée** май пур тара́н хăвăртрáх **3. возмóжно** *вводн. сл.* (*син.* вероя́тно) тен, пýлĕ; **возмóжно, он не знáет об э́том** тен, вăл кун çинчéн пĕлмéст

возмути́тельный *прил.*, **возмути́тельно** *нареч.* кирéвсĕр, тарăхмалла́, тарăхтаракáн; **возмути́тельный посту́пок** кирéвсĕр ĕç

возмути́ть (*будущ.* -ущý, -ути́шь, -ути́т; *прич. страд. прош.* -ущённый) *глаг. сов.* тарăхтáр; **я возмущён его́ ло́жью** вăл суйни́ мана́ тарăхтарсá я́чĕ

возмути́ться (*будущ.* -ущýсь, -ути́шься, -ути́тся; *деепр.* -ути́вшись) *глаг. сов.* тáрăх, тарăхсá кай *(киревсĕр ĕç пирки)*

возмущéние (-я) *сущ. сред.* (*син.* негодовáние) тарăхý; тарăхни́; **говори́ть с возмущéнием** тарăхсá калáç

возмущённый *прил.* (*син.* негоду́ющий), **возмущённо** *нареч.* тарăхýллă; тáрăхнă, тарăхсá; **возмущённо говори́ть** тарăхсá калáç

вознагражде́ние (-я) *сущ. сред.* (*син.* плáта) саплáв, тýлéв; саплани́, тýлени́; **досто́йное вознагражде́ние за труд** ĕ́çшĕн тивĕçлипе́ тýлени́

Вознесéние (-я) *сущ. сред.* Возне-

се́ни (*христиансен 12 чи пысăк уявĕнчен пĕри, Иисус Христос пĕлĕте çĕкленнине асăнса ăна Мăнкун хыççăн 40 кунтан палăртаççĕ*)

возни́кнуть (*будущ. только 3 л.* -ни́к, -нет, -ни́кнут; *прош.* -ни́к, -ни́кла, -ни́кли; *прич. действ. прош.* -ни́кший *и* -ни́кнувший; *деепр.* -ни́кнув) *глаг. сов.* (*син.* появи́ться, зароди́ться; *ант.* исчéзнуть) пуçлáн, çурáл, пул, тух, пулсá кай; **возни́кли тру́дности** йывăрлăхсéм тухсá тă´чĕç; **в селé возни́к пожáр** ялтá пушáр ту́хрĕ

возобнови́ть (*будущ.* -влю́, -ви́шь, -вя́т; *прич. страд. прош.* -влённый; *деепр.* -ви́в) *глаг. сов., что* каллéх тытăн, çĕнĕрéн пуçлá; **возобнови́ть рабо́ту** каллéх ĕçлемé тытăн

возражéние (-я) *сущ. сред.* (*ант.* согла́сие) хирĕçлéв; хи́рĕç калани́; **он не те́рпит возражéний** вăл хи́рĕç каланинé ту́смé пултаймáсть

возрази́ть (*будущ.* -ажу́, -зи́шь, -зя́т) *глаг. сов.* (*ант.* согласи́ться) хирĕçлé, хи́рĕç калá; **возрази́ть докла́дчику** докла́д тăваканá хи́рĕç калá

во́зраст (-а) *сущ. муж.; множ.* **во́зрасты** (-ов) çул, ӳ´сĕм, çул-ӳ´сĕм, çул шӳчĕ; **лю́ди ста́ршего во́зраста** áслă ӳсĕмри́ çынсéм; **в шко́льном во́зрасте** шкул çул-ӳсĕмĕнчé; **невзира́я на во́зраст** çул шутнé пăхмáсăр

возрастно́й *прил.* çул -ĕ, ӳ´сĕм -ĕ, çул-ӳ´сĕм -ĕ; **возрастны́е осо́бенности детéй** ачасéн çул-ӳ´сĕм уйрăмлăхĕсéм

возрасти́ (*будущ. только 3 л.* -растёт, -растýт; *прош.* -ро́с, -росла́, -росли́; *повел. ф. не употр.; прич. действ. прош.* -ро́сший; *деепр.* -ро́сши) *глаг. сов.* (*син.* увели́читься; *ант.* уме́ньшиться, сократи́ться) ӳс, пысăкла́н, хӳшăн; **дохо́ды возросли́** ту́пăш пысăкла́нчĕ

возроди́ть (*будущ.* -ожу́, -оди́шь, -оды́т; *прич. страд. прош.* -ождённый) *глаг. сов., кого-что* (*син.* восстанови́ть) чĕрт, çĕнéт, чĕртсé тăрáт, çĕнĕре́н çĕкле́; **возроди́ть наро́дные тради́ции** халăх йăли́-йĕркинé чĕртсé тăрáт; **возрождённый по́сле землетрясе́ния го́род** çĕр чĕтре́ннĕ хыççăн çĕнĕре́н çĕкле́нĕ хулá

возроди́ться (*будущ. только 3 л.* -оди́тся, -оды́тся; *прич. действ. прош.* -оди́вшийся; *деепр.* -оди́вшись) *глаг. сов.* (*син.* восстанови́ться) чĕ´рĕл, çĕнéл, чĕрĕлсé тăр, çĕнĕре́н çĕкле́н; **го́род возроди́лся по́сле войны́** хулá вă´рçă хыççăн çĕнĕре́н çĕкле́ннĕ

возрожде́ние (-я) *сущ. сред.* **1.** (*син.* восстановле́ние, возобновле́ние) чĕрĕлӳ´, çĕнелӳ´; чĕрĕлни́, çĕнелни́, чĕртсé тăратни́, çĕнĕре́н çĕкленни́; **возрожде́ние наро́дных ремёсел** халăх ал ăсталăхнé чĕртсé тăратни́ **2. Возрожде́ние** Чĕрĕлӳ´ *(Европăра вăтам ĕмĕрсем хыççăн пулнă вăйлă аталану);* **эпо́ха Возрожде́ния** Чĕрĕлӳ´ саманú

во́ин (-а) *сущ. муж.* салтáк, çар çынни́; **росси́йские во́ины** Раççéй çар çыннисéм; **во́ин-артиллери́ст** артиллéри салтáкĕ ◆ **Оди́н в по́ле не во́ин** *посл.* Пĕччéн вăйпá çĕнмé çук

во́инский *прил.* **1.** салтáк -ĕ, çар çынни́ -ĕ; **во́инский долг** çар çынни́н тивĕçĕ; **во́инская до́блесть** салтáк хастáрлăхĕ **2.** çар -ĕ; **во́инский биле́т** çар билéчĕ; **во́инская часть** çар чáçĕ

вой (во́я) *сущ. муж.* улý, ӳлéв; улани́, ӳлени́; **вой во́лка** кáшкăр улани́; **с во́ем пролета́ют снаря́ды** снарядсéм ӳлесé иртсé каяççĕ

во́йлок (-а) *сущ. муж.* (*син.* кошмá) кĕççé, кашмá; **оби́ть дверь во́йлоком** алăкá кĕççé çап

во́йлочный *прил.* кĕççé ..., кĕççé -ĕ; **во́йлочные ту́фли** кĕççé пушмáк

война́ (-ы́) *сущ. жен.;* **во́йны** (войн,

вóйнам) *множ.* (*ант.* мир) вă´рçă; **граждáнская войнá** грáждан вăрçи́; **отéчественная войнá** тăвáн çĕршы́в вăрçи́; **объяви́ть войну́** вă´рçă пуçла; **вести́ войну́** вă´рçă вăрç ◆ **холóдная войнá** си́вĕ вă´рçă *(патшалăхсен ушкăнĕсем пĕр-пĕринпе çивĕччĕн хирĕçсе пурăнни)*

войскá (войск, -ám) *сущ. множ.; един.* **вóйско** (-а) *сред.* çар, çарсéм; **сухопýтные войскá** тип çĕр çарĕсéм; **внýтренние войскá** шалти́ çарсéм *(çĕршыври хирĕçлĕхсене тытса параканнисем)*; **разгромúть войскá протúвника** тăшмáн çарĕсенé аркатсá тăк

войскóвой *прил.* çар -ĕ; **войскóвóе соединéние** çар пĕрлéшĕвĕ

войтú (*будущ.* войдý, войдёшь, войдýт; *прош.* вошёл, вошлá, вошлú; *повел. ф.* войди́; *прич. действ. прош.* вошéдший; *деепр.* войдя́) *глаг. сов., во что* **1.** (*син.* вступúть; *ант.* вы́йти) кĕр; **войти́ в кóмнату** пýлĕмé кĕр; **Мóжно войти́?** Кĕмé юрáть-и? **2.** (*син.* включúться) кĕр; хýтшăн; **он вошёл в состáв комитéта** вăл комитéт йышнé кĕ´нĕ **3.** (*син.* уместúться) кĕр, шă´нăç, вырнáç; **вéщи не вошлú в сýмку** япаласéм сумкăнá шăнăçмáрĕç ◆ **войти́ в привы́чку** хăнăхăвá кĕр; **войти́ в си́лу** вăя́ кĕр, вăй ил; **войти́ во вкус** иленсé çит, еккинé яр

вокáл (-а) *сущ. муж.* юрă ăстáлăхĕ, юрлáс ăстáлăх

вокалúст (-а) *сущ. муж.*, **вокалúстка** (-и) *жен.* юрăçă, юрă ăстú

вокáльный *прил.* юрă -ĕ, юрлáв -ĕ, юрăçă -ĕ, юрлáвçă -ĕ; **вокáльное искýсство** юрлáв ăстáлăхĕ; **вокáльный ансáмбль** юрăçăсéн ансáмблĕ

вокзáл (-а) *сущ. муж.* вокзáл; **железнодорóжный вокзáл** чугýн çул вокзáлĕ; **речнóй вокзáл** юхáн шыв вокзáлĕ

вокзáльный *прил.* вокзáл -ĕ; вокзалтú; **вокзáльное здáние** вокзáл çýрчĕ; **вокзáльный буфéт** вокзалтú буфéт

вокрýг 1. *нареч.* (*син.* кругóм) йĕрúтаврá, таврарá, тавралла́; **вокрýг дремýчий лес** йĕрú-таврá чă´тлăх вăрмáн; **оглядéться вокрýг** тавралла́ пăхсá çăврăн **2.** *кого-чего, предлог с род. п.* (*син.* óколо) таврá, таврашĕнчé; **дéти пляшут вокрýг ёлки** ачасéм ёлка таврá ташлáççĕ

волгáрь (-я́), **волжáнин** (-а) *сущ. муж.*, **волжáнка** (-и) *жен.* Атăл çынни́ *(Атăл тăрăхĕнче пурăнакан)*

волдырь (-я́) *сущ. муж.* хă´мпă, хă´мпăлчă *(ýт-тир çине тухни)*; **волдырь от ожóга** пĕçертнипé тýхнă хă´мпăлчă

волевóй *прил.* (*ант.* безвóльный) çирĕп кă´мăллă, хастáр; **волевóй командúр** çирĕп кă´мăллă командúр

волейбóл (-а) *сущ. муж.* волейбóл; **игрáть в волейбóл** волейболлá выля́

волейболúст (-а) *сущ. муж.*, **волейболúстка** (-и) *жен.* волейболúст, волейбóлçă; **соревновáния волейболúстов** волейболистсéн ă´мăртăвĕ

волейбóльный *прил.* волейбóл -ĕ; **волейбóльный мяч** волейбóл мéчĕкĕ

вóлей-невóлей *нареч.* (*син.* вы́нужденно) ирĕксĕрéх; **вóлей-невóлей пришлóсь согласúться** ирĕксĕрéх килĕшмеллé пýлчĕ

вóлжский *прил.* Атăл -ĕ; **вóлжский бéрег** Атăл çыранĕ

волк (-а) *сущ. муж.; множ.* **вóлки** (-óв) кáшкăр; **охóта на волкóв** кáшкăр сунáрĕ; **гóлоден как волк** кáшкăр пекéх выçă ◆ **Вóлка нóги кóрмят** *посл.* Кáшкăр хырăмĕ урипé тăранáть; **Волкóв бояться — в лес не ходúть** *посл.* Кашкăртáн хăрасáн вăрмана́ каймаллú çук; **морскóй волк** вáтă, ăстá моря́к

волкодáв (-а) *сущ. муж.* кáшкăр тытáн *(пысăк, вăйлă йытă ăрачĕ)*

волна́ (-ы) *сущ. жен.; множ.* во́лны (волн, волна́м *и* во́лнам, волна́ми *и* во́лнами, о волна́х *и* о во́лнах) **1.** хум; **морски́е во́лны** ти́нĕс хумĕсе́м; **во́лны бью́тся о бе́рег** хумсе́м çырана́ çапа́ççĕ **2.** хум *(физика пулăмĕ)*; **звуковы́е во́лны** са́сă хумĕсе́м; **коро́ткие во́лны** кĕске́ хумсе́м *(радио ĕçĕнче)*

волне́ние (-я) *сущ. сред.* **1.** хумхану́, *хумлану́*, чӳхену́; *хумханни́, хумланни́*, чӳхенни́; **волне́ние на мо́ре** ти́нĕс хумханни́ **2.** (*син.* трево́га, беспоко́йство) хумхану́, пăлхану́, пăшăрхану́; хумханни́, пăлханни́, пăшăрханни́; **прийти́ в волне́ние** пăлхансá кай **3.** *обычно множ.* **волне́ния** пăлха́в, пăлхану́; **волне́ния студе́нтов** студентсе́м пăлханни́

волнова́ть (*наст.* -ну́ю, -ну́ешь, -ну́ют; *повел. ф.* -ну́й; *прич. действ. наст.* -ну́ющий, *прош.* -нова́вший; *прич. страд. наст.* -ну́емый; *деепр.* -ну́я) *глаг. несов.* **1.** *что* хумхантáр, хумлá, хум çĕкле́, хум кăлáр; **ве́тер волну́ет во́ду** çил шыва́ хумхантараáть **2.** *кого* (*син.* трево́жить, беспоко́ить) хумхантáр, пăлхантáр, пăшăрхантáр; **нас э́то не волну́ет** ку пире́ хумхантармáсть

волнова́ться (*наст.* -ну́юсь, -ну́ешься, -ну́ются; *повел. ф.* -ну́йся, -ну́йтесь; *прич. действ. наст.* -ну́ющийся, *прош.* -нова́вшийся; *деепр.* -ну́ясь) *глаг. несов.* **1.** *1 и 2 л. не употр.* хумха́н, хумлáн; **мо́ре волну́ется** ти́нĕс хумханáть **2.** (*син.* трево́житься, беспоко́иться) хумха́н, пăлха́н, пăшăрха́н; **волнова́ться о де́тях** ачасе́мшĕн пăшăрха́н

волокно́ (-á) *сущ. сред.; множ.* **воло́кна** (-о́кон, -о́кнам) сӳс; **льняно́е волокно́** йĕ́тĕн сӳ́сĕ; **синтети́ческое волокно́** синтéтик сӳс **2.** чĕ́лкĕм, пáйрăм *(чĕрĕ организмăн)*; **не́рвные воло́кна** нерв пайрăмĕсе́м

во́лос (-а) *сущ. муж.; множ.* **во́лосы** (-о́с, -оса́м) çӳç, çăм, тĕк *(чĕр чунсен)*; **кудря́вые во́лосы** кăтрá çӳç; **расчеса́ть во́лосы** çӳçé турá ◆ **ко́нский во́лос** лашá хĕ́лĕхĕ *(хӳри, çилхи)*; **ни на во́лос** кăшт та, чĕрне́ хури́ чӳхлĕ те; **во́лосы вста́ли ды́бом** çӳç вирелле́ тắчĕ

волоса́тый *прил.* çӳçлеме́с, çăмламáс, çắмлă, тĕ́клĕ; **волоса́тый мужчи́на** *çӳçлеме́с арçы́н*

волосо́к (-ска́) *сущ. муж.* çӳç пĕрчи́, çăм пĕрчи́ ◆ **волосо́к часо́в** сехе́т пружинки́; **на волосо́к** *от чего-либо* çывăхĕнчéх; **на волоске́ де́ржится** аран тытáнсá тăрáть

во́лость (-и) *сущ. жен.* вӳлăс *(1929 çулччен пирĕн çĕршывра пулнă администраци-территори единици— уезд пайĕ)*

во́лчий *прил.* ка́шкăр -ĕ; кашкăрлá, кашкăрăнни́ пек; **во́лчья шку́ра** ка́шкăр ти́рĕ; **во́лчий аппети́т** ка́шкăр пек выçă

волчи́ца (-ы), **волчи́ха** (-и) *сущ. жен.* ка́шкăр ами́, ама́ ка́шкăр

волчо́нок (-нка) *сущ. муж.; множ.* **волча́та** (-а́т) ка́шкăр çури́

волше́бник (-а) *сущ. муж.* (*син.* колдýн, чародéй), **волше́бница** (-ы) *жен.* (*син.* колдýнья) асáмçă, тухáтмăш; **ска́зочные волше́бники** юмахри́ асамçăсе́м

волше́бный *прил.* **1.** (*син.* колдовско́й) асáмлă; **волше́бные ска́зки** асáмлă юмахсе́м **2.** (*син.* очарова́тельный, плени́тельный) илéмлĕ, хӳ́хĕм, илĕртӳ́ллĕ, ытараймú; **волше́бная красота́ ле́са** вăрмáнăн ытараймú илéмĕ; **волше́бная мело́дия** илĕртӳ́ллĕ кĕ́вĕ

волшебство́ (-á) *сущ. сред.* (*син.* колдовство́, чародéйство) асáм, тухатӳ́

волье́ра (-ы) *сущ. жен. и* **волье́р** (-а) *муж.* вольерá, чи́тлĕх *(чĕр чун-*

сене усрамалли сетка карна́ пу́лĕм); **волье́ра для лис** ти́лĕ чи́тлĕхĕ

во́льный *прил.* (*кратк. ф.* во́лен, вольна́, во́льно, *множ.* во́льны *и* вольны́), **во́льно** *нареч.* **1.** (*син.* незави́симый; *ант.* поднево́льный, зави́симый) и́рĕк, и́рĕклĕ, пăхăнма́н; **во́льный наро́д** и́рĕклĕ ха́лăх **2.** (*син.* неограни́ченный; *ант.* ограни́ченный, регули́руемый) и́рĕклĕ, чаруламáн; **продава́ть това́ры по во́льным це́нам** тавара́ и́рĕклĕ хаксемпе́ сут **3.** (*син.* нескро́мный, развя́зный; *ант.* скро́мный) и́ртĕнчĕк, пуçта́х, этĕпсĕр; **он де́ржит себя́ во́льно** вăл этĕпсĕр хăтланáть ◆ **во́льные движе́ния** и́рĕклĕ хусканусе́м (*гимнастика* ха*тĕрĕсемсĕр тăвакан хăнăхтарусем*); **во́льная борьба́** и́рĕклĕ кĕрешӳ´ *(кĕрешӳ спорчĕн пĕр тĕсĕ)*; **во́льному во́ля** хăвăннĕ ху пĕл; **Во́льно!** Ирĕклĕ тă´рăр! (*стройри команда*)

во́ля[1] (-и) *сущ. жен.* **1.** (*ант.* безво́лие) çи́рĕп кă´мăл; **воспи́тывать си́лу во́ли** кăмăла́ çирĕплéт **2.** (*син.* стремле́ние) ăнтăлу́, тăрăшу́, кă´мăл; ăнтăлни́, тăрăшни́; **во́ля к побе́де** çĕнтерме́ ăнтăлни́ **3.** (*син.* тре́бование) и́рĕк, хушу́; хушни́; **он испо́лнил во́лю роди́телей** вăл а́шшĕ-ámăшĕ хýшнă пек ту́нă ◆ **во́лею слу́чая** ăнсăртрáн; **э́то не в на́шей во́ле** ку пирĕнтéн килмéст

во́ля[2] (-и) *сущ. жен.* (*син.* свобóда; *ант.* невóля) и́рĕк, и́рĕклĕх; **вы́йти на во́лю** ирĕке́ тух

вон[1] *частица* **1.** *указывает на происходящее в некотором удалении* áвă, ав; **вон там** ав çавăнтá; **вон идёт наш това́рищ** áвă пи́рĕн юлта́ш килéт **2.** *подчеркивает меру, степень, количество* ав; иккéн; **вон ско́лько у меня́ книг** ав мĕн чýхлĕ кĕнеке́ мáнăн; **вон како́й ты си́льный** э́сĕ апла́х вă´йлă иккéн ◆ **Вон оно́ что!** Áвă епле́ иккéн! *(тĕлĕннине палăртни)*

вон[2] **1.** *нареч.* (*син.* нару́жу) тулалла́, аяккалла́; **вы́нести ве́щи вон** япаласене́ тула́ илсе́ тух (*пӳртрен*) **2.** *междом.* (*син.* прочь) тухсá кай, тасáл, çухáл *(хушса калани)*; **Вон все отсю́да!** Тухсá кáйăр пýрте кунтáн!

вонзи́ть (*будущ.* вонжу́, вонзи́шь, вонзя́т; *прич. страд. прош.* вонзённый; *деепр.* вонзи́в) *глаг. сов., что в кого-что* (*син.* воткнýть) чик, тир, тăрăнтáр; **вонзи́ть нож в грудь** çĕçĕпе́ кăкăртáн чик

вонзи́ться *1 и 2 л. не употр.* (*будущ.* -и́тся, -я́тся; *прич. действ. прош.* -и́вшийся; *деепр.* -и́вшись) *глаг. сов.* чи́кĕн, тă´рăн, тир, ти́рĕн; **игóлка вонзи́лась в па́лец** йĕп пýрнене ти́рĕнчĕ

воображе́ние (-я) *сущ. сред.* (*син.* фантáзия) ăс вĕçни́, шýхăш вĕçни́, ăсрá сăнарланни́; **бога́тое воображе́ние писа́теля** çырáвçă ăсĕнче́ темтéм сăнарланни́

вообрази́ть (*будущ.* -ажу́, -рази́шь, -азя́т) *глаг. сов.* **1.** *кого-что* (*син.* предстáвить) ăсá вĕçтéр, ăсрá сăнарлá, ăсрá ýкĕр; **я вообрази́л морско́й бе́рег** э́пĕ ăсрá ти́нĕс çыранне́ ýкéртĕм **2.** *кого кем-чем и с союзом «что»* (*син.* предположи́ть, счесть) шутлá, туй, сĕмлéн; **он вообрази́л себя́ тала́нтливым по́этом** вăл хăйне́ пултарýллă сă´вăç тесé шутлáть

вообще́ *нареч.* **1.** (*син.* обобщённо) пĕтĕмĕшлé, пĕ´тĕммĕн; **вообще́ э́то ве́рно** пĕ´тĕмĕшлé ку тĕ´рĕс; **я говорю́ о нас вообще́** э́пĕ хáмăр çинчéн пĕ´тĕммĕн калáтăп **2.** (*син.* совершéнно) пачáх, вуçéх; **у меня́ вообще́ нет де́нег** мáнăн укçá вуçéх çук

воодушеви́ть (*будущ.* -влю́, -ви́шь, -вя́т; *прич.страд. прош.* -влённый; *деепр.* -ви́в) *глаг. сов.* хавхалантáр, çĕклентéр, кăмăлá çĕклé; **мы воодушевлены́ пе́рвыми побе́дами** малтанхи́ çĕнтерýсем пирé хавхалантарáççĕ

воодушевле́ние (-я) *сущ. сред.* (*син.*

подъём; *ант.* уны́ние, пода́вленность) хавхалану́, çĕкленӳ́, çĕкле́нчĕк кắмăл; **говори́ть с воодушевле́нием** хавхаланса́ кала́ç

вооруже́ние (-я) *сущ. сред.* **1.** (*ант.* разоруже́ние) хĕç-пăшаллану́; хĕç-пăшалланни́; **уско́ренное вооруже́ние** васкаса́ хĕç-пăшалланни́ **2.** (*син.* ору́жие) хĕç-пăша́л; **но́вые ви́ды ору́жия** çĕ́нĕ йышши́ хĕç-пăша́л

вооружённый *прил.* (*ант.* безору́жный) хĕç-пăша́ллă; **вооружённое нападе́ние** хĕç-пăшалпа́ тапăнни́ ◆ **вооружённые си́лы** хĕç-пăша́ллă вăйсе́м *(çĕршывăн пур тĕрлĕ çарĕсем)*

вооружи́ть (*будущ.* -жу́, -жи́шь, -жа́т; *прич. страд. прош.* -жённый; *деепр.* -жи́в) *глаг. сов., кого-что* **1.** (*ант.* разоружи́ть) хĕç-пăшалланта́р; **вооружи́ть а́рмию раке́тами** çара́ ракетăсемпе́ хĕç-пăшалланта́р; **вооружённая ба́нда** хĕç-пăша́ллă хура́х у́шкăнĕ **2.** *чем* пар, кӳр, туянта́р, вăйла́т; **вооружи́ть молодёжь зна́ниями** çамрăксене́ пĕлӳ́ пар

вооружи́ться (*будущ.* -жу́сь, -жи́шься, -жа́тся; *прич. действ. прош.* -жи́вшийся; *деепр.* -жи́вшись) *глаг. сов.* **1.** (*ант.* разоружи́ться) хĕç-пăшалла́н, хĕç-пăша́л тыт; **вооружи́ться дуби́нкой** алла́ чукма́р тыт *(çапăçма)* **2.** *чем* ил, пух, туя́н; **вооружи́ться зна́ниями** пĕлӳ́ пух ◆ **вооружи́ться терпе́нием** чắтăмлă пул

воо́чию *нареч.* (*син.* нагля́дно, зри́мо) ку́çăн, кĕре́т, кĕре́тĕн, ку́рăмлăн; **я убеди́лся воо́чию** хам куçпа́ курса́ ĕне́нтĕм

во-пе́рвых *вводн. сл.* пĕрремĕшĕнче́н

вопи́ть (*наст.* воплю́, вопи́шь, вопя́т; *прич. действ. наст.* вопя́щий; *деепр.* вопя́) *глаг. несов.* (*син.* крича́ть, ора́ть) çу́хăр, кắшкăр

вопреки́ *кому-чему, предлог с дат. п.* (*син.* несмотря́, наперекóр) хи́рĕç, хирĕçле́, пăхма́сăр, шута́ хума́сăр; **они́ поступи́ли вопре́ки пра́вилам** вĕсе́м правилăсене́ шута́ хума́рĕç

вопро́с (-а) *сущ. муж.* **1.** (*ант.* отве́т) ыйту́; ыйтни́; **зада́ть вопро́с** ыйту́ пар; **отве́тить на вопро́с** ыйтăва́ хуравла́ **2.** (*син.* пробле́ма) ыйту́ *(сӳтсе явмалли, татса памалли)*; **сло́жный вопро́с** кắткăс ыйту́; **реши́ть вопро́с** ыйтăва́ татса́ пар ◆ **поста́вить вопро́с ребро́м** ыйтăва́ тӳ́ррĕн ларт; **ста́вить под вопро́с** иккĕле́н

вопроси́тельный *прил.* (*ант.* утверди́тельный), **вопроси́тельно** *нареч.* ыйту́ -ĕ; ыйту́ллă; **вопроси́тельный взгляд** ыйту́ллă пăхни́; **вопроси́тельная интона́ция** ыйту́ интона́цийĕ; **вопроси́тельные предложе́ния** ыйту́ллă предложенисе́м; **вопроси́тельный знак** ыйту́ палли́ (?)

вор (-а) *сущ. муж.*, **воро́вка** (-и) *жен.*; *множ.* **во́ры** (воро́в, вора́м) (*син.* похити́тель) вắрă; **кварти́рный вор** хватте́р вăрри́ ◆ **Не по́йман — не вор** *посл.* Тытма́н вắрă вắрă мар

ворва́ться (*будущ.* -ву́сь, -вёшься, -ву́тся; *прош.* -ва́лся, -ва́лась, -вало́сь *и* -ва́лось, *множ.* -вали́сь *и* -ва́лись; *повел. ф.* -ви́сь, -ви́тесь; *прич. действ. прош.* -ва́вшийся; *деепр.* -ва́вшись) *глаг. сов.* çĕмĕрсе́ кĕр; вăркăнса́ кĕр, ыткăнса́ кĕр; **бойцы́ ворва́лись во вра́жеские око́пы** салтаксе́м тăшма́н окопĕсене́ ыткăнса́ кĕ́чĕç; **в окно́ ворва́лся све́жий ве́тер** чӳречере́н у́çă сы́влăш варкăшса́ кĕ́чĕ

воркова́ть (*наст.* -ку́ю, -ку́ешь, -ку́ют; *деепр.* -ку́я) *глаг. несов.* **1.** кăвăлта́т, кăлтăрта́т, кăвикле́т *(кăвакарчăнсем çинчен)* **2.** са́вăш, савăшса́ кала́ç *(савнисем çинчен)*

воробе́й (-бья́) *сущ. муж.; множ.* **воробьи́** (-бьёв) çерçи́, сала́ ка́йăк; **домово́й воробе́й** ял çерçи́йĕ ◆ **Ста́рого воробья́ на мяки́не не проведёшь** *посл.* Ват çерçие́ хывăхпа́ ултала́ймăн

воробьи́ный *прил.* çерçи́ -ĕ; **воробьи́ное гнездо́** çерçи́ йăви́

ворова́ть (*наст.* вору́ю, воруе́шь, воруют; *прич. страд. прош.* воро́ванный; *деепр.* воруя́) *глаг. несов.* (*син.* красть, похища́ть) ăрлá; **прода́жа воро́ванного** ăрлáнă япаласе́м сутни́

во́рон (-а) *сущ. муж.; множ.* **во́роны** (-ов, -ами) çăхáн; **ка́рканье во́рона** çăхáн кранклатни́

воро́на (-ы) *сущ. жен.; множ.* **воро́ны** (-о́н, -о́нами) **1**. улá курáк; **ста́я воро́н** улá курáк ӳшкăнĕ **2**. (*син.* ротозе́й) тăмана́, áнкă-ми́нкĕ, тăмсáй ◆ **бе́лая воро́на** хăйне́ мáйлă сын *(ыттисенчен ăрасна)*; **счита́ть воро́н** çăвăр карсá тăр, áнкă-минкĕлéн

воро́нка (-и) *сущ. жен.* **1**. варинкке́ *(кĕленчене шĕвек ямалли)* **2**. (*син.* я́ма) шắтăк, пу́тăк, лáкăм; **воро́нка от снаря́да** снаря́д ӳ́кнĕ шắтăк

вороно́й *прил.* хурá, йăм хурá, **вороно́й конь** йăм хурá ут

воро́та (-о́т, -о́там) *сущ. множ.* **1**. хапхá; **полевы́е воро́та** уй хапхи́, укăлчá хапхи́; **воро́та до́ма** кил хапхи́; **отвори́ть воро́та** хапхá уç **2**. хапхá *(спорт вăййисенче)*; **футбо́льные воро́та** футбóл хапхи́; **заби́ть мяч в воро́та** хапхана́ мéчĕк тапсá кĕрт ◆ **дать от воро́т поворо́т** каялла́ çавăрсá яр, ан йы́шăн; **Пришла́ беда́ — отворя́й воро́та** *посл.* Инкéк пĕччéн килмéст

воротни́к (-á) *сущ. муж.* çухá, çухавá; **мехово́й воротни́к** тир çухá; **кружевно́й воротни́к пла́тья** кĕпéн чĕ́нтĕрлĕ çухави́

ворча́ть (*наст.* -чý, -чи́шь, -чáт) *глаг. несов.* **1**. мăкăртáт, мắкăр-мắкăр ту; **стару́ха постоя́нно ворчи́т** кáрчăк шав мăкăртатáть **2.** (*син.* рыча́ть) хăрлáт; **соба́ка негро́мко ворчи́т** йы́тă хуллéн хăрлатáть

восемна́дцать (-и) *числит. колич.* вун сáккăр, вун сáкăр; **восемна́дцать рубле́й** вун сáкăр тéнкĕ; **ему́ испо́лнилось восемна́дцать** вăл вун сáккăр тултáрнă

во́семь (восьми́, восьмью́ *и* восемью́, о восьми́) *числит. колич.* сáккăр, сáкăр; **во́семь дней** сáкăр кун; **четы́режды два — во́семь** тăвáтă хут и́ккĕ — сáккăр

во́семьдесят (восьми́десяти, восьмью́десятью *и* восемью́десятью, о восьми́десяти) *числит. колич.* сáкăр вýннă, сáкăр вýн(ă); **во́семьдесят пять** сáкăр вун пи́ллĕк; **старику́ во́семьдесят лет** старúк сáкăр вуннăрá

восемьсо́т (восьмисо́т, восьмьюста́ми *и* восемьюста́ми, о восьмиста́х) *числит. колич.* сáкăр çĕр

во́семью *нареч., в умножении* сáкăр хут; **во́семью два — шестна́дцать** сáкăр хут и́ккĕ — вун ýлттă

воск (-а) *сущ. муж.* ắвăс *(пыл карасĕн)*; **топи́ть воск** ắвăс юхтáр

восклица́тельный *прил.* кăшкăрý́-ĕ; кăшкăрý́ллă; **восклица́тельный знак** кăшкăрý́ палли́ (!)

восково́й *прил.* ắвăс ...; ắвăс -ĕ; **воскова́я свеча́** ắвăс çуртá

воскресе́ние (-я) *сущ. сред.* (*ант.* смерть, кончи́на) чĕрĕлý́; чĕрĕлни́, чĕрĕлсé тăни́ *(тĕн вĕрентĕвĕнче)*; **воскресе́ние Иису́са Христа́** Иисýс Христóс чĕрĕлсé тăни́

воскресе́нье (-нья) *сущ. сред.; множ.* **воскресе́нья** (-ний) вырсарни́ кýн; **ве́чером в воскресе́нье** вырсарни́ кýн каç

воскре́сник (-а) *сущ. муж.* воскре́сник *(канмалли кун пысăк йышпа тýлевсĕр ĕçлени)*; **воскре́сник по благоустро́йству го́рода** хулана́ тирпéйилéм кýмелли́ воскре́сник

воспале́ние (-я) *сущ. сред.* шы́çă, шыçни́; **воспале́ние лёгких** ýпкé шыççи́

воспита́ние (-я) *сущ. сред.* воспита́ни; ăс пани́, пăхсá ýстерни́; **трудово́е воспита́ние** ĕçé хăнăхтарсá

ӳстерни́; **дать де́тям пра́вильное воспита́ние** ачасене́ тĕ´рĕс пăхса́ ӳсте́р

воспи́танный *прил.* эте́плĕ, йĕрке́ллĕ, хă´лăхлă; **воспи́танная де́вочка** эте́плĕ хĕр ача́

воспита́тель (-я) *сущ. муж.*, **воспита́тельница** (-ы) *жен.* воспита́тель; воспита́тельница; **воспита́тельница де́тского са́да** ача́ са́чĕн воспитательници́

воспита́тельный *прил.* воспита́ни -ĕ; ăс памалли́; пăхса́ ӳстермелли́; **воспита́тельная рабо́та** ăс пара́с ĕç

воспита́ть (*будущ.* -а́ю, -а́ешь, -а́ют; *прич. действ. прош.* -а́вший; *прич. страд. прош.* воспи́танный; *деепр.* -а́в) *глаг. сов.* **1.** *кого* воспита́ни пар, ăс пар, пăхса́ ӳсте́р; **они́ воспита́ли трои́х дете́й** вĕсе́м ви́çĕ ача́ пăхса́ ӳсте́рнĕ **2.** *что в ком* (*син.* вы́работать) вĕре́нт, хăнăхта́р, аталанта́р; **воспита́ть в молодёжи любо́вь к ро́дине** çамрăксене́ тăва́н çĕршыва́ юратма́ вĕре́нт

воспомина́ние (-я) *сущ. сред.* аса́ илӳ´; аса́ илни́; **кни́га воспомина́ний** аса́ илӳ´ кĕнеки́; **воспомина́ния о де́тстве** ачалăха́ аса́ илни́

восприя́тие (-я) *сущ. сред.* (*син.* ощуще́ние, осозна́ние) ту́йăм, си́сĕмту́йăм; туйса́ илни́, ăса́ хывни́; **восприя́тие зву́ков** сасăсене́ туйни́-илтни́; **восприя́тие за́пахов** шă´ршă туйни́

восста́ние (-я) *сущ. сред.* пăлха́в, пăлхану́; пăлханни́; **крестья́нские восста́ния** хресченсе́м пăлханни́; **подня́ть восста́ние** пăлха́в çĕкле́

восстанови́ть (*будущ.* -овлю́, -о́вишь, -о́вят; *прич. страд. прош.* -о́вленный) *глаг. сов.* **1.** *что* (*ант.* разру́шить) юса́, çĕне́т, юсаса́ çĕкленте́р; **разру́шенные войно́й города́ восстано́влены** вă´рçă арка́тнă хуласене́ юсаса́ çĕкленте́рнĕ **2.** *кого* (*син.* верну́ть; *ант.* снять, уво́лить) та́вăр; **его́ восстанови́ли в пре́жней до́лжности** ăна́ малтанхи́ ĕçе́ та́вăрнă **3.** *кого против кого-чего* хирĕçте́р, хи́рĕç тăра́т, хĕ´тĕрт; **он восстанови́л всех про́тив себя́** вăл пурне́ те хăйне́ хи́рĕç тăра́тнă

восто́к (-а) *сущ. муж.* (*ант.* за́пад) **1.** ту́хăç, хĕве́л ту́хăç, мал ен; **на восто́к от го́рода** хулара́н хĕве́л тухăçнелле́ **2.** Ту́хăç, Хĕве́л ту́хăç *(Европăран тухăçалла вырнаçнă çĕрсем, çĕршывсем)*; **Да́льний Восто́к** Инçе́т Хĕве́л ту́хăç; **стра́ны Восто́ка** Тухăçри́ çĕршывсе́м

восто́рг (-а) *сущ. муж.* (*син.* восхище́ние) са́вăнăç, хавхалану́, хăпартлану́; тĕлĕнсе́ савăнни́, **прийти́ в восто́рг** тĕлĕнсе́ са́вăн

восто́рженный *прил.*, **восто́рженно** *нареч.* са́вăнăçлă, хавхала́нчăк, çĕкле́нчĕк; **пу́блика восто́рженно аплоди́ровала певцу́** ха́лăх юрăçа́ са́вăнăçлăн а́лă çупса́ саламла́нă

восто́чный *прил.* ту́хăç -ĕ, хĕве́л ту́хăç -ĕ; хĕве́л тухăçĕнчи́, мал енчи́; **восто́чный ве́тер** тухăçра́н вĕреке́н çил; **восто́чная часть страны́** çĕршы́вăн хĕве́л ту́хăç па́йĕ; **восто́чные языки́** тухăçри́ чĕлхесе́м

восхища́ться (*наст.* -а́юсь, -а́ешься, -а́ются; *прич. действ. наст.* -а́ющийся, *прош.* -а́вшийся; *деепр.* -а́ясь) *глаг. несов.* (*син.* восторга́ться) са́вăн, хавхала́н, тĕлĕнсе́ са́вăн, çĕкленсе́ кай; **восхища́ться иску́сством худо́жника** худо́жник ăсталăхĕпе́ тĕлĕнсе́ са́вăн

восхище́ние (-я) *сущ. сред.* (*син.* восто́рг) са́вăнăç, хавхалану́, хăпартлану́; тĕлĕнсе́ савăнни́; **приводи́ть в восхище́ние** тĕлĕнтерсе́ савăнта́р

восхо́д (-а) *сущ. муж.* (*ант.* захо́д, зака́т) ту́хăç, туху́; тухни́, хăпарни́; **на восхо́де со́лнца** хĕве́л ту́хнă чух

восьмо́й *числит. порядк.* са́ккăрмĕш; **он у́чится в восьмо́м кла́ссе** вăл са́ккăрмĕш класра́ вĕрене́т

вот *частица* **1.** *указывает на происходящее поблизости* ак, ӑкӑ; **вот наш дом** ӑкӑ пи́рӗн çурт; **мы пойдём вот здесь** эпи́р ак çакӑнта́н каятпӑр **2.** *подчеркивает значимость того, о чем говорится* ак, ӑкӑ, вӑт; **Вот что я тебе́ скажу́** Ӑкӑ мӗн кала́тӑп э́пӗ сана́; **Вот ты как**! Вӑт мӗнлере́х э́сӗ! ◆ **Вот тебе́ на!** Ак япала́!; **Вот ещё**! Тата́ мӗн! *(хирӗçлесе калани)*; **Вот оно́ как!** Ӑкӑ епле́ иккен!

вот-во́т 1. *нареч.* (*син.* ско́ро, сейча́с) кӗ́ç-вӗç, часа́х; **он вот-во́т придёт** вӑл кӗ́ç-вӗç килет **2.** *частица выражает подтверждение* (*син.* и́менно) чӑн та, шӑпа́х, çапла́; **Вот-во́т, об э́том и я говорю́!** Çапла́, э́пӗ те çавна́х кала́тӑп!

воткну́ть (*будущ.* -ну́, -нёшь, -ну́т) *глаг. сов., что во что* (*син.* вонзи́ть) чик, тир, тирӗнте́р; **воткну́ть лопа́ту в зе́млю** кӗреçене́ тӑпрана́ чик

во́тум (-а) *сущ. муж.* йышӑну́ *(сасӑласа вӑя кӗртни)*; **парла́мент вы́нес во́тум недове́рия прави́тельству** парла́мент правительствӑна́ шанманни́ çинче́н йышӑну́ тӳ́на

вошь (вши, во́шью) *сущ. жен.; множ.* **вши** (вшей) пы́йтӑ

впервы́е *нареч.* пуçласа́, пӗрре́мӗш хут; **я прие́хал сюда́ впервы́е** э́пӗ кунта́ пӗрре́мӗш хут ки́лтӗм

впереди́ (*ант.* позади́) **1.** *нареч.* малта́, умра́; **впереди́ лес** умра́ вӑрма́н; **идти́ впереди́** малта́ пыр **2.** *нареч.* ӳ́лӗм, малта́, малашне́, малашлӑхра́; **у молодёжи всё впереди́** çамрӑксе́н йӑлта́х малта́ **3.** *кого-чего, предлог с род. п.* умра́, ӳ́мӗн, умӗнче́; **впереди́ нас** пи́рӗн умра́; **идти́ впереди́ всех** пури́н умӗнче́ пыр

вперёд *нареч.* (*ант.* наза́д) мала́, малалла́; **шага́ть вперёд** малалла́ ут; **часы́ забега́ют вперёд** сехе́т мала́ кая́ть ◆ **заплати́ть вперёд** малтана́х тӳ́лесе́ хур *(тавара иличчен)*; **Вперёд бу́дешь знать!** Ӳ́лӗм пӗ́лӗн ак!

впечатле́ние (-я) *сущ. сред.* **1.** а́сӑм, аста́ӑм, асри́ йӗр, аспа́ юлни́; **впечатле́ние де́тства** ачалӑхра́н аспа́ юлни́ **2.** (*син.* влия́ние, возде́йствие) ви́тӗм, кӑмӑла́ витни́, чуна́ тивни́; **конце́рт оста́вил си́льные впечатле́ния** конце́рт чуна́ хы́тӑ пырса́ ти́врӗ **3.** (*син.* мне́ние) шӳ́хӑш, кӑ́мӑл; **впечатле́ния об уви́денном** мӗн курни́ çура́тнӑ шӳ́хӑш-кӑ́мӑл

вполго́лоса *нареч.* (*син.* ти́хо) çурма́ сасӑпа́; **говори́ть вполго́лоса** çурма́ сасӑпа́ кала́ç

вполне́ *нареч.* (*син.* соверше́нно) пӗтӗмпе́х, йӑлтах; **я вполне́ с тобо́й согла́сен** э́пӗ санпа́ пӗтӗмпе́х килӗше́тӗп

впосле́дствии *нареч.* (*син.* пото́м) кайра́н, каярахпа́; **впосле́дствии он уе́хал отсю́да** каярахпа́ вӑл кунта́н тухса́ ка́йнӑ

впра́во *нареч.* (*ант.* вле́во) сылтӑмалла́; **впра́во от доро́ги** çулта́н сылтӑмалла́; **поверну́ть впра́во** сылтӑмалла́ пӑ́рӑн

впредь *нареч.* (*син.* в бу́дущем) малашне́; **Впредь будь умне́е**! Малашне́ ӑсла́рах пул!

впро́чем 1. *союз* (*син.* но, одна́ко) анча́х, çапа́х та; **Вещь хоро́шая, впро́чем за таку́ю це́ну мо́жно и лу́чше найти́** Япали́ ава́н, анча́х ку хакпа́ лайӑхраххи́ те тупма́ пула́ть **2.** *вводн. сл.* те́пӗр тесе́н; **Впро́чем, я не наста́иваю, реша́й сам** Те́пӗр тесе́н, э́пӗ çине́ тӑма́стӑп, ху пӗ́лнӗ пек ту

впусти́ть (*будущ.* впущу́, впу́стишь, впу́стят; *прич. страд. прош.* впу́щенный) *глаг. сов.* (*ант.* вы́пустить) кӗрт, кӗртсе́ яр, кӗме́ пар; **впусти́ть скоти́ну во двор** выльӑха́ кил картине́ кӗртсе́ яр

враг (-а́) *сущ. муж.;* **враги́** (-о́в) *множ.* (*син.* проти́вник; *ант.* друг) тӑшма́н; **закля́тый враг** хаяр тӑшма́н; **враги́ напа́ли на на́шу страну́** тӑш-

мансе́м пи́рĕн ҫĕршыва́ та́пăнчĕҫ ◆ **Язы́к мой — враг мой** *посл.* Ха́мăн чĕлхе́ хама́х ута́ть

вражда́ (-ы́) *сущ. жен.* (*син.* не́нависть, непри́язнь; *ант.* дру́жба) хи́рĕҫлĕх, кураймáнлăх, тăшмáнлăх; хирĕҫни́, кураймáнни́; **непримири́мая вражда́** ҫураҫми́ хи́рĕҫлĕх; **пита́ть вражду́** кураймáсăр пу́рăн

вражде́бный *прил.* (*син.* непри́язненный; *ант.* дру́жеский), **вражде́бно** *нареч.* хирĕҫлé, тăшманлá; кураймáнлá; **вражде́бные настрое́ния** тăшманлá шу́хăш-кă ´мăл; **он отно́сится к нам вражде́бно** вăл пире́ кураймáсть

вра́жеский *прил.* (*ант.* дру́жеский) тăшмáн -ĕ; **вра́жеские войска́** тăшмáн ҫарĕсéм

вразуми́тельный *прил.* (*син.* я́сный, поня́тный; *ант.* невразуми́тельный, нея́сный), **вразуми́тельно** *нареч.* ӳҫăмлă, ӳҫă, ăнланмаллá; **отве́тить вразуми́тельно** ӳҫăмлăн хуравлá

враспло́х *нареч.* (*син.* неожи́данно) кĕтмéн хушăрá, сасáртăк; **напа́сть враспло́х** кĕтмéн хушăрá та́пăн

врассыпну́ю *нареч.* чăл-пáр, тĕ´рлĕ еннелле́; **де́ти бро́сились врассыпну́ю** ачасéм чăл-пáр чупсá салáнчĕҫ

врата́рь (-я́) *сущ. муж.* врата́рь, хапхáҫă (*футбол, хоккей вăйăинче*)

врать (*наст.* вру, врёшь, врут; *прош.* врал, врала́, вра́ло, *множ.* вра́ли; *повел.* ври; *прич. действ. наст.* вру́щий, *прош.* вра́вший; *деепр. не употр.*) суй, суеҫте́р, тыттáр; **он лю́бит врать** вăл суймá юратáть ◆ **часы́ врут** сехéт тĕ´рĕс ҫýремéст

врач (-á) *сущ. муж.* врач, ту́хтăр; **де́тский врач** ача́-пăча́ ту́хтăрĕ; **вы́зов врача́ к больно́му** чи́рлĕ ҫын патнé врач чĕнтерни́

враче́бный *прил.* врач -ĕ, ту́хтăр -ĕ; **врачéбная по́мощь** ту́хтăр пу́лăшăвĕ

вращáть (*наст.* -áю, -áешь, -áют; *прич. страд. наст.* -áемый) *глаг. несов., что и чем* (*син.* верте́ть, крути́ть) ҫáвăр, ҫавăрттáр; **вода́ враща́ет турби́ны ГЭС** шыв ГЭС турбинисенé ҫавăрáть

враща́ться (*наст.* -áюсь, -áешься, -áются; *прич. действ. наст.* -áющийся) *глаг. несов.* **1.** (*син.* верте́ться, крути́ться) ҫáврăн; **Земля́ враща́ется вокру́г свое́й оси́** Ҫĕр хăйĕн тĕ´нĕлĕ таврá ҫаврăнáть **2.** (*син.* общáться, встречáться) ху́тшăн, тĕл пул; **он враща́ется в учёных кругáх** вăл ă´слăлăх сыннисемпе́ хутшăнáть

вред (-á) *сущ. муж.* (*син.* ущéрб; *ант.* по́льза) сиéн, сă´тăр, шы́рлăх; **вред от куре́ния** табáк туртни́н сиéнĕ; **причини́ть вред** шы́рлăх кýр

вреди́тель (-я) *сущ. муж.* сиéнҫĕ, сă´тăрҫă; **вреди́тели хлебо́в** тыр-пýл сиенҫисéм

вреди́ть (*наст.* врежу́, вреди́шь, вредя́т; *прич. действ. наст.* вредя́щий; *деепр.* вредя́) *глаг. несов.* сиенлé, сăтăрлá; сиéн кýр, сă´тăр ту, шы́рлăх кýр; **сорняки́ вредя́т посе́вам** ҫум курăксéм калчанá сиенлéҫҫĕ

вре́дность (-и) *сущ. жен.* (*ант.* поле́зность) сиéнлĕх, шы́рлăх; **вре́дность куре́ния** табáк туртни́н сиéнлĕхĕ

вре́дный *прил.* (*ант.* поле́зный) сиéнлĕ, шы́рлăхлă; **вре́дная привы́чка** сиéнлĕ йăлá; **вре́дные для здоро́вья вещества́** сы́влăхшăн сиéнлĕ япаласéм

времена́ми *нареч.* (*син.* иногдá) хушăрáн, вă´хăт-вă´хăт, хутрáн-ситрéн; **времена́ми идёт дождь** хушăрáн ҫýмăр ҫăвáть

временно́й *прил.* вă´хăт -ĕ; **временно́й по́яс** вă´хăт тă´рăхĕ; **временна́я связь** вă´хăт ҫы́хăнăвĕ; **временны́е фо́рмы глаго́ла** глагóлăн вă´хăт формисéм

вре́менный (*кратк. ф.* -менен, -менна) *прил.* (*ант.* постоя́нный), **вре́менно** *нареч.* вă´хăтлăх; **вре́менные затрудне́ния** вă´хăтлăх йывăрлăхсéм;

вре́менно он бу́дет бригади́ром вăл вăхăтлăхă бригади́р пулăть

вре́мя (-мени) *сущ. сред.; множ.* **времена́** (-мён, -мена́м) **1.** вắхăт; **ме́стное вре́мя** вырăнти́ вắхăт; **в свобо́дное вре́мя** ёрçнĕ чухне́; **с по́льзой проводи́ть вре́мя** вăхăта́ ýсăллă иртте́р; **вре́мя прохо́дит незаме́тно** вắхăт сисмесёрéх иртéт; **Ско́лько сейча́с вре́мени?** Вăхăт мĕн чýхлĕ ха́лĕ? **2.** (*син.* пе́риод, эпо́ха) вắхăт, та́пхăр, самана́; **вре́мя больши́х переме́н** пысăк улшăнусéн саманú; **во времена́ на́ших пре́дков** пи́рĕн мăн асаттесéн вăхăтĕнче **3.** вắхăт *(грамматикăра)*; **настоя́щее вре́мя** хальхи́ вắхăт; **проше́дшее вре́мя** и́ртнĕ вắхăт; **бу́дущее вре́мя** пулáс вắхăт; **времена́ глаго́ла** глагóл вăхăчĕсéм ◆ **времена́ го́да** çултáлăк тапхăрĕсéм; **пе́рвое вре́мя** малтана́х, пирваях; **в своё вре́мя** хăй вăхăтĕнче́; **на вре́мя** вăхăтлăхá; **всё вре́мя** яланáх, пĕрмаях; **одно́ вре́мя** пĕр хýшă; **с тече́нием вре́мени** вăхăт иртнĕçéм; **вре́мя от вре́мени** тахçантáн тахçáн, хутрáн-ситрéн; **до поры́ до вре́мени** вắхăт çитиччéн; **в ско́ром вре́мени** çывăх вăхăтрáх, часáх; **на пе́рвое вре́мя** малтанлăхá; **тем вре́менем** çав хушăрá

вро́вень *с кем-чем, предлог с твор. п.* шай, тан; пĕр шай, пĕр тан; **вода́ вро́вень с краями́ ведра́** шыв витрé хĕррипé тан

вро́де 1. *кого-чего, предлог с род. п.* (*син.* подóбно, схóдно) éвĕр, éвĕрлĕ, мáйлă, пек; **твоя́ ша́пка вро́де моéй** сáнăн çĕлĕкýˊ манăнни éвĕрлĕ **2.** *частица* (*син.* кáжется) пек, пулмаллá, туйăнáть; **он вро́де заболе́л** вăл чирлéнĕ пулмаллá

врозь *нареч.* (*син.* отдéльно; *ант.* вмéсте) ýйрăм, уйрăмшáр; **они́ живу́т врозь** вĕсéм уйрăмшăр пурăнáççĕ

вручи́ть (*будущ.* -чý, -чúшь, -чáт; *прич. страд. прош.* -чённый; *деепр.* -чúв) *глаг. сов., кого-что кому* пар, аллá пар, тыттáр; **вручи́ть награ́ду** награ́да пар

вручну́ю *нареч.* áлă вĕ́ççĕн, алăпá; **счита́ть де́ньги вручну́ю** укçанá álă вĕ́ççĕн шутлá *(машинăпа мар)*

вряд ли *частица, выражает сомнение* (*син.* сомни́тельно; *ант.* наверняка́) тéмĕн, иккĕленмеллé; **вряд ли сего́дня бу́дет дождь** тéмĕн, паян çýмăр çумáсть пýлĕ

вса́дник (-а) *сущ. муж.*, **вса́дница** (-ы) *жен.* юлáн ут (*ут утланнă çын*)

Всевы́шний (-его) *сущ. муж.* (*син.* Бог) Çýлти́ Тýрă *(христиансен тĕнĕнче калама йышăнни)*

всегда́ *нареч.* (*син.* постоя́нно; *ант.* никогда́) ялáн, пĕрмáй; **мы всегда́ ра́ды ви́деть вас** эпúр сирé курмá яланáх хавáс

всего́ 1. *нареч.* (*син.* итого́) пýрĕ, пĕтĕмпé; **в шко́ле всего́ две́сти ученико́в** шкултá пýрĕ ик çĕр вĕренекéн **2.** *частица* (*син.* то́лько) пýрĕ те, кăнá, çеç; **ну́жно всего́ сто рубле́й** пýрĕ те çĕр тéнкĕ кăнá кúрлĕ

вселе́нная *и* **Вселе́нная** (-ой) *сущ. жен.* (*син.* мирозда́ние, мир) çут тĕнчé, Çут тĕнчé; **происхожде́ние Вселе́нной** Çут тĕнчé пулсá кайни́; **он прое́хал всю вселе́нную** вăл тĕнчене çýресé çáвăннă

всеме́рный *прил.* (*син.* максима́льный), **всеме́рно** *нареч.* туллú; пур máйлă, пур énлĕ; пур майпá, пур енчéн; **всеме́рно помога́ть** пур майпá та пýлăш

всеми́рный *прил.* (*син.* глоба́льный), **всеми́рно** *нареч.* пĕ́тĕм тĕнчé -ĕ; пĕ́тĕм тĕнчери́; **всеми́рная конфере́нция** пĕ́тĕм тĕнчери́ конфéренци; **всеми́рно изве́стный писа́тель** тĕнчипé пáллă çырáвçă

всенаро́дный *прил.*, **всенаро́дно** *нареч.* пĕ́тĕм халăх -ĕ; халăх умĕнчú; **всенаро́дное голосова́ние** пĕ́тĕм халăх сасăлáвĕ; **всенаро́дно призна́ть вину́** айăпá халăх умĕнчé йышăн

всенощная (-ой) *сущ. жен.* каçхи́ кĕ́лĕ *(уяв кунĕ́ умĕ́нхи)*

всеобщий *прил.* пĕ́тĕм, пĕтĕмĕшлĕ́; **всеобщее избира́тельное пра́во** пĕтĕмĕшлĕ́ суйла́в прави́ *(пурне те тивĕçли)*

всероссийский *прил.* пĕ́тĕм Раççéй -ĕ; пĕ́тĕм Раççейри́; **всероссийское соревнова́ние** пĕ́тĕм Раççейри́ ăмăртý

всесторо́нний *прил.* (*ант.* односторо́нний), **всесторо́нне** *нареч.* пур е́нлĕ; **всесторо́нне разобра́ть де́ло** ĕçé пур е́нлĕн пăхсá тух

всё 1. *нареч.* (*син.* всегдá, постоя́нно) ялáн, шав, пĕрмáй; **он всё рабо́тает** вăл пĕрмáй ĕçлéт **2.** *нареч.* (*син.* то́лько, исключи́тельно) анчáх, кáна́; **Мы не пошли́ в похо́д, и всё из-за дождя́** Эпи́р походá çýмăр пиркú кáна́ каймáрăмăр **3.** *нареч.*, *обозначает нарастание признака*: **шум всё сильне́е** шав вăйлансáх пыра́ть **4.** *союз* пурпĕре́х; аплá пули́н те; **Как он ни стара́ется, всё им недово́льны** Вăл тем терú тăрăшсáн та пурпĕре́х юрайма́сть ◆ **всё ещё** çав-çавáх, çаплáх, халиччéн те

всё же 1. *частица, подчеркивает противопоставление или ожидание* епле́ пулсáн та, пурпĕре́х; **всё же он согласи́лся** вăл пурпĕре́х кúлĕшрĕ **2.** *союз* (*син.* всё -таки) анчáх, аплá пулсáн та, пурпĕре́х; **Бы́ло тру́дно, всё же мы победи́ли** Йы́вăр кúлчĕ, анчáх эпир пур пĕре́х çĕнтéртĕмĕр

всё-таки *частица, подчеркивает противопоставление* мĕнлé пулсáн та, çапáх та; **Мо́жет быть, ты согласи́шься всё-таки?** Тен, э́сĕ килĕшéтĕн çапáх та? **2.** *союз* (*син.* несмотря́) пули́н те; **Сапоги́ дороги́е, и всё-таки я их куплю́** Áтă хáклă пули́н те э́пĕ áна́ туянáтăп

вско́ре *нареч.* часáх, кăштахрáн; **вско́ре всё узна́ем** часáх йăлт пĕ́лĕпĕр

вскочи́ть (*будущ.* -очу́, -о́чишь, -о́чат) *глаг. сов.* **1.** *на кого-что* (*син.* вспры́гнуть) сикс лар, хăпарсá лар; **вскочи́ть на коня́** ут çинé сикс лар **2.** (*син.* встать) сикс тăр; **вскочи́ть со сту́ла** пукáн çинчéн сикс тăр **3.** *1 и 2 л. не употр.* (*син.* появи́ться) тухсá лар, сикс тух, хăпарсá тух; **на лбу вскочи́ла ши́шка** çамкá хăпарсá ту́хнă

вскрыть (*будущ.* -ро́ю, -ро́ешь, ро́ют; *повел. ф.* -ро́й; *прич. страд. прош.* -ры́тый) *глаг. сов.* **1.** (*син.* откры́ть) уç; **вскрыть письмо́** çырăвá уç **2.** *что* (*син.* обнару́жить) пáлăрт, тупсá пáлăрт; **вскрыть недоста́тки в рабо́те** ĕçри́ çитменлĕхсенé тупсá пáлăрт **3.** *кого-что* (*син.* разре́зать) кас, кассá уç *(операци тунă май)*; **хиру́рг вскрыл брюшну́ю по́лость** хиру́рг вар-хы́рăм хăвăлнé кáснă

вслед 1. *нареч.* хы́ççăн, хыçрáн, хыçалтáн; **идти́ вслед** хы́ççăн пыр **2.** *кому-чему, предлог с дат. п.* (*син.* за) хы́ççăн, хыçĕнчéн; **смотре́ть вслед уходя́щему по́езду** каякáн по́езд хы́ççăн пăхсá юл

всле́дствие *чего, предлог с род. п.* (*син.* из-за) пиркú, пулá, курá; -па (-пе); **неурожа́й всле́дствие плохо́й пого́ды** я́пăх çанталăкá пулá тыр-пу́л ăнманнú

вслух *нареч.* (*син.* гро́мко) сасăпá, сáссăн; **чита́ть вслух** сасăпá вулá

всмя́тку *нареч.* (*ант.* вкруту́ю) калаклá, калеклé; **вари́ть я́йца всмя́тку** калеклé çăмартá пĕçéр *(хытарса ямасăр)*

вспо́мнить (*будущ.* -ню, -нишь, -нят) *глаг. сов., кого-что и о ком-чем* (*ант.* забы́ть) асá ил, áсăн; **вспо́мнить де́тство** ачалăхá асá ил; **я вспо́мнил, что на́до позвони́ть** э́пĕ телефонпá шăнкăравламаллú çинчéн асá и́лтĕм

вспомога́тельный *прил.* (*син.* подсо́бный; *ант.* основно́й) пулăшý -ĕ;

пулăшу́лăх; **основны́е и вспомога́тельные цеха́** тĕп татá пулăшу́лăх цехсéм; **вспомога́тельные глаго́лы** пулăшу́ глаголĕсéм

вспы́льчивый *прил.* (*син.* горя́чий) çиллéнчĕк, кăрá, áвăк çи́лĕллĕ; **он вспы́льчивый челове́к** вăл çиллéнчĕк çын

вспы́хнуть (*будущ.* -ну, -нешь, -нут) *глаг. сов.* **1.** *1 и 2 л. не употр.* (*син.* загоре́ться) хыпсá ил, тивсé кай; **стру́жки вспы́хнули от угло́ка** турпáс кăвáр ӳкнипе́ тивсé кáйнă **2.** *1 и 2 л. не употр.* (*син.* возни́кнуть) сиксé тух, пуçлансá кай; **вспы́хнула ссо́ра** хирĕçӳ́ сиксé тӳхрĕ; **вспы́хнула война́** вắрçă пуçлансá кáйрĕ ◆ **вспы́хнуть от оби́ды** кӳреннипе́ çилленсé кай; **лицо́ вспы́хнуло от волне́ния** хумханнипе́ пит хĕрелсé кáйнă

вста́вить (*будущ.* -влю, -вишь, -вят; *повел. ф.* вставь) *глаг. сов., что* ларт, кĕртсé ларт; **вста́вить стёкла в окно́** чӳ́речене́ кáнтăк ларт

встать (*будущ.* -áну, -áнешь, -áнут; *повел. ф.* -áнь; *прич. действ. прош.* -áвший; *деепр.* -áв) *глаг. сов.* **1.** (*син.* подня́ться) тăр, çĕклéн; **встать со сту́ла** пукáн çинчéн тăр **2.** (*син.* пробуди́ться; *ант.* лечь) вăрáн, тăр; **стари́к встал ра́но** вáтă çын ирéх тắнă **3.** тăр, урапá тăр, хăпарсá тăр; **встать на пень** тункатá çине́ хăпарсá тăр **4.** (*син.* останови́ться) чáрăн, тăр; **часы́ вста́ли** сехéт чáрăннă **5.** (*син.* подня́ться) çĕклéн; **наро́д встал на защи́ту страны́** хáлăх çĕршывá хӳ́тĕлеме́ çĕклéннĕ ◆ **встать на́ ноги** урá çине́ тăр, вăй ил; **встать на сто́рону** *кого-либо* мáйлă пул; **со́лнце вста́ло** хĕвéл тӳхнă; **река́ вста́ла** юхáн шыв шăнсá лáрнă

встре́тить (*будущ.* -éчу, -éтишь, -éтят; *повел. ф.* -еть, -éтьте; *прич. страд. прош.* -éченный; *деепр.* -éтив) *глаг. сов.* **1.** *кого-что* (*син.* уви́деть) тĕл пул, хи́рĕç пул; кур; **встре́тить знако́мого** пĕлĕшé тĕл пул **2.** *кого-что* (*син.* приня́ть; *ант.* проводи́ть) кĕтсé ил; **встре́тить делега́цию на вокза́ле** делегацие́ вокзалтá кĕтсé ил **3.** *кого-что* (*син.* приня́ть, отнести́сь) йы́шăн; **ра́душно встре́тить гостéй** хăнасене́ тарава́т йы́шăн **4.** *что* (*син.* восприня́ть) йы́шăн, ил, кĕтсé ил; **во́ин встре́тил весть о побе́де в го́спитале** салтáк çĕнтерӳ́ çинчéн госпитальте́ хыпáр и́лнĕ ◆ **встре́тить Но́вый год** Çĕ́нĕ çулá уявлá

встре́титься (*будущ.* -éчусь, -éтишься, -éтятся; *повел. ф.* -éться, -éтьтесь; *прич. действ. прош.* -éтившийся; *деепр.* -éтившись *и* -éтясь) *глаг. сов.* тĕл пул, хи́рĕç пул, кӳ́рнăç; **мы встре́тились соверше́нно случа́йно** эпи́р пач ăнсăртрáн тĕл пу́лтăмăр **2.** *1 и 2 л. не употр.* (*син.* обнару́житься, попáсться) тĕл пул, ту́пăн, куçá кӳ́рăн; **в те́ксте встре́тились тру́дные места́** текстрá йы́вăр вырăнсéм тĕл пу́лчĕç

встре́ча (-и) *сущ. жен.* **1.** тĕл пулу́, курнăçу́; тĕл пулни́, курнăçни́; **встре́ча друзе́й** туссéн тĕл пу́лăвĕ; **встре́ча депута́та с избира́телями** депутáт суйлавçăсемпе́ тĕл пулни́ **2.** ăмăртӳ́, тĕл пулӳ́; **встре́ча футболи́стов** футболистсéн ắмăртăвĕ

встреча́ться (*наст.* -áюсь, -áешься, -áются; *прич. действ. наст.* -áющиеся, *прош.* -áвшиеся; *деепр.* -áясь) *глаг. несов.* **1.** *см.* **встре́титься 2.** *с кем* (*син.* ви́деться, общáться) хӳ́тшăн, курнăçсá пӳ́рăн, тĕл пулкалá; **мы с ним бо́льше не встреча́емся** эпи́р унпá тек курнăçмáстпăр

вступи́тельный *прил.* **1.** (*син.* ввóдный; *ант.* заключи́тельный) кӳ́ртĕм, ум, пуçлáмăш; **произнести́ вступи́тельное сло́во на собра́нии** пухурá кӳ́ртĕм сăмáх калá **2.** вĕренмé

кĕмеллӣ; **вступи́тельные экза́мены** вĕренмĕ кĕмеллӣ экзаменсе́м

вступи́ть (*будущ.* -уплю́, -у́пишь, -у́пят) *глаг. сов., во что* **1.** (*син.* войти́) кĕр, пырса́ кĕр; **войска́ вступи́ли в го́род** çарсе́м хулана́ пырса́ кӗ´чӗç **2.** кĕр; **вступи́ть в профсою́з** профсоюза́ кĕр **3.** кĕр, ху́тшăн; **вступи́ть в разгово́р** каласӑва́ ху́тшăн; **вступи́ть в бой** çапӑçӑва́ кĕр ◆ **вступи́ть на престо́л** патшана́ лар; **вступи́ть в до́лжность** ĕçе́ пу́çăн

всхли́пывать (*наст.* -аю, -аешь, -ают) *глаг. несов.* ĕсĕкле́, нăшăкла́, ĕсĕклесе́ ма́кăр

всхо́ды (-ов) *сущ. множ.* (*син.* ростки́, по́росоль) калча́, хуна́в; **всхо́ды озимы́х** кĕр калчи́; **всхо́ды поби́ло гра́дом** калчана́ пăр çӑпнă

всю́ду *нареч.* (*син.* везде́; *ант.* нигде́) пур çĕртĕ те, таçта́ та; **он побыва́л всю́ду** вăл таçта́ та пулса́ ку́рнă

вся́кий *мест. определит.* **1.** (*син.* ка́ждый, любо́й) кашние́х, така́м та, кире́к кам та; **э́то зна́ет вся́кий** куна́ така́м та пĕле́т **2.** (*син.* разли́чный, *всевозмо́жный*) тĕрлĕре́н, те́мĕн тĕ´рлĕ; **на ры́нке мно́го вся́кого това́ра** пасарта́ тĕрлĕре́н тава́р нума́й ◆ **вся́кий раз** кашнинче́х; **на вся́кий слу́чай** сых ятне́; **во вся́ком слу́чае** епле́ пулса́н та; **вся́кая вся́чина** те́мĕн те пĕр

вта́йне *нареч.* (*син.* секре́тно; *ант.* я́вно) вă´рттăн, систермéсĕр, сисмесле́; **вта́йне от всех** пуринче́н те вă´рттăн, ника́м сисмесле́

вто́рник (-а) *сущ. муж.* ытлари́ кун; **во вто́рник ве́чером** ытлари́ кун каçхине́

второ́й 1. *числит. порядк.* и́ккĕмĕш; **второ́й эта́ж до́ма** çу́ртăн и́ккĕмĕш ху́чĕ **2.** *в знач. сущ.* **второ́е** (-о́го) *сред.* и́ккĕмĕш апа́т *(яшка хыççăн çиекенни)*; **на второ́е да́ли жарко́е** и́ккĕмĕш апата́ шаркку́ па́чĕç

второстепе́нный *прил.* **1.** (*ант.* основно́й, гла́вный) тĕп мар, кирле́ч мар; **это второстепе́нный вопро́с** ку тĕп ыйту́ мар **2.** (*син.* зауря́дный) чапла́х мар, лайăхах мар; **второстепе́нный писа́тель** чапла́х мар çыра́вçа ◆ **второстепе́нные чле́ны предложе́ния** предложе́нин кӗ´çĕн членĕсе́м

в-тре́тьих *вводн. сл.* виççĕмĕшĕнче́н

втроём *нареч.* виççĕн; **они́ живу́т втроём** вĕсе́м виççĕн пурăнӑççĕ

втро́е *нареч.* виçĕ хут; **втро́е бо́льше** виçĕ хут нумайра́х

вуз (-а) *сущ. муж.* (*сокр.:* вы́сшее учёбное заведе́ние) а́слă шкул; **техни́ческие ву́зы** те́хника а́слă шкулĕсе́м

вулка́н (-а) *сущ. муж.* вулка́н *(пĕрĕхсе тăракан сăрт)*; **де́йствующий вулка́н** пĕрĕхеке́н вулка́н; **поту́хший вулка́н** сӳ´ннĕ вулка́н; **изверже́ние ла́вы из вулка́на** вулканра́н шăра́нчăк юхса́ тухни́

вход (-а) *сущ. муж.* **1.** (*ант.* вы́ход) кĕмелли́ вы́рăн, а́лăк; **у вхо́да а́лăк патĕнче́ 2.** кĕрӳ´; кĕни́; **вход в музе́й бесплáтный** музее́ тӳ´левсĕр кĕртéççĕ

входно́й *прил.* кĕмелли́; **входна́я дверь** кĕмелли́ а́лăк; **входно́й биле́т** кĕмелли́ биле́т

вчера́ *нареч.* ĕнĕр; **вчера́ у́тром** ĕнĕр ирхине́; **мы ви́делись вчера́** эпи́р ĕнĕр ку́рнăçнăччĕ

вчера́шний *прил.* **1.** ĕнерхи́; **вчера́шняя газе́та** ĕнерхи́ хаçа́т **2.** (*син.* бы́вший, про́шлый) и́ртнĕ вăхăтри́, ĕнерхи́; **они́ — вчера́шние шко́льники** вĕсе́м нумая́х та пулма́сть шкул ачисе́м пу́лнă ◆ **жить вчера́шним днём** ки́вĕ шӳхăш-кăмăлпа́ пӳ́рăн

въезд (-а) *сущ. муж.* **1.** (*ант.* вы́езд) кĕрӳ´; кĕни́ (*транспортпа*); **торже́ственный въезд во́инов-победи́телей в го́род** çĕнтерӳ´çĕ салтаксе́м хула-

нá чáплăн кĕнú **2.** кĕмеллú вы́рăн, хапхá *(транспорт валли туни)*; **въезд на территóрию стрóйки** стройкăнá кĕмеллú вы́рăн

въéхать (*будущ.* въéду, въéдешь, въéдут; *повел. ф. не употр.; прич. действ. прош.* въéхавший; *деепр.* въéхав) *глаг. сов.* **1.** (*ант.* вы́ехать) пырсá кĕр (*транспортпа*); **автомашúна въéхала во двор** автомашúна кил хушшинé пырсá кĕ´чĕ **2.** (*син.* вселúться; *ант.* съéхать) пурăнмá кĕр, вырнáç; **семья́ въéхала в нóвую квартúру** кил-йы́ш çĕ´нĕ хваттерé пурăнмá кĕ´нĕ **3.** (*син.* подняться; *ант.* съéхать) хăпáр (*транспортпа*); **воз едвá въéхал в гóру** лав сăртá аран-аран хăпáрчĕ

вы (вас, вам, вас, вáми, о вас) *местоим. личн. 2 л. множ. ч., в форме вежливости пишется с прописной* эсúр; **Вы егó знáете?** Эсúр ăнá пĕлéтĕр-и?; **он спрáшивал о вас** вăл сúрĕн çинчéн ы́йтнăччĕ; **Что вам нрáвится?** Сирé мĕн килĕшéт?

вы́бежать (*будущ.* -егу, -ежишь, -егут; *повел. ф.* -еги) *глаг. сов.* (*ант.* вбежáть) чупсá тух; **дéти вы́бежали на у́лицу** ачасéм урамá чупсá тýхрĕç

вы́бить (*будущ.* вы́бью, вы́бьешь, вы́бьют) *глаг. сов.* **1.** *кого-что* çапсá кăлáр; **вы́бить гвоздь из доскú** пăтанá хăмаráн çапсá кăлáр; **вы́бить врага́ из села́** тăшманá ялтáн хýтерсé яр **2.** *что* (*син.* очúстить) шаккá, хулăлá (*тасатма*); **вы́бить ковёр** кавирé шаккасá тасáт ◆ **вы́бить медáль** медáль хайлá; **вы́бить чек** чек çаптáр (*кассăра*)

вы́биться (*будущ.* вы́бьюсь, вы́бьешься, вы́бьются; *прич. действ. прош.* вы́бившийся; *деепр.* вы́бившись) *глаг. сов.* **1.** *из чего* (*син.* освободúться) хă´тăл, çă´лăн, хăтăлсá тух; **вы́биться из нужды́** нушаráн хă´тăл **2.** *1 и 2 л. не употр.* (*син.* вы́ступить) тухсá кай; **вóлосы вы́бились из-под ша́пки** çýç çĕ´лĕк айĕнчéн тухсá кáйнă ◆ **вы́биться из сил** вăйráн кай; **вы́биться в лю́ди** çын шутнé кĕр

вы́бор (-а) *сущ. муж.* **1.** (*син.* отбóр) суйлáв; суйланú, суйласá илнú; **вы́бор тéмы сочинéния** сочинéни теминé суйласá илнú ◆ **большóй вы́бор товáров** тĕ´рлĕ тавáр нумáй; **на вы́бор** хуть те хăшнé суйласá ил

вы́боры (-ов) *сущ. множ.* суйлáв; **вы́боры в Госудáрственный Совéт** Патшáлăх Канáшĕн суйлáвĕ; **прямы́е вы́боры** тý´рĕ суйлáв *(суйлавçăсем хăйсем сасăлани)*; **всеóбщие вы́боры** пĕтĕмĕшлé суйлáв *(суйлавçăсем пурте сасăлани)*

вы́брать (*будущ.* вы́беру, вы́берешь, вы́берут; *повел. ф.* вы́бери; *прич. страд. прош.* вы́бранный; *деепр.* вы́брав) *глаг. сов.* **1.** *кого-что* (*син.* отобрáть) суйлá, суйласá ил; **вы́брать костю́м** костю́м суйласá ил **2.** (*син.* избрáть) суйлá, суйласá ларт; **вы́брать комúссию** комúсси суйлá **3.** *что* (*син.* найтú) туп; **вы́брать подходя́щее врéмя** мáйлă вă´хăт туп

вы́браться (*будущ.* вы́берусь, вы́берешься, вы́берутся; *деепр.* вы́бравшись) *глаг. сов.* çăлăнсá тух, хăтăлсá тух; **мы éле вы́брались из болóта** эпúр шурлăхрáн аráн çăлăнсá тýхрăмăр

вы́бросить (*будущ.* -ошу, -осишь, -осят; *повел. ф.* -ось *и* -оси; *прич. страд. прош.* -ошенный) *глаг. сов.*, *кого-что* (*син.* вы́кинуть) кăларсá пăráх, кăларсá пер; **вы́бросить нену́жные ве́щи** кúрлĕ мар япаласенé кăларсá пăráх ◆ **вы́бросить с рабóты** ĕçрéн кăларсá яр; **вы́бросить товáр** тавáр суттá кăлáр

вы́везти (*будущ.* -езу, -езешь,-езут; *прош.* -ез, -езла, -езло; *повел. ф.* -ези; *прич. действ. прош.* -езший; *прич. страд. прош.* -езенный; *деепр.* -езя) *глаг. сов.* (*ант.* ввезтú) кăлáр, турт-

тарсá кăлáр, **вы́везти дрова́ из ле́са** вăрмантáн вýтă турттарса кăлáр

вы́веска (-и) *сущ. жен.* вывеска *(учреждени алăкĕ умĕнчи унăн ятне çырнă хăма)*

вы́вести[1] (*будущ.* -еду, -едешь, -едут; *прич. действ. прош.* -едший; *прич. страд. прош.* -еденный; *деепр.* -едя) *глаг. сов.* **1.** *кого-что* (*ант.* ввести́) кăлáр, илсé тух, çавăтсá тух; **вы́вести коня́ из коню́шни** лашанá витерéн çавăтсá тух; **дете́й вы́вели на прогу́лку** ачасенé уçăлмá илсé тýхнă **2.** *кого-что из чего* кăлáр, кăларсá пăрáх; **вы́вести из соста́ва комите́та** комитéт йышĕнчéн кăлáр **3.** *кого-что* (*син.* уничтóжить) пĕтéр; **вы́вести тарака́нов** таракансенé пĕтéр ◆ **вы́вести из беды́** инкекрéн хăтáр; **вы́вести из себя́** тарăхтарсá яр; **вы́вести из равнове́сия** хумхантарсá яр; **вы́вести на чи́стую во́ду** тắрă шыв çинé кăлáр

вы́вести[2] *глаг. сов.* **1.** *кого* (*син.* произвести́) кăлáр; **ку́рица вы́вела цыпля́т** чăх чĕ́пĕ кăлáрнă **2.** *что* (*син.* создáть, вы́растить) кăлáр, ýстéр, ýстерсé кăлáр; **вы́вести но́вый сорт сморо́дины** çĕ́нĕ сорт хурлăхáн ýстерсé кăлáр

вы́вихнуть (*будущ.* -ну, -нешь, -нут; *прич. страд. прош.* -нутый) *глаг. сов., что* мăкăлтá, сиктéр; **вы́вихнуть но́гу** ураná мăкăлтá

вы́вод (-а) *сущ. муж.* **1.** (*ант.* ввод) кăларý; кăларни́, илсé тухни́; **вы́вод войск из го́рода** çарсенé хуларáн илсé тухни́ **2.** (*син.* умозаключéние) пĕтĕмлетý́; **сде́лать вы́вод из ска́занного** каланинé пĕтĕмлéт

вы́водок (-дка) *сущ. муж.* пýслăх *(пĕр ама чĕпписем, çурисем)*; **вы́водок цыпля́т** пĕр пýслăх чăх чĕппи́; **во́лчий вы́водок** ка́шкăр çурисéм

вы́глядеть (*наст.* -яжу, -ядишь, -ядят; *повел. ф.* -яди; *прич. действ. наст.* -ядящий; *деепр.* -ядя) *глаг. несов.* (*син.* каза́ться) ку́рăн; **он вы́глядит больны́м** вăл чирлéнĕн курăнáть

вы́гнать (*будущ.* вы́гоню, вы́гонишь, вы́гонят; *прич. страд. прош.* вы́гнанный) *глаг. сов.* хăваласá кăлáр, хусá яр, хýтерсé яр; **вы́гнать свинью́ из огоро́да** сыснанá пахчарáн хăваласá кăлáр ◆ **вы́гнать с рабо́ты** ĕçрéн кăларсá яр; **вы́гнать рассáду** калчá ýстéр *(сăм., помидор, хăяр вăрри акса)*

вы́говор (-а) *сущ. муж.; множ.* **вы́говоры** (-ов) вы́говор, ятлáв, хытарý; ятлани́, хытарни́; **сде́лать вы́говор** хытарсá калá, вы́говор пар

вы́года (-ы) *сущ. жен.* пайтá, тýпăш, услáм; **прода́ть това́р с вы́годой** таварá тýпăшлă сут

вы́годный *прил.*, **вы́годно** *нареч.* **1.** (*син.* дохóдный) пайтáллă, тýпăшлă; **вы́годный контра́кт** пайтáллă килĕшý́ **2.** (*син.* благоприя́тный) лáйăх, аван, мáйлă; **представи́ть в вы́годном све́те** лáйăх енчéн кăтáрт

вы́грузить (*будущ.* -ужу, -узишь, -узят; *прич. страд. прош.* -уженный) *глаг. сов., что* (*ант.* погрузи́ть) пушáт; кăлáр; **вы́грузить станки́ из вагóна** станоксенé вагонрáн кăлáр

вы́дать (*будущ.* -ам, -ашь, -аст, -адим, -адите, -адут; *прич. страд. прош.* -анный) *глаг. сов.* **1.** *что* (*син.* предостáвить) пар, аллá пар, парсá яр; **сего́дня вы́дали зарпла́ту** паян ĕç укçи́ пáчĕç **2.** *кого-что* (*син.* открыть) пĕлтéр, уçсá пар; **вы́дать секре́т** вăрттăнлăхá уçсá пар **3.** *кого-что за кого-что* (*син.* объяви́ть) ...те; ... выранне́ кăтáрт; **он выдава́л себя́ за ревизо́ра** вăл хăйнé ревизóр тéнĕ **4.** *что* (*син.* изготóвить, вы́пустить) кăлáр, пар, тусá кăлáр; **вы́дать проду́кцию** проду́кци тусá кăлáр ◆ **вы́дать за́муж** качча пар

выдаю́щийся *прил.* чáплă, áслă; **выдаю́щаяся побе́да** чáплă çĕнтерý́

вы́двинуть (*будущ.* -ну, -нешь, -нут; *повел. ф.* -ни *и* -нь) *глаг. сов.* **1.** *что* (*ант.* задви́нуть) туртса́ кӑла́р; **вы́двинуть я́щик стола́** сӗтӗ́л сунтӑхне́ туртса́ кӑла́р **2.** *что* (*син.* предложи́ть) сӗн, пар, тӑра́т; **вы́двинуть предложе́ние** сӗнӳ́ пар; **вы́двинуть обвине́ние** айӑпла́ **3.** *кого* (*син.* повы́сить) ӳсте́р, ӗҫре́ ӳсте́р, уйӑрса́ ларт (*пысӑкрах ӗҫе*)

вы́делать (*будущ.* -аю, -аешь, -ают; *прич. страд. прош.* -анный) *глаг. сов., что* (*син.* обрабо́тать) ту, лайӑхла́т; **вы́деланная ко́жа** ту́нӑ тир

вы́делить (*будущ.* -лю, -лишь, -лят; *прич. страд. прош.* -ленный) *глаг. сов., кого-что* **1.** ӳйӑр, уйӑрса́ хур, уйӑрса́ пар; **вы́делить сре́дства на строи́тельство шко́лы** шкул лартма́ укҫа́-те́нкӗ уйӑрса́ пар; **вы́делить дежу́рного** дежу́рнӑй ӳйӑр **2.** па́лӑрт, па́ллӑ ту; **вы́делить в те́ксте ну́жные слова́** текстра́ ки́рлӗ сӑмахсене́ па́ллӑ ту

выделя́ться (*наст.* -я́юсь, -я́ешься, -я́ются; *прич. действ. наст.* -я́ющийся; *деепр.* -я́ясь) *глаг. несов.* (*син.* отлича́ться) па́лӑр, палӑрса́ тӑр, уйра́лса́ тӑр; **он выделя́ется свое́й си́лой** вӑл хӑ́йӗн вӑйӗпе́ палӑрса́ тӑра́ть

вы́держать (*будущ.* -жу, -жишь, -жат; *прич. страд. прош.* -жанный) *глаг. сов.* **1.** *кого-что* (*син.* устоя́ть) чӑт, тӳс, ан па́рӑн; **мост вы́держал большу́ю нагру́зку** кӗпе́р пы́сӑк тиеве́ чӑ́трӗ; **не́рвы не вы́держали** нервсе́м тӳсейме́рӗҫ **2.** *что* тыт, пурнӑҫла́, юра́хлӑ пул; **успе́шно вы́держать экза́мен** экзамена́ ӑ́нӑҫлӑ тыт ◆ **вы́держать хара́ктер** ҫине́ тӑр, ан па́рӑн; **кни́га вы́держала пять изда́ний** кӗнеке́ пи́лӗк кӑла́рӑм ту́хнӑ

вы́держка (-и) *сущ. жен.* **1.** (*син.* самообладание) тӳ́ҫӗм, чӑ́тӑм, ҫи́рӗп кӑ́мӑл; **прояви́ть вы́держку** ҫи́рӗп кӑ́мӑллӑ пул **2.** ӑ́ҫхӑт, виҫе́ *(фотоаппарат ӗҫленӗ хушӑ)*; **снима́ть с большо́й вы́держкой** пы́сӑк виҫепе́ ӳке́р

вы́дох (-а) *сущ. муж.* (*ант.* вдох) сывласа́ кӑларни́; **сде́лать вы́дох** сывласа́ кӑла́р

вы́дохнуть *(будущ.* -ну, -нешь, -нут) *глаг. сов.* (*ант.* вдохну́ть) сывласа́ кӑла́р

вы́дра (-ы) *сущ. жен.* ӑ́тӑр *(паха тирлӗ чӗр чун)*; **ша́пка из ме́ха вы́дры** ӑ́тӑр тир ҫӗ́лӗкӗ

вы́думать (*будущ.* -аю, -аешь, -ают; *прич. страд. прош.* -анный) *глаг. сов., что* **1.** (*син.* изобрести́) ӑсла́, шутласа́ кӑла́р; **вы́думать но́вую игру́** ҫӗ́нӗ вӑ́йӑ шутласа́ кӑла́р **2.** (*син.* приду́мать) шухӑшласа́ кӑла́р, шухӑша́ вӗҫте́р *(ҫуккине пур пек туса)*

вы́ехать (*будущ.* вы́еду, вы́едешь, вы́едут; *в знач. повел. ф. употр.* вы́езжай) *глаг. сов.* **1.** (*ант.* въе́хать, прие́хать) тухса́ кай *(транспортпа)*; **тра́ктор вы́ехал из воро́т** тра́ктор хапхара́н тухса́ ка́йрӗ **2.** (*син.* поки́нуть) тухса́ кай, пӑрахса́ кай, куҫса́ кай; **семья́ вы́ехала с кварти́ры** кил-йы́ш хваттерте́н куҫса́ ка́йнӑ

вы́жать (*будущ.* вы́жму, вы́жмешь, вы́жмут; *повел. ф.* вы́жми; *прич. страд. прош.* вы́жатый) *глаг. сов., что* **1.** (*син.* вы́крутить) пӑр, пӑрса́ кӑла́р; **вы́жать мо́крое полоте́нце** йӗпе́ ал шӑллине́ пӑрса́ кӑла́р **2.** хӗсте́р, хӗс, пӑчӑрта́, пӑчӑртаса́ кӑла́р; **вы́жать сок из лимо́на** лимо́н сӗткенне́ пӑчӑртаса́ кӑла́р ◆ **вы́жать шта́нгу** шта́нга ҫӗкле́ *(кӑкӑр ҫинчен майӗпен йӑтса)*

вы́звать (*будущ.* вы́зову, вы́зовешь, вы́зовут; *повел. ф.* вы́зови; *прич. страд. прош.* вы́званный) *глаг. сов.* **1.** *кого* чӗнсе́ ил, чӗнте́р, йы́хӑр; **вы́звать врача́ на́ дом** киле́ тӳхтӑр чӗнте́р **2.** *кого на что* чӗн, сӗн; **вы́звать на соревнова́ние** ӑмӑртма́ чӗн **3.** *что* пуҫа́р, тапра́т, кӑла́р; **де́тская**

ша́лость вы́звала пожа́р ача́-пăча́ ашкăнни́ пуша́р кăла́рнă

вы́здороветь (*будущ.* -ею, -еешь, -еют; *повел. ф.* -ей; *прич. действ. прош.* -евший) *глаг. сов.* (*ант.* заболе́ть) сыва́л, тӳ́рле́н, юса́н; **больно́й по́лностью вы́здоровел** чи́рлĕ çын пĕтĕмпе́х сывалса́ çи́тнĕ

вы́играть (*будущ.* -аю, -аешь, -ают) *глаг. сов., что* **1.** (*син.* победи́ть; *ант.* проигра́ть) выляса́ ил, çĕнтĕ́р; **вы́играть па́ртию в ша́хматы** ша́хмат вăййинче́ çĕнтĕ́р; **вы́играть де́ло в суде́** судра́ пуса́рнă ĕçе́ выляса́ ил **2.** выляса́ ил *(лотерейăра, телевăййăра т. ыт.)* **3.** (*син.* вы́гадать; *ант.* потеря́ть) пайта́ кур, у́сă кур, ту́-пăш ил; **от сниже́ния цен вы́играли все** хаксе́м чакнинче́н пу́рте пайта́ ку́рчĕç

вы́игрыш (-а) *сущ. муж.* (*ант.* про́игрыш) **1.** выля́в, выляса́ илни́; **де́нежный вы́игрыш** выля́в укçи́ **2.** пайта́, услам; **вы́игрыш от эконо́мии** перекет пайти́

вы́игрышный *прил.* **1.** выля́в -ĕ; выля́влă; **вы́игрышный лотере́йный биле́т** выля́влă лотере́я биле́чĕ **2.** (*син.* вы́годный; *ант.* про́игрышный) ма́йлă, у́сăллă, пайта́ллă; **вы́игрышная пози́ция** ма́йлă пози́ци *(сăм., шахмат вăййинче)*

вы́йти (*будущ.* вы́йду, вы́йдешь, вы́йдут; *повел. ф.* вы́йди; *прич. действ. прош.* вы́шедший; *деепр.* -вы́йдя) *глаг. сов.* **1.** (*ант.* войти́, зайти́) тух; **вы́йти из ко́мнаты** пӳ́лĕмре́н тух; **де́ти вы́шли из-за стола́** ачасе́м сĕте́л хушшинче́н ту́хрĕç; **река́ вы́шла из берего́в** юха́н шыв ейĕ́ве́ тухса́ ка́йнă **2.** тух, тухса́ кай, пырса́ тух; **вы́йти на доро́гу** çул çине́ тух; **корабли́ вы́шли в мо́ре** карапсе́м тинĕсе́ тухса́ ка́йнă **3.** *1 и 2 л. не употр.* (*син.* появи́ться) çуттă тух, кун кур; çапăнса́ тух, пичетленсе́ тух; **кни́га вы́шла бо́льши́м тиражо́м** кĕнеке́ пы́сăк тиражпа́ çапăнса́ ту́хнă **4.** *1 и 2 л. не употр.* (*син.* око́нчиться) пĕт, вĕçле́н; **запа́сы проду́ктов вы́шли** апа́т-çи́мĕç пĕ́тнĕ; **срок вы́шел** срок ту́хнă **5.** (*син.* получи́ться) пул, пулса́ тух; **из него́ вы́йдет хоро́ший певе́ц** вăл ла́йăх ю́рăçă пу́лĕ ◆ **вы́йти из себя́** тарăхса́ кай; **вы́йти из употребле́ния** пăрахӑç пул; **вы́йти за́муж** качча́ кай; **ничего́ не выхо́дит** ĕç тухма́сть; **вы́йти победи́телем** çĕнтерӳ́ ту; **вы́йти из гра́фика** графика́ пăс

вы́кинуть (*будущ.* -ну, -нешь, -нут; *повел. ф.* вы́кинь; *прич. страд. прош.* -нутый) *глаг. сов., кого-что* (*син.* вы́бросить) кăларса́ пăра́х, кăларса́ пер; **вы́кинуть нену́жные ве́щи** ки́рлĕ мар япаласене́ кăларса́ пăра́х ◆ **вы́кинуть това́ры** тава́р суттă кăла́р; **вы́кинуть но́мер** тĕлĕнтерсе́ пăра́х; **вы́кинуть из головы́** пуçра́н кăла́р, ма́нăç ту; **овца́ вы́кинула** су́рӑх пăра́н пăра́хнă *(вилĕ путек çуратнă)*

выключа́тель (-я) *сущ. муж.* сӳ́нтĕркĕч *(электричество токĕн)*

вы́ключить (*будущ.* -чу, -чишь, -чат; *прич. страд. прош.* -ченный) *глаг. сов., что* (*ант.* включи́ть) сӳ́нтĕр, чар, хуп; **вы́ключить свет** çу́тă сӳ́нтĕр; **вы́ключить кран** шыв кранне́ хуп

вы́копать (*будущ.* -аю, -аешь, -ают; *прич. страд. прош.* -анный) *глаг. сов., что* чав, алт, чавса́ кăла́р; **вы́копать карто́фель** çĕр улми́ кăла́р

вы́кройка (-и) *сущ. жен.; множ.* **вы́кройки** (-оек) ĕлкé *(туптир касмалли)*; **шить по вы́кройке** ĕлкепе́ касса́ çĕле́

вы́лезти *и* **вы́лезть** (*будущ.* -езу, -езешь, -езут; *прош.* -ез, -езла, -езли; *повел. ф.* -ези, -езь; *прич. действ. прош.* -езший; *деепр.* -езши) *глаг. сов.* **1.** (*син.* вы́ползти) тух, шуса́ тух, йăралансă тух, упаленсе́ тух; **медве́дь вы́лез из берло́ги** упа́ шăтăкĕн-

чéн йăралансá тýхрĕ **2.** *1 и 2 л. не употр.* (*син.* вы́ступить) тухсá кай, кăнтарсá тăр; **вóлосы вы́лезли из-под шáпки** çýç çĕ´лĕк айĕнчéн тухсá кáйнă

вы́лететь (*будущ.* -ечу, -етишь, -етят) *глаг. сов.* **1.** (*ант.* влете́ть, залете́ть) вĕçсé тух; **лáсточка вы́летела из гнездá** чĕкéç йăвинчéн вĕçсé тýхрĕ **2.** (*син.* отпрáвиться) тухсá кай, вĕçсé кай; **самолёт вы́летел из гóрода по расписáнию** самолёт хуларáн расписанипе́ тухсá кáйнă **3.** (*син.* вы́пасть) ы́втăн, тухсá ӳ́к, тухсá сúрпĕн; **вы́лететь из седлá** йĕнéр çинчéн ы́втăн **4.** (*син.* появи́ться) вĕçтерсé тух, ыткăнсá тух, вирхĕнсé тух; **всáдники вы́летели из лéса** юлáн утсéм вăрмантáн ыткăнсá тýхрĕç ◆ **вы́летело из головы́** пуçрáн тухсá ӳ´крĕ

вы́лечить (*будущ.* -чу, -чишь, -чат; *прич. страд. прош.* -ченный) *глаг. сов., кого-что* сывáт, тýрлéт, чĕрт; **вы́лечить больно́го** чúрлĕ çынна́ сывáт

вы́лечиться (*будущ.* -чусь, -чишься, -чатся; *прич. действ. прош.* -чившийся; *деепр.* -чивши) *глаг. сов.* (*ант.* заболéть) сывáл, тýрлéн, чĕ´рĕл; **вы́лечиться от гри́ппа** грипрáн сывáл

вы́лить (*будущ.* вы́лью, вы́льешь, вы́льют; *повел. ф.* вы́лей) *глаг. сов.* тăк, тăксá кăлáр; **вы́лить вóду из кру́жки** куркарú шывá тăк

вы́литься *1 и 2 л. не употр.* (*будущ.* вы́льется, вы́льются) *глаг. сов.* тă´кăн, тăкăнсá кай, юхсá тух; **водá вы́лилась из бóчки** шыв пичкерéн юхсá тýхнă

вы́ложить (*будущ.* -жу, -жишь, -жат; *повел. ф.* вы́ложи) *глаг. сов., что* **1.** (*син.* вы́нуть; *ант.* положи́ть) кăлáр, кăларсá хур; **вы́ложить поку́пки из су́мки** туя́ннă япаласенé сумкăрáн кăларсá хур **2.** (*син.* высказать) калá, тý´ррĕн калá, каласá хур; **вы́ложить всю пра́вду** чăнниné йăлтáх калá **3.** *чем* (*син.* облицева́ть) вит; **стена́ вы́ложена пли́ткой** стенанá пли́тка ви́тнĕ

вы́лупиться *1 и 2 л. не употр.* (*будущ.* -ится, -ятся; *прич. действ. прош.* -ившийся; *деепр.* -ившись) *глаг. сов.* тух, çăмартарáн тух; **цыплёнок вы́лупился из яйца́** чăх чĕппи́ çăмартарáн тýхнă

вы́мереть *1 и 2 л. не употр.* (*будущ.* вы́мрет, вы́мрут; *прош.* вы́мер, вы́мерла; *прич. действ. прош.* вы́мерший; *деепр.* вы́мерев *и* вы́мерши) *глаг. сов.* (*син.* поги́бнуть) вил, вилсé пĕт; **ма́монты давно́ вы́мерли** мамонтсéм тахçанáх вилсé пĕ´тнĕ

вы́мокнуть (*будущ.* -ну, -нешь, -нут; *прош.* вы́мок, вы́мокла; *прич. действ. прош.* вы́мокший *и* вы́мокнувший; *деепр.* вы́мокнув *и* вы́мокши) *глаг. сов.* (*ант.* вы́сохнуть) йĕпéн, ислéн, йĕпенсé кай; **вы́мокнуть под дождём** çумăрпá йĕпенсé кай

вы́мпел (-а) *сущ. муж.* вы́мпел *(пĕчĕк ялав)*

вы́мыть (*будущ.* вы́мою, вы́моешь, вы́моют; *прич. страд. прош.* вы́мытый) *глаг. сов., кого-что* çу, çусá тасáт; **вы́мыть ру́ки** áлă çу; **вы́мыть посу́ду** сáвăт-сапанá çусá тасáт

вы́мя (вы́мени) *сущ. сред.* çúлĕ; **вы́мя коро́вы** ĕнé çиллú

вы́нести (*будущ.* -су, -сешь, -сут; *прич. действ. прош.* -сший; *прич. страд. прош.* -сенный; *деепр.* -ся) *глаг. сов.* **1.** *кого-что* йăтсá тух, илсé тух, кăлáр; **вы́нести ме́бель из ко́мнаты** сĕтéл-пуканá пýлĕмрéн илсé тух **2.** *что* чăт, тýс, чăтсá ирттéр, тýссé ирттéр; **вы́нести боль** ыратниné чăтсá ирттéр ◆ **вы́нести реше́ние** йы́шăн, йышăнý ту; **вы́нести благода́рность** тав ту

выно́сливый *прил.* чă´тăмлă, тý´сĕмлĕ; **солда́т до́лжен быть выно́сливым** салтáкăн тý´сĕмлĕ пулмаллá

вы́нужденный *прил.*, **вы́нужденно** *нареч.* и́рĕксĕр; **вы́нужденный прогу́л** ирĕксĕре́х ĕçре́н юлни́

вы́нуть (*будущ.* вы́ну, вы́нешь, вы́нут) *глаг. сов., что* кăла́р; **вы́нуть пиро́г из печи́** кăмакара́н ку́кăль кăла́р ◆ **Вынь да поло́жь!** Хале́х па́нă пу́лтăр!

вы́пасть (*будущ.* -аду, -адешь, -адут; *повел. ф.* -ади; *прич. действ. прош.* -авший; *деепр.* -ав) *глаг. сов.* **1.** (*син.* вы́валиться) тухса́ ӳк; **расчёска вы́пала из карма́на** тура́ кĕсьере́н тухса́ ӳ́крĕ **2.** *1 и 2 л. не употр.* тắкăн, тăкăнса́ пĕт; **во́лосы вы́пали** çӳç тăкăнса́ пĕ́тнĕ **3.** *1 и 2 л. не употр.* çу, ӳк; **но́чью вы́пал снег** çĕрле́ юр çу́нă **4.** пӳр, тив, тӳр кил; **ему́ вы́пала счастли́вая до́ля** у́нăн шăпи́ теле́йлĕ пу́лчĕ

вы́писать (*будущ.* -ишу, -ишешь, -ишут; *повел. ф.* -иши; *прич. страд. прош.* -исанный) *глаг. сов.* **1.** *что* (*син.* списа́ть) çырса́ ил, куçарса́ çыр; **вы́писать цита́ту из кни́ги** кĕнекере́н цита́та çырса́ ил **2.** *что* (*син.* написа́ть) çырса́ пар; **вы́писать квита́нцию** квита́нци çырса́ пар **3.** *что* çы́рăн, çырăнса́ ил; **вы́писать газе́ту** хаçа́т çырăнса́ ил **4.** *кого* кăла́р, яр; **его вы́писали из больни́цы** ăна больницăра́н кăла́рнă

вы́пить (*будущ.* вы́пью, вы́пьешь, вы́пьют; *прич. действ. прош.* вы́пивший; *прич. страд. прош.* вы́питый; *деепр.* вы́пив) *глаг. сов., что* ĕç, ĕçсе́ яр; **вы́пить стака́н воды́** пĕр стака́н шыв ĕç

вы́полнить (*будущ.* -ню, -нишь, -нят; *прич. действ. прош.* -нивший; *прич. страд. прош.* -ненный; *деепр.* -нив) *глаг. сов., что* (*син.* осуществи́ть) ту, хайла́, пурнăçла́, пурнăçа́ кĕрт; **вы́полнить поруче́ние** ху́шнă ĕçе́ ту

вы́прыгнуть (*будущ.* -ну, -нешь, -нут) *глаг. сов.* (*ант.* впры́гнуть, запры́гнуть) сиксе́ тух; **вы́прыгнуть из окна́** чӳречере́н сиксе́ тух

вы́пуклый *прил.* (*син.* вы́гнутый; *ант.* во́гнутый) мắкăр, мắкăрăлчăк; **вы́пуклый лоб** мắкăрăлчăк çамка́

вы́пуск (-а) *сущ. муж.* **1.** (*син.* произво́дство) кăлару́; кăларни́, кăларасси́; **вы́пуск проду́кции увели́чился** проду́кци кăларасси́ ӳ́снĕ **2.** (*син.* часть) пай, кăла́рăм; **рома́н в трёх вы́пусках** ви́çĕ кăла́рăмлă рома́н **3.** кăла́рăм; **прошлого́дний вы́пуск институ́та** институ́тăн пĕлтĕрхи́ кăла́рăмĕ

выпускни́к (-а́) *сущ. муж.*, **выпускни́ца** (-ы) *жен.* вĕренсе́ тухака́н, вĕренсе́ тухни́, вĕренсе́ пĕтерни́; **выпускники́ сре́дней шко́лы** вăта́м шкулта́н вĕренсе́ тухнисе́м

выпускно́й *прил.* вĕренсе́ тухмалли́; **выпускны́е экза́мены в шко́ле** шкулта́н вĕренсе́ тухмалли́ экзаменсе́м

вы́пустить (*будущ.* -ущу, -устишь, -устят; *прич. страд. прош.* -ущенный) *глаг. сов.* **1.** *кого-что* (*ант.* впусти́ть) кăла́р, яр, кăларса́ яр; **вы́пустить из рук** алăра́н яр, вĕçе́рт; **вы́пустить скот на у́лицу** выльăхсене́ урама́ кăларса́ яр **2.** *кого* (*син.* подгото́вить) кăла́р, вĕрентсе́ кăла́р; **институ́т вы́пустил мно́го инжене́ров** институ́т нума́й инжене́р вĕрентсе́ кăла́рнă **3.** *что* (*син.* изгото́вить) кăла́р, туса́ кăла́р; **вы́пустить но́вые това́ры** çĕ́нĕ тава́р туса́ кăла́р; **вы́пустить в прода́жу** суттá кăла́р; **писа́тель вы́пустил но́вый рома́н** çыра́вçă çĕ́нĕ рома́н пичетлесе́ кăла́рнă

выраже́ние (-я) *сущ. сред.* **1.** (*син.* проявле́ние) па́лăрăм, курăну́; палăрни́, курăнни́; **выраже́ние ра́дости на лице́** сăн-питре́ са́вăнăç палăрни́ **2.** (*син.* фра́за, оборо́т) пупле́в, пупле́рĕш, сăма́х çа́врăнăшĕ; **о́бразное выраже́ние** сăна́рлă сăма́х çа́врăнăшĕ

вы́разить (*будущ.* -ажу, -азишь, -азят; *прич. страд. прош.* -аженный)

глаг. сов. (*син.* воплоти́ть, прояви́ть) пăлăрт, пĕлтĕр, кала́; **вы́разить удивле́ние** тĕлĕннине́ пăлăрт; **вы́разить благода́рность** тав тусá калá

вы́разиться (*будущ.* -ажусь, -азишься, -азятся) *глаг. сов.* **1.** (*син.* воплоти́ться, прояви́ться) пăлăр, ку́рăн; пурнăҫла́н; **мысль хорошо́ вы́разилась в слова́х** шӳ́хăш сăмахсенче́ ава́н пăлăрчĕ **2.** (*син.* сказа́ть) кала́, пăлăрт, сăмахпá пăлăрт; **он вы́разился кра́тко и то́чно** вăл шухăша́ кĕске́н те ӳҫăмлăн пăлăртрĕ

вы́расти (*будущ.* -асту, -астешь, -астут; *прош.* -ос, -осла, -осли; *повел. ф.* -асти; *прич. действ. прош.* -осший; *деепр.* -осши) *глаг. сов.* **1.** ӳс, ҫи́тĕн, ӳссе́ ҫи́тĕн; **де́ти у них уже́ вы́росли** вĕсе́н ачисе́м ӳссе́ ҫи́тĕннĕ ĕ́нтĕ **2.** (*син.* подня́ться, умно́житься; *ант.* упа́сть, уме́ньшиться) ӳс, хӳшăн, пысăкла́н; **дохо́ды фи́рмы вы́росли** фи́рма тупăшĕсе́м ӳ́снĕ ◆ **он как из-под земли́ вы́рос** вăл сасáртăк тухсá тắчĕ

вы́растить (*будущ.* -ащу, -астишь, -астят; *повел. ф.* -асти; *прич. страд. прош.* -ащенный) *глаг. сов., кого-что* ӳсте́р, ҫитĕнтéр, пăхсá ӳсте́р, ӳстерсе́ ҫитĕнтéр; **вы́растить де́рево** йывăҫ лартсá ӳсте́р; **они́ вы́растили трои́х дете́й** вĕсе́м виҫĕ ачá ӳстерсе́ ҫитĕнтéрнĕ

вы́рвать (*будущ.* -ву, -вешь, -вут) *глаг. сов., кого-что* туртсá кăлáр, туртсá ил; **вы́рвать из рук** алăрáн туртсá ил; **вы́рвать больно́й зуб** чи́рлĕ шăлá туртсá кăлáр

вы́рваться (*будущ.* -вусь, -вешься, -вутся) *глаг. сов.* **1.** (*син.* освободи́ться) ҫăлăнсá тух, хăтăлсá тух; **вы́рваться из пле́на** тыткăнрáн ҫăлăнсá тух **2.** *1 и 2 л. не употр.* (*син.* прорва́ться) персé тух, тапсá тух, курăнсá кай; **из о́кон до́ма вы́рвалось пла́мя** ҫурт кантăкĕсенчéн ҫӳлăм курăнсá кáйрĕ **3.** (*син.* опереди́ть) малá тух, иртсé кай; **лы́жник вы́рвался вперёд** йĕ́лтĕрҫĕ малá талпăнсá тӳ́хрĕ

вы́резать (*будущ.* -ежу, -ежешь, -ежут; *повел. ф.* -ежь) *глаг. сов.* **1.** кассá кăлáр, кассá ил, кассá пăрáх; **вы́резать карти́нку из журна́ла** журналта́н ӳ́кéрчĕк кассá кăлáр **2.** кассá ту, кассá эрешлé; **вы́резать из де́рева фигу́рку** йывăҫрáн кĕлетké кассá ту

вы́ронить (*будущ.* -ню, -нишь, -нят) *глаг. сов., что* алăрáн вĕҫéрт, кăларсá ӳкéр; **вы́ронить из карма́на де́ньги** кĕсьерéн укҫá кăларсá ӳкéр ◆ **ни сло́ва не вы́ронил** сăмáх та шарлама́рĕ

вы́рубить (*будущ.* -блю, -бишь, -бят; *прич. страд. прош.* -бленный) *глаг. сов., что* **1.** кас, кассá тух, кассá пĕтéр; **вы́рубить сухи́е дере́вья** хắрнă йывăҫсенé кассá тух **2.** кассá кăлáр; **вы́рубить из пня фигу́ру медве́дя** тункатарáн упá кĕлеткú кассá кăлáр

вы́ручить (*будущ.* -чу, -чишь, -чат) *глаг. сов.* **1.** *кого* (*син.* помóчь) ҫăл, хăтáр, пӳлăш; **вы́ручить деньга́ми** укҫапá пӳлăш **2.** *что* (*син.* получи́ть) тӳпăш ил, пайтá кур; **хозя́йство вы́ручило мно́го де́нег от прода́жи мя́са** хуҫáлăх аш сутсá пысăк тӳпăш илчĕ

вы́ручка (-и) *сущ. жен.* **1.** (*син.* по́мощь) хăтарӳ, ҫắлăнăҫ, пулăшӳ; **прийти́ на вы́ручку** пулăшӳ́ пар, ҫắлăнăҫ кӳр **2.** тӳпăш, пайтá; **дневна́я вы́ручка магази́на** магази́нăн пĕр кунхи́ тӳпăшĕ

вы́рыть (*будущ.* вы́рою, вы́роешь, вы́роют; *прич. страд. прош.* вы́рытый) *глаг. сов. кого-что* (*ант.* зары́ть) алт, чав, чавсá кăлáр; **вы́рыть кана́ву** кана́в алт

вы́садить (*будущ.* -ажу, -адишь, -адят; *повел. ф.* -ади; *прич. страд. прош.* -аженный; *деепр.* -адив) *глаг. сов.* **1.** *что* кăларсá ларт, куҫарсá ларт; **вы́садить рассáду из парника́** калчана́ парникрáн кăларсá ларт **2.** кăлáр,

антáр, антарсá хăвáр; **вы́садить пассажи́ров из автóбуса** пассажирсенé автобусрáн кăлáр

вы́селок (-лка) *сущ. муж.* вы́ç-çăлккă, хýттăр, çĕ´нĕ кас *(ялтан уйрăлса тухнă килсен ушкăнĕ)*

двузна́чный *прил.* **1.** и́кĕ пăллăллă; **двузна́чное число́** и́кĕ пăллăллă хисéп

(*сăм.*, 12, 34, 75) **2.** и́кĕ пĕлтĕ́рĕшлĕ; **двузна́чное сло́во** и́кĕ пĕлтĕ́рĕшлĕ сăма́х

двуство́льный *прил. (ант.* одноство́льный) и́кĕ кĕпçе́ллĕ; **двуство́льное ружьё** и́кĕ кĕпçе́ллĕ пăша́л

двухле́тний *прил.* **1.** и́кĕ çултѝ, иккĕри́; **двухле́тний ребёнок** иккĕри́ ача́ **2.** и́кĕ çу́ллăх; **двухле́тние цветы́** и́кĕ çул у́секéн чечексéм

двухме́стный *прил.* и́кĕ вы́рăнлă; **двухме́стный но́мер в гости́нице** хăна́ килĕнчи́ и́кĕ вы́рăнлă пу́ĕлĕм

двухто́мный *прил.* и́кĕ то́млă; **двухто́мное изда́ние** и́кĕ то́млă кăла́рăм

двухэта́жный *прил.* и́кĕ ху́тлă; **двухэта́жный дом** и́кĕ ху́тлă çурт

двуязы́чие (-я) *сущ. сред.* ик чĕлхе́лĕх (*халăх е çын икĕ чĕлхепе усă курни*); **чува́шско-ру́сское двуязы́чие** чăвашла́-вырăсла́ ик чĕлхе́лĕх

двуязы́чный *прил.* **1.** ик чĕлхе́ллĕ (*икĕ чĕлхепе калаçакан*); **двуязы́чное населе́ние** ик чĕлхе́ллĕ халăх **2.** и́кĕ чĕлхе́ллĕ (*икĕ чĕлхепе усă курса çырнă*); **двуязы́чный текст** и́кĕ чĕлхе́ллĕ текст; **двуязы́чный слова́рь** и́кĕ чĕлхе́ллĕ слова́рь (*сăм., вырăсла-чăвашли, нимĕçле-вырăсли т.ыт.*)

деба́ты (-ов) *сущ. множ.* дебатсе́м, су́тсе́ яву́; су́тсе́ явни́; **в парла́менте иду́т деба́ты по но́вому зако́ну** парламентра́ çĕ́нĕ закона́ су́тсе́ явáççĕ

дебито́р (-а) *сущ. муж.* (*син.* должни́к) дебито́р, па́рăмçă, па́рăмлă çын (е организа́ци, предприяти)

дебито́рский *прил.* дебито́р -ĕ, па́рăмçă -ĕ; **дебито́рская задо́лженность** дебито́р па́рăмĕ

де́бри (-ей) *сущ. множ.* чắтлăх; **таёжные де́бри** тайга́ чắтлăхĕ

дебю́т (-а) *сущ. муж.* **1.** (*син.* нача́ло) пуçла́мăш, пуçăну́; пуçăнни́; **дебю́т арти́ста** арти́ст пĕрре́мĕш хут выляни́; **дебю́т оказа́лся успе́шным** ĕçĕ́ пуçăнни́ ắнăçлă пу́лчĕ

дебюти́ровать (*наст.* -рую, -руешь, -руют) ĕç пуçла́, ĕçĕ́ пу́çăр; **спортсме́н дебюти́ровал в бе́ге на коро́ткие диста́нции** спортсме́н кĕскé дистанцисенчĕ́ чупма́ пуçла́нă

девальва́ция (-и) *сущ. жен.* девальва́ци; девальвациленни́ *(хут укçа йу́нелни)*

дева́ть (*наст.* -а́ю, -а́ешь, -а́ют) *глаг. сов. и несов. кого-что* (*син.* помеща́ть, пря́тать, класть) хур, чик, чиксе́ хур, пыта́р; **Куда́ дева́ть э́ти кни́ги?** Ку кĕнекесенé ăçта́ хумалла́?; **Куда́ он дева́л ключи́?** Вăл çăраççисенé ăçта́ чиксе́ ху́нă? ◆ **де́нег не́куда дева́ть** укçа́н шу́чĕ çук

дева́ться (*наст.* -а́юсь, -а́ешься, -а́ются; *повел. ф.* -а́йся, -а́йтесь) *глаг. сов. и несов.* (*син.* исчеза́ть, пропада́ть) пĕт, çухáл, кай, кайсá çухáл; **Куда́ дева́ются де́ньги**? Укçá ăçта́ кайсá çухала́ть? ◆ **не́куда дева́ться** ниçта́ та кайсá кĕре́ймĕн, ним те тăва́ймăн

деви́з (-а) *сущ. муж.* деви́з (*ĕç-хĕлĕн, хайлавăн тĕп шухăшне, тĕллевне кĕскен палăртни*); **Наш деви́з — служе́ние наро́ду** Пи́рĕн деви́з — ха́лăхшăн ĕçлесси́

де́вичий, деви́чий *прил.* хĕр -ĕ, хĕр упра́ç -ĕ; **деви́чьи ли́ца** хĕрсе́н сăнĕсе́м; **у него́ де́вичья па́мять** вăл хĕр пек часáх мана́ть (*тăрăхласа калани*)

де́вочка (-и) *сущ. жен.* (*ант.* ма́льчик) хĕр ача́; **у них в семье́ две де́вочки и ма́льчик** вĕсе́н кил-йышĕнче́ и́кĕ хĕр ачапа́ пĕр арçы́н ача́

девяно́сто (*род., дат., твор., предл. п.* девяно́ста, *вин. п.* девяно́сто) *числит. колич.* тắхăр вýннă, тắхăр вýн(ă); **прошло́ девяно́сто лет** тắхăр вýнă çул и́ртрĕ; **девяно́сто раздели́ть на́ два** тắхăр вунна́ икке́ пайла́

девятна́дцать (-и) *числит. колич.*

вун тӑ́ххӑр, вун тӑ́хӑр; **ему́ девятна́дцать** вӑл вун тӑххӑртá

девя́тый *числит. порядк.* тӑ́ххӑрмӗш; **мы у́чимся в девя́том кла́ссе** эпи́р тӑ́ххӑрмӗш класрá вӗренéтпӗр

де́вять (-и, -ью) *числит. колич.* тӑ́ххӑр, тӑ́хӑр; **де́вять челове́к** тӑ́хӑр çын; **де́вять не де́лится на́ два** тӑ́ххӑр икké пайланмáсть

девятьсо́т (девятисóт, девятистáм, девятьюстáми, о девятистáх) *числит. колич.* тӑ́хӑр çӗр; **в ты́сяча девятьсо́т со́рок пе́рвом году́ начала́сь война́** пин те тӑ́хӑр çӗр хӗ́рӗх пӗрремӗш çултá вӑ́рçă пуçлáннă

дед (-а) *сущ. муж.* **1.** асатте́ (*аттен ашшӗ*); кукаçи́ (*аннен ашшӗ*) **2.** мучи́, асатте́ **3.** мучи́, асатте́ (*ватӑ çынна чӗнни*) ◆ **Дед Моро́з** Хӗл Мучи́

деепричáстие (-я) *сущ. сред.* деепричáсти *(глагол форми)*

деепричáстный *прил.*: **деепричáстный оборо́т** деепричáстиллӗ сӑмáх çáвӑнăшӗ

дежу́рить (*наст.* -рю, -ришь, -рят; *повел. ф.* -рь; *прич. действ. наст.* -рящий, *прош.* -ривший; *деепр.* -ря) *глаг. несов.* дежурствӑрá тӑр, дежýрнăй пул; **Кто сего́дня дежу́рит в кла́ссе?** Паян класрá кам дежýрнăй?

дежу́рный 1. *прил.* дежурствӑрá тӑракáн, дежурствӑри́; **дежу́рный врач** дежурствӑри́ врач **2. дежу́рный** (-ого) *сущ. муж.*, **дежу́рная** (-ой) *жен.* дежýрнăй; **дежу́рный по ста́нции** ста́нци дежýрнăйӗ; **назна́чить дежу́рных** дежурнăйсенé уйăрсá ларт

дежу́рство (-а) *сущ. сред.* дежýрство; **дежу́рство по шко́ле** шкулти́ дежýрство; **быть на дежу́рстве** дежурствӑрá пул

дезерти́р (-а) *сущ. муж.* дезерти́р, тáркăн (*çартан тарнă салтак*)

дезинфе́кция (-и) *сущ. жен.* (*син.* обеззарáживание) дезинфéкци *(чир ертекен микробсене пӗтерни)*; **произвести́ дезинфе́кцию** дезинфéкци тусá ирттéр

дезинфици́ровать (*наст.* -рую, -руешь, -руют) *глаг. сов. и несов., что* (*син.* обеззарáживать) дезинфéкци ту; **дезинфици́ровать оде́жду** тумтирé дезинфéкци ту

дезорганиза́ция (-и) *сущ. жен.* дезорганизáци, пăтрáв; пăтрáв кýни́, арпашý кýни́; **он вно́сит дезорганиза́цию в рабо́ту** вӑл ĕçрé пăтрáв кýрéт

де́йствие (-я) *сущ. сред.* **1.** (*син.* рабóта, дéятельность) ĕç, ĕç-пýç, ĕçхӗ́л; **противозако́нные де́йствия** законá хи́рĕç ĕçсéм; **соста́вить план де́йствий на бу́дущее** малашнехи́ ĕçсéн планнé палăртсá хур **2.** ĕçлени́, çýрени́, **привести́ маши́ну в де́йствие** машинăнá ĕçлеттермé пуçлá **3.** вăй; вăйрá тăни́; **продли́ть де́йствие догово́ра** договóр вăйрá тăрáс вăхăтá тăс; **зако́н обра́тной си́лы не име́ет** закóн вӑ́йĕ и́ртнĕ вăхăтá витмéст **4.** (*син.* результáт, влия́ние) ви́тĕм, вӑ́йăм, úсă; ви́тĕм кýни́, úсă пани́; **ока́зывать благотво́рное де́йствие** ы́рă ви́тĕм кýр; **предупрежде́ние не возыме́ло де́йствия** асăрхаттарни́ úсă памáрĕ **5.** пай, сы́пăк (*спектаклĕн, пьесăн*); **коме́дия в трёх де́йствиях** ви́çĕ пáйлă комéди **6.** тӑ́вăм, дéйстви; **четы́ре де́йствия арифме́тики** арифмéтикăн тăвáтă дéйствийĕ

действи́тельность (-и) *сущ. жен.* пýрнăç, чăн пýрнăç, чăн пурри́; **литерату́ра отража́ет действи́тельность** литерату́ра чăн пурнăçá сăнласá парать ◆ **в действи́тельности** тĕрĕссипé, чăннипé

действи́тельный *прил.* **1.** (*син.* настоя́щий, по́длинный) чăн пур, чăннипé пýлнă; **действи́тельный факт из жи́зни** пурнăçрá чăн пулни́

2. вăйрá тăракáн; **спрáвка действи́тельна в тече́ние ме́сяца** спрáвка пĕр ýйăх хушши́ вăйрá тăрáть **3. действи́тельно** *нареч.* чăн, чăнáх та, чăннипéх; **он действи́тельно бóлен** вăл чăнáх та чи́рлĕ **4. действи́тельно** *вводн. сл., выражает уверенность* чăн та, чăнáх та; **я, действи́тельно, там не был** э́пĕ чăнáх та унтá пулмáн ◆ **действи́тельный залóг глагóла** глагóлăн тĕп залóгĕ; **действи́тельный член акаде́мии** акаде́мин тĕп члéнĕ

де́йствовать (*наст.* -твую, -твуешь, -твуют; *прич. действ. наст.* -твующий, *прош.* -твовавший; *деепр.* -твуя) *глаг. несов.* **1.** ĕçлé, ту, тусá пыр; **де́йствовать сме́ло** хăюллă пул; **телефóнная ли́ния не де́йствует** телефóн ли́нийĕ ĕçлемéст. **2.** *на кого-что* витéр, ви́тĕм кýр,ýсă пар; **лека́рство на него́ не де́йствует** эмéл ăнáýсă памáсть

дека́брь (-я́) *сущ. муж.* раштáв, дека́брь (*çулталăкри вун иккĕмĕш уйăх*); **в конце́ декабря́** раштáв вĕçĕнчé

дека́брьский *прил.* раштáв -ĕ; дека́брь -ĕ; раштáв уйăхĕнчи́, декабрьти́; **дека́брьские моро́зы** раштáв сивисéм

дека́да (-ы) *сущ. жен.* **1.** (*син.* десятиднéвка) вýнă кун; **в пе́рвой дека́де ме́сяца** ýйăхăн пĕрремĕш вýнă кунĕнчé **2.** вунăкýнлăх, дека́да; **дека́да наро́дного тво́рчества** хáлăх пултарýлăхĕн вунăкýнлăхĕ

дека́н (-а) *сущ. муж.* дека́н (*аслă шкулта — факультет пуçлăхĕ)*

декана́т (-а) *сущ. муж.* декана́т (*факультета ертсе пыракан çынсем*)

деклами́ровать (*наст.* -рую, -руешь, -руют) *глаг. несов.* илéмлĕ вулá; **деклами́ровать стихи́ со сце́ны** сцéна çинчé сăмăвă вулá

деклара́ция (-и) *сущ. жен.* (*син.* заявлéние) деклара́ци (*ĕç принципĕсемпе планĕсене пĕлтерсе калани, çирĕплетсе çырни*); **прави́тельственная деклара́ция** прави́тельство деклара́цийĕ; **вы́ступить с деклара́цией** деклара́ци ту ◆ **тамóженная деклара́ция** тамóжня деклара́цийĕ (*чикĕ урлă каçакан çын хăйпе мĕнле хаклăхсем пурри çинчен çырса пани*)

декорати́вный *прил.* илéм -ĕ, илéмлĕх, кáпăрлăх; **декорати́вные расте́ния** илéмлĕх ýсéн-тăрáн

декора́ция (-и) *сущ. жен.* декора́ци (*спектакльти ĕçсемпе килĕштерсе сцена çинче усă куракан ĕлкесем, япаласем*)

декре́т (-а) *сущ. муж.* (*син.* постановлéние) декрéт, йышăнý; **декре́т прави́тельства** прави́тельство йышăнăвĕ

де́лать (*наст.* -аю, -аешь, -ают) *глаг. несов.* **1.** *что* (*син.* совершáть, занимáться, производи́ть) ту, ăсталá, хайлá, тусá хатĕрлé; **де́лать ме́бель** сĕтéл-пукáн ăсталá; **он ничего́ не де́лает** вăл ним те тумáсть **2.** *что и без доп.* ту, хăтлáн; **де́лать добро́** ырă ĕç ту; **де́лать успе́хи** çитĕнýˊ ту; **де́лать оши́бки** йăˊнăш ту; **де́лать посво́ему** ху пĕˊлнĕ пек хăтлáн ◆ **де́лать вы́бор** суйласá ил; **де́лать попы́тку** тăрăшсá пăх, хăтлáн; **де́лать не́чего** ним те тăвáймăн; **от не́чего де́лать** ним ĕç çукрáн

де́латься (*наст.* -аюсь, -аешься, -аются) *глаг. несов.* **1.** (*син.* станови́ться) пул, пулсá кай, пулсá пыр; **ве́тер де́лается си́льным** çил вăйлансá пырáть **2.** *1 и 2 л. не употр.* (*син.* происходи́ть, бывáть) пул, пулсá ирт; **Что там де́лается?** Мĕн пулсá иртéт унтá?

делега́т (-а) *сущ. муж.*, **делега́тка** (-и) *жен.* делегáт (*суйласа янă çын*); **делега́ты парти́йного съе́зда** пáрти съéзчĕн делегачĕсéм

делега́ция (-и) *сущ. жен.* делега́ци (делегатсе́н ӳшкӑнӗ); **иностра́нная делега́ция** ют ҫӗршы́в делега́цийӗ

деле́ние (-я) *сущ. сред.* **1.** (*син.* распределе́ние) пайла́в, валеҫӳ´, пайлану́; пайлани́, валеҫни́, пайланни́; **деле́ние уча́щихся по кла́ссам** вӗренекенсене́ классе́м тӑ´рӑх пайлани́ **2.** (*ант.* умноже́ние) пайла́в; пайлани́; **знак деле́ния** пайла́в палли́; **зада́ча на деле́ние** пайла́в задачи́ **3.** карт, виҫе́; **деле́ния лине́йки** лине́йка карчӗсе́м

дели́мое (-ого) *сущ. сред.* пайланаканни́ (*математикӑра — пайланакан хисеп*)

дели́тель (-я) *сущ. муж.* пайлаканни́ (*математикӑра— пайлакан хисеп*)

дели́ть (*наст.* делю́, де́лишь, де́лят; *прич. действ. наст.* де́лящий *и* деля́щий, *прош.* дели́вший; *прич. страд. наст.* дели́мый, *прош.* делённый; *деепр.* деля́) *глаг. несов.* **1.** *кого-что* (*син.* распределя́ть) валеҫ, пайла́, ӳйӑр; **дели́ть по́ровну** танша́р валеҫ; **дели́ть иму́щество** пурлӑха́ ӳйӑр **2.** *что на что* пайла́ **дели́ть де́вять на́ три** тӑххӑра́ виҫҫе́ пайла́

дели́ться (*наст.* делю́сь, де́лишься, де́лятся; *прич. действ. наст.* деля́щийся, *прош.* дели́вшийся; *деепр.* деля́сь) *глаг. несов.* **1.** *1 и 2 л. не употр.* валеҫӗн, пайла́н, ӳйӑрал; **де́сять не де́лится на́ три** вы́ннӑ виҫҫе́ пайланма́сть **2.** *чем с кем* пар, уйӑрса́ пар; **дели́ться с дру́гом куско́м хле́ба** ҫа´кӑр татӑкне́ туспа́ пӗрле́ ҫи **3.** (*син.* расска́зывать) кала́ҫ, каласа́ пар; **дели́ться впечатле́ниями от пое́здки в Москву́** Мускава́ кайса́ килни́ ҫинче́н кала́ҫ

де́ло (-а) *сущ. сред.; множ.* **дела́** (дел, дела́м, о дела́х) **1.** (*син.* рабо́та, де́ятельность) ӗҫ, ӗҫ-хӗ´л, ӗҫпу́ҫ; **дома́шние дела́** килти́ ӗҫ-пу́ҫ; **е́здить по дела́м слу́жбы** слу́жба ӗҫӗпе́ ҫӳре́; **сиде́ть без де́ла** ӗ´ҫсӗр лар **2.** (*син.* специа́льность) ӗҫ, профе́сси; **вое́нное де́ло** ҫар ӗ´ҫӗ; **он хорошо́ зна́ет своё де́ло** вӑл хӑ´йӗн ӗҫне́ ла́йӑх пӗле́т **3.** (*син.* на́добность, нужда́) ӗҫ, ыйту́, йӳ´тӗм; **Я пришёл к вам по ва́жному де́лу** Э´пӗ си́рӗн пата́ ки́рлӗ ыйтупа́ ки́лтӗм **4.** (*син.* проце́сс) ӗҫ *(судра пӑхмалли)*; **уголо́вное де́ло** уголо́влӑ ӗҫ; **возбуди́ть де́ло в суде́** судра́ ӗҫ пуҫа́р ◆ **пе́рвым де́лом** чи малтана́х; **ме́жду де́лом** е́рсӗнӗ хушӑра́; **э́то друго́е де́ло** ку пача́х у́рӑх япала́; **пусти́ть в де́ло** ӗҫӗ яр; **то и де́ло** ҫине́-ҫине́х; **де́ло твоё** хӑ´вӑн ирӗкӳ´; **на са́мом де́ле** тӗрӗссипе́; **Как дела́?** Мӗнле́ пурна́тӑр?; **В чём де́ло?** Мӗн пу́лнӑ?; **Э´то не ва́ше де´ло** Ку си́рӗн ӗҫ мар; **Како́е вам де́ло?** Сире́ мӗн ӗҫ?

делови́тый *прил.*, **делови́то** *нареч.* ӗҫче́н, ӗ´ҫлӗхлӗ, тӑрӑшу́ллӑ; **делови́тый челове́к** ӗҫче́н ҫын

делово́й *прил.* **1.** (*син.* рабо́чий) ӗҫ -ӗ, ӗҫлӗ́в -ӗ; ӗ´ҫлӗ; **делово́е предложе́ние** ӗ´ҫлӗ сӗнӳ´; **деловы́е лю́ди** ӗ´ҫлӗ ҫынсе́м **2.** (*син.* толко́вый) ӗ´ҫлӗхлӗ, пӗлӳ´ллӗ, ӑстӑ́; **делово́й руководи́тель** ӗ´ҫлӗхлӗ ертӳ´ҫӗ **3.** ӗҫӗ юрӑхлӑ; **делова́я древеси́на** ӗҫӗ юрӑхлӑ йы́вӑҫ (*вутӑ марри*)

де́льта (-ы) *сущ. жен.* шыв вӑрри́ дельта *(юхан шывӑн юпленчӗк вӑрри)*; **де́льта Во́лги** Атӑл дельти́

дельфи́н (-а) *сущ. муж.* дельфи́н (*пӗчӗк кит евӗрлӗ тинӗс чӗр чунӗ*)

демилитариза́ция (-и) *сущ. жен.* (*син.* разоруже́ние; *ант.* вооруже́ние, милитариза́ция) хӗҫ-пӑшалсӑрлану́, хӗҫ-пӑшалсӑрлантару́

демисезо́нный *прил.* ҫӑ´мӑл, ҫурхи́-кӗрхи́, ҫӳ́рлӑх-кӗ´рлӗх; **демисезо́нное пальто́** ҫӑ´мӑл пальто́

демобилиза́ция (-и) *сущ. жен.* (*ант.* мобилиза́ция) демобилиза́ци (*ҫар службине илнӗ ҫынсене киле яни*)

демобилизова́ть (*наст. и будущ.* -зу́ю, -зу́ешь, -зу́ют; *прич. страд. прош.* -зо́ванный) *глаг. сов. и несов., кого-что* (*ант.* мобилизова́ть) демобилизацилé, демобилизáци ту, çартáн яр; **демобилизо́ванные солда́ты** çартáн я́нă салтаксéм

демографи́ческий *прил.* демогрáфи -ĕ, **демографи́ческая ситуа́ция** демогрáфи тắрăмĕ; **демографи́ческие иссле́дования** демогрáфи тĕпчевĕсéм

демогра́фия (-и) *сущ. жен.* демогрáфи (*халăх йышĕн тытăмне, вăл улшăннине тата куçнине тĕпчекен ăслăлăх*)

демокра́т (-а) *сущ. муж.*, **демокра́тка** (-и) *жен.* **1.** демокрáт (*демократи майлă çын*) **2.** демокрáт (*демократсен партийĕнче тăракан*)

демократиза́ция (-и) *сущ. жен.* демократизáци; демократизацилени́; **демократиза́ция жи́зни о́бщества** óбщество пурнăçнé демократизацилени́

демократи́зм (-а) *сущ. муж.* демокрáтилĕх; **укрепле́ние демократи́зма в Росси́и** Раççейрá демокрáтилĕх çирĕпленни́

демократи́ческий *прил.*, **демократи́чески** *нареч.* демокрáти -ĕ; демократиллé, демокрáтиллĕ; **демократи́ческий строй** демокрáти йĕркú; **демократи́ческие стра́ны** демокрáтиллĕ çĕршывсéм

демокра́тия (-и) *сущ. жен.* демокрáти (*аслă влаçа халăх тытмалли йĕрке*); **при́нципы демокра́тии** демокрáти принципĕсéм

демонстра́нт (-а) *сущ. муж.*, **демонстра́нтка** (-и) *жен.* демонстрáнт, демонстрацие́ хутшăнакáн; **колóнна демонстра́нтов** демонстрантсéн колонни́

демонстра́ция (-и) *сущ. жен.* **1.** демонстрáци (*халăх урама йышлăн тухса хăйĕн шухăш-кăмăлне палăртни*); **пра́здничная демонстра́ция** уя́в демонстрáцийĕ **2.** кăтартý, палăртý; кăтартни́, палăртни́; **демонстра́ция но́вого фи́льма** çĕ́нĕ фильм кăтартни́

демонстри́ровать (*наст.* -рую, -руешь, -руют) *глаг. сов. и несов.* **1.** демонстрáци ирттéр, демонстрацие́ хýтшăн **2.** *кого-что* (*син.* покáзывать) кăтáрт, пáлăрт; **демонстри́ровать мóдную оде́жду** мóдăллă тумти́р кăтáрт

денационализа́ция (-и) *сущ. жен.* денационализáци (*национализациленĕ пурлăха уйрăм харпăрлăха тавăрса пани*)

де́нежный *прил.* **1.** укçá -ĕ, укçатéнкĕ -ĕ; **де́нежный оборо́т** укçатéнкĕ çаврăнăшĕ **2.** (*син.* богáтый) пуя́н, укçáллă; **он челове́к де́нежный** вăл укçáллă çын

день (дня) *сущ. муж., множ.* **дни** (дней) **1.** кун; **со́лнечный день** хĕвéллĕ кун; **рабо́чий день** ĕç кýнĕ; **че́рез не́сколько дней** темиçé кунтáн; **отме́тить день рожде́ния** çуралнă кунá пáллă ту **2.** *множ.* **дни** (*син.* врéмя, периóд) кунсéм, вắхăт, тáпхăр; **в дни войны́** вắрçă вăхăтĕнчĕ; **вспомина́ть дни де́тства** ачáлăх кунĕсенé асá ил ◆ **День Побе́ды** Çĕнтерý́ кýнĕ (*Тăван çĕршыв вăрçинчи çĕнтерýе ячĕпе майăн 9-мĕшĕнче ирттерекен уяв*); **на днях** çак кунсенчé, çывăх вăхăтрá; **день ото дня́** кунрáн-кун; **изо дня́ в де́нь** куллéн-кун; **со дня на́ день** паян мар ырáн, кĕ́ç-вĕç; **тре́тьего дня** виçĕм кун; **ребёнок растёт не по дням, а по часа́м** ачá самантсерéн ýссé пырáть

де́ньги (де́нег, деньга́м, в деньга́х) *сущ. множ.* укçá, укçá-тéнкĕ; **бума́жные де́ньги** хут укçá; **вы́делить де́ньги на строи́тельство больни́цы** больни́ца тумá укçá-тéнкĕ уйăрсá пар ◆ **Вре́мя — де́ньги** посл. Вắхăт укçá хакнé тăрáть; **бе́шеные де́ньги** я́мăт укçá

депута́т (-а) *сущ. муж.*, **депута́тка** (-и) *жен.* депута́т; **депута́т Госуда́рственной Ду́мы Росси́йской Федера́ции** Раççéй Федера́цийěн Патша́лăх Думи́н депута́чĕ

депута́тский *прил.* депута́т -ĕ; **депута́тский манда́т** депута́т мандáчĕ

депута́ция (-и) *сущ. жен.* депута́ци (*пĕр-пĕр ыйтăва татса пама халăх суйласа янă ушкăн*)

деревéнский *прил.* ял -ĕ; ялти́; **деревéнский па́рень** ял каччи́; **деревéнский клуб** ялти́ клуб

дере́вня (-и) *сущ. жен.; множ.* **дере́вни** (деревéнь, деревня́м, в деревня́х) ял; **родна́я дере́вня** тăва́н ял; **газифика́ция дереве́нь** ялсене́ газ кĕртни́

де́рево (-а) *сущ. сред.; множ.* **дере́вья** (-вьев) **1**. йы́вăç (*ӳсекенни*); **ли́ственные дере́вья** çу́лçăллă йывăççéм; **хво́йные дере́вья** лắсăллă йывăççéм; **ствол де́рева** йы́вăç вулли́ **2**. (*син.* древеси́на) йы́вăç (*касни*); **посу́да из де́рева** йы́вăç са́вăт-сапа́; **резьба́ по де́реву** йы́вăç кассá эрешлени́

деревя́нный *прил.* йы́вăç ...; йы́вăç ĕ; **деревя́нный дом** йы́вăç пӳрт

держа́ть (*наст.* держу́, де́ржишь, де́ржат; *прич. действ. наст.* держа́щий, *прош.* держа́вший; *прич. страд. прош.* де́ржанный; *деепр.* держа́) *глаг. несов., кого-что* **1**. тыт, тытсá тăр; **держа́ть в рука́х** алăра́ тытсá тăр; **пра́вильно держа́ть ру́чку** ручкăна́ тĕ́рĕс тыт **2**. тыт, чар, ярсá тыт; **тормоза́ не де́ржат** то́рмоз чарайма́сть (*машинăна*); **Держи́те во́ра!** Вăрра́ тытăр! **3**. тыт, усра́, тытсá усра́, пăхсá усра́; **держа́ть свине́й** сысна́ усра́; **мой дед де́ржит пчёл** ма́нăн асатте вĕллé ху́рчĕ тытáть **4**. (*син.* храни́ть) тыт, усра́, хывсá усра́; **держа́ть де́ньги в ба́нке** укçана́ банкра́ усра́ ◆ **держа́ть оборо́ну** ху́тĕленсé çáпăç; **держа́ть экза́мен** экза́мен тыт; **держа́ть в мы́слях** асра́ тыт; **держа́ть жильцо́в** хваттерé яр, пурăнма́ яр; **держа́ть впра́во** сылтăмалла́ пắрăн; **держа́ть речь** сăма́х кала́ (*пухура*); **держа́ть в рука́х** алăра́ тыт, хы́тă тыткала́

держа́ться (*наст.* держу́сь, де́ржишься, де́ржатся; *прич. действ. наст.* держа́щийся, *прош.* держа́вшийся; *деепр.* держáсь) *глаг. несов.* **1**. *за кого-что* тыт, ты́тăн, тытсá тăр; **де́ти иду́т, держа́сь за́ руки** ачасéм алла́-а́ллăн тытăнсá пырáççĕ **2**. тытăнсá тăр, çирĕплéнсе тăр; **воро́та де́ржатся на столба́х** хапхá юпасéм çинчĕ́ тытăнсá тăра́ть **3**. (*син.* находи́ться) пул, тăр, пурăн, çӳ́ре; **ры́ба де́ржится в глубине́** пу́лă тарăнра́ тăра́ть **4**. (*син.* стоя́ть) тăр, çӳ́ре, ӳ́тĕ тыт; **держа́ться пря́мо** яшт тӳ́рленсé тăр; **е́ле де́ржится на нога́х** ура́ çинчĕ́ аран тăра́ть **5**. *1 и 2 л. не употр.* (*син.* сохраня́ться) сыхла́н, сыхлансá юл, ан пĕт; **холода́ держа́лись до́лго** çантáлăк вăрахчéн сúвĕ тắчĕ **6**. (*син.* направля́ться) пыр, кай; **держа́ться кра́я ле́са** вăрма́н хĕррипе́ пыр

дерза́ть (*наст.* -áю, -áешь, -áют) *глаг. несов.* (*син.* стреми́ться) ắнтăл, тӳ́ртăн, харсăрла́н, хăюллă пул

дерзи́ть (*наст. 1 л. не употр.*, -и́шь, -я́т) *глаг. несов.* чăрсăрла́н, чăртмахла́н, чắрсăр кала́ç, сăмахпа́ кӳ́рентéр; **он дерзи́т ста́ршим** вăл аслисемпе́ чắрсăр калаçа́ть

деса́нт (-а) *сущ. муж.* деса́нт (*тăшман çĕрне антарнă çарсем*); **морско́й деса́нт** ти́нĕс деса́нчĕ; **вы́садить деса́нт** деса́нт антáр

деся́рт (-а) *сущ. муж.* деся́рт, пыла́к çи́мĕç (*апат вĕçĕнче çимелли*); **на деся́рт да́ли я́годы** деся́ртлăх çырла́ па́чĕç

десна́ (-ы́) *сущ. жен.*; *множ.* **дёсны** (дёсен, дёснам) шăл туни́; **дёсны кровото́чат** шăл тунинчéн юн тухáть

десятиле́тие (-я) *сущ. сред.* вӳнӑ çул, вӳнӑ çӳллӑх; **с тех пор прошло́ не́сколько десятиле́тий** унтанпа́ вунша́р çул и́ртрĕ

десяти́на (-ы) *сущ. жен.* теçеттӣн (*çĕр лаптӑкӗн киве́ виçи — 1,09 гектар*)

десяти́чный *прил.* вунша́рлӑ; **десяти́чные дро́би** вунша́рлӑ вак; **десяти́чная систе́ма мер** вунша́рлӑ виçе́ системи́

деся́тка (-и) *сущ. жен.* **1.** вӳннӑ (*«10» цифра тата хисеп*) **2.** вӳннӑ (*карт вӑййинче*); **деся́тка бу́бен** бӳбнӑ вӳннӑ

деся́ток (-тка) *сущ. муж.* теçетке́, вӳннӑ; **деся́ток яи́ц** пĕр теçетке́ çӑмартӑ

де́сять (-ти́, -тью́) *числит. колич.* вӳннӑ, вӳн(ӑ); **в де́сять часо́в утра́** ирхине́ вӳнӑ сехетре́; **три́жды де́сять — три́дцать** виç хут вӳннӑ — вӑ́тӑр

дета́ль (-и) *сущ. жен.* **1.** (*син.* часть) пай, дета́ль; **дета́ли часо́в** сехе́т пайĕсе́м **2.** (*син.* подро́бность) вактӗве́к, вакки́-тӗвекки́; **входи́ть во все дета́ли** вакки́-тӗвекки́ тарана́х тишке́р

дета́льный *прил.* (*син.* подро́бный; *ант.* о́бщий), **дета́льно** *нареч.* тӗ́плĕ, па́йӑр, тӗ́пĕ-йĕрĕпе́, вакки́-тӗвекки́ тара́н; **рассмотре́ть вопро́с дета́льно** ыйтӑва́ тӗ́плĕн пăхса́ тух

детвора́ (-ы́) *сущ. жен. собир.* ача́-пăча́; **детвора́ игра́ет на у́лице** ача́-пăча́ урамра́ выля́ть

детдо́м (-а) *сущ. муж.* (*сокр.*: де́тский дом) ача́ çу́рчĕ; **он вы́рос в детдо́ме** вăл ача́ çуртĕнче́ ӳ́снĕ

детекти́в (-а) *сущ. муж.* **1.** детекти́в, йĕрлĕвçĕ (*айăпла ĕçсене тĕпчекен специалист*) **2.** детекти́в (*йĕрлевçĕсен, шпионсен ĕçне сăнласа кӑтартакан хайлав*); **он лю́бит чита́ть детекти́вы** вăл детективсе́м вулама́ юрата́ть

детекти́вный *прил.* детекти́в ...; детекти́влӑ; **детекти́вная литерату́ра** детекти́влӑ кĕнекесе́м

детёныш (-а) *сущ. муж.* çура́; **детёныши хомяка́** арлáн çурисе́м

де́ти (дете́й, де́тям, детьми́, о де́тях) *сущ. множ.; един.* **дитя́** *сред.* (*употр. также в знач. множ. к* ребёнок) ачасе́м, ача́-пăча́, ы́вăл-хĕр; **де́ти шко́льного во́зраста** шкул ӳсĕмĕнчи́ ачасе́м; **де́ти военнослу́жащих** çар çыннисе́н ы́вăлĕ-хĕ́рĕ; **де́ти легли́ спать** ачасе́м çывăрма вы́ртнӑ; **у них в семье́ пя́теро дете́й** вĕсе́н килйышĕнче́ пи́лĕк ача́

детона́ция (-и) *сущ. жен.* детона́ци (*взрывчатка юнашар взрыв пулнипе е çапăннипе çурăлса кайни*)

детса́д (-а) *сущ. муж.* (*сокр.*: де́тский сад) ача́ са́чĕ; **отвести́ сы́на в детса́д** ывăла́ ача́ садне́ леçсе́ хăвăр

де́тский *прил.* **1.** ача́ -ĕ, ача́-пăча́ -ĕ; **де́тские дошко́льные учрежде́ния** шкулченки́ ача́-пăча́ учрежденийĕсе́м **2.** ачалла́; **у него́ сохрани́лись де́тские привы́чки** у́нăн ачалла́ йăласе́м сыхланса́ юлнă

де́тство (-а) *сущ. сред.* ача́лăх; **счастли́вое де́тство** теле́йлĕ ача́лăх; **вспомина́ть го́ды де́тства** ача́лăх çулĕсене аса́ ил

деть (*будущ.* де́ну, де́нешь, де́нут; *повел. ф.* день; *прич. действ. прош.* дéвший; *прич. страд. прош.* дéтый, *деепр.* дев) *глаг. сов., кого-что* чик, хур; кайса́ чик, кайса́ хур; **Куда́ вы де́ли мою́ ша́пку?** Ма́нăн çĕлĕке́ ăçта́ кайса́ ху́нă эси́р?

де́ться (*будущ.* де́нусь, де́нешься, де́нутся; *повел. ф.* де́ньтесь; *прич. действ. прош.* дéвшийся; *деепр.* дéвшись) *глаг. сов.* кай, çухăл, пĕт; кайса́ кĕр, кайса́ çухăл, кайса́ пĕт; **Куда́ де́лись ва́режки?** Алси́ш ăçта́ кайса́ кĕ́нĕ? ◆ **не́куда де́ться** ни́мĕн те тăва́ймăн

дефе́кт (-а) *сущ. муж.* (*син.* изъя́н, недоста́ток) кӑ´лтӑк, ҫитме́нлӗх, а́йӑп; **обнару́жить дефе́кты в прое́кте** проекти́ ҫитменлӗхсене́ тупса́ па́лӑрт

дефе́ктный *прил.* кӑ´лтӑклӑ, ҫитме́нлӗхлӗ; **дефе́ктный экземпля́р кни́ги** кӑ´лтӑклӑ кӗнеке́

дефи́с (-а) *сущ. муж.* дефи́с, кӗске́ йӗр (*сӑмах пайӗсене ҫыхӑнтаракан ни, сӑм.*, *атте-анне, вак-тӗвек*)

дефици́т (-а) *сущ. муж.* **1.** (*син.* убы́ток; *ант.* профици́т) дефици́т, тӑка́клӑх (*тӑкак тупӑшран пысӑкрах пулни*); **дефици́т платёжного бала́нса** тӳлёв бала́нсӗн тӑка́клӑхӗ; **бюдже́т с дефици́том** дефици́тлӑ бюдже́т **2.** (*син.* недоста́ток, нехва́тка) ҫитме́нлӗх, ҫӳклӑх, и́ксӗклӗх; ҫитменни́, ҫукки́; иксӗкки́; **дефици́т това́ров повседне́вного спро́са** куллӗ́н ки́рлӗ таварсе́м ҫитменни́

дефици́тный *прил.* **1.** (*син.* убы́точный; *ант.* профици́тный, при́быльный) дефици́тлӑ, тӑка́клӑ; **дефици́тный бюдже́т** дефици́тлӑ бюдже́т (*тӑкак тупӑшран пысӑкрах пулни*) **2.** (*син.* недоста́точный) ҫитме́н, ҫук, и́ксӗк; **дефици́тный това́р** ҫитме́н тава́р

деци́метр (-а) *сущ. муж.* деци́метр (*вӑрӑмӑш виҫи — метрӑн вуннӑмӗш пайӗ*)

дешеви́зна (-ы) *сущ. жен.* (*ант.* дороговизна) йӳ´нӗлӗх, тава́р йӳнни́

дешёвый (*кратк. ф.* дёшев, дешева́, дёшево, *множ.* дёшевы; *сравн. ст.* дешёвле, *превосх. ст.* дешёвейший *и* дешеве́йший) *прил.* (*ант.* дорого́й), **дёшево** *нареч.* йӳ´нӗ; **дешёвая о́бувь** йӳ´нӗ а́тӑ-пушма́к; **прода́ть дёшево** йӳнӗпе́ сут

де́ятель (-я) *сущ. муж.*, **де́ятельница** (-ы) *жен.* ӗҫче́н, ӗҫлеке́н; **де́ятели иску́сства** ӳне́р ӗҫченӗсе́м; **заслу́женный де́ятель нау́ки** ӑ´слӑлӑхӑн тава́ ти́вӗҫлӗ ӗҫче́нӗ

де́ятельность (-и) *сущ. жен.* (*син.* труд, рабо́та, заня́тия) ӗҫ, ӗҫле́в, ӗҫ-хӗ´л, ӗҫ-пу́ҫ; ӗҫлени́; **занима́ться полити́ческой де́ятельностью** поли́тика ӗҫне́ хӳтшӑн; **наруше́ние де́ятельности се́рдца** чӗре́ ӗ´ҫӗ пӑсӑлни́

де́ятельный *прил.* (*син.* энергичный, акти́вный; *ант.* вя́лый, пасси́вный), **де́ятельно** *нареч.* хастя́р, ӗ´ҫлӗхлӗ, ӗҫче́н; **де́ятельный челове́к** ӗ´ҫлӗхлӗ ҫын; **де́ятельно уча́ствовать в обсужде́нии вопро́са** ыйтӑва́ сӳтсе́ явма́ хастя́р хӳтшӑн

дёготь (дёгтя *и* дёгтю) *сущ. муж.* ти́кӗт; **сма́зать дёгтем ось теле́ги** урапа́ тӗнӗлне́ ти́кӗт сӗр

дёргать (*наст.* -аю, -аешь, -ают) *глаг. несов.* **1.** *кого-что или за что* (*син.* тяну́ть) турт; **дёргать за рука́в** ҫанӑра́н турт **2.** *что* (*син.* вырыва́ть) ҫӑл, ҫумла́, тӑпӑлта́р, туртса́ кӑла́р; **дёргать сорняки́** ҫум ҫумла́; **дёргать зу́бы** шӑл кӑла́р **3.** *кого* (*син.* беспоко́ить) кансӗрле́, чӑрманта́р, туртказа́

дёрн (-а) *сущ. муж.* ҫере́м; **куски́ дёрна** ҫере́м касӑкӗсе́м; **земля́нка кры́та дёрном** ҫӗр пӳрте́ ҫеремпе́ ви́тнӗ

джем (-а) *сущ. муж.* джем (*ҫӑра варени*); **клубни́чный джем** ҫӗр ҫырли́ дже́мӗ

джинсо́вый *прил.* джинс ...; джинс -ӗ; **джинсо́вые бры́ки** джинс шӑлавар

джи́нсы (-ов) *сущ. множ.* джинс (*хулӑн пиртен ҫӗленӗ шӑлавар*)

диа́гноз (-а) *сущ. муж.* диа́гноз (*чирлӗ ҫынна тишкерсе унӑн чирне палӑртни*); **установи́ть диа́гноз** диа́гноз па́лӑрт

диагра́мма (-ы) *сущ. жен.* диагра́мма (*тӗрлӗ пулӑмсен виҫине курӑмлӑн кӑтартакан ӳкерчӗк*)

диале́кт (-а) *сущ. муж.* диале́кт (*пӗр-пӗр чӗлхен вырӑнти калаҫӑвӗ*);

верховóй диалéкт чувáшского языкá чăвáш чĕлхи́н турú диалéкчĕ

диалекти́зм (-а) *сущ. муж.* диалекти́зм, диалéкт пу́лăмĕ (*диалекти хăйне майлă сăмах, грамматика форми, сасă е урăх уйрăмлăх*)

диалéктный *прил.* диалéкт -ĕ; диалектри́; **диалéктные осóбенности в рéчи** пуплеври́ диалéкт уйрăмлăхĕсéм

диалéктика (-и) *сущ. жен.* диалéктика (*çут çанталăкри, обществăри куçăмпа аталанăвăн пĕтĕмĕшле законĕсем çинчен калакан вĕрентӳ*)

диалектолóгия (-и) *сущ. жен.* диалектолóги (*чĕлхе пĕлĕвĕн диалектсене тĕпчекен уйрăмĕ*)

диалóг (-а) *сущ. муж.* диалóг, пуплешӳ´ (*икĕ е темиçе çын хушшинчи*); **состáвить диалóг** диалóг çырсá хатĕрлé (*вĕренӳ тĕллевĕпе*)

диалоги́ческий *прил.* диалóг -ĕ; диалóглă, пуплешӳ´ллĕ; **диалоги́ческая речь** диалóглă пуплéв

диáметр (-а) *сущ. муж.* диáметр (*çавракăша çурмалла пайлакан тӳрĕ йĕр*)

диáспора (-ы) *сущ. жен.* диáспора (*пĕр-пĕр халăхăн тĕп пайĕнчен уйрăм, урăх çĕрте, урăх çĕршывсенче пурăнакан ушкăнĕсем*); **чувáшская диáспора в Татарстáне** Тутарстанрá пурăнакáн чăвашсéм

диван́ (-а) *сущ. муж.* диван́; **спи́нка дивáна** диван́ хыçĕ; **отдыхáть на дивáне** диван́ çинчé кансá лар

диверсáнт (-а) *сущ. муж.* диверсáнт, дивéрси тăвакáн

дивéрсия (-и) *сущ. жен.* дивéрси (*тăшман агенчĕсем сăтăрлă ĕç туни, сăм., кĕперсене, предприятисене т.ыт. сирпĕтсе аркатни*)

дивиде́нд (-а) *сущ. муж.* (*син.* при́быль) тӳ́пăш, пайтá, услáм (*акци тытакансем хушшинче валеçекенни*); **áкции принóсят большúе дивиде́нды** акцисéм пысăк тӳ́пăш параççĕ

диви́зия (-и) *сущ. жен.* диви́зи (*темиçе полкран тăракан çар пĕрлешĕвĕ*); **та́нковая диви́зия** танк диви́зийĕ

дие́та (-ы) *сущ. жен.* дие́та (*апата тиркесе, çирĕп йĕркепе çини*); **соблюда́ть дие́ту** дие́та тыт, апáт тиркé

диети́ческий *прил.* дие́та -ĕ; **диети́ческое пита́ние** дие́та апатлáнăвĕ

диза́йн (-а) *сущ. муж.* диза́йн (*туса кăларакан таварсене, çурт ăшчиккине илем тĕлĕшĕнчен килĕшӳллĕ тăвас ăсталăх*)

дизентери́я (-и) *сущ. жен.* юнлă варвитти́

дика́рь (-я́) *сущ. муж.*, **дика́рка** (-и) *жен.* тискéр çын, кáйăк çын

ди́кий (*кратк. ф.* дик, дикá, ди́ко, *множ.* ди́ки; *сравн. ст.* ди́че; *превосх. ст.* дичáйший) *прил.*, **ди́ко** *нареч.* **1.** (*ант.* культу́рный) кáйăк ...; тискéр; хир -ĕ, анá -ĕ, вăрмáн -ĕ; **ди́кие зве́ри** тискéр кайăксéм; **ди́кая у́тка** кáйăк кăвакáл; **ди́кий лук** анá суханĕ, ыхрутú **2.** (*син.* гру́бый, необу́зданный) усáл, тискéр, хаяр; **ди́кие нра́вы** тискéр йăласéм

дикта́нт (-а) *сущ. муж.* дикта́нт; **писáть дикта́нт** дикта́нт çыр

диктату́ра (-ы) *сущ. жен.* (*син.* самовла́стие) диктату́ра (*халăха вăйпа пăхăнтарни çинче тытăнса тăракан, нимпе пӳлмен власть*); **фашúстская диктату́ра** фашистлá диктату́ра; **вое́нная диктату́ра** çар диктатурú

диктова́ть (*наст.* -ту́ю, -ту́ешь, -ту́ют) *глаг. несов., что* **1.** каласá çыртáр, çырмá вулá; **чётко диктова́ть текст** текстá ӳçăмлă вуласá çыртáр **2.** (*син.* навя́зывать) пусахлá, вăйăмлá, хуш; **он хо́чет диктова́ть свои́ усло́вия** вăл хăй ху́шнă пек тутарáсшăн

дикто́вка (-и) *сущ. жен.* каласа́ çыртарни́, çырма́ вулани́; **писа́ть под дикто́вку** каласа́ пынипе́ çыр

ди́ктор (-а) *сущ. муж.* ди́ктор (*радиопа, телевиденипе хыпар калакан*)

диктофо́н (-а) *сущ. муж.* диктофо́н (*калаçакан çын сассине çырса пыракан хатĕр*)

ди́кция (-и) *сущ. жен.* ди́кци, калу́ (*сăмахсене мĕн тери уçăмлă, лайăх илтĕнмелле калани*)

динами́т (-а) *сущ. муж.* динами́т (*хăватлă взрывчатка*)

дина́стия (-и) *сущ. жен.* дина́сти, йăх, йăх-не́сĕл (*еткерлĕх йĕркипе пĕр йăхран ларса пынă патшасем; сыпăкран сыпăка пыракан несĕллĕх*); **дина́стия царе́й Рома́новых в Росси́и** Раççе́й патшисе́н Романовсе́н йăх-не́сĕлĕ; **рабо́чая дина́стия** рабочисе́н йă´хĕ

дипло́м (-а) *сущ. муж.* **1.** дипло́м (*вĕренӳ ĕçĕнчи ĕнентерӳ документĕ*); **дипло́м университе́та** университе́т дипло́мĕ **2.** дипло́м (*ăмăртура, конкурсра çĕнтерекене паракан документ*)

дипло́ма́т (-а) *сущ. муж.* дипло́ма́т (*дипломати енĕпе ĕçлекен специалист*)

дипломати́ческий *прил.* дипло́ма́ти -ĕ; дипло́ма́т -ĕ; **дипломати́ческий иммуните́т** дипло́ма́ти иммуните́чĕ (*ют çĕршыв дипломачĕсене ку çĕршыври законсемпе айăплама юраманни*); **дипломати́ческий па́спорт** дипло́ма́т па́спорчĕ

дипло́ма́тия (-и) *сущ. жен.* дипло́ма́ти (*ют çĕршывсемпе çыхăну тытас ĕç*)

дипло́мник *(-а) сущ. муж.*, **дипло́мница** (-ы) *жен.* дипло́мçă (*диплом ĕçĕ çыракан студент*)

дипло́мный *прил.* дипло́м -ĕ; **дипло́мная рабо́та** дипло́м ĕ´çĕ (*студент аслă шкула пĕтернĕ май çыракан тишкерӳ*)

директи́ва (-ы) *сущ. жен.* кăтартӳ, хушӳ; **директи́ва министе́рства** министе́рство па́нă хушӳ

дире́ктор (-а) *сущ. муж.* дире́ктор (*предприяти е организаци пуçлăхĕ*); **дире́ктор сре́дней шко́лы** вăта́м шкул дире́кторĕ

дире́кция (-и) *сущ. жен.* дире́кци (*предприятие е организацие ертсе пыракансем*); **дире́кция заво́да** завóд дире́кцийĕ

дирижа́бль (-я) *сущ. муж.* дирижа́бль (*çăмăл газ тултарнă, двигатель ĕçленипе куçакан вĕçев аппарачĕ*)

дирижёр (-а) *сущ. муж.* дирижёр (*оркестра, хора ертсе пыракан*)

дирижи́ровать (*наст.* -рую, -руешь, -руют) *глаг. несов.* ертсе́ пыр, дирижёр пул; **дирижи́ровать орке́стром** оркестра́ ертсе́ пыр

диск (-а) *сущ. муж.* диск (*лаптак çаврашка; çав формăллă спорт хатĕрĕ*); **мета́ть диск** диск ы́вăт

диске́та (-ы), **диске́тка** (-и) *сущ. жен.* диске́та (*компьютер ĕçне çырса пымалли магнитлă диск*)

дискоте́ка (-и) *сущ. жен.* дискоте́ка (*музыкăпа ташă каçĕ*)

диску́ссия (-и) *сущ. жен.* (*син.* обсужде́ние) тавлашу́, сӳтсе́ яву́; сӳтсе́ явни́; **нау́чная диску́ссия** ă´слăлăх ыйтăвĕсене сӳтсе́ явни́; **приня́ть уча́стие в диску́ссии** сӳтсе́ явма́ хӳтлăн

диспе́тчер (-а) *сущ. муж.* диспе́тчер (*ĕçре тухса тăракан ыйтусене çийĕнчех татса паракан*); **тра́нспортный диспе́тчер** тра́нспорт диспе́тчерĕ

диспе́тчерский *прил.* диспе́тчер -ĕ; **диспе́тчерский пункт** диспе́тчер пу́нкчĕ

диспле́й (-я) *сущ. муж.* диспле́й (*компьютер информацине кăтартакан экран*)

диссерта́ция (-и) *сущ. жен.* дис-

серта́ци (*ăслăлăх кандидачĕн е докторĕн ятне илме çырнă тĕпчев ĕçĕ*); **защи́та диссерта́ции** диссертацие́ ху́тĕлени́

дистанцио́нный *прил.* инçетре́н тытмалли́, инçетре́н йĕркелемелли́; **ми́на с дистанцио́нным управле́нием** инçетре́н тытса́ çурăлтармалли́ ми́на

диста́нция (-и) *сущ. жен.* (*син.* промежу́ток) диста́нци, ху́шă, çул (*тăршшĕне палăртса хуни*); **бе́г на дли́нные диста́нции** ва́ ́рăм дистанцисене́ чупни́; **диста́нция ме́жду автомаши́нами** автомашинăсе́н хушши́

дистилли́ровать (*наст.* -рую, -руешь, -руют; *прич. страд. прош.* -ро́ванный) *глаг. сов. и несов., что* дистилляцили́, дистилля́ци ту; **дистилли́рованная вода́** дистилляцили́нĕ шыв

дисципли́на[1] (-ы) *сущ. жен.* дисципли́на, йĕркé; **наруше́ние дисципли́ны** дисциплинăна́ пăсни́; **во́инская дисципли́на** çар дисциплини́

дисципли́на[2] (-ы) *сущ. жен.* дисципли́на, предме́т (*ăслăлăхра, вĕренӳ ĕçĕнче*); **шко́льные дисципли́ны** шкул предмечĕсе́м

дисциплини́рованный *прил.* дисципли́нăлла́; дисциплинăна́ пăхăнака́н, йĕркене́ пăхăнака́н

дитя́ (*род. и дат. п.* дитя́ти, *твор. п.* дитя́тею *и* дитя́тей, *предл. п.* о дитя́ти); *сущ. сред.; множ.* **де́ти** (детей, де́тям, детьми́, о де́тях) пĕ ́чĕк ача́, пепке́; **люби́ть родно́е дитя́** тăва́н ачана́ юра́т

дичь (-и) *сущ. жен.* суна́р ка́йăкĕ (*вĕçекенни*); **лесна́я дичь** вăрма́н ка́йăкĕ; **боло́тная дичь** шу́рлăх ка́йăкĕ

длина́ (-ы) *сущ. жен.*; *множ.* **дли́ны** (длин, дли́нам) ва ́рăмăш, тă ́ршшĕ; **ме́ры длины́** ва ́рăмăш виçисе́м; **длино́ю в два ме́тра** и́кĕ метр тă ́ршшĕ

дли́нный (*кратк. ф.* -нен, -нна́, -нно *и* -нно́, *множ.* -нны *и* -нны́) *прил.* (*ант.* коро́ткий) ва ́рăм; **дли́нная доска́** ва ́рăм хăма́; **рука́в сли́шком дли́нен** са́нă ытла́ ва ́рăм

дли́тельный *прил.* (*син.* до́лгий; *ант.* кра́ткий) ва ́рăм, вăра́х; **дли́тельная командиро́вка** ва ́рăм командиро́вка; **дли́тельное вре́мя** пысăк ху́шă, вăра́х ху́шă

дли́ться *1 и 2 л. не употр.* (*наст.* дли́тся, для́тся) *глаг. несов.* (*син.* продолжа́ться) пулса́ пыр, тăсăлса́ пыр; **дождь дли́лся недо́лго** çу́мăр вăраха́ пыма́рĕ

для *кого-чего, предлог с род. п.* (*син.* ра́ди) валли́; -шăн (-шĕн); **купи́ть сла́дости для дете́й** ачасе́м валли́ пыла́к çи́мĕç туя́н; **куре́ние вре́дно для здоро́вья** чĕ ́лĕм турт ни́ сы́влăхшăн сие́нлĕ

дневни́к (-а) *сущ. муж.* **1.** кун кĕнеки́ (*куллен пулса иртнине çырса пыни*); **дневни́к наблюде́ний над пого́дой** çанталăка́ куллен çырса́ пыни́ **2.** дневни́к (*вĕренекен тумалли ĕçсене тата вĕренӳри çитĕнӳсене çырмалли тетрадь*); **поста́вить отме́тку в дневнике́** дневникра́ отме́тка ларт

дневно́й *прил. (ант.* ночно́й) кăнтăрлахи́; **в дневно́е вре́мя** кăнтăрла́; **при дневно́м све́те** ка ́нтăр çутипе́; **дневно́е отделе́ние институ́та** институ́тăн кăнтăрлахи́ ӳ́йрăмĕ

днём *нареч.* кăнтăрла́, ка ́нтăр çутипе́; **сего́дня днём** паян кăнтăрла́

дно (дна) *сущ. сред.* тĕп; **дно бо́чки** пичке́ тĕ ́пĕ; **на дне о́зера** кӳ ́лĕ тĕпĕнче́

до *кого-чего, предлог с род. п.* **1.** -чен; -а (-е) çиттиче́н; **до за́втрашнего дня** ыранче́н; **до го́рода е́хать три́дцать киломе́тров** хулана́ çитиче́н вă ́тăр киломе́тр каймалла́. **2.** (*син.* ра́ньше) -чен; у́мĕн; **э́то бы́ло до**

войны́ ку вăл вăрçăччéн пу́лнă **3**. (*син.* óколо, приблизи́тельно) -а (-е) я́хăн; патнелле́; **зал вмеща́ет до пятисо́т челове́к** зала́ пи́лĕк çĕр çынна́ я́хăн вырнаçа́ть **4**. *указывает, на что направлено действие:* **дотро́нуться до руки́** алла́ тĕ´кĕн; **у меня́ до тебя́ вопро́с** ма́нăн санра́н ыйтмалли́ пур ◆ **До свида́ния**! Тепре́ куриччéн!; **до того́** çав тери́; **промо́кнуть до косте́й** йĕп-йĕпе́ пул

доба́вить (*будущ.* -влю, -вишь, -вят; *прич. страд. прош.* -вленный; *деепр.* -вив) *глаг. сов., что и чего* **1**. (*ант.* уба́вить) хуш, хушса́ хур, хушса́ пар, сĕте́, сĕтéв пар; **доба́вить в суп со́ли** яшкана́ тăвáр хуш **2**. (*син.* допóлнить) хушса́ кала́, сăма́х хуш; **к ска́занному не́чего доба́вить** хушса́ каламалли́ ни́мĕн те çук

доба́вка (-и) *сущ. жен.* ху́шăм, хушма́, сĕте́в; **доба́вки в бето́н** бетона́ хушака́н япаласе́м; **попроси́ть доба́вки к обе́ду** апа́т хушса́ пама́ ыйт

добежа́ть (*будущ.* -егу́, -ежи́шь, -егу́т; *повел. ф.* -еги́; *деепр.* -ежа́в) *глаг. сов., до кого-чего* чупса́ çит; **пе́рвым добежа́ть до фи́ниша** финиша́ пуринчéн малта́н чупса́ çит

доби́ться (*будущ.* добью́сь, добьёшься, добью́тся; *повел. ф.* добе́йся; *прич. действ. прош.* доби́вшийся; *деепр.* доби́вшись) *глаг. сов., чего (син.* дости́чь) пурнăçла́, ту, çит; **доби́ться успе́ха** çитĕнý´ ту, ĕçé ăнăçта́р

до́блестный *прил.*., **до́блестно** *нареч.* хаста́р, хăю́ллă, маттýр; **до́блестный труд** хаста́р ĕç; **до́блестно сража́ться** хăю́ллăн çа́пăç

до́блесть (-и) *сущ. жен.* хаста́рлăх, хăю́лăх, маттýрлăх; **во́инская до́блесть** салта́к хăю́лăхĕ

добра́ться (*будущ.* доберу́сь, доберёшься, доберу́тся; *прош.* добра́лся, добрала́сь, добрало́сь *и* добра́лось, *множ.* добрали́сь *и* добра́лись; *повел. ф.* доберúсь, доберúтесь; *деепр.* добра́вшись) *глаг. сов.* çит, пырса́ çит, килсе́ çит; **мы е́ле добрали́сь до до́ма** эпи́р киле́ аран çи́трĕмĕр

добро́ (-а́) *сущ. сред.* **1.** (*син.* бла́го; *ант.* зло) ы́рă, ы́рлăх, ы́рă ĕç; **де́лать лю́дям добро́** çынсене́ ы́рă ту; **не к добру́** ырра́ мар **2.** (*син.* иму́щество) пу́рлăх, пуя́нлăх; **копи́ть добро́** пу́рлăх пух ◆ **помина́ть добро́м** ырăпа́ áсăн; **Добро́ пожа́ловать!** Килĕре́х!

добровóльный *прил.* (*ант.* принуди́тельный), **добровóльно** *нареч.* и́рĕклĕ, хăй и́рĕклĕ; ха́рпăр ирĕкĕпе́; **на добровóльных нача́лах** и́рĕклĕ йĕркепе́; **добровóльно сда́ться мили́ции** милицие́ ха́рпăр ирĕкĕпе́ па́рăн

добродýшный *прил.* (*ант.* злой), **добродýшно** *нареч.* кă´мăллă, ырă кă´мăллă; **добродýшно улыба́ться** кă´мăллăн кулкала́

доброка́чественный *прил.* (*син.* хорóший; *ант.* плохóй) паха́, ла́йăх; **доброка́чественный това́р** паха́ тавáр

добросóвестный *прил. (син.* стара́тельный), **добросóвестно** *нареч.* тý´рĕ кă´мăллă, тăрăшýллă; **он рабóтает добросóвестно** вăл тăрăшса́ ĕçлéт

доброта́ (-ы́) *сущ. жен.* (*син.* отзы́вчивость; *ант.* злóба) ы́рăлăх, ы́рă кă´мăл; **он по́лон доброты́** вăл пи́тĕ ы́рă кă´мăллă

до́брый (*кратк. ф.* добр, добра́, до́бро, *множ.* добры́ *и* до́бры; *сравн. ст.* добре́е *и* добре́й; *превосх. ст.* добре́йший) **1**. (*син.* отзы́вчивый; *ант.* злой) ы́рă, кă´мăллă, таравáт; **до́брый челове́к** ы́рă çын; **он добр ко мне** вăл мана́ кăмăлла́ть **2.** (*син.* хорóший; *ант.* плохóй) ы́рă, ла́йăх, ава́н; **до́брая весть** ы́рă хыпа́р; **на́ши до́брые друзья́** пи́рĕн ла́йăх туссе́м; **До́брый день!** Ы´рă кун пýлтăр! **3.** ы́рă, таса́, сýмлă; **до́брое и́мя** сýмлă

ят ◆ **Бу́дьте добры́**! Тархáсшăн!; **по до́брой во́ле** хáрпăр ирĕкĕпе́; **В до́брый час**! Çу́лĕ телéйлĕ пу́лтăр!; **по до́брой во́ле** хăй ирĕкĕпе́

добы́ть *(будущ.* добу́ду, добу́дешь, добу́дут; *прош.* добы́л, добылá, добы́ло, *множ.* добы́ли; *повел. ф.* добу́дь; *прич. страд. прош.* добы́тый; *деепр.* добы́в) *глаг. сов., что* **1**. (*син.* достáть, приобрести́) туп, туя́н; **добы́ть де́нег** укçá туп **2**. (*син.* извлечь) кăлáр; **добы́ть нефть** нефть кăлáр (*çĕр айĕнчен*)

добы́ча (-и) *сущ. жен.* **1.** (*син.* извлече́ние) кăларý; кăларни́; **добы́ча не́фти** нефть кăларни́ **2**. тытý, илý´; тытни́, илни́; **охо́тничья добы́ча** сунáрçă тытни́

дове́ренность (-и) *сущ. жен.* дове́ренность, шантарý хýчĕ; **получи́ть де́ньги по дове́ренности** шантарý хучĕпе́ укçá ил

дове́ренный *прил.* шáннă, шáнăçлă; **дове́ренное лицо́ кандида́та в депута́ты** депутáт кандидáчĕн шáнăçлă çынни́

дове́рие (-я) *сущ. сред.* шáнăç, шáнчăк, шанни́; **пита́ть дове́рие** шансá тăр; **оправда́ть дове́рие** шанăçá тýрре кăлáр

до́верху *нареч.* тýпипе́, тýпелесе́, туллие́х; **напо́лнить до́верху** тýпелесе́ тултáр

дове́рчивый *прил.*, **дове́рчиво** *нареч.* шануллă, ĕненý´ллĕ; шанакáн, ĕненекéн; **он дове́рчив, как ребёнок** вăл пĕ´чĕк ачá пекéх ĕненекéн çын

доверя́ть (*наст.* -я́ю, -я́ешь, -я́ют) *глаг. несов.* **1**. *кого-что кому или с неопр. ф.* (*син.* поручáть) шансá пар; **нельзя́ доверя́ть ве́щи незнако́мым лю́дям** палламáн çынсене́ япалá шансá памá юрамáсть **2**. *кому (син.* полагáться) шан, шáнăçлă пул; **я ему́ по́лностью доверя́ю** э́пĕ ăнá пĕтĕмпе́х шанáтăп

довести́ (*будущ.* -еду́, -едёшь, -еду́т; *прич. действ. прош.* -е́дший; *прич. страд. прош.* -еде́нный; *деепр.* -едя́) *глаг. сов.* **1**. *кого до чего* (*син.* достáвить) илсе́ çитéр, ертсе́ çитéр; **довести́ старика́ до до́му** вáтă çынна́ килне́ илсе́ çитéр **2**. *что до чего (син.* продóлжить) çитéр, тусá çитéр; **довести́ газопрово́д до села́** газ пăрăхне́ ялá çитиччéн хыв; **довести́ де́ло до конца́** ĕçе вĕçне́ çитéр ◆ **довести́ до слёз** мáкăрт; **довести́ до бе́шенства** уртарсá яр; **довести́ до све́дения** пĕлтéр

до́вод (-а) *сущ. муж. (син.* аргуме́нт) шýхăш, çирĕплетý´; **ве́ский до́вод** ви́тĕмлĕ шýхăш; **привести́ до́воды в по́льзу тео́рии** теорие́ çирĕплетсе́ калá

довое́нный *прил.* (*ант.* послевое́нный) вăрçăчченхи́; **в довое́нное вре́мя** вăрçăчченхи́ вăхăтрá

дово́льный *прил.*, **дово́льно** *нареч.* **1.** кá´мăллă, хавáс, туллú кá´мăллă; **я дово́лен свое́й рабо́той** э́пĕ хáмăн ĕçпе́ кá´мăллă, мáнăн ĕç маná килĕшéт; **он дово́льно улыба́ется** вăл кá´мăллăн кулкалáть **2**. **дово́льно** *в знач. сказ., кого-чего и с неопр. ф. (син.* достáточно) çи́тĕ, çитéт; **Дово́льно спо́рить!** Çи́тĕ тавлашсá! **3**. **дово́льно** *нареч. (син.* порядочно) самая́х; **прошло́ уже́ дово́льно вре́мени** вá´хăт самая́х и́ртрĕ

догада́ться (*будущ.* -áюсь, -áешься, -áются) *глаг. сов. (син.* сообрази́ть) ăнкáр, тáвçăр, ăнлáн, сис; **догада́ться о причи́не ссо́ры** хирĕçý´ сăлтавне́ ăнлансá ил

до́гма (-ы) *сущ. жен.* дóгма (*тĕн вĕрентĕвĕн е философин пурнăçпа çыхăнман, хытса ларнă шухăшĕсем*)

догна́ть (*будущ.* догоню́, догóнишь, догóнят; *прош.* догнáл, догналá, догнáло, *множ.* догнáли; *прич. страд. прош.* дóгнанный; *деепр.* догнáв) *глаг. сов., кого-что* **1**. (*син.* настúгнуть) ху-

сӑ́ çит, хӑваласа́ çит; **догна́ть бегу́щих впереди́** малта́ чупакансене́ хӑваласа́ çит **2**. *до кого-что* хуса́ çите́р, хӑваласа́ çите́р; **догна́ть ста́до до озе́ра** кӗтӗве́ ку́ ́лӗ патне́ хуса́ çите́р

договор (-а) *сущ. муж.; множ.* **договоры** (-ов) *и* **договора́** (-о́в) договор, килӗшу́ ́; **заключи́ть договор** килӗшу́ ́ ту; **ми́рный договор** ми́рлӗ договор

договорно́й *прил.* договор -ӗ, килӗшу́ ́ -ӗ; **на договорны́х нача́лах** килӗшу́ ́ туса́, килӗшу́ ́ та ́рӑх

договори́ться (*будущ.* -рю́сь, -ри́шься, -ря́тся; *повел. ф.* -ри́сь, -ри́тесь; *прич. действ. прош.* -ри́вшийся; *деепр.* -ря́сь) *глаг. сов., с кем о чем* калаҫса́ та́тӑл, ки́лӗш, ҫура́ҫ, сӑма́х тат; **мы договори́лись о встре́че** эпи́р тӗл пулма́ калаҫса́ та́тӑлтӑмӑр

дое́хать (*будущ.* дое́ду, дое́дешь, дое́дут; *в знач. повел. ф.* доезжа́й; *деепр.* дое́хав) *глаг. сов.* çит, пырса́ çит (*транспортпа*); **мы дое́хали домо́й по́здно но́чью** эпи́р киле́ ҫӗрле́ тин çи́трӗмӗр

дожда́ться (*будущ.* -ду́сь, -дёшься, -ду́тся; *прош.* -да́лся, -дала́сь, -дало́сь *и* -да́лось, *множ.* -дали́сь *и* -да́лись; *повел. ф.* -ди́сь, -ди́тесь; *прич. действ. прош.* -да́вшийся; *деепр.* -да́вшись) *глаг. сов.* кӗтсе́ ил, кӗтсе́ çите́р; **дожда́ться по́езда** поезда́ кӗтсе́ ил ◆ **ждёт не дождётся** ча ́тӑмсӑрӑн кӗте́т

дождь (-я́) *сущ. муж.* ҫу́мӑр; **грозово́й дождь** аслати́ллӗ ҫу́мӑр; **проливно́й дождь** ша́лкӑм ҫу́мӑр; **идёт дождь** ҫу́мӑр ҫава́ть

дожида́ться (*наст.* -а́юсь, -а́ешься, -а́ются; *повел. ф.* -а́йся, -а́йтесь; *прич. действ. прош.* -а́ющийся; *деепр.* -а́ясь) *глаг. несов.* кӗт, кӗтсе́ тӑр, кӗтсе́ пу́рӑн; **дожида́ться авто́буса** автобуса́ кӗтсе́ тӑр

дожи́ть (*будущ.* -иву́, -ивёшь, -иву́т; *прош.* до́жил *и* дожи́л, дожила́, до́жило *и* дожи́ло, *множ.* до́жили *и* дожи́ли; *повел. ф.* -иви́; *прич. действ. прош.* -и́вший; *прич. страд. прош.* до́житый *и* дожи́тый; *деепр.* дожи́в) *глаг. сов., до чего* çит, пурӑнса́ çит, пурӑнса́ çите́р; **до э́того ещё на́до дожи́ть** унччен пурӑнса́ çитмелле́-ха

до́за (-ы) *сущ. жен. (син.* ме́ра) виҫе́; **принима́ть лека́рство ну́жными до́зами** эмеле́ ки́рлӗ виҫепе́ ӗҫ

дозо́р (-а) *сущ. муж.* хура́л, тусу́р; **стоя́ть в дозо́ре** хуралта́ тӑр; **обходи́ть село́ дозо́ром** ял та ́рӑх тусу́р ҫу́ре́

дозо́рный *прил.* хура́л -ӗ, тусу́р -ӗ; **дозо́рный ка́тер** хура́л ка́терӗ; **вы́слать дозо́рных** хура́л яр

дои́ть (*наст.* дою́, до́ишь *и* дои́шь, *множ.* доя́т *и* до́ят; *прич. действ. наст.* доя́щий; *прош.* дои́вший; *прич. страд. прош.* до́енный; *деепр.* доя́) *глаг. несов., кого* су; **дои́ть коро́ву** ӗне́ су

до́йный *прил.* сӗ ́тлӗ; сӑвака́н, сӗт антаракан; **до́йные коро́вы** сӑвака́н ӗнесе́м

дойти́ (*будущ.* дойду́, дойдёшь, дойду́т; *прош.* дошёл, дошла́, дошло́, *множ.* дошли́; *прич. действ. прош.* дошёдший; *деепр.* дойдя́) *глаг. сов.* **1**. *до кого-чего (син.* добра́ться) çит, пырса́ çит; **дойти́ пешко́м** ҫура́н çит; **письмо́ дошло́ бы́стро** ҫыру́ часа́х çи́тнӗ **2**. *до чего (син.* дости́гнуть) çит, капа́ш; **температу́ра воды́ дошла́ до ста гра́дусов** шыв температури́ ҫӗр градуса́ çи́трӗ ◆ **дойти́ до бе́шенства** урса́ кай; **помидо́ры дойду́т в тепле́** помидо́р ӑшӑра́ пиҫсе́ çите́т; **Дошло́ до тебя́?** Ӑнланса́ и́лтӗн-и?

док (-а) *сущ. муж.* док (*карап тумалли тата юсамалли предприяти*)

доказа́тельство (-а) *сущ. сред.* (*син.* подтвержде́ние, аргуме́нт, до́вод)

çирĕплетӳ́; **спо́соб доказа́тельства теоре́мы** теоремăна́ çирĕплетмелли́ мел

доказа́ть (*будущ.* -ажу́, -а́жешь, -а́жут; *повел. ф.* -ажи́; *прич. страд. прош.* -а́занный; *деепр.* -аза́в) *глаг. сов.* çирĕплéт, ĕнентéр, çирĕплетсé пар; **доказа́ть свою́ правоту́** ху тĕ́рĕс каланинé çирĕплетсé пар

докла́д (-а) *сущ. муж.* докла́д; **отчётный докла́д** отчёт докла́чĕ; **вы́ступить с докла́дом** докла́д тусá пар

докла́дчик (-а) *сущ. муж.*, **докла́дчица** (-ы) *жен.* докла́дчик, докла́дçă; **докла́дчик по э́тому вопро́су — Ива́нов** ку ыйтупá Иванóв докла́д тăвáть

до́ктор (-а) *сущ. муж.; множ.* **доктора́** (-о́в) **1.** (*син.* врач) ту́хтăр; **вы́звать до́ктора на́ дом** килé ту́хтăр чĕнтéр **2. до́ктор нау́к** ắслăлăх дóкторĕ (*ăслăлăхри аслă пусăм*); **до́ктор истори́ческих нау́к** истóри ăслăлăхĕсéн дóкторĕ

до́кторский *прил.* **1.** ту́хтăр -ĕ; **до́кторский хала́т** ту́хтăр халăчĕ **2.** дóктор -ĕ; **до́кторская диссерта́ция** дóктор диссертáцийĕ

докуме́нт (-а) *сущ. муж.* докуме́нт, ĕç хýчĕ; **деловы́е докуме́нты** ĕç хучĕсéм; **докуме́нт об образова́нии** вĕренниné çирĕплетекéн докумéнт; **па́пка с докуме́нтами** ĕç хучĕсéн папки́

документа́льный *прил.*, **документа́льно** *нареч.* докуме́нт -ĕ; докуме́нтлă; **документа́льный фильм** докуме́нтлă фильм; **подтверди́ть документа́льно** документсемпе́ çирĕплéт

документа́ция (-и) *сущ. жен. собир.* документсéм, ĕç хучĕсéм; **держа́ть документа́цию в поря́дке** документсенé йĕркéллĕ тыт

долби́ть (*наст.* -блю́, -би́шь, -бя́т; *прич. страд. прош.* -блённый) *глаг. несов.* **1.** шакка́, такка́, шăта́р; **долби́ть сте́ну** стенана́ шăта́р; **долби́ть про́рубь** вак кас (*пăра шăтарса*) **2.** (*син.* говори́ть, повторя́ть) суп, калá; **он це́лый день долби́т одно́ и то же** вăл кунĕпéх пĕр япалá çинчéн каласá супáть

долг[1] (-а, о дóлге, в дóлге) *сущ. муж.; множ. нет (син.* обя́занность) ти́вĕç; **во́инский долг** çар çынни́н ти́вĕçĕ; **вы́полнить свой долг** хáрпăр тивĕçнé пурнăçлá ◆ **пе́рвым до́лгом** нимрéн малтáн

долг[2] (-а *и* -у, о дóлге, в долгý) *сущ. муж.; множ.* **долги́** (-óв) пáрăм, кивçéн; **взять в долг** кивçéн ил; **отда́ть долг** пáрăм тат; **наде́лать долго́в** кивçéн илсé тултáр; **я в долгу́ пе́ред тобо́й** мáнăн сан умăнтá пáрăм пур ◆ **по́ уши в долга́х** парăмрáн тухаймáсть; **не оста́ться в долгу́** пархатáрсăр ан пул, ы́рăшăн ы́рă ту

до́лгий (*кратк. ф.* дóлог, долгá, дóлго, *множ.* дóлги; *сравн. ст.* дóльше *и* дóлее) *прил.*, **до́лго** *нареч.* (*син.* дли́тельный, продолжи́тельный; *ант.* кра́ткий) вăрáх, вắрăм; **на до́лгий срок** вăрáх вăхăтá; **до́лгая жизнь** вắрăм ĕ́мĕр; **не до́лго ду́мая** нумáй шухăшласá тăмáсăр ◆ **отложи́ть в до́лгий я́щик** ĕçé вăраха́ яр; **до́лго ли до беды́** инкéк куçá курáнсá килмéст

долгота́ (-ы́) *сущ. жен.; множ.* **долго́ты** (-óт, -óтам) **1.** (*син.* продолжи́тельность, дли́тельность) вắрăмăш, тắршшĕ; **долгота́ дня** кун вắрăмăшĕ **2.** (*ант.* широта́) вắрăмлăх, долгота́ (*географире — пĕр-пĕр вырăнпа тĕп меридиан хушшин виçи*); **во́семьдесят гра́дусов за́падной долго́ты** хĕвéл áнăç долготи́н сáкăр вýннăмĕш грáдусĕ

до́лжен (-жна́, -жно́, *множ.* -жны́) *в знач. сказ.* **1.** *с неопр. ф. (син.* обя́зан) ти́вĕç; -ас(-ес) пула́ть; -малла (-мелле); **я до́лжен идти́** мáнăн кая́с пула́ть **2.** *кому* пáрăмлă, пáрăм памалла́; **вы должны́ нам ты́сячу рубле́й** си́рĕн пире́ пин тéнкĕ памалла́

◆ **должно́ быть** *вводн. сл.* ахăртне́х, пу́лĕ, пулмалла́

должни́к (-а́) *сущ. муж.*, **должни́ца** (-ы) *жен.* па́рăмçă; па́рăмлă çын; **я твой должни́к** ман сан умăнта́ па́рăм пур

до́лжность (-и) *сущ. жен.; множ.* **до́лжности** (-е́й) до́лжность, ĕç, вы́рăн; **занима́ть высо́кую до́лжность** пы́сăк вырăнта́ ĕçле́

доли́на (-ы) *сущ. жен.* а́йлăм, лапа́м; **речна́я доли́на** юха́н шыв а́йлăмĕ

до́ллар (-а) *сущ. муж.* до́ллар (*США́ри, Канадăри т. ыт. хăш-пĕр çĕршывсенчи укçа*); **обменя́ть рубли́ на до́ллары** тенкĕне́ долларпа́ улăштăр

доложи́ть (*будущ.* -ожу́, -о́жишь, -о́жат; *прич. страд. прош.* -о́женный) *глаг. сов., что о чём (син.* сообщи́ть) пĕлте́р, хыпарла́; **доложи́ть кома́нду о результа́тах разве́дки** командира́ развéдка мĕн пĕлни́ çинче́н пĕлте́р

казнá (-ы́) *сущ. жен.* хысна́, патшáлăх; **продáть хлеб в казнý** тырра́ патшалăха́ сут

казни́ть (*наст. и будущ.* -ню́, -ни́шь, -ня́т; *прич. страд. прош.* -нённый) *глаг. сов. и несов.* вĕлéр (*айăпласа йышăннă тăрăх*)

казнь (-и) *сущ. жен.* вĕлерӳ´; вĕлернӣ; **приговори́ть к сме́ртной ка́зни** вĕлермеллé приговóр йы́шăн

как 1. *нареч. и союзн. сл.* мĕнлé, епле́; **Как вы живёте?** Мĕнлé пурăна́тăр?; **Мы ви́дели, как он шёл по у́лице** Эпи́р вăл урампа́ пынине́ кӳ́ртăмăр 2. *частица, выражает удивление;* **Как, ты всё ещё здесь?** Э´сĕ халĕ те кунта́-и вара́? 3. *союз* пек, евĕр; вырăнне́; **бе́лый как снег** юр пек шӳ́рă; **торф испо́льзуют как удобре́ние** торфпа́ удобре́ни вырăнне́ ӳ́сă кураççĕ ◆ **как бу́дто** *союз и частица* пек, туйăнать; **как бы то ни́ было** епле пулса́н та; **как раз** шăп та лăп; **как оди́н челове́к** пĕр çын пек, пӳ́рте хăрăс; **как то́лько** -санах (-сенех); **Как то́лько освобожу́сь, приду́ к тебе́** Ерçсенéх сан патна́ пыра́тăп; **как в во́ду гляде́л** пĕлсе́ тă´нă пекéх; **как сказа́ть** темлé каламалла́ ĕ´нтĕ

кака́о *сущ. нескл. сред.* какáо (*тропикри çимĕç, унран шоколад тата ĕçме хатĕрлемелли порошок тăваççĕ*); **пить кака́о с молоко́м** сĕтпе́ какáо ĕç

ка́к-нибудь *и* **как-нибу́дь, ка́к-либо** *и* **как-ли́бо** *нареч.* 1. мĕнлé те пули́н, епле́ те пули́н; **На́до как-нибу́дь помо́чь ему́** Епле́ те пули́н пулăшас пулáть ăна́ 2. хăçан та пули́н, пĕрпĕр; **Как-нибу́дь зайду́ к тебе́** Пĕрпĕр кĕрсе́ тӳ́хăп-ха сан патна́

как-нака́к *нареч.* (*син.* всё-таки) мĕнлé пулсáн та, епле́ пулсáн та; **Как-нака́к, мы с ним друзья́ де́тства** Мĕнлé пулсáн та, эпи́р унпа́ ачаран тӳ́слă-çке

како́й 1. *вопросит. местоим. и союзн.сл.* мĕнлé, епле́; хăш; **Кака́я сего́дня пого́да**? Çантáлăк мĕнлé паян? 2. *местоим., выражает восхищение, удивление* мĕн тери́, мĕнлерéх, еплерéх; **Кака́я ра́дость**! Мĕн тери́ сăвăнăç! 3. **како́е** *частица, выражает отрицание* каккӳ́й унта́; **Он бога́т? — Како́е там!** Вăл пуян-и? — Каккӳ́й унта́!

како́й-нибу́дь, како́й-ли́бо *местоим. неопр.* мĕнлé те пули́н, епле́ те пули́н; **Жду от него́ како́го-нибу́дь изве́стия** Унран мĕнлé те пули́н хыпáр кĕтéтĕп

како́й-то *местоим. неопр.* темĕнлé, темлé; **Тебя́ иска́л како́й-то челове́к** Сана́ темĕнлé çын шыра́тчĕ

ка́к-то *нареч.* 1. темĕнлé, темлé майпа́; **Он ка́к-то откры́л дверь без ключа́** Вăл темлé майпа́ алăка́ çăрасçисĕрéх ӳ́çрĕ 2. пĕррехинче́, пĕррé; **ка́к-то весно́й** пĕррé çуркунне́

ка́ктус (-а) *сущ. муж.* ка́ктус *(йĕплĕ-йĕплĕ, тачка туналлă ӳ́сен-тăран)*

каламбу́р (-а) *сущ. муж.* сăмáх вăйли́, шӳ´тлĕ пуплéрĕш (*пĕрешкел сăмахсемпе усă курса хайлани)*

каланча́ (-и́) *сущ. жен.* каланча́, хура́л вышки́; **пожа́рная каланча́** пушáр каланчи́

кала́ч (-а́) *сущ. муж.* кулáч ◆ **тёртый кала́ч** пӳ́рнăç кӳ́рнă çын, ăнáкăнă чухлакáн çын; **калачо́м не зама́нишь** кулачпа́ илĕртéймĕн; **ему́ на калачи́ доста́лось** самаях лéкрĕ-ха ăна́

кале́ка (-и) *сущ. муж. и жен.* чăлáх, сӳ́сăр çын

календа́рный *прил.* календáрь -ĕ; **календа́рный год** календáрь çулта́лăкĕ (*январĕн 1-мĕшĕнчен пуçланаканни)*

календа́рь (-я́) *сущ. муж.* 1. календáрь (*вăхăт шучĕн йĕрки)*; **юлиа́нский календа́рь** юлиáн календáрĕ (*киве стиль*); **григориа́нский календа́рь** григориáн календáрĕ (*çĕнĕ стиль*); **чува́шский наро́дный календа́рь** чăвáш халăх календáрĕ 2. календáрь (*хут листи çине е кĕнеке майлă çапса кăларни*); **отрывно́й ка-**

лендáрь татмаллú календáрь **3.** календáрь, кун йĕркú (*ĕçсене кун тăрăх палăртса тухни*); **календáрь спортúвных игр** спорт вăййисéн йĕркú

калéчить (*наст.* -чу, -чишь, -чат) *глаг. несов., кого* чăлахлáт, сусăрлáт, чăлáх ту; **непосúльный труд калéчит людéй** ытлá йывăр ĕç çынсенé сусăрлатáть

калúбр (-а) *сущ. муж.* калúбр (*пăшал-тупă кĕпçин диаметрĕ*); **орýдия большóго калúбра** пысăк калúбрлă тупăсéм

кáлий (-я) *сущ. муж.* кáли (*хими элеменчĕ, çемçе металл*)

калúйный *прил.* кáли -ĕ; кáлиллĕ; **калúйные удобрéния** кáли удобренийĕсéм

калúна (-ы) *сущ. жен.* палáн; **я́годы калúны** палáн çырлú

калúтка (-и) *сущ. жен.* калинкké, кĕ´çĕн áлăк (*хýмере, хапха çумĕнче туни*)

калúть (*наст.* калю́, калúшь, каля́т; *прич. страд. прош.* калённый) **1.** (*син.* нагревáть) хĕрт; **калúть желéзо** тúмĕр хĕрт **2.** (*син.* жáрить) ăшалá, вĕриле́; тúпĕт; **калённые с сóлью сéмечки** тăварпá ăшалáнă хĕвéл çáврăнăш

калмы́к (-а) *сущ. муж.*, **калмы́чка** (-и) *жен.; множ.* **калмы́ки** (-ов) *и* **калмыкú** (-óв) калмăксéм *(монголсен йышне кĕрекен халăх)*

калмы́цкий *прил.* кáлмăк -ĕ; Калмы́ки -ĕ; Калмыкирú; **калмы́цкий язы́к** кáлмăк чĕлхú; **калмы́цкие стéпи** Калмыкирú çеçéн хирсéм

калорúйность (-и) *сущ. жен.* калóрилĕх, тýтлăх; **калорúйность пищевы́х проду́ктов** апáт-çúмĕç тýтлăхĕ

калорúйный *прил.*: **калорúйная пúща** калóриллĕ апáт, тýтлăхлă апáт

калóрия (-и) *сущ. жен.* калóри (*ăшă виçи; унпа апат тутлăхне палăртаççĕ*)

калóши (-óш) *сущ. множ.; един.* **калóша** (-и) *жен.* калýш; **глубóкие калóши** тáрăн калýш ◆ **сесть в калóшу** нáмăс кур

калькуля́тор (-а) *сущ. муж.* калькуля́тор (*шутлав хатĕрĕ*)

калькуля́ция (-и) *сущ. жен.* калькуля́ци *(продукци хаклăхне шутласа палăртни)*

кáмбала (-ы) *сущ. жен.* кáмбала (*лаптак ýтлĕ тинĕс пулли*)

кáменный *прил.* чул ...; чул -ĕ; **кáменный дом** чул çурт ◆ **кáменный ýголь** çĕр кăмрăкĕ

кáменщик (-а) *сущ. муж.* кáменщик (*кирпĕч хывакан строитель*)

кáмень (кáмня) *сущ. муж.; множ.* **кáмни** (-нéй) чул; **мости́ть у́лицу кáмнем** урамá чул сар ◆ **драгоцéнные кáмни** хáклă йышши́ чулсéм; **кáмни в пóчках** пýрери́ чуллáнчăк; **держáть кáмень за пáзухой** тавăрмá ĕмĕтленсé пýрăн; **краеугóльный кáмень** тĕп ни́кĕс; **кáмень на сéрдце** хýйхă пусни́; **кáмень с души́ свали́лся** чĕре́ лăштáх пýлчĕ, чун лăплáнчĕ; **кáмня на кáмне не остáвить** тăнч ту, тĕп ту

кáмера (-ы) *сущ. жен.* **1.** пў´лĕм; **кáмера хранéния** усрáв пў´лĕмĕ *(алăри япаласене вăхăтлăх усрамалли)*; **тюрéмная кáмера** тĕрмé пў´лĕмĕ **2.** кáмера (*урапа шинин, мечĕкĕн шалти резина витĕмĕ*); **велосипéдная кáмера** велосипéд камерú **3.** кáмера (*сăн ýкермелли хатĕр*); **фотографи́ческая кáмера** фотографи́ камерú; **телевизио́нная кáмера** телевúдени камерú ◆ **кáмеры шлю́за** шлюз пýлмисéм; **кáмера сгора́ния** çунý камерú (*двигательте*)

кампáния (-и) *сущ. жен.* **1.** кампáни, ĕçсéм, ĕç-пýç; **избира́тельная кампáния** суйлáв кампáнийĕ; **посевна́я кампáния** акá ĕçĕсéм **2.** вă´рçă ĕçĕсéм; **зи́мняя кампáния** хĕллехú вă´рçă ĕçĕсéм

камы́ш (-а́) *сущ. муж.* хӑ´мӑш; **озёрный камы́ш** кў´лĕ хӑ´мӑшĕ; **за́росли камыша́** хӑ´мӑш чӑ´тлӑхĕ, хӑ´мӑшлӑх

кана́ва (-ы) *сущ. жен.* кана́в; **сто́чная кана́ва** шыв юхтармалли́ кана́в; **копа́ть кана́ву** кана́в чав

кана́л (-а) *сущ. муж.* **1.** кана́л (*чавнӑ шыв çулĕ*); **судохо́дный кана́л** кара́п çўретмелли́ кана́л; **ороси́тельный кана́л** çĕр шӑвармалли́ кана́л **2.** (*син.* ли́ния, коммуника́ция) çыхӑну́, çул, май, кана́л; **кана́лы свя́зи** çыхӑну́ майĕсе́м; **кана́лы телеви́дения** телеви́дени каналĕсе́м; **связа́ться по дипломати́ческим кана́лам** диплома́ти майĕсемпе́ çы́хӑн

канализа́ция (-и) *сущ. жен.* канализа́ци *(каяш шывсене юхтарса яма çĕр айне хывнӑ пӑрӑхсем)*

кана́т (-а) *сущ. муж.* вĕре́н, кана́т; **стально́й кана́т** ху́рçӑ кана́т; **капро́новый кана́т** капро́н вĕре́н; **вить кана́т** вĕре́н яв

кандида́т (-а) *сущ. муж.*, **кандида́тка** *жен.* **1.** кандида́т (*суйлама тӑратнӑ çын*); **кандида́т в президе́нты** президента́ суйлама́ тӑра́тнӑ кандида́т **2.** *чего* кандида́т (*ӑслӑлӑхри кĕçĕн пусӑм*); **кандида́т истори́ческих нау́к** исто́ри ӑслӑлӑхĕсе́н кандида́чĕ

кани́кулы (-ул) *сущ. множ.* кани́кул (*вĕренмен, ĕçлемен вӑхӑт*); **зи́мние кани́кулы в шко́ле** шкулти́ хĕллехи́ кани́кул; **парла́ментские кани́кулы** парла́мент кани́кулĕ

кану́н (-а) *сущ. муж.* умĕнхи́ кун; **кану́н Но́вого го́да** Çĕ´нĕ çул умĕнхи́ кун

канцеля́рия (-и) *сущ. жен.* канцеля́ри (*учрежденин ĕç хучĕсене йĕркелекен пайĕ);* **канцеля́рия тре́ста** трест канцеля́рийĕ

ка́пать (*наст.* -аю, -аешь, -ают) *глаг. несов.* тумла́, юх; тумла́т, юхта́р (*тумлатса*); **из кра́на ка́пает вода́** кранра́н шыв тумла́ть

капе́ль (-и) *сущ. жен.* тумла́; **с кры́ши па́дает капе́ль** çурт тӑрринче́н тумла́ юха́ть

капита́л (-а) *сущ. муж.* капита́л (*тупӑш кўрекен укçа-тенкĕ, хаклӑх*); **промы́шленный капита́л** промы́шленность капита́лĕ; **фина́нсовый капита́л** фина́нс капита́лĕ

капитали́зм (-а) *сущ. муж.* капитали́зм (*капиталистсем пуç пулса тӑракан общество йĕрки*)

капиталовложе́ние (-я) *сущ. сред.* капита́л хывни́, укçа́-те́нкĕ хывни́; **капиталовложе́ния в строи́тельство** строительствӑна́ укçа́-те́нкĕ хывни́

капита́льный *прил.*, **капита́льно** *нареч.* тĕп; тĕпре́н, вӑ´йлӑ; **капита́льный ремо́нт до́ма** çурта́ тĕпре́н юсани́ ◆ **капита́льные вложе́ния** ĕçе́ укçа́-те́нкĕ хывни́

капита́н (-а) *сущ. муж.* **1.** капита́н (*майортан кĕçĕнрех чин*); **капита́н мили́ции** мили́ци капита́нĕ **2.** капита́н (*карап командирĕ*); **капита́н да́льнего пла́вания** инçе́т ише́в капита́нĕ **3.** капита́н (*спорт командин ертӳçи*)

капитуля́ция (-и) *сущ. жен.* парӑну́, капитуля́ци; парӑнни́, капитуляцилени́, капитуля́ци туни́

капка́н (-а) *сущ. муж.* ка́пкӑн; **поста́вить капка́ны на волко́в** ка́шкӑр тытма́ ка́пкӑн ларт

ка́пля (-и) *сущ. жен.* тумла́м; **ка́пли дождя́** çу́мӑр тумламĕсе́м, çу́мӑр пĕрчисе́м; **би́ться до после́дней ка́пли кро́ви** юлашки́ юн тумла́мĕ юлмиччéн çа́пӑç; **похо́жи как две ка́пли воды́** ка́снӑ ла́ртнӑ, пĕр пеке́х

капри́зничать (*наст.* -аю, -аешь, -ают) *глаг. несов.* кутӑнла́н, кутӑнла́ш, юнта́р, йӳнсĕрле́н; **ребёнок капри́зничает** ача́ йӳнсĕрлене́т

капри́зный *прил.*, **капри́зно** *нареч.*

ку́тăн, юнта́рмăш, йӳ́нсĕр; **капри́зная де́вочка** юнта́рмăш хĕр ача́

капро́н (-а) *сущ. муж.* капро́н (*синтетик сӳс; унран тунă япаласем*)

капу́ста (-ы) *сущ. жен.* купăста́; **ра́нняя капу́ста** ир пулака́н купăста́; **цветна́я капу́ста** чечéклĕ купăста́; **вило́к капу́сты** пĕр пуç купăста́; **ква́сить капу́сту** купăста́ йӳ́çĕт ◆ **морска́я капу́ста** ти́нĕс купăсти́ (*çиме юрăхлă тинĕс курăкĕ)*

карава́й (-я) *сущ. муж.* çắкăр, çавра́ çắкăр ◆ **На чужо́й карава́й рот не разева́й** *посл.* Çыннăнне́ ан ха́псăн

караи́м (-а) *сущ. муж.*, **караи́мка** (-и) *жен.; множ.* **караи́мы** (-ов) караимсе́м (*тĕрĕксен йышне кĕрекен халăх*)

караи́мский *прил.* караи́м -ĕ; **караи́мский язы́к** караи́м чĕлхи́

каракалпа́к (-а) *сущ. муж.*, **каракалпа́чка** (-и) *жен.; множ.* **каракалпа́ки** (-ов) каракалпаксе́м (*тĕрĕксен йышне кĕрекен халăх*)

каракалпа́кский *прил.* каракалпа́к -ĕ; **каракалпа́кский язы́к** каракалпа́к чĕлхи́

кара́кулевый *прил.* кара́куль ...; кара́куль -ĕ; **кара́кулевый воротни́к** кара́куль çухă

карами́ль (-и) *сущ. жен.* карами́ль (*хытă канфет*)

карандаш́ (-а́) *сущ. муж.* кăранта́ш; **цветны́е карандаши́** тĕ́слĕ кăранташсе́м; **писа́ть карандашо́м** кăранташпа́ çыр

каранти́н (-а) *сущ. муж.* каранти́н (*ерекен чирсем сарăласран сыхланма тăвакан ĕçсем*); **объяви́ть каранти́н** каранти́н йĕрки́ ту

кара́сь (-я́) *сущ. муж.* кара́с; **золоти́стый кара́сь** са́рă кара́с; **жа́рить карасе́й в смета́не** карасá хăймапа́ ăшала́

кара́ть (*наст.* -а́ю, -а́ешь, -а́ют) *глаг. несов., кого-что* (*син.* нака́зывать) ява́п тыттáр (*пысăк айăпшăн*)

карау́л (-а) *сущ. муж.* **1.** хура́л; **вы́ставить карау́л** хура́л тăра́т; **почётный карау́л** хисе́плĕ хура́л (*вилнĕ çын тупăкĕ патĕнче тăни*) **2.** *межд.* Кравýл! (*хăрушлăхран хăранипе кăшкăрни*)

карау́лить (*наст.* -у́лю, -у́лишь, -у́лят; *повел. ф.* -у́ль) *глаг. несов., кого-что* (*син.* охраня́ть) хуралла́, сыхла́, хура́л тăр

карача́евец (-вца) *сущ. муж.*, **карача́евка** (-и) *жен.; множ.* **карача́евцы** (-ев) карачайсе́м (*тĕрĕксен йышне кĕрекен халăх*)

карача́ево-балка́рский *прил.*: **карача́ево-балка́рский язы́к** карача́й-балка́р чĕлхи́

карача́евский *прил.* карача́й -ĕ; **карача́евские та́нцы** карача́й ташшисе́м

ка́рий (*жен.* ка́ряя, *сред.* ка́рее) *прил.* тĕ́ттĕм хắмăр (*куç тĕсĕ тата лаша тĕсĕ*)

карикату́ра (-ы) *сущ. жен.* карикату́ра (*тăрăхласа тунă кулăшла ӳкерчĕк)*; **карикату́ра на бюрокра́тов** бюрократсене́ питлекéн карикату́ра

карка́с (-а) *сущ. муж.* кăшка́р; **карка́с зда́ния** çурт кăшка́рĕ

ка́ркать (*наст.* -аю, -аешь, -ают) *глаг. несов.* краклáт (*курак çинчен*), кранклáт (*ула курак, çăхан çинчен*)

ка́рлик (-а) *сущ. муж.* (*ант.* велика́н) ка́рлик, керле́ (*питĕ пĕчĕк чĕр чун, çын*)

карма́н (-а) *сущ. муж.* кĕсьé; **боково́й карма́н** айккинчи́ кĕсьé; **карма́ны пальто́** пальто́ кĕсйисе́м; **положи́ть блокно́т в карма́н** блокнота́ кĕсьене́ чик ◆ **не по карма́ну** укçá çитмéст, ытлá хáклă; **у него́ то́лстый карма́н** ӳ́нăн кĕсйи́ хӳ́лăн (*укçа нумай*); **держи́ карма́н ши́ре** кĕтсéх тăр,

кĕтни́ ӳсăсăр; **за сло́вом в карма́н не поле́зет** сăмáхшăн кивçене́ каймáсть

карма́нный *прил.* кĕсьé -ĕ; **карма́нные часы́** кĕсьé сехéчĕ; **карма́нный вор** кĕсьé вăрри́ ◆ **карма́нные расхо́ды** вак-тĕвĕ́к тăкáк

карни́з (-а) *сущ. муж.* карни́с; **карни́з до́ма** пӳрт карни́сĕ

карп (-а) *сущ. муж.* карп (*кӳлĕ́пĕвере ĕрчетекен пулă*); **зерка́льный карп** хӳпăсăр карп

ка́рта (-ы) *сущ. жен.; множ.* **ка́рты** (карт) **1.** кáрттă; **географи́ческая ка́рта** геогрáфи карттú **2.** карт (*вылямалли*); **козы́рные ка́рты** кóзырь картсéм; **игра́ть в ка́рты** картлá выля́; **сдава́ть ка́рты** карт валéç ◆ **ему́ и ка́рты в ру́ки** ку ĕç шăпáх ăнá валли́

карта́вый *прил.* сéлĕп *(хăш-пĕр сасăсене лайăх калайман)*; **карта́вый ребёнок** сéлĕп ачá

карти́на (-ы) *сущ. жен.* **1.** карти́на, ӳ́кéрчĕк; **писа́ть карти́ну ма́слом** çӳ́ллă сăрăпá карти́на ӳ́кéр **2.** карти́на, фильм; **многосери́йная карти́на** нумáй сéриллĕ карти́на **3.** (*син.* вид) сắнлăх, сăн; **карти́ны приро́ды** çут çантáлăк сăнлăхĕсéм **4.** курăнӳ́ (*пьесăн, спектаклĕн пĕчĕк сыпăкĕ*)

карти́нка (-и) *сущ. жен.* (*син.* рисӳ́нок) ӳ́кéрчĕк; **де́тская кни́га с карти́нками** ӳ́кéрчĕклĕ ачá-пăчá кĕнекú

карто́н (-а) *сущ. муж.* карто́н (*хулăн, хытă хут*); **многосло́йный карто́н** нумáй сúйлĕ карто́н

карто́нный *прил.* карто́н ...; карто́н -ĕ; **карто́нная коро́бка** карто́н арчá; **карто́нная фа́брика** карто́н фабрикú

картоте́ка (-и) *сущ. жен.* картоте́ка (*мĕнле те пулин информаци çырнă карточкăсен пуххи*); **библиоте́чная картоте́ка** библиоте́ка картотекú

карто́фель (-я) *сущ. муж.* çĕр улмú; **ра́нний карто́фель** ир пулакáн çĕр улмú; **оку́чивать карто́фель** çĕр улмú купалá; **копа́ть карто́фель** çĕр улмú кăлáр

карто́фельный *прил.* çĕр улмú -ĕ; **карто́фельная ботва́** çĕр улмú авúр; **карто́фельное пюре́** çĕр улмú нúмĕрĕ

ка́рточка (-и) *сущ. жен.* **1.** (*син.* фотогрáфия) сăн ӳ́кéрчĕк, фотоӳ́кéрчĕк; **ка́рточка для па́спорта** пáспорт валлú тӳ́нă сăн ӳ́кéрчĕк **2.** кáрточка (*мĕн те пулин çырнă хут татки*); **продово́льственная ка́рточка** апáтçúмĕç илмеллú кáрточка; **учётная ка́рточка** учёт карточкú (*сăм., партире тăракансен*)

карто́шка (-и) *сущ. жен.* çĕр улмú; **жа́реная карто́шка** ăшалáнă çĕр улмú

карту́з (-á) *сущ. муж.* (*син.* фурáжка) карттýс; **козырёк картуза́** карттýс сăмсú

карусе́ль (-и) *сущ. жен.* карусе́ль; **де́тская карусе́ль** ачá-пăчá карусе́лĕ; **ката́ться на карусе́ли** карусельпе́ ярăн

карье́р (-а) *сущ. муж.* карье́р (*чул, хăйăр т. ыт. кăлармалли пысăк шăтăк*); **гли́няный карье́р кирпи́чного заво́да** ки́рпĕч завóчĕн тăм карье́рĕ

карье́ра (-ы) *сущ. жен.* **1.** (*син.* профе́ссия) ĕç, ĕç-пýç; ĕç-хĕ́л; **артисти́ческая карье́ра** артúст ĕ́çĕ-хĕ́лĕ **2.** (*син.* успéх) ăнăçý, ӳ́сĕм; **он сде́лал блестя́щую карье́ру** вăл пúтĕ пы́сăк ӳ́сĕм тýнă (*ĕçре, пултарулăхра*)

каса́ться (*наст.* -áюсь, -áешься, -áются; *повел. ф.* -áйся, -áйтесь; *прич. действ. наст.* -áющийся, *прош.* -áвшийся; *деепр.* -áясь) *глаг. несов., кого-чего* **1.** (*син.* дотрáгиваться) тив, тĕ́кĕн, пéрĕн; **каса́ться руко́й** алăпá пéрĕн **2.** (*син.* затрáгивать) хускáт, тапрáт, áсăн; **э́того вопро́са мы не каса́лись** ку ыйтăвá эпúр хускатмáн **3.** *1 и 2 л. не употр.* (*син.* отно-

си́ться) çы́хăн, пырса́ тив; **э́то вас не каса́ется** ку сире́ пырса́ тивме́ст

ка́ска (-и) *сущ. жен.* ка́ска (*тимёр е пластмасса калпак)*; **ка́ска шахтёра** шахтёр каски́

каскадёр (-а) *сущ. муж.* каскадёр (*фильм ӳкерме кăткăс та хăрушă мыскарасем тăвакан*)

ка́сса (-ы) *сущ. жен.* ка́сса (*укçа йышăнакан тата паракан, билет сутакан учреждени, вырăн)*; **ка́сса автовокза́ла** автовокза́л касси́; **театра́льная ка́сса** теа́тр касси́; **вы́бить чек в ка́ссе** кассăра́ чек çаптáр ◆ **ка́сса взаимопо́мощи** алылма́ш пулăшу́ кассѝ

касса́ция (-и) *сущ. жен.* кассáци (*суд йышăнăвне пăрахăçлама ыйтса çырни)*; **пода́ть на кассáцию** кассáци пар

кассе́та (-ы) *сущ. жен.* кассе́та (*çутă кĕресрен витнĕ кино, фотопленка е магнитлă лента пушкарĕ*)

кассѝр (-а) *сущ. муж.* кассѝр *(кассăра ĕçлекен)*

ка́ссовый *прил.* ка́сса -ĕ; кассăрѝ; **ка́ссовый аппара́т** ка́сса аппара́чĕ; **ка́ссовая нали́чность** кассăрѝ укçá

кастрю́ля (-и) *сущ. жен.* кастрю́ль; **эмалиро́ванная кастрю́ля** эмальлéнĕ кастрю́ль; **вари́ть суп в кастрю́ле** кастрюльпе́ яшка́ пĕçéр

катало́г (-а) *сущ. муж.* катало́г *(кĕнекесен, экспонатсен т. ыт. япаласен системăллă списокĕ)*; **алфави́тный катало́г** алфавѝт катало́гĕ

ката́р (-а) *сущ. муж.* (*син.* воспале́ние) шы́çă; шыçнѝ; **ката́р желу́дка** хы́рăмлăх ти́рĕ шыçнѝ; **ката́р ве́рхних дыха́тельных пути́й** тип пыр шыçнѝ

катастро́фа (-ы) *сущ. жен.* инке́к, синке́р, сехме́т; **тра́нспортная катастро́фа** транспортри́ инке́к; **опа́сность экологи́ческой катастро́фы** эколо́ги синке́рĕн хăру́шлăхĕ

ката́ть (*наст.* -а́ю, -а́ешь, -а́ют) *глаг. несов.* **1.** *кого* ярăнта́р, илсе́ çӳре́ (*транспорт хатĕрĕпе*); **ката́ть ребёнка на са́нках** ачана́ çунашкапа́ ярăнтарса́ çӳре́ **2.** *кого-что* куста́р, йăванта́р; **ката́ть бревно́** пĕренене́ йăванта́р **3.** *что* уна́, йăвала́, чăмаккала́; **ката́ть из те́ста колобки́** чустара́н йăва́ уна́ **4.** (*син.* валя́ть) йăвала́, пус; **ката́ть ва́ленки** çăм а́тă йăвала́; **ката́ть во́йлок** кĕççé пус

ката́ться (*наст.* -а́юсь, -а́ешься, -а́ется; *повел. ф.* -а́йся, -а́йтесь; *прич. действ. наст.* -а́ющийся, *прош.* -а́вшийся; *деепр.* -а́ясь) *глаг. несов.* я́рăн, ярăнса́ çӳре́; **ката́ться на конька́х** конькипе́ я́рăн

категори́ческий *прил.* (*син.* реши́тельный), **категори́чески** *нареч.* та́тăклă; **категори́ческий отве́т** та́тăклă хура́в; **категори́чески с ва́ми не согла́сен** э́пĕ сирĕнпе́ вуçéх килĕшме́стĕп

ка́тер (-а) *сущ. муж.* ка́тер (*пысăках мар кимĕ*); **буксѝрный ка́тер** буксѝр ка́тер; **сторожево́й ка́тер** хура́л ка́терĕ

катехи́зис (-а) *сущ. муж.* катехи́зис *(христиан тĕнĕн вĕрентĕвне кĕскен, ыйтусемпе хуравсем урлă ăнлантаракан кĕнеке)*

като́к (катка́) *сущ. муж.* като́к (*конькипе ярăнмалли яка пăрлă вырăн*); **ката́ться на катке́** като́к çинче́ я́рăн

като́лик (-а) *сущ. муж.*, **католи́чка** (-и) *жен.* като́лик (*католицизм тĕнне тытакан*)

католици́зм (-а) *сущ. муж.* католици́зм, като́лик тĕ´нĕ (*христиан тĕнĕн Римри папа ертсе пыракан пайĕ*)

католи́ческий *прил.* католици́зм -ĕ; **католи́ческая рели́гия** католици́зм тĕ´нĕ

ка́торга (-и) *сущ. жен.* ка́торга

(*тӗрмере ларакансене йывӑр ӗҫпе асаплантарни*); **сосла́ть на ка́торгу** каторгӑна́ яр

ка́торжник (-а) *сущ. муж.*, **ка́торжница** (-ы) *жен.* ка́торжник, каторгӑра́ ларака́н

ка́торжный *прил.* **1.** ка́торга -ӗ; каторгӑри́; **ка́торжные рабо́ты** ка́торга ӗҫӗсе́м **2.** (*син.* мучи́тельный) аса́плӑ, хӗ ´нлӗ, йы́вӑр; **ка́торжная жизнь** аса́плӑ пу́рнӑҫ

кату́шка (-и) пушка́р, туплашка́; **кату́шка ни́ток** ҫип пушка́рӗ

каучу́к (-а) *сущ. муж.* каучу́к (*резина тумалли чӗр тавар*); **синтети́ческий каучу́к** хайла́влӑ каучу́к, синте́тик каучу́к

кафе́ *сущ. нескл. сред.* кафе́ (*пӗчӗк ресторан*); **поку́шать в кафе́** кафере́ апа́т ҫи

ка́федра (-ы) *сущ. жен.* **1.** (*син.* трибу́на) ка́федра (*халӑх умӗнче сӑмах каламалли ҫӳллӗ вырӑн*); **докла́дчик подня́лся на ка́федру** докла́дҫӑ ка́федра умне́ ту́хрӗ **2.** ка́федра (*аслӑ шкулта — пӗр специальноҫлӑ преподавательсен ушкӑнӗ*); **он рабо́тает на ка́федре ру́сского языка́** вӑл вы́рӑс чӗлхи́ кафедринче ӗҫле́т

ка́фель (-я) *сущ. муж.* (*син.* изразе́ц) ка́фель (*стена витмелли яка плитка*)

ка́фельный *прил.* ка́фель ...; ка́фельлӗ, ка́фель ви́тнӗ; **ка́фельная печь** ка́фель ви́тнӗ кӑмака́

кафта́н (-а) *сущ. муж.* сӑхма́н; **кафта́н из дома́шнего сукна́** килти́ тӑлара́н ҫӗле́нӗ сӑхма́н

кача́ть (*наст.* -а́ю, -а́ешь, -а́ют) *глаг. несов.* **1.** *кого-что* сулла́, силле́, сикте́р, чӳхенте́р; **кача́ть колыбе́ль** сӑпка́ сикте́р; **кача́ть на каче́лях** чуччу́ яра́нта́р; **во́лны кача́ют ло́дку** хумсе́м киммӗ́ чӳхентерӗ́ҫҫӗ **2.** *кого* (*син.* подбра́сывать) ҫӗкле́, урра́ йӑт (*саламласа*) **3.** *что* уҫла́; **кача́ть во́ду насо́сом** шыва́ насуспа́ уҫла́ ◆ **кача́ть голово́й** пуҫа́ пӑркала́ (*килӗшмесӗр*)

кача́ться (*наст.* -а́юсь, -а́ешься, -а́ются; *повел. ф.* -а́йся, -а́йтесь; *прич. действ. наст.* -а́ющийся, *прош.* -а́вшийся; *деепр.* -а́ясь) *глаг. несов.* **1.** сулла́н, силле́н, чӳхе́н, лӑка́н, сиккеле́н; **ве́тви кача́ются от ве́тра** туратсе́м ҫилпе́ сулланӑ́ҫҫӗ **2.** (*син.* шата́ться) тайкала́н, сулланкала́; **идти́ кача́ясь** тайкалансӑ́ ут

каче́ли (-ей) *сущ. множ.* чуччу́; **кача́ться на каче́лях** чуччу́ я́рӑн

ка́чественный *прил.* **1.** паха́лӑх -ӗ; **ка́чественные показа́тели** паха́лӑх кӑтартӑвӗсе́м **2.** (*син.* хоро́ший) **ка́чественно** *нареч.* ла́йӑх, паха́; **ка́чественный това́р** паха́ тава́р; **ремо́нт произведён ка́чественно** юсав ӗҫӗсене́ ла́йӑх ту́нӑ ◆ **ка́чественные прилага́тельные** мӗнле́лӗх па́ллӑ ячӗсе́м

ка́чество (-а) *сущ. сред.* (*ант.* коли́чество) паха́лӑх; **ка́чество рабо́ты** ӗҫ паха́лӑхӗ; **проду́кция высо́кого ка́чества** паха́ проду́кци

ка́ша (-и) *сущ. жен.* пӑ ´тӑ; **гре́чневая ка́ша** хура́ тул пӑтти́; **пшённая ка́ша** вир пӑтти́; **вари́ть ка́шу** пӑ ´тӑ пӗҫе́р ◆ **ма́ло ка́ши ел** айва́н-ха; **вари́ть ка́шу** ӗҫе́ чӑкрашла́т; **расхлёбывать ка́шу** ӗҫе́ уҫӑмла́т, йывӑрлӑха́ сир; **с ним ка́ши не свари́ть** унпа́ пӗр чӗлхе́ тупма́ ҫук; **сапоги́ про́сят ка́ши** а́тӑ тӗ ´пӗ хӑйпӑнса́ ка́йнӑ; **Ма́слом ка́ши не испо́ртишь** *посл.* Ҫу я́нӑшӑн пӑ ´тӑ пӑсӑлма́сть

ка́шель (ка́шля) *сущ. муж.* ӳ ´слӗк; ӳсӗрни́; **просту́дный ка́шель** шӑнса́ ӳсӗрни́; **ка́шель приста́л** ӳ ´слӗк ӗрчӗ

ка́шлять (*наст.* -яю, -яешь, -яют; *прич. действ. наст.* -яющий; *деепр.* -яя) *глаг. несов.* ӳ ´сӗр; **ребёнок си́льно ка́шляет** ача́ хы́тӑ ӳсӗре́т

кашне́ *сущ. нескл. сред.* (*син.* шарф) кашне́ (*пальто айне ҫыхакан шарф*)

каю́та (-ы) *сущ. жен.* каю́та, пӳ́лĕм (*карап çинче*); **двухме́стная каю́та** и́кĕ çы́нлăх каю́та

ка́яться (*наст.* ка́юсь, ка́ешься, ка́ются; *повел. ф.* ка́йся, ка́йтесь; *прич. действ. наст.* ка́ющийся, *прош.* ка́явшийся; *деепр.* ка́ясь) *глаг. несов.* ӳ́кĕн, айăпа́ йы́шăн, çылăха́ йы́шăн; **ка́яться в грехи́х** çылăха́ кĕ́нĕшĕн ӳ́кĕн

квадра́т (-а) *сущ. муж.* тăваткӑ́л, квадра́т; **начерти́ть квадра́т** тăваткӑ́л ӳкĕ́р

квадра́тный *прил.* тăваткӑ́л, квадра́тлă; **квадра́тная ко́мната** тăваткӑ́л пӳ́лĕм

ква́кать (*наст.* -аю, -аешь, -ают) *глаг. несов.* кваклáт (*шапа çинчен*)

квалифика́ция (-и) *сущ. жен.* **1.** (*син.* подгото́вленность) пĕлӳ́ллĕх, ăсталлăх, пĕлӳ́ шаййĕ; **то́карь высо́кой квалифика́ции** ăста́ то́карь **2.** (*син.* специа́льность) ĕç, квалифика́ци; **приобрести́ квалифика́цию юри́ста** юри́ст ĕçне вĕренсе́ алла́ ил

квалифици́рованный *прил.* (*син.* о́пытный, зна́ющий), **квалифици́рованно** *нареч.* ăста́, пысăк пĕлӳ́ллĕ, пĕлекéн; **квалифици́рованный рабо́чий** ăста́ рабо́чи; **реши́ть вопро́с квалифици́рованно** ыйтăвá пĕлсе́ татса́ пар

кварта́л (-а) *сущ. муж.* **1.** кварта́л (*çулталăкăн тăваттăмĕш пайĕ, виçĕ уйăх*); **результа́ты рабо́ты за кварта́л** кварталти́ ĕç тӳхăçĕ **2.** кварта́л, тăваткӑ́л (*хулан е вăрманăн пайĕ*); **кварта́лы но́вых домо́в** çĕ́нĕ çуртсе́н кварталĕсе́м

кварта́льный *прил.* кварта́л -ĕ; кварталти́; **кварта́льный отчёт** кварталти́ отчёт

кварте́т (-а) *сущ. муж.* кварте́т (*тăватă юрăçă е музыкант*); **кварте́т баяни́стов** баянистсе́н кварте́чĕ

кварти́ра (-ы) *сущ. жен.* хваттéр; **благоустро́енная кварти́ра** хăйтлă хваттéр (*газ, шыв, ăшă кĕртни*); **трёхко́мнатная кварти́ра** виçĕ пӳ́лĕмлĕ хваттéр; **приватизи́ровать кварти́ру** хваттерé приватизациленé

кварти́рный *прил.* хваттéр -ĕ; **кварти́рный вопро́с** хваттéр ыйтăвĕ; **задержа́ть кварти́рных воро́в** хваттéр вăррисенé ярсá тыт

квартпла́та (-ы) *сущ. жен.* (*сокр.:* кварти́рная пла́та) хваттéр укçи́, хваттéр тӳлéвĕ; **во́время вноси́ть квартпла́ту** хваттéр укçинé вăхăтрá тӳлé

квас (-а) *сущ. муж.* квас (*ӳсĕртмен ĕçме*); **хлéбный квас** тырă ква́сĕ; **я́годный квас** çырлá ква́сĕ

ква́сить (*наст.* ква́шу, ква́сишь, ква́сят; *прич. страд. прош.* ква́шенный; *деепр.* ква́ся) *глаг. несов., что* йӳ́çĕт; **ква́сить молоко́** сĕт йӳ́çĕт

ква́шеный *прил.* йӳ́çĕ, йӳ́çĕтнĕ; **ква́шеная капу́ста** йӳ́çĕтнĕ купăстá

квашня́ (-и́) *сущ. жен.* кăва́с чĕрéс (*çăкăр чусти хумалли*)

квита́нция (-и) *сущ. жен.* квита́нци (*укçа е япала пани-илнине çирĕплетекен хут*); **бага́жная квита́нция** бага́ж квита́нцийĕ; **вы́писать квита́нцию** квита́нци çырсá пар

кедр (-а) *сущ. муж.* кедр (*хыр евĕр йывăç*); **сиби́рский кедр** Çĕ́пĕр кéдрĕ

кедро́вый *прил.* кедр -ĕ; **кедро́вые оре́хи** кедр мắйăрĕ

кекс (-а) *сущ. муж.* кекс (*иçĕмпе пĕçернĕ пĕчĕк булка пек çимĕç*)

ке́пка (-и) *сущ. жен.* карттýс *(лапчăкрах формăлли)*

кера́мика (-и) *сущ. жен.* кера́мика (*тăмран туса хĕртнĕ япаласем*); **худо́жественная кера́мика** илéмлĕ кера́мика

керосси́н (-а) *сущ. муж.* крассы́н; **нали́ть в фона́рь керосси́н** хунарá крассы́н яр

керосси́новый *прил.* крассы́н -ĕ; **керосси́новая ла́мпа** крассы́н лампи́

ке́та (-ы) *и* **кета́**(-ы́) *сущ. жен.* кета́ (*лосось йышши пулă*)

кефи́р (-а) *сущ. муж.* кефи́р (*турăх тĕсĕ*)

кибернéтика (-и) *сущ. жен.* кибернéтика *(управлени ĕçĕн, информацин пĕтĕмĕшле законĕсене тата меслечĕсене тĕпчекен ăслăлăх)*

кива́ть (*наст.* -а́ю, -а́ешь, -а́ют) *глаг. несов., чем* тай, сĕлт, сулла́; **кива́ть голово́й** пуçа́ сĕлт

кида́ть (*наст.* -а́ю, -а́ешь, -а́ют) *глаг. несов., кого-что* (*син.* броса́ть) **1.** пер, ы́вăт, пăра́х; **кида́ть ка́мнем** чулпа́ пер **2.** пăра́х, хăва́р, пăрахса́ хăва́р; **кида́ть друзе́й** туссенче́н си́вĕн; **кида́ть семью́** кил-йыша́ пăрахса́ хăва́р ◆ **кида́ть взгля́ды** пăха́-пăха́ ил, куç куçла́

кида́ться (*наст.* -а́юсь, -а́ешься, -а́ются; *повел. ф.* -а́йся, -а́йтесь; *прич. действ. наст.* -а́ющийся, *прош.* -а́вшийся; *деепр.* -а́ясь) *глаг. несов.* (*син.* броса́ться) **1.** *чем* пер, перкелéш; **де́ти кида́ются снежка́ми** ачасéм юрпа́ перкелешéççĕ **2.** ы́ткăн, ắнтăл, ви́рхĕн, сик; **кида́ться в во́ду** шыва́ сик; **кида́ться в ата́ку** тăшма́н çине ы́ткăн ◆ **кида́ться слова́ми** сăмаха́ шухăшламáсăр персé яр

киловáтт (-а) *сущ. муж.; множ.* **киловáтты** (-ва́ттов *и* -ва́тт) киловáтт (*хăватлăх виçи, 1000 ватт*)

килогра́мм (-а) *сущ. муж.; множ.* **килогра́ммы** (-гра́мм *и* -гра́ммов) килогра́мм *(йывăрăш виçи, 1000 грамм)*; **купи́ть килогра́мм са́хару** пĕр килогра́мм са́хăр туя́н; **по́йманная ры́ба потяну́ла полтора́ килогра́мма** ты́тнă пу́лă кило́ çу́рă та́йрĕ

киломéтр (-а) *сущ. муж.* киломéтр (*вăрăмăш виçи, 1000 метр*); **до дере́вни пять киломéтров** яла́ çитмé пи́лĕк киломéтр

ки́лька (-и) ки́лька *сущ. жен.* (*вĕтĕ пулă*); **ки́лька пря́ного посо́ла** тех ĕмлетсé тăварла́нă ки́лька

кинематогра́фия (-и) *сущ. жен.* кинематогра́фи (*кинофильмсем ӳкерес ăсталăх*)

кинеско́п (-а) *сущ. муж.* кинеско́п (*телевидени экранĕ çине ӳкерчĕк кăларакан хатĕр)*

кинжа́л (-а) *сущ. муж.* кинжа́л *(кĕске хĕç, икĕ енĕ те касакан çĕçĕ)*

кино́ *сущ. нескл.* кино́ (*экран çине кинопленкăран пысăклатса фильмсем кăтартни; çавăн пек фильм*); **смотре́ть кино́** кино́ кур

кинока́мера (-ы) *сущ. жен.* кинока́мера (*фильм ӳкермелли аппарат*)

кинофи́льм (-а) *сущ. муж.* кинофи́льм; **худóжественный кинофи́льм** иле́млĕ кинофи́льм; **демонстри́ровать кинофи́льм** кинофи́льм кăтáрт

кио́ск (-а) *сущ. муж.* кио́ск *(сутă тумалли пĕчĕк çурт)*; **газéтный кио́ск** хаçáт кио́скĕ

кио́т (-а) *сущ. муж.* ту́рăш вы́рăнĕ (*турăшсем лартма кĕленчелесе тунă пĕчĕк шкап)*

кипéть (*наст.* киплю́, кипи́шь, кипя́т; *прич. действ. наст.* кипя́щий, *прош.* кипéвший; *деепр.* кипя́) *глаг. несов.* **1.** *1 и 2 л. не употр.* вĕрé; **вода́ в ча́йнике кипи́т** чейникрé шыв вĕрéт **2.** *1 и 2 л. не употр.* вĕрé, вĕресé тăр, хĕрсé пыр; **рабóта кипи́т** ĕç хĕрсé пырáть; **злóба кипи́т в сéрдце** чĕрерé çи́лĕ вĕрéт **3.** *чем* (*син.* проявля́ть) па́лăрт; **кипéть возмуще́нием** тарăхнинé па́лăрт, хы́тă та́рăх

кипяти́ть (*наст.* -ячу́, -яти́шь, -ятя́т; *прич. действ. наст.* -ятя́щий, *прош.* -яти́вший; *прич. страд. прош.* -ячённый; *деепр.* -ятя́) *глаг. несов., что* вĕрéт; **кипяти́ть во́ду в самова́ре** сăмаварпа́ шыв вĕрéт; **кипяти́ть бельё** кĕпé-йĕм вĕрéт (*çума хатĕрлесе*)

кипято́к (-тка́) *сущ. муж.* вĕрекéн

шыв, вĕрéнĕ шыв; **крутóй кипятóк** тин вĕрéнĕ шыв; **обдáть кипяткóм** вĕрекéн шывпá çу (*микробсене пĕтерме)*

кипячёный *прил.* вĕрéнĕ, вĕрéтнĕ; **пить кипячёную вóду** вĕрéтнĕ шыв ĕç

киргúз (-а) *сущ. муж.*, **киргúзка** (-и) *жен.; множ.* **киргúзы** (-ов) кăркăссéм (*тĕрĕксен йышне кĕрекен халăх*)

киргúзский *прил.* кăркăс -ĕ; Киргúзи -ĕ; Киргизирú; **киргúзский язы́к** кăркăс чĕлхú; **киргúзские гóры** Киргизирú сăрт-тý

кирúллица (-ы) *сущ. жен.* кирúллица (*вырăс алфавичĕн никĕсне хывнă авалхи славян çырулăхĕ*)

кирпúч (-á) *сущ. муж.* кúрпĕч; **пóлый кирпúч** хăвăл кúрпĕч; **обжигáть кирпúч** кúрпĕч хĕрт

кирпúчный *прил.* кúрпĕч ...; кúрпĕч -ĕ; **кирпúчная стенá** кúрпĕч стенá; **кирпúчный завóд** кúрпĕч завóчĕ; **клáдка в два кирпичá** úкĕ кúрпĕч хýлăнăш хывнú

кисéль (-я́) *сущ. муж.* кĕсéл; **я́годный кисéль** çырлá кĕсéлĕ; **кисéль из овся́нки** сĕ́лĕ çắнăх кĕсéлĕ

кисéт (-а) *сущ. муж.* éнчĕк (*табак хумалли хутаç)*

кислорóд (-а) *сущ. муж.* кислорóд (*сывлама, çунма кирлĕ газ*); **кислорóд вóздуха** сывлăшрú кислорóд

кислотá (-ы́) *сущ. жен.; множ.* **кислóты** (-óт) кислотá, йӳ́çĕк (*водородлă хими пĕрлешĕвĕ*); **сéрная кислотá** кӳ́кĕрт кислотú

кúслый (*кратк. ф.* кúсел, кислá, кúсло, *множ.* кúслы *и* кислы́; *сравн. ст.* кислéе, кислéй; *превосх. ст.* кислéйший) *прил.*, **кúсло** *нареч.* **1.** йӳ́çĕ, йӳçéк, кăвасáк; **кúслые я́блоки** кăвасáк пан улмú **2.** йӳ́çĕ, йӳ́çĕтнĕ, йӳ́çĕхнĕ; **кúслое тéсто** йӳ́çĕ чустá (*çĕнрепе хуни*) **3.** (*син.* унылый, недовóльный) кичéм, тýнсăх, сӳ́рĕк, кắмăлсăр; **кúслый взгляд** кắмăлсăррăн пăхнú

кисть[1] (-и) *сущ. жен.* áлă сыппú; **от кúсти до плечá** áлă сыппинчéн хулпуççú тарáн

кисть[2] (-и) *сущ. жен.* **1.** (*син.* гроздь) сапакá, çýпкăм; **кисть винограда́** úçĕм çырлú çýпкăмĕ **2.** милкé, кúстĕк (*ӳкермелли, сăрламалли хатĕр*) **2.** ярапá, шерепé; **шаль с кистя́ми** ярапáллă тýтăр

кит (-á) *сущ. муж.* кит (*тинĕсре пурăнакан питĕ пысăк чĕр чун*)

китáец (-áйца) *сущ. муж.*, **китая́нка** (-и) *жен.*; *множ.* **китáйцы** (-ев) китаецсéм, китайсéм (*Китайри нумай-нумай халăхсемпе йăхсен пĕрлехи ячĕ*)

китáйский *прил.* китáй -ĕ; Китáй -ĕ; Китайрú; **китáйский язы́к** китáй чĕлхú; **китáйская пúсьменность** китáй çырýлăхĕ (*иероглифсем*); **китáйская а́рмия** Китáй çáрĕ; **китáйские рéки** Китайрú юхáн шывсéм

кúтель (-я) *сущ. муж.; множ.* **кителя́** (-éй) *и* **кúтели** (-ей) кúтель (*хупă çухаллă пиншак евĕр тум*); **военный кúтель** çар çыннúн кúтелĕ

кишéть *1 и 2 л. не употр.* (*наст.* кишúт, кишáт; *прич. действ. наст.* кишáщий, *прош.* кишéвший) *глаг. несов.* (*син.* шевели́ться, копоши́ться) йăшăлтáт, кĕшĕлтéт, хĕ́вĕш, вĕркé; **в у́лье кишáт пчёлы** вĕллерé пыл хурчĕсéм вĕркéççĕ; **у́лицы кишáт нарóдом** урамсенчé хáлăх хĕвĕшéт

кишéчник (-а) *сущ. муж.* пы́ршăлăх, пыршăсéм; **расстрóйство кишéчника** вар витúн

кишкá (-и́) *сущ. жен.; множ.* **кишки́** (кишóк, кишкáм) пы́ршă; **тóнкие кишки́** çинçé пыршăсéм; **прямáя кишкá** кутанá; **заворóт кишóк** пы́ршă хутлансá ларнú

клавиату́ра (-ы) *сущ. жен.* клави-

атýра, пускăчсéм; **клавиатýра роя́ля** роя́ль пускăчĕсéм

кла́виша (-и) *сущ. жен.; множ.* **кла́виши** (-виш) пýскăч; **кла́виши компью́тера** компью́тер пускăчĕсéм; **кла́виши бая́на** баян пускăчĕсéм

клад (-а) *сущ. муж.* мул, пытáрнă мул; **найти́ клад** пытáрнă мулá туп

кла́дбище (-а) *сущ. сред.* масáр, çăвá; **христиáнское кла́дбище** христиансéн масáрĕ; **языческое кла́дбище** ыр-усалá ĕненекенсéн çăвú

кладби́щенский *прил.* масáр -ĕ, çăвá -ĕ; **кладби́щенская огра́да** масáр картú

кладова́я (-óй) *сущ. жен.* кладовóй, усрáвлăх, усрáв пýʹлĕмĕ; **сложи́ть ве́щи в кладову́ю** япаласенé усрáв пýлĕмнé хур

кладовщи́к (-á) *сущ. муж.*, **кладовщи́ца** (-ы) *жен.* кладовщúк (*кладовойра, складра ĕçлекен*)

кла́няться (*наст.* -яюсь, -яешься, -яются; *повел. ф.* -яйся, -яйтесь; *прич. действ. наст.* -яющийся, *прош.* -явшийся; *деепр.* -яясь) *глаг. несов.* **1.** *с кем* пуç тай, пуç сĕлт (*саламласа, сывлăх сунса*); **кла́няться со знако́мыми** пĕлĕшсенé пуç тай **2.** *кому* саламлá, салáм калá; **Тебе́ кла́няются Пе́тя и Ва́ня** Санá Петьăпá Ваня салáм калáççĕ

кла́пан (-а) *сущ. муж.* клáпан (*пăрăхри шĕвек, газ çулне пýлмелли, вĕсен куçăмне йĕркелемелли хатĕр*); **кла́паны музыка́льного инструме́нта** мýзыка инструмéнчĕн клапанĕсéм; **серде́чный кла́пан** чĕрé клáпанĕ

кларне́т (-а) *сущ. муж.* кларнéт (*йывăçран тунă вĕрсе каламалли музыка инструменчĕ*)

класс[1] (-а) *сущ. муж.* класс (*обществăри çынсен пĕрешкел интересемпе пĕрлешсе тăракан пысăк ушкăнĕ*); **рабо́чий класс** рабóчи класс

класс[2] (-а) *сущ. муж.* **1.** класс (*вĕренекенсен ушкăнĕ; вĕсем ларакан пýлĕм*); **уча́щиеся кла́дших кла́ссов** кĕʹçĕн классенчé вĕренекенсéм; **переходи́ть из кла́сса в класс** класрáн класá куç **2.** (*син.* категóрия, подразделéние) класс, ýшкăн; тĕс; **кла́ссы морски́х суде́в** тúнĕс карапĕсéн тĕсĕсéм; **класс млекопита́ющих** сĕтпé ýстерекенсéн ýшкăнĕ (*биологире*)

кла́ссик (-а) *сущ. муж.* клáссик (*культурăра, ăслăлăх тĕпчевĕнче чапа тухнă çын*); **кла́ссики чува́шской литерату́ры** чăваш литературúн классикĕсéм

кла́ссика (-и) *сущ. жен.* клáссика (*литературăпа ýнерĕн чи чаплă, кăтартуллă хайлавĕсем)*

классифика́ция (-и) *сущ. жен.* классификáци, ушкăнлáв; ушкăнлани́; **нау́чная классифика́ция** ăʹслăлăх классификáцийĕ; **произвести́ классифика́цию грибо́в** кăмпасенé ушкăнласá тух

классифици́ровать (*наст. и будущ.* -рую, -руешь, -руют) *глаг. сов. и несов.* классификацилé, классификáци ту, ушкăнлá; **классифици́ровать насеко́мых** хурт-кăпшанкá классификацилé

класси́ческий *прил.*, **класси́чески** *нареч.* **1.** классици́зм -ĕ; **класси́ческое иску́сство** классици́зм ýнĕрĕ **2.** клáссик -ĕ, клáссика -ĕ; **класси́ческая литерату́ра** клáссика литературú **3.** (*син.* типúчный, характéрный) кăтартýллă; **класси́ческий приме́р** кăтартýллă тĕʹслĕх

кла́ссный *прил.* **1.** класс -ĕ; **кла́ссный журна́л** класс журнáлĕ **2.** (*син.* замечáтельный) чáплă, пахá, пúтĕ лáйăх; **кла́ссный хоккеи́ст** чáплă хоккеúст

кла́ссовый *прил.* класс; **кла́ссовые интере́сы рабо́чих** рабочисéн класс интересĕсéм

класть (*наст.* кладу́, кладёшь, кладу́т; *повел. ф.* клади́; *прич. действ. наст.* кладу́щий, *прош.* кла́вший; *деепр.* кладя́) *глаг. сов.* **1.** *кого-что* (*син.* помеща́ть) хур, хыв, выртта́р; **на́до класть ве́щи на ме́сто** япаласене́ вырӑна́ хура́с пула́ть; **класть де́ньги в банк** укçана́ банка́ хур **2.** *что* (*син.* возводи́ть) хыв, купала́; **класть кирпи́чную сте́ну** ки́рпĕч стена́ купала́ ◆ **класть нача́ло** пуçла́, пуçа́р; **класть жизнь** пурнăçа́ пар, пуçа́ хур (*çапăçса*); **класть я́йца** çăмарта́ ту (*кайăксем çинчен*); шăрка́ хыв *(хурткӑпшанкӑ çинчен);* **класть резолю́цию** йышăну́ çыр (*документ çине*); **класть все си́лы** пĕ ´тĕм вăйра́н тă ´рăш; **класть покло́ны** пуççа́п (*турра кĕлĕ туса*)

клева́ть (*наст.* клюю́, клюёшь, клюю́т; *повел. ф.* клюй; *прич. действ. наст.* клюю́щий, *прош.* клева́вший; *деепр.* клюя́) *глаг. несов.* **1.** *кого-что* сăх (*сăмсапа*); сăхса́ çи; **ку́ры клюю́т зерно́** чăхсе́м тырӑ сăхса́ çиéççĕ **2.** турт, сăх (*пулă çинчен*); **ры́ба хорошо́ клюёт у́тром** пу́лă ирхине́ ла́йăх турта́ть

кле́вер (-а) *сущ. муж.* кле́вер, ка́йăк пу́çĕ (*выльăх апачĕлĕх курăк*); **по́ле под кле́вером** кле́вер пусси́

клевета́ (-ы́) *сущ. жен.* эле́к, çăхав, чу́хă; **распространя́ть клевету́** эле́к сар; **возводи́ть клевету́** элекле́, чух, çăхав пар

клевета́ть (*наст.* -ещу́, -е́щешь, -е́щут; *повел. ф.* -ещи́; *прич. действ. наст.* -е́щущий, *прош.* -ета́вший; *деепр.* -еща́) *глаг. несов., на кого-что* элекле́, çăх, чух, эле́к сар, çăхав ту; **на него́ клеве́щут напра́сно** ун çинче́н сăлтавсăра́х эле́к сара́ççĕ

клеветни́к (-а́) *сущ. муж.*, **клеветни́ца** (-ы) *жен.* эле́кçĕ, çăхавçă, чу́хăçă

клеёнка (-и) *сущ. жен.* клеёнка (*шыв яман сĕтел çитти*); **накры́ть стол клеёнкой** сĕте́л çине́ клеёнка сар

кле́ить (*наст.* кле́ю, кле́ишь, кле́ят; *повел. ф.* клей; *прич. действ. наст.* кле́ящий, *прош.* кле́ивший; *прич. страд. прош.* кле́енный; *деепр.* кле́я) *глаг. несов., что* çыпăçта́р, çилĕмле́, çи́лĕм сĕр; çыпăçтарса́ ту; **кле́ить конве́рты** конвертсе́м çыпăçтарса́ ту

клей (-я, о кле́е, на клею́) *сущ. муж.* çи́лĕм; **столя́рный клей** йы́вăç çи́лĕмĕ; **рези́новый клей** рези́на çи́лĕмĕ; **кле́ить кле́ем** çилĕмпе́ çыпăçта́р

кле́йкий *прил.* (*син.* ли́пкий) çи́лĕмлĕ, çы́пçăнчăк, çыпçăнака́н, çыпăçака́н; **кле́йкая ле́нта** çы́пçăнчăк хăю́

клейми́ть (*наст.* -млю́, -ми́шь, -мя́т; *прич. действ. наст.* -мя́щий, *прош.* -ми́вший; *прич. страд. прош.* -мённый; *деепр.* -мя́) *глаг. несов., кого-что* **1.** клемеле́, тăмхала́; па́ллă ту, клеме́ çап, тăмха́ ларт; **клейми́ть скот** выльăха́ клеме́ çап (*палламалли ӳкерчĕк хыв*) **2.** (*син.* обличать) питле́, намăслантар; **клейми́ть позо́ром** на́мăс ту, намăса́ кăлар

клеймо́ (-а́) *сущ. сред.; множ.* **кле́йма** (клейм, кле́ймам) клеме́, тăмха́, па́ллă; **клеймо́ на скоти́не** вы́льăх çинчи́ клеме́; **поста́вить клеймо́** клеме́ çап, тăмха́ ларт; **клеймо́ позо́ра** на́мăс палли́

кле́йстер (-а) *сущ. муж.* крахма́л çи́лĕмĕ

кле́тка[1] (-и) *сущ. жен.* **1.** чи́тлĕх; **посади́ть пти́цу в кле́тку** кайăка́ читлĕхе́ хуп **2.** тăваткал, кле́тка (*йĕрлесе тунă тăваткал ӳкерчĕк*); **тетра́дь в кле́тку** кле́ткăллă тетра́дь ◆ **грудна́я кле́тка** кă´кăр кăшка́рĕ

кле́тка[2] (-и) *сущ. жен.* кле́тка *(организмăн чи пĕчĕк пайĕ)*; **расти́тельные кле́тки** ӳсе́н-тăра́н клеткисе́м

клетча́тка (-и) *сущ. жен.* (*син.* целлюло́за) клетча́тка *(ӳсен-тăран хуппинчи тĕп япала)*

кле́тчатый *прил.* кле́ткăллă, тăваткáл кӳçлă; **кле́тчатая ткань** тăваткáл кӳçлă пусмá

клешня́ (-и́) *сущ. жен.; множ.* **клешни́** (-е́й) хáчă, хы́пкăч; **клешни́ ра́ка** рак хаччисе́м

клещ (-á) *сущ. муж.* cắвăс; **в те́ло впи́лись клещи́** ӳте́ cắвăссе́м тắрăннă

кле́щи (-е́й) *и* **клещи́** (-е́й) *сущ. множ.* (*син.* щипцы́) хы́пкăч, хĕ́скĕч, *клещ*е́; **кузне́чные клещи́** ти́мĕрçĕ хĕ́скĕчĕ ◆ **клеща́ми сло́ва не вы́тянешь** пусахласá та калаттарайма́стăн

клён (-а) *сущ. муж.* вĕрене́; **клён америка́нский** Аме́рика вĕрени́; **ли́стья клёна** вĕрене́ çулçисе́м

клёст (клеста́) *сущ. муж.* кӳкăр сăмсá (*кайăк*)

клёцки (-цек) *сущ. множ.; един.* **клёцка** (-и) çăмáх; **пшени́чные клёцки** ту́лă çăмáхĕ; **суп с клёцками** çăмáх яшки́

клие́нт (-а) *сущ. муж.,* **клие́нтка** (-и) *жен.* клие́нт (*тавар туянакан е йăла учрежденийĕсен пулăшăвĕпе усă куракан*); **клие́нты парикма́херской** парикмáхерски клиенчĕсе́м

кли́макс (-а) *и* **климакте́рий** (-я) *сущ. муж.* кли́макс (*ватăлнă май арлăх хевти сӳнсе пыни*)

кли́мат (-а) *сущ. муж.* кли́мат (*пĕр-пĕр вырăнти çанталăкăн янăхи уйрăмлăхĕсем*); **континента́льный кли́мат** континентлá кли́мат (*çулла шăрăх, хĕлле шартлама сивĕ пулаканни*); **уме́ренный кли́мат** виçе́ллĕ кли́мат; **здоро́вый кли́мат** сы́влăхшăн ӳсăллă кли́мат

климати́ческий *прил.* кли́мат -ĕ; **климати́ческие поя́са** кли́мат тăрăхĕсе́м; **климати́ческие осо́бенности** кли́мат уйрăмлăхĕсе́м

клин (-а) *сущ. муж.; множ.* **кли́нья** (-ьев) са́вăл; **дубо́вый клин** юма́н са́вăл; **вбить клин** са́вăл çап ◆ **борода́ кли́ном** шĕ́вĕр суха́л; **свет не кли́ном сошёлся** тĕнчĕ хĕ́сĕр мар (*ĕçе тĕрлĕ майпа татса пама пулни çинчен*); **Клин кли́ном** *погов.* Савăлá савăлпá çапсá кăлараççĕ; **ози́мый клин** кĕрхи́ ты́рă пусси́

кли́ника (-и) *сущ. жен.* кли́ника (*чирлĕ çынсене сыватнипе пĕрлех студентсене те вĕрентекен, тĕнчев ĕçĕ тăвакан больница)*

клир (-а) *сущ. муж.* чиркӳ́ çыннисе́м, пуп тавра́шĕ

кли́рос (-а) *сущ. муж.* кли́рос (*христиан чиркĕвĕнче хор тăракан вырăн*)

кли́чка (-и) *сущ. жен.* ят (*выльăха параканни*); хушмá ят (*çынна параканни*); **соба́ка по кли́чке Ша́рик** Ша́рик я́тлă йы́тă; **у во́ра была́ кли́чка Во́рон** вắррăн хушмá я́чĕ Çăхáн пу́лнă

клок (-á) *сущ. муж.; множ.* **кло́чья** (-ьев) *и* **клоки́** (-о́в) **1**. пайăркá, тắлăм; **клок ше́рсти** çăм пайăркú, тắлăм **2**. тáтăк, тáтăк-кĕ́сĕк; **оде́жда разо́рвана в кло́чья** тумтире́ тáтăк-кĕ́сĕк тӳнă

клоп (-á) *сущ. муж.* хăнкăлá; **выводи́ть клопо́в** хăнкăлá пĕтĕр

кло́ун (-а) *сущ. муж.* кло́ун (*цирк-ри мыскараçă артист)*

клуб[1] (-а) *сущ. муж.; множ.* **клу́бы** (-ов) **1**. клуб (*культура учрежденийĕ*); **се́льский клуб** ялти́ клуб **2.** клуб, пĕрлешӳ́; **клуб люби́телей кни́ги** кĕнеке́ юратакансе́н пĕрле́шĕвĕ

клуб[2] (-а) *сущ. муж.; множ.* **клубы́** (-о́в) каплáм; **поднима́ются клубы́ ды́ма** тĕ́тĕм палкасá çĕкленéт

клу́бень (-бня) *сущ. муж.* парáнкă, çи́мĕç *(çĕр айĕнче чăмăртанни);* **клу́бни карто́феля** çĕр улми́ паранкисе́м

клуби́ться *1 и 2 л. не употр.* (*наст.* -и́тся, -я́тся; *прич. действ. наст.* -я́щийся, *прош.* -и́вшийся; *деепр.* -я́сь) *глаг. несов.* (*син.* вздыма́ться) мăкăрлáн, капламлáн, палкасá тăр; **над доро́гой клуби́тся пыль** çул çи́йĕн тусáн мăкăрланáть

клубни́ка (-и) *сущ. жен.* çĕр çырлú; **садо́вая клубни́ка** пахчá çĕр çырлú; **компо́т из клубни́ки** çĕр çырлú компóчĕ

клубни́чный *прил.* çĕр çырлú -ĕ; **клубни́чное варе́нье** çĕр çырлú варéнийĕ

клубо́к (-бкá) *сущ. муж.* çăмхá; **клубо́к шерстяны́х ни́ток** çăм çип çăмхи́ ◆ **свернýться клубко́м** хутлансá вырт

клýмба (-ы) *сущ. жен.* чечéк йăрáнĕ; **разби́ть клýмбы пе́ред до́мом** çурт умĕнчĕ чечéк йăранĕсéм ту

клык (-á) *сущ. муж.* асáв шăл, асáв; **клыки́ во́лка** кáшкăр асавĕсéм

клюв (-а) *сущ. муж.* сăмсá (*кайăксен*); **клюв петуха́** автáн сăмси́; **дя́тел долби́т клю́вом де́рево** улá таккá сăмсипé йывăçá таккáть

клю́ква (-ы) *сущ. жен.* шур çырлú; **идти́ по клю́кву** шур çырлú пуçтармá кай

ключ[1] (-á) *сущ. муж.* **1.** ýçă, çăраççи́; **ключ от две́ри́** áлăк çăраççи́йĕ; **свя́зка ключе́й** çăраççи́ çыххи́ **2.** ýçă, ýçкăч; **га́ечный ключ** гáйка ýçкăчĕ **3.** (*син.* разгáдка) тýпсăм, тýпкăч; **ключ к ши́фру** шифр тýпкăчĕ ◆ **ключ к успе́ху** ắнăçлăх ни́кĕсĕ; **стро́ить дом под ключ** çуртá пĕтĕмпéх тусá çитéр

ключ[2] (-á) *сущ. муж.* (*син.* родни́к) çăлкýç; **под горо́й бьют ключи́** сăрт айĕнчé çăлкуççéм юхсá тăрáççĕ

ключи́ца (-ы) *сущ. жен.* йĕтéс шăмми́ (*майпа кăкăр хушшинчи*)

клю́шка (-и) *сущ. жен.* клю́шка (*хоккеистсен вăйă хатĕрĕ*)

кля́нчить (*наст.* -чу, -чишь, -чат) *глаг. несов., что* (*син.* выпрáшивать) кĕлé, тархаслá, йăлăнсá ыйт; **кля́нчить де́ньги** укçá йăлăнсá ыйт

кля́сться (*наст.* кляну́сь, кляне́шься, кляну́тся; *прош.* кля́лся, кляла́сь, кляло́сь *и* кля́лось, *множ.* кляли́сь *и* кля́лись; *повел. ф.* кляни́сь, кляни́тесь; *прич. действ. наст.* кляну́щийся, *прош.* кля́вшийся; *деепр.* кляня́сь) *глаг. несов., в чем, с неопр. ф. или с союзом «что»* тупá ту, сăмáх пар; **кля́сться в ве́рности ро́дине** тăвáн çĕршывá парăнсá тăмá тупá ту; **кля́сться в ве́чной любви́** ĕ́мĕр юратмá сăмáх пар

кля́тва (-ы) *сущ. жен.* (*син.* обещáние, увере́ние) тупá; сăмáх пани́, тупá туни́; **дать кля́тву** тупá ту

кни́га (-и) *сущ. жен.* **1.** кĕнекé (*вуламалли*); **де́тские кни́ги** ачá-пăчá кĕнекисéм; **кни́га стихо́в** сắвă кĕнеки́; **сиде́ть за кни́гой** кĕнекé тытсá лар; **писа́тель изда́л но́вую кни́гу** çыравçă çĕ́нĕ кĕнекé пичетлесé кăлáрнă **2.** кĕнекé (*ĕç çинчен çырса пымалли*); **бухга́лтерские кни́ги** бухгалтéри кĕнекисéм; **кни́га жа́лоб и предложе́ний** жалобăсемпé сĕнýсéн кĕнеки́ ◆ **ему́ и кни́ги в ру́ки** ку ĕç шăпáх ун валли́

кни́жный *прил.* кĕнекé -ĕ; **кни́жная по́лка** кĕнекé çý́лĕкĕ; **кни́жный магази́н** кĕнекé магази́нĕ

кно́пка (-и) *сущ. жен.* **1.** кнóпка (*пысăк шлепкеллĕ кĕске пăта*); **канцеля́рские кно́пки** канцеля́ри кнопкисéм **2.** (*син.* застéжка) кнóпка, тýмé, çéкĕл; **перча́тки на кно́пках** кнóпкăллă перчетké **3.** кнóпка, пýскăч (*сигнал памалли, аппарата ĕçлеттермелли*); **кно́пка дверно́го звонка́** áлăк шăнкăрáвĕн пýскăчĕ

кнут (-á) *сущ. муж.* пýшă, чăпăркká; **ремённый кнут** чĕн пýшă; **подгоня́ть ло́шадь кнуто́м** лашанá пушăпá хăвалá

кня́жество (-а) *сущ. сред.* кня́жество (*князь тытса тăракан ҫĕршыв*)

князь (-я) *сущ. муж.; множ.* **князья́** (-зе́й) князь *(патшалăха е унăн пайне тытса тăнă феодал титулĕ)*

кобе́ль (-я́) *сущ. муж.* (*ант.* су́ка) аҫа́ йы́тă

кобы́ла (-ы) *сущ. жен.* (*ант.* жеребе́ц) кĕсре́; **поро́дистая кобы́ла** ăрáтлă кĕсре́; **кобы́ла ожереби́лась** кĕсре́ хăмлáнă

кова́рный *прил.* (*син.* веролóмный), **кова́рно** *нареч.* чеé, ултáвлă; **кова́рные за́мыслы** чеé шухăшсéм; **кова́рные де́йствия** ултáвлă ĕҫсéм

кова́ть (*наст.* кую́, куёшь, кую́т; *повел. ф.* куй; *прич. действ. наст.* кую́щий, *прош.* кова́вший; *прич. страд. прош.* ко́ванный; *деепр.* куя́) *глаг. несов.* **1.** *что* туптá, шакká; **кова́ть желе́зо на нако́вальне** тимĕ́ре сунтáл çинчĕ туптá **2.** *кого* таканлá, такáн çап; **ло́шади не ко́ваны** лашасенé таканлáмăн

ковёр (ковра́) *сущ. муж.* кави́р, палáс; **домотка́ный ковёр** килтé тĕ́ртнĕ кави́р; **постели́ть на́ пол ковёр** урайнé кави́р сар

ковш (-а́) *сущ. муж.* áлтăр; **зачерпну́ть ковшо́м во́ду** алтăрпá шыв ăссá ил; **ковш экскава́тора** экскавáтор ắскăчĕ

ковы́ль (-я́) *сущ. муж.* кăлкáн *(çеҫен хир курăкĕ)*

когда́ *нареч. и союзн. сл.* хăҫáн; чух, чухнé; вăхăтрá; -сан (-сен); **Когда́ э́то бы́ло**? Хăҫáн пу́лнă ку?; **когда́ расте́ет снег** юр ирĕлсéн; **Был уже́ ве́чер, когда́ мы пришли́ из ле́са** Эпи́р вăрмантáн тáврăннă чухнé каҫ пу́лнăччĕ ĕ́нтĕ ◆ **когда́ ещё бу́дет э́то** ку тахҫáн пулáть-ха; **когда́ так** аплá пулсáн; **когда́ как** хăҫáн мĕнлé

когда́-нибудь, когда́-либо *нареч.* хăҫáн та пули́н; **когда́-нибудь он поймёт свою́ оши́бку** хăҫáн та пули́н вăл хă ́йĕн йăнăшнé ăнлансá и́лĕ

когда́-то *нареч.* тахҫáн ĕ́лĕк; **когда́-то здесь был лес** тахҫáн ĕ́лĕк кунтá вăрмáн пу́лнă

ко́готь (ко́гтя) *сущ. муж.; множ.* **ко́гти** (когтéй) чĕрнé (*чĕр чунăн, кайăкăн*); **ко́гти я́стреба** хурчкá чĕрни́

код (-а) *сущ. муж.* код (*информацие вăрттăн пĕлтермелли ятарлă паллăсем);* **сообщи́ть ко́дом** кодпá пĕлтéр; **смени́ть код** кодá улăштáр

ко́довый *прил.* код -ĕ; ко́длă; **ко́довый замо́к** ко́длă çăрá

ко́е-где́ *нареч.* унтá-кунтá, тĕл-тĕл, вы́рăн-вы́рăн; **ко́е-где́ ещё лежи́т снег** тĕл-тĕ́л юр выртáть-ха

ко́е-ка́к *нареч.* **1.** (*син.* плóхо, небре́жно) вăли́-шали́, япăхрáх, ти́мсĕр, тирпéйсĕр; **рабо́тать ко́е-ка́к** вăли́-шали́ ĕçлé **2.** (*син.* éле-éле) арáн, арáн-арáн, хĕнпé; **мы ко́е-ка́к перебра́лись че́рез ре́ку** эпи́р юхáн шыв ýрлă арáн-арáн каçкалăрăмăр

ко́е-како́й (ко́е о како́м) *местоим. неопр.* вăл-кý, хăш-пĕ́р; **купи́ть ко́е-каки́х това́ров** вăл-кý тавáра туя́н

ко́е-когда́ *нареч.* (*син.* иногдá, изредкá) хушăрáн, сайрарáн, тéпĕр чухнé; **и о́сенью ко́е-когда́ выпада́ют я́сные дни** кĕркуннé те хушăрáн уя́р кунсéм пулáççĕ

ко́е-кто́ (ко́е-кого́, ко́е к кому́) *местоим. неопр.* хă ́шĕ-пĕри́, хă ́шĕхă ́шĕ; **ко́е-кому́ мы об э́том сообщи́ли** хă ́шĕ-пĕрисенé эпи́р кун çинчéн пĕлтéрнĕ

ко́е-куда́ *нареч.* унтá-кунтá; **мне на́до съе́здить ко́е-куда́** мáнăн унтá-кунтá кайсá килéс пулáть

ко́е-что́ (ко́е-чего́, коé в чём) *местоим. неопр.* вăл-кý; **поговори́ть ко́е о чём** вăл-кý çинчéн калаҫсá ил

ко́жа (-и) *сущ. жен.* **1.** тир (*чĕрĕ*

ӳт çинчи), ӳт-ти́р; **гла́дкая ко́жа** яка́ ӳт-ти́р; **цвет ко́жи** тир тӗ́сӗ; **ра́нка на ко́же** ӳт-ти́р çинчӗ́ суран 2. сӑра́н, тир, ту́нӑ тир; **теля́чья ко́жа** пӑру́ ти́рӗ; **чемода́н из свино́й ко́жи** сысна́ сӑра́н чӑмата́нӗ ◆ **ко́жа да ко́сти** тирӗпе́ шӑммӗ́ кӑна́ ю́лнӑ; **лезть из ко́жи** пи́тӗ тӑ́рӑш

ко́жаный *прил.* сӑра́н ...; сӑра́н -ӗ; **ко́жаный портфе́ль** сӑра́н портфе́ль

кожура́ (-ы́) *сущ. жен.* хӳпӑ, хуппи́ (*çимӗҫсен*); **карто́фельная кожура́** çӗр улми́ хуппи́

коза́ (-ы́) *сущ. жен.; множ.* **ко́зы** (коз, ко́зам) качака́; **ди́кие ко́зы** хир качакисе́м; **держа́ть коз** качака́ уса́

козёл (козла́) *сущ. муж.* **1.** качака́ таки́, каҫтаки́ (*килти*); **рога́ козла́** каҫтаки́ мӑйраки́ **2.** качака́ (*ирӗкри*); **го́рный козёл** ту качаки́ **3.** качака́ (*вӑйӑ*); **забива́ть козла́** качакалла́ выля́ (*домино вӑййинче*) ◆ **от него́ как от козла́ молоко́** унра́н ним усси́ те çук; **козёл отпуще́ния** çын а́йӑпӗшӗн хур курака́н

ко́зий *прил.* качака́ -ӗ; **ко́зье молоко́** качака́ сӗ́чӗ

козлёнок (-нка) *сущ. муж.; множ.* **козля́та** (-я́т) качака́ путекки́

козырёк (-рька́) *сущ. муж.* карттӳ́с сӑмси́ ◆ **взять под козырёк** саламла́, чыс ту *(алла карттус сӑмси патне тытса)*

козырно́й *прил.* ко́зырь ...; ко́зырь -ӗ; **козырно́й вале́т** ко́зырь вале́т

ко́зырь (-я) *сущ. муж.* ко́зырь (*карт вӑййинчи аслӑ тӗс*); **кре́сти ко́зыри** хӗре́с ко́зырь; **бить ко́зырем** козырьпе́ вит ◆ **ходи́ть ко́зырем** янкӑсла́н, каҫрашкала́н

ко́йка (-и) *сущ. жен.; множ.* **ко́йки** (ко́ек, ко́йкам) ко́йка, вы́рӑн, крава́ть; **больни́чные ко́йки** больницӑри́ вырӑнсе́м

кока́рда (-ы) *сущ. жен.* кока́рда (*формӑллӑ карттус, çӗлӗк умне çирӗплетекен значок)*

лён (льна) *сущ. муж.* йĕ́тĕн; **возде́лывать лён** йĕ́тĕн аксӑ ту; **изде́лия из льна** йĕ́тĕн пусма́ тавăр

лётный *прил.* вĕçе́в -ĕ; **лётная шко́ла** вĕçе́в шкӳлĕ; **лётная пого́да** вĕçме́ ма́йлă çанта́лăк

лётчик (-а) *сущ. муж.*, **лётчица** (-ы) *жен. (син.* пило́т) лётчик, вĕçе́вçĕ; **лётчик-истреби́тель** истреби́тель лётчик; **лётчик-спортсме́н** спортсме́н лётчик; **вое́нный лётчик** çар лётчикĕ

лжи́вый *прил.*, **лжи́во** *нареч.* **1.** (*ант.* правди́вый; и́скренний) суя́, суя́ллă, ултăвлă; **лжи́вый челове́к** суе́çĕ, суякка́н çын; **лжи́вая улы́бка** ултăвлă кӳлă

ли, ль 1. *частица вопросит.* -и, -ши; **Зна́ешь ли ты его́?** Э́сĕ ӑна́ пĕлĕ́тĕн-и? **2.** *союз повторяющийся* -и ..., -и; **ра́но ли, по́здно ли** малара́х-и, каяра́х-и

ли́бо *союз* е; **сего́дня ли́бо за́втра** паян е ырăн; **ли́бо я, ли́бо ты** е ӗпĕ, е ӗсĕ

ли́вень (ли́вня) *сущ. муж.* шăлкăм çӳмăр, вắйлă çӳмăр

ли́вер (ли́вра) *сущ. муж.* ӳпке́-пĕве́р; **пиро́г с ли́вером** ӳпке́-пĕве́р кӳкăлĕ

ли́верный *прил.* ӳпке́-пĕве́р -ĕ; **ли́верная колбаса́** ӳпке́-пĕве́р кăлпасси́йĕ

ли́дер (-а) *сущ. муж.* ертӳ́çĕ, пӳçлăх, пуç; **ли́дер па́ртии** па́рти ертӳçи́

лиза́ть (*наст.* лижу́, ли́жешь, ли́жут; *повел. ф.* лижи́; *прич. действ. наст.* ли́жущий; *прош.* лиза́вший; *деепр. не употр.) глаг. несов., кого-что* çула́; **лиза́ть языко́м ло́жку** кашӑка́ чĕлхепе́ çула́; **ко́шка ли́жет котёнка** кушӑ́к хӑ́йĕн çуринĕ çула́ть

ликвида́ция (-и) *сущ. жен.* **1.** (*син.* упразднĕ́ние) пĕтерни́, хупни́, салатса́ яни́; **ликвида́ция фи́рмы** фирмăна́ хупни́ **2.** (*ант.* уничтожĕ́ние) пĕтерни́, тĕп туни́, тăнч туни́; сирни́; **ликвида́ция негра́мотности** хут пĕлменлĕхе́ пĕтерни́; **ликвида́ция после́дствий ава́рии** ава́ри кӳ́нĕ аркăнăва́ сирни́

ликвиди́ровать (*наст. и будущ.* -рую, -руешь, -руют) *глаг. сов. и несов., кого-что (син.* уничто́жить) пĕте́р, тĕп ту, тăнч ту; **ликвиди́ровать долги́** парăмсенĕ татса́ пĕте́р

лими́т (-а) *сущ. муж.* лими́т, чи́кĕ (*укçа-тенкĕ, пурлăх илме е ĕç тума палăртнă виçе*); **лими́т на то́пливо** то́пливо лими́чĕ; **превы́сить лими́т** лимитра́н ирт

лимо́н (-а) *сущ. муж.* лимо́н (*цитрус йышши йӳçек çимĕç*); **пить чай с лимо́ном** лимонпа́ чей ĕç

лимона́д (-а) *сущ. муж.* лимона́д (*лимонлă ĕçме*); **буты́лка лимона́да** пĕр кĕленче́ лимона́д; **пить лимона́д** лимона́д ĕç

лингви́ст (-а) *сущ. муж.*, **лингви́стка** (-и) *жен. (син.* языкове́д) чĕлхе́çĕ; **выдаю́щиеся ру́сские лингви́сты** чапа́ тӳхнă вы́рăс чĕлхеçисе́м

лингви́стика (-и) *сущ. жен. (син.* языкозна́ние) чĕлхе́ пĕ́лĕвĕ; **чува́шская лингви́стика** чăваш чĕлхе́ пĕ́лĕвĕ

лине́йка (-и) *сущ. жен.* **1.** лине́йка (*тӳрĕ планка*); **провести́ прямо́ю по лине́йке** линейкăпа́ тӳ́рĕ йĕр турт **2.** (*син.* шере́нга) йĕркĕ, рет; **вы́строиться в лине́йку** ре́тĕн тăрса́ тух (*пĕр-пĕринпе юнашар)* **3.** (*син.* сбор) лине́йка (*стройра тăракансен уяв пухăвĕ*); **лине́йка по слу́чаю откры́тия ла́геря** ла́герь ӳçăлнă ятпа́ ирттéрнĕ лине́йка

ли́ния (-и) *сущ. жен.* **1.** *(син.* черта́) йĕр, ли́ни; **прямáя ли́ния** тӳ́рĕ

йĕр; **паралле́льные ли́нии** паралле́льлĕ йĕрсе́м; **провести́ ли́нию** йĕр турт **2.** çул, ли́ни; **ли́ния желе́зной доро́ги** чугу́н çул ли́нийĕ; **возду́шные ли́нии** сы́влăш çулĕсе́м; **ли́нии электропереда́чи** электри́чество линийĕсе́м **3.** çул-йĕ́р, тĕллĕ́в; **ли́ния поведе́ния** ха́рпăр хăйне́ тытăкаламаллѝ тĕллĕ́в; **ли́ния на разви́тие ры́ночных отноше́ний** ры́нок хутшăнăвĕсене́ аталантармаллѝ çул-йĕ́р ◆ **ли́ния горизо́нта** куç ку́рăм чиккѝ; **передова́я ли́ния** малтѝ позицисе́м (*фронтра*); **родна́ по же́нской ли́нии** а́рăм енчѝ хурăнта́ш; **он гнёт свою́ ли́нию** вăл хăйĕннéх перéт; **идти́ по ли́нии наиме́ньшего сопротивле́ния** çắмăл çул шырá

линко́р (-а) *сущ. муж. (сокр.*: лине́йный кора́бль) линко́р (*пысăк, лайăх хĕç-пăшалланнă çар карапĕ*)

лино́леум (-а) *сущ. муж.* лино́леум (*урайне сармалли яка материал*)

линь (-я́) *сущ. муж.* хура́ кара́с (*кӳлĕ пулли*)

линя́ть *1 и 2 л. не употр. (наст.* -я́ет, -я́ют; *прич. действ. наст.* -я́ющий) *глаг. несов.* **1.** тĕссĕрлéн, шупкáл, тĕс çухáт; **э́тот материа́л бы́стро линя́ет** ку пусмá часáх тĕснé çухатáть **2.** йắптăх тăк (*чĕр чунсем çинчен*); тĕк тăк (*кайăксем çинчен*); тир улăштáр (*çĕленсем, раксем çинчен*)

ли́па (-ы) *сущ. жен.* çăкá; **ли́стья ли́пы** çăкá çулçисéм; **ли́па цветёт** çăкá чечекé лáрнă

ли́пкий *прил.* çы́пçăнчăк, çăрá; **ли́пкая ле́нта** çы́пçăнчăк хăю́ (*шăна пĕтермелли*); **ли́пкая грязь** çăрá пы́лчăк

ли́повый *прил.* çăкá -ĕ; **ли́повый цвет** çăкá чечéкĕ; **ли́повый мёд** çăкá пы́лĕ

ли́рика (-и) *сущ. жен.* ли́рика (*илемлĕ литература тĕсĕ; вăл çын кăмăлтуйăмне сăнарлăн палăртать*); **любо́вная ли́рика** юратӳ лирикѝ

лири́ческий *прил.*, **лири́чески** *нареч.* **1.** ли́рика -ĕ; ли́рикăллă; **лири́ческие стихи́** ли́рикăллă сăвăсе́м **2.** çéпĕç, ачáш, çемçé; **лири́ческое настрое́ние** ачáш кắмăл

лиса́ (-ы́) *сущ. жен.; множ.* **ли́сы** (лис, ли́сам) *и* **лиси́ца** (-ы) *жен.* **1.** ти́лĕ; **ры́жая лиса́** хĕ́рлĕ ти́лĕ; **чёрно-бу́рая лиса́** хура́ хắмăр ти́лĕ; **хи́трый, как лиса́** ти́лĕ пек чеé; **охо́титься на лис** ти́лĕ сунарнé çӳрé **2.** (*син.* хитрéц, льстец) йăпăлтѝ, чеé çын

лиси́чки (-чек) *сущ. множ.; един.* **лиси́чка** (-и) *жен.* сар кăмпá; **жа́рить лиси́чки** сар кăмпá ăшалá

лист[1] (-á) *сущ. муж.; множ.* **ли́стья** (-ьев) çу́лçă; **ли́стья берёзы** хӳ́рăн çулçисéм; **лист капу́сты** купăстá çулçи́; **ли́стья опада́ют** çу́лçă тăкăнáть

лист[2] (-á) *сущ. муж.; множ.* **листы́** (-о́в) листá; **лист бума́ги** хут листи́; **лист кро́вельного желе́за** шуç ти́мĕр листи́ ◆ **похва́льный лист** мухтáв листи́; **печа́тный лист** пичéт листи́ (*кăларăмăн 60x90 см пысăкăш виçи*); **а́вторский лист** а́втор листи́ (*текст калăпăшĕн 40 пин сас палли чухлĕ виçи*)

листа́ть (*наст.* -а́ю, -а́ешь, -а́ют) *глаг. несов.* листалá, уç, уçкалá, уçсá хуп; **листа́ть кни́гу** кĕнекé уçкалá

ли́ственница (-ы) *сущ. жен.* ли́ственница, çемçé чắрăш (*чăрăш евĕрлĕ, анчах кĕркунне лăссине тăкакан йывăç)*

ли́ственный *прил. (ант.* хво́йный) çу́лçăллă; **ли́ственные поро́ды дере́вьев** çу́лçăллă йы́вăç тĕсĕсéм

листо́вка (-и) *сущ. жен.* листо́вка (*агитаци материалĕ е хыпар çаннă хут листи*); **предвы́борные листо́вки** суйлáв уменхи́ листовкăсéм

листопа́д (-а) *сущ. муж.* çу́лçă тăкăнни́; **пора́ осе́ннего листопа́да** кĕркунне́ çу́лçă тắкăннă вắхăт

литерату́ра (-ы) *сущ. жен.* **1.** литерату́ра *(сăмахпа сăнарлас ăсталăх)*; **тебри́я литерату́ры** литерату́ра тебри́йĕ **2.** литерату́ра *(илемлĕ сăмахлăх хайлавĕсем: поэзи, проза, драма)*; **худо́жественная литерату́ра** илéмлĕ литерату́ра; **де́тская литерату́ра** ачá-пăчá литературú **3.** литерату́ра *(пĕлӳлĕхĕн пĕр-пĕр енĕпе çырнă кĕнекесем)*; **сельскохозя́йственная литерату́ра** ял хуçáлăх литературú; **полити́ческая литерату́ра** полúтика литературú; **нау́чно-популя́рная литерату́ра** ắслăлăх сараканá литерату́ра

литерату́рный *прил.* **1.** литерату́ра -ĕ; çырáвçă -ĕ; **литерату́рное тво́рчество** çырáвçă пултарýлăхĕ; **литерату́рный институ́т** литерату́ра институ́чĕ **2.** литерату́ра -ĕ *(литература чĕлхин нормисемпе килĕшсе тăракан)*; **литерату́рный язы́к** литерату́ра чĕлхú *(халăх чĕлхин сăмах ăстисем якатса пуянлатнă кăтартуллă тĕсĕ)*; **он говори́т не на литерату́рном языке́, а на диале́кте** вăл литерату́ра чĕлхипе́ мар, диалектпá калаçáть

литр (-а) *сущ. муж.* литр *(калăпăш виçи — 1000 кубла см)*; **полтора́ ли́тра** литр çýрă

литурги́я (-и) *сущ. жен.* литурги́ *(христиан чиркĕвĕнчи нумай пайран тăракан чаплă кĕлĕ)*

лить *(наст.* лью, льёшь, льёт; *прош.* лил, лила́, ли́ло, *множ.* ли́ли; *повел. ф.* лей; *прич. действ. наст.* лью́щий, *прош.* ли́вший; *прич. страд. прош.* ли́тый; *деепр. не употр.*) *глаг. несов.* **1.** *что* тăк, яр, юхтáр, сап; **лить во́ду из ведра́** витрерéн шыв юхтáр; **лить слёзы** куççýль тăк **2.** *1 и 2 л. не употр. (син.* течь) тắкăн, тăк, юх, çу; **дождь льёт как из ведра́** çýмăр чĕреслетсé çăвáть

ли́ться *1 и 2 л. не употр. (наст.* льётся, лью́тся; *прош.* ли́лся, лила́сь, лило́сь *и* ли́лось, *множ.* лили́сь *и* ли́лись; *повел. ф.* ле́йся, ле́йтесь; *прич. действ. наст.* лью́щийся, *прош.* ли́вшийся; *деепр. не употр.) глаг. несов.* **1.** юх, тắкăн; **вода́ льётся из кра́на** кранрáн шыв юхáть **2.** янрá, шăрáн; **пе́сня льётся далеко́** юрă инçетé янрáть

лифт (-а) *сущ. муж.* лифт *(çуртăн çýлти хучĕсене хăпартакан механизм)*; **пассажи́рский лифт** пассажúр ли́фчĕ

лихора́дка (-и) *сущ. жен.* сив чир; **страда́ть лихора́дкой** сив чирпе́ аптăрá

лицево́й *прил.* **1.** пит -ĕ; пит-кýç -ĕ; **лицевы́е му́скулы** пит-кýç мускулĕсéм **2. лицево́й счёт** пáйăр счёт, ятлă счёт *(банкра е бухгалтерире уйрăм çын ячĕпе уçни)*; **снять де́ньги с лицево́го счёта** счётрáн укçá ил

лицо́ (-á) *сущ. сред.; множ.* ли́ца (лиц, ли́цам) **1.** пит, сăн-пúт, питкýç; **кру́глое лицо́** çаврá сăн-пúт; **мыть лицо́** пит çу; **мне знако́мо э́то лицо́** ку сăн-питé э́пĕ пĕлéтĕп **2.** çын, этéм; **влия́тельное лицо́** вúтĕмлĕ çын **3.** сăпáт *(грамматикăра)*; **тре́тье лицо́ глаго́ла** глаго́лăн вúççĕмĕш сăпáчĕ ◆ **на одно́ лицо́** кáснă лáртнă, пĕр сắнлă; **показа́ть това́р лицо́м** тавáрăн чăн пахалăхнé кăтáрт; **к лицу́** килĕшéт *(туммтир)*; **он лицо́м в грязь не уда́рит** вăл нáмăс курáс çук

личи́нка (-и) *сущ. жен.* хурт, личúнка; **личи́нка му́хи** шăнá хýрчĕ; **личи́нка ба́бочки** лĕ́пĕш хýрчĕ

ли́чный *прил.*, **ли́чно** *нареч.* **1.** пáйăр, хăй тýнă; хáрпăр хăй тýнă; **под ва́шим ли́чным наблюде́нием** эсúр пáйăррăн асăрхасá тăнипе́; **я ли́чно прове́рил** э́пĕ хам тĕрĕслéрĕм **2.** ýйрăм, хáрпăр; **ли́чное иму́щество** хáрпăр пýрлăхĕ **3. ли́чно** *в знач. частицы* пулсáн; -сан(-сен); **я ли́чно так бы не поступи́л** э́пĕ пулсáн ун пек тýмăттăм ◆ **ли́чное местоиме́ние**

сăпа́т местоиме́нийĕ; **ли́чные фо́рмы глаго́ла** глаго́лăн сăпа́т формисе́м

лиши́ть (*будущ.* лишу́, лиши́шь, лиша́т; *прич. страд. прош.* лишённый) *глаг. сов., кого-что, кого-чего (син.* отня́ть) туртса́ ил; -сăр (-сĕр) хăвăр; **лиши́ть насле́дства** еткере́ туртса́ ил; **лиши́ть свобо́ды** тытса́ хуп; **лиши́ть жи́зни** вĕле́р; **его́ лиши́ли сло́ва на собра́нии** ăна́ пухура́ сăма́х калама́ ча́рнă

лиши́ться (*будущ.* лишу́сь, лиши́шься, лиша́тся; *повел. ф.* лиши́сь, лиши́тесь; *прич. действ. прош.* лиши́вшийся; *деепр.* лиши́вшись) *глаг. сов., кого-чего (син.* потеря́ть, утра́тить) çухáт; -сăр (-сĕр) юл; **лиши́ться иму́щества** пурлăха́ çухáт; **лиши́ться зре́ния** ку́ççăр пул, курми́ пул; **лиши́ться чувств** тăна́ çухáт

ли́шний (*кратк. ф.* ли́шен, ли́шня, ли́шне, *множ.* ли́шни) *прил.*, **ли́шне** *нареч.* **1.** (*син.* избы́точный) ы́тлă, ытлашши́, ытлá; **ли́шние расхо́ды** ытлă тăкáк; **сто рубле́й с ли́шним** çĕр тéнкĕ ытлá; **У меня́ нет ли́шних де́нег!** Ма́нăн ытлашши́ укçá çук! **2.** (*син.* доба́вочный) тéпĕр, тепре́, тата́; **напо́мнить ли́шний раз** тéпĕр хут асá илтéр ◆ **сказа́ть ли́шнее** ки́рлĕ марри́не калá

лишь 1. *частица огранич.* çеç, çех, анчáх, кăна́; **э́то лишь нача́ло** ку пуçла́мăшĕ кăна́-ха; **он ду́мает лишь о себе́** вăл хăй çинчéн çеç шухăшлáть **2.** *союз* -санах (-сенех); **лишь он вошёл, все смо́лкли** вăл пырсá кĕрсенéх пу́рте шăпла́нчĕç

лоб (лба, о лбе́, на лбу́, по́ лбу *и* по лбу́) *сущ. муж.; множ.* **лбы** (лбов) çамкá; **высо́кий лоб** çу́тă çамкá; **намо́рщить лоб** çамкана́ пĕркелé ◆ **на лбу́ написа́но** кĕретéх курăна́ть (*çынăн шухăш-кăмăлĕ*); **сказа́ть в лоб** ту́ ррĕн калá

лови́ть (*наст.* ловлю́, ло́вишь, ло́вят; *прич. страд. наст.* лови́мый; *прич. страд. прош.* ло́вленный; *деепр.* ловя́) *глаг. несов., кого-что* **1.** *(син.* хвата́ть) тыт, ярсá тыт, ярсá ил; **лови́ть руко́й мяч** мечĕкé алăпá тыт **2.** тыт, тытмá çу́ре́; **лови́ть се́тью ры́бу** тетелпé пу́лă тыт; **лови́ть за́йцев** мулкáч тытмá çу́ре́ ◆ **лови́ть удо́бный моме́нт** ма́йлă самáнт кĕт; **лови́ть на лжи** суяпá тыт

лови́ться *1 и 2 л. не употр. (наст.* ло́вится, ло́вятся) *глаг. несов.* кĕр; **ры́ба хорошо́ ло́вится у́тром** пу́лă ирхине́ лáйăх кĕре́т

ло́вкий (*кратк. ф.* ло́вок, ловкá, ло́вко, *множ.* ло́вки *и* ловки́; *сравн. ст.* ло́вче *и* ловчée; *превосх. ст. не употр.) прил.*, **ло́вко** *нареч.* **1.** (*син.* прово́рный, снорови́стый; *ант.* неуклю́жий) й ăрă, çи́вĕч, правý́р, вăр-вáр, çаврăнăçýллă; **ло́вкий ма́льчик** вăр-вáр ача́ **2.** (*син.* хи́трый, изворо́тливый) чеé, хайла́влă; **ло́вкая проде́лка** *чеé хăтланăш*

ло́вкость (-и) *сущ. жен.* йă рăлăх, çи́вĕчлĕх, правý́рлăх, вăр-вáрлăх, çаврăнăçýлăх; **ло́вкость гимна́ста** гимна́ст çаврăнăçýлăхĕ

ло́дка (-и) *сущ. жен.* ки́мĕ; **па́русная ло́дка** пáрăслă ки́мĕ; **рыба́чья ло́дка** пýлăçă кимми́; **ката́ться на ло́дке** *кимĕпе́ я́рăн* ◆ **подво́дная ло́дка** шыв ай ки́мĕ

ло́дырь (-я) *сущ. муж.* каха́л, ная́н, у́рке́нчĕк

ло́жа (-и) *сущ. жен.* ло́жа (*театр залĕн балконĕнчи пу́лмек*); **взять биле́ты в ло́жу** ложăра́ ларма́ билетсéм ил

ло́жка (-и) *сущ. жен.* ка́шăк; **ча́йная ло́жка** чей ка́шăкĕ

ло́жный *прил. (син.* непра́вильный; *ант.* ве́рный), **ло́жно** *нареч.* суя́, ульта́влă, чăн мар; **ло́жное изве́стие** суя́ хыпа́р

ложь (лжи, ло́жью, о лжи) *сущ.*

жен., только един. суя́, ултáв, суеçтерýʹ; **говори́ть ложь** суеçтéр; **улича́ть во лжи** суяпá тыт

ло́зунг (-а) *сущ. муж.* ло́зунг (*пĕрпĕр тĕллеве пурнăçлама чĕнекен сăмах çаврăнăшĕ*)

ло́коть (ло́ктя) *сущ. муж.; множ.* **ло́кти** (локтéй) чавсá; **ушиби́ть ло́коть** чавсанá ыраттáр; **класть ло́кти на стол** сĕтелé чавсалансá лар ◆ **кусáть ло́кти** ĕç тухмáншăн пăшăрхáн

лом[1] (-а) *сущ. муж.; множ.* **ло́мы** (-ов) *и* **ломы́** (-о́в) лум; **скáлывать лёд ло́мом** пăрá лумпá кат

лом[2] (-а) *сущ. муж. собир.* вáнчăк; **шоколáдный лом** шоколáд тĕпрéнчĕкĕ, вáнчăк шоколáд; **металли́ческий лом** ти́мĕр-тăʹмăр (*шăратма ямалли*)

ломáть (*наст.* -áю, -áешь, -áют; *прич. страд. прош.* ло́манный) *глаг. несов.* **1**. *что* хуç, ват; **ломáть пáлку** патакá хуç; **ломáть лёд** пăр ват **2**. *что (син.* повреждáть) ват, пăс, çĕʹмĕр; иш; **дéти бы́стро ломáют игрýшки** ачá-пăчá теттесенé часáх ватáть; **ломáть стáрый дом** ки́вĕ пýртé иш **3**. *кого-что (син.* менять) улăштáр, улшăнтáр; **ломáть свою́ жизнь** пурнăçá улшăнтáр; **ломáть стáрые обы́чаи** ки́вĕ йăлá-йĕркенé пăрахăçлá ◆ **ломáть спи́ну** тертленсé ĕçлé; **ломáть гóлову** пуçá ват *(шухăшпа)*; **ломáть коме́дию** ками́т ту, пăлахая пер

ломáться[1] *1 и 2 л. не употр. (наст.* -áется, -áются) *глаг. несов. (син.* разрушáться) хýçăл, ван; **лёд ломáется** пăр ванáть; **то́лстый сук не ломáется** хýлăн турáт хуçăлмáсть

ломáться[2] (*наст.* -áюсь, -áешься, -áются); *повел. ф.* -áйся, -áйтесь; *прич. действ. наст.* -áющийся, *прош.* -áвшийся; *деепр.* -áясь) *глаг. несов. (син.* кривля́ться) курнăçлáн, хуçкалáн, хутахайлáн; **Хвáтит ломáться!** Çи́тĕ курнăçланмá!

ломо́ть (ломтя́) *сущ. муж.; множ.* **ломти́** (-е́й) чĕ́лĕ, кáсăк; **ломо́ть хлéба** çăʹкăр чĕллú; **ломо́ть арбу́за** арбýз кáсăкĕ

лопáта (-ы) *сущ. жен.* кĕреçé; **деревя́нная лопáта** йы́вăç кĕреçé; **копáть лопáтой зéмлю** кĕреçепé çĕр чав ◆ **бородá лопáтой** кĕреçé сухáл

лопáтка (-и) *сущ. жен.* **1**. кĕреçé (*пĕчĕкки*); **дéтская лопáтка** ачá кĕреçи́ **2**. хул калаккú (*çурăмри сарлака шăмă*); **положи́ть на обе лопáтки** çавăрсá çап (*кĕрешсе*)

ло́пнуть (*будущ.* -ну, -нешь, -нут) *глаг. сов.* **1**. *(син.* разорвáться) çýрăл, тáтăл; хаплáт; **водопрово́дная трубá ло́пнула** шыв пăʹрăхĕ çурăлсá кáйнă **2**. путлáн, пĕтсé лар; **банк ло́пнул** банк путлáннă ◆ **моё терпéние ло́пнуло** мáнăн чăʹтăм пĕʹтрĕ; **ло́пнуть со смéха** каçсá кайсá кул

лопу́х (-á) *сущ. муж. (син.* репéйник) хупáх, куршанáк; **ли́стья лопуха́** хупáх çулçисéм

лоскýт (-á) *сущ. муж.; множ.* **лоскуты́** (-о́в) *и* **лоскýтья** (-ев) тáтăк, кáсăк, çĕʹтĕк, тáтăк-кĕʹсĕк; **лоскýт ткáни** пусмá тáтăкĕ; **лоскýтья облако́в** таткалáнчăк пĕлĕтсéм

лось (-я) *сущ. муж.; множ.* **ло́си** *(*-е́й *и* -ей*)* пăшú; **рогá ло́ся** пăшú мăйракú

лотере́йный *прил.* лотерéя -ĕ; **лотере́йный биле́т** лотерéя билéчĕ

лотере́я (-и) *сущ. жен.* лотерéя (*укçа е япала выляса илмелли вăйă*); **спортúвная лотере́я** спорт лотерейú; **безпро́игрышная лотере́я** çухатýсăр лотерéя *(кашни билет çине выляв тухаканни)*

лото́ *сущ. нескл. сред.* лото́ (*сĕтел çинчи вăйă*); **игрáть в лото́** лотолла́ выля́

лохмáтый *прил. (син.* космáтый) çăмламáс, çýçлемéс, лапсăркка́; **лохмáтая шáпка** лапсăркка́ çĕʹлĕк

ло́шадь (-и) *сущ. жен.; множ.* **ло́шади** (лошадёй, лошадя́м, лошадьми́ *и* лошадя́ми, о лошадя́х) лашă; **запря́чь ло́шадь** лашă кӳл

луг (лу́га, о лу́ге, на лугу́) *сущ. муж.; множ.* **луга́** (лугов) у́лăх, çара́н; **по́йменные луга́** йắлăм у́лăх-çара́нĕ

луговóй *прил.* у́лăх -ĕ; çара́н -ĕ; у́лăх-çара́н -ĕ; **луговóе сéно** çара́н ути́

лу́жа (-и) *сущ. жен.* кӳллéнчĕк, ланкашкă; **по́сле дождя́ оста́лись лу́жи воды́** çӳмăр хыççăн шыв кӳлленчĕкĕсéм юлчĕç

лужáйка (-и) *сущ. жен.* уçлáнкă; у́лăх; **лесна́я лужáйка** вăрма́н уçланки́

лук[1] (-а) *сущ. муж.* сухáн; **ре́пчатый лук** пӳçлă сухáн; **зелёный лук** си́мĕс сухáн; **стре́лки лу́ка** сухáн пуши́; **ди́кий лук** ыхрути́; **жáрить лук** сухáн ăшалá

лук[2] (-а) *сущ. муж.* у́хă; **спорти́вный лук** спорт уххи́; **стреля́ть из лу́ка** ухăрáн пер

лу́ковица (-ы) *сущ. жен.* сухáн, пуç; **лу́ковица тюльпáна** тюльпáн пӳçĕ; **две лу́ковицы** и́кĕ пуç сухáн

луко́шко (-а) *сущ. сред.; множ.* **луко́шки** (-шек, -шкам) кӳнтăк, пурáк, пĕрнé; **луко́шко для я́год** çырлá пурáкĕ

луна́ *и* **Луна́** (-ы́) *сущ. жен.; множ.* **лу́ны** (лун, лу́нам) у́йăх, У́йăх; **по́лная луна́** туллú у́йăх; **свет луны́** у́йăх çутú; **обра́тная сторона́ Луны́** У́йăхăн тéпĕр éнĕ (*пире курăнманни*)

лу́па (-ы) *сущ. жен.* лу́па (*авăр лартнă пысăклатакан кĕленче*); **рассма́тривать в лу́пу** лупăпá тинкéр

луч (-á) *сущ. муж.* пайăркá; **лучи́ со́лнца** хĕвéл пайăркисéм; **рентге́новские лучи́** рентгéн пайăркисéм ◆ **луч наде́жды** шáнчăк паллú

лу́чше 1. (*сравн. ст. от прил.* хороший *и нареч.* хорошó) лайăхрáх, аванрáх; **учи́ться лу́чше** лайăхрáх вĕрéн **2.** *вводн. сл. и частица* аванрáх пӳлĕ, тен; **Говори́, и́ли лу́чше я расскажу́** Калá, е э́пĕ хам каласá парсáн аванрáх пӳлĕ ◆ **как нельзя́ лу́чше** лайăхрáн лáйăх

лу́чший *прил.* чи лайăххи́, чи аванни́; **лу́чшие това́ры** чи лáйăх тавăрсéм ◆ **в лу́чшем слу́чае** чи авáн пулсáн та

лы́жи (лыж, лы́жам) *сущ. множ.; един.* **лы́жа** (-и) *жен.* йĕ́лтĕр; **катáться на лы́жах** йĕлтĕрпé я́рăн

лы́жник (-а) *сущ. муж.*, **лы́жница** (-ы) *жен.* йĕ́лтĕрçĕ; **состяза́ния лы́жников** йĕлтĕрçĕсéн ắмăртăвĕ

лы́жный *прил.* йĕ́лтĕр -ĕ; йĕ́лтĕрçĕ -ĕ; **лы́жный спорт** йĕ́лтĕр спóрчĕ; **лы́жный костю́м** йĕ́лтĕрçĕ тӳмĕ

лы́сина (-ы) *сущ. жен. (син.* плешь) кукшá

лы́сый (*кратк. ф.* лыс, лысá, лы́со, *множ.* лы́сы; *сравн. ст.* лысéе, лысéй; *превосх. ст. не употр.*) *прил.* **1.** (*син.* плеши́вый) кукшá; **лы́сый стари́к** кукшá стари́к **2.** (*син.* гóлый) çарá, якá; **лы́сая горá** çарá сăрт

львёнок (-нка) *сущ. муж.; множ.* **львя́та** (львят) арăслáн çури́

льви́ца (-ы) *сущ. жен.* арăслáн ами́

льго́та (-ы) *сущ. жен.* льгóта, çắмăллăх; **льго́ты, предоставля́емые ветера́нам** ветерансенé паракáн çăмăллăхсéм

льго́тный *прил.* льгóтăллă, çắмăллăхлă; **креди́т на льго́тных усло́виях** льгóтăллă кивçéн пани́

льди́на (-ы) *сущ. жен.* пăр кáтăкĕ, пăр катрáмĕ

люби́мый *прил.* юрáтнă, сáвнă; килĕштерекéн; **люби́мая рабóта** юрáтнă ĕç; **люби́мая де́вушка** сáвнă хĕр; **проща́ться с люби́мым** савнипé сыв пуллáш

люби́ть (*наст.* люблю́, лю́бишь,

лю́бят; *прич. действ. наст.* лю́бящий, *прош.* люби́вший; *прич. страд. наст.* люби́мый; *деепр.* любя́) *глаг. несов., кого-что* **1.** *(ант.* ненави́деть) юрат, сав; **люби́ть де́вушку** хӗре́ сав; **люби́ть ро́дину** тӑва́н çӗршыва́ юра́т **2.** юра́т, кӑмӑлла́, килӗште́р; **люби́ть спорт** спорта́ килӗште́р; **люби́мый мно́ю писа́тель** э́пӗ кӑмӑллака́н çыра́вçӑ

любова́ться (*наст.* люб у́юсь, люб у́ешься, люб у́ются; *повел. ф.* люб у́йся, люб у́йтесь; *прич. действ. наст.* люб у́ющийся, *прош.* любова́вшийся; *деепр.* люб у́ясь) *глаг. несов., кем-чем и на кого-что* пӑхса́ са́вӑн, курса́ кили́н; **любова́ться карти́нами на вы́ставке** выставкӑри́ ӳ́керчӗксене́ пӑхса́ са́вӑн

любо́вь (любви́, любо́вью) *сущ. жен. (ант.* не́нависть) юрату́, сав у́; юратни́, савни́; **матери́нская любо́вь** а́мӑшӗн юра́тӑвӗ; **любо́вь к ро́дине** тӑва́н çӗршыва́ юратни́

любо́й *местоим.* кире́к мӗнле́, кире́к хӑш; кире́к епле́; **в любо́е вре́мя** кире́к хӑш вӑхӑтра́; **в любо́м слу́чае** кире́к мӗнле́ пулса́н та

любопы́тный *прил.* **1.** (*син.* любозна́тельный) кӑ´сӑклӑ; кӑсӑклана-ка́н, пӗлме́ тӑрӑшака́н **2.** (*син.* интере́сный) кӑ´сӑк, интере́слӗ; **любопы́тные све́дения** кӑ´сӑк хыпарсе́м

лю́ди (люде́й, лю́дям, людьми́, о лю́дях) *сущ. множ.* çынсе́м; **молоды́е лю́ди** çа́мрӑк çынсе́м, çамрӑксе́м ◆ **вы́йти в лю́ди** çын шутне́ кӗр

люк (-а) *сущ. муж.* люк, а́лӑк (*карап, танк т. ыт. çинче*); **закры́ть люк** люка́ хупса́ ларт

люце́рна (-ы) *сущ. жен.* люце́рна (*выльӑх апачӗлӗх курӑк*)

ляга́ть (*наст.* -а́ю, -а́ешь, -а́ют) *глаг. несов., кого-что* тап; **ло́шадь ляга́ет** лашá тапáть

лягу́шка (-и) *сущ. жен.* шапа́; **лягу́шки ква́кают** шапасе́м кваклата́ççӗ

М

мавзоле́й (-я) *сущ. муж.* мавзоле́й *(чаплӑ çын виллине упраса асӑнма лартнӑ çурт)*

магази́н (-а) *сущ. муж.* **1.** магази́н; **продово́льственный магази́н** апа́тçи́мӗç магази́нӗ; **универса́льный магази́н** универса́ллӑ магази́н **2.** магази́н *(механизмӑн пӗр йышши пайӗсене вырнаçтармалли арча)*; **ди́сковый магази́н** ди́склӑ магази́н; **магази́н ружья́** пӑшӑ́л магази́нӗ *(патронсем кӗртсе хумалли)*

магни́т (-а) *сущ. муж.* магни́т *(тимӗре туртса илекен япала)*

магнитофо́н (-а) *сущ. муж.* магнитофо́н *(сасса магнитлӑ лента çине çырса калаттармалли прибор)*

магнитофо́нный *прил.* магнитофо́н -ӗ; **магнитофо́нная ле́нта** магнитофо́н ленти́; **магнитофо́нные за́писи** магнитофонпа́ çырса́ илнисе́м

ма́зать (*наст.* ма́жу, ма́жешь, ма́жут; *повел. ф.* мажь; *прич. страд. прош.* ма́занный) *глаг. несов., кого-что* сӗр; сӑрла́; **ма́зать хлеб ма́слом** çӑ´кӑр çине́ çу сӗр; **ма́зать кра́ской до́ску** хӑмана́ сӑрӑпа́ сӑрла́

мазу́т (-а *и* -у) *сущ. муж.* мазу́т *(нефтӗн çӑра юлашки)*

мазь (-и) *сущ. жен. (син.* крем) **1.** маç *(ӳте сӗрмелли)* **2.** маç, крем *(атӑ-пушмака çутатмалли)*; **сапо́жная мазь** а́тӑ ма́çӗ

май (ма́я) *сущ. муж.* çу ӳ́йӑхӗ, май

(çулталăкри пиллĕкмĕш уйăх); **в конце́ ма́я** çу у́йăхĕн вĕçĕнче́

ма́йка (-и) *сущ. жен.* ма́йка *(çанăсăр, çухасăр кĕпе)*; **ходи́ть в ма́йке** майкăпа́ çӳре́

майоне́з (-а) *сущ. муж.* майоне́з *(тип çупа çăмарта сарринчен тунă юрма);* **запра́вить сала́т майоне́зом** салата́ майонезпа́ техĕмле́т

майо́р (-а) *сущ. муж.* майо́р *(капитанран аслăрах офицер чинĕ);* **майо́р мили́ции** мили́ци майо́рĕ

ма́йский *прил.* май -ĕ; çу уйăхĕнчи́, майри́; **ма́йские дни** май кунĕсе́м

мак (-а) *сущ. муж.* мă´кăнь; **лепестки́ ма́ка** мă´кăнь çеçки́; **бу́лочка с ма́ком** мă´кăньлĕ бу́лка

макаро́ны (-о́н) *сущ. множ.* макаро́н *(чустаран тунă çинçе кĕпçе пек çимĕç);* **отвари́ть макаро́ны** макаро́н пĕçе́р; **на второ́е — котле́ты с макаро́нами** и́ккĕмĕш апата́ — макаронпа́ котле́т

маке́т (-а) *сущ. муж.* маке́т *(япалан кăтартмалăх тĕслĕхĕ)*; **маке́т зда́ния** çурт маке́чĕ

макия́ж (-а) *сущ. муж.* писе́в, писе́влĕх *(сăн-пите кремсемпе, сăрăсемпе илемлетни)*

ма́клер (-а) *сущ. муж.* ма́клер *(тавар, çурт-йĕр сутма, илме пулăшакан специалист)*; **торго́вый ма́клер** суту́-илӳ́ ма́клерĕ

макраме́ *сущ. нескл. сред.* макраме́ *(хулăн çипсенчен явса тунă илемлĕ япала)*

максима́льный *прил.* (*ант.* минима́льный), **максима́льно** *нареч.* чи пы́сăк, чи вă´йлă; чи нума́й; **максима́льный за́работок** чи пы́сăк ĕç укçи́; **моро́з дости́гнет максима́льно тридцати́ гра́дусов** си́вĕ чи нума́й вă´тăр градуса́ çите́т

ма́ксимум (-а) *сущ. муж.* (*ант.* ми́нимум) чи нумаййи́, чи пысăкки́; **температу́рный ма́ксимум** чи пы́сăк температу́ра (*ăшă е сивĕ*); **э́та вещь сто́ит ма́ксимум сто рубле́й** ку япала́ чи нума́й çĕр те́нкĕ тăра́ть

макулату́ра (-ы) *сущ. жен.* ки́вĕ хут; **шко́льники собира́ют макулату́ру** шкул ачисе́м ки́вĕ хут пуçтара́ççĕ

маку́шка (-и) *сущ. жен.* **1.** тă´рă, тăрри́, тӳпе́; **маку́шка де́рева** йы́вăç тăрри́ **2.** пуç тӳпи́; **ша́пка на маку́шке** çĕ´лĕк пуç тӳпинче́

ма́ленький (*сравн. ст.* ме́ньше) *прил.* (*син.* небольшо́й; *ант.* большо́й) пĕ´чĕк; **ма́ленькая де́вочка** пĕ´чĕк хĕр ача́; **ма́ленький до́мик** пĕчĕкçе́ç çурт

мале́нько *нареч.* (*син.* немно́жко; *ант.* мно́го) кăшт, кăшта́х, пăрта́к; **Подожди́те меня́ мале́нько!** Мана́ кăшта́х кĕ´тĕр-ха!

мали́на (-ы) *сущ. жен.* хăмла́ çырли́; **лесна́я мали́на** вăрма́н хăмла́ çырли́; **собира́ть мали́ну** хăмла́ çырли́ пуçта́р

мали́новый *прил.* **1.** хăмла́ çырли́ -ĕ; **мали́новое варе́нье** хăмла́ çырли́ варе́нийĕ **2.** шупка́ хĕ´рлĕ; **мали́новое пла́тье** шупка́ хĕ´рлĕ кĕпе́

ма́ло 1. *(сравн. ст.* ме́ньше) *нареч.* (*ант.* мно́го) саха́л; çите́лĕксĕр, çитме́ст; **я ма́ло его́ зна́ю** э́пĕ ăна́ саха́л пĕле́тĕп; **ему́ всё ма́ло де́нег** ăна́ укçа́ çапла́х çитме́ст **2.** *числит. неопред.* саха́л; **ма́ло кто чита́л э́ту кни́гу** ку кĕнекене́ вула́нă çын саха́л ◆ **ма́ло того́** *вводн. сл.* çитменнине́; ку çеç те мар-ха

малогра́мотный *прил.* саха́л вĕре́ннĕ, саха́л пĕлӳ´ллĕ

ма́ло-пома́лу *нареч.* (*син.* понемно́гу) пĕ´чĕккĕн, майĕпе́н, пĕ´чĕккĕнмайĕпе́н; **ма́ло-пома́лу больно́й стал выздора́вливать** чи́рлĕ çын майĕпе́н сывалма́ пуçла́рĕ

малосо́льный *прил.* кăшт тăварла́нă, тăва́р кастарма́н; **малосо́льные огурцы́** кăшт тăварла́нă хăя́р

ма́лый (*кратк. ф.* мал, мала́, ма́-

ло *и* мало́, *множ.* ма́лы *и* малы́; *сравн. ст.* ме́ньше *и* ме́ньший; *превосх. ст.* мале́йший) *прил.* пĕ´чĕк, саха́л; **ма́лыми си́лами** пĕ´чĕк вăйпа́; **с ма́лых лет** мĕн пĕчĕкре́н; **сапоги́ мне малы́** а́тă мана́ тă´вăр; **де́ти у них мал мала́ ме́ньше** вĕсе́н ачисе́м пĕринче́н тепри́ пĕ´чĕк ◆ **са́мое ма́лое** сахалта́н та; **без ма́лого** яхăна́х

ма́льчик (-а) *сущ. муж. (ант.* де́вочка) ача́, арçы́н ача́, ы́вăл ача́; **ма́льчики лю́бят игра́ть в футбо́л** арçы́н ачасе́м футболла́ выляма́ юрата́ççĕ; **у них роди́лся ма́льчик** вĕсе́н ы́вăл ача́ çура́лнă

маля́р (-а́) *сущ. муж.* маля́р *(стена-урай сăрлакан)*; **брига́да маляро́в** малярсе́н бригади́

маляри́я (-и) *сущ. жен.* сив чир; **боле́ть маляри́ей** сив чирпе́ чирле́

ма́ма (-ы) *сущ. жен. (ант.* па́па): ***моя́ (на́ша) ма́ма*** *анне́;* ***твоя́ (ва́ша) ма́ма*** анну́´; **его́ (её, их) ма́ма** а́мăшĕ; **Переда́й твое́й ма́ме приве́т!** Анну́не́ сала́м кала́!

ма́монт (-а) *сущ. муж.* ма́монт *(ĕлĕк-авал пурăннă слон евĕр чĕр чун);* **клыки́ ма́монта** ма́монт асавĕсе́м

мандари́н (-а) *сущ. муж.* мандари́н *(цитрус йышши çимĕç, унăн йывăççи);* **купи́ть килогра́мм мандари́нов** пĕр килогра́мм мандари́н туя́н

манда́т (-а) *сущ. муж.* манда́т (*ĕнентеру́ документчĕ*); **манда́т депута́та** депута́т манда́чĕ

мандоли́на (-ы) *сущ. жен.* мандоли́на *(хĕлĕхсене чĕпĕтсе каламалли инструмент)*; **игра́ть на мандоли́не** мандоли́на кала́

мани́ть (*наст.* маню́, ма́нишь, ма́нят; *прич. действ. наст.* маня́щий, *прош.* мани́вший; *прич. страд. прош.* ма́ненный *и* манённый; *деепр.* маня́) *глаг. несов., кого* **1.** (*син.* подзыва́ть) йы́хăр, чĕн, и́лĕрт; **мани́ть руко́й** кă´чăк турт; **мани́ть щенка́** йы́тă çурине́ йы́хăр; **мани́ть кур зерно́м** чăхсене́ тырăпа́ и́лĕрт **2.** (*син.* привлека́ть) турт, и́лĕрт, ăмсанта́р; **меня́ ма́нит му́зыка Чайко́вского** мана́ Чайко́вский музыки́ илĕрте́т

ма́нный *прил.* ма́нна -ĕ; **ма́нная крупа́** ма́нна кĕрпи́; **вари́ть ма́нную ка́шу с молоко́м** сĕтпе́ ма́нна пăтти́ пĕçе́р

марафо́н (-а) *сущ. муж.* марафо́н *(42 км та 195 м тăршшĕ дистанцие чупса ăмăртни; вăрăм дистанцире ăмăртни);* **лы́жный марафо́н** йĕлтĕрçĕсе́н марафо́нĕ

марафо́нский *прил.* марафо́н -ĕ; **марафо́нский бег** марафо́н чу́пăвĕ, марафо́н чупни́

ма́ри *сущ. нескл. един. и множ., муж. и жен.* ма́ри, марисе́м *(финн-угрсен йăхне кĕрекен халăх)*

мари́ец (-йца) *сущ. муж.,* **мари́йка** *(-и) жен.; множ.* **мари́йцы** *(-цев)* марисе́м; **го́рные мари́йцы** туçи́ марисе́м; **луговы́е мари́йцы** йă´лăм марисе́м; **восто́чные мари́йцы** тухăçри́ марисе́м

мари́йский *прил.* ма́ри -ĕ; **мари́йский язы́к** ма́ри чĕлхи́; **истори́ческие мари́йско-чува́шские свя́зи** марисемпе́ чăвашсе́н историри́ çыхăнăвĕсе́м

марина́д (-а) *сущ. муж.* марина́д *(тип çупа уксус, техĕмлĕхсем хушса тунă соус);* **ры́ба под марина́дом** марина́длă пу́лă

маринова́ть (*наст.* -ну́ю, -ну́ешь, -ну́ют; *повел. ф.* -ну́й; *прич. страд. прош.* -но́ванный) *глаг. несов., что* маринадла́; **марино́ванные грибы́** маринадла́нă кăмпа́

ма́рка (-и) *сущ. жен.* **1.** ма́рка *(конверт çине çыпăçтараканни);* **почто́вая ма́рка** по́чта марки́; **коллекциони́ровать ма́рки** ма́рка пух **2.** (*син.* клеймо́) па́ллă, тăмха́, клеме́ *(тавар çине çапаканни);* **фабри́чная ма́р-**

ка фа́брика маркѝ **3.** ма́рка *(Германире, Финляндире т. ыт. хăш-пĕр çĕршывсенче пулнă укçа)*

ма́рля (-и) *сущ. жен.* ма́рля *(çӳхе пусма)*

мармела́д (-а) *сущ. муж.* мармела́д *(улма-çырларан пĕçерсе тунă пылак çимĕç)*; **я́блочный мармела́д** пан улмѝ мармела́чĕ

март (-а) *сущ. муж.* пуш ӳйăхĕ, март *(çулталăкри виççĕмĕш уйăх)*; **Восьмóе ма́рта** Ма́ртăн сакăрмĕшĕ *(хĕрарăмсен уявĕ)*

ма́ртовский *прил.* март -ĕ; пуш уйăхĕнчѝ, мартрѝ; **ма́ртовская капе́ль** пуш уйăхĕнче тумла́ юхнѝ

мартышка (-и) *сущ. жен.* мартышка *(пĕчĕк упăте ăрачĕ)*

марш (-а) *сущ. муж.* **1.** марш *(салтаксем стройпа утни)* **2.** марш *(стройпа утнă чух калакан ритмлă кĕвĕ)*; **оркéстр игра́ет марш** оркéстр марш кала́ть ◆ **Ша́гом марш**! Утма́ пӳçлăр! *(команда пани)*; **Марш отсю́да!** Таса́лăр кунта́н!

ма́ршал (-а) *сущ. муж.* ма́ршал *(чи аслă çар чинĕ)*; **ма́ршал авиа́ции** авиа́ци ма́ршалĕ

маршру́т (-а) *сущ. муж.* маршру́т *(палăртса хунă çул)*; **дви́гаться по за́данному маршру́ту** палăртса́ па́нă маршрутпа́ куçса́ пыр

ма́ска (-и) *сущ. жен.* ма́ска, пи́тлĕх *(пите хуплакан çыхă е сăнар ĕлки)*; **ма́ска за́йца** мулка́ч маски́; **наде́ть ма́ску** ма́ска тắхăн ◆ **кислоро́дная ма́ска** кислоро́д маски́ *(чирлисене сывлаттармалли)*; **ма́ска хоккéйного вратаря́** хоккéй хапхаçѝн пуç хӳ́тлĕхĕ

маскара́д (-а) *сущ. муж.* маскара́д *(маскăллă уяв)*; **новогóдний маскара́д** Çĕ́нĕ çул маскара́чĕ

маскирова́ть (*наст.* -ру́ю, -ру́ешь, -ру́ют; *прич. страд. прош.* -ро́ванный) *глаг. несов., кого-что* маскировкăла́, маскиро́вка ту, курăнмалла́ мар ту; **маскирова́ть оруди́я** тупăсене́ курăнмалла́ мар ту

ма́сленица (-ы) *сущ. жен.* çăварни́ *(хĕле ăсатнă май ирттерекен халăх уявĕ)*

ма́сло (-а) *сущ. сред.* **1.** çу; **сли́вочное ма́сло** услáм çу; **топлёное ма́сло** шăра́тнă çу, сар çу; **расти́тельное ма́сло** ӳсéн-тăра́н çắкăр çи **2.** çӳллă cắрă; **писа́ть карти́ну ма́слом** çӳллă сăрăпа́ карти́на ӳкéр

масля́та (-я́т) *сущ. множ.; един.* **маслёнок** (-нка) *муж.* масла́ кăмпи́; **маринова́ть масля́та** масла́ кăмпи́ маринадлă

ма́сса (-ы) *сущ. жен.* **1.** (*син.* вес) ма́сса, йы́вăрăш, виçé, та́йăм; **ма́сса Земли́** Çĕр та́йăмĕ **2.** (*син.* смесь) хӳта́ш, çắрăм, чустá; **цемéнтная ма́сса** цемéнт хӳта́шĕ **3.** *кого-чего (син.* мно́жество) капла́нчăк, йы́шлăх, нума́йлăх; **на у́лицах ма́сса наро́ду** урамсенче́ ха́лăх шӳтсăр нума́й

масса́ж (-а) *сущ. муж.* масса́ж *(ӳттире сĕркелесе, лутăркаса çемçетни, сиплени)*; **де́лать масса́ж** масса́ж ту

ма́ссовый *прил.* ма́ссăллă, йы́шлă, нума́й, а́нлă; **ма́ссовое спорти́вное движе́ние** ма́ссăллă спорт ю́хăмĕ; **ма́ссовое произво́дство това́ров** тавара́ нумайша́р туса́ кăларни́; **кни́га и́здана ма́ссовым тиражо́м** кĕнекене́ пы́сăк тиражпа́ кăла́рнă

ма́стер (-а) *сущ. муж.; множ.* **мастера́** (-о́в), **мастери́ца** (-ы) *жен.* **1.** ăста́, ăстаçă, ма́çтăр; **ма́стер столя́рного де́ла** сĕтéл-пука́н ăстѝ; **Ка́тя — мастери́ца вышива́ть** Ка́тя — тĕ́рĕ ăстѝ **2.** ма́стер *(производствăри специалист)*; **сме́нный ма́стер** сме́на ма́стерĕ **3.** ма́стер *(спортри пусăм)*; **ма́стер спо́рта по лы́жам** спорт ма́стерĕ — йĕ́лтĕрçĕ; **кандида́т в мастера́ спо́рта** спорт ма́стерĕн канди-

да́чĕ ◆ **ма́стер на все ру́ки** пур ĕçé те ăстá

мастери́ть (*наст.* -рю́, -ри́шь, -ря́т) *глаг. несов., что* ту, ăсталá, хайлá, маçтăрлá; **мастери́ть гли́няную посу́ду** тăм сáвăт-сапá ту; **мастери́ть игру́шки** теттесéм ăсталá

мастерска́я (-о́й) *сущ. жен.* **1.** мастерскóй *(предприяти)*; **мастерска́я по ремо́нту ме́бели** сĕтéл-пукáн юсакáн мастерскóй **2.** (*син.* сту́дия) мастерскóй *(пултару ĕçĕн пӳлĕмĕ)*; **мастерска́я ску́льптора** ску́льптор мастерскóйĕ

мастерско́й *прил. (син.* иску́сный), **мастерски́** *нареч.* ăстá, паха́, чáплă; **мастерски́ сде́ланная вещь** ăстá тӳнă япалá

мастерство́ (-á) *сущ. сред.* (*син.* иску́сство) ăстáлăх, хайлá, мáçтăрлăх; **мастерство́ худо́жника** худóжник ăстáлăхĕ; **повыша́ть профессиона́льное мастерство́** профéсси ăсталăхнé ӳстéр

масть (-и) *сущ. жен.; множ.* **ма́сти** (-е́й) **1.** тĕс (*лашан*); **ло́шадь гнедо́й ма́сти** çӳрéн ут **2.** масть *(карт тĕсĕ)*; **бубно́вая масть** бу́бнă масть

масшта́б (-а) *сущ. муж.* **1.** масшта́б *(карттă виçи вырăн вăрăмăшĕпе шайлашса тăни)*; **масшта́б — два́дцать киломе́тров в сантиме́тре** масшта́б — сантиметртá çи́рĕм киломéтр **2.** (*син.* размáх) виçé, пы́сăкăш; **масшта́бы бе́дствия** инкéк пы́сăкăшĕ ◆ **в масшта́бах всей страны́** пĕ́тĕм çĕршывĕпé илсéн

масшта́бный *прил.* **1.** масшта́б -ĕ; **масшта́бная лине́йка** масшта́б линейки́ **2.** (*син.* грандио́зный) пы́сăк, áнлă; **масшта́бное произведе́ние** пы́сăк хайлáв

мат (-а) *сущ. муж.* мат *(шахмата — короле хӳтĕлеме май килмен пирки парăнни)*; **мат в три хо́да** виççĕ çӳресé мат тунú

матема́тика (-и) *сущ. жен.* математика *(япаласен хисеп çыхăнăвĕсемпе калăпăш формисене тĕпчекен ăслăлăх)*; **вы́сшая матема́тика** áслă математика; **шко́льная матема́тика** шкул математики́

математи́ческий *прил.* математика -ĕ; **математи́ческие зада́чи** математика задачисéм

материа́л (-а) *сущ. муж.* **1.** пусмá, материáл; **шерстяно́й материа́л** çăм пусмá; **купи́ть материа́л на пла́тье** кĕпé çĕлемéлĕх материáл туян **2.** материáл *(ĕçре усă курмалли япаласем)*; **строи́тельные материа́лы** строи́тельство материалĕсéм; **собира́ть материа́лы для кни́ги** кĕнекé валли́ материáл пуçтáр **3.** *множ.* **материа́лы** (-ов) материалсéм, сведенисéм, документсéм; **служе́бные материа́лы** слýжба документчĕсéм; **материа́лы сле́дствия** слéдстви материалĕсéм

материали́зм (-а) *сущ. муж. (ант.* идеали́зм) материали́зм *(çут тĕнчере мĕн пуррин пуçламăшĕ ăс-тăн мар, матери иккенне çирĕплетекен философи вĕрентĕвĕ)*

материалисти́ческий (*ант.* идеалисти́ческий) *прил.* материали́зм -ĕ; материали́змлă; **материалисти́ческое мировоззре́ние** материали́змлă тĕнче кӳрăм

материа́льный *прил.* (*ант.* духóвный), **материа́льно** *нареч.* **1.** матéри -ĕ; **материа́льный мир** матéри тĕнчи́ **2.** пӳрлăх -ĕ; пӳрлăх-ы́рлăх -ĕ; **материа́льное положе́ние** пӳрлăх-ы́рлăх тă´рăмĕ; **помога́ть материа́льно** пӳрлăх тĕлĕшĕнчéн пӳлăш

матери́к (-á) *сущ. муж.* (*син.* континéнт) материк *(тавраллах океан хупăрласа тăракан пысăк çĕр)*; **африка́нский материк** А´фрика материкĕ

материнский *прил.* áмăшĕн -ĕ; **материнская любо́вь** áмăшĕн юратăвĕ

мате́рия (-и) *сущ. жен.* **1.** матéри

(*çут тĕнчере мĕн пурри)* **2**. пусмá, матéри; **шёлковая матéрия** пýрçăн пусмá

мáтовый *прил.* (*ант.* блестя́щий, гля́нцевый) тĕ´кçĕм, çýтă мар, ялтăртатмáн; **мáтовое стеклó** ялтăртатмáн кĕленчé

матрáс (-а) *и* **матрáц** (-а) *сущ. муж.* матрáс, тýшéк; **пружи́нный матрáц** пружи́нăллă матрáс

матрёшка (-и) *сущ. жен.* матрёшка *(вырăс тетти — пĕр-пĕрин ăшне кĕртсе лартакан хĕр кĕлеткисем)*

матриархáт (-а) *сущ. муж.* (*ант.* патриархáт) матриархáт *(ăру пуçĕнче хĕрарăм тăнă авалхи йĕрке)*

матрóс (-а) *сущ. муж.* матрóс *(карап çинче ĕçлекен)*

мáтушка (-и) *сущ. жен.* **1**. аннé, аннéçĕм *(ачашласа, хисеплесе калани)* **2**. мáтăшкă *(пуп арăмне чĕнсе калани)*

матч (-а) *сущ. муж.* (*син.* состязáние) матч, ăмăртý; **футбóльный матч** футбóл мáтчĕ

мать (мáтери, мáтерью) *сущ. жен.; множ.* **мáтери** (матерéй, матеря́м, матеря́ми, о матеря́х): **моя́ (нáша) мать** аннé; **твоя́ (вáша) мать** аннýˊ; **егó (её, их) мать** ăмăшĕ; **многодéтная мать** нумáй ачá áмăшĕ; **мать-одинóчка** мăˊшăрсăр ачá áмăшĕ; **мы говори́ли о твоéй мáтери** эпи́р сан аннýˊ çинчéн калáçрăмăр ◆ **в чём мать родилá** çаппá-çарамáс

мать-и-мáчеха (мать-и-мáчехи) *сущ. жен.* шапá хупаххи́, çыр хупаххи́ *(курăк)*

махáть (*наст.* машýˊ, мáшешь, мáшут *и* махáю, махáешь, махáют; *повел. ф.* маши́; *прич. действ. наст.* мáшущий *и* махáющий; *прич. страд. прош.* махáвший; *деепр.* махáя) *глаг. несов., чем* сул, суллá, сĕлт, варкăштáр, вĕлкĕштéр; **махáть флáгом** ялáв вĕлкĕштéр; **махáть рукóй на прощáние** сыв пуллашсá áлă сул

мáчеха (-и) *сущ. жен.* амá çури́ *(ачасен тăван мар амăшĕ)*

мáчта (-ы) *сущ. жен.* мáчта, юпá; **мáчты корáбля́** карáп мачтисéм; **мáчта антéнны** антéнна юпи́

машúна (-ы) *сущ. жен.* **1**. машúна *(кăткăс механизм)*; **швéйная машúна** çĕˊвĕ машини́; **вычисли́тельная машúна** шутлáв машини́ **2**. машúна, автомоби́ль; **ли́чная машúна** хáрпăр машини́

машини́ст (-а) *сущ. муж.* машини́ст; **машини́ст локомоти́ва** локомоти́в машини́счĕ

машúнка (-и) *сущ. жен.* машúнка *(пĕчĕк механизм)*; **пи́шущая машúнка** пичетлекéн машúнка

мая́к (-á) *сущ. муж.* маяк *(карапсене çул кăтартакан вăйлă çуткăç)*; **морскóй мая́к** тúнĕс маякĕ

мéбель (-и) *сущ. жен.* сĕтéл-пукáн; **мя́гкая мéбель** çемçé сĕтéл-пукáн; **дéтская мéбель** ачá-пăчá сĕтéл-пукáнĕ; **óфисная мéбель** кантýр сĕтéл-пукáнĕ

мéбельный *прил.* сĕтéл-пукáн -ĕ; **мéбельный магази́н** сĕтéл-пукáн магази́нĕ; **мéбельный гарнитýр** сĕтéл-пукáн пуххи́ *(пĕр пýлĕмре е хваттерте лартмалли)*

мегафóн (-а) *сущ. муж.* (*син.* рýпор) мегафóн *(сасса вăйлатмалли хатĕр)*; **дава́ть кома́нды в мегафóн** мегафонпá командá пар

медали́ст (-а) *сущ. муж.*, **медали́стка** (-и) *жен.* медали́ст, медáльçă; **абитурие́нты-медали́сты** медáльлĕ абитуриентсéм

медáль (-и) *сущ. жен.* медáль *(тава тивĕçлĕ ĕçшĕн паракан паллă)*; **боева́я медáль** çар медáлĕ; **он око́нчил шко́лу с золото́й медáлью** вăл шкулá ылтăн медальпé пĕтéрнĕ

медве́дица (-ы) *сущ. жен.* упá ами́, амá упá ◆ **Больша́я Медве́дица** Аˊлтăр çăˊлтăр

медве́дь (-я) *сущ. муж.* упа́; **бе́лый медве́дь** шӳ́рӑ упа́; **бу́рый медве́дь** хӑ ́мӑр упа́; **берло́га медве́дя** упа́ шӑ ́тӑкӗ, упа́ йӗнни́

медве́жий *прил.* упа́ -ӗ; **медве́жьи ла́пы** упа́ урисе́м ◆ **медве́жий у́гол** тӗ ́ттӗм кӗте́с

медвежо́нок (-нка) *сущ. муж.* упа́ çури́

медикаме́нты (-ов) *сущ. множ.; един.* **медикаме́нт** (-а) *муж.* эмӗ́л тавра́шӗ

медици́на (-ы) *сущ. жен.* медици́на *(çынсен сывлӑхне сыхлас, чирчӗртен сыватас ӗç тата ӑслӑлӑх)*

медици́нский *прил.* медици́на -ӗ; **медици́нские учрежде́ния** медици́на учрежденийӗсе́м; **учи́ться на медици́нском факульте́те** медици́на факультетӗнче́ вӗре́н; **пройти́ медици́нский осмо́тр** медици́на тӗрӗслевӗнче́ пул

ме́дленный *прил.* (*ант.* бы́стрый), **ме́дленно** *нареч.* вӑра́х; хулле́н, майӗпе́н, ерипе́н, вӑра́ххӑн; **ме́дленное выздоровле́ние** майӗпе́н сывалса́ пыни́; **вре́мя тя́нется ме́дленно** вӑ ́хӑт вӑра́ххӑн иртет

ме́дный *прил.* пӑ ́хӑр ...; пӑ ́хӑр -ӗ; **ме́дная про́волока** пӑ ́хӑр пралу́к; **ме́дная руда́** пӑ ́хӑр руди́

медо́вый *прил.* пыл -ӗ; пы́ллӑ; **медо́вый вкус** пыл тути́; **медо́вое пи́во** пы́ллӑ сӑра́ ◆ **медо́вый ме́сяц** чупчу́п у́йӑхӗ *(мӑшӑрланнӑ хыççӑнхи)*

медь (-и) *сущ. жен.* пӑ ́хӑр; **выплавля́ть медь** пӑ ́хӑр шӑра́т

междоме́тие (-я) *сущ. сред.* междоме́ти *(кӑмӑл-туйӑма палӑртакан сӑмах, сӑм., вырӑсла: ах, ой, ура)*

ме́жду *предлог с род. п.* хушӑра́, хушшинче́, хутлӑхӗнче́, хушшипе́; **ме́жду дере́вней и ле́сом** ялпа́ вӑрма́н хушшинче́; **тропи́нка вьётся ме́жду дере́вьями** сукма́к йывӑççе́м хушшипе́ явӑнса́ вырта́ть; **ме́жду на́ми нет секре́тов** пи́рӗн хушӑра́ вӑ ́рттӑнлӑх çук ◆ **ме́жду про́чим** *вводн. сл.* сӑма́х май каласа́н

междугоро́дный (*жен.* -ная, *сред.* -ное) *и* **междугоро́дний** (*жен.* -няя, *сред.* -нее) *прил.* хуласе́м хушшинчи́; **междугоро́дный авто́бус** хуласе́м хушшинчи́ автобус; **междугоро́дняя связь** хуласе́м хушшинчи́ телефо́н çы́хӑнӑвӗ

междунаро́дный *прил.* тӗнчери́, халӑхсе́м хушшинчи́, çӗршывсе́м хушшинчи́; **междунаро́дный конгре́сс** тӗнчери́ конгре́сс; **междунаро́дная обстано́вка** тӗнчери́ лару́-тӑру́; **разви́тие междунаро́дных свя́зей** çӗршывсе́м хушшинчи́ çыхӑнусе́м аталанни́

мел (ме́ла *и* ме́лу, о ме́ле, в мелу́) *сущ. муж.* пу́рӑ, пур; **писа́ть ме́лом на доске́** доска́ çине́ мелпа́ çыр

мелиорати́вный *прил.* мелиора́ци -ӗ; **мелиорати́вные рабо́ты** мелиора́ци ӗçӗсе́м

мелиора́ция (-и) *сущ. жен.* мелиора́ци *(çӗрсене лайӑхлатма шурлӑхсене типӗтни е шӑвармалла туни)*

ме́лкий (*кратк. ф.* ме́лок, мелка́, ме́лко, *множ.* ме́лки *и* мелки́; *сравн. ст.* ме́льче; *превосх. ст.* мельча́йший) *прил.*, **ме́лко** *нареч.* **1.** (*ант.* кру́пный) вӗ ́тӗ, ва́кӑ, вак; **ме́лкий песо́к** вӗ ́тӗ хӑ ́йар; **ме́лкие де́ньги** вак укса́; **карто́фель ны́нче ме́лок** çӗр улми́ кӑçа́л вӗ ́тӗ **2.** (*ант.* кру́пный, мо́щный) пӗ ́чӗк, ва́кӑ, вӑ ́йсӑр; **ме́лкие фи́рмы** пӗ ́чӗк фирмӑсе́м; **ме́лкие производи́тели** вак производительсе́м **3.** (*ант.* глубо́кий) ӑ ́шӑх; **ме́лкий пруд** ӑ ́шӑх пӗвӗ ◆ **ме́лкий рога́тый скот** су́рах-качака́; **ме́лкий чино́вник** пӗ ́чӗк ӗçри́ чино́вник; **ме́лкий ремо́нт** кӑшт-ка́шт юсани́; **он ме́лко пла́вает** у́нӑн хевти́ саха́л; **ме́лкая душо́нка** пархата́рсӑр чун

мелоди́чный *прил.* (*син.* благозву́чный), **мелоди́чно** *нареч.* кӗ ́вӗллӗ,

янăрáвлă, çéпĕç, çéмĕллĕ; **мелоди́чная речь** янăрáвлă пуплéв

мело́дия (-и) *сущ. жен.* (*син.* напéв) кĕ́вĕ, çéмĕ; **мело́дия пе́сни** юрă кĕввúй; **танцева́ть под мело́дию ва́льса** вальс çеммипе́ ташлá

ме́лочь (-и) *сущ. жен.; множ.* **ме́лочи** (-е́й) **1.** вак-тĕвéк; **купи́ть ме́лочи по хозя́йству** хуçалăхрá кúрлĕ вак-тĕвéк туян **2.** *собир.* вак укçá**; пять рубле́й ме́лочью** пúлĕк тéнкĕ вак укçá ◆ **разме́ниваться на ме́лочи** вак-тĕвéк ĕçпé айкáш

мель (ме́ли, о ме́ли, на мели́) *сущ. жен.* ắшăх вырăн, ắшăх; **ка́тер сел на мель** кáтер ăшăхá лáрнă

мелька́ть (*наст.* -а́ю, -а́ешь, -а́ют) *глаг. несов.* **1.** вĕлтлéт, вĕлтлетсé ирт; **в вагóнном окнé мелька́ют столбы́** вагóн чӳречинчéн юпасéм вĕлтлетсé иртéççĕ **2.** мĕлтлéт, ялтлáт, çуталсá ил; **вдали́ мелька́ют огоньки́** инçетрé çутăсéм мĕлтлетéççĕ

ме́льник (-а) *сущ. муж.* ме́льник, армáнçă

ме́льница (-ы) *сущ. жен.* армáн; **водяна́я ме́льница** шыв армáнĕ; **ветряна́я ме́льница** çил армáнĕ; **моло́ть муку́ на ме́льнице** армантá çắнăх áвăрт

мемориа́льный *прил.* (*син.* пáмятный) асăнӳ́ -ĕ; асăнмáлăх; **мемориа́льная доска́** асăнӳ́ хăмúр

мемуа́ры (-ов) *сущ. множ.* (*син.* воспоминáния) асаилӳ́сем; **кни́га мемуа́ров** асаилӳ́ кĕнекúр

ме́неджер (-а) *сущ. муж.* ме́неджер *(предприятисене ертсе пырас ĕçĕн специалисчĕ)*

ме́нее (*сравн. ст. от нареч.* мáло) сахалрáх, каярáх; **прошло́ ме́нее трёх ме́сяцев** вắхăт вúçĕ уйăхрáн та сахалрáхúртнĕ ◆ **тем не ме́нее** *союз* аплá пулúн те

ме́ньше 1. (*сравн. ст. от прил.* мáленький *и* мáлый) пĕчĕкрéх; **Ко́ля ме́ньше Пе́ти** Кóля Петьăрáн пĕчĕкрéх **2.** *(сравн. ст. от нареч.* мáло) сахалрáх, катăкрáх; **здесь ме́ньше ста рубле́й** кунтá çĕр тенкĕрéн сахалрáх

ме́ньший *прил.* **1.** (*ант.* бóльший) каярáх, сахалрáх, пĕчĕкрéх; **нужны́ боти́нки ме́ньшего разме́ра** пĕчĕкрéх размéр пушмáк кúрлĕ **2.** (*син.* млáдший; *ант.* стáрший) кĕ́ çĕн; **их ме́ньший сын** вĕсéн кĕ́çĕн ывăлĕ

меньшинство́ (-á) *сущ. сред. (ант.* большинство́) сахалрáхăшĕ; **оста́ться в меньшинстве́** сахалрахăшĕнчé юл

меню́ *сущ. нескл. сред.* меню́ *(хатĕр апатсем тата вĕсене çырнă хут);* **рестора́нное меню́** рестóран менювĕ

меня́ть (*наст.* -я́ю, -я́ешь, -я́ют) *глаг. несов., кого-что* **1.** улăштáр, ылмаштáр; **меня́ть рабо́ту** ĕçé улăштáр; **меня́ть маши́ну на да́чу** машинăнá дачăпá улăштáр **2.** улăштáр, урăхлáт; **меня́ть го́лос при разгово́ре** сассá урăхлатсá калáç

меня́ться (*наст.* -я́юсь, -я́ешься, -я́ются; *повел. ф.* -я́йся, -я́йтесь; *прич. действ. наст.* -я́ющийся, *прош.* -я́вшийся; *деепр.* -я́ясь) *глаг. несов.* **1.** *чем с кем* улăштáр, ылмаштáр *(пĕр-пĕринпе);* **меня́ться кни́гами** кĕнекé ылмаштáр **2.** ӳ́лшăн, урăхлáн, расналáн; **жизнь бы́стро меня́ется** пӳ́рнăç хắвăрт улшăнсá пырáть

ме́ра (-ы) *сущ. жен.* **1.** виçé; **ме́ры длины́** вắрăмăш виçисéм **2.** чúкĕ, виçé; **знать ме́ру** виçенé пĕл, виçерéн ан тух **3.** мéра, ĕç, тắвăм; **приня́ть ну́жные ме́ры** кúрлĕ ĕçсене ту ◆ **в по́лной ме́ре** туллúн, туллú виçепé; **по кра́йней ме́ре** сахалтáн та

ме́рин (-а) *сущ. муж.* кастáрнă ắйăр

ме́рить (*наст.* мéрю, мéришь, мéрят *и* мéряю, мéряешь, мéряют; *повел. ф.* мерь *и* мéряй; *прич. действ.*

наст. ме́рящий *и* ме́ряющий, *прош.* ме́ривший; *прич. страд. наст.* ме́римый *и* ме́ряемый, *прош.* ме́ренный; *деепр.* ме́ря *и* ме́ряя) *глаг. несов., кого-что* виҫ, шайлá, виҫсé пĕл; **ме́рить плóщадь сáда** сад лаптăкăшнé виҫ; **ме́рить шляпу** шлепкé виҫсé пăх

меси́ть (*наст.* мешý, мéсишь, мéсят; *прич. страд. прош.* мéшенный) *глаг. несов.* çăр; **меси́ть тéсто** чустá çăр; **меси́ть грязь** пылчăк çăрсá ут

мести́ (*наст.* метý, метёшь, метýт; *прош.* мĕл, мелá, мелó, мели́; *повел. ф.* мети́; *прич. действ. наст.* метýщий, *прош.* мётший; *прич. страд. прош.* метённый; *деепр.* метя́) *глаг. несов., что* **1.** шăл, шăлсá тасáт; **мести́ пол** ураи́ шăл; **мести́ метлóй** шăпăрпá шăл **2.** *1 и 2 л. не употр.* вĕçтéр, салáт; **вéтер метёт сухи́е ли́стья** çил тúпĕ çулçăсенé вĕçтерéт; **метéль метёт** çил-тăмáн вĕçтерéт

мéстность (-и) *сущ. жен.* вы́рăн, çĕр, çĕр-шы́в; **болóтистая мéстность** шýрлăхлă çĕр; **гóристая мéстность** сă ´ртлă-тýллă çĕр-шы́в; **сéльская мéстность** я́ллă вы́рăн

мéстный *прил.* вырăнти́, кунти́; **мéстное населéние** вырăнти́ хáлăх; **мéстные гóворы языкá** чĕлхéн вырăнти́ калаçăвĕсéм

мéсто (-а) *сущ. сред.; множ.* **местá** (мест, местáм) **1.** вы́рăн, çĕр, тĕл; хýтлăх; **откры́тое мéсто**ýçă вы́рăн; **положи́ть вещь на мéсто** япалана́ вырăннé хур **2.** (*син.* дóлжность) вы́рăн, ĕç; **вакáнтное мéсто** пýшă вы́рăн *(ĕçре)* **3.** пýсăм, вы́рăн; **заня́ть пéрвое мéсто в соревнова́нии** ăмăртурá пĕррéмĕш вы́рăн йы́шăн **4. местáми** *в знач. нареч. (син.* кóе-где) вы́рăн-вы́рăн, тĕл-тĕ ´л; **местáми пройдýт дожди́** вы́рăн-вы́рăн çýмăр çусá иртéт ◆ **мéсто в вагóне** вагонти́ вы́рăн; **сказáть к мéсту** вы́рăнлă калá; **на местáх** вырăнсенчé *(центртан инçетре)*

местоимéние (-я) *сущ. сред.* местоимéни *(ят сăмахсем вырăнне çýрекен пуплев пайĕ)*; **ли́чные местоимéния** сăпáт местоименийĕсéм

месть (-и) *сущ. жен.* тавăрý; тавăрни́; **месть за предáтельство** сýтăнăшăн тавăрни́

мéсяц (-а) *сущ. муж.; множ.* **мéсяцы** (-ев) **1.** ýйăх *(çулталăкăн вун иккĕмĕш пайĕ)*; **весéнние мéсяцы** çурхи́ уйăхсéм; **в течéние мéсяца** ýйăх хушшинчé **2.** ýйăх *(тýпери)*; **пóлный мéсяц** туллú ýйăх; **молодóй мéсяц** çурлá ýйăх

метáлл (-а) *сущ. муж.* метáлл; **чёрные метáллы** хурá металсéм *(тимĕр, хурçă, чугун)*; **драгоцéнные метáллы** хáклă йышши́ металсéм *(ылтăн, кĕмĕл, платина)*

метáфора (-ы) *сущ. жен.* метáфора *(икĕ япала пĕрешкел пулнипе пĕрин ятне тепри çине куçарни, сăм., тилĕ «чĕр чун» — тилĕ «чее çын»)*

метéль (-и), **метéлица** (-ы) *сущ. жен.* тăмáн, çил-тăмáн, кусăркá; **метéль замелá доро́ги** çил-тăмáн çулсенé юр хывсá кáйнă; **неожи́данно поднялáсь метéль** кĕтмéн çĕртéн тăмáн тýхрĕ

метеóр (-а) *сущ. муж.* метеóр *(тĕнче уçлăхĕнчен сывлăша вĕçсе кĕнĕ пĕчĕк татăк хăвăрт çунса кайни)*

метеори́т (-а) *сущ. муж.* метеори́т *(тĕнче уçлăхĕнчен Çĕр çине ӳкнĕ япала)*

метеорóло́гия (-и) *сущ. жен.* метеорóло́ги *(Çĕр атмосферинчи улшăнусене тĕпчекен ăслăлăх)*

мети́с (-а) *сущ. муж.*, **мети́ска** (-и) *жен.* **1.** мети́с *(тĕрлĕ раса çыннисенчен çуралнă çын)* **2.** (*син.* пóмесь) мети́с *(тĕрлĕ ăратсен хутăшĕ)*

мéткий *прил.*, **мéтко** *нареч.* тĕ´ллĕ, мéркĕн, тĕл перекéн; **он стреля́ет мéтко** вăл тĕл перéт

метла́ (-ы́) *сущ. жен.; множ.* **мётлы** (мётел, мётлам) шӑ́пӑр, çӳлӑк; **мести́ двор метло́й** кил хушшине çулӑкпа́ шӑл

ме́тод (-а) *сущ. муж.* ӑсла́й, меслéт; **но́вые ме́тоды лече́ния ра́ка** ракра́н сыватмалли́ çĕ́нĕ меслетсéм

мето́дика (-и) *сущ. жен.* ӑсла́йлӑх, меслéтлĕх; ӑслайсéм, меслетсéм; **мето́дика преподава́ния языка́** чĕлхе́ вĕрентéс ĕç меслечĕсéм

метони́мия (-и) *сущ. жен.* метони́ми *(икĕ япала тата́ çыхӑннипе пĕрин ятне тепри çине куçарни, сӑм., кĕреке «пӳртри чыслӑ вырӑн» — кĕреке «сĕтел çинчи апат-çимĕç»)*

метр (-а) *сущ. муж.* **1.** метр *(вӑрӑма́ш виçи — 100 см)*; **два ме́тра** и́кĕ метр; **полтора́ ме́тра** метр çӳрӑ; **квадра́тный метр** тӑваткӑ́л метр **2.** метр *(линейка)*; **складно́й метр** хуçланака́н метр

ме́трика (-и) *сущ. жен.* ме́трика *(çурални çинчен панӑ хут)*

метри́ческий *прил.* ме́трлӑ, вӳ́нӑллӑ; **метри́ческая систе́ма мер** виçесéн ме́трлӑ йĕрки́ *(унти кашни виçе вунна пайланать е хутланать)*

метро́ *сущ. нескл. сред.* метро́ *(хулара çĕр айĕнче хывнӑ чугун çул)*; **ста́нции метро́** метро́ станцийĕсéм; **е́здить на метро́** метропа́ çӳ́ре

мех (ме́ха, о ме́хе, на меху́) *сущ. муж.; множ.* **меха́** (мехо́в) тир, ма́мӑк тир; **ли́сий мех** ти́лĕ ти́рĕ

механи́зм (-а) *сущ. муж.* **1.** механи́зм *(машинӑ́н шалти тытӑмĕ)*; **механи́зм часо́в** сехéт механи́змĕ **2.** тытӑм; **госуда́рственный механи́зм** патша́лӑх механи́змĕ

мехово́й *прил.* тир -ĕ, ма́мӑк тир -ĕ; **мехово́й воротни́к** ма́мӑк тир çухá

меч (-а́) *сущ. муж.* хĕç *(авалхи салтаксен)*

мечте́ть (-и) *сущ. жен.* ми́чĕт *(мусульмансен кĕлĕ çурчĕ)*

мечта́ (-ы́) *сущ. жен.; множ.* **мечты́** *(в знач. род. п.* мечта́ний, *дат. п.* мечта́м) ĕ́мĕт, тӳ́ртӑм, ӑнтӑлу́; **мечта́ о сча́стье** телéйшĕн ĕмĕтленни́; **мечта́ осуществи́лась** ĕ́мĕт пурнӑçла́нчĕ

мечта́ть (*наст.* -а́ю, -а́ешь, **-а́ют**) *глаг. несов., о ком-чем и с неопр. ф.* ĕмĕтлéн, тӳ́ртӑн, ӑ́нтӑл; **он с де́тства мечта́л стать арти́стом** вӑл мĕн ачара́н арти́ст пулма́ ĕмĕтлéннĕ

меша́ть[1] (*наст.* -а́ю, -а́ешь, -а́ют) *глаг. несов., кому-чему и с неопр. ф.* (*ант.* помога́ть) кансĕрлé, чӑрмантӑ́р, чӑрма́в кӳ́р, чар; **вы меша́ете нам рабо́тать** эсир пире́ ĕçлеме́ чӑрмантара́тӑр ◆ **не меша́ло бы** юрĕ́ччĕ, пӑ́смĕччĕ

меша́ть[2] (*наст.* -а́ю, -а́ешь, -а́ют; *прич. страд. наст.* -а́емый, *прош.* ме́шанный) *глаг. несов.* **1.** *что* пӑтра́т, пӑлха́т; **меша́ть ка́шу в кастрю́ле** кастрюльти́ пӑтта́ пӑтра́т **2.** *что с чем* хутӑштӑ́р; **меша́ть во́ду с молоко́м** шывпа́ сĕт хутӑштӑ́р

мешо́к (мешка́) *сущ. муж.* ми́хĕ, мишӳ́к; **мешо́к из-под са́хара** са́хӑр миххи́; **мешо́к овся́** пĕр ми́хĕ сĕ́лĕ ◆ **спа́льный мешо́к** çывӑрмалли́ мишӳ́к *(ӑшӑ тытакан, тачӑ хупӑнакан кипке)*

мёд (мёда *и* мёду, о мёде, в меду́ *и* в мёде, на меду́) *сущ. муж.* пыл; **ли́повый мёд** çӑка́ пы́лĕ; **мёд в со́тах** пы́ллӑ карáс; **пить чай с мёдом** пылпа́ чей ĕç

мёрзнуть (*наст.* -ну, -нешь, -нут; *прош.* мёрз *и* мёрзнул, -ла, -ло, *множ.* -ли; *повел. ф.* -ни; *прич. действ. наст.* -нущий, *прош.* -нувший *и* -ший; *деепр. не употр.) глаг. несов.* **1.** шӑн, шӑнса́ лар, шӑнса́ хыт; **вода́ в ведре́ мёрзнет** витрери́ шыв шӑнса́ лара́ть **2.** (*син.* зя́бнуть) шӑн, кӳ́т, ĕнтĕрке́, шӑнса́ кай, шӑнса́ кӳ́т; **ру́ки мёрзнут без ва́режек** алси́шсĕр

а́лă шăна́ть; **мёрзнуть на ветру́** çил çинче́ ĕнтĕрке́

мёртвый (*кратк. ф.* мёртв, мертва́, мёртво *и* мертво́, *множ.* мёртвы *и* мертвы́; *сравн. ст.* мертве́е, мертве́й; *превосх. ст. не употр.*) *прил.* (*ант.* живо́й) ви́лĕ, ви́лнĕ, чӳ́нсăр; **мёртвое те́ло** ви́лĕ ӳ́т; **хорони́ть мёртвых** вилнисене́ пыта́р ◆ **мёртвый капита́л** у́сă ку́ме́н мул; **мёртвый час** кану́ сехе́чĕ *(кăнтăрла апачĕ хыççăнхи)*; **мёртвая тишина́** тулли́ ша́плăх; **сдви́нуть с мёртвой то́чки** ĕçĕ хускатса́ яр; **спать мёртвым сном** ним туйми́ çы́вăр

миг (-а) *сущ. муж.* (*син.* мгнове́ние, моме́нт) сама́нт; **в оди́н миг** пĕр самантра́

мига́ть (*наст.* -а́ю, -а́ешь, -а́ют) *глаг. несов.* куçа́ мăчлатта́р; куçа́ хĕссе́ ил *(систерсе)*

ми́гом *нареч.* (*син.* бы́стро) самантра́, ха́вăрт, часа́х, йăпăрта́х; **я ми́гом схожу́ туда́** э́пĕ унта́ йăпăрта́х кайса́ кила́тĕп

мизи́нец (-нца) *сущ. муж.* кача́ пӳ́рне́; **то́лько с мизи́нец** кача́ пӳ́рне́ пы́сăкăш çеç

микро́б (-а) *сущ. муж.* микро́б *(чи вĕтĕ организм)*; **болезнетво́рные микро́бы** чир ертеке́н микробсе́м

микро́н (-а) *сущ. муж.* микро́н *(вăрăмăш виçи — сантиметрăн пинмĕш пайĕ)*

микроско́п (-а) *сущ. муж.* микроско́п *(питĕ вĕтĕ япаласене пысăклатса кăтартакан хатĕр)*; **электро́нный микроско́п** электро́нлă микроско́п; **наблюда́ть в микроско́п** микроскопна́ сăна́

микрофо́н (-а) *сущ. муж.* микрофо́н *(сасса çырса илме, радиопа пама йышăнакан хатĕр)*; **говори́ть в микрофо́н** микрофо́н умĕнче́ кала́

милиционе́р (-а) *сущ. муж.* милиционе́р *(милицире ĕçлекен)*

мили́ция (-и) *сущ. жен.* мили́ци *(законлăха, обществăри йĕркелĕхе сыхлакан орган)*

миллиа́рд (-а) *сущ муж.* миллиа́рд *(пин миллионпа танлашакан хисеп)*; **три миллиа́рда рубле́й** ви́çĕ миллиа́рд те́нкĕ

миллигра́мм (-а) *сущ. муж.; множ.* **миллигра́ммы** (-гра́ммов *и* -грамм) миллигра́мм *(йывăрăш виçи — грамăн пинмĕш пайĕ)*

миллиме́тр (-а) *сущ. муж.* миллиме́тр *(вăрăмăш виçи — метрăн пинмĕш пайĕ)*

миллио́н (-а) *сущ. муж.* миллио́н *(пин хут пинпе танлашакан хисеп)*; **сто миллио́нов рубле́й** çĕр миллио́н те́нкĕ

миллионе́р (-а) *сущ. муж.* миллионе́р, миллио́нçă *(миллионлă мул хуçи)*

ми́мо 1. *нареч.* çумра́н, çу́ммăн, юнашăр; **ми́мо прое́хала автомаши́на** юнашăр автомаши́на иртсе́ ка́йрĕ **2**. *кого-чего, предлог с род. п.* çумĕнче́н, çумĕпе́, патĕнче́н, çывăхĕнче́н; **доро́га прохо́дит ми́мо ле́са** çул вăрма́н çумĕпе́ иртсе́ каять

мимохо́дом *нареч.* çула́ май; **зайти́ мимохо́дом к това́рищу** юлта́ш патне́ çула́ май кĕрсе́ тух

ми́на (-ы) *сущ. жен.* ми́на *(çĕр айне е шыва пытарса лартакан снаряд)*; **противота́нковая ми́на** танксене́ пĕтермелли́ ми́на; **маши́на подорвала́сь на ми́не** маши́на минăпа́ арка́ннă

минера́л (-а) *сущ. муж.* минера́л *(хими тытăмĕпе пĕрешкел тăпрари капламĕ)*; **образцы́ минера́лов** минералсе́н тĕслĕхĕсе́м

минера́льный *прил.* минера́л -ĕ; минера́ллă; **минера́льная вода́** минера́ллă шыв

минима́льный *прил.* (*ант.* максима́льный), **минима́льно** *нареч.* чи пĕ́чĕк, чи саха́л, чи вắйсăр; **ми-**

нима́льный разме́р опла́ты труда́ ĕç укçи́н чи пĕ´чĕк виçи́; **минима́льная пе́нсия** чи пĕ´чĕк пе́нси

ми́нимум (-а) *сущ. муж. (ант.* ма́ксимум) чи пĕчĕккú, чи сахалли́; **на э́то уйдёт ми́нимум де́сять дней** ку ĕçé тума́ сахалта́н та вы́нă кун каять

министе́рство (-а) *сущ. сред.* министе́рство; **министе́рство вну́тренних дел** шалти́ ĕçсéн министерствú; **министе́рство культу́ры и по дела́м национа́льностей** культурăпа́ национа́льноçсен ĕçĕсéн министерствú

мини́стр (-а) *сущ. муж.* мини́стр; **мини́стр фина́нсов** фина́нс мини́стрĕ; **замести́тель мини́стра** мини́стр çу́мĕ

миномёт (-а) *сущ. муж.* миномёт; **вести́ ого́нь из миномётов** миномётсенчéн пер

ми́нус (-а) *сущ. муж. (ант.* плюс) ми́нус *(«—» паллă, унпа кăларнине, çуклă хисепе е сивве палăртаççĕ);* **сего́дня ми́нус два́дцать гра́дусов** паян çи́рĕм гра́дус си́вĕ

ми́нусовый *прил.* ми́нус -ĕ; ми́нуслă; **ми́нусовая температу́ра** ми́нуслă температу́ра *(ноль градусран сивĕрех)*

мину́та (-ы) *сущ. жен.* мину́т *(вăхăт виçи — сехетĕн утмăлмĕш пайĕ, утмăл çеккунт*); **пять мину́т седьмо́го** у́лттă иртни́ пи́лĕк мину́т; **без десяти́ мину́т три** ви́ççĕ ситесси́ вы́нă мину́т ◆ **с мину́ты на мину́ту** кĕçвĕ´ç; **на мину́ту** йăпăртлăха́; **сию́ мину́ту** халéх; **помо́чь в тру́дную мину́ту** йы́вăр самантра́ пу́лăш

мир[1] (-а) *сущ. муж.; множ.* **миры́** (-о́в) **1.** (*син.* вселéнная) тĕнчé, çут тĕнчé; **происхожде́ние ми́ра** çут тĕнчé пулса́ кайни́ **2.** (*син.* Земля́) Çĕр, тĕнчé; **наро́ды ми́ра** тĕнчери́ халăхсéм; **чемпио́н ми́ра** тĕнчé чемпио́нĕ; **он мно́го пое́здил по ми́ру** вăл нума́й тĕнчé кассá çу́рéнĕ **3.** (*син.* о́бласть, сфе́ра) тĕнчé, ху́тлăх; **мир живо́тных** чĕр чун тĕнчи́; **мир расте́ний** ӳсéн-тăра́н тĕнчи́; **мир зву́ков** сасăсéн ху́тлăхĕ; **вну́тренний мир челове́ка** этéм чун-чĕри́ ◆ **всем ми́ром** пĕ´тĕм йышпа́; **пойти́ по́ миру** çука́ ер, кĕлмĕçé тух; **На миру́ и смерть краса́** *посл.* Йыш çинчé ви́лĕм те хăру́шă мар

мир[2] (-а) *сущ. муж.; множ. нет* **1.** (*ант.* война́) мир, тă´нăçлăх; **заключи́ть мир** мирлéш, мир ту **2.** (*син.* согла́сие; *ант.* вражда́) килĕшӳ´лĕх, çураçу́лăх; **жить в ми́ре** килĕштерсé пу́рăн

мири́ться (*наст.* мирю́сь, мири́шься *и* ми́ришься, миря́тся *и* ми́рятся; *повел. ф.* мири́сь, мири́тесь; *прич. действ. наст.* миря́щийся, *прош.* мири́вшийся; *деепр.* мирясь) *глаг. несов.* **1.** *с кем (ант.* ссо́риться) мирлéш, çура́ç *(хирĕçекенпе)* **2.** *с чем* ту́с, чăт, ки́лĕш, çырла́х, ту́ссé пу́рăн; **мири́ться с тру́дностями** йывăрлăхсенé ту́ссé пу́рăн

ми́рный (*кратк. ф.* ми́рен, ми́рна *и* мирна́, ми́рно, *множ.* ми́рны; *сравн. ст.* мирнéе, мирнéй; *превосх. ст. не употр.) прил.* ми́рлĕ, тă´нăçлă, çураçу́ллă, килĕшӳ´ллĕ; **ми́рное вре́мя** ми́рлĕ вă´хăт; **жить ми́рно** тă´нăçлă пу́рăн

мировоззре́ние (-я) *сущ. сред.* тĕнчé ку́рăм

мирово́й[1] *прил.* тĕнчé -ĕ; тĕнчери́; **мирова́я война́** тĕнчé вăрçи́; **завоева́ть мирову́ю сла́ву** тĕнчипе́ чапа́ тух; **он установи́л мирово́й реко́рд** вăл тĕнчé рекóрчĕ ту́нă

мирово́й[2] *прил.*: **мирово́й судья́** мирово́й судья́ *(тавлашуллă вак выйтусене пăхаканни)*

миротво́рческий *прил.* мирлештерӳ´ -ĕ; **миротво́рческие си́лы** килĕштерӳ´ вăйĕсéм

ми́ска (-и) *сущ. жен.* ча́шăк, ти́рĕк

(пĕчĕкки); **эмалиро́ванная ми́ска** эмальенé чáшăк

миссионе́р (-а) *сущ. муж.*, **миссионе́рка** (-и) *жен.* миссионéр *(чиркӳ хушса янипе тĕн саракан çын)*; **католи́ческие миссионе́ры** католик тĕ́нĕн миссионерĕсéм

ми́тинг (-а) *сущ. муж.* ми́тинг *(общество пурнăçĕн çивĕч ыйтăвĕсене сӳтсе явма ирттерекен пысăк пуху)*

митрополи́т (-а) *сущ. муж.* митрополи́т *(архиерейсен хисеплĕ ячĕ)*

миф (-а) *сущ. муж.* миф, халáп; **ми́фы о сотворе́нии ми́ра** çут тĕнчené пултарни́ çинчéн калакáн мифсéм

мифоло́гия (-и) *сущ. жен.* **1.** мифсéм, халапсéм; **чува́шская мифоло́гия** чăвáш мифĕсéм **2.** мифолóги *(мифсене тĕпчекен ăслăлăх)*

ми́чман (-а) *сущ. муж.* ми́чман *(çар флотĕнче — офицертан кĕçĕнрех чин)*

мише́нь (-и) *сущ. жен.* мишéнь *(тĕл пемелли ӳкерчĕк, ĕлке)*; **кру́глая мише́нь** çаврá мишéнь; **поразúть мише́нь с пе́рвого вы́стрела** пĕррé персéх мишенé лектéр

мла́дший *прил. (ант.* ста́рший) **1.** кĕ́ çĕн *(çул-ӳсĕмпе)*; **мла́дший сын** кĕ́ çĕн ы́вăл; **мой мла́дший брат** мáнăн шắллăм; **моя́ мла́дшая сестра́** мáнăн йắмăк **2.** кĕ́çĕн (*ĕçри выра́нна*); **мла́дший лейтена́нт** кĕ́ çĕн лейтенáнт; **мла́дший нау́чный сотру́дник** кĕ́çĕн ắслăлăх ĕçчéнĕ **3.** кĕ́çĕн, пуçлáмăш; **мла́дшие кла́ссы шко́лы** шкултú пуçлáмăш классéм

млекопита́ющие (-их) *сущ. множ.; един.* **млекопита́ющее** (-его) *сред.* сĕтпé ӳстерекенсéм

мле́чный *прил.*: **Мле́чный Путь** Кáйăк хур Çӳлĕ *(тӳпере çутă тăрăх пек курăнакан çăлтăрсен капламĕ)*

мне́ние (-я) *сущ. сред.* шӳхăш; **вы́сказать своё мне́ние** хáрпăр шухăшнé калá; **обме́н мне́ниями** пĕр-пĕри́н шухăшĕсемпé паллашни́

мно́гий 1. *прил.* нумáй, чылáй; **прошли́ мно́гие го́ды** нумáй çул и́ртрĕ **2. мно́гое** (-ого) *сущ. сред.* нумá-йăшĕ, чылáйăшĕ; **мно́гое из заду́манного сбыло́сь** шутласá хунинчéн нумáйăшĕ пурнăçлáнчĕ

мно́го (*сравн. ст.* бóльше) **1.** *нареч. и в знач. сказ.* нумáй, йы́шлă; **в па́рке всегда́ мно́го наро́ду** паркрá яланáх хáлăх нумáй **2.** *числит. неопр.* нумáй; **прошло́ мно́го лет** нумáй çул и́ртрĕ ◆ **ни мно́го ни ма́ло** шăп та лăп

многоде́тный *прил.* нумáй ачáллă; **посо́бия многоде́тным се́мьям** нумáй ачáллă çемьесенé паракáн пулăшу́

многолю́дный *прил.* йы́шлă хáлăхлă, йы́шлă; **многолю́дное собра́ние** йы́шлă хáлăхлă пухý

многонациона́льный *прил.* нумáй нáциллĕ; **многонациона́льная респу́блика** нумáй нáциллĕ респýблика

многообра́зный *прил. (ант.* однообрáзный), **многообра́зно** *нареч.* нумáй тĕ́рлĕ; **многообра́зные явле́ния** нумáй тĕ́рлĕ пулăмсéм

многото́чие (-я) *сущ. сред.* нумáй пắнчă, виç пắнчă *(чарăну палли — ...)*

многочи́сленный *прил. (ант.* малочи́сленный) йы́шлă, нумáй; **привести́ многочи́сленные приме́ры** нумáй тĕ́слĕх илсé кăтáрт

мно́жественный *прил.*: **мно́жественное число́** нумáйлă хисéп

мобилиза́ция (-и) *сущ. жен.* **1.** (*ант.* демобилизáция) мобилизáци *(çар çыннисене вăрçă вăрçма пухса хатĕрлени)*; **всео́бщая мобилиза́ция** пĕтĕмĕшлé мобилизáци; **провести́ мобилиза́цию** мобилизáци тусá ирттéр **2.** ĕçé яни́, ýсă курни́; **мобилиза́ция де́нежных средств** укçá-тенкé пухсá ĕçé яни́

мобилизова́ть (*наст. и будущ.* -зу́ю, -зу́ешь, -зу́ют; *прич. страд. прош.* -зó-

ванный) *глаг. сов. и несов.* **1.** *кого-что* мобилизацилé, мобилизáци ту; **мобилизовáть запáсников** запасрú çар çыннисенé мобилизацилé **2.** явăçтáр, ĕçé яр, úсă кур; **мобилизовáть материáльные ресýрсы** пур пек пурлăхá ĕçé яр

мобúльный *прил. (син.* подвúжный) кýçăмлă; **мобúльные войскá** кýçăмлă çарсéм ◆ **мобúльный телефóн** кĕсьé телефóнĕ

могúла (-ы) *сущ. жен.* вил тăпрú, масáр шă ´тăкĕ; **брáтская могúла** úшкăнлă вил тăпрú; **возложúть цветы́ на могúлу** вил тăпрú çинé чечексéм хур ◆ **сойтú в могúлу** вил, çĕрé кĕр

могúльный *прил.* вил тăпрú -ĕ, масáр -ĕ; **могúльный крест** масáр хĕрéсĕ; **могúльный холм** вил тăпрú ◆ **могúльная тишинá** туллú шă´плăх

могýчий *прил. (син.* мóщный, сúльный) вă´йлă, хăвáтлă, хевтéллĕ, патвáр; **могýчий богаты́рь** хăвáтлă úлăп

могýщество (-а) *сущ. сред.* хăвáт, вăй-хăвáт; **могýщество госудáрства растёт** патшáлăх вăй-хăвáчĕ úсéт

мóда (-ы) *сущ. жен.* мóда *(халăх юратакан çĕнĕлĕх, сăм., туммтир, юрăкĕвĕ);* **войтú в мóду** модăнá кĕр; **журнáл мод** модăсéн журнáлĕ

модéль (-и) *сущ. жен.* модéль, ĕлкéт тĕ´слĕх; **модéль самолёта** самолёт модéлĕ; **нóвые модéли одéжды** тумтúрĕн çĕ´нĕ тĕслĕхĕсéм

мóдный (*кратк. ф.* мóден, модná *и* мóдна, мóдно, *множ.* мóдны) *прил.*, **мóдно** *нареч.* мóдăллă; **мóдная одéжда** мóдăллă тумтúр; **мóдно одевáться** модăпá килĕшýллĕн тумлáн

мóжет *вводн. сл.* тен; **Мóжет, не стóит егó ждать?** Тен, ăнá кĕтмé кúрлĕ мар?

можжевéльник (-а) *сущ. муж.* úртăш *(чăрăш евĕр йывăç)*

мóжно *в знач. сказ., с неопр. ф.* юрáть, пулáть, чармáн, чарý çук; **здесь мóжно хорошó отдохнýть** кунтá авáн канмá пулáть; **Мóжно войтú?** Кĕмé юрáть-и?

мозг (мóзга *и* мóзгу, о мóзге, в мóзге *и* в мозгý) *сущ. муж.; множ.* **мозгú** (-óв) мимé; **головнóй мозг** пуç мимú; **спиннóй мозг** çýрăм шăммú мимú; **жáреные мозгú** ăшалáнă мимé

мозóль (-и) *сущ. жен.* шыçăнчăк; тир хыттú, тир хытнú *(алăри, урари)*; **кровáвая мозóль** юнлă шыçăнчăк

мой (моегó) *муж.*, **моя́** (моéй) *жен.*, **моё** (моегó) *сред.; множ.* **мои́** (моúх) *местоим. притяжат.* ман, мáнăн; **моя́ книгá** мáнăн кĕнекé; **он мой друг** вăл мáнăн тус

мóкнуть (*наст.* -ну, -нешь, -нут; *прош.* мок *и* мóкнул, -ла, -ло, *множ.* -ли; *прич. действ. наст.* -нущий, *прош.* -ший *и* -нувший; *деепр.* -нув *и* -ши) *глаг. несов. (ант.* сóхнуть) йĕпéн, ислéн; **мóкнуть под дождём** çумăрпá йĕпéн

мóкрый (*кратк. ф.* мокр, мокрá, мóкро, *множ.* мокры́ *и* мóкры; *сравн. ст.* мокрéе, мокрéй; *превосх. ст.* мокрéйший) *прил. (ант.* сухóй) йĕпé, нýрĕ, ислéнчĕк; **мóкрая одéжда** йĕпé тумтúр; **мóкрая погóда** йĕпé-сапá

мóкша (-и) *сущ. муж. и жен.* мă´кшă, мăкшăсéм *(мордва халăхĕн пĕр пайĕ)*; **язы́к мóкша** мă´кшă чĕлхú; **селéния мóкши** мă´кшă ялĕсéм

мокшáнин (-а) *сущ. муж.*, **мокшáнка** (-и) *жен.; множ.* **мокшáне** (-áн) мăкшăсéм

молéбен (-бна) *сущ. муж.* кĕскé кĕ´лĕ (*христиансен*)

молéкула (-ы) *сущ. жен.* молéкула *(япалан темиçе атомран тăракан пĕчĕк пайĕ);* **молéкула кислорóда** кислорóд молекулú

моли́тва (-ы) *сущ. жен.* кĕ´лĕ; **чита́ть моли́тву** кĕ´лĕ вула́

моли́ться (*наст.* молю́сь, мо́лишься, мо́лятся; *повел. ф.* моли́сь, моли́тесь; *прич. действ. наст.* моля́щийся, *прош.* моли́вшийся; *деепр.* моля́сь) *глаг. несов., кому-чему* кĕ´лĕ ту, пуҫҫа́п; **моли́ться Бо́гу** Турра́ пуҫҫа́п

мо́лния (-и) *сущ. жен.* **1.** ҫи́ҫĕм; **сверкну́ла мо́лния** ҫи́ҫĕм ҫиҫсе́ и́лчĕ **2.** мо́лни *(тумтире хупмалли)*; **ку́ртка на мо́лнии** мо́лниллĕ ку́ртка

молоде́ц (-дца́) *сущ. муж.* маттӳ́р; **Ты молоде́ц, Ко́ля!** Маттӳ́р э́сĕ, Ко́ля!

молодёжный *прил.* ҫа́мрăк -ĕ; **молодёжные организа́ции** ҫамрăксе́н организацийĕсе́м

молодёжь (-и) *сущ. жен.* ҫамрăксе́м, яш-кĕ´рĕм; **молодёжь собрала́сь на дискоте́ку** ҫамрăксе́м дискотекăна́ пӳхăннă

молодожёны (-ов) *сущ. множ.; един.* **молодожён** (-а) *муж.* ҫа́мрăк мă´шăр, кĕҫĕн ҫынпа́ упăшки́; **поздравля́ть молодожёнов** ҫа́мрăк мăшăра́ саламла́

молодо́й (*кратк. ф.* мо́лод, молода́, мо́лодо, *множ.* мо́лоды; *сравн. ст.* моло́же; *превосх. ст. не употр.*) *прил.*, **мо́лодо** *нареч.* **1.** (*ант.* ста́рый) ҫа́мрăк, яш; **молодо́й челове́к** ҫа́мрăк ҫын; **в молоды́е го́ды** яш ӳ́сĕмре́ **2.** ҫа́мрăк, ҫĕ´нĕ, е́шĕл; **молода́я листва́** е́шĕл ҫулҫăсе́м; **молодо́й карто́фель** ҫĕ´нĕ ҫĕр улми́; **молодо́е предприя́тие** ҫĕ´нĕ предприя́ти ◆ **молоды́е** ҫа́мрăк ма´шăр

мо́лодость (-и) *сущ. жен. (ант. ста́рость)* ҫа́мрăклăх, я́шлăх; **в мо́лодости** ҫа́мрăк чухне́; **вспомина́ть мо́лодость** яш ĕмĕре́ аса́ ил

моло́ки (-о́к) *сущ. множ.* аҫа́ вăлча́ *(пулăсен ар вăрлăхĕ)*

молоко́ (-а́) *сущ. сред.* сĕт; **ко́зье молоко́** качака́ сĕ´чĕ; **парно́е молоко́** тин су́нă сĕт; **кипячёное молоко́** вĕре́тнĕ сĕт; **ки́слое молоко́** йӳ´ҫĕтнĕ сĕт, ту́рăх; **сгущённое молоко́** ҫăра́тнă сĕт; **вари́ть ка́шу с молоко́м** сĕ´тлĕ пă´тă пĕҫе́р ◆ **молоко́ на губа́х не обсо́хло** тути́ ҫинче́ сĕт типме́н *(ҫамрăк, айван)*

мо́лот (-а) *сущ. муж.* **1.** мăлату́к *(пысăкки)*; **кузне́чный мо́лот** ти́мĕрҫĕ мăлату́кĕ **2.** мо́лот *(спорт хатĕрĕ)*; **мета́ние мо́лота** мо́лот ывăтни́

молоти́ть (*наст.* -очу́, -о́тишь, -о́тят; *прич. страд. наст.* -оти́мый, *прош.* -о́ченный; *деепр.* -отя́) *глаг. несов., что* ҫап, ăвăн ҫап; **ра́ньше хлеб молоти́ли цепа́ми** ĕ´лĕк тыррă тăпачпа́ ҫа́пнă

молото́к (-тка́) *сущ. муж.* мăлату́к; **сапо́жный молото́к** а́тăҫă мăлату́кĕ

моло́ть (*наст.* мелю́, ме́лешь, ме́лют; *повел. ф.* мели́; *прич. действ. наст.* ме́лющий, *прош.* моло́вший; *прич. страд. прош.* мо́лотый; *деепр.* меля́) *глаг. несов., что* ăвăрт, ăвăр; **ме́льница ме́лет** арма́н авăра́ть; **моло́ть зерно́** тырă ăвăрт; **мо́лотый ко́фе** ăвăртнă ко́фе

моло́чный *прил.* **1.** сĕ´тлĕ, сĕт парака́н; **моло́чная коро́ва** сĕ´тлĕ ĕне́ **2.** сĕт -ĕ; сĕ´тлĕ; **моло́чная ка́ша** сĕтпе́ пĕҫе́рнĕ пă´тă ◆ **моло́чные зу́бы** сĕт шăлĕсе́м *(ача ӳснĕҫем тухса ӳкеннисем)*; **моло́чный телёнок** а́мăш ай пăру́, ĕмĕртеке́н пăру́

молчали́вый *прил.*, **молчали́во** *нареч.* чĕ´мсĕр; шарлама́сăр; **молчали́вый челове́к** чĕ´мсĕр ҫын; **молчали́во согласи́ться** ним шарлама́сăр ки́лĕш

молча́ть (*наст.* -чу́ , -чи́шь, -ча́т; *деепр.* мо́лча) *глаг. несов.* ан чĕн, ан кала́ҫ, ан шарла́, шăп пул; **Что ты молчи́шь?** Ма э́сĕ ни́мĕн те шарлама́стăн?

моль (-и) *сущ. жен.* кĕве́; **пальто́ изъе́дено мо́лью** пальтона́ кĕве́ ҫи́нĕ

моме́нт (-а) *сущ. муж. (син.* миг, мгновéние) самáнт; **благоприя́тный моме́нт** мáйлă самáнт; **сде́лать в оди́н моме́нт** ĕçé пĕр самантрáх ту; **в да́нный моме́нт** хальхи́ вăхăтрá

моментáльный *прил. (син.* мгновéнный), **моментáльно** *нареч.* хă ´вăрт; самантрáх; **он моментáльно исчéз** вăл самантрáх куçрáн çухáлчĕ

монáрх (-а) *сущ. муж.* монáрх *(монархи пуçлăхĕ: патша, император, король)*

монархи́ческий *прил.* монáрхи -ĕ; монáрх -ĕ; **монархи́ческие дина́стии** монархсéн нéсĕл-тăхăмĕсéм

монáрхия (-и) *сущ. жен.* монáрхи *(нимпе пӳлмен патша влаçĕ; çавăн пек тытăмлă патшалăх);* **конституцио́нная монáрхия** конституцúллĕ монáрхи

монасты́рский *прил.* мăнастúр -ĕ; **монасты́рское хозя́йство** мăнастúр хуçăлăхĕ; **монасты́рская це́рковь** мăнастúр чúркĕвĕ

монасты́рь (-я) *сущ. муж.* мăнастúр *(тĕне парăннă çынсен пĕрлешĕвĕ, вĕсен çурт-йĕрĕ);* **мужско́й монасты́рь** арçы́н мăнастúрĕ; **огра́да монасты́ря́** мăнастúр картú

моná́х (-а) *сущ. муж.*, **моná́хиня** (-и) *и* **моná́шенка** (-и) *жен.* манáх *(мăнастирте ĕçлесе, кĕлĕ туса пурăнакан);* **постри́чься в моná́хи** манаха́ кай, манáх ятнé ил

моná́шеский *прил.* манáх -ĕ; **моná́шеское одея́ние** манáх тумĕ; **моná́шеская ке́лья** манáх пӳ´лĕмĕ

моná́шество (-а) *сущ. сред.* манáхлăх, манáх пӳрнăçĕ; **приня́ть моná́шество** манаха́ кай

монго́л (-а) *сущ. муж.*, **монго́лка** (-и) *жен.; множ.* **монго́лы** (-ов) монголсéм *(тĕрĕксемпе хурăнташлă халăхсем)*

монго́льский *прил.* **1.** монго́л -ĕ; **монго́льские языки́** монго́л чĕлхисéм *(монгол, бурят, калмăк чĕлхисем)* **2.** Монго́ли -ĕ; Монголири́; **монго́льские сте́пи** Монго́ли çеçéн хирĕсéм

моне́та (-ы) *сущ. жен.* укçá, вак укçá; **серéбряная моне́та** кĕ´мĕл укçá; **моне́та в де́сять копе́ек** вӳнă пӳслăх укçá

монито́р (-а) *сущ. муж.* монитóр *(ĕç мĕнле пынине асăрхаса тăмалли телевидени экранĕ)*

монографúя (-и) *сущ. жен.* монографи *(пĕр ыйтăва тĕплĕн çутатса паракан тĕпчев ĕçĕ, кĕнеке)*

монолóг (-а) *сущ. муж.* монолóг *(пĕр çын ыттисене итлеме е хăй тĕлĕшĕн сăмах калани);* **сценúческий монолóг** сцéна çинчú монолóг

монополúст (-а) *сущ. муж.* **1.** монополúст *(пĕр-пĕр отраслре монополипе усă куракан, конкуренцисĕр ĕçлекен);* **предприя́тия-монополúсты** монополúст предприятисéм **2.** монополúст *(монополиллĕ капитал представителĕ, пуян капиталист)*

монопóлия (-и) *сущ. жен.* **1.** монопóли *(пĕр-пĕр ĕç, отрасль пӗтӗмпех пĕр алăра пулни);* **госуда́рственная монопóлия** патшáлăх монопóлийĕ **2.** монопóли *(капиталистсен пĕрлешĕвĕ);* **фина́нсовые монопóлии** финáнс монополийĕсéм

монопóльный *прил.*, **монопóльно** *нареч.* монопóли -ĕ; монопóлиллĕ; **монопóльное пра́во** монопóлиллĕ прáво

мора́ль (-и) *сущ. жен. (син.* нрáвственность) мораль, этéплĕх *(çынсен обществăри тивĕçĕсене палăртакан йĕркесем)*

мора́льный *прил.*, **мора́льно** *нареч.* **1.** (*син.* нрáвственный) мораль -ĕ; этéплĕх -ĕ; **мора́льные при́нципы** этéплĕх принципĕсéм **2.** (*син.* душéвный) чун-чĕ ´м -ĕ; чун хавáл -ĕ; кă ´мăл; **мора́льная подде́ржка** чун хавалá çĕклени

мордви́н (-а) *и* **мордо́вец** (-вца) *сущ. муж.*, **мордви́нка** (-и) *и* **мордо́вка** (-и) *жен.; множ.* **мордви́ны** (-и́н), **мордо́вцы** (-цев) *и собир.* **мордва́** (-ы́) мордва́, мордвасе́м *(финн-угрсен йышне кӗрекен халӑх)*

мордо́вский *прил.* мордва́ -ӗ; Мордо́ви -ӗ; Мордовири́; **мордо́вские пе́сни** мордва́ юррисе́м; **мордо́вские языки́** мордва́ чӗлхисе́м *(ирҫе тата мӑкшӑ чӗлхисем)*; **мордо́вские ре́ки** Мордовири́ юха́н шывсе́м

мо́ре (-я) *сущ. сред.; множ.* **моря́** (-е́й) ти́нӗс; **Средизе́мное мо́ре** Вӑта́ ҫӗр ти́нӗс; **отдыха́ть на мо́ре** ти́нӗс хӗрринче́ кан

морж (-а́) *сущ. муж.* морж *(ҫурҫӗрти тинӗссенче пурӑнакан пысӑк чӗр чун)*

морко́вь (-и) *сущ. жен.* ки́шӗр; **се́ять морко́вь** ки́шӗр ак

мормы́шка (-и) *сущ. жен.* мормы́шка *(ҫутланкӑ вӑлта йӗппи)*; **лови́ть ры́бу на мормы́шку** мормышкапа́ пу́лӑ тыт

моро́женое (-ого) *сущ. сред.* моро́женӑй *(шӑнтса тунӑ пылак ҫимӗҫ)*; **шокола́дное моро́женое** шокола́длӑ моро́женӑй

моро́з (-а) *сущ. муж.* си́вӗ *(хӗллехи)*; **трескучий моро́з** шартлама́ си́вӗ; **три́дцать гра́дусов моро́за** вӑ́тӑр гра́дус си́вӗ; **уда́рили моро́зы** ҫанта́лӑк сивӗтсе́ пӑра́хрӗ

морско́й *прил.* ти́нӗс -ӗ; тинӗсри́; **морска́я вода́** ти́нӗс шы́вӗ; **морска́я пехо́та** ти́нӗс пехоти́

морфоло́гия (-и) *сущ. жен.* морфоло́ги *(чӗлхе пӗлӗвӗн пуплев пайӗсене тата сӑмах тытӑмне тӗпчекен уйрӑмӗ)*

морщи́на (-ы) *сущ. жен.* пӗркеле́нчӗк, карт, хутла́нчӑк; **лицо́ всё в морщи́нах** сӑн-пи́т пӗркеленсе́ пӗ́тнӗ

мо́рщиться (*наст.* -щусь, -щишься, -щятся; *повел. ф.* -ься, -ьтесь; *прич. действ. наст.* -щийся, *прош.* -ившийся; *деепр.* -ась) *глаг. несов.* **1.** пӗркеле́, хутла́т *(пите, ҫамкана)* **2.** *1 и 2 л. не употр.* пӗркеле́н, лӳ́чӗркéн, хутла́н *(туптир ҫинчен)*

моря́к (-а́) *сущ. муж.* моря́к *(флотра службӑра тӑракан)*; **вое́нные моряки́** ҫар морякӗсе́м

мост (мо́ста *и* моста́, по мосту́ *и по́ мосту, о мосте́, на мосту́*) *сущ. муж.*; *множ.* **мосты́** (-о́в) кӗпе́р; **железнодоро́жный мост** чугу́н ҫул кӗпе́рӗ; **ка́менный мост** чул кӗпе́р; **усто́и моста́** кӗпе́р тӗрекӗсе́м

мото́к (мотка́) *сущ. муж.* ҫӑмха́, тӗрке́; **мото́к ни́ток** ҫип ҫӑмхи́; **мото́к про́волоки** пралу́к тӗркѝ

мото́р (-а) *сущ. муж.* мото́р *(электричествӑпа е горючипе ӗҫлекен двигатель)*; **запусти́ть мото́р** мотора́ тапратса́ яр

мото́рный *прил.* **1.** мото́р -ӗ; **мото́рное то́пливо** мото́р топливи́ **2.** мото́рлӑ; **мото́рная ло́дка** мото́рлӑ ки́мӗ

мотоци́кл (-а) *сущ. муж.* мотоци́кл; **мотоци́кл с коля́ской** сапка́ллӑ мотоци́кл; **е́здить на мотоци́кле** мотоциклпа́ ҫу́ре́

мох (мха *и* мо́ха, мху *и* мо́ху, во мху *и* в мо́хе) *сущ. муж.; множ.* **мхи** (мхов) мӑк; **де́рево оброслó мхом** йывӑҫа́ мӑк пу́снӑ

мохна́тый *прил.* **1.** *(син.* косма́тый) ҫӑмлама́с, лапсӑркка́; **мохна́тая соба́ка** лапсӑркка́ йы́тӑ **2.** (*син.* махро́вый) тӗ ´клӗ; **мохна́тое полоте́нце** тӗ ´клӗ ал шӑлли́

моча́ло (-а) *сущ. сред.* мунчала́, ку́рӑс; **вить верёвку из моча́ла** курӑсра́н вӗре́н яв

мочи́ть (*наст.* мочу́, мо́чишь, мо́чат; *прич. действ. наст.* мо́чащий, *прош.* мочи́вший; *прич. страд. прош.* мо́ченный; *деепр.* моча́) *глаг. несов., что (ант.* суши́ть) йӗпе́т, ислé́т, ис-

лентéр; **мочи́ть бельё пéред сти́ркой** çумалли́ кĕпé-йĕмé ислентéр ◆ **мочи́ть я́блоки** пан улми́ йӳ́çĕт

мочь (*наст.* могу́, мóжешь, *множ.* мóжем, мóжете, мóгут; *прош.* мог, моглá, моглó, *множ.* могли́; *повел. ф. не употр.) глаг. несов. с неопр. ф.* пултáр; **я могу́ тебé помóчь** э́пĕ санá пулăшмá пултарáтăп; **э́того не мóжет быть** кун пек пулмá пултарайма́сть ◆ **мóжет быть** *вводн. сл.* тен

мóщность (-и) *сущ. жен.* хăвáтлăх, хăвáт; **произвóдственные мóщности** произвóдство хăвачĕсéм; **мóщность дви́гателя — сто лошади́ных сил** дви́гатель хăвáтлăхĕ — çĕр лашá вă´йĕ

мóщный *прил. (син.* могу́чий), **мóщно** *нареч.* хăвáтлă, вă´йлă; **мóщный трáктор** хăвáтлă трáктор

мрáмор (-а) *сущ. муж.* мрáмор *(çурт-йĕр илемлетме, палăксем тума усă куракан илемлĕ чул)*

мрáчный (*кратк. ф.* -чен, -чнá, -чно, *множ.* -чны́ *и* -чны) *прил. (син.* угрю́мый; *ант.* весёлый), **мрáчно** *нареч.* салху́, ă´мăр, ту́нсăхлă, кă´мăлсăр; **мрáчное лицó** кă´мăлсăр сăнпи́т

мстить (*наст.* мщу, мстишь, мстят; *прич. действ. наст.* мстя́щий, *прош.* мсти́вший; *деепр.* мстя) *глаг. несов., кому* тáвăр; **мстить врагу́** тăшманá тáвăр

му́дрость (-и) *сущ. жен.* ăс, ăс-хáл, ă´слăх; **нарóдная му́дрость** хáлăх ăс-хáлĕ

му́дрый *(кратк. ф.* мудр, мудрá, му́дро, *множ.* мудры́ *и* му́дры; *сравн. ст.* мудрéе, мудрéй; *превосх. ст.* мудрéйший) *прил.*, **му́дро** *нареч.* ă´слă, ăс-хáллă, ăсчáх; **му́дрый стáрец** ăс-хáллă стари́к; **он поступи́л му́дро** вăл ă´слă ту́рĕ

муж (-а) *сущ. муж.*; **мужья́** (мужéй, мужья́м) *множ. (син.* супру́г; *ант.* женá) упăшкá, мă´шăр; **муж с женóй** упăшкипé áрăмĕ

му́жественный *прил. (син.* хрáбрый, отвáжный), **му́жественно** *нареч.* хăю́ллă, хастáр, хастáрлă, хáрсăр; **му́жественный вóин** хастáр салтáк; **му́жественно вести́ себя́** хăю́ллă пул

мужскóй *прил. (ант.* жéнский) ар -ĕ, арçын -ĕ; **мужскóе пальтó** арçын пальтóвĕ; **мужски́е ухвáтки** арçынлá тыткалáрăш (*хĕрарăмăн)* ◆ **мужскóй род** ар нéсĕлĕ *(грамматика формисен тĕсĕ)*

мужчи́на (-ы) *сущ. муж. (ант.* жéнщина) арçын, ар; **пожилóй мужчи́на** çуллáннă арçы́н

музéй (-я) *сущ. муж.* музéй *(историпе культура палăкĕсене пухса халăха кăтартакан учреждени);* **краевéдческий музéй** краевéдени музéйĕ; **худóжественный музéй** ӳнéр музéйĕ; **шкóльный музéй** шкул музéйĕ

му́зыка (-и) *сущ. жен.* му́зыка, ю́рă-кĕ´вĕ; **эстрáдная му́зыка** эстрáда музыки́; **чувáшская нарóдная му́зыка** чăвáш хáлăх юрри́-кĕвви́

музыкáнт (-а) *сущ. муж.* музыкáнт, му́зыкçă; **самодéятельные музыкáнты** пултару́лăх музыкçисéм

му́ка (му́ки) *сущ. жен.; множ.* **му́ки** (мук, му́кам) асáп, терт, хĕнху́р; **терпéть му́ки** асаплáн, тертлéн

мукá (-и́) *сущ. жен.* çă´нăх; **пшени́чная мукá** ту́лă çă´нăхĕ; **молóть муку́** çă´нăх áвăрт; **просéивать муку́** çă´нăх аллá ◆ **травянáя мукá** ку́рăк çă´нăхĕ *(витаминлă выльăх апачĕ)*

мультфи́льм (-а) *сущ. муж. (сокр.:* мультипликациóнный фильм) мультфи́льм; **по телеви́дению демонстри́руются мультфи́льмы** телевиденипé мультфильмсéм кăтартáççĕ

муниципалитéт (-а) *сущ. муж.* муниципалитéт *(вырăнти тытăм органĕ)*; **городскóй муниципалитéт** хулá муниципалитéчĕ

муниципа́льный *прил.* муниципалитéт -ĕ; муниципа́ллă; **муниципа́льное предприя́тие** муниципа́ллă предприя́ти; **муниципа́льная со́бственность** муниципалитéт хăрпăрлăхĕ

муравéй (-вья́) *сущ. муж.; множ.* **муравьи́** (-вьёв) кă´ткă; **лесны́е муравьи́** вăрма́н кăткú

муравéйник (-а) *сущ. муж.* кă´ткă тĕми́, кă´ткă йăвú

му́скул (-а) *сущ. муж.* (*син.* мы́шца) му́скул; **му́скулы рук** а́лă мускулĕсéм; **развива́ть му́скулы** мускул-сенé çирĕплéт

му́скулистый *и* **мускули́стый** *прил.* тĕрéклĕ, патвáр, çи́рĕп му́скуллă; **мускули́стое те́ло** патвáр ӳт-пӳ´

му́сор (-а) *сущ. муж.* (*син.* отбро́сы) çӳп-çáп, ă´пăр-та́пăр; **очи́стить двор от му́сора** кил хушшинé çӳп-çапрáн тасáт

мусульма́нин (-а) *сущ. муж.*, **мусульма́нка** (-и) *жен.* мусульмáн *(ислам тĕнне тытакан, Аллах турра ĕненекен)*

мусульма́нство (-а) *сущ. сред.* (*син.* ислáм) мусульмáн тĕ´нĕ *(халапсем тăрăх, Магомет е Мухаммед ятлă çын VII ĕмĕрте пуçарса янă Аллах турă тĕнĕ)*

му́тный *прил.* пăтрáнчăк; тĕтрéллĕ; **му́тная вода́** пăтрáнчăк шыв

му́ха (-и) *сущ. жен.* шăнá; **мясна́я му́ха** сúмĕс шăнá ◆ **де́лать из му́хи слона́** ытлашшú ӳстéр

мухомо́р (-а) *сущ. муж.* шăнá кăмпú *(наркăмăшлă кăмпа)*

му́чить (*наст.* му́чу, му́чишь, му́чат *и* мýчаю, мýчаешь, мýчают; *повел. ф.* мучь *и* мýчай; *прич. действ. наст.* мýчащий *и* мýчающий, *прош.* мýчивший; *прич. страд. наст.* мýчимый, *прош.* мýченный; *деепр.* мýчая) *глаг. несов., кого-что* асаплантáр, тертлентéр, нушалантáр, асáп кýр; **меня́ му́чит зубна́я боль** манá шăл сурни́ асаплантарáть

му́читься (*наст.* мýчусь, мýчишься, мýчатся *и* мýчаюсь, мýчаешься, мýчаются; *повел. ф.* мýчься *и* мýчайся) *глаг. несов.* (*син.* страда́ть) асапла́н, тертлéн, нушала́н, асáп кур; **му́читься от бо́ли** ыратнипе́ асапла́н; **му́читься от нехва́тки де́нег** укçá çитменнипе́ нушала́н

мучно́й *прил.* çă´нăх -ĕ; **мучны́е блю́да** çă´нăх апáчĕ, чустá çúмĕçĕ, кýкăль-икéрчĕ

мча́ться (*наст.* мчусь, мчúшься, мчáтся; *повел. ф.* мчись; *прич. действ. наст.* мчáщийся, *прош.* мчáвшийся; *деепр.* мчась) ыткăн, вĕçтéр, ыткăнсá пыр, вĕçтерсé пыр; **по у́лице мча́тся маши́ны** урампá машинăсéм вĕçтерсé пырáççĕ

мы (нас, нам, на́ми, о нас) *местоим. личн.* эпúр; **мы идём домо́й** эпúр килé каятпăр; **мы с тобо́й ове́сники** эпúр санпá тантăшсéм; **Пойдём с на́ми!** А´тьăр пирĕнпé!

мы́ло (-а) *сущ. сред.* сӳпăнь; **туале́тное мы́ло** пит сӳпăнĕ; **хозя́йственное мы́ло** кĕпé сӳпăнĕ ◆ **конь весь в мы́ле** лашá кăпăкá ӳ´кнĕ

мы́льный *прил.* сӳпăнь -ĕ; сӳпăньлĕ, кă´пăклă; **мы́льная пе́на** сӳпăнь кă´пăкĕ

мыс (-а) *сущ. муж.* сăмсáх; **морско́й мыс** тúнĕс сăмсáхĕ

мысль (-и) *сущ. жен.* шӳхăш, шухăшлáв, ăслáв; шухăшлани́, ăслани́; **мысль о ро́дине** тăвáн çĕршы́в çинчéн шухăшлани́; **в го́лову пришла́ мысль** пуçá шӳхăш кúлчĕ

мыть (*наст.* мо́ю, мо́ешь, мо́ют; *повел. ф.* мой; *прич. действ. наст.* мо́ющий, *прош.* мы́вший; *прич. страд. прош.* мы́тый; *деепр.* мо́я) *глаг. несов., кого-что* çу, çусá тасáт; **мыть ру́ки** а́лă çу; **мыть посу́ду** сáвăт-сапá çу; **мо́ющие сре́дства** çăвакáн им-çúм

мы́ться (*наст.* мо́юсь, мо́ешься, мо́ются; *повел. ф.* мо́йся, мо́йтесь;

прич. действ. наст. мо́ющийся, *прош.* мы́вшийся; *деепр.* мо́ясь) *глаг. несов.* ҫӑ´вӑн; **мы́ться под ду́шем** душра́ ҫӑ´вӑн; **мы́ться в ба́не** мунча́ кӗр

мыча́ть (*наст.* мычу́, мычи́шь, мыча́т) *глаг. несов.* мӗ´кӗр, мукла́т; **коро́вы мыча́т** ӗнесе́м муклата́ҫҫӗ

мышле́ние (-я) *и* **мы́шление** (-я) *сущ. сред.* шухӑшла́в, ӑсла́в; **зако́ны мы́шления** шухӑшла́в законӗсе́м

мышо́нок (-нка) *сущ. муж.; множ.* **мыша́та** (-а́т) шӑши́ ҫури́

мы́шца (-ы) *сущ. жен.; множ.* **мы́шцы** (мышц, мы́шцам) мы́шца; **серде́чная мы́шца** чӗре́ мышци́; **напря́чь мы́шцы** мышцӑсене́ хытӑ́р

мышь (-и) *сущ. жен.* шӑши́; **дома́шняя мышь** кил шӑши́йӗ; **полева́я мышь** уй шӑши́йӗ

мя́гкий (*кратк. ф.* мя́гок, мягка́, мя́гко, *множ.* мя́гки *и* мягки́; *сравн. ст.* мя́гче; *превосх. ст.* мягча́йший) *прил.*, **мя́гко** *нареч.* **1.** (*ант.* твёрдый) ҫемҫе́, ҫемҫешке́, кӑ´пӑш; **мя́гкая ткань** ҫемҫе́ пусма́; **мя́гкий снег** кӑ´пӑш юр **2.** (*син.* прия́тный, не́жный; *ант.* гру́бый) ҫемҫе́, ҫе́пӗҫ; **мя́гкий го́лос** ҫе́пӗҫ са́сӑ; **мя́гкий кли́мат** ҫемҫе́ кли́мат ◆ **мя́гкая вода́** ҫемҫе́ шыв *(известь сахалли)*; **мя́гкий знак** ҫемҫе́лӗх паллӣ (ь)

мясно́й *прил.* аш -ӗ, аш-кака́й -ӗ; а́шлӑ; **мясно́й суп** аш яшкӣ; **мясны́е консе́рвы** аш-кака́й консе́рвӗ

мя́со (-а) *сущ. сред.* аш, кака́й, аш-кака́й; **кро́личье мя́со** кро́лик а́шӗ; **жа́реное мя́со** ӑшала́нӑ аш

мясору́бка (-и) *сущ. жен.* мясору́бка, аш арма́нӗ; **пропусти́ть че́рез мясору́бку** аш арманӗпе́ а́вӑрт

мять (*наст.* мну, мнёшь, мнут; *повел. ф.* мни; *прич. действ. наст.* мну́щий, *прош.* мя́вший; *прич. страд. прош.* мя́тый; *деепр. не употр.*) *глаг. несов., что* йӑвала́, лӳ́чӗркé, лутӑркӑ́; **мя́тый плато́к** лӳ́чӗркéнчӗк ту́тӑр

мя́ться *1 и 2 л. не употр. (наст.* мнётся, мну́тся) *глаг. несов.* лӳ́чӗркéн, лутӑркáн, ван; **э́та ткань о́чень мнётся** ку пусма́ пи́тӗ лӳ́чӗркенéт

мяч (-а́) *сущ. муж.* мéчӗк, пӳ́ске; **волейбо́льный мяч** волейбо́л мéчӗкӗ

Н

на[1] *предлог с род. и предл. п.* **1.** *на вопрос «где?»* ҫинчé, тӑрринчé; -ра(-ре), -та(-те), -че; **на полу́** урайӗнчé; **кни́га лежи́т на столе́** кӗнекé сӗтéл ҫинчé вырта́ть **2.** *на вопрос «куда?»* ҫинé, тӑрринé; -а(-е), -на(-не), -алла (-елле); **сесть на стул** пукáн ҫинé лар; **вы́йти на у́лицу** урама́ тух **3.** *при обозначении срока, цели* -лӑх (-лӗх); -а (-е), -на (-не); **загото́вить лес на и́збу** пӳ´ртлӗх йы́вӑҫ хатӗрлé; **на друго́й день** тéпӗр кунне́; **возьмём еды́ на неде́лю** эрнéлӗх апа́т и́лéпӗр **4.** *при обозначении деления, умножения* ҫинé; -а (-е), -на(-не); **два́дцать раздели́ть на пять** ҫирӗме́ пи́ллӗк ҫинé пайла́ **5.** *при обозначении средства действия* -па(-пе); -ла(-ле); **говори́ть на ру́сском языке́** вырӑсла́ кала́ҫ; **плыть на ло́дке** кимӗпе́ иш ◆ **на вся́кий слу́чай** сых ятнé; **на всём скаку́** сиккипе́ пы́нӑ чух; **говори́ть на па́мять** асту́нӑ тӑ´рӑх кала́; **подари́ть на па́мять** асӑнма́лӑх парнелé

на[2], **на́те** *частица* ме, мéйӗр, на; **на́те, возьми́те** мéйӗр, и́лӗр; **Дай мне ру́чку! — На!** Ру́чка пар-ха мана́! — Ме! ◆ **Вот тебе́ на!** Ак япала́! *(тӗлӗнсе калани)*

наблюда́тельный *прил.* сӑна́в -ӗ;

асăрхáв -ĕ; **наблюда́тельный пункт** сăнáв пýнкчĕ

наблюда́ть (*наст.* -áю, -áешь, -áют) *глаг. несов.* **1.** *кого-что, за кем-чем, с союзами «что» или «как»* сăнá, пăх, асăрхá; **наблюда́ть за полётом самолёта** самолёт вĕçниненé сăнá; **наблюда́ть, что де́лают де́ти** ачасéм мĕн тунинé пăхсá тăр **2.** *за кем-чем* пăх, тимлé, асăрхá; **наблюда́ть за больны́ми** чи́рлĕ çынсенé пăх

наве́к *и* **наве́ки** *нареч. (син.* навсегда́) ĕмĕрлĕхé

наве́рно *и* **наве́рное 1.** *нареч. (син.* несомнéнно) палла́х, шанчăкла́х; **я могу́ говори́ть об э́том наве́рное** э́пĕ кун çинчéн шанчăкланáх каламá пултарáтăп **2.** *вводн. сл. (син.* вероя́тно) тен, пýлĕ, ахăртнéх, пулмалла́; **наве́рно, он не придёт** вăл килмéст пулмалла́

наверняка́ 1. *нареч. (син.* несомнéнно, обяза́тельно) чăнáх, чăнласáх, чăннипéх; **он придёт наверняка́** вăл чăнáх та килéт **2.** *нареч. (син.* безоши́бочно) тĕ́рĕс, шáнчăклă, йăнăшмáсăр; **де́йствовать наверняка́** шáнчăклăн ĕçлé **3.** *вводн.сл. (син.* конéчно, несомнéнно) палла́х; **он, наверняка́, опя́ть опоздáет** вăл, палла́х, каллéх юлсá килéт

наве́рх *нареч. (ант.* вниз) çýлé, çýлелле́, çиелé; **поднима́ться наве́рх** çýлелле́ хăпáр; **он посмотре́л наве́рх** вăл çýлелле́ пăхсá и́лчĕ

наверху́ 1. *нареч.* çýлтé, çиелтé; **сиде́ть наверху́** çýлтé лар **2.** *чего, предлог с род.п.* çийĕнчé, тăрринчé; **наверху́ горы́** сăрт тăрринчé

навести́ть (*будущ.* -ещý, -ести́шь, -естя́т) *глаг. сов., кого-что* кайсá кил, кайсá кур, пырсá кай; **мы навести́ли родны́х** эпи́р тăвансенé кайсá кýртăмăр

наводне́ние (-я) *сущ. сред.* ейý´, шыв илни́; **ущéрб от наводне́ния** шыв илни́ кý´нĕ шы́рлăх

навóз (-а) *сущ. муж.* ти́слĕк, ти́рĕс; **вывози́ть в по́ле навóз** уя́ ти́слĕк кăлáр

навóзный *прил.* ти́слĕк -ĕ; **навóзный жук** ти́слĕк нăрри́

на́волочка (-и) *сущ. жен.* минтéр çитти́, минтéр пи́чĕ

навсегда́ *нареч.* яланлăхá; **расста́ться навсегда́** яланлăхá уйрăлсá кай

навстре́чу 1. *нареч.* хи́рĕç, хирé-хи́рĕç; **идти́ навстре́чу** хи́рĕç кай **2.** *кому-чему, предлог с дат.п.* хи́рĕç, хирĕçлé; **вы́йти навстре́чу гостя́м** хăнасенé хи́рĕç тух

на́вык (-а) *сущ. муж.* хăнăхý, ăслáй; **приобрести́ на́выки пла́вания** ишмé хă´нăх, ишмé вĕрéн

нагля́дность (-и) *сущ. жен.* кýрăмлăх; **испóльзование средств нагля́дности в учёбе** вĕренýрé кýрăмлăх хатĕрĕсемпé ýсă курни́

нагля́дный *прил. (син.* очеви́дный), **нагля́дно** *нареч.* кýрăмлăх -ĕ; кĕрéтлĕх -ĕ; кýрăмлă, кĕрéт; **нагля́дные посóбия** кýрăмлăх хатĕрĕсéм; **показа́ть нагля́дно** кĕрéтĕн кăтартсá пар

нагну́ть (*будущ.* -ну́, -нёшь, -ну́т; *прич. страд. прош.* нагну́тый) *глаг. сов. кого-что* ав, авсá антáр; пĕк, пĕ´шкĕрт, куклентéр; **нагну́ть ве́тку** туратá авсá антáр; **нагну́ть го́лову** пуçá пĕк

нагну́ться (*будущ.* -ну́сь, -нёшься, -ну́тся; *повел.ф.* -ни́сь, -ни́тесь; *прич. действ. прош.* -ну́вшийся; *деепр.* -ну́вшись) *глаг. сов.* áвăн, авăнсá ан, пĕ´шкĕн, пĕ´кĕрĕл, куклéн; **ве́тки и́вы нагну́лись** йăмрá турачĕсéм авăнсá áннă

наготóве *нареч.* хáтĕр; **держа́ть ору́жие наготóве** хĕç-пăшалá хáтĕр тыт

награ́да (-ы) *сущ. жен.* парнé, награ́да; **награ́да за успе́хи в учёбе** лайăх вĕрéннĕшĕн пáнă парнé

награди́ть (*будущ.* -ажý, -ади́шь, -адя́т; *прич. страд. прош.* -аждённый) *глаг. сов., кого чем* парнелé, наградăлá,

парнé пар, награ́да пар; **хра́брый во́ин награ́ждён о́рденом** хастáр салтакá о́рден пáнă

нагре́ть (*будущ.* -éю, -éешь, -éют) *глаг. сов., что и чего (ант.* остуди́ть) ă´шăт; **нагре́ть воды́ в ча́йнике** чейникпé шыв ă´шăт

нагре́ться *1 и 2 л. не употр. (будущ.* -éется, -éются; *прич. действ. прош.* -éвшийся; *деепр.* -éвшись*) глаг. сов.* ă´шăн, ăшăнсá çит; **пе́чка нагре́лась** кăмакá ăшăнсá çи́тнĕ

нагрузи́ть (*будущ.* -ужу́, -у́зишь *и* -узи́шь, -узя́т; *прич. страд. прош.* -у́женный *и* -ужённый) *глаг. сов.* **1.** тие́, тиесé тултáр, хурсá тултáр; **нагрузи́ть повóзку карто́фелем** урапá çине́ çĕр улми́ тие́ **2.** *кого чем* хушсá тултáр, ĕç хуш; **нагрузи́ть ра́зными поруче́ниями** тĕ´рлĕ ĕç хушсá тултáр

над, надо́ *кем-чем, предлог с твор.п.* **1.** *(ант.* под) çи́йĕн, çийĕнче́, çийĕпе́; **над село́м пролете́л вертоле́т** ял çи́йĕн вертолéт вĕçсé и́ртрĕ **2.** -а (-е); -ран (-рен); -па (-пе); **рабо́тать над кни́гой** кĕнекепе́ ĕçлé; **Сжа́льтесь же надо́ мной!** Хĕрхéнĕр ĕ´нтĕ маná!

наде́жда (-ы) *сущ. жен.* шáнчăк, шáнăç, сýнăм; **жить наде́ждой на побе́ду** çĕнтерессé шансá пýрăн; **потеря́ть наде́жду** шанчăкá çухáт; **их сын — наде́жда семьи́** вĕсéн ы́вăлĕ — кил-ы́ыш шáнчăкĕ

наде́ть (*будущ.* -éну, -éнешь, -éнут; *повел.ф.* -éнь; *прич. действ. прош.* -éвший; *прич. страд.прош.* -éтый) *глаг. сов., что (ант.* снять) тă´хăн, тăхăнтáрт; **наде́ть ша́пку** çĕ´лĕк тă´хăн; **наде́ть на па́лец пе́рстень** пýрнé çине́ çĕ´рĕ тăхăнтáрт

наде́яться (*наст.* -éюсь, -éешься, -éются; *повел.ф.* -éйся, -éйтесь; *прич. действ. наст.* -éющийся, *прош.* -éявшийся; *деепр.* -éясь) *глаг. несов., на кого-что, с неопр.ф. и с союзом «что»* шан, шансá тăр, ша́нăç хур; **наде́яться на по́мощь друзе́й** туссéм пулăшассá шансá тăр; **Наде́юсь, что встре́тимся с ва́ми ещё!** Сирĕнпе татáх тĕл пулассá шанáтăп!

надёжный *прил. (син.* ве́рный) **надёжно** *нареч.* ша́нчăклă, ша́нăçлă; **надёжный друг** ша́нчăклă тус; **вложи́ть де́ньги надёжно** укçана́ ша́нăçлă ĕçé хыв

на́до *в знач. сказ., с неопр. ф., кого-что или чего (син.* ну́жно) ки́рлĕ; -малла(-мелле); -ас(-ес) пула́ть; **на́до спеши́ть** васкáс пула́ть; **нам на́до немно́го де́нег** пире́ кăштáх укçá ки́рлĕ ◆ **на́до ду́мать, на́до полага́ть** *вводн. сл.* ахăртнéх, пулмалла́

надое́сть (*будущ.* -éм, -éшь, -éст, *множ.* -еди́м, -еди́те, -едя́т; *прош.* -éл, -éла, -éло, -éли; *прич. действ. прош.* -éвший; *деепр.* -éв) *глаг. сов., кому, с неопр.ф.* йăлăхтáр, йýтéт, йĕрĕнтéр, йăлăхтарсá çитéр; **он мне надое́л свои́ми капри́зами** вăл маná хă´йĕн юнтармăшĕпе́ йăлăхтарсá çитéрчĕ

надо́лго *нареч.* нумайлăхá, вăрахлăхá; **мы прие́хали надо́лго** эпи́р нумайлăхá ки́лтĕмĕр

наду́ть (*будущ.* -ýю, -ýешь, -ýют) *глаг. сов.* **1.** *что* вĕрсé тултáр; **наду́ть возду́шный шар** сывлăш шарнé вĕрсé тултáр **2.** *кого (син.* обману́ть) ултала́, ларт; **торго́вец наду́л нас** сутýçă пире́ ултала́рĕ ◆ **наду́ть гу́бы** тутана́ тăс (*кăмăлсăррăн*)

наедине́ *нареч.* куçá-кýçăн, и́ккĕн; **поговори́ть наедине́** куçá-кýçăн калáç

нае́сться (*будущ.* наéмся, наéшься, наéстся, *множ.* наеди́мся, наеди́тесь, наедя́тся; *прош.* наéлся, наéлась, наéлось, наéлись; *повел.ф.* наéшься, наéшьтесь; *прич. действ. прош.* наéвшийся; *деепр.* наéвшись) *глаг. сов., чего (син.* насы́титься; *ант.* проголода́ться) тăрáн, çисé тăрáн,

хырӑмá тӑрáнт; **дéти наéлись пирогá** ачасéм тӑраниччéн кýкӑль çúрĕç; **я ещё не наéлся** мáнăн хырăм тӑранмáрĕ-ха

наёмный *прил.* тарá...; тарá -ĕ; тарá кĕ́рĕшнĕ; тарá úлнĕ; **наёмный труд** тарá ĕç; **наёмная рабóчая сúла** тарá ĕç вắйĕ; **наёмное помещéние** тарá úлнĕ çурт

нажáть (*будущ.* нажмý, нажмёшь, нажмýт; *повел. ф.* нажмú) *глаг. сов.* **1.** *что и на кого-что (син.* надавúть) пус, хĕс, пусáр; **нажáть кнóпку звонкá** шăнкăрáв кнопкинé пус; **нажáть на тормознýю педáль** тóрмоз пускăчнé пус **2.** *на кого (син.* понýдить) хистé, пусахлá, пắвăрт; **нажáть на отстаю́щих** юлсá пыракансенé хистé

назáд *нареч.* **1.** (*ант.* вперёд) кая́, каяллá, хыçалá; **пойти́ назáд** каяллá кай **2.** (*син.* рáньше, прéжде) каяллá, каярáх, ĕлĕкрéх; **э́то бы́ло сто лет назáд** ку вăл çĕр çул каяллá пýлнă

назвáние (-я) *сущ. сред.* ят; **назвáние журнáла — «Ялáв»** журнáл я́чĕ — «Ялáв»

назвáть (*будущ.* назовý, назовёшь, назовýт; *повел. ф.* назови́; *прич. страд. прош.* нáзванный) *глаг. сов., кого-чего* **1.** ят пар, ят хур; **они́ назвáли сы́на Ви́ктором** вĕсéм ывăлнé Ви́ктор ят хýнă **2.** калá; **Назови́те вáше и́мя**! Хắвăр ятăрá кáлăр-ха!

назнáчить (*будущ.* -áчу, -áчишь, -áчат; *повел.ф.* -áчь) *глаг. сов.* **1.** *что* пáлăрт, палăртсá хур; **назнáчить день вы́боров** суйлáв кунné пáлăрт **2.** *кого кем* ларт, ту, уйăрсá ларт; **егó назнáчили бригади́ром** ăнá бригадúр пулмá уйăрсá лáртнă

называ́ться (*наст.* -áюсь, -áешься, -áются; *прич. действ. наст.* -áющийся, *прош.* -áвшийся; *деепр.* -áясь) *глаг. несов.* ... ятлă пул; ... ятпá çýрé; **селó называ́ется Ива́ново** ял Ивáново ятлă

наибóлее *нареч. (син.* особенно; *ант.* наименéе) чи; пуринчéн ытлá; **наибóлее удáчное решéние задáчи** задачăнá чи ắнăçлă майпá шутланú

наи́вный *прил. (син.* простодýшный), **наи́вно** *нареч.* айвáн, айванкá; **наи́вный вопрóс** айвáн ыйтý

наизна́нку *нареч.* тýнтерлé, тавăрсá; **надéть шýбу наизна́нку** кĕрĕкé тавăрсá тắхăн

наизýсть *нареч.* пăхмáсăр, астунипé; **читáть стихú наизýсть** сăввá пăхмáсăр калá

наилýчший *прил. (ант.* наихýдший) чи лáйăх; **решúть вопрóс наилýчшим óбразом** ыйтăвá чи лáйăх майпá татсá пар

наименéе *нареч. (ант.* наибóлее) чи пĕ́чĕк, чи я́пăх; пуринчéн пĕ́чĕк, пуринчéн я́пăх; **наименéе удáчный вариáнт** чи я́пăх вариáнт

наискосóк, нáискось *нареч.* чáлăшшăн, хăя́ккăн; **разрéзать лист бумáги наискосóк** хут листинé чáлăшшăн кас

найти́ (*будущ.* найдý, найдёшь, найдýт; *прош.* нашёл, нашлá, нашлó, *множ.* нашлú; *повел. ф.* найди́; *прич. действ. прош.* нашéдший; *прич. страд. прош.* нáйденный; *деепр.* найдя́) *глаг. сов., кого-что (ант.* потеря́ть) туп, шырасá туп; **найти́ потéрянную вещь** çухáтнă япалана шырасá туп; **найти́ решéние задáчи** задáча шутламаллú мел туп

найти́сь (*будущ.* найдýсь, *найдёшься*, найдýтся; *прош.* нашёлся, нашлáсь, нашлóсь, *множ.* нашлúсь; *повел. ф.* найди́сь, найди́тесь; *прич. действ. прош.* нашéдшийся; *деепр.* найдя́сь) *глаг. сов.* тýпăн; **потéрянная ша́пка нашла́сь** çухáлнă çĕ́лĕк тýпăнчĕ

наказáние (-я) *сущ. сред.* наказáни (*айăпшăн явап тытăрни*); **подвéргнуть наказáнию** наказáни пар

наказáть (*будущ.* -ажý, -áжешь,

-а́жут; *повел.ф.* -ажи́; *прич. страд. прош.* -а́занный) *глаг. сов., кого* наказа́ни пар, явăп тыттăр; **наказа́ть за прови́нность** айăпа́ кĕ́нĕшĕн явăп тыттăр

наканý не 1. *нареч.* ĕнĕр; **я прие́хал наканý не** э́пĕ ĕнĕр ки́лнĕ **2.** *чего, предлог с род.п.* у́мĕн, малта́н; -чен; **наканý не пра́здника** уя́в у́мĕн

на́кипь (-и) *сущ. жен.* кăм, хысма́, лĕ́кĕ (*савăт тĕпне ларни*); **очи́стить ча́йник от на́кипи** чейнике́ кăмра́н таса́т

накладна́я (-о́й) *сущ. жен.* накладно́й (*çирĕплетӳ документчĕ*); **това́рная накладна́я** тавăр накладно́йĕ

наклоне́ние (-я) *сущ. сред.* наклоне́ни (*глагол формисен пĕр тĕсĕ*); **изъяви́тельное наклоне́ние** кăтартӳ наклоне́нийĕ; **повели́тельное наклоне́ние** хушӳ наклоне́нийĕ

наклони́ть (*будущ.* -оню́, -о́нишь, -о́нят; *прич. страд. прош.* -онённый) *глаг. сов., кого-что* тайăлта́р, чалăшта́р; тай, пĕк; **наклони́ть ведро́** витрене́ тайăлта́р; **наклони́ть го́лову** пуçа́ пĕк

наклони́ться (*будущ.* -оню́сь, -о́нишься, -о́нятся; *повел.ф.* -они́сь, -они́тесь; *прич. действ. прош.* -они́вшийся; *деепр.* -они́вшись) *глаг. сов.* та́йăл, ча́лăш, пĕ́кĕрĕл; **столб наклони́лся** юпа́ тайăлса́ ка́йнă

накова́льня (-и) *сущ. жен.* сунта́л (*тимĕр туптамалли*); **бить мо́лотом по накова́льне** мăлатукпа́ сунтала́ шакка́

наконе́ц *нареч.* юлашкинче́н; **наконе́ц он пришёл** юлашкинче́н вăл килсе́ çи́трĕ

накопле́ние (-я) *сущ. сред.* перекéт, пӳхнă укçа́; **у него́ есть больши́е накопле́ния** вăл нумáй укçа́ перекетлесе́ пӳхнă

накорми́ть *(будущ.* -млю́, -мишь, -мят; *прич. страд. прош.* -мленный) *глаг. сов., кого* çите́р, тăранта́р, çитерсе́ тăранта́р; **накорми́ть дете́й ка́шей** ачасене́ пắтă çите́р; **накорми́ть досы́та** тăраниччéн çите́р

накра́пывать *1 и 2 л. не употр.* ӳккеле́, пĕ́рĕх, çукала́; **накра́пывает дождь** çӳмăр ӳккеле́т

накры́ть (*будущ.* -рóю, -рóешь, -рóют; *повел. ф.* -рóй) *глаг. сов., кого-что* хупла́, вит, çине́ сар; **накры́ть я́щики брезе́нтом** ещĕксене́ брезентпа́ вит ◆ **накры́ть стол** сĕте́л пуçта́р, кĕреке́ хатĕрле́

нала́дить (*будущ.* -а́жу, -а́дишь, -а́дят; *повел. ф.* -а́дь; *прич. страд. прош.* -а́женный) *глаг. сов., что* йĕркеле́, майла́, йĕркелесе́ яр; **хорошо́ нала́дить рабо́ту** ĕçе́ ла́йăх йĕркеле́; **нала́дить гита́ру** гитарăна́ ĕнерсе́ майла́

нале́во *нареч. (ант.* напра́во) сулахая́, сулахаялла́, сулаха́й енне́; **маши́на свернýла нале́во** маши́на сулахаялла́ пắрăнчĕ

на́леды (-и) *сущ. жен.* пăр, пăрла́к; **доро́га покры́та на́ледью** çул пăрлакла́ннă

нале́т (-а) *сущ. муж. (син.* нападе́ние) тапăнý; тапăнни́; **нале́т авиа́ции** авиáци та́пăнăвĕ; **банди́тский нале́т** вắрă-хурахсе́м тапăнни́

нали́м (-а) *сущ. муж.* шампа́ *(пулă);* **нали́м нерести́тся зимо́й** шампа́ хĕллé вăлча́ сапа́ть

нали́ть (*будущ.* налью́, нальёшь, нальют; *прош.* на́лил *и* нали́л, налила́, на́лило *и* нали́ло, *множ.* на́лили *и* нали́ли; *прич. страд. прош.* на́литый) *глаг. сов.* яр, тултáр; **нали́ть в ча́йник во́ду** чейнике́ шыв тултáр

нало́г (-а) *сущ. муж.* нало́г, налу́к; **подохо́дный нало́г** тӳпăш нало́гĕ; **плати́ть нало́ги** нало́г тӳле́

нало́говый *прил.* нало́г -ĕ; **нало́говая поли́ция** нало́г поли́цийĕ; **нало́говые поступле́ния** налогсенчéн кĕ-

рекéн укçá; **налóговые льгóты** налóг çăмăллăхĕсéм

намекáть (*наст.* -áю, -áешь, -áют) *глаг. несов., на кого-что* систéр, вăлт, систерсé калá, тĕксé калá

намéтить (*будущ.* -éчу, -éтишь, -éтят; *повел.ф.* -еть; *прич. страд. прош.* -éченный) *глаг. сов., кого-что* пáлăрт, палăртсá хур; **намéтить план рабóты** ĕç плáнĕ палăртсá хур

намёк (-а) *сущ. муж.* систерýˊ, вăлтý, юптарý; систернú, вăлтнú, юптарсá каланú; **я егó намёк пóнял** э́пĕ вăл систерсé каланинé ăнлáнтăм

намнóго *нареч. (син.* значúтельно) чылáй, нумáй; **намнóго бóльше** нумáй ытларáх; **намнóго дешéвле** чылáй йýнĕрéх

намóкнуть (*будущ.* -ну, -нешь, -нут; *прич. действ. прош.* -нувший) *глаг. сов.* йĕпéн, ислéн, йĕпенсé кай; **пальтó намóкло под дождём** пальтó çумăрпá йĕпéннĕ

намочúть (*будущ.* -очý, -óчишь, -óчат) *глаг. сов., что* йĕпéт, ислéт, ислентéр; **намочúть полотéнце** ал шăллинé ислентéр

нанять (*будущ.* наймý, наймёшь, наймýт; *прош.* нáнял, наняла́, нáняло, *множ.* нáняли; *повел. ф.* наймú; *прич. действ. прош.* нанявший; *прич. страд. прош.* нáнятый; *деепр.* нанявˊ) *глаг. сов., кого-что* тыт, тарá тыт, тарá ил, кĕрĕштéр; **нанять плóтников** платнúк тыт; **нанять помещéние под магазúн** магазúн валлú çурт тарá ил

наняться (*будущ.* наймýсь, наймёшься, наймýтся; *прош.* нанялсяˊ *и* нанялся, наняла́сь, нанялóсь, *множ.* наняли́сь; *повел. ф.* наймúсь, наймúтесь; *прич. действ. прош.* нанявшийся; *деепр.* нанявшись) *глаг. сов., в кого-что* кĕˊрĕш, тарá кĕˊрĕш, ĕçé кĕр; **плóтники наняли́сь пострóить дом** платниксéм пýрт лартмá кĕˊрĕшрĕç

наоборóт *нареч.* **1.** хирĕçлé, кутăнлá, тéпĕр мáйлă; **поня́ть наоборóт** тéпĕр мáйлă ăнлáн; **он всё дéлает наоборóт** вăл йăлтáх кутăнлá тăвáть **2.** *частица, выражает возражение, противопоставление* пачáх урăхлá; **Ты сéрдишься? — Наоборóт!** Э́сĕ çилленéтĕн-и? — Пачáх урăхлá!

нападéние (-я) *сущ. сред. (ант.* защúта) **1.** тапăнý; тапăннú; **вероло́мное нападéние врагá** тăшмáн ултáвлă майпá тапăннú; **отрази́ть нападéние** тапăнăвá сирсé яр **2.** тапăнý (*спорт командинче)*; **игроки́ нападéния** тапăнсá выляксенсéм

напáсть (*будущ.* -адý, -адёшь, -адýт; *повел. ф.* -адú; *прич. действ. прош.* -áвший; *деепр.* -áв) *глаг. сов., на кого-что* **1.** *(син.* брóситься) тáпăн, тăˊрăн, сиксé ýк; **на у́лице на нас напа́ли соба́ки** урамрá пирé йытăсéм тáпăнчĕç **2.** (*син.* обнарýжить) тĕл пул, туп, пырсá тух; **напáсть на грибно́е мéсто** кăмпáллă выpăнá пырсá тух ◆ **тоскá напáла** тýнсăх пýсрĕ

наперегонки́ *и* **наперегóнки** *нареч.* ăмăртмаллá, тупăшмаллá; **бéгать наперегонки́** ăмăртмаллá чуп

напёрсток (-тка) *сущ. муж.* пýрнескé; **надéть на пáлец напёрсток** пýрнé çинé пýрнескé тăˊхăн

напúльник (-а) *сущ. муж.* йĕкéв, путпúлкка; **точúть напúльником пилý** путпилккăпá пăˊчкă хăйрá

написáть (*будущ.* -ишý, -úшешь, -úшут; *повел. ф.* -иши́) *глаг. сов., что* çыр, çырсá хур, çырсá яр; **написáть другу́ письмó** тус патнé çырý çырсá яр

па́кля (-и) *сущ. жен.* сӳ́с, чӳ́пӗк; **законопа́тить сруб па́клей** пурана́ сӳспе́ мӑкла́

пакт (-а) *сущ. муж. (син.* договóр*)* пакт, килӗшӳ́ (*çӗршывсем хушшинчи*); **пакт о ненападе́нии** тапӑнмáслӑх ки́лӗшӗвӗ

пала́с (-а) *сущ. муж.* палáс *(икӗ енлӗ, тӗксӗр кавир)*

пала́та[1] (-ы) *сущ. жен.* **1.** пала́та (*парламент пайӗ*); **ве́рхняя пала́та** áслӑ пала́та (*Раççейра — Федераци Канашӗ*); **ни́жняя пала́та** кӗ́ çӗн пала́та *(Раççейра — Патшалӑх Думи)* **2.** пала́та (*учреждени*); **торго́вая пала́та** сутӳ-илӳ́ палати́; **кни́жная пала́та** кӗнеке́ палати́

пала́та[2] (-ы) *сущ. жен.* пала́та,

пӳ́лĕм *(больницăра)*; **трёхме́стная пала́та** ви́çĕ çы́нлăх пала́та

пала́тка (-и) *сущ. жен.* **1.** пала́тка, ча́тăр; **туристи́ческая пала́тка** туристсе́н палатки́; **разби́ть пала́тку** ча́тăр кар **2.** пала́тка *(сутă тумалли пĕчĕк çурт)*

па́лец (па́льца) *сущ. муж.; множ.* **па́льцы** (-цев) пӳ́рне́; **па́льцы рук** а́лă пӳ́рнисе́м; **большо́й па́лец** пас пӳ́рне́; **указа́тельный па́лец** шӗ́ вĕр пӳ́рне́; **сре́дний па́лец** вăта́ пӳ́рне́; **безымя́нный па́лец** я́тсăр пӳ́рне́ ◆ **обвести́ вокру́г па́льца** чике́ тӑ́ршшĕ ларт; **мо́жно по па́льцам перече́сть** пӳ́рнепе́ шутлама́лăх кăна́; **смотре́ть сквозь па́льцы** пӳ́рне́ ви́тĕр пăх, ку́рмăш пул; **па́лец о па́лец не уда́рит** йӑ́шăлт та тумáсть; **зна́ет как свои́ пять па́льцев** ви́тĕр пĕле́т; **ему́ па́льца в рот не клади́** ăна́ шанма́ çук; **из па́льца вы́сосать** çуккине́ пур тусá кăта́рт

пали́тра (-ы) *сущ. жен.* **1.** пали́тра *(художник сăрăсене хутăштаракан пĕчĕк хăма)* **2.** тĕс-сĕм *(художникăн илемлĕх мелĕсем)*; **бога́тая пали́тра** тӗ́с-сĕм пуя́нлăхĕ

па́лка (-и) *сущ. жен.* пата́к; туя́; **сухи́е па́лки** ти́пĕ патаксе́м; **привяза́ть флаг на па́лку** пата́к çумне́ ялáв çыхсá ларт; **идти́, опира́ясь на па́лку** туя́ туяласá ут ◆ **па́лка о двух концáх** пата́кăн вĕ́çĕ и́ккĕ *(апла та, капла та пулма пултарать)*; **ста́вить па́лки в колёса** ура́ хур, такăнтарсá пыр; **рабо́та из-под па́лки** пусахланипе́ ĕçлени́

па́луба (-ы) *сущ. жен.* па́луба, ура́й *(карапăн, самолетăн)*

па́льма (-ы) *сущ. жен.* па́льма *(кăнтăрта ӳсекен йывăç)*; **кокóсовая па́льма** кокóс пальми́

пальто́ *сущ. нескл. сред.* пальто́; **зи́мнее пальто́** хĕллехи́ *пальто́*; **носи́ть пальто́** пальтопа́ çӳ́ре

па́мятник (-а) *сущ. муж.* па́лăк; **па́мятник Чапа́еву** Чапа́ев па́лăкĕ; **воздви́гнуть па́мятник** па́лăк ларт

па́мять (-и) *сущ. жен.* ас, тăн, áстăвăм; **храни́ть в па́мяти** асрá тыт; **пришло́ на па́мять** асá ки́лчĕ; **подари́ть на па́мять** асăнма́лăх парнеле́; **лиши́ться па́мяти** тăна́ çухáт ◆ **Кни́га Па́мяти** А́стăвăм Кĕнеки́ *(сăм., вăрçăра вилнисен ячĕсене çырса хуни)*; **компью́терная па́мять** компью́тер áстăвăмĕ *(информацие йышăнса, пухса упракан хатĕрсем)*

панихи́да (-ы) *сущ. жен.* вилé кĕлли́, пытарý кĕлли́; **свяще́нник отслужи́л панихи́ду** па́чăшкă пытарý кĕлли́ ту́рĕ ◆ **граждáнская панихи́да** ăсатý пӳ́хăвĕ, пытарý пӳ́хăвĕ *(вилнĕ çынна пытарас умĕн иртте-рекенни)*

пантéра (-ы) *сущ. жен.* пантéра *(кушак йышши пысăк тискер кайăк)*

па́нцирь (-я) *сущ. муж.* **1.** ти́мĕр тум *(ĕлĕкхи салтаксен)* **2.** ху́пă, ви́тĕ, ви́тĕм *(хăш-пĕр чĕр чунсен)*; **па́нцирь черепа́хи** ти́мĕр шапá хуппи́

па́па[1] (-ы) *сущ. муж.; множ.* **па́пы** (пап, па́пам): **мой (наш) па́па** атте́; **твой (ваш) па́па** аçý; **его́ (её, их) па́па** áшшĕ; **я зна́ю ва́шего па́пу** э́пĕ си́рĕн аçăрá пĕлéтĕп

па́па[2] (-ы) *сущ. муж.* па́па *(католик чиркĕвĕн пуçлăхĕ)*; **па́па ри́мский** Римри́ па́па

папиро́са (-ы) *сущ. жен.* пирýс; **па́чка папиро́с** пирýс пачки́; **кури́ть папиро́сы** пирýс турт

па́пка (-и) *сущ. жен.* па́пка *(çыхăллă хуплашка)*; **па́пка с докуме́нтами** ĕç хучĕсе́н папки́

па́поротник (-а) *сущ. муж.* упá сарри́ *(вăрман курăкĕ)*

пар[1] (-а, о па́ре, в пару́) *сущ. муж.; множ.* **пары́** (-о́в) пăс; **водяны́е пары́** шыв пӑ́сĕ; **подда́ть па́ру в ба́не** мунчарá ăшши́ пар ◆ **мча́ться**

на всех пара́х ыткăнса́ пыр; **С лёгким па́ром!** Мунча́ ăшши́ сывлăха́ пу́лтăр!

пар[2] (-а) *сущ. муж.* çĕртме́, парла́к; **земля́ под па́ром** çĕртме́ пусси́; **поднима́ть пар** çĕртме́ ту

па́ра (-ы) *сущ. жен.* **1.** мắшăр; **па́ра сапо́г** пĕр мắшăр а́тă **2.** мắшăр (*упăшкипе арăмĕ*); **счастли́вая па́ра** теле́йлĕ мắшăр; **без па́ры** мắшăрсăр, хăра́х **3.** (*син.* два) и́кĕ, и́ккĕ, мắшăр; **па́ра тетра́дей** и́кĕ тетра́дь; **запря́чь па́ру лошаде́й** пар лаша́ кӳл ◆ **па́ра пустяко́в** ним те мар; **два сапога́ па́ра** çӳпçипе́ хупăлчи́; **позва́ть на па́ру слов** пĕр-и́кĕ сăма́х калаçса́ илме́ чĕн

пара́граф (-а) *сущ. муж.* пара́граф (*текст сыпăкĕ тата ăна уйăрса кăтартакан «§» паллă*); **пара́граф зако́на** зако́н пара́графĕ

пара́д (-а) *сущ. муж.* пара́д *(çар çыннисем е спортсменсем урампа чаплăн иртни)*; **вое́нный пара́д** çар пара́чĕ; **кома́ндовать пара́дом** парада́ ертсе́ пыр

пара́дный *прил.* **1.** (*син.* пра́здничный) пара́д -ĕ; уя́в -ĕ; **пара́дная фо́рма** уя́в ту́мĕ **2.** (*син.* гла́вный) тĕп, ча́плă; **пара́дный ход** тĕп а́лăк

парали́ч (-а́) *сущ. муж.* ша́лăкăм çапни́, хускалми́ пулни́; **парали́ч ног** урасе́м хускалми́ пулни́

паралле́льный *прил.*, **паралле́льно** *нареч.* **1.** (*ант.* перпендикуля́рный) паралле́льлĕ (*юнашар тăсăлса выртакан*); **паралле́льные ли́нии** паралле́льлĕ йĕрсе́м **2.** (*син.* одновреме́нный, сопу́тствующий) пĕрлехи́, пĕр вăхăтри́; **паралле́льно со строи́тельством домо́в ведётся их газифика́ция** çуртсене́ лартнипе́ пĕрле́х вĕсене́ газ кĕртéççĕ

парашю́т (-а) *сущ. муж.* парашю́т (*самолет çинчен çĕре сиксе анмалли хатĕр)*; **прыга́ть с парашю́том** парашютпа́ сик; **парашю́т раскры́лся** парашю́т ӳçăлчĕ

парашюти́ст (-а) *сущ. муж.*, **парашюти́стка** (-и) *жен.* парашюти́ст, парашю́тçă; **спортсме́ны-парашюти́сты** парашютúст спортсменсéм

па́рень (па́рня) *сущ. муж.*; *множ.* **па́рни** (-е́й, -я́ми) ка́ччă, йĕ́кĕт; **дереве́нский па́рень** ял каччи́

пари́к (-а́) *сущ. муж.; множ.* **парики́** (-о́в) пари́к, хушма́ çӳç (*калпак пек пуç çине тăхăнмалли*); **театра́льный пари́к** теáтр пари́кĕ; **ходи́ть в парике́** парикпа́ çӳре́

парикма́хер (-а) *сущ. муж.* парикма́хер; **А́ня рабо́тает парикма́хером** А́ня парикмахерта́ ĕçлéт

парикма́херская (-ой) *сущ. жен.* парикма́херски; **стри́чься в парикма́херской** парикмахерскинче́ çӳç кастáр

па́рить (*наст.* па́рю, па́ришь, па́рят; *повел. ф.* парь; *прич. действ. наст.* па́рящий, *прош.* па́ривший; *прич. страд. прош.* па́ренный; *деепр.* па́ря) *глаг. несов.* **1.** *что* пăсла́, пăслантáр, пăспа́ ислентéр; **па́рить бельё** кĕпе́-йĕме́ пăспа́ ислентéр (*çума хăтĕрлесе*) **2.** *кого* çап (*милĕкпе*), çапса́ яр

пари́ть (*наст.* парю́, пари́шь, паря́т; *повел. ф.* пари́; *прич. действ. наст.* паря́щий, *прош.* пари́вший; *деепр.* паря́) *глаг. несов.* вĕç, ярăнса́ вĕç; **орёл пари́т в не́бе** тӳперé ắмăрт ка́йăк ярăнса́ вĕçéт

па́риться (*наст.* па́рюсь, па́ришься, па́рятся; *повел. ф.* па́рься, па́рьтесь; *прич. действ. наст.* па́рящийся, *прош.* па́ривший; *деепр.* па́рясь) *глаг. несов.* çа́пăн (*мунчара*); **па́риться берёзовыми ве́никами** хӳ́рăн милĕкĕпе́ çа́пăн

парк[1] (-а) *сущ. муж.* парк, пахча́ (*канмалли, уçăлмалли*); **городско́й парк** хула́ па́ркĕ; **разби́ть парк** парк хыв

парк[2] (-а) *сущ. муж.* **1.** парк (*транспорт тăратмалли предприяти)*; **троллéйбусный парк** троллéйбус пáркĕ **2.** парк (*машинăсен йышĕ*); **станóчный парк завóда** завóдăн станóк пáркĕ

паркéт (-а) *сущ. муж.* паркéт (*йывăç шакмаксене ерешлесе витнĕ урай*); **дубóвый паркéт** юмáн паркéт; **натерéть паркéт** паркетá якатсá çутáт

паркéтный *прил.* паркéт ...; паркéт -ĕ; **паркéтный пол** паркéт урáй; **паркéтные дощéчки** паркéт шакмакĕсéм

парлáмент (-а) *сущ. муж.* парлáмент (*халăх законсем кăларма суйланă аслă орган*); **парлáмент страны́** çĕршы́в парлáменчĕ; **депутáты парлáмента** парлáмент депутачĕсéм

парламентáрий (-я) *сущ. муж.* парламентáри, парлáмент члéнĕ

парламентёр (-а) *сущ. муж.* парламентёр, ӳлчĕ (*тăшмансенчен пĕри теприн патне калаçу ирттерме янă çын*)

парлáментский *прил.* парлáмент -ĕ; **парлáментские вы́боры** парлáмент суйлáвĕ; **парлáментская неприкоснове́нность** парлáмент тĕкĕнмéлĕхĕ (*депутатсене судпа айăплама юраманни*)

парни́к (-á) *сущ. муж.* парни́к (*çимĕç ӳстермелли витнĕ йăран, панча*)

парнико́вый *прил.* парни́к -ĕ; парникрí; **парнико́вые о́вощи** парникрá ӳстéрнĕ пахчá çи́мĕç ◆ **парнико́вый эффе́кт** парни́к мáйлă пӳлăм *(этем атмосферăна варалланă пирки çанталăк ăшăнса пыни)*

парно́й *прил.* ă´шă, тин сӳ́нă *(сĕт);* тин пӳ́снă *(аш)*; **пить парно́е молоко́** тин сӳ́нă сĕт ĕç

па́рный *прил. (ант.* одино́чный) мă´шăр, йĕ´кĕр, мă´шăрлă; **па́рный оре́х** йĕ´кĕр мă´йăр; **па́рное ката́ние на конька́х** конькипе́ мă´шăрăн ярăнни́

парово́з (-а) *сущ. муж.* парово́з, пăравӳ́с *(пăс двигателĕпе ĕçлекен локомотив*)

паро́м (-а) *сущ. муж.* паро́м (*çынсене, транспорта шыв урлă каçармалли карап*); **морско́й паро́м** ти́нĕс паро́мĕ; **перепра́виться че́рез Во́лгу на паро́ме** А´тăл ӳ́рлă паромпа́ каç

пароход (-а) *сущ. муж.* пароход, пăрахӳ́т (*пăс двигателĕпе ĕçлекен карап)*

па́рта (-ы) *сущ. жен.* па́рта; **шко́льная па́рта** шкул партú; **сиде́ть за па́ртой** па́рта хушшинче́ лар

партéр (-а) *сущ. муж.* партéр (*театр залĕн аялти этажĕ*)

партиза́н (-а) *сущ. муж.*, **партиза́нка** (-и) *жен.* партиза́н (*тăшмана хирĕç унăн тылĕнче кĕрешекен)*

парти́йный *прил.* па́рти -ĕ; **парти́йный биле́т** па́рти биле́чĕ; **парти́йный съезд** па́рти съéзчĕ

па́ртия (-и) *сущ. жен.* **1.** па́рти (*политика организацийĕ)*; **социа́л-демократи́ческая па́ртия** социа́л-демократсéн па́ртийĕ; **либера́льно-демократи́ческая па́ртия** либера́л-демократсéн па́ртийĕ; **коммунисти́ческая па́ртия** коммунистсéн па́ртийĕ **2.** па́рти, ӳшкăн (*пĕр ĕçри çынсен пĕрлешĕвĕ*); **поиско́вая па́ртия** шырáв ӳшкăнĕ; **па́ртия спаса́телей** çăлавçăсéн ӳшкăнĕ **3.** ӳшкăн; **поступи́ла но́вая па́ртия това́ров** тавáрăн çĕ´нĕ ӳшкăнĕ килсé çи́трĕ **4.** па́рти, вă´йă; **сыгра́ть па́ртию в ша́хматы** шахматлá пĕр вă´йă выля́ **5.** па́рти, роль; **па́ртия скри́пки** сĕрмé кӳ́пăс па́ртийĕ; **спеть па́ртию Оне́гина** Онéгин ролĕнчé юрлá

па́рус (-а) *сущ. муж.; множ.* **паруса́** (-о́в) па́рăс; **подня́ть па́рус** па́рăс кар; **ло́дка идёт под па́русом** ки́мĕ парăспа́ ишсé пыра́ть

па́русный *прил.* па́рăс -ĕ; па́рăслă; **па́русные суда́** па́рăслă карапсе́м

парфюме́рия (-и) *сущ. жен.* парфюме́ри (*духи-одеколон, крем, писев йышши таварсем*)

па́сека (-и) *сущ. жен.* ута́р (*вĕлле хурчĕсем тытакан вырăн*); **лесна́я па́сека** вăрманти́ ута́р

па́смурный *прил.*, **па́смурно** *нареч.* **1.** (*син.* хму́рый, су́мрачный; *ант.* я́сный) ă´мăр, пĕ´лĕтлĕ; **па́смурная пого́да** ă´мăр çанта́лăк **2.** (*син.* мра́чный, невесёлый) салху́, кичĕм, сӳ´рĕк; **па́смурное настрое́ние** салху́ кă´мăл

па́спорт (-а) *сущ. муж.; множ.* **паспорта́** (-о́в) **1.** па́спорт (*çыннăн ĕнентерӳ документчĕ*); **заграни́чный па́спорт** ют çĕршыва́ каймалли́ па́спорт **2.** па́спорт (*машинăсен, таварсен уйрăмлăхне, ятне кăтартнă хут*); **па́спорт автомоби́ля** автомоби́ль па́спорчĕ

пассажи́р (-а) *сущ. муж.*, **пассажи́рка** (-и) *жен.* пассажи́р *(транспортпа ларса çӳрекен)*; **пассажи́ры по́езда** по́езд пассажирĕсĕм

пассажи́рский *прил.* пассажи́р -ĕ; **пассажи́рский по́езд** пассажи́р по́езчĕ

пасси́вный *прил. (ант.* акти́вный), **пасси́вно** *нареч.* сӳ´рĕк, ти́мсĕр, пуçарӳсăр; **пасси́вно относи́ться к рабо́те** ĕçре́ сӳ´рĕк пул ◆ **пасси́вный балáнс** тăкáклă шайлашу́ (*тăкак тупăшран ытларах пулни*)

па́ста (-ы) *сущ. жен.* па́ста (*чуста пек апат, им-çам*); **зубна́я па́ста** шăл пасти́; **шокола́дная па́ста** шокола́длă па́ста; **положи́ть в суп тома́тную па́сту** яшкана́ тома́т пасти́ яр

пасти́ (*наст.* пасу́, пасёшь, пасу́т; *прош.* пас, пасла́, паслó, *множ.* паслú; *прич. действ. наст.* пасу́щий; *прош.* па́сший; *деепр.* па́сши, пася) *глаг. несов., кого-что* кĕт, кĕтсе́ çӳре́, çитерсе́ çӳре́; **пасти́ ста́до** кĕтӳ´ кĕт; **пасти́ телёнка** пăру́ çитерсе́ çӳре́

пасти́сь *1 и 2 л. не употр. (наст.* пасётся, пасу́тся; *прош.* па́сся, паслáсь, паслóсь, паслúсь; *повел. ф. не употр.; прич. действ. наст.* пасу́щийся, *прош.* па́сшийся; *деепр.* пася́сь) *глаг. несов.* çӳре́ (*кĕтӳре*), çисе́ çӳре́; **о́вцы пасу́тся на лугу́** сурăхсе́м улăхра́ çисе́ çӳре́ççĕ

пасту́х (-а́) *сущ. муж.*, **пасту́шка** (-и) *жен.* кĕтӳ´çĕ; **наня́ть пастуха́** кĕтӳ´çĕ тыт

пасть (-и) *сущ. жен. (син.* зев, рот) çăвăр (*чĕр чунсен*); **льви́ная пасть** арăсла́н çăвăрĕ

па́сха (-и) *сущ. жен.* **1. Па́сха** Мăнку́н (*христиансен тĕп уявĕ*); **справля́ть Па́сху** Мăнку́н уявла́ **2.** Мăнку́н çи́мĕçĕ (*ăна тăпăрчăран пĕçереççĕ*)

пасха́льный *прил.* Мăнку́н -ĕ; **пасха́льная неде́ля** Мăнку́н эрни́

па́сынок (-нка) *сущ. муж.* ама́ çури́ ывăл, тăва́н мар ывăл (*ашшĕшĕн е амăшĕшĕн*)

пат (-а) *сущ. муж.* пат (*шахмат вăййинче — мĕнле çӳресен те короле шах пулакан тăрăм; ун пек чухне вăйă никам та çĕнтерейменнипе вĕçленет)*

патéнт (-а) *сущ. муж.* **1.** патéнт (*изобретатель прависене çирĕплетекен документ*) **2.** патéнт (*пĕр-пĕр ĕç ĕçлеме е суту-илу́ тума право паракан документ*); **получи́ть патéнт на торго́влю** сутӳ-илӳ´ тума патéнт ил

патриа́рх (-а) *сущ. муж.* патриа́рх *(христиан чиркĕвĕн аслă пуçлăхĕ)*; **Патриа́рх Моско́вский и Всея́ Руси́** Мускавпа Пĕ´тĕм Раççéй Патриа́рхĕ

патриарха́льный *прил.* **1.** патриархáт -ĕ; **патриарха́льная эпо́ха** патриархáт тáпхăрĕ **2.** (*син.* старозаве́тный) авалхилле́, кивĕлле́; **патриарха́льные обы́чаи** авалхилле́ йăлá-йĕркé

патриархáт (-а) *сущ. муж.* патриархáт (*йăх-ăрура арçын пуç пулса*

тăрас йĕрке, вăл матриархат хыççăн çирĕпленнĕ)

патрио́т (-а) *сущ. муж.*, **патрио́тка** (-и) *жен.* патрио́т *(тăван çĕре юратакан, унăн тăрăшакан çын)*; **патрио́ты Росси́и** Раççéй патриочĕсéм

патриоти́зм (-а) *сущ. муж.* патрио́тлăх, парăнý; парăнсá тăни́; **чу́вство патриоти́зма** патрио́тлăх тýйăмĕ

патро́н (-а) *сущ. муж.* патро́н; **ружéйный патро́н** пăшăл патро́нĕ; **холосто́й патро́н** пýльăсăр патро́н; **боево́й патро́н** пýльăллă патро́н

патру́ль (-я́) *сущ. муж.* патру́ль, хурáл (*куçса çýрекенни*); **милице́йский патру́ль** мили́ци патру́лĕ; **патру́ль задержа́л наруши́телей поря́дка** патру́ль йĕркенé пăсакансенé тытсá чáрнă

патру́льный *прил.* патру́ль -ĕ; хурáл -ĕ; **патру́льная слу́жба** патру́ль служби́; **патру́льная маши́на** хурáл машини́

па́уза (-ы) *сущ. жен. (син.* переры́в, приостано́вка) чарăнý, тăхтáв; **сде́лать па́узу в ре́чи** калаçурá чарăнý ту

пау́к (-а́) *сущ. муж.* эрешмéн; **пау́к пойма́л му́ху** эрешмéн шăнá ты́тнă

паути́на (-ы) *сущ. жен.* эрешмéн карти́; **пау́к плетёт свою́ паути́ну** эрешмéн хăйĕн картинé карáть

пахáть (*наст.* пашý, пáшешь, пáшут; *повел. ф.* паши́; *прич. действ. наст.* пáшущий, *прош.* пахáвший; *прич. страд. прош.* пáханный; *деепр. не употр.) глаг. несов., что* сухалá, сухá ту; **пахáть зéмлю под пар** çĕртмé сухи́ ту

пáхнуть (*наст.* -ну, -нешь, -нут; *прош.* -нул *и* пах, -ла, -ло, *множ.* -ли; *повел. ф. не употр.; прич. действ. наст.* -нущий, *прош.* -нувший; *деепр. не употр.) глаг. несов., чем* шăршă кăлáр; шăршă кĕр; **пáхнет бензи́ном** бензи́н шăрши́ кĕрéт

пациéнт (-а) *сущ. муж.*, **пациéнтка** (-и) *жен.* пациéнт *(врач е больница сиплекен чирлĕ çын)*; **пациéнты райóнной больни́цы** райóн больницúн пациенчĕсéм

пáчка (-и) *сущ. жен.* çыхăвă, тĕркé, пáчка; **пáчка книг** кĕнекé çыххи́; **пáчка сигарéт** сигарéт пачки́

пáчкать (*наст.* -аю, -аешь, -ают; *прич. страд. прош.* -анный) *глаг. несов., кого-что (син.* грязни́ть) варалá, пылчăкла́, лапăртá, хурáт; **пáчкать ру́ки гря́зью** алла́ пылчăкла́; **пáчкать до́брое и́мя** ыр̆ă ятá варалá

пáчкаться (*наст.* -аюсь, -аешься, -аются; *повел. ф.* -айся, -айтесь; *прич. действ. наст.* -ающийся, *прош.* -авшийся; *деепр.* -аясь) *глаг. несов. (син.* грязни́ться) вараля́н, пылчăкля́н, лапăртáн, хурáл; **пáчкаться кра́сками** сăрăпá вараля́н

пáшня (-и) *сущ. жен.; множ.* **пáшни** (пáшен) ана́, пýсă (*сухалани*); **яровáя пáшня** çуртри́ пусси́; **пáшни и поко́сы** ана́-çараи́н

паштéт (-а) *сущ. муж.* паштéт (*вĕтетнĕ ашран, пулăран тунă нимĕр пек апат)*; **паштéт из пéчени** пĕвéр паштéчĕ

пая́ть (*наст.* паяю, паяешь, паяют; *повел. ф.* паяй; *прич. страд. прош.* пáянный; *деепр.* паяя) *глаг. несов.* шăратсá çыпăçтáр (*металл япаласене*)

певéц (певцá) *сущ. муж.*, **певи́ца** (-ы) *жен.* юрăçá; **о́перный певéц** óпера юрăçи́; **певéц эстрáды** эстрáда юрăçи́

пéгий *прил. (син.* пятни́стый) улá; **пéгая ло́шадь** улá лашá

педагóг (-а) *сущ. муж.* педагóг, вĕрентý ´çĕ, вĕрентекéн; **педагóги вы́сшей шко́лы** áслă шкултá вĕрентекенсéм; **учёный-педагóг** педагóг ă´слăхçă

педаго́гика (-и) *сущ. жен.* педаго́гика *(вĕрентсе воспитани парассине тĕпчекен ăслăлăх)* ◆ **наро́дная педаго́гика** ха́лăх педагогики́ *(çамрăксене ăс парса ӳстермелли халăхра авалтан çирĕпленнĕ йĕркесемпе мелсем)*

педагоги́ческий *прил.*, **педагоги́чески** *нареч.* педаго́гика -ĕ, вĕрентӳ́ -ĕ; **педагоги́ческий университе́т** педаго́гика университе́чĕ; **педагоги́ческое мастерство́** вĕрентӳ́ ĕçĕнчи́ ăста́лăх

педа́ль (-и) *сущ. жен.* пу́скăч, педа́ль; **педа́ли велосипе́да** велосипе́д пускăчĕсе́м; **тормозна́я педа́ль** то́рмоз педа́лĕ

пейза́ж (-а) *сущ. муж.* **1.** (*син.* вид) пейза́ж, сắнлăх *(çут çанталăк илемĕпе палăрса тăракан вырăн)*; **во́лжские пейза́жи** А́тăл сăнлăхĕсе́м **2.** пейза́ж *(çут çанталăка сăнлакан ӳкерчĕк)*; **акваре́льные пейза́жи** акварельпе́ ӳке́рнĕ пейзажсе́м

пелена́ть (*наст.* -ена́ю, -ена́ешь, -ена́ют; *прич. страд. прош.* -ёнатый *и* -ёнутый) *глаг. несов., кого* пиеле́, кипкеле́, кипкепе́ чĕрке́; **пелена́ть ребёнка** ачана́ пиеле́

пелёнка (-и) *сущ. жен.* ача́ кипки́, пие́в (*пĕчĕк ачана чĕркемелли*) ◆ **знать с пелёнок** мĕн ачаранпа́х пĕл

пельме́ни (-ей) *сущ. множ.; един.* **пельме́нь** (-я) *муж.* пельме́нь, хура́н кукли́

пе́на (-ы) *сущ. жен.* кắпăк; **мы́льная пе́на** су́пăнь кắпăкĕ; **конь весь в пе́не** лаша́ кăпăка́ ӳ́кнĕ (*хытă хăваланипе)*

пена́л (-а) *сущ. муж.* пена́л *(ручка-кăранташ арчи)*

пе́ние (-я) *сущ. сред.* ю́рă, юрла́в; юрлани́; **пе́ние соловья́** шắпчăк юрри́; **хорово́е пе́ние** хорпа́ юрлани́

пе́нка (-и) *сущ. жен.* хăйма́ *(вĕренĕ сĕтĕн)*; хысма́ (*варенин т.ыт.*)

пенсионе́р (-а) *сущ. муж.*, **пенсионе́рка** (-и) *жен.* пенсионе́р, пе́нси илеке́н

пенсио́нный *прил.* пе́нси -ĕ; **пенсио́нный фонд** пе́нси фо́нчĕ; **дости́гнуть пенсио́нного во́зраста** пе́нси çулне́ çит

пе́нсия (-и) *сущ. жен.* пе́нси *(ватлăхра е сыв мар пирки паракан укçа)*; **пе́нсия по ста́рости** ва́тлăх пе́нсийĕ; **пе́нсия по инвали́дности** инвали́длăх пе́нсийĕ

пень (пня) *сущ. муж.; множ.* **пни** (пней) тунката́; **дубо́вый пень** юма́н тункати́; **корчева́ть пни** тунката́ кăкла́, кăк кăкла́

пе́пел (пе́пла) *сущ. муж.* кĕл; **вулкани́ческий пе́пел** вулка́н кĕ́лĕ; **преврати́ться в пе́пел** кĕлле́н, çунса́ кай

пе́пельница (-ы) *сущ. жен.* кĕ́ллĕх, кĕл чашăкки́ *(чĕлĕм туртакансем валли лартаканни)*

перви́чный *прил.* **1.** (*син.* исхо́дный) малтанхи́, пирвайхи́, пуçла́мăш; **перви́чный пери́од боле́зни** чи́рĕн малтанхи́ та́пхăрĕ **2.** (*син.* нача́льный, низово́й) пуçла́мăш, чи кĕ́çĕн; **семья́ — перви́чная яче́йка о́бщества** çемье́ — о́бществăн чи кĕ́çĕн сы́пăкĕ; **перви́чные организа́ции профсою́за** профсою́зăн пуçла́мăш организацийĕсе́м

первобы́тный *прил.* **1.** (*син.* древне́йший) авалхи́, сĕм авалхи́; **первобы́тный челове́к** авалхи́ çын **2.** (*син.* ди́кий, некульту́рный) тĕ́ттĕм, сĕ́мсĕр, тиске́р; **первобы́тные нра́вы** тиске́р йăласе́м

пе́рвый *числит.* **1.** пĕрре́мĕш; **пе́рвое сентября́** а́вăн у́йăхĕн пĕрре́мĕшĕ; **пе́рвое вре́мя** малтана́х; **в пе́рвый раз** пĕрре́мĕш хут, пуçласа́; **това́р пе́рвого со́рта** пĕрре́мĕш сорт тава́р **2. пе́рвое** (-ого) *сущ. сред.* пĕрре́мĕш апа́т, яшка́ тавра́шĕ; **сего́дня на пе́рвое — щи** пая́н пĕрре́мĕш апа́т — купăста́ яшки́ ◆ **пе́рвым де́лом, в**

пе́рвую о́чередь чи малта́н, нимре́н малта́н

перебежа́ть (*будущ.* -егу́, -ежи́шь, -егу́т; *повел. ф.* -еги́) *глаг. сов., что и через что* чупса́ каç; **перебежа́ть че́рез у́лицу** ура́м у́рлă чупса́ каç

перева́ривать (*наст.* -аю, -аешь, -ают) *глаг. несов., что (син.* усво́ить) ирĕлте́р, шăра́т (*çинĕ апата)*; ăнла́н, ăсắ хыв *(мĕн вуланине)* ◆ **я его́ не перева́риваю** э́пĕ ăна́ чăтма́ пултарайма́стăп

переверну́ть (*будущ.* -ерну́, -ернёшь, -ерну́т; *прич. страд. прош.* -ёрнутый) *глаг. сов., кого-что* çа́вăр, çавăрсắ пăра́х, ӳпĕнте́р; **переверну́ть ло́дку** киммĕ́ ӳпĕнте́р; **переверну́ть страни́цу кни́ги** кĕнеке́ страницине́ уç ◆ **переверну́ть всё вверх дном** йăлтăх тустарсắ пĕте́р; **рассказ переверну́л ду́шу** кала́в чуна́ хуска́трĕ

перевести́ (*будущ.* -веду́, -ведёшь, -веду́т; *прош.* -вёл, -вела́, -вело́, *множ.* -вели́; *повел. ф.* -веди́; *прич. действ. прош.* -ве́дший; *прич. страд. прош.* -ведённый) *глаг. сов.* **1.** *кого* çавăтсắ каçа́р; каçарсắ яр; **перевести́ дете́й че́рез у́лицу** ачасене́ ура́м у́рлă каçарсắ яр **2.** *что* куçа́р; **перевести́ расска́з с англи́йского языка́ на ру́сский** калава́ акăлчанларăн вырăслắ куçа́р **3.** *кого-что* хуска́т, куçа́р; **перевести́ стре́лки часо́в** сехе́т йĕпписене́ куçа́р; **перевести́ учрежде́ние в но́вое зда́ние** учреждение́ çĕ´нĕ çурта́ куçа́р; **Пе́тя переведён в пя́тый класс** Петьăна́ пи́ллĕкмĕш класа́ куçа́рнă

перево́д (-а) *сущ. муж.* **1.** (*син.* перемеще́ние) куçару́; куçарни́ *(вырăнтан вырăна)*; **перево́д на но́вую до́лжность** çĕ´нĕ должноçа́ куçарни́ **2.** куçару́; куçарни́ *(чĕлхерен чĕлхене)*; **у́стный перево́д** сăмăх вĕ´ççĕн куçарни́; **сде́лать перево́д** куçа́р

перево́дный *прил.* куçару́ -ĕ; куçа́рнă; **перево́дный рома́н** куçа́рнă рома́н

перево́дчик (-а) *сущ. муж.*, **перево́дчица** (-ы) *жен.* куçару́çă, тăлма́ч; **учи́ться на перево́дчика** куçару́çă ĕçне́ вĕре́н

перево́рот (-а) *сущ. муж.* улшăну́, пăтăрма́х; **революцио́нный перево́рот** революци пăтăрма́хĕ; **соверше́н госуда́рственный перево́рот** патша́лăх влаçне́ улăшта́рнă

перевы́боры (-ов) *сущ. множ.* çĕ´нĕ суйла́в; **перевы́боры профсою́зного комите́та** профсоюз комите́чĕн çĕ´нĕ суйла́вĕ

перевы́полнить (*будущ.* -ню, -нишь, -нят; *прич. страд. прош.* -ненный) *глаг. сов., что* ирттерсе́ тултар́; **брига́да перевы́полнила план** брига́да плана́ ирттерсе́ тултар́нă

перевяза́ть (*будущ.* -яжу́, -я́жешь, -я́жут; *повел. ф.* -яжи́; *прич. страд. прош.* -я́занный) *глаг. сов., кого-что* çыхса́ яр (*сурана*); чĕркесе́ çых (*япалана*); **ра́неных перевяза́ли на по́ле бо́я** аманнисе́н суранĕсене́ çа́пăçнă çĕртĕ çыхса́ я́нă

перегна́ть (*будущ.* -гоню́, -го́нишь, -го́нят; *прош.* -гна́л, -гнала́, -гна́ло, *множ.* -гна́ли; *повел. ф.* -гони́) *глаг. сов., кого-что* иртсе́ кай, хăваласа́ ирт; **лы́жник перегна́л сопе́рников** йĕ´лтĕрçĕ хăйпе́ ăмăртакансенче́н иртсе́ ка́йрĕ

перегно́й (-о́я) *сущ. муж.* çĕ´рнĕ ти́слĕк, çĕ´рĕк тăпри́

перегово́ры (-ов) *сущ. множ.* калаçу́; калаçни́; **дипломати́ческие перегово́ры** диплома́ти калаçăвĕсе́м; **вести́ перегово́ры** калаçусе́м ирттер

перегоро́дка (-и) *сущ. жен.* пӳлме́, пӳлме́лĕх; **разгороди́ть ко́мнату перегоро́дкой** пӳлĕме́ пӳлсе́ ӳйăр

пе́ред, пе́редо *предлог с твор. п.* умра́, умĕнче́, умăнта́; ума́, умне́, умна́; **пе́ред до́мом** çурт умĕнче́; **оста-**

нови́ться пе́ред до́мом çурт умĕнчĕ́ чарăнсá тăр

переда́ть (*будущ.* передáм, передáшь, передадýт; *прош.* пе́редал *и* передáл, передалá, пе́редало *и* передáло, *множ.* передáли; *повел. ф.* передáй; *прич. страд прош.* пе́реданный) *глаг. сов.* **1.** *кого-что* пĕлтĕ́р, çитĕ́р, калá; **переда́ть приве́т** салáм калá **2.** пар, çитĕ́р; **переда́ть де́ло в суд** ĕçĕ́ судá пар **3.** пар, передáча ту; **переда́ть конце́рт по ра́дио** радиопá концĕ́рт пар

переда́ча (-и) *сущ. жен.* **1.** парý; панú; **перада́ча иму́щества по а́кту** пурлăхá актпá панú **2.** передáча *(радио, телевидени панисем);* **де́тские переда́чи ра́дио** радиорú ачá-пăчá передачисéм

переде́лать (*будущ.* -аю, -аешь, -ают; *прич. страд. прош.* -анный) *глаг. сов., кого-что* улăштăр, улшăнтáр, çĕнĕ́т, çĕнĕллé ту; **переде́лать пиджа́к** пиншакá пăссá çĕлé

пере́дний *прил. (ант.* зáдний) малтú, умрú, уменчú; **пере́дние колёса теле́ги** урапáн малтú кустăрмисéм

пере́дник (-а) *сущ. муж. (син.* фáртук) саппýн, чĕр çиттú

передови́ца (-ы) *сущ. жен.* ум статья́; **передови́ца газе́ты** хаçáт ум статйú

передово́й *прил.* малтú, малтá пыракáн; **передова́я те́хника** малтá пыракáн тéхника; **передова́я статья́** ум статья́

переéхать (*будущ.* -éду, -éдешь, -éдут; *повел. ф.* -езжáй) *глаг. сов.* куç, куççá кай; **они́ переéхали в го́род** вĕсéм хуланá куççá кáйнă

переживáть (*наст.* -áю, -áешь, -áют) *глаг. несов., за кого-что (син.* волнова́ться, беспоко́иться) пăшăрхáн, хумхáн; **переживáть за здоро́вье дете́й** ачасéн сы́влăхĕшĕн пăшăрхáн

перейти́ (*будущ.* перейдý, перейдёшь, перейдýт; *прош.* перешёл, перешлá, перешлó, *множ.* перешлú; *повел. ф.* перейдú; *прич. действ. прош.* перешéдший; *прич. страд. прош.* перейдённый; *деепр.* перейдя́) *глаг. сов.* **1.** *что и через что* каç, каççá кай; **перейти́ че́рез овра́г** çырмá ýрлă каç **2.** куç, куççá кай; **перейти́ в сосе́днюю ко́мнату** юнашáр пýлĕмé куç; **перейти́ на но́вую рабо́ту** çĕ́нĕ ĕçĕ́ куç; **перейти́ от слов к де́лу** сăмахрáн ĕçĕ́ куç

перекрёсток (-тка) *сущ. муж.* çул тăваткáлĕ, урáм тăваткáлĕ, хĕрéслĕ урáм (*икĕ çул, урам хĕресленнĕ вырăн*)

переме́на (-ы) *сущ. жен.* **1.** улшăнý, улăшý; улшăннú; **переме́на в настрое́нии** кá´мăл улшăннú **2.** (*син.* переры́в) тăхтáв; **шко́льники вы́шли на переме́ну** шкул ачисéм тăхтавá тýхрĕç

перенести́ (*будущ.* -несý, -несёшь, -несýт; *прош.* -нёс, -несла́, -несло́, *множ.* -несли́; *прич. действ. прош.* -нёсший; *прич. страд. прош.* -несённый; *деепр.* -неся́) *глаг. сов.* **1.** *кого-что* çĕклесé каçáр, йăтсá каçáр; **перенести́ ребёнка че́рез ручёй** ачанá çырмá ýрлă йăтсá каç **2.** *что* куçáр; **собра́ние перенесено́ на сле́дующий день** пухăвá тéпĕр куná куçáрнă **3.** *что (син.* испыта́ть) тýс, чăт, чăтсá иртте́р, тýссé кур; **он перенёс мно́го страда́ний** вăл нумáй хĕн-хýр тý´снĕ

перено́сный *и* **переносно́й** *прил.* **1.** ку́çăмлă, куçмалла́, куçармалла́; **переноска́я ла́мпа** куçармалла́ ла́мпа **2.** (*ант.* прямо́й) ку́çăмлă, ытáрлă; **перено́сные значе́ния сло́ва** сăмáхăн ку́çăмлă пĕлтерĕшĕсéм

переоде́ться (*будущ.* -е́нусь, -е́нешься, -е́нутся; *повел. ф.* -е́нься, -е́ньтесь; *прич. действ. прош.* -е́вшийся; *деепр.* -е́вшись) *глаг. сов.* хывсá тă´хăн; **переоде́ться в суху́ю оде́жду** ти́пĕ тумти́р тă´хăн *(йĕпине хывса)*

пе́репел (-а) *сущ. муж.*, **перепёлка** (-и) *жен.* путене́ *(уйра пурăнакан кайăк)*

переписа́ть (*будущ.* -ишу́, -и́шешь, -и́шут; *повел. ф.* -иши́; *прич. страд. прош.* -и́санный) *глаг. сов.* **1.** *что (син.* скопи́ровать) куçарса́ çыр, çĕнĕре́н çыр; **переписа́ть с черновика́ на бело́вик** малта́н çырнине́ тасалла́ куçарса́ çыр **2.** *кого-что* çырса́ тух; **переписа́ть яви́вшихся на собра́ние** пухăва́ килнисене́ çырса́ тух

перепи́ска (-и) *сущ. жен.* **1.** çыру́ çу́ретни́; **вести́ перепи́ску** çыру́ çу́ре́т **2.** çырусе́м, çыру́ пуххи́; **изда́ть перепи́ску худо́жника** худо́жник çырăвĕсене́ пичетлесе́ кăла́р

перепи́сываться (*наст.* -аюсь, -аешься,-аются; *повел. ф.* -айся, -айтесь; *прич. действ. наст.* -ающийся, *прош.* -авшийся; *деепр.* -аясь) *глаг. несов.* çыру́ çу́ре́т, çыру́ яр; **мы с ним давно́ перепи́сываемся** эпи́р унпа́ тахçантанпа́х çыру́ çу́ретéтпĕр

пе́репись (-и) *сущ. жен.* пе́репись, çырса́ тухни́; **пе́репись населе́ния** ха́лăх пе́реписĕ; **пе́репись жило́го фо́нда** çурт-йĕрé çырса́ тухни́

переплёт (-а) *сущ. муж. (син.* обло́жка) хуплашка́; **твёрдый переплёт кни́ги** кĕнекéн хы́тă хуплашки́

переплы́ть (*будущ.* -ыву́, -ывёшь, -ывýт) *глаг. сов., что и через что* ишсе́ каç; **переплы́ть че́рез Во́лгу** А́тăл у́рлă ишсе́ каç

перепо́нка (-и) *сущ. жен.* çурха́х; **бараба́нная перепо́нка** хăлха́ çурха́хĕ

перепра́ва (-ы) *сущ. жен.* ка́çă, каçма́; **понто́нная перепра́ва** понто́н ка́çă

перерыв (-а) *сущ. муж.* тăхта́в; **обе́денный перерыв** апа́т тăхта́вĕ; **сде́лать перерыв в рабо́те** ĕçре́ тăхта́в ту

переста́ть (*будущ.* -а́ну, -а́нешь, -а́нут; *повел. ф.* -а́нь) *глаг. сов.* ча́рăн, пăра́х; **дождь переста́л** çумă пăра́хрĕ; **Переста́ньте шуме́ть, де́ти!** Ачасе́м, шавлама́ ча́рăнăр!

переу́лок (-лка) *сущ. муж.* тă´кăрлăк, пралу́к, у́рлă ура́м; **у́зкий переу́лок** а́нсăр тă´кăрлăк

пе́рец (-рца) *сущ. муж.* пă´рăç; **кра́сный пе́рец** хĕ´рлĕ пă´рăç; **сла́дкий пе́рец** пылáк пă´рăç; **стручо́к пе́рца** пă´рăç хутаççи

перёд (пе́реда, пе́редом) *сущ. муж.*; *множ.* **переда́** (-о́в) ум, пит, мал ен; пуç; **перёд пла́тья** кĕпе́ у́мĕ; **перёд сане́й** çуна́ пу́çĕ; **встать пе́редом к зе́ркалу** тĕ´кĕр умне́ питпе́ тăр

пери́ла (-и́л) *сущ. множ.* ка́рлăк; **пери́ла моста́** кĕпе́р ка́рлăкĕ; **вера́нда с резны́ми пери́лами** эре́ш ка́рлăклă вера́нда

пери́на (-ы) *сущ. жен.* тĕк ту́ше́к; **пухо́вая пери́на** ма́мăк ту́ше́к

пери́од (-а) *сущ. муж.* та́пхăр, вă´хăт, ху́шă; **послевое́нный пери́од** вă´рçă хыççăнхи́ та́пхăр; **пе́рвый пери́од хокке́йной встре́чи** хокке́й вăййи́н пĕрре́мĕш та́пхăрĕ

периоди́ческий *прил.*, **периоди́чески** *нареч.* **1.** та́пхăрлă; вă´хăт-вă´хăт, та́пхăр-та́пхăр; **периоди́ческие при́ступы боле́зни** чир вă´хăт-вă´хăт вăйланни́ **2.: периоди́ческая печа́ть** хаçа́т-журна́л *(паллă вăхăтран тухакан кăларăмсем)*

перло́вый *прил.* урпа́ -ĕ; **перло́вая крупа́** урпа́ кĕрпи́ *(шултăри)*

перо́ (-а́) *сущ. сред.; множ.* **пе́рья** (-ьев) **1.** тĕк (*кайăксен)*; **гуси́ное перо́** хур тĕ´кĕ, хур шăмми́; **щипа́ть пе́рья** тĕк тат *(пуснă кайăкăнне)* **2.** перо́ (*çырмалли*); **плака́тные пе́рья** плака́т перисе́м

перочи́нный *прил.*: **перочи́нный нож** хуçмалла́ çĕ´çĕ, пе́кĕ

перпендикуля́рный *прил. (ант.* паралле́льный), **перпендикуля́рно** *нареч.* перпендикуля́рлă *(тӳрĕ кĕтес тăвакан йĕрсем çинчен)*

перро́н (-а) *сущ. муж.* перро́н *(станцире — поезд пырса тăракан тикĕс вырăн);* **пассажи́ры ждут по́езда на перро́не** пассажирсе́м перронта́ по́езд кĕтсе́ тăрăççĕ

пе́рсик (-а) *сущ. муж.* пе́рсик *(пан улми евĕр çимĕç)*

перспекти́ва (-ы) *сущ. жен. (син.* бу́дущее) мала́шлăх, пула́слăх; **заво́д име́ет хоро́шие перспекти́вы** заво́дăн мала́шлăхĕ ла́йăх

пе́рстень (-тня) *сущ. муж.; множ.* **пе́рстни** (-ей *и* -е́й) çĕ́рĕ, ку́çлă çĕ́рĕ; **пе́рстень с бриллиа́нтом** кеве́р ку́çлă çĕ́рĕ

перча́тки (-ток) *сущ. множ.; един.* **перча́тка** (-и) *жен.* перчетке́; **ко́жаные перча́тки** сăра́н перчетке́

песе́ц (песца́) *сущ. муж.* песе́ц, çурçĕр тилли́; **ша́пка из ме́ха песца́** песе́ц тир çĕ́лĕкĕ

песка́рь (-я́) *сущ. муж.* ыра́ш пăтри́ (*вĕтĕ пулă*)

пе́сня (-и) *сущ. жен.; множ.* **пе́сни** (пе́сен) ю́рă; **чува́шские наро́дные пе́сни** чăва́ш ха́лăх юррисе́м; **петь пе́сню** ю́рă юрла́

песо́к (песка́ *и* песку́) *сущ. муж.* **1.** ха́ йăр; **речно́й песо́к** юха́н шыв ха́ йăрĕ **2.** пессу́к; **са́харный песо́к** са́хăр пессу́кĕ, вĕ́тĕ са́хăр

пессими́зм (-а) *сущ. муж. (ант.* оптими́зм) пессими́зм, пу́сăрăнчăклăх, ша́нăççăрлăх

пессими́ст (-а) *сущ. муж.,* **пессими́стка** (-и) *жен.* пессими́ст *(пусăрăнчăк кăмăллă, шанăççăр çын)*

пе́тля (-и) *и* **петля́** (-и́) *сущ. жен.; множ.* **пе́тли** (пе́тель *и* пете́ль, пе́тлям) **1.** йа́ лă, йăлмак, ка́смак; **сде́лать пе́тлю на конце́ верёвки** вĕре́н вĕçĕнче́ йăлмак ту **2.** йа́ лă *(туртир çухинчи, аркинчи);* **пе́тли для пу́говиц** ту́ме́ йăллисе́м **3.** тăпса́, петле́; **дверна́я петля́** а́лăк тăпси́

петру́шка (-и) *сущ. жен.* петру́шка *(апата хушакан ырă шăршăллă курăк);* **гря́дка с петру́шкой** петру́шка йăра́нĕ

пету́х (-а́) *сущ. муж.* авта́н; **пету́х кукаре́кает** авта́н авăта́ть

петь (*наст.* пою́, поёшь, пою́т; *повел. ф.* пой; *прич. действ. наст.* пою́щий, *прош.* пе́вший; *прич. страд. прош.* пе́тый; *деепр. не употр.) глаг. несов., что* юрла́; **петь в хо́ре** хорта́ юрла́; **солове́й поёт** шă ́пчăк юрла́ть

пехо́та (-ы) *сущ. жен.* пехо́та, çура́н çар; **морска́я пехо́та** ти́нĕс пехоти́

печа́ль (-и) *сущ. жен. (син.* грусть, скорбь) салху́, ху́йхă, ху́рлăх; **говори́ть с печа́лью** хурланса́ кала́ç

печа́льный *прил. (син.* го́рестный, ско́рбный), **печа́льно** *нареч.* салху́, салху́ллă, ху́йхăллă, ху́рлăхлă, хурла́нчăк; **печа́льное изве́стие** ху́йхăллă хыпа́р; **говори́ть печа́льным го́лосом** хурла́нчăк сасăпа́ кала́ç

печа́тать (*наст.* -аю, -аешь, -ают; *прич. страд. наст.* -аемый, *прош.* -анный) *глаг. несов., что* пичетле́, çап; **печа́тать кни́гу** кĕнеке́ пичетле́; **печа́тать на маши́нке** машинкăпа́ çап

печа́тный *прил.* **1.** пиче́т -ĕ; пичетлеке́н, пичетлемелли́; **печа́тный стано́к** пиче́т стано́кĕ **2.** (*ант.* рукопи́сный) пичетле́нĕ, пичетле́ннĕ; **печа́тные труды́ иссле́дователя** тĕпчéвçĕн пичетлéннĕ ĕçĕсéм ◆ **печа́тные бу́квы** пичéт сас паллийĕсéм *(тăваткал ӳкерсе çырнисем)*

печа́ть (-и) *сущ. жен.* **1.** пиче́т *(документа çирĕплетмелли);* **ге́рбовая печа́ть** ге́рблă пичéт; **поста́вить на спра́вке печа́ть** спра́вка çинé пичéт ларт **2.** пичéт *(кĕнекесем, хаçат-журнал);* **рабо́тники печа́ти** пичéт ĕçченĕсéм

пе́чень (-и) *сущ. жен.* пĕве́р; **боле́знь пе́чени** пĕве́р чи́рĕ

печéнье (-я) *сущ. сред.* печéни; **пáчка печéнья** пĕр пáчка печéни; **пить чай с печéньем** печенипé чей ĕç

печёнка (-и) *сущ. жен.* пĕвéр *(пĕçерни);* **паштéт из печёнки** пĕвéр паштéчĕ

пéчка (-и) *сущ. жен.* кăмакá; **желéзная пéчка** тимĕр кăмакá; **пéчка-кáменка** мунчá кăмаки́ *(ăшши памалли)*

печни́к (-á) *сущ. муж.* кăмакáçă, кăмакá ăстú

печь[1] (*наст.* пекý, печёшь, пекýт; *прош.* пёк, пеклá, пеклó, *множ.* пеклú; *повел. ф.* пекú; *прич. действ. наст.* пекýщий, *прош.* пёкший; *прич. страд. прош.* печённый; *деепр. не употр.) глаг. несов.* **1.** *что* пĕçéр *(кăмака тĕпне е çатма çине хывса);* **печь пироги́ в духóвке** духовкáрá кýкăль пĕçéр; **печённый на кострé карто́фель** кăвáйт çинчé пĕçérнĕ çĕр улми́ **2.** *1 и 2 л. не употр.* çунтáр, пĕçérт, хĕрт; **со́лнце си́льно печёт** хĕвéл хытă пĕçертéт

печь[2] (пéчи, о пéчи, в печи́) *сущ. жен.; множ.* **пéчи** (печéй) кăмакá; **ру́сская печь** çáʹкăр кăмаки́; **топи́ть печь** вýтă хут ◆ **до́менная печь** дóмна кăмаки́ *(металл шăратса кăлармалли)*

пéший *прил.* çурáн; **дви́гаться в пéшем строю́** çурáн стройпá пыр

пéшка (-и) *сущ. жен.* пéшка *(шахматри кĕçĕн кĕлетке)*

пешко́м *нареч.* çурáн; **отпрáвиться в го́род пешко́м** хулана́ çурáн кай

пещéра (-ы) *сущ. жен.* çĕр хăʹвăлĕ; **пещéры в горáх** сăрт-турú çĕр хăвăлĕсéм

пёс (пса) *сущ. муж.* йы́тă, áнчăк; **цепно́й пёс** сăнчăртú йы́тă ◆ **пёс его́ знáет** мур пĕлéт ăнá

пёстрый (*кратк. ф.* пёстр, пестрá, пёстро *и* пестро́, *множ.* пёстры *и* пестры́) *прил.*, **пёстро** *нареч.* чăпáр, улá, улá-чăлá; **пёстрая ку́рица** чăпáр чăх

пиани́но *сущ. нескл. сред.* пиани́но *(пускăчлă музыка инструменчĕ)*; **игрáть на пиани́но** пиани́но калá

пиани́ст (-а) *сущ. муж.*, **пиани́стка** (-и) *жен.* пиани́ст *(пианино, рояль калакан музыкант)*

пивно́й *прил.* сăрá -ĕ; **пивна́я бо́чка** сăрá пичкú; **пивно́й бар** сăрá бáрĕ

пи́во (-а) *сущ. сред.* сăрá; **разливно́е пи́во** пичкĕ сăри́; **пи́во в ба́нках** бáнкăллă сăрá; **вари́ть пи́во** сăрá ту

пиджа́к (-á) *сущ. муж.* пиншáк; **мужско́й пиджа́к** арçыи пиншáкĕ; **носи́ть ко́жаный пиджа́к** сăрáн пиншакпá çýрé

пижа́ма (-ы) *сущ. жен.* пижáма *(килте тăхăнмалли çемçе костюм)*

пик (-а) *сущ. муж.* **1.** (*син.* верши́на) тăʹрă, тýпé, шĕвреш кé (*сăрт тăррин*) **2.** хĕрýʹ тáпхăр, ĕç çиййĕ; **часы́ пик на тра́нспорте** тра́нспорт ĕçĕнчи́ хĕрýʹ тáпхăр

пике́ *сущ. нескл. сред.* пике́ *(самолет çĕрелле вирхĕнсе анни)*

пике́т (-а) *сущ. муж.* **1.** хурáл ýшкăнĕ **2.** пике́т *(хăйсем ыйтнине пурнăçлама çине тăракансен ушкăнĕ);* **забасто́вщики вы́ставили пике́т** забастóвка тăвакансéм пике́т тăрáтнă

пи́ки (пик, пи́кам) *сущ. множ.* пи́ки, курáк *(карт вăййинчи пĕр тĕс)*; **деся́тка пик** курáк вýннă

пила́ (-ы́) *сущ. жен.; множ.* **пи́лы** (пил, пи́лам) пăʹчкă; **ручна́я пила́** áлă пăчки́; **поперéчная пила́** каскá пăчки́ *(икĕ авăрли);* **пили́ть дрова́ пило́й** пăчкăпá вýтă тат

пили́ть (*наст.* пилю́, пи́лишь, пи́лят; *прич. действ. наст.* пи́лящий, *прош.* пили́вший; *прич. страд. прош.* пилённый; *деепр.* пиля́) *глаг. несов.* **1.** *что* тат, çур, кас (*пăчкăпа*); **пили́ть до́ски** хăмá çур **2.** *кого (син.* изводи́ть, попрека́ть) çи, тăʹрăн, ýпкелé

пило́т (-а) *сущ. муж.* пило́т, лёт-

чик, вĕҫéвçĕ; **пилóт вертолёта** вертолёт пилóчĕ

пилóтка (-и) *сущ. жен.* пилóтка *(тăрхала формăллă ҫăмăл калпак);* **воéнная пилóтка** ҫар пилоткú

пинáть (*наст.* -áю, -áешь, -áют) *глаг. несов.* тап, тапсá яр; **пинáть ногóй** урапá тап

пингви́н (-а) *сущ. муж.* пингви́н *(Антарктикăра пурăнакан вĕҫмен кайăк)*

пио́н (-а) *сущ. муж.* пио́н *(пахча чечекĕ)*

пионе́р (-а) *сущ. муж.*, **пионéрка** (-и) *жен.* **1.** пуҫарýҫă, ҫĕ´нĕлĕхҫĕ *(ҫĕнĕ ĕҫе пуринчен малтан пуҫăнакан)* **2.** пионéр *(ача-пăча организацийĕнче тăракан)*

пионéрский *прил.* пионéр -ĕ; **пионéрский отря́д** пионéр отрáчĕ

пира́т (-а) *сущ. муж.* пирáт, тúнĕс хураҳĕ

пира́тский *прил.* пирáт -ĕ; **пира́тский кора́бль** пиратсéн караплĕ

пиро́г (-á) *сущ. муж.; множ.* **пироги́** (-о́в) кýкăль; **начúнка пирога́** кýкăль ă´шĕ; **я́блочный пиро́г** пан улми́ куклú; **печь пироги́** кýкăль пĕҫéр

пиро́жное (-ого) *сущ. сред.* пиро́жнăй *(пылак чустапа, кремпа тунă ҫимĕҫ)*

писа́тель (-я) *сущ. муж.*, **писа́тельница** (-ы) *жен.* ҫыравҫă; **наро́дный писа́тель Чува́шии** чăваш халăх ҫыравҫи; **де́тские писа́тели** ача-пăча ҫыравҫисéм; **мастерство́ писа́теля** ҫыравҫă ăстáлăхĕ

писа́ть (*наст.* пишý, пи́шешь, пи́шут; *прич. действ. наст.* пи́шущий, *прош.* писáвший; *прич. страд. прош.* пи́санный) *глаг. несов., что* **1.** ҫыр; **писа́ть карандашо́м** кăранташпá ҫыр; **писа́ть письмо́** ҫырý ҫыр; **шко́льники пи́шут дикта́нт** шкул ачисéм диктáнт ҫырáҫҫĕ **2.** (*син.* создавáть) ҫыр, хыв, хайлá; **компози́тор пи́шет пе́сни** композúтор юрăсéм хывáть **3.** *о ком-чем (син.* сообщúть) ҫыр, хыпарлá, пĕлтéр; **об э́том писа́ли газе́ты** кун ҫинчéн хаҫатсéм пĕлтéрнĕҫҫĕ ◆ **писа́ть карти́ну ма́слом** ҫýллă сăрăпá ýкéрчĕк хайлá

пистоле́т (-а) *сущ. муж.* пистолéт; **стреля́ть из пистоле́та** пистолетрáн пер

пи́сьменность (-и) *сущ. жен.* ҫырýлăх; **созда́ние чува́шской пи́сьменности** чăваш ҫырулăхнé пуҫарсá яни

пи́сьменный *прил. (ант.* ýстный), **пи́сьменно** *нареч.* ҫырý -ĕ; ҫырýллă; **пи́сьменные принадле́жности** ҫырý хатĕрĕсéм; **пи́сьменный текст** ҫырýллă текст; **изложи́ть про́сьбу пи́сьменно** мĕн ыйтнинé ҫырсá пар

письмо́ (-á) *сущ. сред.; множ.* **пи́сьма** (пи́сем, пи́сьмам) **1.** ҫырý *(ҫын патне яни);* **написа́ть письмо́ дру́гу** тус патнé ҫырý ҫыр **2.** ҫырý, ҫырýлăх; **зву́ко-бу́квенное письмо́** сас паллúллĕ ҫырýлăх *(сăм., вырăс, латин алфавичĕсен);* **иероглифи́ческое письмо́** иерóглиф ҫы́рăвĕ *(сăм., Китайра, Японире)*

пита́ться (*наст.* -áюсь, -áешься, -áются; *повел. ф.* -áйся, -áйтесь; *прич. действ. наст.* -áющийся, *прош.* -áвшийся; *деепр.* -áясь) *глаг. несов., чем* тăрансá пýрăн, ҫисé пýрăн, апатлáн; **пита́ться в столо́вой** столовăйрá апатлáн; **о́вцы пита́ются трако́й** сурăхсéм курăкпá тăрансá пурăнáҫҫĕ

пито́мник (-а) *сущ. муж.* усрáв, усрáвлăх, питóмник; **пито́мник фрукто́вых дере́вьев** ҫúмĕҫ йывăҫҫúн питóмникĕ

пить (*наст.* пью, пьёшь, пьют; *прош.* пил, пилá, пúло, *множ.* пúли; *повел. ф.* пей; *прич. действ. наст.* пью́щий; *прош.* пúвший; *прич. страд. прош.* пúтый; *кратк. ф.* пит, питá *и* пúта, пúто, *множ.* пúты; *деепр. не употр.) глаг. несов., что* ĕҫ; **пить во́-**

ду шыв ĕç; **хóчется пить** ĕçéс килéт

пи́ща (-и) *сущ. жен.* апáт, çимé, çимелли́, апáт-çи́мĕç; **вку́сная пи́ща** ту́тлă апáт-çи́мĕç; **горя́чая пи́ща** вĕри́ апáт

пища́ть (*наст.* пищу́, пищи́шь, пищáт; *прич. действ. наст.* пища́щий, *прош.* пища́вший; *деепр.* пища́) *глаг. несов.* нăйлáт, чăйлáт, нă ´йкăш; **птенцы́ пища́т** кáйăк чĕпписéм чăйлатáççĕ

пищеваре́ние (-я) *сущ. сред.* апáт шăраннú; **расстро́йство пищеваре́ния** вар пăсăлни́, вар виттú

пия́вка (-и) *сущ. жен.* сĕ´лĕх; **к те́лу приста́ли пия́вки** ýтé сĕлĕхсéм çы́пçăннă

пла́вание (-я) *сущ. сред.* ишý´; ишни́; **соревнова́ния по пла́ванию** ишессипé ăмăртни́

пла́вать (*наст.* -аю, -аешь, -ают) *глаг. несов.* иш, ишсé çýрé; **учи́ться пла́вать** ишмé вĕрéн; **де́ти пла́вают в пруду́** ачасéм пĕверé ишсé çýрéççĕ ◆ **ме́лко пла́вает** хевти́ çитмéст, пултараймáсть

пла́вки (-вок) *сущ. множ.* пла́вки *(шыва кĕмелли кĕске йĕм)*

плавни́к (-а́) *сущ. муж.* çунáт, и́шкĕч; **плавники́ ры́бы** пýлă çуначĕсéм; **спинно́й плавни́к о́куня** улáнкăн çýрăм и́шкĕчĕ

пла́вный *прил. (син.* мéрный; *ант.* рéзкий), **пла́вно** *нареч.* ти́кĕс, мéллĕ, виçéллĕ, я́рăнчăк; **пла́вный та́нец** я́рăнчăк та́шă; **идти́ пла́вно** пĕр ти́кĕс утсá пыр

плагиа́т (-а) *сущ. муж.* плагиáт *(çын çырнине вăрласа пичетлени)*

плака́т (-а) *сущ. муж.* плакáт *(агитаци ӳкерчĕкĕ);* **предвы́борный плака́т** суйлáв уменхи́ плакáт

пла́кать (*наст.* плáчу, плáчешь, плáчут; *повел. ф.* плачь; *прич. действ. наст.* плáчущий, *прош.* плáкавший; *деепр.* плáча) *глаг. несов.* мáкăр, йĕр; **пла́кать всхли́пывая** ĕсĕклесé мáкăр; **пла́кать навзры́д** уласá йĕр ◆ **пла́кали на́ши де́нежки** пи́рĕн укçá харáм пýлчĕ

пла́менный *прил.*, **пла́менно** *нареч.* **1.** (*син.* о́гненный) çýлăмлă, вýтлă, вут-çýлăмлă, вут-хĕ´млĕ; **пла́менный хвост раке́ты** ракéтăн вýтлă хýри́ **2.** хĕрӳ´, хĕрӳ´ллĕ; **Вам всем пла́менный приве́т**! Сирé пурнé те хĕрӳ´ллĕ салáм!

пла́мя (-мени, -менем) *сущ. сред.* çýлăм, вут, вут-çýлăм, вýт-хĕм; **пла́мя костра́** кăвáйт çýлăмĕ; **пла́мя охвати́ло дом** пӳртé вут хыпсá и́лчĕ

план (-а) *сущ. муж.* **1.** (*син.* чертёж) план, ӳ́керчĕк; **план го́рода** хулá плáнĕ **2.** план *(тумалли ĕçсене палăртса хуни);* **годово́й план** çултáлăк плáнĕ; **вы́полнить план** планá тултáр; **рабо́та идёт по плáну** ĕç план тă´рăх пулсá пырáть

планéта (-ы) *сущ. жен.* планéта *(çăлтăр тавра çаврăнса тăракан пысăк кĕлетке);* **планéты Со́лнечной систéмы** Хĕвéл системинчú планетăсéм

планúровать (*наст.* -рую, -руешь, -руют) *глаг. несов., что* планлá, пáлăрт, палăртсá хур, план ту; **планúровать рабóту на мéсяц** ýйăхлăх ĕç плáнĕ ту

плáнка (-и) *сущ. жен.* плáнка, шакмáк, шакăлчá; **деревя́нная плáнка** йы́вăç шакăлчá *(ансăр хăма татăкĕ);* **о́рденские плáнки** о́рден планкисéм

плáновый *прил.*, **плáново** *нареч.* план -ĕ; плáнлă; **плáновые показа́тели** план кăтартăвĕсéм; **плáновое хозя́йство** плáнлă хуçáлăх

пласт (-а) *сущ. муж.; множ.* **пласты́** (-о́в, -а́ми) си, сий; **пласты́ по́чвы** тăпрá сийĕсéм; **газоно́сные пласты́** гáзлă сийсéм *(çĕр айĕнче)* ◆ **лежáть пласто́м** тапранмáсăр вырт

пла́стик (-а) *сущ. муж.* пла́стик, пластма́сса

пла́стиковый *прил.* пла́стик ...; пла́стик -ӗ; **пла́стиковое ведро́** пла́стик витре́

пластили́н (-а) *сущ. муж.* пластили́н *(ӑвӑспа çӑрнӑ çемçе тӑм);* **коро́бка пластили́на** пластили́н арчи́

пластма́сса (-ы) *сущ. жен. (сокр.:* пласти́ческая ма́сса) пластма́сса *(вӗрилле тӗрлӗ япала шӑратса тума меллӗ материал)*

пластма́ссовый *прил.* пластма́сса ...; пластма́сса -ӗ; **пластма́ссовая посу́да** пластма́сса са́вӑт-сапа́

пла́стырь (-я) *сущ. муж.* пла́стырь *(ӳте сиплемелли çыпӑнчӑк пусма татӑкӗ);* **залепи́ть ра́нку пла́стырем** сурана́ пла́стырь çыпӑçта́р

пла́та (-ы) *сущ. жен.* тӳле́в; тӳлени́; **пла́та за газ** газ тӳле́вӗ; **за́работная пла́та** ӗç укçи́, ӗ́çшӗн тӳлени́; **внести́ кварти́рную пла́ту** хваттӗ́р укçи́ тӳле́

платёж (-ежа́) *сущ. муж.* тӳле́в укçи́, тӳле́в; тӳлени́; **своевре́менный платёж** вӑхӑтра́ тӳлени́; **внести́ платежи́** тӳле́, тӳлесе́ тат

пла́тина (-ы) *сущ. жен.* пла́тина *(шурӑ тӗслӗ паха металл)*

плати́ть (*наст.* плачу́, пла́тишь, пла́тят; *прич. действ. наст.* платя́щий, *прош.* плати́вший; *прич. страд. прош.* пла́ченный; *деепр.* платя́) *глаг. несов.* **1.** *что* тӳле́, тӳлесе́ тат; **плати́ть за това́р** тава́ршӑн тӳле́; **плати́ть нало́ги** нало́г тӳле́ **2.** *чем за что* та́вӑр, сапла́; **плати́ть добро́м за добро́** ырри́шӗн ырриле́ сапла́; **плати́ть неблагода́рностью** пархата́рсӑр пул

пла́тный *прил.*, **пла́тно** *нареч.* тӳле́влӗ; **пла́тное обуче́ние** тӳле́влӗ вӗренӳ́

плато́к (-тка́) *сущ. муж.* ту́тӑр, я́влӑк; **пухо́вый плато́к** ма́мӑк ту́тӑр; **носово́й плато́к** сӑмса́ тутри́; **повяза́ть плато́к** ту́тӑр çых

платфо́рма (-ы) *сущ. жен.* **1.** платфо́рма *(чугун çул станцийӗнче поезд патне пымалли площадка)* **2.** платфо́рма *(хула çывӑхӗнче çӳрекен поездсем чарӑнакан вырӑн)* **3.** платфо́рма, ӳçӑ ваго́н; **платфо́рмы с углём** кӑ́мрӑк тиенӗ платформа́сем **4.** платфо́рма *(политика ӗçӗн тӗллевӗсем, программи);* **предвы́борная платфо́рма па́ртии** па́ртин суйлу́ра умӗнхи́ платформи́

пла́тье (-я) *сущ. сред.; множ.* **пла́тья** (-ьев, -ьями) **1.** (*син.* одеж́да) тум, тумти́р, çи-пӳç; **ве́рхнее пла́тье** çиелти́ тумти́р *(пальто, кӗрӗк тавраш);* **2.** кӗпе́ (*хӗрарӑмсен*); **шёлковое пла́тье** пӳрçӑн кӗпе́; **подвене́чное пла́тье** венчет кӗпи́

плач (-а) *сущ. муж.* макӑру́, йӗрӳ́; макӑрни́, йӗни́; **слы́шен плач ребёнка** ача́ макӑрни́ илтӗнет

плашмя́ *нареч.* лаппипе́, лапта́к енӗпе́; **упа́сть плашмя́** лап сарӑлса́ ӳк

плащ (-а́) *сущ. муж.* плащ; **брезе́нтовый плащ** брезе́нт плащ; **ходи́ть в плаще́** плащпа́ çӳре́

плева́ть (*наст.* плюю́, плюёшь, плюю́т; *повел. ф.* плюй; *прич. действ. наст.* плюю́щий, *прош.* плева́вший; *прич. страд. прош.* плёванный; *деепр.* плюя́) *глаг. несов.* **1.** сур, сӳрчӑк сур **2.** *на кого-что* сур, ан хисепле́, ан уя́ ◆ **плева́ть в потоло́к** кахала́ пер, ӗ́çсӗр вырт

плéйер (-а) *сущ. муж.* плéйер *(магнит ленти çине çырнине калаттармалли хатӗр)*

племенно́й *прил.* **1.** йӑх -ӗ, ӑру́ -ӗ, йӑх-ӑру́ -ӗ; **племенно́е деле́ние наро́да** халӑх йӑх-ӑрӑва́ пайланни́ **2.** ӑра́т -ӗ; ӑра́тлӑ; **племенно́й скот** ӑра́тлӑ вы́льӑх

пле́мя (-мени) *сущ. сред.; множ.* **племена́** (-мён, -менам) йӑх, ӑру́; **вождь пле́мени** ӑру́ пӳçӗ

племя́нник (-а) *сущ. муж.* тăвăн ыйăлĕ

племя́нница (-ы) *сущ. жен.* тăвăн хĕ́рĕ

плен (плéна, о плéне, в плену́) *сущ. муж.* тытăк; **попáсть в плен** тытăка́ лек; **освободи́ть из плéна** тытăкăнра́н хăта́р

плéнный *прил.* тытăкăнри́; **плéнный солдáт** тытăкăнри́ салта́к

плéнум (-а) *сущ. муж.* плéнум *(суйлавлă органăн пĕрлехи пухăвĕ);* **плéнум центрáльного комитéта пáртии** пáртин тĕп комитéчĕн плéнумĕ

плéсень (-и) *сущ. жен.* пắнтăх, кăмăска́, кăвăка́ш; **твóрог покры́т плéсенью** тăпăрча́ кăмăска́ пу́снă

плескáть (*наст.* плещу́, плéщешь, плéщут *и* плескáю, плескáешь, плескáют; *повел. ф.* плещи́ *и* плескáй; *прич. действ. наст.* плéщущий *и* плескáющий; *прич. страд. прош.* плёсканный; *деепр.* плескáя) *глаг. несов.* **1.** çап, чăмпăлтатта́р, чăпăлтатта́р; **вóлны плéщут о бéрег** хумсéм çырана́ çапáççĕ **2.** *что, чем (син.* бры́згать) сап, си́рпĕт, тăк; **плескáть вóду на пол** урайне́ шыв сап

плéсневеть *1 и 2 л. не употр. (наст.* -еет, -еют) пắнтăх, кăвака́р; шăркала́н, кăмăскала́н; **хлеб плéсневе́ет** çắкăр кăвакара́ть

плести́ (*наст.* плету́, плетёшь, плету́т; *прош.* плёл, плела́, плело́, *множ.* плели́; *повел. ф.* плети́; *прич. действ. наст.* плету́щий, *прош.* плётший; *прич. страд. прош.* плетённый; *деепр.* плетя́) ав, хуç, çых; авса́ ту, çыхса́ ту; **плести́ корзи́ну** карçинкка́ ав *(хулăран);* **плести́ венóк из цветóв** чечéк кắшăлĕ çых ◆ **плести́ небыли́цы** пулмана́ пу́лнăн кăта́рт; **плести́ интри́ги** кавáр ту

плеть (-и) *сущ. жен.* **1.** (*син.* кнут) пу́шă, чăпăркка́; **пасту́шья плеть** кĕту́ççĕ пушши́, вắрăм пу́шă **2.** (*син.* сте́бель) а́вăр, хуна́в, путра́нкă; **плéти хмéля** хăмла́ путранки́

плечó (-а́) *сущ. сред.; множ.* **плéчи** (плеч, плеча́м) хулпуççи́; **пра́вое плечó** сы́лтăм хулпуççи́; **широ́кие плéчи** сарлака́ хулпуççи́ ◆ **с плеч долóй** алра́н ка́йтăр; **дéло по плечу́** ал çемми́ ĕç, вăй çемми́ ĕç; **идти́ плечóм к плечу́** алла́-а́ллăн пыр; **имéть гóлову на плеча́х** пуçа́ ан çухáт

плеши́вый *прил. (син.* лы́сый) кукша́; **плеши́вая голова́** кукша́ пуç

плёнка (-и) *сущ. жен.* **1.** çурха́х; ви́тĕм; **плёнка на мя́се** аш çурхахĕсéм **2.** плёнка *(фото, кино ĕçĕнче)* **3.** плёнка, çурха́х *(теплица витмелли);* **выра́щивание овощéй под плёнкой** пахча́ çимĕçé плёнка айĕнче́ ӳстерни́

плита́ (-ы́) *сущ. жен.; множ.* **пли́ты** (плит, пли́там) **1.** плита́, хăма́ *(чултан, металран туни);* **мра́морная плита́** мра́мор плита́ **2.** плита́ *(апат пĕçермелли);* **га́зовая плита́** газ плити́

пли́тка (-и) *сущ. жен.* **1.** пли́тка *(лаптак япала);* **пли́тка шокола́да** шокола́д плитки́; **ка́фельные пли́тки** ка́фель плиткисéм *(стена витмелли)* **2.** пли́тка; **гото́вить пи́щу на электри́ческой пли́тке** электри́чество плитки́ çинче́ апа́т пĕçéр

плов (-а) *сущ. муж.* плов (*риспа аш апачĕ);* **гото́вить плов** плов пĕçéр

пловéц (-вца́) *сущ. муж.,* **пловчи́ха** (-и) *жен.* ишӳ́çĕ, ишекéн; **соревнова́ния пловцо́в** ишӳçĕсéн ắмăртăвĕ

плод (-а) *сущ. муж.* çи́мĕç; **я́блоня начала́ дава́ть плоды́** улмуççи́ çи́мĕç тума́ пуçла́нă ◆ **плоды́ учéния** вĕренни́н усси́

плоди́ться *1 и 2 л. не употр. (наст.* -и́тся, -я́тся) *глаг. несов.* ĕрчĕ, хуна́; **кро́лики бы́стро плодя́тся** кроликсéм хắвăрт ĕрчĕççĕ

плодо́вый *прил.* çи́мĕç -ĕ; **плодо́вые дере́вья** çи́мĕç йывăççисéм

плодоро́дный *прил.* пӳлӑхлӑ, пуя́н, илпе́к; **плодоро́дная земля́** пӳлӑхлӑ çĕр; **плодоро́дный край** илпе́к çĕршыв

пло́мба (-ы) *сущ. жен.* **1.** пло́мба *(чарнине, тытма юраманнине палӑртса хуракан пичет);* **наложи́ть пло́мбу на дверь** алӑка́ пломбӑпа́ пи́тĕр **2.** пло́мба *(шӑл хӑвӑлне питĕрни);* **поста́вить пло́мбу** пло́мба ларт

пло́ский (*кратк. ф.* -сок, -ска́ *и* -ска, -ско, *множ.* -ски; *сравн. ст.* пло́ще) *прил.* лапта́к, ла́пчӑк; ти́кĕс, тӳре́м; **пло́ская пове́рхность** тӳре́м çи; **зда́ние с пло́ской кры́шей** лапта́к тӑ́рӑллӑ çурт ◆ **пло́ское бло́до** ӑ́шӑх ча́шӑк; **пло́ская шу́тка** кӑнттӑ́м шӳт

плоского́рье (-я) *сущ. сред.* тӳре́м сӑ́ртлӑх

плоскогу́бцы (-ев) *сущ. множ.* лапта́к хĕ́скĕч

плот (-а́) *сущ. муж.* сӳлӑ *(пĕренесенчен çыхни);* **сплавля́ть по реке́ плоты́** юха́н шывпа́ сӳлӑ юхта́р

плотва́ (-ы́) *сущ. жен.* хĕ́рлĕ куç, чапа́к *(пулӑ)*; **лови́ть плотву́ на у́дочку** вӑлтапа́ хĕ́рлĕ куç тыт

плоти́на (-ы) *сущ. жен.* пĕвĕ́; **плоти́на Чебокса́рской ГЭС** Шупашкар ГЭСĕн пĕви́; **земляна́я плоти́на** тӑпра́ пĕвĕ́; **возвести́ плоти́ну** пĕвĕ́ пĕвелĕ́, пĕвĕ́ ту

пло́тник (-а) *сущ. муж.* платни́к; **пло́тники стро́ят дом** платниксе́м пӳрт лартӑ́ççĕ

пло́тничий, пло́тничный *и* **пло́тницкий** *прил.* платни́к -ĕ; **пло́тничные инструме́нты** платни́к хатĕрĕсе́м; **пло́тничьи рабо́ты** платни́к ĕçĕсе́м

пло́тность (-и) *сущ. жен.* **1.** та́чӑлӑх, çӑра́лӑх; **пло́тность воды́** шыв та́чӑлӑхĕ **2.** йы́шлӑх; **пло́тность населе́ния** ха́лӑх йы́шлӑхĕ

пло́тный (*кратк. ф.* -тен, -тна́, -тно, *множ.* -тны́ *и* -тны) *прил.*, **пло́тно** *нареч.* **1.** та́чӑ, пи́тĕ, çӑ́тӑ, çӑра́; **пло́тный холст** çӑ́тӑ пир; **дверь пло́тно закры́та** алӑка́ та́чӑ хупса́ ла́ртнӑ **2.** (*син.* густо́й) йӑ́вӑ, йы́шлӑ; **пло́тно посади́ть капу́сту** купӑстана́ йӑ́вӑ ларт **3.** (*син.* корена́стый) кĕрне́клĕ, патва́р, тапча́м; **челове́к пло́тного сложе́ния** тапча́м ӳт-пӳ́ллĕ çын ◆ **пло́тно пое́сть** тӑраниччĕн çи, апа́т çисе́ тултӑ́р

плохо́й (*кратк. ф.* плох, плоха́, пло́хо, *множ.* пло́хи *и* плохи́; *сравн. ст.* ху́же; *превосх. ст.* ху́дший) *прил. (ант.* хороший), **пло́хо** *нареч.* я́пӑх, начӑ́р, уса́л; **плохо́й това́р** я́пӑх тавӑ́р; **плохо́е здоро́вье** начӑ́р сы́влӑх; **учени́к пло́хо подгото́вил уро́к** вĕренекéн урока́ я́пӑх хатĕрлéннĕ ◆ **ху́же не́куда** япӑхра́н та я́пӑх

площа́дка (-и) *сущ. жен.* площа́дка, вы́рӑн, ла́птӑк; **спорти́вная площа́дка** спорт площадки́; **поса́дочная площа́дка для вертолётов** вертолётсем лармалли́ вы́рӑн

пло́щадь (-и) *сущ. жен.* **1.** пло́щадь *(хулари уçӑ вырӑн);* **Кра́сная пло́щадь в Москве́** Мускаври́ Хĕ́рлĕ пло́щадь **2.** ла́птӑк, ла́птӑкӑш; **изме́рить пло́щадь ле́са** вӑрма́н лаптӑкӑшне́ виçсе́ пĕл ◆ **посевны́е пло́щади** ака́-суха́ çĕрĕсем; **жила́я пло́щадь** пурӑнмалли́ вы́рӑн, кил-çӳрт

плуг (-а) *сущ. муж.; множ.* **плуги́** (-о́в, -а́ми) плуг, ака́ пуç; **тра́кторный плуг** тра́ктор плу́гĕ; **навесно́й плуг** çакма́ плуг, çĕклемелли́ плуг; **паха́ть зе́млю плу́гом** çĕре́ плугпа́ сухала́

плыть (*наст.* плыву́, плывёшь, плыву́т; *прош.* плыл, плыла́, плы́ло, *множ.* плы́ли) *глаг. несов.* **1.** иш, ишсе́ пыр; **плыть на спине́** месерле́ иш; **плыть свобо́дным сти́лем** и́рĕклĕ мелпе́ иш **2.** (*син.* дви́гаться) куç, юх, шу; **по не́бу плыву́т облака́**

тӳперé пĕлĕтсéм шусá иртéççĕ ◆ **всё плывёт пéред глазáми** куç алчăрасá кáйрĕ; **самó плывёт в рýки** хăéх аллá кĕрéт (*вăй хумасăр*)

плюс (-а) *сущ. муж.* плюс *(палла, унпа хушнине, пурлă хисепе е ăшша палăртаççĕ);* **два плюс три — пять** йккĕ çумнé вúççĕ хушсáн пúллĕк пулáть; **температýра вóздуха плюс двáдцать грáдусов** сывлăш температурú çúрĕм грáдус ă´шă ◆ **взвéсить все плю́сы и мúнусы** лáйăх енĕсемпé çитменлĕхсенé пĕтĕмпéх тишкéр; **плюс к тому́** çийĕнчéн татá, ýнсăр пуçнé

плясáть (*наст.* пляшý, пля́шешь, пля́шут; *повел. ф.* пляши́; *прич. действ. наст.* пля́шущий, *прош.* плясáвший) *глаг. несов.* ташлá; **плясáть пáрами** мă´шăрăн ташлá; **пáрень пля́шет вприся́дку** кáччă урá хуçсá ташлáть

пля́ска (-и) *сущ. жен.* тáшă; **пéсни и пля́ски** ю́рă-тáшă

по *предлог, употр. с разными падежами* **1.** *при указании на место действия* тă´рăх, çинчé; -ра (-ре); -па (-пе); **гуля́ть по сáду** садрá уçăлсá çýрé; **идти́ по доро́ге** çулпá пыр **2.** *при указании на вид деятельности* енĕпé, тĕлĕшпé; -па (-пе); **проводи́ть заня́тия по му́зыке** мýзыка занятийĕсéм ирттéр **3.** *при указании на средство действия* тă´рăх; -па (-пе); **передава́ть по ра́дио** радиопá пар **4.** *при указании на количество распределяемых предметов* -шар (-шер); **вы́дать по ты́сяче рубле́й** пĕрéр пин тéнкĕ аллá пар **5.** *при указании на время действия* -сан (-сен); -чен; -серен; **по вечера́м** каççерéн; **по деся́тое ию́ня** çĕртмé ýйăхĕн вуннăмĕшĕ́ччéн; **по возвраще́нии домо́й** килé таврăнсáн ◆ **дел по го́рло** ĕç мăй тарáн; **по весне́** çуркунне́; **э́то не по мне** ку манá юрамáсть; **ста́ло не по себе́** лáйăх мар пулсá кáйрĕ, кă´мăл пă´сăлчĕ

побе́г[1] (-а) *сущ. муж.* тарý; тарни́; **он соверши́л побе́г из тюрьмы́** вăл тĕрмерéн тухсá тáрнă

побе́г[2] (-а) *сущ. муж.* хунáв; **побе́ги ви́шни** чиé хунавĕсéм

побе́да (-ы) *сущ. жен. (ант.* поражéние) çĕнтерӳ´; çĕнтерни́; **побе́да в бою́** çапăçурá çĕнтерни́; **одержа́ть побе́ду** çĕнтерӳ´ ту; **День Побе́ды** Çĕнтерӳ´ кýнĕ *(Майăн 9-мĕшĕ — Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче çĕнтернине уявлани)*

победи́тель (-я) *сущ. муж.*, **победи́тельница** *жен.* çĕнтерӳ´çĕ, çĕнтерекéн; **победи́телям соревнова́ний вручи́ли призы́** ăмăртурá çĕнтернисенé парнесéм пáчĕç

побе́дный *прил.* çĕнтерӳ´ -ĕ; çĕнтерӳ´ллĕ; **сража́ться до побе́дного конца́** пĕтĕмпéх çĕнтериччéн çáпăç

побежа́ть (*будущ.* -егý, -ежи́шь, -егýт; *повел. ф.* -еги́) *глаг. сов.* чуп, чупта́р, чупсá кай; чупá пар; **де́ти побежа́ли домо́й** ачасéм килелле́ чýпрĕç

побе́лка (-и) *сущ. жен.* шуратý; шуратни́; **побе́лка стен до́ма** пӳрт стенисенé шуратни́

побере́жье (-я) *сущ. сред.* ти́нĕс хĕррú; **побере́жье Чёрного мо́ря** Хурá ти́нĕс хĕррú

поби́ть (*будущ.* побью́, побьёшь, побью́т; *повел. ф.* побе́й; *прич. страд. прош.* поби́тый) *глаг. сов.* **1.** хĕнé, ват, хĕнесé пĕтéр; **его́ си́льно поби́ли** ăнá хы́тă хĕнéнĕ **2.** (*син.* разби́ть) ват, çĕ´мĕр, çĕмĕрсé пĕтéр; **посу́да вся поби́та** сáвăт-сапанá çĕмĕрсé пĕтéрнĕ ◆ **поби́ть реко́рд** рекордрáн ирттéр; **хлеба́ поби́ло гра́дом** тыррá пăр çапсá кáйнă

побли́зости **1**. *нареч. (син.* неподалёку, вблизи́) сывăхрá, юнашáр, инçéх мар; **побли́зости послы́шался чей-то крик** инçéх мар такáм кăшкăрни́ илтĕнсé кáйрĕ **2.** *от кого-чего*

предлог с род. п. çывăхĕнчĕ; -па (-пе) юнашăр; **поблизости от озера** кӳ́лĕ çывăхĕнчĕ

повар (-а) *сущ. муж.*, **повариха** (-и) *жен.; множ.* **повара́** (-ов) по́вар; **по́вар по пе́рвым блю́дам** пĕрре́мĕш апатсе́н по́варĕ

поведе́ние (-я) *сущ. сред.* тыткала́рăш, тыткалани́ (*харпăр хăйне*); **приме́рное поведе́ние ученика́** вĕренекен хăйне́ ла́йăх тыткалани́

повели́тельный *прил.* хушӳ́ллă, çи́рĕп, ви́тĕмлĕ; **говори́ть повели́тельным то́ном** çи́рĕп хушса́ кала́ç ◆ **повели́тельное наклоне́ние** хушӳ́ наклоне́нийĕ *(глаголсен хушу пĕлтерĕшлĕ формисем, сăм., вырăсла: иди, читай, играйте; чăвашла: кай, вула, выльăр)*

пове́рить (*будущ.* -е́рю, -е́ришь, -е́рят; *повел. ф.* -е́рь) *глаг. сов., кому-чему, во что* ĕне́н, шан; **я не пове́рил его́ слова́м** э́пĕ вăл каланине́ ĕненме́рĕм

повернӳ́ть (*будущ.* -нӳ́, -нёшь, -нӳ́т; *прич. страд. прош.* повёрнутый) *глаг. сов., кого-что* **1.** çа́вăр, пăр, пăрăнта́р; **повернӳ́ть руль** руле́ пăр **2.** çа́врăн, пă ́рăн; **повернӳ́ть напра́во** сылтăмалла́ пă ́рăн

повернӳ́ться (*будущ.* -нӳ́сь, -нёшься, -нӳ́тся; *повел. ф.* -ни́сь, -ни́тесь; *прич. действ. прош.* -нӳ́вшийся; *деепр.* -нӳ́вшись) *глаг. сов.* çа́врăн, пă ́рăн; **повернӳ́ться в сто́рону** айккинелле́ çаврăнса́ пăх

пове́рхность (-и) *сущ. жен.* çи, çий, пит, тула́ш; **пове́рхность воды́** шыв çи́йĕ; **пове́рхность земли́** çĕр пи́чĕ

пове́сить (*будущ.* -е́шусь, -е́сишься, -е́сятся; *повел. ф.* -е́сь; *прич. страд. прош.* -е́шенный) *глаг. сов., кого-что* çак, çаксá яр; **Пове́сь шу́бу на гвоздь!** Кĕрĕке́ пăтăра́н çаксá яр!

пове́стка (-и) *сущ. жен.* пове́стка, чĕнӳ́, йыхра́в хӳ́чĕ; **пове́стка в суд** суд повестки́; **вручи́ть пове́стку** йыхра́в хӳ́чĕ пар

по́весть (-и) *сущ. жен.* по́весть *(прозăпа çырнă, романран пĕчĕкрех хайлав)*; **но́вая по́весть писа́теля** çыра́вçăн çĕ ́нĕ по́веçĕ

по-ви́димому (*син.* вероя́тно) **1.** *вводн. сл.* а́хăр, ахăртне́х; -тăр (-тĕр); **зима́, по-ви́димому, бу́дет холо́дная** ахăртне́х, хĕл си́вĕ пула́ть **2.** *частица* пу́лĕ, пулмалла́; **Ты простуди́лся? — По-ви́димому** Э ́сĕ шăнса́ пă ́сăлнă-им? — Çапла́ пулмалла́

пови́дло (-а) *сущ. сред.* пови́дло *(улма-çырла çимĕçĕ)*; **я́блочное пови́дло** пан улми́ повидли́; **печь ватру́шки с пови́длом** пови́дло пӳремĕ́чĕ пĕçе́р

повинова́ться (*наст.* -ну́юсь, -ну́ешься, -ну́ются; *повел. ф.* -ну́йся, -ну́йтесь; *прич. действ. наст.* -ну́ющийся, *прош.* -нова́вшийся; *деепр.* -ну́ясь) *глаг. сов., прош. также несов., кому-чему (син.* подчиня́ться) пă ́-хăн, итле́, хушнине́ ту; **повинова́ться прика́зу нача́льника** пӳ́çлăх хушнине́ ту

по́вод[1] (-а) *сущ. муж.; множ.* **по́воды** (-ов) (*син.* причи́на) сăлта́в, йӳ ́тĕм; **по́вод для ссо́ры** харкашу́ сăлта́вĕ; **дать по́вод для слу́хов** сас-хура́ сарма́ йӳ ́тĕм пар ◆ *по поводу кого-чего, предлог с род. п. (син.* относи́тельно, насчёт) пирки́, тĕлĕшпе́; **иду́т разгово́ры по по́воду повыше́ния зарпла́ты** ĕç укçи́ ӳстересси́ пирки́ сас-хура́ çӳре́т

по́вод[2] (-а, о по́воде, на поводу́) *сущ. муж.; множ.* **пово́дья** (-ьев, -ьями) чĕ ́лпĕр, йĕве́н аври́; **вести́ коня́ на поводу́** лашана́ чĕлпĕрпе́ çавăтса́ пыр

поворо́т (-а) *сущ. муж.* **1.** çаврăну́, пăрăну́; çаврăнни́, пăрăнни́; **соверши́ть поворо́т на девяно́сто гра́дусов** тă ́хăр вӳ́нă градуса́ çа́врăн

2. пӑ́рӑнӑҫ, ҫа́вӑрӑнӑҫ, ҫул куркӣ; **дом на поворо́те доро́ги** ҫул кукринчӣ ҫурт

повседне́вный *прил. (син.* всегда́шний), **повседне́вно** *нареч.* кулленхи́, кашни́ кунхи́; **повседне́вные забо́ты** кулленхи́ ӗҫ-хӗ́л

повсю́ду *нареч. (син.* везде́) пур ҫӗртме́ те; **повсю́ду цвету́т цветы́** пур ҫӗртме́ те чечексе́м ешере́ҫҫӗ

повторе́ние (-я) *сущ. сред.* аса́ илӳ́; аса́ илни́; ӑсра́ ҫӗнетни́; **уро́к повторе́ния** аса́ илмелли́ уро́к *(малтан вӗреннине)*

повтори́ть (*будущ.* -рю́, -ри́шь, -ря́т; *прич. страд. прош.* повторённый *и* повто́ренный) *глаг. сов., что* **1.** тепре́ ту, тепре́ кала́; **повтори́ть фра́зу за учи́телем** пуплевӗ вӗрентекӗн хыҫҫӑн кала́ **2.** аса́ ил, ӑсра́ ҫӗне́т *(вӗреннине)*; **повтори́ть пра́вила** правилӑсене́ аса́ ил

повя́зка (-и) *сущ. жен.* ҫыхӑ; **повя́зка дежу́рного** дежу́рнӑй ҫыххи́; **наложи́ть повя́зку на ра́ну** сурана́ ҫыхса́ яр

погаси́ть (*будущ.* -ашу́, -а́сишь, -а́сят; *прич. страд. прош.* -а́шенный) *глаг. сов., что (син.* потуши́ть) сӳнтӗ́р; **погаси́ть ла́мпу** лампӑна́ сӳнтӗ́р

пога́снуть (*будущ.* -ну, -нешь, -нут) *глаг. сов. (син.* поту́хнуть) сӳ́н, сӳнсе́ лар; **костёр пога́с** кӑва́йт сӳ́ннӗ

поги́бнуть (*будущ.* -бну, -бнешь, -бнут; *прош.* поги́б *и* -бнул, -бла, -бло, *множ.* -бли; *прич. действ. прош.* -бший; *деепр.* -бнув) *глаг. сов.* вил, пӗт, тӗп пул; **поги́бнуть в бою́** ҫапӑҫура́ вил; **я́блони поги́бли от моро́за** улмуҫҫисе́м сивӗпе́ пӗ́трӗҫ

погна́ться (*будущ.* погонюсь, пого́нишься, пого́нятся; *повел. ф.* погони́сь, погони́тесь; *прош.* -а́лся, -ала́сь, -ало́сь *и* -а́лось, *множ.* -а́лись; *прич. действ. прош.* -а́вшийся; *деепр.* -а́вшись) *глаг. сов., за кем-чем* хӑваласа́ кай, хӑваламӑ́ пуҫла́; **соба́ки погна́лись за за́йцем** йытӑсе́м мулкача́ хӑваласа́ ка́йрӗҫ ◆ **погна́ться за дли́нным рублём** ҫӑ́мӑл укҫа́ шыра́

поголо́вка (-и) *сущ. жен.* кала́рӑш, пуплӗ́рӗш, хӑла́х сӑма́хӗ

пого́да (-ы) *сущ. жен.* ҫанта́лӑк; **тёплая пого́да** ӑ́шӑ ҫанта́лӑк; **осе́нняя пого́да переме́нчива** кӗ́рхи́ ҫанта́лӑк ӳ́лшӑнчӑк

пого́дный *прил.* ҫанта́лӑк -ӗ; **пого́дные усло́вия** ҫанта́лӑк уловийӗсе́м

пого́ны (-о́н) *сущ. множ.; един.* **пого́н** (-а) *муж.* паку́н; **офице́рские пого́ны** офицӗ́р паку́нӗ

пограни́чник (-а) *сущ. муж.* пограни́чник, чи́кӗ хуралҫи́; **он был в а́рмии пограни́чником** вӑл ҫарта́ чи́кӗ хуралҫи́ пу́лнӑ

пограни́чный *прил.* чи́кӗ -ӗ; чикӗри́; чи́кӗ хуралӗнчи́; **пограни́чная слу́жба** чи́кӗ хуралӗнчи́ слу́жба; **пограни́чные войска́** чикӗри́ ҫарсе́м; **пограни́чный столб** чи́кӗ юпи́; **на пограни́чной заста́ве объяви́ли трево́гу** чи́кӗ заставинче́ трево́га ту́нӑ

по́греб (-а) *сущ. муж.* нӳ́хрӗп; **вы́рыть по́греб** нӳ́хрӗп чав; **о́вощи храня́тся в по́гребе** пахча́ ҫи́мӗҫ нӳ́хрепре́ упраня́ть

погрузи́ть (*будущ.* -ужу́, -узи́шь *и* -у́зишь, -у́зят; *прич. страд. прош.* -ужённый) *глаг. сов., кого-что* **1.** тие, тиесе́ хур; **погрузи́ть карто́фель в маши́ны** ҫӗр улми́не машинӑсене́ тие́ **2.** *во что (син.* опусти́ть) чик, путӑ́р, антӑ́р; **погрузи́ть вёсла в во́ду** кӗ́сменсене́ шыва́ чик

под[1] (-а, о по́де, на поду́) *сущ. муж.* тӗп, кӑмака́ тӗ́нӗ

под[2], **по́до** *предлог с вин. и твор. п.* **1.** *на вопросы «где?» и «куда?» (ант.* над) а́йӗн, айпе́, айӗнче́; **под водо́й** шыв айӗнче́; **под во́ду** шыв айне́; **пройти́ под мосто́м** кӗпе́р а́йӗн ирт **2.** *при указании на положение, со-*

стояние айнĕ, айĕнчĕ; **попáсть под дождь** çýмăр айнĕ пул; **отдáть под суд** судá пар **3.** ýмĕн, çитеспĕ; **под вéчер** каç пуласпá; **под ýтро** ирĕ хи́рĕç ◆ **петь под гитáру** гитáра çеммипĕ юрлá; **взять пóд руку** хулрáн çáвăт; **не под си́лу** вăй çеммúй мар, вăй çитмéст; **под бóком** áлă айĕнчéх, юнашарáх; **салáт под майонéзом** майонéзлă салáт; **постáвить под угрóзу** хăрýшлăх кăларсá тăрáт; **взять под защúту** хýтĕлĕ, хýнтă ту; **получúть дéньги под распúску** расписка́пá укçá ил

подари́ть (*будущ.* -арю́, -áришь, -áрят; *прич. страд. прош.* -áренный) *глаг. сов., кому кого-что* парнелĕ, парнĕ пар; **подари́ть кни́гу** кĕнекĕ парнелĕ

пода́рок (-рка) *сущ. муж.* парнĕ, кучченéç; **вручи́ть пода́рок** парнĕ пар

подберёзовик (-а) *сущ. муж.* хýрăн кăмпú; **жáрить подберёзовики** хýрăн кăмпú ăшалá

подборóдок (-дка) *сущ. муж.* янáх; **двойнóй подборóдок** йĕ´кĕр янáх

подвáл (-а) *сущ. муж.* путвáл; **заложúть в подвáл картóфель** путвалá çĕр улмú хыв

пóдвиг (-а) *сущ. муж.* пáттăрлăх, пáттăр ĕç; **вóин совершúл пóдвиг в бою́** салтáк çапăçурá пáттăрлăх кăтáртнă

подви́жный *прил.* **1.** кýçăмлă, куçакáн; **подви́жная гру́ппа войск** çарсéн кýçăмлă ýшкăнĕ **2.** (*син.* живóй) чĕ´рĕ, çúвĕч, йă´рă, вăр-вáр; **подви́жный ребёнок** йă´рă ачá

подвóда (-ы) *сущ. жен.* (*син.* повóзка) лав, урапá; **погрузúть дóски на подвóду** хăмасенĕ лав çинĕ тиé

подвóдный *прил.* шыв айĕнчú, шыв ай -ĕ; **подвóдная лóдка** шыв ай кимú; **подвóдная съёмка** шыв айĕнчĕ ýкернú (*киноаппаратпа*)

подгото́вить (*будущ.* -влю, -вишь, -вят; *прич. страд. прош.* -вленный) *глаг. сов., кого-что* хатĕрлé, хатĕрлесé хур, хатĕрлесé çитéр; **подгото́вить детéй к шкóле** ачасенĕ шкулá каймá хатĕрлé; **нýжные докумéнты подготóвлены** кúрлĕ документсенĕ хатĕрлесé хýнă

подгото́виться (*будущ.* -влюсь, -вишься, -вятся; *повел. ф.* -вься, -вьтесь; *прич. действ. прош.* -вившийся; *деепр.* -вившись) *глаг. сов.* хатĕрлéн, хатĕрленсé çит; **подгото́виться к экза́мену** экзаменá хатĕрлéн

поддержáть (*будущ.* -ержý, -éржишь, -éржат; *прич. страд. прош.* -éржанный) *глаг. сов., кого-что* **1.** тыт, тытсá тăр, ýкмĕ ан пар; **поддержáть старикá пóд руку** старикá хулрáн тытсá тăр **2.** (*син.* помóчь) пýлăш, пулăшý пар; **поддержáть деньгáми** укçапá пýлăш **3.** (*син.* одóбрить) хýтĕлé, хáпăл ту, ырлá; **поддержáть выстáвленную кандидатýру** тăрáтнă кандидатá ырлá ◆ **поддержáть огóнь в печú** кăмаканá вýтă хушсá хур; **поддержáть разговóр** калаçăвá хýтшăн

поджéчь (*будущ.* подожгý, подожжёшь, подожгýт; *прош.* поджёг, подожглá, подожглó, *множ.* подожглú; *повел. ф.* подожгú; *прич. действ. прош.* поджёгший; *прич. страд. прош.* подожжённый; *деепр.* поджёгши) *глаг. сов., что* тĕрт, чĕртсé яр, вут тивéрт, вут хыптáр; **кто́-то поджёг сарáй** такáм сараí вут тивéртнĕ

подкла́дка (-и) *сущ. жен.* áçлăк, ăш, сýретке *(тумтир ăшне хуракан пусма);* **подкла́дка пиджака́** пиншáк áçлăкĕ

подкóва (-ы) *сущ. жен.* такáн; **сапоги́ с подкóвами** такáнлă átă; **конь потерял подкóву** лашáн такáнĕ татăлсá ýкнĕ

подкова́ть (*будущ.* -кую́, -куёшь, -кую́т; *повел. ф.* подкýй; *прич. страд.*

прош. -ко́ванный) *глаг. сов., кого-что* таканлá, такáн çап; **подковáть ло́шадь** лашá таканлá

подкорми́ть (*будущ.* -ормлю́, -о́рмишь, -о́рмят; *прич. страд. прош.* -о́рмленный) *глаг. сов.* **1.** *кого* апáт хуш, ытлара́х çитéр; **подкорми́ть больно́го** чи́рлĕ çынна́ ытлара́х çитéр **2.** *что* апáт пар, удобре́ни пар; **подкорми́ть посе́вы** калчана́ апáт пар

подкра́сться (*будущ.* -аду́сь, -адёшься, -аду́тся; *повел. ф.* -ади́сь, -ади́тесь; *прич. действ. прош.* -а́вшийся; *деепр.* -а́вшись) *глаг. сов., к кому-чему* йăпшăнса́ пыр, сисмеслé пыр; **охо́тник подкра́лся к ло́сю** суна́рçă пăши́ патнé йăпшăнса́ пы́нă

подкупи́ть (*будущ.* -уплю́, -у́пишь, -у́пят; *прич. страд. прош.* -у́пленный) *глаг. сов., кого* çутăнта́р, укçапа́ çа́вăр; **свиде́теля подкупи́ли** свидетелé укçапа́ çа́вăрнă

подлежа́щее (-его) *сущ. сред.* подлежа́щи *(предложенин тĕп членĕсенчен пĕри);* **согласова́ть сказу́емое с подлежа́щим** сказуемăя подлежащипе́ килĕштéр

подле́ц (-а́) пу́тсĕр, йĕ´ксĕк

по́длинник (-а) *сущ. муж. (син.* оригина́л; *ант.* ко́пия) чăн япала́, чăн докуме́нт *(копи мар);* **снять ко́пию с по́длинника** чăн докуме́нтăн копине́ ту

по́длый *(кратк. ф.* подл, подла́, по́дло, *множ.* по́длы; *сравн. ст.* подле́е, подле́й; *превосх. ст.* подле́йший) *прил. (син.* бесче́стный; *ант.* благоро́дный), **по́дло** *нареч.* пу́тсĕр, кире́всĕр; **он поступи́л по́дло** вăл кире́всĕр ĕç ту́рĕ

подмести́ (*будущ.* -ету́, -етёшь, -ету́т; *повел. ф.* -ети́; *прич. действ. прош.* -ётший; *прич. страд. прош.* -етённый; *деепр.* -етя́) *глаг. сов., что* шăл, шăлса́ тух; **подмести́ пол в избе́** пу́рт урайне́ шăл

подмётка (-и) *сущ. жен.* тĕп (*атăпушмакăн);* **подби́ть подмётки** тĕп хур, тĕпле́ ◆ **в подмётки не годи́тся** патне́ те пыма́сть, танлаштарма́ та çук

подно́с (-а) *сущ. муж.* ы́вăс, подно́с; **поста́вить таре́лки на подно́с** турилккесене́ подно́с çине́ ларт

подня́ть (*будущ.* поднимý, подни́мешь, подни́мут; *прош.* по́днял *и* подня́л, подняла́, по́дняло *и* подня́ло, *множ.* по́дняли *и* подня́ли; *повел. ф.* поними́; *прич. действ. прош.* подня́вший; *прич. страд. прош.* по́днятый; *деепр.* подня́в) *глаг. сов., кого-что* **1.** çĕкле́, йăт, ил (*çĕртен*); **подня́ть кни́гу с по́ла** кĕнекене́ урайĕнче́н ил; **подня́ть мешо́к карто́феля** çĕр улми́ миххине́ çĕкле́ **2.** (*ант.* опусти́ть, пони́зить) хăпа́рт, çĕкле́, çĕклентéр, çӳллĕре́х ту; **подня́ть плоти́ну на два ме́тра** пĕвене́ и́кĕ метр хăпа́рт; **учени́к по́днял ру́ку** вĕренекéн аллине́ çĕкле́рĕ **3.** (*син.* увели́чить, повы́сить) ӳсте́р, пысăкла́т; **подня́ть це́ну** хака́ ӳсте́р; **подня́ть производи́тельность труда́** ĕç тухăçлăхне́ ӳсте́р **4.** çĕкле́, çĕклентéр, ӳсте́р; **подня́ть настрое́ние** кăмăла́ çĕклентéр; **подня́ть авторите́т фи́рмы** фи́рма ятне́-сумне́ ӳсте́р ◆ **подня́ть трево́гу** трево́га ту, хавха́ кăла́р; **подня́ть крик** кăшкăрашма́ ты́тăн; **подня́ть вопро́с** ыйтӳ ларт; **подня́ть на́ ноги** ура́ çине́ тăра́т, çĕклентéр; **подня́ть на́ смех** кӳла́ш ту; **подня́ть целину́** çере́м çĕт, çере́м сухала́

подня́ться (*будущ.* -нимýсь, -ни́мешься, -ни́мутся; *прош.* -нялся́ *и* -ня́лся, -няла́сь, -нялóсь *и* -ня́лось, *множ.* -няли́сь *и* -ня́лись; *повел. ф.* -ними́сь, -нимúтесь; *прич. действ. прош.* -ня́вшийся; *деепр.* -ня́вшись) *глаг. сов.* **1.** (*ант.* опусти́ться) çĕкле́н, ӳла́х, хăпа́р; **подня́ться**

по ле́стнице пусмапа́ хăпа́р; **подня́ться со сту́ла** пука́н çинче́н тăр **2.** *1 и 2 л. не употр.* çĕкле́н, пысăкла́н, ху́шăн, ӳс; **вода́ в ре́чке поднялáсь** çырмара́ шыв ху́шăнчĕ; **роль ба́нков поднялáсь** банксе́н пĕлте́рĕшĕ ӳ́срĕ **3.** *1 и 2 л. не употр.* пуçла́н, çĕкле́н, тапра́н, тух; **поднялся ве́тер** çил ту́хрĕ ◆ **подня́ться на борьбу́** кĕрешӳве́ тух; **настрое́ние поднялóсь** ка́мăл çĕкле́нчĕ

подóбный *прил. (син.* похóжий), **подóбно** *нареч.* пек, е́вĕрлĕ, мане́рлĕ; йышши́; **подóбный э́тому слу́чай** çăкăн е́вĕрлĕ тĕ́слĕх; **мча́ться подóбно метéору** метéор пек ы́ткăн ◆ **ничегó подóбного** пачах апла́ мар

подожда́ть (*будущ.* -ду́, -дёшь, -ду́т; *прош.* -да́л, -дала́, -да́ло, *множ.* -да́ли) *глаг. сов.* **1.** *кого-что* кĕт, кĕтсе́ тăр, кĕтсе́ ил; **подожда́ть авто́бус** автóбус килессе́ кĕт **2.** *с чем и с неопр. ф.* тăхта́, ан васка́; **подождём с реше́нием э́того вопро́са** ку ыйтăва́ татса́ пама́ тắхтăпăр

подозри́тельный *прил.*, **подозри́тельно** *нареч.* **1.** *(син.* сомни́тельный) шáнчăксăр, ши́клĕ, иккĕлену́ллĕ, иккĕлентерекéн; **подозри́тельный шум** ши́клĕ шăв-шáв **2.** (*син.* недове́рчивый) шикле́нчĕк, иккĕле́нчĕк, шанма́н; **смотре́ть подозри́тельно** шанмасăртарáх пăх

подойти́ (*будущ.* -ойду́, -ойдёшь, -ойду́т; *прош.* -ошёл, -ошла́, -ошлó, *множ.* -ошли́; *повел. ф.* -ойди́; *прич. действ. прош.* -оше́дший; *деепр.* -ойдя́) *глаг. сов.* **1.** *к кому-чему (син.* прибли́зиться) пыр, çывхăр, патне́ пыр, пырса́ тăр; **подойти́ к столу́** сĕтéл патне́ пырса́ тăр; **подойти́ бли́зко** çывăхáх пыр **2.** *кому-чему* юра́, ки́лĕш, юрăхлă пул, мая́ кил; **э́то пальто́ мне не подойдёт** ку пальтó мана́ килĕшмéст

подокóнник (-а) *сущ. муж.* чӳречéянаххи́; **на подокóннике стоя́т цвето́чные горшки́** чӳречéянаххи́ çинчéчечéк чӳлмекĕсéм лараççĕ

подóл (-а) *сущ. муж.* árкă, чĕрçи́, кĕпе́ вĕ́çĕ

подоро́жник (-а) *сущ. муж.* ша́нăр ку́рăкĕ

подоси́новик (-а) *сущ. муж.* ắвăс кăмпи́; **маринова́ть подоси́новики** ắвăс кăмпи́ маринадлá

подохóдный *прил.*: **подохóдный налóг** тӳпăш налóгĕ, тупăшра́н илекéн налóг

подóшва (-ы) *сущ. жен.* **1.** (*син.* ступня́) тупáн, ура́ тупáнĕ; **пора́нить подóшву ноги́** ура́ тупаннé суранла́ **2.** тĕп, патӳш *(атắ-пушмакăн)* ◆ **подóшва горы́** ту áйĕ

подпи́лок (-лка) *сущ. муж. (син.* напи́льник) путпи́лккă

подписа́ться (*будущ.* -ишу́сь, -и́шешься, -и́шутся; *повел. ф.* -иши́сь, -иши́тесь; *прич. действ. прош.* -иса́вшийся; *деепр.* -иса́вшись) *глаг. сов.* **1.** ала́ пус; **подписа́ться под заявле́нием** заявлениé ала́ пус **2.** *на что* çы́рăн, çырăнса́ ил; **подписа́ться на газе́ту** хаçа́т çырăнса́ ил

подпи́ска (-и) *сущ. жен.* çырăну́; çырăннú; **объя́влена подпи́ска на газе́ты и журна́лы** хаçа́т-журна́л çырăнтарма́ пуçла́нă

по́дпись (-и) *сущ. жен.* ала́ пусни́; **поста́вить по́дпись** ала́ пус; **собира́ть по́дписи** ала́ пустарса́ çӳре́

по́дпол (-а) *сущ. муж.*, **подпóлье** (-я) *сред.* сака́й, тĕп сака́й; **сложи́ть карто́фель в по́дпол** çĕр улминé сакайнé антáр

подполко́вник (-а) *сущ. муж.* подполкóвник *(полковникран кĕçĕнрех чин)*

подпру́га (-и) *сущ. жен.* хы́рăм áйлăх, хырăмса́лăх *(йĕнер е йĕнерчĕк çирĕплетмелли чĕн)*

по́дпуск (-а) *сущ. муж.* ка́рăм *(пулă*

тытмалли нумай вăлталлă хатĕр)

подража́ние (-я) *сущ. жен.* евĕрлéв; евĕрлени́, ... пек туни́; **подража́ние пе́нию соловья́** шăпчăк юрринé евĕрлени́

подража́тельный *прил.* евĕрлéв -ĕ; евĕрлéвлĕ; **подража́тельные слова́** евĕрлéв сăмахĕсéм

подража́ть (*наст.* -áю, -áешь, -áют) *глаг. несов., кому-чему* евĕрлé; ... пек пул, ... пек ту; -а (-е) хыв; **подража́ть изве́стному певцу́** пáллă юрăçă пек юрлá; **ма́льчик подража́ет отцу́** ачá áшшĕ пек пулмá тăрăшáть

подро́бный *прил. (син.* детáльный, обстоя́тельный), **подро́бно** *нареч.* тĕ́плĕ, туллú; тĕ́пĕ-йĕрĕпé; **рассказа́ть подро́бно** тĕ́пĕ-йĕрĕпé каласá пар

подро́сток (-тка) *сущ. муж.* çáмрăк, яш ачá, хĕр ачá *(12—16 çулсенчи)*

подру́га (-и) *сущ. жен.* хĕр тáнтăш, тус хĕр; **подру́ги пошли́ на дискоте́ку** тус хĕрсéм дискотекáнá кáйрĕç

подружи́ться (*будущ.* -ужу́сь, -у́жишься, -у́жатся; *повел. ф.* -ужи́сь, -ужи́тесь; *прич. действ. прош.* -ужи́вшийся; *деепр.* -ужи́вшись) *глаг. сов., с кем-чем* туслáш, туслашсá кай; **де́ти бы́стро подружи́лись** ачасéм часáх туслашсá кáйрĕç

подря́д[1] (-а) *сущ. муж.* подряд *(ĕç тумалли килĕшӳ);* **взять подря́д на строи́тельство до́ма** çурт лартмá пулсá килĕшӳ́ ту

подря́д[2] *нареч.* йĕркерéн, йĕркипéх, у́млăн-хыçлăн; **руби́ть дере́вья подря́д** йывăçсенé йĕркипéх кассá тух

подсве́чник (-а) *сущ. муж.* шантáл, çуртá пăлашкú

подсне́жник (-а) *сущ. муж.* çéçпĕл (*çурхи чечек)*

подсо́лнечник (-а), **подсо́лнух** (-а) *сущ. муж.* хĕвéл çáврăнăш; **голо́вка подсо́лнуха** хĕвéл çáврăнăш пýçĕ

подсо́лнечный *прил.* хĕвéл çáврăнăш -ĕ; **подсо́лнечное ма́сло** хĕвéл çáврăнăш çắвĕ

подстрека́ть (*наст.* -áю, -áешь, -áют) *глаг. несов., кого* хĕ́тĕрт, хĕтĕхлé, ĕ́скĕрт; **подстрека́ть к ша́лости** ашкăнмá хĕ́тĕрт

подстро́чный *прил.*: **подстро́чный перево́д** тýртéн куçарý *(сăмахăнсăмахăн куçарса пыни)*

подсуди́мый (-ого) *сущ. муж.*, **подсуди́мая** (-ой) *жен.* айăпланакáн (*судра*); **суд оправда́л подсуди́мого** суд айăпланаканá тýрре кăлáрнă

подсчита́ть (*будущ.* -итáю, -итáешь, -итáют; *прич. страд. прош.* -и́танный) *глаг. сов.* шутлá, су, шутласá пĕл, сусá тух; **подсчита́ть расхо́ды** тăкакá шутласá пĕл

подтверди́ть (*будущ.* -ржу́, -рди́шь, -рдя́т; *прич. страд. прош.* -ржда́нный) *глаг. сов., что (ант.* опровéргнуть) çирĕплéт, çирĕплетсé калá; **подтверди́ть получе́ние письма́** çырý илниné çирĕплéт

подтя́жки (-жек) *сущ. множ.* подтя́жка, шăлавáр çаккú

поду́мать (*будущ.* -аю, -аешь, -ают) *глаг. сов.* шухăшлá, шухăшласá пăх; **Поду́май, пре́жде чем дать отве́т** Хуравличчéн малтáн шухăшласá пăх ◆ **поду́маешь** *вводн. сл.* мĕнéх варá, темéх мар; **Поду́мать то́лько!** Шýхăшлăр-ха! *(тĕлĕнсе калани)*

поду́шка (-и) *сущ. жен.* çытáр, минтéр; **пухо́вая поду́шка** мáмăк минтéр; **положи́ть го́лову на поду́шку** пуçá çытáр çинé хур ◆ **кислоро́дная поду́шка** кислорóд минтéрĕ *(медицина хатĕрĕ)*

подхали́м (-а) *сущ. муж. (син.* льстец) йăпăлтú, çукалáнчăк

подходя́щий *прил. (син.* приéмлемый), **подходя́ще** *нареч.* мáйлă, юрăхлă, юрáвлă, вырăнлă; **найти́ подходя́щий материа́л на пальто́** пальтóлăх юрáвлă пусмá туп

подча́с *нареч. (син.* иногда́) хушӑра́н, хӑш чухне́, те́пӗр чухне́; **подча́с боли́т голова́** хушӑра́н пуҫ ыра-та́ть

подчеркну́ть (*будущ.* -ну́, -нёшь, -ну́т; *прич. страд. прош.* подчёркнутый) *глаг. сов., что* **1.** аялта́н турт, йӗр турт-са́ па́лӑрт; **подчеркну́ть ну́жные слова́** ки́рлӗ сӑмахсене́ йӗр турт-са́ па́лӑрт **2.** (*син.* вы́делить) уйрӑма́х па́лӑрт, палӑртса́ кала́; **подчеркну́ть сло́жность обстано́вки** лару́-тӑру́ йывӑрринé палӑртса́ кала́

подчине́ние (-я) *сущ. сред.* **1.** пӑхӑну́; пӑхӑнни́; **находи́ться в подчине́нии** пӑхӑнса́ тӑр **2.** (*ант.* сочине́ние) пӑхӑну́, пӑхӑну́лӑх *(грамматикӑра — пӗр сӑмах форми тепринчен килни)*

подчини́тельный *прил.* пӑхӑну́ -ӗ; пӑхӑну́ллӑ; **подчини́тельные сою́зы** пӑхӑну́ллӑ союзсе́м; **подчини́тельная связь** пӑхӑну́ ҫы́хӑнӑвӗ *(грамматикӑра)*

подчини́ть (*будущ.* -ню́, -ни́шь, -ня́т; *прич. страд. прош.* -нённый) *глаг. сов., кого-что* пӑхӑнта́р, итлетте́р, пӑхӑнака́н ту; **подчини́ть дисципли́не** дисциплинӑна́ пӑхӑнта́р

подчини́ться (*будущ.* -нюсь, -ни́шься, -ня́тся; *повел. ф.* -ни́сь, -ни́тесь; *прич. действ. прош.* -ни́вшийся; *деепр.* -ни́вшись) *глаг. сов., кому-чему* пӑ ´хӑн, итле́, хушнине́ ту; **подчини́ться приказа́нию нача́льника** пу́ҫлӑх хушнине́ ту

подъе́хать (*будущ.* -е́ду, -е́дешь, -е́дут; *повел. ф.* -езжа́й) *глаг. сов.* пырса́ ҫит, ҫывха́р, патне́ ҫит (*транспорта*); **кто́-то подъе́хал к до́му на мотоци́кле** така́м ҫурт патне́ мотоцикла пырса́ ҫи́трӗ

подъём (-а) *сущ. муж.* **1.** (*ант.* спуск) тӑвалла́ ҫул; **доро́га идёт на подъём** ҫул тӑвалла́ хӑпара́ть **2.** (*син.* разви́тие) ҫӗкленӳ ´, ӳ ´сӗм; **подъём в эконо́мике** экономикӑри́ ӳ ´сӗм **3.** (*син.* воодушевле́ние) ҫӗкленӳ ´, хавхаланӳ; **говори́ть с подъёмом** хавхалансá калáҫ ◆ **лёгок на подъём** вӑрва́р, алли́-ури́ ҫӑ ´мӑл

подъёмный *прил.*: **подъёмный кран** ҫӗклемелли́ кран

по́езд (-а) *сущ. муж.; множ.* **поезда́** (-о́в, -а́м) по́езд; **пассажи́рский по́езд** пассажи́р по́езчӗ; **приго́родный по́езд** хула́ ҫум по́езчӗ; **по́езд пришёл во́время** по́езд вӑхӑтра́ килсе́ ҫи́трӗ

пое́сть (*будущ.* пое́м, пое́шь, пое́ст; *множ.* поеди́м, поеди́те, поедя́т; *повел. ф.* пое́шь) *глаг. сов., что, чего* ҫи, ҫисе́ пӑх; **пое́сть пе́ред доро́гой** ҫула́ тухас ӳ́мӗн ҫикеле́

пое́хать (*будущ.* пое́ду, пое́дешь, пое́дут; *повел. ф.* поезжа́й) *глаг. сов.* кай, тухса́ кай, ҫула́ тух (*транспорта*); **мы пое́хали в Москву́ на авто́бусе** эпи́р Мускава́ автобуспа́ ка́йрӑмӑр

пожа́луйста *частица, выражает вежливую просьбу или согласие* тарха́сшӑн; -самӑр (-семӗр); -ха; **сади́тесь, пожа́луйста** ларсáмӑр; **Да́йте мне, пожа́луйста, хле́ба!** Мана́ ҫӑ ´кӑр илсе́ пӑрӑр-ха!

пожа́р (-а) *сущ. муж.* пушá́р; **в селе́ возни́к пожа́р** ялта́ пушá́р ту́хнӑ; **туши́ть пожа́р** пушá́р сӳ́нтер

пожа́рный 1. *прил.* пушá́р -ӗ; **пожа́рная охра́на** пушá́р хура́лӗ **2. пожа́рный** (-ого) *сущ. муж.* пушá́р сӳ́нтерекéн

пожило́й *прил.* ҫулла́ннӑ, ватта́ сӳ́лӑннӑ; **пожила́я же́нщина** ҫулла́ннӑ хӗ́рӑрӑм

позавчера́ *нареч.* ви́ҫӗм кун; **позавчера́ был дождь** ви́ҫӗм кун ҫӳ́мӑр ҫӳ́нӑ

позади́ 1. *нареч. (ант.* впереди́) хыҫра́, хыҫалта́, кайра́; **лес оста́лся позади́** вӑрма́н хыҫра́ тӑрса́ ю́лчӗ **2.** *кого-чего, предлог с род. п. (син.* пе-

ред; *ант.* за) хыçĕнчĕ, хыççăн; **плести́сь позади́ всех** пури́н хыçĕнчĕ сĕтĕрĕнсе пыр

позапро́шлый *прил.*: **в позапро́шлом году́** ви́çĕм çул

позво́лить (*будущ.* -о́лю, -о́лишь, -о́лят; *повел. ф.* -о́ль; *прич. страд. прош.* -о́ленный) *глаг. сов., что и с неопр. ф. (син.* разреши́ть; *ант.* запрети́ть) и́рĕк пар, ан чар; **Позво́льте спроси́ть!** Ыйтмá и́рĕк парсáмăр!

позвоно́чник (-а) *сущ. муж.* çу́рăм шăммú

позднée *и* **по́зже** 1. *сравн. ст. к нареч.* по́здно 2. *нареч.* каярахпá, кайрáн; **по́зже пришли́ и остальны́е** каярахпá ыттисéм те ки́лчĕç 3. *кого-чего, предлог с род. п.* хыççăн, хыçĕнчéн; **не позднée зáвтрашнего дня** ырантáн кая́ юлмáсăр

по́здний (*кратк. ф. не употр.; сравн. ст.* позднée, позднéй *и* по́зже; *превосх. ст.* позднéйший) *прил. (ант.* рáнний) 1. каçхú, çĕрлехú; кая́ ю́лнă; **по́здней но́чью** сĕм çĕрлé; **по́здняя о́сень** кĕр вĕ́çĕ, хурá кĕркунне́ 2. кайранхú; **по́здние цветы́** кайрáн çурăлакáн чечексéм; **по́здние сорта́ я́блок** кайрáн пиçекéн пан улмú сорчĕсéм

по́здно *нареч. (сравн. ст.* позднée, позднéй *и* по́зже) кая́ юлсá, каçá юлсá; кайрáн; **по́здно ве́чером** каç пулсáн; **гру́ши ны́нче созре́ли по́здно** гру́ша кăçáл кая́ юлсá пу́лчĕ

поздрави́тельный *прил.* салáм -ĕ; салáмлă; **поздрави́тельная телегра́мма** салáмлă телегрáмма

поздра́вить (*будущ.* -áвлю, -áвишь, -áвят; *повел. ф.* -áвь) *глаг. сов., кого с чем* саламлá; **поздра́вить с днём рожде́ния** çурáлнă кун ячĕпé саламлá

поздравле́ние (-я) *сущ. сред.* салáм, саламлáв; саламланú; **поздравле́ние с пра́здником** уя́в салáмĕ

пози́ция (-и) *сущ. жен.* 1. пози́ции, вы́рăн *(çарсем çапăçма йышăнни)*; **передовы́е пози́ции** малтú позицисéм; **прорва́ть вра́жеские пози́ции** тăшмáн позицийĕсенé çĕмĕрсé кĕр 2. тă´рăм; **конь занима́ет си́льную пози́цию** лашá тă´рăмĕ вă´йлă *(шахмат вăййинче)* 3. (*син.* мнéние) шу́хăш; **отста́ивать свои́ пози́ции** хáрпăр шухăшĕсенé хýтĕлé

познако́миться (*будущ.* -млюсь, -мишься, -мятся; *повел. ф.* -мься, -мьтесь; *прич. действ. прош.* -мившийся; *деепр.* -мившись) *глаг. сов., с кем-чем* 1. паллáш, паллакáн пул; **Разреши́те познако́миться!** Сирĕнпé паллашмá и́рĕк парсáмăр! 2. (*син.* узнáть) паллáш, пĕлекéн пул; **познако́миться с докуме́нтами** документсенé пăхсá тух

позо́р (-а) *сущ. муж. (син.* бесчéстье) нáмăс, хур, мă´шкăл; **клейми́ть позо́ром** намăслантáр, нáмăс ту

позо́рный *прил. (син.* посты́дный), **позо́рно** *нареч.* нáмăс, мă´шкăллă, нáмăслă; **позо́рный посту́пок** нáмăс ĕç

по́иск (-а) *сущ. муж.* шырáв; шырани́; **по́иски не́фти** нефть шырани́; **нау́чный по́иск** ă´слăлăх шырáвĕ

пои́ть (*наст.* пою́, по́ишь *и* пои́шь, по́ят *и* поя́т; *прич. действ. наст.* поя́щий, *прош.* пои́вший; *прич. страд. прош.* поённый; *деепр.* поя́) *глаг. несов., кого* шăвáр, ĕçтéр, ĕçмé пар; **пои́ть скот** выльăхá шăвáр; **пои́ть дете́й молоко́м** ачасенé сĕт ĕçтéр

по́йма (-ы) *сущ. жен.* йă´лăм, ейӳ´ ӳ́лăхĕ; **во́лжская по́йма** А´тăл йă´лăмĕ

пойма́ть (*будущ.* -áю, -áешь, -áют; *прич. страд. прош.* по́йманный) *глаг. сов., кого-что* тыт, ярсá тыт; **охо́тник пойма́л лису́** сунáрçă тúлĕ тытнă ◆ **Не по́йман — не вор** (*посл.*) Тытмáн вă´рă — вă´рă мар

пойти́ (*будущ.* пойду́, пойдёшь, пойду́т; *прош.* пошёл, пошлá, по-

шло́, *множ.* пошли́; *повел. ф.* пойди́; *с отриц.* не ходи́; *прич. действ. прош.* поше́дший; *деепр.* пойдя́) *глаг. сов.* **1.** ут, уттар, кай, кайтар; **пойти́ пешко́м** çурáн ут; **пойти́ в лес** вăрманá кай; **Пошёл вон!** Кай кунтáн! **2.** çумá пуçлá, çумá тытăн; **пошёл снег** юр çумá пуçлáрĕ **3.** (*син.* начáть) пуçлá, тытăн, тапрáн; **пáрни пошли́ плясáть** каччăсéм ташшá я́чĕç ◆ **коль на то пошло́** пит кирлéх пулсáн; **так не пойдёт** кун пек юрамáсть; **он пойдёт на всё** ăнá ним те чарсá тăрáймĕ; **сын пошёл в отцá** ывăлĕ ашшĕнé хывнă

пока́ 1. *нареч.* хальлĕхé, вăхăтлăхá; **пока́ я бу́ду здесь** хальлĕхé э́пĕ кунтá пулáтăп-ха **2.** *союз* -чен; **На́до подожда́ть, пока́ пройдёт дождь** Çумăр иртсé кайиччéн кĕтéс пулáть **3.** (*син.* до свида́ния) Сывă пу́лăр!, Тепрé куриччéн! *(сывпуллашса калани)*

показа́ть (*будущ.* -ажу́, -а́жешь, -а́жут; *повел. ф.* -ажи́; *прич. страд. прош.* -а́занный) *глаг. сов.* **1.** *кого-что кому, на кого-что* кăтáрт; **показа́ть де́тям карти́нки** ачасенé ӳкерчĕксéм кăтáрт; **показа́ть руко́й на ну́жный дом** киpлĕ çуртá алăпá тĕллесé кăтáрт **2.** *кого-что (син.* обнару́жить, прояви́ть) кăтáрт, пáлăрт; **студе́нты показа́ли хоро́шие зна́ния матема́тики** студентсéм математикăнá лáйăх пĕлнинé кăтáртрĕç ◆ **Я ему́ покажу́!** Кăтáртăп ак э́пĕ ăнá! *(юнаса калани)*

показа́ться (*будущ.* -ажу́сь, -а́жешься, -а́жутся; *повел. ф.* -ажи́сь, -ажи́тесь; *прич. действ. прош.* -аза́вшийся; *деепр.* -аза́вшись) *глаг. сов.* **1.** ку́рăн, курăнсá кай; **вдали́ показа́лись го́ры** инçетрé тусéм курăнсá ка́йрĕç **2.** тӳ́йăн, сĕмлéн, туйăнсá кай; **мне показа́лось, что он недово́лен** манá вăл кă´мăлсăр пу́лнăн тӳ́йăнчĕ

поки́нуть (*будущ.* -ну, -нешь, -нут; *прич. страд. прош.* -нутый) *глаг. сов., кого-что (син.* оста́вить, уйти́) пăрáх, хăвăр, тухсá кай, пăрахсá кай; **он поки́нул родно́е село́** вăл тăвáн ялĕнчéн тухсá ка́йнă

поклони́ться (*будущ.* -оню́сь, -о́нишься, -о́нятся; *повел. ф.* -они́сь, -они́тесь; *прич. действ. прош.* -они́вшийся; *деепр.* -они́вшись) *глаг. сов.* пуç тай, саламлá

поколе́ние (*-я*) *сущ. сред.* ăрý, йăх; сыпăк; **молодо́е поколе́ние** çáмрăк ăрý; **не́сколько поколе́ний родства́** тăвáнлăхăн темиçé сыпăкĕ; **переходи́ть из поколе́ния в поколе́ние** ăруран ăрăвá куçсá пыр

покори́ть (*будущ.* -рю́, -ри́шь, -ря́т; *прич. страд. прош.* -рённый) *глаг. сов. (син.* завоева́ть) парăнтăр, çĕнтéр, ярсá ил, аллá ил; **челове́к покори́л ко́смос** этéм тĕнчé уçлăхнé аллá и́лчĕ

поко́рный *прил. (син.* послу́шный, усту́пчивый) кӳнĕ, итлекéн, хирĕçмéн; **он поко́рно согласи́лся** вăл хирĕçмесĕрéх киlĕшрĕ ◆ **Поко́рно благодарю́!** Чĕрерéн тав тăвáтăп!

поко́с (-а) *сущ. муж.* **1.** ӳтă çи, ӳтă вă´хăчĕ; **наступи́л поко́с** ӳтă вă´хăчĕ çи́трĕ **2.** çаран, ӳлăх; **лесны́е поко́сы** вăрмáн çаранĕсéм

покра́сить (*будущ.* -а́шу, -а́сишь, -а́сят; *повел. ф.* -а́сь; *прич. страд. прош.* -а́шенный) *глаг. сов., что* сăрлá; пĕвéт; **покра́сить пол** урáй сăрлá; **покра́сить пря́жу** çип пĕвéт

покро́в (-а) *сущ. муж.* **1.** ви́тĕм, ви́тĕ, пĕркéв; **сне́жный покро́в поле́й** уй-хирсéн юр ви́тĕмĕ **2. Покро́в** (-а) Пукрáв (*христиансем юпа уйăхĕн 14-мĕшĕнче палăртакан уяв);* **В Покро́в вы́пал пе́рвый снег** Пукравра́ пуçласá юр çӳрĕ

покрыва́ло (-а) *сущ. сред.; множ.* **покрыва́ла** (-а́л, -а́лам) çи́тĕ, çит-

ти́, ви́тĕ, виттѝ; **покрыва́ло на крова́ть** крава́ть çиттѝ

покры́ть (*будущ.* -ро́ю, -ро́ешь, -ро́ют; *повел. ф.* -ро́й; *прич. страд. прош.* -ры́тый) *глаг. сов., кого-что* **1.** вит, хупла́, витсе́ хур; **покры́ть кастрю́лю кры́шкой** кастрюле́ виттипе́ витсе́ хур; **ту́чи покры́ли не́бо** пĕлĕтсе́м ту́пене́ хупла́рĕç **2.** (*син.* возмести́ть) сапла́, саплашта́р; **покры́ть расхо́ды** тăкаксене́ сапла́ ◆ **покры́ть позо́ром** на́мăс ту; **покры́то та́йной** па́ллă мар, пĕлме́ çук

покры́ться (*будущ.* -ро́юсь, -ро́ешься, -ро́ются; *повел. ф.* -ро́йся, -ро́йтесь; *прич. действ. прош.* -ры́вшийся; *деепр.* -ры́вшись) *глаг. сов.* ви́тĕн, пĕркéн, хупла́н; **поля́ покры́лись сне́гом** уй-хи́р юрпа́ ви́тĕннĕ

покупа́тель (-я) *сущ. муж.*, **покупа́тельница** (-ы) *жен.* тава́р илекéн, тава́р туянака́н

покупа́ть (*наст.* -а́ю, -а́ешь, -а́ют) *глаг. несов., что* ил, туя́н; **покупа́ть на ры́нке карто́фель** пасарта́ çĕр улми́ туя́н

поку́пка (-и) *сущ. жен.* **1.** (*син.* приобрете́ние) туяну́; туянни́, су́тăн илни́; **копи́ть де́ньги для поку́пки автомаши́ны** автомаши́на туянма́ укçа́ пух **2.** туя́ннă япала́; **сложи́ть поку́пку в су́мку** туя́ннă япаласене́ сумкăна́ хур

пол[1] (по́ла, о по́ле, на полу́) *сущ. муж.; множ.* **полы́** (полов́, пола́м) ура́й; **доща́тый пол** хăма́ ура́й; **це́ментный пол** цемéнт ура́й; **мыть пол** ура́й çу; **кни́га упа́ла на́ пол** кĕнеке́ урайне́ ӳ́крĕ

пол[2] *сущ. муж.; множ.* **по́лы** (-о́в) а́рлăх, не́сĕллĕх; **при́знаки пола́** а́рлăх паллисе́м; **же́нский пол** ама́ не́сĕллĕхĕ; **мужско́й пол** аçа́ не́сĕллĕхĕ, ар не́сĕллĕхĕ

пола́ (-ы́) *сущ. жен.; множ.* **по́лы** (пол, по́лам) а́ркă *(пиншакăн, пальтон)*; **пра́вая пола́** сы́лтăм а́ркă

по́лба (-ы) *сущ. жен.* пăри́; **се́ять по́лбу** пăри́ ак

полве́ка (полуве́ка) *сущ. муж.* çур ĕ́мĕр; **полве́ка тому́ наза́д** çур ĕ́мĕр каяллá

полго́да (полуго́да) *сущ. муж.* çур çул; **с тех пор не прошло́ и полуго́да** унтанпа́ çур çул та иртме́н

по́лдень (полу́дня *и* по́лдня) *сущ. муж.* кăнтăрла́, ка́нтăр вắхăчĕ; **ро́вно в по́лдень** шăп кăнтăрла́; **по́сле полу́дня** кăнтăрла́ иртсе́н

по́лдник (-а) *сущ. муж.* кахал́ апа́чĕ, кахал́ кăнтăрли́ *(кăнтăрлахи тата каçхи апат хушшинче çикелени)*

по́ле (-я) *сущ. сред.; множ.* **поля́** (-е́й) **1.** уй, хир, пу́сă; **ржано́е по́ле** ыра́ш пуссѝ; **рабо́тать в по́ле** уйра́ ĕçлé **2.** (*син.* площа́дка) ла́птăк, уй; **футбо́льное по́ле** футбо́л у́йĕ; **лётное по́ле** вĕçéв ла́птăкĕ (*самолетсен*) **3. поля́** (-е́й) *множ.* у́çлăх (*тетрадь листин хĕрринчи*) ◆ **поля́ шля́пы** шлепке́ хĕрри́; **по́ле би́твы** çапăçу́ хи́рĕ; **попа́сть в по́ле зре́ния** куç тĕлне́ пул

полево́й *прил.* уй -ĕ, уй-хи́р -ĕ; **полевы́е рабо́ты** уй-хи́р ĕçĕсе́м ◆ **полево́й бино́кль** çар бино́клĕ; **полева́я по́чта** çар почтѝ

поле́зный *прил.*, **поле́зно** *нареч.* у́сăллă, ки́рлĕ; **поле́зные насеко́мые** у́сăллă хурт-кăпша́нкă; **мёд поле́зен для здоро́вья** пыл сы́влăхшăн у́сăллă ◆ **поле́зные ископа́емые** çĕр айĕнчи́ пуянлăхсе́м

поле́но (-а) *сущ. сред.; множ.* **поле́нья** (-ьев) ву́тă сыппи́, пуленке́; **подбро́сить в печь па́ру поле́ньев** кăмакана́ пĕр-и́кĕ сы́пă ву́тă пăра́х

полете́ть (*будущ.* -ечу́, -ети́шь, -ети́т) *глаг. сов.* **1.** вĕçсé кай; **пти́цы полете́ли к ле́су** кайăксе́м вăрманаллá вĕçсé ка́йрĕç **2.** (*син.* помча́ться)

ыткăн, ви́рхĕн; **полете́ть стрело́й** çĕмре́н пек ыткăн **3**. (*син.* упасть) ӳк, персе́ ан; **ве́щи с по́лки полете́ли на́ пол** япаласе́м сентре́ çинче́н персе́ а́нчĕç

полёт (-а) *сущ. муж.* вĕçĕ́в; вĕçни́; **полёт пчелы́** вĕлле́ хӳ́рчĕ вĕçни́; **ночно́й полёт** çĕрлехи́ вĕçĕ́в; **пе́рвый полёт в ко́смос** тĕнче́ уçлăхне́ пĕрре́мĕш хут вĕçсе́ кайни́

по́лзать (*наст.* -аю, -аешь, -ают) *глаг. несов.* упале́н, шу, шуса́ çӳре́; **по́лзать на четвере́ньках** тăва́т ура́н упале́н; **ребёнок по́лзает по́ полу** пĕ´чĕк ача́ урайĕнче́ шуса́ çӳре́т

ползко́м *нареч.* упаленсе́, шуса́, тăва́т ура́н; **дви́гаться ползко́м** упаленсе́ пыр

ползти́ (*наст.* -зу́, -зёшь, -зу́т; *прич. действ. наст.* -зу́щий, *прош.* -зший; *деепр.* -зя́) *глаг. несов.* шу, упале́н, шуса́ пыр, упаленсе́ пыр; **червя́к ползёт** ăма́н шуса́ пыра́ть **2**. шу, сриле́н куç, хулле́н ирт; **по́езд е́ле ползёт** по́езд ара́н шуса́ пыра́ть; **вре́мя ползёт ме́дленно** вă´хăт ерипе́н шăва́ть ◆ **слу́хи ползу́т** сас-хура́ сарăла́ть

поли́в (-а) *сущ. муж.*, **поли́вка** (-и) *жен.* шăварӳ́; шăварни́; **поли́вка рассáды помидо́ров** помидо́р калчине́ шăварни́

полигра́фия (-и) *сущ. жен.* полиграфи *(кĕнеке, хаçат-журнал пичетлекен предприятисем, вĕсен техника хатĕрĕсем)*

поликли́ника (-и) *сущ. жен.* поликли́ника *(килĕсенчен пыракан çынсене сиплекен, чирлĕ çынсем патне врачсем яракан больница)*; **де́тская поликли́ника** ача́-пăча́ поликлиники́

полиме́ры (-ов) *сущ. множ.; един.* **полиме́р** (-а) *муж.* полиме́р *(техникăра анлăн усă куракан химипĕрлешĕвĕсем)*

политехни́ческий *прил.* политéхника -ĕ; **политехни́ческий институ́т** политéхника институ́чĕ *(техникăн нумай отраслĕсем валли кадрсем хатĕрлекенни)*

поли́тик (-а) *сущ. муж.* поли́тик; **о́пытный поли́тик** ăста́ поли́тик

поли́тика (-и) *сущ. жен.* поли́тика *(паттулăх е парти хăйĕн тĕллевĕсене тытса пыни)*; **вне́шняя поли́тика** тулашри́ поли́тика; **вну́тренняя поли́тика** шалти́ поли́тика; **экономи́ческая поли́тика госуда́рства** паттулăхăн экономикăри́ политики́; **занима́ться поли́тикой** поли́тика ĕçне́ хӳтлăн

полити́ческий *прил.*, **полити́чески** *нареч.* поли́тика -ĕ; **полити́ческие па́ртии** поли́тика партийĕсе́м; **приня́ть полити́чески ве́рное реше́ние** поли́тика тĕлĕшĕнче́н тĕ´рĕс йышăну́ ту

поли́ть (*будущ.* полью́, польёшь, полью́т; *прош.* по́лил *и* поли́л, полила́, по́лило *и* поли́ло, *множ.* по́лили *и* поли́ли; *прич. страд. прош.* по́литый *и* поли́тый) *глаг. сов.* **1**. шăвăр, шыв яр; **поли́ть капу́сту** купăста́ шăвăр **2**. *1 и 2 л. не употр.* çума́ пуçла́; **поли́л си́льный дождь** çӳмăр хытă çума́ пуçларĕ

полице́йский 1. *прил.* поли́ци -ĕ; **полице́йская маши́на** поли́ци машини́ **2**. **полице́йский** (-ого) *сущ. муж.* полице́йски *(полицире ĕçлекен)*

поли́ция (-и) *сущ. жен.* поли́ци *(çĕршывăн шалти йĕркине сыхлакан, преступниксемпе кĕрешекен орган)*; **нало́говая поли́ция** нало́г поли́цийĕ; **наря́д поли́ции** поли́ци наря́чĕ

полк (полка́, о по́лке, в полку́) *сущ. муж.* полк *(çар чаçĕ)*; **авиацио́нный полк** авиа́ци по́лкĕ; **полк морско́й пехо́ты** ти́нĕс пехоти́н по́лкĕ; **штаб полка́** полк шта́бĕ

по́лка (-и) *сущ. жен.* **1**. çӳ´лĕк, сентре́; **кни́жная по́лка** кĕнеке́ çӳ´лĕкĕ **2**. по́лка; **ве́рхние по́лки ваго́на** ва-

гóнăн çӳлти́ полкисéм ◆ **класть зу́бы на по́лку** вы́çă хă´рăн

полко́вник (-а) *сущ. муж.* полко́вник *(чи аслă офицер чинĕ, унран аслăраххи — генерал)*

полково́дец (-дца) *сущ. муж.* полково́дец, çар пу́çĕ; **выдаю́щиеся ру́сские полково́дцы** чапа́ ту́хнă вы́рăс çар пуçĕсéм

пол-ли́тра (полули́тра *и* пол-ли́тра) *сущ. муж.* çур литр; **пол-ли́тра молока́** çур литр сĕт

полме́сяца (полуме́сяца *и* полме́сяца) *сущ. муж.* çур ӳйăх; **до заверше́ния рабо́ты оста́лось полме́сяца** ĕçé вĕçличчéн çур ӳйăх юлчĕ

полме́тра (полуме́тра *и* полме́тра) *сущ. муж.* çур метр; **на костю́м не хвати́ло полме́тра тка́ни** костю́м çĕлемé çур метр пусмá çитмéрĕ

полнолу́ние (-я) *сущ. сред.* туллú ӳйăх, çавра́ ӳйăх

по́лностью *нареч. (син.* соверше́нно) пĕтĕмпéх, йăлтáх; **я по́лностью с ва́ми согла́сен** э́пĕ сирĕнпé йăлтáх килĕше́тĕп

по́лночь (полу́ночи, по́лночи *и* полуно́чи, полу́ночью) *сущ. жен.* çур çĕр; **по́сле полу́ночи** çур çĕр иртсéн; **ро́вно в по́лночь** шăп çур çĕртé

по́лный (*кратк. ф.* по́лон, полна́, полно́ *и* по́лно, *множ.* полны́ *и* по́лны; *сравн. ст.* полнéе, полнéй; *превосх. ст.* полне́йший) *прил.* **1.** *чего и кем-чем* туллú; **по́лный кувши́н молока́** кă´кшăм туллú сĕт; **в ко́мнате полно́ наро́ду** пӳлĕмрé хáлăх туп-туллú; **по́лное собра́ние сочине́ний** çырнисéн туллú пуххú **2.** (*син.* то́лстый; *ант.* худóй) тачкá, мă´нтăр, сáмăр, кӳпшéк; **по́лная же́нщина** мă´нтăр хĕрăрăм ◆ **по́лон жи́зни** хавáслă; **по́лный идио́т** тăр ухмáх; **мужчи́на в по́лном расцве́те сил** вăй питтú арсы́н; **рабо́та идёт по́лным хо́дом** ĕç хĕрсé пырáть

полови́на (-ы) *сущ. жен.* çу́рă, çурри́; ва́рă, варри́; **полови́на арбу́за** çур арбу́з; **на полови́не пути́** çул варринчé, çур çултá; **сейча́с полови́на шесто́го** хáлĕ пи́ллĕк çу́рă *(вăхăт çинчен)* ◆ **супру́жеская полови́на** мă´шăр *(арăмĕ е упăшки);* **полови́на на полови́ну** шăп çурмалла́

полови́ца (-ы) *сущ. жен.* ура́й хăми́

поло́вник (-а) *сущ. муж.* çăпала́; **разли́ть суп поло́вником** çăпалапа́ яшкá антăр

поло́гий *прил. (син.* пока́тый; *ант.* круто́й), **поло́го** *нареч.* сĕвé, ва́шмăк; **поло́гий спуск к реке́** çырмана́ анмалли́ ва́шмăк çул

положе́ние (-я) *сущ. сред.* **1.** (*син.* местонахожде́ние) вы́рăн; тăни́, вырнаçни́; **положе́ние су́дна в мо́ре** карáпăн тинĕсри́ вы́рăнĕ **2.** (*син.* обстано́вка) ларӳ́-тăрӳ́, тă´рăм; **междунаро́дное положе́ние** тĕнчери́ ларӳ́-тăрӳ́; **тяжёлое экономи́ческое положе́ние** экономикăри́ йы́вăр ларӳ́-тăрӳ́; **тяжёлое положе́ние в семье́** кил-йышри́ йывăрлăхсéм **3.** (*син.* роль, ме́сто) вы́рăн, пĕлтĕ́рĕш; **руководя́щее положе́ние** пуç пулсá тăни́, пы́сăк пĕлтĕ́рĕшлĕ пулни́ **4.** положе́ни (*документ*); **положе́ние о вы́борах** суйла́в положе́нийĕ **5.** шӳхăш; **основны́е положе́ния докла́да** докладри́ тĕп шухăшсéм ◆ **же́нщина в положе́нии** йы́вăр хĕрăрăм *(ача тума хатĕрленекен)*

положи́тельный *прил. (ант.* отрица́тельный), **положи́тельно** *нареч.* **1.** (*син.* утверди́тельный) ма́йлă, ки́лĕшлĕ, ырла́влă; **положи́тельный отве́т** ма́йлă хура́в, килĕшсé хуравлани́; **дать положи́тельную оце́нку** ырласá хакла́ **2.** (*син.* хорóший, полéзный) ла́йăх, ӳсăллă; **эксперимéнт дал положи́тельные результа́ты** сăна́в ла́йăх результа́т па́чĕ **3.** пӳрлă *(паллăллă);* **положи́тельная температу́-**

ра нульте́н ӑ́шӑ температу́ра ◆ **положи́тельный заря́д** пу́рлӑ заря́д *(физикӑра)*; **положи́тельная сте́пень прилага́тельного** па́ллӑ ячёсе́н тӗп сте́пенӗ

положи́ть (*будущ.* -ожу́, -о́жишь, -о́жат; *повел. ф.* -ожи́; *прич. страд. прош.* -о́женный) *глаг. сов., кого-что* хур, ларт, хыв; **положи́ть кни́гу на по́лку** кӗнекене́ çу́ ́лӗк çине́ хур; **больно́го положи́ли в больни́цу** чи́рлӗ çынна́ больницӑна́ ху́нӑ ◆ **поло́жим** *вводн. сл. и частица* те́йӗпӗр, пу́лтӑр; **поло́жим, я соглашу́сь** э́пӗ ки́лӗшӗп те́йӗпӗр

по́лоз (-а) *сущ. муж.; множ.* **поло́зья** (-ьев) тупа́н; **поло́зья сане́й** çуна́ тупанӗсе́м

поло́к (полка́, на полке́) *сущ. муж.* лапка́ (*мунчара*); **па́риться на полке́** лапка́ çинче́ çапа́нса́ лар

полоса́ (-ы́, *вин. п.* полосу́ *и* по́лосу) *сущ. жен.; множ.* **по́лосы** (-о́с, -о́сам) **1.** йӑ ́рӑм, йӗр; **по́лосы на те́ле от уда́ров** ӳт çинчи́ ҫа́пнӑ йӗрсе́м **2.** (*син.* по́яс) тӑ ́рӑх, я́рӑм, ка́сӑ; **лесна́я полоса́** вӑрма́н я́рӑмӗ; **полоса́ песка́ вдоль бе́рега** çыра́н хӗррине́ хӑ ́йӑр кассе́ **3.** (*син.* пери́од) та́пхӑр, вӑ ́хӑт; **све́тлая полоса́ жи́зни** пурнӑçри́ са́вӑк та́пхӑр ◆ **газе́тная полоса́** хаçа́т страницӗ́

полоса́тый *прил.* йӑ ́рӑмлӑ, йӑ ́рӑмйӑ ́рӑм; **полоса́тая ткань** йӑ ́рӑмйӑ ́рӑм пусмӑ́

полоска́ть (*наст.* -ощу́, -о́щешь, -о́щут *и* -оска́ю, -а́ешь, -а́ют; *повел. ф.* -ощи́ *и* -оска́й; *прич. действ. наст.* -о́щущий *и* -оска́ющий; *прич. страд. прош.* -о́сканный; *деепр.* -ощá *и* -оска́я) *глаг. несов., что* **1.** чӳхе́, ух; **полоска́ть бельё по́сле сти́рки** çу́нӑ хы́ççӑн кӗпе́-йӗмӗ́ чӳхе́ **2.** *1 и 2 л. не употр.* (*син.* развева́ть) вӗлкӗштер, хумхантар, чӳхентер; **ве́тер поло́щет знамёна** çил ялавсенӗ́ вӗлкӗштерет

по́лость (-и) *сущ. жен.; множ.* **по́лости** (-е́й) хӑ ́вӑл; **по́лость рта** çӑвар хӑ ́вӑлӗ; **брюшна́я по́лость** вар хӑ ́вӑлӗ

полоте́нце (-а) *сущ. сред.; множ.* **полоте́нца** (-нец, -нцам) ал шӑлли́, пит шӑлли́; **махро́вое полоте́нце** тӗ ́клӗ ал шӑлли́; **вы́шитое полоте́нце** тӗ ́рӗллӗ ал шӑлли́; **вытира́ться полоте́нцем** пит шӑллипе́ шӑ ́лӑн

свинья́ (-и́) *сущ. жен.; множ.* **сви́ньи** (свине́й, сви́ньям) сысна́; **ди́кие сви́ньи** хир сыснисе́м; **держа́ть свине́й** сысна́ усра́

свисте́ть (*наст.* -ищу́, -исти́шь, -исти́т; *повел. ф.* -сти́) *глаг. несов.* шӑ́хӑр, шӑ́хӑрт, шиле́т; **свисте́ть в свисто́к** шӑхличпе́ шӑ́хӑрт; **пу́ли свистя́т** пульӑсе́м шилете́ҫҫӗ

свобо́да (-ы) *сущ. жен.* и́рӗк, и́рӗклӗх; **вы́пустить на свобо́ду** ирӗке́ яр

свобо́дный *прил.*, **свобо́дно** *нареч.* **1.** (*ант.* зави́симый, подчинённый) и́рӗклӗ, и́рӗк, пӑхӑнма́н; **свобо́дная страна́** пӑхӑнма́н ҫӗршы́в; **говори́ть свобо́дно** и́рӗклӗн кала́ **2.** (*ант.* занято́й) и́рӗклӗ, пу́шӑ; ерҫу́ллӗ; **свобо́дный стул** пу́шӑ пука́н; **в свобо́дное вре́мя** ерҫу́ллӗ вӑхӑтра́ **3.** (*ант.* те́сный) шалпа́р, а́слӑ, пы́сӑк; **свобо́дный плащ** шалпа́р плащ

своевре́менный *прил.*, **своевре́менно** *нареч.* вӑ́хӑтлӑ, вы́рӑнлӑ; ки́рлӗ вӑхӑтра́; **своевре́менное предупрежде́ние** вӑхӑтра́ асӑрхаттарни́

свой (своего́) *местоим. муж.*; **своё** (своего́) *сред.*; **своя́** (своей) *жен.; множ.* **свои́** (свои́х) ха́мӑн (*манӑн*), хӑ́вӑн (*санӑн*), хӑ́йӗн (*унӑн*); ха́мӑрӑн (*пирӗн*), хӑ́вӑрӑн (*сирӗн*), хӑйсе́н (*вӗсен*); **э́то у меня́ своя́ кни́га** ку ман ха́мӑн кӗнеке́

сво́йство (-а) *сущ. сред.* па́ллӑ, пахалӑх, ӳ́йӑмлӑх; **сво́йства мета́ллов** металсе́н пахалӑхӗсе́м

свояк (-а́) *сущ. муж.* пуҫана́; **они́ свояки́** вӗсе́м пуҫана́ллӑ *(аппӑшӗпе йӑмӑкне кавча илнӗ арҫынсем)*

свояче́ница (-ы) *сущ. жен.* хӗр пу́лтӑр *(арҫынӑн — арӑмӗн аппӑшӗ е йӑмӑкӗ)*

связа́ть (*будущ.* свяжу́, свя́жешь, свя́жут; *повел. ф.* свяжи́) *глаг. сов.* **1.** ҫых, ҫыхса́ ларт, сып; ҫыхса́ хур; **связа́ть концы́ верёвок** кантра́ вӗҫӗсене́ сып; **кни́ги свя́заны в па́чку** кӗнекесене́ тӗркелесе́ ҫыхнӑ **2.** (*син.* соедини́ть) ҫыхӑнта́р; **связа́ть города́ желе́зной доро́гой** хуласене́ чугӑн ҫулпа́ ҫыхӑнта́р **3.** ҫых, ҫыхса́ ту; **связа́ть ко́фту** ко́фта ҫых ◆ **связа́ть по рука́м и нога́м** ал-урана́ ҫыхланта́р, ӗҫлеме́ ан пар

связа́ться (*будущ.* свяжу́сь, свя́жешься, свя́жутся; *повел. ф.* свяжи́сь, свяжи́тесь; *прич. действ. прош.* связа́вшийся; *деепр.* связа́вшись) *глаг. сов.* **1.** ҫыхӑн, ҫыхӑну́ тыт; **связа́ться по телефо́ну** телефонпа́ ҫыхӑн **2.** ҫыхла́н, ер, ҫыхлансе́ кай; **он связа́лся с ненадёжными людьми́** вӑл ша́нчӑксӑр ҫынсемпе́ ҫыхла́ннӑ

связь (-и, о свя́зи, в связи́ *и* в свя́зи) *сущ. жен.* **1.** (*син.* обще́ние) ҫыхӑну́, хутшӑну́; **дру́жеские свя́зи** ту́слӑ ҫыхӑну́; **подде́рживать связь** ҫыхӑну́ тыт **2.** ҫыхӑну́ *(ҫыхӑнмалли хатӗрсем)*; **телефо́нная связь** телефо́н ҫыхӑнӑвӗ

свято́й **1.** *прил.*, **свя́то** *нареч.* таса́, сӑва́плӑ, пархата́рлӑ; **свята́я обя́занность** пархата́рлӑ ти́вӗҫ **2.** *сущ.* **свя-**

тóй (-óго) *муж.* çеттýй *(христиан тĕнĕшĕн нумай вăй хунă çын)*

свящéнный *прил.* **1.** тасá, чыслă, пархатáрлă; **свящéнный долг пéред отéчеством** тăвáн çĕршыв умĕнчи тасá тивĕç **2.** тĕн -ĕ; **свящéнный обрáд** тĕн йăли; **свящéнное писáние** тĕн кĕнеки

сгорéть (*будущ.* -рю́, -ри́шь, -ря́т; *прич. действ. прош.* -рéвший) *глаг. сов.* çун, çунсá кай; **дом сгорéл дотлá** çурт ним юлми́ çунсá кáйнă

сдать (*будущ.* сдам, сдашь, сдаст, *множ.* сдади́м, сдади́те, сдаду́т; *прош.* сдал, сдала́, сда́ло; *повел. ф.* сдай; *прич. действ. прош.* сда́вший; *прич. страд. прош.* сда́нный) *глаг. сов.* **1.** *кого-что* пар, та́вăр, тавăрсá пар; **сдать кни́ги в библиоте́ку** кĕнекесенé библиотекáнă тавăрсá пар **2.** *что* тарá пар; **сдать кварти́ру на́ год** хваттерé пĕр çултáлăклăх тарá пар **3.** *что* пар, тыт; **сдать экза́мен** экзáмен пар

сда́ться (*прош.* сда́лся, сдала́сь, сдало́сь *и* сда́лось, *множ.* сдали́сь *и* сда́лись; *повел. ф.* сда́йся, сда́йтесь; *прич. действ. прош.* сда́вшийся; *деепр.* сда́вшись) *глаг. сов.* па́рăн, тыткáнă кай; **сда́ться врагу́** тăшмана́ па́рăн

сда́ча (-и) *сущ. жен.* ытлашши́ укçá, юлнă укçá *(тавар хакĕн тăрри);* **сдать пятьдеся́т рубле́й сда́чи** ытлашши́ а́лă тенкé тавăрсá пар

сде́лать (*будущ.* -аю, -аешь, -ают) *глаг. сов., что* ту, тусá хур, пурнăçлá; **я э́то сде́лал свои́ми рука́ми** э́пĕ куна́ хам алăпа́ ту́нă ◆ **сде́лать вы́говор** ятлá, хытáр

сде́латься (*будущ.* -аюсь, -аешься, -аются; *повел. ф.* -айся, -айтесь; *прич. действ. прош.* -авшийся; *деепр.* -авшись) *глаг. сов.* пул, пулсá тăр, пулсá кай; **вы́мытые во́лосы сде́лались мя́гкими** çýнă çýç çеп-çемçé пу́лчĕ

сде́льный *прил* ĕç -ĕ; ĕ́çĕн тýлекéн; **сде́льная опла́та** ĕ́çĕн тýлени

сдóбный *прил.* юрмáллă, тéхĕмлĕ *(çу, сахăр, çăмарта янăскер);* **сдóбное тéсто** юрмáллă чустá

себесто́имость (-и) *сущ. жен.* хăй хáклăх *(тавар тума тухнă пĕтĕм тăкак)*; **сни́зить себесто́имость проду́кции** проду́кци хăй хаклăхнé чакáр

себя́ (себé, собóй *и* собóю, о себé) *местоим. возврат.* хамá (*мана*), хăвнá (*сана*), хăйнé (*ăна);* хамăрá (*пире*), хăвăрá (*сире*), хăйсенé (*вĕсене*); **они́ рабо́тают, не жале́я себя́** вĕсéм хăйсенé хĕрхенмéсĕр ĕçлéççĕ; **ты ду́маешь то́лько о себе́** э́сĕ ху çинчéн çеç шухăшлáтăн ◆ **вы́йти из себя́** тарăхсá кай; **вы́вести из себя́** тарăхтарсá яр; **говори́ть про себя́** ăшрá калá; **не по себе́** чун вырáнтá мар; **прийти́ в себя́** тăнá кĕр, лăпланса çит

сев (-а) *сущ. муж.* акá; акни́; **весéнний сев** çур акú; **вести́ сев пшени́цы** тýлă ак

сéвер (-а) *сущ. муж.* (*ант.* юг) çýрçĕр; **с сéвера на юг** çурçĕртéн кăнтăралла́; **на сéвере Росси́и** Раççéйĕн çýрçĕр пайĕнчé

сéверный *прил. (ант.* ю́жный) çýрçĕр -ĕ; çурçĕрти́; **сéверный вéтер** çурçĕртéн вĕрекéн çил; **Сéверный по́люс** Çýрçĕр по́люсĕ

севрю́га (-и) *сущ. жен.* çеври́к (*осетр йышши пулă)*

сегóдня *нареч.* пая́н, çак кун; **сегóдня хóлодно** пая́н си́вĕ; **встрéтимся сегóдня и́ли зáвтра** пая́н е ырáн тĕл пу́лăпăр ◆ **не сегóдня зáвтра** пая́н-ыранáх

сегóдняшний *прил.* паянхи́; **сегóдняшняя газéта** паянхи́ хаçáт ◆ **на сегóдняшний день** паянхи́ куна́, çак самантá

седлó (-á) *сущ. сред.; множ.* **сёдла** (сёдел, сёдлам) **1.** йĕнéр; **сесть в сед-**

ло́ йёнёр çинé лар **2.** (*син.* сидéнье) лáркăч *(велосипедăн, мотоциклăн)*

седо́й *прил.* кăвáк, шýрă; кăвакáрнă, шурáлнă; **седы́е во́лосы** кăвáк çýç

сезо́н (-а) *сущ. муж.* сезóн, вắхăт, тáпхăр; **ле́тний сезо́н** çуллахи́ вắхăт; **охо́тничий сезо́н** сунáр тáпхăрĕ

сейча́с *нареч.* **1.** хáлĕ, халь, çак самантрá; **сейча́с де́сять часо́в** хáлĕ вýнă сехéт **2.** (*син.* скóро) халéх, кĕçéх, кĕç-вĕ́ç; **они́ сейча́с приду́т** вĕсéм кĕçéх килéççĕ

секре́т (-а) *сущ. муж.* (*син.* та́йна) вắрттăнлăх, секрéт; **раскры́ть секре́т** вăрттăнлăхá уçсá пар

секрета́рь (-я́) *сущ. муж.* секретáрь *(учрежденин кулленхи ĕçĕсене туса тăракан);* **секрета́рь суда́** суд секретáрĕ

секре́тный (*син.* та́йный) *прил.*, **секре́тно** *нареч.* вắрттăн, секрéтлă; **секре́тное поруче́ние** вắрттăн хýшнă ĕç

секу́нда (-ы) *сущ. жен.* **1.** çеккýнт *(вăхăт виçи — минутăн $^{1}/_{60}$ пайĕ)* **2.** çеккýнт *(математикăра кĕтес виçи — градусăн $^{1}/_{360}$ пайĕ)*

секу́ндный *прил.* çеккýнт -ĕ; **секу́ндная стре́лка часо́в** сехéтĕн çеккýнт йĕппи́

се́кция (-и) *сущ. жен.* сéкци, ýйрăм, пай; **спорти́вные се́кции** спорт секцийĕсéм

се́лезень (-зня) *сущ. муж.* кăвакáл аçи́

селе́ние (-я) *сущ. сред.* ял, посёлок

село́ (-á) *сущ. сред.; множ.* **сёла** (сёл, сёлам) ял, салá; **база́рное село́** пасáрлă ял; **ру́сское село́** вырăс салú

се́льский *прил.* ял -ĕ, салá -ĕ; ялти́; **се́льское хозя́йство** ял хуçáлăхĕ; **се́льское населе́ние** ял хáлăхĕ; **глава́ се́льской администра́ции** ял администрáцийĕн пýçлăхĕ

сельскохозя́йственный *прил.* ял хуçáлăх -ĕ; **сельскохозя́йственные рабо́ты** ял хуçáлăх ĕçĕсéм

семафо́р (-а) *сущ. муж.* семафóр *(поездсене сигнал памалли хатĕр)*

семе́йный *(кратк. ф.* -éен, -éйна, -éйно, -éйны) **1.** çемьé -ĕ, кил-йы́ш -ĕ; çемьери́, кил-йышри́; **семе́йная жизнь** çемьé пýрнăçĕ; **семе́йные сбо́ры** кил-йышри́ харкашусéм **2.** (*ант.* холостóй) çемьéллĕ, áрлă-áрăмлă; **семе́йный челове́к** çемьéллĕ çын

семе́стр (-а) *сущ. муж.* семéстр, çур çýллăх *(аслă шкулсенче);* **пе́рвый семе́стр учёбного го́да** вĕренӳ́ çýлĕн пĕрремĕш семéстрĕ

се́мечко (-а) *сущ. сред.; множ.* **се́мечки** (-чек, -чкам) **1.** хĕвéл çăвăнăш *(вăрри);* **грызть се́мечки** хĕвéл çăвăнăш шĕкĕлчé **2.** вắрă, тĕ́шĕ; **се́мечко ты́квы** кáвăн вăрри́

семиле́тний *прил.* çи́чĕ çулти́, çиччĕри́; **семиле́тние де́ти** çиччĕри́ ачасéм

семна́дцать (-и) *числит. колич.* вун çи́ччĕ, вун çи́чĕ, вун çич; **в семна́дцать лет** вун çиччĕрé, вун çи́чĕ çулта́

семь (семи́, семью́) *числит. колич.* çи́ччĕ, çи́чĕ, çич; **семь дней** çи́чĕ кун; **семь раз** çи́ччĕ, çи́чĕ хутчéн

се́мьдесят (семи́десяти, семью́десятью) *числит. колич.* çи́тмĕл; **старику́ уже́ за се́мьдесят** стари́к çитмĕлтéн и́ртнĕ ĕ́нтĕ

семьсо́т (семисо́т, семьюста́ми, о семиста́х) çич çĕр; **го́роду испо́лнилось семьсо́т лет** хулá çич çĕр çул тултáрчĕ

семья́ (-и́) *сущ. жен.; множ.* **се́мьи** (семéй, се́мьям) **1.** çемьé, кил-йы́ш; **член семьи́** çемьери́ çын; **многоде́тная семья́** нумáй ачáллă çемьé; **семья́ Петро́вых** Петровсéн кил-йы́шĕ **2.** йыш,. пýслăх, картá, ýшкăн; **семья́ волко́в** пĕр пýслăх кáшкăр; **се-**

мья́ груздéй кӑ´рӑç картú; **пчелúная семья́** хурт йы́шӗ *(пӗр вӗллери)* ◆ **семья́ языкóв** хурӑнта́шлӑ чӗлхесе́н йы́шӗ

се́мя (се́мени) *сущ. сред.; множ.* **семена́** (-мя́н, -менá́м) вӑ´рӑ; вӑ´рлӑх; **се́мя арбу́за** арбу́з вӑррú; **семена́ овса́** сӗ´лӗ вӑ´рлӑхӗ

се́ни (сенéй) *сущ. множ.* çéнӗк, пу́рт ум, пӑ´лтӑр; **дверь сене́й** çéнӗк а́лăкӗ; **спать в сенáх** пӑлтӑртá çы́вăр

се́но (-а) *сущ. сред.* у́тӑ; **луговóе се́но** çарáн утú; **суши́ть се́но** у́тӑ ти́пӗт

сенокóс (-а) *сущ. муж.* у́тӑ çи, у́тӑ çулнú; **приступи́ть к сенокóсу** у́тӑ çулмá тух

сентя́брь (-я́) *сущ. муж.* а́вăн у́йăхӗ, сентя́брь *(çулталăкри тăххăрмӗш уйăх)*; **пе́рвое сентября́ — День зна́ний** а́вăн у́йăхӗн пӗрре́мӗшӗ — Пĕлӳ´ ку́нӗ

сентя́брьский *прил.* сентя́брь -ӗ; а́вăн уйăхӗнчú, сентябрьтú

серде́чный *прил.*, **серде́чно** *нареч.* **1.** чӗре́ -ӗ; **серде́чные боле́зни** чӗре́ чирӗсе́м **2.** (*син.* задуше́вный) кӑ´мӑллă, ă´шă, ы́рă кӑ´мӑллă; **серде́чно поздра́вить** ă´шшăн саламлá

серди́тый (*син.* злой) *прил.*, **серди́то** *нареч.* çиллéс, усáл, хая́р, çилле́нчӗк; **серди́тое лицó** çиллéс сăнпи́т; **серди́то крича́ть на дете́й** ачасенé хая́ррăн кăшкăрсá вăрç ◆ **под серди́тую ру́ку** çилле́ннӗ самантрá

серди́ться (*наст.* сержу́сь, се́рдишься, се́рдятся; *повел. ф.* серди́сь, серди́тесь; *прич. действ. наст.* серда́щийся; *деепр.* серда́сь) *глаг. несов., на кого-что* çилле́н, та́рăх, çи́лĕ тыт; **серди́ться из-за пустяко́в** вак-тĕвéкшĕн çилле́н; **я на тебя́ не сержу́сь** э́пĕ санá çи́лĕ тытмáстăп

се́рдце (-а) *сущ. сред.; множ.* **сердца́** (-де́ц, -дцá́м) **1.** чӗре́; **здоро́вое се́рдце** сы́вă чӗре́; **се́рдце бьётся** чӗре́ тапáть **2.** чӗре́, чун, чун-чӗре́, кă´мăл; **челове́к с до́брым се́рдцем** ырă кă´мăллă çын ◆ **от всего́ се́рдца** пĕ´тĕм чун-чӗререн; **се́рдце не лежи́т** *к кому-чему* чун выртмáсть; **по се́рдцу** *и* **по́ сердцу** кăмăлá кая́ть, чун выртáть; **отлегло́ от се́рдца** чӗре́ лăштáх пу́лчӗ

серебро́ (-а́) *сущ. сред.* кĕ´мĕл; **изде́лия из серебра́** кĕ´мĕл япаласе́м

серебряный *прил.* кĕ´мĕл ...; кĕ´мĕл -ĕ; **серебряная ло́жка** кĕ´мĕл кáшăк; **серебряный рудни́к** кĕ´мĕл рудни́кĕ

середи́на (-ы) *сущ. жен.* вáрă, вăтá çĕр; **середи́на кру́га** çаврáкăш варрú; **в середи́не ле́са** вăрмáн варринче

сержа́нт (-а) *сущ. муж.* сержáнт *(кĕçĕн командир)*; **ста́рший сержа́нт** áслă сержáнт

серп (-а́) *сущ. муж.* çурлá; **ра́ньше хлеб жа́ли серпо́м** ĕ´лĕк тыррá çурлапá вы́рнă

се́рый (*кратк. ф.* сер, серá, се́ро, се́ры) *прил.* сă´рă, кăвáк; **се́рые ту́чи** кăвáк пĕлĕтсéм

серьга́ (-и́) *сущ. жен.; множ.* **се́рьги** (серёг, серьгáм *и* се́рьгам) хăлхá çаккú, алкá; **золоты́е се́рьги** ы́лтăн алкá

серьёзный *прил.*, **серьёзно** *нареч.* **1.** (*анот.* легкомы́сленный) тĕ´плĕ, шу́хăшлă, ти́млĕ; **серьёзно относи́ться к де́лу** ĕçé тĕ´плĕ тумá тă´рăш **2.** (*син.* тру́дный) йы́вăр, кă´ткăс; **серьёзная боле́знь** йы́вăр чир

се́ссия (-и) *сущ. жен.* се́сси *(вăхăтран вăхăта ирттерекен лару)*; **се́ссия Госуда́рственного Сове́та Чува́шской Респу́блики** Чăва́ш Республикúн Патша́лăх Канáшĕн се́ссийĕ

сестра́ (-ы́) *сущ. жен.; множ.* **сёстры** (сестёр, сёстрам) **1.** аппá *(хамран асли)*, йă´мăк *(хамран кĕçĕнни)* **2.** сестрá *(вăтам пĕлӳллĕ медицина ĕçченĕ)*; **хирурги́ческая сестра́** хирýрги сестрú

сестрёнка (-и) *сущ. жен.* йă´мăк

сесть (*будущ.* ся́ду, ся́дешь, ся́дут; *повел. ф.* ся́дь; *прич. действ. прош.* се́вший) *глаг. сов.* **1.** лар, вырнаҫса́ лар; **сесть за стол** сӗтӗ́л хушшине́ лар; **сесть в авто́бус** автобуса́ кӗрсе́ лар; **пти́ца се́ла на ве́тку** ка́йӑк турӑ́т ҫине́ анса́ ларчӗ **2.** лар, кӗр; **по́сле сти́рки руба́шка се́ла** ҫӳ́нӑ хыҫҫӑн кӗпе́ ларчӗ ◆ **сесть за кни́ги** кӗнеке́ вулама́ пике́н; **сесть на дие́ту** дие́та тытма́ пуҫла́; **сесть в тюрьму́** тӗрмене́ лек; **со́лнце се́ло** хӗвӗ́л анса́ ларчӗ

се́ялка (-и) *сущ. жен.* се́ялка *(тырӑ акмалли машина)*

се́ять (*наст.* се́ю, се́ешь, се́ют; *повел. ф.* сей; *прич. действ. наст.* се́ющий, *прош,* се́явший; *прич. страд. прош.* се́янный; *деепр.* се́я) *глаг. несов., что* **1.** ак; **се́ять горо́х** пӑрҫа́ ак **2.** алла́; **се́ять муку́** ҫӑ́нӑх алла́ ◆ **се́ет ме́лкий дождь** йӗпхӳ́ ҫӑва́ть

сжать (*будущ.* сожму́, сожмёшь, сожму́т; *повел. ф.* сожми́; *прич. страд. прош.* сжа́тый) *глаг. сов., кого-что* хӗс, пӑчӑртӑ́, чӑмӑртӑ́; **сжать ру́ку** алла́ чӑмӑртӑ́; **сжать гу́бы** тутана́ пӑчӑртаса́ тыт

сза́ди *нареч.* хыҫра́н, хыҫалта́н; хыҫра́, хыҫалта́; **подойти́ сза́ди** хыҫалта́н пырса́ тӑр; **стоя́ть сза́ди** хыҫра́ тӑр

сигаре́та (-ы) *сущ. жен.* сигаре́т; **па́чка сигаре́т** пӗр па́чка сигаре́т

сигна́л (-а) *сущ. муж.* сигна́л, па́ллӑ; **звукова́й сигна́л** са́сӑ сигна́лӗ; **пода́ть сигна́л рука́й** алӑпа́ сулса́ па́ллӑ пар

сиде́ть (*наст.* сижу́, сиди́шь, сидя́т) *глаг. несов.* **1.** лар; вырнаҫса́ лар; **сиде́ть на сту́ле** пукан ҫинче́ лар; **пти́ца сиди́т на ве́тке** ка́йӑк турӑ́т ҫинче́ ларать; **сиде́ть це́лый день до́ма** кунӗпе́к килте́ лар **2.** *1 и 2 л. не употр.* лар, юра́, ки́лӗш; **пла́тье на де́вушке сиди́т хорошо́** кӗпе́ хӗре́ килӗшӗ́т

си́зый (*кратк. ф.* сиз, сиза́, си́зо, си́зы) *прил.* са́ ́рӑ, кӑвак; **си́зый дым** кӑвак тӗ ́тӗм

си́ла (-ы) *сущ. жен.* вӑй, хал, хӑва́т, вӑй-хӑва́т; **си́ла мышц** мышцӑсе́н вӑ ́йӗ; **си́ла ве́тра** ҫил хӑва́чӗ; **лиши́ться сил** халта́н кай; **тво́рческие си́лы наро́да** ха́лӑхан пултару́ вӑй-хӑва́чӗ ◆ **зако́н вступи́л в си́лу** зако́н вӑя́ кӗ ́нӗ; **вооружённые си́лы страны́** ҫӗршы́вӑн хӗҫ-пӑша́ллӑ вӑйӗсе́м; **и́зо всех сил** пӗ ́тӗм вӑйра́н; **от си́лы** чи нумайи́, нума́й пулса́н; **по си́лам** вӑй ҫемми́; **че́рез си́лу** ара́н-ара́н

силко́м, си́лой *нареч.* вӑйпа́, ҫила́м, и́рӗксӗр, пусахласа́

си́льный (*кратк. ф.* силён *и* си́лен, сильна́, си́льно; *множ.* сильны́ *и* си́льны; *превосх. ст.* сильне́йший) *прил. (ант.* сла́бый), **си́льно** *нареч.* **1.** вӑ ́йлӑ, хӑва́тлӑ, вӑй-ха́ллӑ; **си́льный па́рень** вӑ ́йлӑ ка́ччӑ; **си́льная а́рмия** хӑва́тлӑ ҫар **2.** пы́сӑк, ви́рлӗ, вӑ ́йлӑ; **си́льный ве́тер** ви́чкӗн ҫил; **си́льное го́ре** пы́сӑк хӳ́йхӑ **3.** ҫи́рӗп, хаста́р, хевте́ллӗ; **си́льный хара́ктер** ҫи́рӗп кӑ ́мӑл

симфони́ческий *прил.* симфо́ни -ӗ; симфонилле́; **симфони́ческая му́зыка** симфонилле́ му́зыка; **симфони́ческий орке́стр** симфо́ни оркестрӗ

симфо́ния (-и) *сущ. жен.* симфо́ни *(оркестрпа каламалли пысӑк музыка хайлавӗ)*

си́ний (*кратк. ф.* синь, синя́, си́не, си́ни) *прил.* **1.** кӑвак; **си́ние цветы́** кӑвак чечексе́м **2.** кӑвака́рнӑ; **си́ние от хо́лода гу́бы** сивӗпе́ кӑвака́рнӑ тута́-ҫӑва́р

сини́ца (-ы) *сущ. жен.* кӑсӑ́я

сино́ним (-а) *сущ. муж. (ант.* анто́ним) сино́ним *(пӗр пек пӗлтерӗшлӗ сӑмахсенчен пӗри, сӑм.: лайӑх — аван, ҫытар — минтер)*

си́нтаксис (-а) *сущ. муж.* си́нтаксис *(грамматикăн сăмах майлашăвĕсене тата предложенисене тĕпчекен пайĕ)*

си́плый *прил.*, **си́пло** *нареч.* хăйăлти́; **си́плый го́лос** хăйăлти́ сăсă

сире́нь (-и) *сущ. жен.* сире́нь *(ырă шăршăллă чечек, унăн тĕми);* **бе́лая сире́нь** шу́рă сире́нь

сиро́п (-а) *сущ. муж.* сиро́п *(сахăрланă çырла шывĕ)*

сирота́ (-ы́) *сущ. муж. и жен.; множ.* **сиро́ты** (-о́т, -о́там) тă ́лăх; **кру́глый сирота́** хăр тă ́лăх, ăшшĕ́ămăшĕсĕр

систе́ма (-ы) *сущ. жен.* систе́ма, йĕркé *(нумай япаласен, пулăмсен çураçуллă йĕркеленнĕ пĕрлĕхĕ)*; **полити́ческая систе́ма о́бщества** о́бществăн поли́тика системи́; **привести́ зна́ния в систе́му** пĕлу́сене́ йĕркене́ кĕрт ◆ **не́рвная систе́ма** нерв тытăмĕ *(организмри мĕнпур нервсем);* **со́лнечная систе́ма** Хĕвéл системи́ *(Хĕвел тата ун тавра çаврăнса тăракан планетăсем)*

си́тец (-тца) *сущ. муж.* çи́тсă; **цвета́стый си́тец** чечéклĕ çи́тсă

си́то (-а) *сущ. сред.* ала́, вĕ ́тĕ ала́ *(çăнăх алламалли)*

си́тцевый *прил.* çи́тсă ...; çи́тсă -ĕ; **си́тцевое пла́тье** çи́тсă кĕпé

сия́ть (*наст.* сия́ю, сия́ешь, сия́ют; *повел. ф.* сия́й) *глаг. несов.* çутáл, я́лкăш, çиç, ялтăртáт; **со́лнце сия́ет на не́бе** тӳперé хĕвéл çиççé тăрáть

сказа́ть (*будущ.* скажу́, ска́жешь, ска́жут; *повел. ф.* скажи́; *прич. страд. прош.* ска́занный) *глаг. сов., что* **1.** кала́, те; каласа́ пар; **он сказа́л, что не пойдёт с на́ми** вăл пирĕнпе́ пыма́стăп тéрĕ **2. ска́жем** *вводн. сл.* тéйĕпĕр, ка́лăпăр; **ска́жем, я соглашу́сь** э́пĕ килĕшéтĕп тéйĕпĕр ◆ **сказа́ть по пра́вде** тĕрĕссипе́ каласа́н; **вернé сказа́ть** тĕрĕсрéх каласа́н; **ничегó не ска́жешь** ни́мĕн те кала́ймăн

ска́зка (-и) *сущ. жен.* юма́х; **волше́бные ска́зки** аса́млă юмахсéм; **ба́бушка расска́зывает ска́зку** асанне́ юма́х яра́ть

сказу́емое (-ого) *сущ. сред.* сказу́емăй *(предложенин аслă членĕсенчен пĕри)*

скака́лка (-и) *сущ. жен.* си́ккĕч, сикмé, скака́лка; **выполня́ть упражне́ния со скака́лкой** сикĕчпе́ хăнăхтару́ ту

скала́ (-ы́) *сущ. жен.; множ.* **ска́лы** (скал, ска́лам) чул ту, хыса́к, ча́кăл ту

скаме́йка (-и), **скамья́** (-и́) *сущ. жен.* сак, тенкéл; **садо́вые скаме́йки** садри́ саксéм

скандáл (-а) *сущ. муж.* харкашу́, хирĕçу́ ′; **поднять скандáл** харкашу́ кăлáр

ска́терть (-и) *сущ. жен.* сĕтéл çитти́ ◆ **Ска́тертью доро́га!** Тасални́ паха́!

сквéрный *прил. (син.* плохо́й), **сквéрно** *нареч.* я́пăх, усáл, начáр; **сквéрная пого́да** я́пăх çантáлăк; **ма́льчик ведёт себя́ сквéрно** ача́ хăйнé начáр тыткала́ть

сквозня́к (-а́) *сущ. муж.* ви́тĕр çил *(пĕр алăкран, кантăкран теприне сывлăш туртăнни);* **простуди́ться на сквозня́ке** ви́тĕр çилпе́ шăнса́ пă ́сăл

сквозь *что, предлог с вин. п.* ви́тĕр, хушшипе́, хушшинче́н; **проле́зть сквозь решётку** решетке́ ви́тĕр хĕсĕнкелесé тух ◆ **смея́ться сквозь слёзы** куççу́ль ви́тĕр кул; **сквозь сон** ы́йхă тĕлĕшпе́

скворе́ц (-рца́) *сущ. муж.* шă ́нкăрч

скворе́чник (-а, *произносится* шн) *сущ. муж.* шă ́нкăрч йăви́; **развéсить по дерéвьям скворе́чники** йывăççéм çинé шă ́нкăрч йăвисéм çаксá тух

ски́нуть (*будущ.* -ну, -нешь, -нут; *повел. ф.* скинь) *глаг. сов., кого-что (син.* сбро́сить) пăра́х, анта́р, илсе́ пăра́х, хывса́ пăра́х; **ски́нуть снег с кры́ши до́ма** пу́рт тăрринче́н юр анта́р; **ски́нуть оде́жду** тумтире́ хывса́ пăра́х ◆ **ски́нуть це́ну** хака́ чака́р

скирд (-а́) *сущ. муж.; множ.* **скирды́** (-о́в) *и* **скирда́** (-ы́) *жен.; множ.* **ски́рды** (скирд, -а́м) капа́н, ура́, ĕ́çкĕрт; **скирд соло́мы** у́лăм ури́

склад (-а) *сущ. муж.* склад; **продово́льственный склад** апа́т-çи́мĕç скла́чĕ

скла́дка (-и) *сущ. жен.* пĕрме́, пĕрмече́, хутла́м; **скла́дки на ю́бке** ю́бка пĕрмечи́

складно́й *прил.* хуçмалла́, хуçланака́н; **складно́й нож** хуçмалла́ çĕ́çĕ, пе́кĕ

склон (-а) *сущ. муж.* та́йлăм, та́йлăк, тăвайкки́; **на скло́не горы́** сăрт тайлăмĕнче́

склоне́ние (-я) *сущ. сред.* вĕçле́в; вĕçлени́, вĕçленни́ *(грамматикăра — ят сăмахсем падеж тăрăх улшăнни)*

склони́ть (*будущ.* -оню́, -о́нишь *и* -они́шь, -о́нят; *прич. страд. прош.* -онённый) *глаг. сов.* **1.** *что (син.* нагну́ть) тай, пĕк, чик, ус; **склони́ть го́лову** пуçа́ ус **2.** *кого (син.* уговори́ть) çăвăр, ӳкĕте́ кĕрт; **он всех склони́л на свою́ сто́рону** вăл пурне́ те хăй ма́йлă çăвăрнă

склоня́ть (*наст.* -я́ю, -я́ешь, -я́ют; *прич. страд. наст.* -я́емый) *глаг. несов., что* вĕçле́; **склоня́ть существи́тельное** япала́ ятне́ вĕçле́

ско́бка (-и) *сущ. жен.* ско́бка *(текстăн пĕр пайне уйăрса илмелли палла́);* **кру́глые ско́бки** çавра́ ско́бка; **взять в ско́бки** скобкăна́ хуп

сковорода́ (-ы́) *сущ. жен.; множ.* **ско́вороды** (сковоро́д, сковорода́м) *и* **сковоро́дка** (-и) *сущ. жен.* çатма́; **жа́рить на сковоро́дке** çатмапа́ ăшала́

скользи́ть (*наст.* -льжу́, -льзи́шь, -льзя́т; *прич. действ. наст.* -льзя́щий) *глаг. несов.* шу, шуç, шуса́ пыр; **скользи́ть по льду** пăр тă´рăх шуса́ пыр

ско́льзкий (*кратк. ф.* -зок, -зка́ *и* -зка, -зко, *множ.* -зки) *прил.* яка́, шуçла́к; **ско́льзкая доро́га** шуçла́к çул

ско́лько 1. *нареч. и союзн. сл.* мĕн чӳхлĕ; **Ско́лько э́то сто́ит?** Мĕн чӳхлĕ тăра́ть ку?; **бери́ ско́лько хо́чешь** мĕн чӳхлĕ илес тетĕн, çăвăн чӳхлĕ ил **2.** (ско́льких, ско́льким, по ско́льку, о ско́льких) *числит. неопр.-колич.* миçе́; **ско́лько раз** миçе́ хут; **По ско́льку тетра́дей на ка́ждого?** Кашнине́ миçеше́р тетра́дь тивет? ◆ **хоть ско́лько** кăшт та пули́н; **ско́лько душе́ уго́дно** ытлăçи́тлĕ, те́мĕн чухле́х

ско́лько-нибу́дь *нареч.* мĕн чӳхлĕ те пули́н; **У тебя́ есть ско́лько-нибу́дь де́нег?** Са́нăн мĕн чӳхлĕ те пули́н укçа́ пур-и?

скорлупа́ (-ы́) *сущ. жен.; множ.* **скорлу́пы** (-у́п, -у́пам) ви́тĕм, ху́пă; **скорлупа́ оре́ха** ма´йăр хуппи́

ско́рость (-и) *сущ. жен.; множ.* **ско́рости** (-е́й) ха´вартлăх; **ско́рость ве́тра** çил ха´вартлăхĕ; **увели́чить ско́рость движе́ния** кӳçăм хăвартлăхне́ ӳсте́р

ско́рый (*кратк. ф.* скор, скора́, ско́ро, *множ.* ско́ры; *сравн. ст.* скоре́е, скоре́й; *превосх. ст.* скоре́йший) **1.** (*син.* бы́стрый) ха´вăрт, васка́влă; хы́тă куçака́н; **ско́рый по́езд** ха´вăрт ҫо́езд; **ско́рая медици́нская по́мощь** васка́влă медици́на пу́лăшăвĕ **2.** (*син.* бли́зкий) çы́вăх, кĕçе́х, часа́х пула́с; **ско́ро пра́здник** часа́х уя́в çитет; **в ско́ром вре́мени** çы́вăх вăхăтра́х ◆ **на ско́рую ру́ку** алха́пăл, васкава́рлăн

скот (-а́) *сущ. муж.*, **скоти́на** (-ы) *жен.* вы́льăх, вы́льăх-чĕ́рлĕх; **кру́пный рога́тый скот** мăйракáллă шултрá вы́льăх, ĕнé вы́льăх; **помеще́ние для скоти́ны** вы́льăх вити́

скрипа́ч (-а́) *сущ. муж.*, **скрипа́чка** (-и) *жен.* сĕрмé кýпăсçă

скрипе́ть (*наст.* -плю́, -пи́шь, -пя́т; *прич. действ. наст.* -пя́щий) *глаг. несов.* чĕрикле́т, нăтăртáт, кăчăртáт; **снег скрипи́т под нога́ми** урá айĕнчé юр нăтăртатáть

скри́пка (-и) *сущ. жен.* сĕрмé кýпăс

скро́мный (*кратк. ф.* -мен, -мнá, -мно, *множ.* -мны́ *и* -мны) *прил.*, **скро́мно** *нареч.* **1.** сăпáйлă, этéплĕ, сáпăр; **скро́мно вести́ себя́** хáрпăр хăйнé этéплĕ тыткалá **2.** (*син.* небольшóй) пысăк мар, чýхă; **скро́мный за́работок** пысăк мар ĕç укçи́

скры́тый *прил.* (*син.* та́йный, неви́димый; *ант.* я́вный), **скры́то** *нареч.* вắрттăн, курăнмáн, кĕрéт мар; сисмеслé; **скры́тые возмо́жности** курăнмáн майсéм; **снима́ть скры́той телека́мерой** вắрттăн телекамерáпа ýкерсé ил

скрыть (*будущ.* скрóю, скрóешь, скрóют; *повел. ф.* скрой) *глаг. сов., кого-что* (*син.* спря́тать) пытáр, пытарсá хăвáр; пытарсá хур; **скрыть де́ньги** укçанá пытарсá хăвáр; **скрыть пра́вду** чăнниné ан калá

скры́ться (*будущ.* скрóюсь, скрóешься, скрóются; *повел. ф.* скрóйся, скрóйтесь; *прич. дейст. прош.* скры́вшийся; *деепр.* скры́вшись) *глаг. сов.* (*син.* спря́таться, исчéзнуть) тар, тарсá кай, тарсá пытáн

ску́ка (-и) *сущ. жен.* тýнсăх, салхýлăх, кичéмлĕх; **ску́ка одоле́ла** тýнсăх пýсрĕ

скула́ (-ы́) *сущ. жен.; множ.* **ску́лы** (скул, скýлам) пит шăммú; **широ́кие ску́лы** сарлакá пит шăммú

скупо́й (*кратк. ф.* скуп, скупá, скýпо, *множ.* скýпы *и* скупы́) *прил.*, **скýпо** *нареч.* (*ант.* щéдрый) хы́тă, хĕрхенекéн *(пурлăха, укçа-тенке)*

скуфья́ (-и́) *сущ. жен.; множ.* **скуфьи́** (-фéй) скуфья́ *(православи пупĕсен шĕвĕр тăрăллă хура калпакĕ)*

скуча́ть (*наст.* -áю, -áешь, -áют; *прич. действ. наст.* -áющий) *глаг. несов., о ком-чем, по кому-чему и без доп.* тунсăхлá, салхулáн, кичéм пул; **скуча́ть по друзья́м** туссéмшĕн тунсăхлá

ску́чный *прил.* (*син.* невесёлый), **ску́чно** *нареч.* тýнсăх, тýнсăхлă, салхý, салхýллă, кичéм; **ску́чный расска́з** кичéм калáв; **вре́мя прохо́дит о́чень ску́чно** вắхăт пи́тĕ салхý иртéт

сла́бость (-и) *сущ. жен.* вắйсăрлăх хáлсăрлăх, хавшáклăх

сла́бый (*кратк. ф.* слаб, слабá, слáбо, *множ.* слáбы *и* слабы́; *сравн. ст.* слабée, слабéй; *превосх. ст.* слабéйший) *прил.* (*ант.* си́льный), **сла́бо** *нареч.* **1.** вắйсăр, хáлсăр, хевтéсĕр, хавшáк; **сла́бый челове́к** хáлсăр çын **2.** тýлéк, вắйсăр; **сла́бый ветеро́к** тýлéк çил ◆ **сла́бый чай** шĕ́вĕ чей

сла́ва (-ы) *сущ. жен.* чап, мухтáв; **завоева́ть сла́ву** мухтавá тúвĕç пул

сла́вный *прил.* (*син.* замечáтельный), **сла́вно** *нареч.* чáплă, ава́н, хýхăм; **мы сла́вно отдохну́ли** эпúр пúтĕ хýхăм кáнтăмăр

славяни́н (-а) *сущ. муж.*, **славя́нка** (-и) *жен.* славя́н; *множ.* **славя́не** славянсéм *(вырáссемпе хурăнташлă халăхсен йышĕ)*

славя́нский *прил.* славя́н -ĕ; **славя́нские языки́** славя́н чĕлхисéм

слага́емое (-ого) *сущ. сред.* хушăнаканнú *(пĕр-пĕрин çумне хушакан хисепсенчен пĕри)*

сла́дкий (*кратк. ф.* -док, -дкá, -дко, *множ.* -дки; *сравн. ст.* слáще; *превосх. ст.* сладчáйший) *прил.*, **сла́дко** *нареч.* **1.** пылáк; **сла́дкий, как**

мёд пыл пек пылáк **2.** кáнлĕ, рехéтлĕ; **слáдкая жизнь** кáнлĕ пýрнăç **3. слáдкое** (-ого) *сущ. сред.* пылáк апáт *(пĕрремĕшпе иккĕмĕш апат хыççăн параканни)*

слéва *нареч.* сулахайрáн, сулахайрá; **слéва от дорóги** çултáн сулахайрá

след (следá *и* слéда, слéдом, в слéде *и* на следý) *сущ. муж.* **1.** йĕр; **следы́ ног** урá йĕрĕсéм; **следы́ вóлка на снегý** юр çинчí кáшкăр йĕрĕсéм **2.** пáлла, йĕр; **следы́ болéзни на лицé** сăн-питрú чир паллисéм ◆ **и след просты́л** йĕ́рĕ те юлмáн *(тарнă)*

следи́ть (*наст.* слежý, следи́шь, следя́т) *глаг. несов., за кем-чем (син.* наблюдáть) асăрхá, сăнá, асăрхасá тăр; **следи́ть за полётом самолёта** самолёт вĕçнинé сăнá; **следи́ть за чистотóй в дóме** пýрт-çуртрú тасалăхá асăрхá

слéдователь (-я) *сущ. муж.* слéдователь *(следстви тăвакан юрист)*

слéдом *нареч.* хыççăн, хыçĕнчéн; **идти́ слéдом** хыççăн пыр

слéдствие (-я) *сущ. сред.* слéдстви *(суд умĕн айăплă ĕç тупсăмне тĕпчесе пĕлни);* **проводи́ть слéдствие** слéдстви ту

слéдующий *прил.* тепри́, тéпĕр; **на слéдующий день** тéпĕр кунхинé

слезá (-ы́) *сущ. жен.; множ.* **слёзы** (слёз, слезáм) куççýль; **слёзы бегýт из глаз** куçрáн куççýль юхáть

слезть (*будущ.* -зу, -зешь, -зут; *повел. ф.* слезь; *прич. действ. прош.* -зший; *деепр.* -зши) *глаг. сов.* **1.** *с кого-чего (ант.* залéзть, взобрáться) ан; **слезть с крыши дóма** пýрт тăрринчéн ан **2.** *1 и 2 л. не употр.* (*син.* отпáсть) сĕ́вĕн, вистéн, хắйпăн; **крáска со стен слéзла** стенá сăрри хăйпăнá-хăйпăнá ӳ́кнĕ

слепéнь (-пня́) *сущ. муж.* пăвáн; **слéпни в жарý донимáют скот** шăрăхрá пăвансéм выльăхá аптратáççĕ

слепóй (*кратк. ф.* слеп, слепá, слéпо, *множ.* слéпы; *сравн. и превосх. ст. не употр.) прил.,* **слéпо** *нареч.* **1.** (*ант.* зрячий) сýккăр, кýççăр; **слепóй стари́к** сýккăр стари́к **2.** (*син.* безрассýдный) ắссăр, ăссăрлá; **слéпо вéрить** ăссăрлá ĕненсé тăр

слéсарь (-я) *сущ. муж.; множ.* **слéсари** (-ей) *и* **слесаря́** (-éй) слéсарь *(тимĕр хатĕрсене тăвакан е юсакан рабочи);* **слéсарь-ремóнтник** юсáвçă слéсарь

слёт (-а) *сущ. муж.* слёт, пухý; **слёт тури́стов** туристсéн пýхăвĕ

сли́ва (-ы) *сущ. жен.* сли́ва *(çимĕç тата унăн йывăççи);* **компóт из сли́вы** сли́ва компóчĕ

сли́вки (-вок, -вкам) *сущ. множ.* тýтлă хăймá *(сĕт йӳçĕхиччен пухса илни)*

сли́вочный *прил.:* **сли́вочное мáсло** услáм çу

сли́тный *прил. (ант.* раздéльный), **сли́тно** *нареч.* пĕ́рлĕхлĕ; пĕрлé; **сли́тное написáние слóжных слов** хýтлă сăмахсенé пĕрлé çырни́

сли́шком *нареч.* ытлá, ытлашши́; ытлá та; **э́то сли́шком дóрого** ку ытлá та хáклă

словáрь (-я́) *сущ. муж.* **1.** словáрь; **толкóвый словáрь** ăнлантарýллă словáрь; **рýсско-чувáшский словáрь** вырăслá-чăвашлă словáрь **2.** сăмáхлăх, сăмáх йышшĕ; **словáрь языкá Пýшкина** Пýшкин чĕлхи́н сăмáхлăхĕ

слóвно *союз, выражает сравнение (син.* как, бýдто) пек, ĕвĕрлĕ, хăéх; **поёт слóвно соловéй** шắпчăк пек юрлáть

слóво (-а) *сущ. сред.; множ.* **словá** (слов, словáм) **1.** сăмáх *(чĕлхен тĕп единици);* **произвóдное слóво** иккĕмĕшлé сăмáх; **значéние слóва** сăмáх пĕлтéрĕшĕ; **заи́мствовать словá**

сăмахсéм йы́шăн *(урăх чĕлхесенчен)* **2.** (*син.* выступлéние) сăмáх, тухсá калáни́; **взять слóво на собрáнии** пухурá сăмáх ил ◆ **поня́ть без слов** сăмахсăрáх ăнлáн; **свобóда слóва** сăмáх йрĕклĕхĕ; **дать слóво** сăмáх пар, тумá пул; **сказáть к слóву** сăмáх май калá; **одни́м слóвом** *вводн. сл.* пĕр сăмахпá каласáн

словосочета́ние (-я) *сущ. сред.* сăмáх майлáшăвĕ; **свобóдные словосочета́ния** и́рĕклĕ сăмáх майлашăвĕсéм; **фразеологи́ческие словосочета́ния** фразеолóги сăмáх майлашăвĕсéм

слог (-а) *сущ. муж.* сы́пăк; **деле́ние слов на слóги** сăмахсéм сыпăксенé пайланни́

сложе́ние (-я) *сущ. сред.* хушý, хýшăм; хушни́; **зада́ча на сложе́ние** хушмалли́ задáча

сложи́ть (*будущ.* сложý, слóжишь, слóжат; *прич. страд. прош.* слóженный) *глаг. сов., что* **1.** купалá, хыв, хур, купаласá хур; **сложи́ть дровá в штáбель** вуттá шаршанá хыв **2.** (*ант.* вы́честь) хуш, хýшăм ту; **сложи́ть три числá** ви́çĕ хисепé хуш **3.** хутлáт, хуçлáт; **сложи́ть нож** çĕççé хуçлáт **4.** (*син.* сочини́ть) хыв, хур, хайлá; **сложи́ть пе́сню** юрă хыв ◆ **сложи́ть ору́жие** пáрăн; **сиде́ть сложá ру́ки** ĕçлемéсĕр лар; **сложи́ть го́лову** пуçá хур *(çапăçура вилни çинчен)*

сложноподчинённый *прил.*: **сложноподчинённое предложе́ние** пăхăну́ллă хýтлă предложéни

сложносочинённый *прил.*: **сложносочинённое предложе́ние** сыпăну́ллă хýтлă предложéни

сло́жный *(кратк. ф.* -жен, -жнá, -жно, *множ.* -жны́ *и* -жны; *сравн. ст.* сложне́е, сложне́й; *превосх. ст.* сложне́йший) *прил. (ант.* просто́й), **сло́жно** *нареч.* кă´ткăс, чăкрáш; йы́вăр; **сло́жная зада́ча** йы́вăр задáча; **сло́жное положе́ние** кă´ткăс ларýтăрý ◆ **сло́жное предложе́ние** хýтлă предложéни

слой (-я) *сущ. муж.; множ.* **слои́** (-ёв) **1.** си, хут; **слои́ по́чвы** тăпрá сийĕсéм **2.** (*син.* грýппа) ýшкăн, йыш; **ра́зные слои́ населе́ния** хáлăхăн тĕ´рлĕ ушкăнĕсéм

слома́ть (*будущ.* -áю, -áешь -áют; *прич. страд. прош.* слóманный) *глаг. сов., что* **1.** хуç, хуççá пăрáх; **слома́ть ве́тку** туратá хуç **2.** (*син.* испóртить) пăс, ват, çĕ´мĕр, ватсá пăрáх; **кто́-то слома́л мой велосипе́д** такáм ман велосипедá ватсá пăрáхнă

слома́ться *1 и 2 л . не употр. (будущ.* -áется, -áются; *прич. действ. прош.* -ávшийся; *деепр.* -ávшись) *глаг. сов.* **1.** хýçăл, хуçăлсá кай; **доска́ слома́лась** хăмá хýçăлнă **2.** (*син.* испóртиться) пă´сăл, ван, çĕ´мĕрĕл; **часы́ слома́лись** сехéт вáннă

слон (-á) *сущ. муж.* **1.** слон; **африка́нский слон** А´фрика слóнĕ; **би́вни слона́** слон асавĕсéм **2.** слон *(шахматри кĕлетке);* **ходи́ть слоно́м** слонпá çýрé

служи́ть (*наст.* служý, слýжишь, слýжат; *прич. действ. наст.* слýжащий, *прош.* служи́вший; *деепр.* служá) *глаг. несов.* **1.** (*син.* рабóтать) ĕçлé, службăрá тăр; **служи́ть в ба́нке** банкрá ĕçлé **2.** (*син.* явля́ться) пул, шутлáн; **он всем слýжит приме́ром** вăл пури́ншĕн те ы́рă тĕ´слĕх пулсá тăрáть

слух (-а) *сущ. муж.* **1.** илтý´; илтни́; **бóстрый слух** çи́вĕч хăлхá; **ýхо — óрган слýха** хăлхá — илтý´ óрганĕ **2.** (*син.* изве́стие) хыпáр, сас-хурá, хыпáр-хăнáр; **не вся́кому слýху мóжно ве́рить** пур сас-хуранá та ĕненмé çук ◆ **на слух** хăлхапá итлесé; **музыка́льный слух** мýзыка тýйăмĕ; **обрати́ться в слух** хăлханá тăратсá итлé; **ни слýху ни дýху** нимлé хыпáр та çук *(кам та пулин çинчен)*

слу́чай (-я) *сущ. муж.* ĕç, тĕ́слĕх, пу́лăм, пулса́ иртни́; **несча́стный слу́чай** инке́к; **удиви́тельный слу́чай** тĕлĕнмелле́ ĕç ◆ **в тако́м слу́чае** апла́ пулса́н; **в любо́м слу́чае** кире́к мĕнле́ пулса́н та; **на вся́кий слу́чай** сых ятне́; **ни в ко́ем слу́чае** нимле́ пулса́н та; **в кра́йнем слу́чае** пите́х ки́рлĕ пулса́н

случа́йный *прил.*, **случа́йно** *нареч.* **1.** (*син.* непредви́денный) ắнсăрт, кĕтме́н; ăнсăртра́н; **случа́йная оши́бка** ăнсăртра́н ту́нă йắнăш; **встре́титься случа́йно** кĕтме́н çĕрте́н тĕл пул **2.** сайра́, ắнсăрт; хутра́н-ситре́н; **жить на случа́йные за́работки** хутра́н-ситре́н ĕçлесе́ тупни-пе́ пу́рăн ◆ **не случа́йно** ахальте́н мар

случи́ться *1 и 2 л. не употр. (будущ.* -и́тся, -а́тся; *прич. действ. прош.* -и́вшийся; *деепр.* -и́вшись) *глаг. сов.* **1.** (*син.* произойти́) пул, пулса́ ирт; **Что с ним случи́лось?** Мĕн пу́лнă ăна́? **2.** *безл., с неопр. ф.* (*син.* прийти́сь) тӳ́р кил, тив, пулса́ тух; -малла (-мелле) пул; **одна́жды нам случи́лось ночева́ть в лесу́** пĕррехинче́ пи́рĕн вăрманта́ çĕр каçмалла́ пу́лчĕ

слу́шать (*наст.* -аю, -аешь, -ают) *глаг. несов., кого-что* **1.** итле́, тăнла́; **слу́шать му́зыку** му́зыка итле́; **внима́тельно слу́шать учи́теля** вĕрентекéн каланине́ тăнла́ **2.** итлесе́ вĕре́н, итле́ *(вĕренме);* **он слу́шал изве́стных профессоро́в** вăл па́ллă профессорсене́ итлесе́ вĕре́ннĕ **3.** итле́, шута́ ил, шута́ хур; **Не слу́шайте его!** Ан и́тлĕр ăна́! ◆ **слу́шай, слу́шайте** *вводн. сл.* итле́-ха, и́тлĕр-ха

слу́шаться (*наст.* -аюсь, -аешься, -аются; *повел. ф.* -айся, -айтесь; *прич. действ. наст.* -ающийся, *прош.* -авшийся; *деепр.* -аясь) *глаг. несов., кого* итле́, пắхăн; **де́ти должны́ слу́шаться роди́телей** ача́-пăча́н а́шшĕ-ама́шне итле́с пула́ть

слы́шать (*наст.* -шу, -шишь, -шат; *прич. страд. наст.* -шимый, *прош.* -шанный; *деепр.* -ша) *глаг. несов.* **1.** *кого-что* илт; **я ничего́ не слы́шу** э́пĕ ни́мĕн те илтме́стĕп **2.** *о ком-чем и с союзом «что»* илт, хыпа́р ил, пĕл; **мы слы́шали об э́том арти́сте** эпи́р ку арти́ст çинче́н и́лтнĕ ◆ **слы́шишь, слы́шите** *вводн. сл.* илте́тĕн-и, илте́тĕр-и

смека́лка (-и) *сущ. жен. (син.* сообрази́тельность) тавçăру́, ăнкару́; тавçăру́лăх, ăнкару́лăх; **прояви́ть смека́лку** тавçăру́ллă пул

сме́лость (-и) *сущ. жен. (син.* отва́га, хра́брость; *ант.* тру́сость) хăю́, хăюлăх, ха́рсăрлăх, хаста́рлăх; **не хвати́ло сме́лости** хăю́ ситме́рĕ

сме́лый *прил. (син.* отва́жный, хра́брый; *ант.* трусли́вый), **сме́ло** *нареч.* хăюллă, ха́рсăр, хаста́р; **сме́лый во́ин** ха́рсăр салта́к; **сме́ло шага́ть вперёд** малалла́ хăюллăн ут

сме́на (-ы) *сущ. жен.* **1.** улăшу́, ылмашу́; улăшни́, ылмашни́; **сме́на карау́ла** хура́л улăшни́ **2.** сме́на *(ĕç вăхăчĕ; çав вăхăтра ĕçлекен йыш);* **заво́д рабо́тает в две сме́ны** завóд и́кĕ сменăпа́ ĕçле́т ◆ **сме́на белья́** пĕрре́ тăхăнма́лăх кĕпе́-йĕм

смени́ть (*будущ.* сменю́, сме́нишь, сме́нят; *прич. страд. прош.* сменённый) *глаг. сов.* **1.** *что* ылмашта́р, улăшта́р; **смени́ть бельё** кĕпе́йĕм улăшта́р **2.** *кого* вырăнне́ пыр, вырăнне́ тăр; **Ивано́ва в карау́ле сме́нит Серге́ев** Ивано́в вырăнне́ хурала́ Серге́ев тăра́ть **3.** *кого-что* хыççăн пыр, хыççăн пул; **жару́ смени́ла прохла́да** çанта́лăк шắрăх тắнă хыççăн сулхăнла́трĕ

смерте́льный *прил.*, **смерте́льно** *нареч.* **1.** ви́лĕм -ĕ; вилĕмле́, вилмелле́; **бое́ц смерте́льно ра́нен** салта́к вил-

мелле́х ама́ннă **2.** хая́р, хăру́шă; **смерте́льная не́нависть** чĕрере́н курайманни́ **3.** (*син.* чрезвыча́йный) ва́ ́йлă; чăтма́ çук, çав тери́; **я смерте́льно уста́л** э́пĕ çав тери́ ы́вăнтăм

смерть (-и) *сущ. жен.; множ.* **сме́рти** (-е́й) ви́лĕм; вилни́; **скоропости́жная смерть** са́рăмсăр ви́лĕм; **он поги́б сме́ртью геро́я** вăл паттăрсе́н вилĕмĕпе́ ви́лнĕ ◆ **смерть как уста́л** вилесле́ ы́вăннă

смесь (-и) *сущ. жен; множ.* **сме́си** (-е́й) ху́тăш; и́рĕлчĕк; **горю́чая смесь** çунака́н и́рĕлчĕк

смета́на (-ы) *сущ. жен.* хăймá *(йӳçĕхни);* **запра́вить сала́т смета́ной** салата́ хăймапа́ юр

сметь (*наст.* сме́ю, сме́ешь, сме́ют; *повел. ф.* смей) *глаг. несов.* хăй, хăю́ çите́р; **не сме́ю его́ беспоко́ить** ăна́ чăрмантарма́ хăйма́стăп

смех (-а) *сущ. муж.* ку́лă, ку́лăш; кулни́; **весёлый смех** хава́слă ку́лă ◆ **и смех и грех** кулмалла́ та, пăшăрханмалла́ та; **подня́ть на́ смех** ку́лăш ту; **ку́рам на́ смех** çын куллú

сме́шанный *прил.*, **сме́шанно** *нареч.* ху́тăш, хутăшта́рнă; **сме́шанный лес** ху́тăш вăрма́н

смеши́ть (*наст.* -шу́, -ши́шь, -ша́т; *прич. действ. наст.* -ша́щий, *прош.* -ши́вший; *деепр.* -ша́) *глаг. несов., кого* култа́р; **он нас всегда́ смеши́т** вăл пире́ яла́н култара́ть

смешно́й *прил.*, **смешно́** *нареч.* кулăшла́, кулмалла́; **смешно́й расска́з** кулăшла́ кала́в; **тут нет ничего́ смешно́го** кунта́ ним кулмалли́ те çук

смея́ться (*наст.* смею́сь, смеёшься, смеются; *повел. ф.* сме́йся, сме́йтесь; *прич. действ. наст.* смеющийся, *прош.* смеявшийся; *деепр.* смеясь) *глаг. несов.* **1.** *(ант.* пла́кать) кул, ахăлта́т; **гро́мко смея́ться** ахăлтатса́ кул **2.** *над кем-чем (син.* издева́ться) кул, тăрăхла́, мăшкăлла́

сми́рный (*кратк. ф.* -рен, -рна́, -рно, *множ.* -рны *и* -рны́; *сравн. ст.* -рне́е, -рне́й; *превосх. ст.* -рне́йший) *прил.*, **сми́рно** *нареч.* йăва́ш, ку́нĕ, лă ́пкă, тӳле́к, са́пăр; **сми́рный хара́ктер** йăва́ш кă ́мăл; **Сми́рно!** Тăп тă ́рăр! *(стройри салтаксене хушни)*

смола́ (-ы́) *сущ. жен. ; множ.* **смо́лы** (смол, смо́лам) су́хăр; сăмала́; **ело́вая смола́** чă ́рăш су́хăрĕ; **присти́л, как смола́** су́хăр пек çыпçăнчĕ

смороди́на (-ы) *сущ. жен.* хурлăха́н; **чёрная смороди́на** хура́ хурлăха́н; **куст смороди́ны** хурлăха́н тĕ ́мĕ

смо́рчок (-чка́) *сущ. муж.* ака́ кăмпи́, кăтра́ кăмпа́ *(çуркунне тухаканни)*

смотре́ть (*наст.* смотрю́, смо́тришь, смо́трят) **1.** *на кого-что и во что (син.* гляде́ть) пăх, тинке́р, кур; **смотре́ть в бино́кль** бинокольпе́ пăх; **смотре́ть вперёд** малалла́ тинке́р **2.** *кого-что (син.* ви́деть) кур, палла́ш; пăхса́ тух; **смотре́ть кинофи́льм** кинофи́льм кур **3.** (*син.* обсле́довать) *кого-что* пăх, тишке́р; **врач смо́трит больны́х** ту́хтăр чи́рлĕ çынсене́ пăха́ть **4.** *за кем-чем (син.* уха́живать) пăх, асту́, асăрха́; **смотре́ть за ребёнком** ача́ пăх **5.** *на кого-что (син.* оце́нивать) пăх, хакла́, шутла́; **Как ты на э́то смо́тришь?** Мĕн шутла́тăн э́сĕ кун пирки́? ◆ **смотри́!, смотри́те!** *в знач. частицы* асту́!, астă ́вăр! *(асăрхаттарса калани)*; **смотре́ть не́ на что** пăхма́лăх та çук; **смотре́ть в о́ба** сы́хă пул; **смотре́ть сквозь па́льцы** кӳрмăш пул

сму́глый (*кратк. ф.* смугл, смугла́, сму́гло, *множ.* смуглы́ *и* сму́глы) *прил. (син.* тёмный) кĕре́, тĕ ́ттĕм, хă ́мăр, хурара́х; **сму́глое те́ло** кĕре́ ӳт

смути́ть (*будущ.* смущу́, смути́шь, смутя́т; *прич. страд. прош.* сму-

щённый) имéнтер, вăтантáр; **смутúть прúстальным взглядом** тинкерсé пăхнипé имéнтер

смутúться (*будущ.* смущýсь, смутúшься, смутя́тся; *прич. действ. прош.* смутúвшийся; *деепр.* смутúвшись) имéн, вăтáн; именсé кай, вăтансá кай, лáйăх марлáн

смущённый (*кратк. ф.* -щён, -щенá, -щенó, *множ.* -щены́) *прил.*, **смущённо** *нареч.* вăтáнчăк, вăтáнчăклă, имéнчёк, имéнчёклĕ; **смущённо улыбáться** имéнчёклĕн кулкалá

смысл (-а) *сущ. муж.* **1.** (*син.* значéние) пĕлтéрĕш; **передáть смысл прочúтанного** вуланúн пĕлтерĕшнé уççá пар **2.** (*син.* цель) тĕллéв, тýпсăм; **смысл жúзни** пýрнăç тýпсăмĕ ◆ **здрáвый смысл** чипéр ăс-тắн; **нет смы́сла** уссú çук, кăлăхăх

снарýжи *нареч.* (*ант.* изнутрú) тултáн; **запереть дверь снарýжи** алăкá тултáн питĕрсé хур

снаря́д (-а) *сущ. муж.* **1.** снаря́д *(тупăран пемелли);* **оскóлки снаря́да** снаря́д ванчăкĕсéм; **снаря́ды рвýтся с грóхотом** снарядсéм шартлатсá çурăлáççĕ **2.** снаря́д *(гимнастика тумалли хатĕр)*

снача́ла *нареч.* **1.** (*син.* прéжде) малтáн, пирвáй; **снача́ла поду́май, пото́м отвеча́й** малтáн шухăшлá, унтáн варá хуравлá **2.** (*син.* снóва, опя́ть) çĕнĕрéн, каллéх, татáх, тéпĕр хут; **всё придётся нача́ть снача́ла** пĕтĕмпéх çĕнĕрéн пуçламá тивéт

снег (-а) *сущ. муж.; множ.* **снега́** (-óв) юр; **снег идёт** юр çăвáть; **мóкрый снег** йĕпé юр, юпăнчă

снегúрь (-я́) *сущ. муж.* ýйăп *(хĕрлĕ пĕсехеллĕ кайăк)*

снегопáд (-а) *сущ. муж.* тăмáн, юр çуни́; **зáвтра ожидáется сúльный снегопáд** ырáн тăмáн хыттá çумаллá

снежúнка (-и) *сущ. жен.* юр пĕрчú

снéжный *прил.* юр -ĕ; юрлă; **снéжный покрóв** юр вúтĕмĕ *(çĕр çинчи);* **снéжная зимá** юрлă хĕл

сни́зу *нареч. (ант.* свéрху) аялтáн, анатрáн, аял енчéн; **смотре́ть сни́зу вверх** аялтáн çýлелле пăх

сни́мок (-мка) *сущ. муж.* ýкéрчĕк, фотоýкéрчĕк; **цветно́й сни́мок** тĕ́слĕ фотоýкéрчĕк

сни́ться (*наст.* снюсь, сни́шься, сня́тся; *повел. ф.* снись, сни́тесь; *прич. действ. наст.* ня́щийся, *прош.* сни́вшийся; *деепр.* снясь) *глаг. несов.* тĕллéн, тĕлĕкрé кýрăн; **всё врéмя сни́тся оди́н и тот же сон** пĕрмáй пĕр тĕ́лĕк тĕлленéт

сно́ва *нареч.* (*син.* опя́ть) çĕнĕрéн, каллéх, татáх, тéпĕр хут; **мы сно́ва вме́сте** эпúр каллéх пĕрлé

сноп (-а́) *сущ. муж.* кĕлтé; **сноп ржи** ыра́ш кĕлти́; **вяза́ть снопы́** кĕлтé çых

снохá (-и́) *сущ. жен.; множ.* **сно́хи** (снох, сно́хам) кин; **мла́дшая снохá** кĕ́çĕн кин

сныть (-и) *сущ. жен.* сертé; **щи из сны́ти** сертé яшкú

снять (*будущ.* снимý, сни́мешь, сни́мут; *прош.* снял, сняла́, ня́ло, *множ.* ня́ли; *повел. ф.* сними́; *прич. действ. прош.* ня́вший; *прич. страд. прош.* ня́тый; *деепр.* няв) *глаг. сов.* **1.** *что (син.* убрáть) ил, хыв; сýй, хắпăт; **снять кры́шку с котла́** хуран виттинé ил; **снять кору́ с ли́пы** çăкá хуппинé сýй **2.** *что (ант.* надéть) хыв, салáн, салт; **снять шу́бу** кĕрĕкé хыв **3.** *кого (син.* увóлить) хăтáр, кăлáр, кăларсá яр; **снять с рабóты** ĕçрéн хăтáр **4.** *что* ту, ýкéр, хатĕрлé; **снять план ме́стности** вы́рăн планнé хатĕрлé; **снять фотоаппара́том** фотоаппаратпá ýкéр **5.** *что (син.* арендовáть) тарá ил; **снять помеще́ние под склад** склад çýрчĕ тарá ил **6.** *кого-что* сир, ил; **снять охра́ну** хуралá ил; **снять противоре́чие** хирĕçлĕхé сир ◆ **снять вы́говор** выговорá пăра-

хăçлá; **снять урожáй** тыр-пулá пухсá кĕрт; **снять кóпию** кóпи ту

собáка (-и) *сущ. жен.* йы́тă; **охóтничья собáка** сунáр йыттú; **посадúть собáку на цепь** йыттá касмăкá ларт ◆ **как собáка устáл** йы́тă пек ы́вăннă; **он в э́том дéле собáку съел** вăл ку ĕçé пúтĕ ăстá пĕлéт; **вот где собáка зары́та** ákă мĕнрé ыйтý тýпсăмĕ

собáчий *прил.* йы́тă -ĕ; **собáчий ошéйник** йы́тă мă´йкăчĕ

собирáтельный *прил. (син.* обобщённый), **собирáтельно** *нареч.* пĕтĕмлетý´ллĕ; **собирáтельный óбраз** пĕтĕмлетý´ллĕ сăнáр; **говорúть собирáтельно** пĕтĕмлетсé калá ◆ **собирáтельные имена́ существúтельные** пĕтĕмлетý´ллĕ япалá ячĕсéм *(сăм., вырăсла: беднота, молодежь, листва)*

собкóр (-а) *сущ. муж. (сокр.:* собственный корреспондéнт) собкóр, хáмăр кор.; **собкóр газéты** хаçáт собкóрĕ

соблюдáть (*наст.* -áю, -áешь, -áют) *глаг. несов., что* уя́, пă´хăн, пурнăçлá, тыт; **соблюдáть дисциплúну** дисциплинăнá пă´хăн; **соблюдáть пост** тúпĕ тыт *(тĕн йĕркипе)*

сóболь (-я) *сущ. муж.; множ.* **сóболи** (-ей) *и* **соболя́** (-éй) кăш *(паха тирлĕ чĕр чун)*

собóр (-а) *сущ. муж.* собóр *(хулари тĕп чиркý)*

собрáние (-я) *сущ. сред.* **1.** пухý; **собрáние акционéров** ákци тытакансéн пýхăвĕ **2.** пýхă; **собрáние картúн** ýкерчĕксéн пуххúи; **пóлное собрáние сочинéний** çырнисéн туллú пуххúи ◆ **законодáтельное собрáние** закóн кăлараканá пухý *(парламент)*

собрáть (*будущ.* соберý, соберёшь, соберýт; *прош.* -ál, -алá, -álo, *множ.* -áли; *повел. ф.* собери́; *прич. страд. прош.* собранный) *глаг. сов.* **1.** *кого* пух, пуçтáр, пĕрлештéр; **собрáть сельчáн на пóмочь** ял çыннисенé нименé пух **2.** *что* пуçтáр, каплантáр, туя́н; **собрáть коллéкцию монéт** вак укçá коллéкцийĕ пуçтáр **3.** *что* пухсá кĕрт, тат, кăлáр; **собрáть вúшню** чиé çырлú тат **4.** *что (син.* приготóвить) хатĕрлé; **собрáть вéщи в дорóгу** çулá тухмá кирлиné хатĕрлé; **собрáть поéсть** апáт хатĕрлé **5.** *что (ант.* разобрáть) пух, пуçтáр, пухсá хатĕрлé; **разобрáть и собрáть ружьё** пăшалá сýтсé пуçтáр

собрáться (*будущ.* соберýсь, соберёшься, соберýтся; *прош.* -álся, -álась *и* -алáсь, -álось *и* -алóсь, *множ.* -алúсь и -álись; *повел. ф.* соберúсь, соберúтесь; *прич. действ. прош.* -áвшийся; *деепр.* -áвшись) *глаг. сов.* **1.** (*ант.* разойтúсь) пýхăн, пуçтáрăн, пĕрлéш; **собрáлúсь все члéны кружкá** кружокрá тăракансéм пýрте пуçтáрăннă **2.** *1 и 2 л. не употр.* пýхăн, капланá; **у менá собралóсь мнóго книг** мáнăн кĕнекéнумáй пýхăнчĕ **3.** (*син.* приготóвиться) хатĕрлéн, шут тыт, тĕллéв тыт; **собрáться в гóсти** хăнанá каймá хатĕрлéн; **мы собрáлись поéсть** эпúр апáт çимé шут тытрăмăр ◆ **собрáвшись с сúлами** пĕ´тĕм вăй-халá пухсá; **собрáться с дýхом** хăю́ çитéр; **собрáлся дождь** çýмăр килéт

сóбственность (-и) *сущ. жен.* хáрпăрлăх, пýрлăх; **государ́ственная сóбственность** патшáлăх хáрпăрлăхĕ; **ча́стная сóбственность** ýйрăм хáрпăрлăх, пáйăр хáрпăрлăх; **коллекти́вная сóбственность** ýшкăнлă хáрпăрлăх; **прáво сóбственности на зéмлю** çĕр хáрпăрлăхĕн правú; **получúть в сóбственность** харпăрлăхá ил

сóбственный *прил.* **1.** хă´йĕн (хáмăн, хă´вăн); хáрпăр -ĕ, хáрпăр хă´йĕн; **сóбственный дом** хáрпăр çýрчĕ; **я вúдел сóбственными глазáми** э́пĕ хам куçпá кýртăм; **увóлить-**

ся с рабо́ты по со́бственному жела́нию ха́рпăр кăмăлĕпе́ ĕçре́н тух **2. со́бственно** *или* **со́бственно говоря́** *вводн. сл.* тĕрĕссипе́ каласа́н ◆ **со́бственные имена́** па́йăр ятсе́м *(чĕлхе пĕлĕвĕнче — çын, выра́н т. ыт. ячĕсем, сăм.: Николай, Мускав, Çавал)*

сова́ (-ы́) *сущ. жен.; множ.* **со́вы** (сов, со́вам) тăмана́; **сова́ — ночно́й хи́щник** тăмана́ — çĕрлехи́ çа́ткăн ка́йăк

совершеннолéтний *прил.* çи́тĕннĕ, çитĕнсе́ çи́тнĕ, ар çулне́ çи́тнĕ *(18 çула)*; **совершеннолéтняя дéвушка** çи́тĕннĕ хĕр

соверши́ть (*будущ.* -шу́, -ши́шь, -ша́т; *прич. страд. прош.* -шённый) *глаг. сов.* ту, пурнăçла́; **соверши́ть по́двиг** па́ттăр ĕç ту; **соверши́ть комме́рческую сде́лку** суту́-илу́ ки́лĕшĕвĕ ту

со́весть (-и) *сущ. жен.* на́мăс, со́весть; чун; **с чи́стой со́вестью** таса́ чунпа́; **он потеря́л со́весть** вăл намăсă çуха́тнă ◆ **сде́лано на со́весть** пи́тĕ тĕ́плĕ ту́нă; **по со́вести говоря́** *вводн. сл.* чăннипе́ каласа́н; **для очи́стки со́вести** ӳ́кĕнмелле́ пуласра́н

сове́т (-а) *сущ. муж.* **1.** (*син.* рекоменда́ция) кана́ш, сĕнӳ́, су́нăм; **дать сове́т** кана́ш пар **2.** кана́ш *(суйлавла́ орган)*; **Госуда́рственный Сове́т Чува́шской Респу́блики** Чăва́ш Республики́н Патша́лăх Кана́шĕ **3.** сове́т *(1917 çул хыççăн пирĕн çĕршывра çирĕпленнĕ, халĕ пăрахăçланнă тытăм органĕсен ячĕ)*; **райо́нный Сове́т** райо́н Сове́чĕ

сове́товать (*наст.* -тую, -туешь, -туют; *повел. ф.* -туй; *деепр.* -туя) *глаг. несов., кому что или с неопр. ф.* кана́ш пар, сĕн; **сове́тую тебе́ бо́льше чита́ть** сана́ ытлара́х вулама́ сĕне́тĕп

сове́товаться (*наст.* -туюсь, -туешься, -туются; *повел. ф.* -туйся, -туйтесь; *прич. действ. наст.* -тующийся, *прош.* -товавшийся; *деепр.* -туясь) *глаг. несов., с кем* канашла́, кана́ш ту; **сове́товаться с друзья́ми** туссемпе́ кана́ш ту

сове́тский *прил.* сове́т-ĕ; **сове́тский строй** сове́т йĕрки́; **Сове́тский Сою́з** Сове́т Сою́зĕ *(историре пулнă çĕршыв ячĕ)*

совеща́ние (-я) *сущ. сред.* канашлу́; **дире́ктор провёл совеща́ние** дире́ктор канашлу́ ирттéрчĕ

совме́стный *прил. (син. о́бщий)*, **совме́стно** *нареч.* пĕрлехи́, пĕрле́; **рабо́тать совме́стно** пĕрле́ ĕçле́; **совме́стное предприя́тие** пĕрлехи́ предприя́ти (*икĕ çĕршыв е фирма йĕркелени)*

совреме́нный *прил.*, **совреме́нно** *нареч.* **1.** (*син.* тепе́решний) хальхи́, пи́рĕн вăхăтри́; **совреме́нная эпо́ха** хальхи́ самана́ **2.** (*ант.* отста́лый) çĕ́нĕ, хальхи́, малта́ пырака́н; **совреме́нные техноло́гии** малта́ пырака́н технологисе́м

чёрный (*кратк. ф.* чёрен, черна́, черно́ *и* чёрно, *множ.* черны́ *и* чёрны; *сравн. ст.* чернée; *превосх.ст.* черне́йший) *прил.* **1.** (*ант.* бе́лый) хура́; **чёрный хлеб** хура́ çа́кăр; **чёрное от загара́ те́ло** хĕвелпе́ пи́çнĕ кĕре́ ӳт **3.** (*син.* мра́чный, го́рестный, безотра́дный) ху́йхăллă, йы́вăр; **чёрные дни** йы́вăр кунсе́м; **чёрные мы́сли** ху́йхăллă шухăшсе́м ◆ **чёрная ба́ня** хура́ мунча́ (*мăрьесĕрри*); **сде́лать чёрное де́ло** тискéр ĕç ту; **чёрный ход** хыçалти́ а́лăк (*çуртăн*); **чёрная рабо́та** хура́ ĕç, вăй-ха́л ĕ́çĕ; **чёрная неблагода́рность** пархата́рсăр пулни́, ырра́ хакламанни́; **держа́ть на чёрный день** сых ятне́ тыт *(сăм., укçа)*

чёрствый *(кратк. ф.* чёрств, черства́, чёрство, *множ.* черствы́ *и* чёрствы) *прил.* **1.** (*син.* сухо́й, твёрдый; *ант.* све́жий) ти́пĕ, хы́тă, типсе́ хы́тнă; **чёрствый хлеб** ти́пĕ çа́кăр **2.** (*син.* бездýшный; *ант.* до́брый, от-

зы́вчивый) чӳ́нсӑр, чӳ́рӑс, тӳ́ркке́с; **чёрствая душа́** чӳ́рӑс чун

чёрт (-а) *сущ. муж.; множ.* **че́рти** (-е́й) шуйтта́н, уса́л, мур *(тӗ́н ӗненӗвӗ́сенче, юмах-халапсенче)* ◆ **Чёрт его́ зна́ет!** Мур пӗлӗ́т-и ӑна́!; **Чёрт возьми́!** Мур илӗ́сшӗ! *(тарӑ́хса калани);* **Чем чёрт не шу́тит!** Тем те пулма́ пултара́ть!; **Чёрт с ним!** Пултӑра́х!

чёрточка (-и) *сущ. жен.* (*син.* дефи́с) кӗ́ске́ йӗ́р (*сӑ́мах пайӗ́сене ҫыхӑ́нтараканни; сӑ́м., атте-анне, чӑ́н-чӑ́н)*

чёткий *прил.* (*син.* отчётливый, я́сный; *ант.* нея́сный, расплы́вчатый), **чётко** *нареч.* ӳ́ҫӑмлӑ, та́тӑклӑ, йӗ́рке́ллӗ, кал-ка́л; **чёткое изображе́ние** ӳ́ҫӑмлӑ ӳ́ке́рчӗк; **чётко организова́ть рабо́ту** ӗҫӗ́ кал-ка́л йӗ́ркеле́

чёткость (-и) *сущ. жен.* (*син.* отчётливость, я́сность; *ант.* нея́сность, расплы́вчатость) ӳ́ҫӑмлӑх, та́тӑклӑх, йӗ́ркеле́х, кал-ка́ллӑх; **чёткость произноше́ния зву́ков** сасӑсене́ ӳ́ҫӑмлӑ калани́

чётный *прил.* (*син.* па́рный; *ант.* нечётный) мӑ́ш̆ӑрлӑ, тӗ́ке́л; **чётные чи́сла** мӑ́ш̆ӑрлӑ хисепсе́м (*4, 6, 8 т. ыт.*)

чи́бис (-а) *сущ. муж.* теке́рлӗк (*улӑ́х кайӑ́кӗ*)

чиж (-а́) *сущ. муж.* ҫи́рӗк тӑрри́ (*вӑ́рман кайӑ́кӗ)*

чин (-а) *сущ. муж.; множ.* **чины́** (-о́в) чин (*службӑ́ри пусӑ́м, ӑна тивӗ́ҫлӗ ят*); **офице́рский чин** офице́р чи́нӗ

чини́ть (*наст.* чиню́, чи́нишь, чи́нят; *прич. страд. прош.* чи́ненный; *деепр.* чиня́) *глаг. несов.* (*син.* исправля́ть, ремонти́ровать; *ант.* лома́ть) юса́, тӳ́рле́т, сапла́; **чини́ть телеви́зор** телеви́зор юса́; **мно́го раз чи́ненные боти́нки** нума́й хут сапла́нӑ пушма́к

чино́вник (-а) *сущ. муж.* чино́вник (*патшалӑ́х службинчи ҫын*)

чи́сленность (-и) *сущ. жен.* (*син.* коли́чество) хисе́п, шут, йыш; **чи́сленность населе́ния растёт** ха́лӑх йы́шӗ у́се́т

числи́тель (-я) *сущ. муж.* (*ант.* знамена́тель) числи́тель (*вак хисеп-ре — пайланакан цифра*)

числи́тельное (-ого) *сущ. сред.:* **и́мя числи́тельное** хисе́п я́чӗ, хисе́п; **коли́чественные числи́тельные** шут хисепӗсе́м; **поря́дковые числи́тельные** йӗ́рке́ хисепӗсе́м

чи́слиться (*наст.* -люсь, -лишься, -лятся; *повел. ф.* -лись, -литесь; *прич. действ. наст.* -лящийся, *прош.* -лившийся; *деепр.* -лившись) *глаг. несов., кем-чем* (*син.* счита́ться) шутла́н, хисеплӗ́н, шутра́ тӑр; **он чи́слится в о́тпуске** вӑл отпускра́ шутлана́ть

число́ (-а́) *сущ. сред.; множ.* **чи́сла** (чи́сел, чи́слам) **1.** хисе́п; **це́лое число́** туллӣ хисе́п; **дро́бное число́** вак хисе́п **2.** (*син.* день, да́та) кун, числа́; **в пе́рвых чи́слах ма́я** ҫу ӳ́йӑхӗн малтанхи́ кунӗсенче́; **Како́е сего́дня число́?** Паян хӑш числа́? **3.** хисе́п (*грамматикӑ́ра*); **еди́нственное число́** пӗрре́ллӗ хисе́п; **мно́жественное число́** нума́йлӑ хисе́п; **в том числе́** вӑл шутра́, ҫав шутра́; **без числа́** и́мсӗр-су́мсӑр, шу́тсӑр нума́й

чи́стить (*наст.* чи́щу, чи́стишь, чи́стят; *повел. ф.* чисть; *прич. страд. прош.* чи́щенный; *деепр.* чи́стя) *глаг. несов.* **1.** *кого-что* таса́т; **чи́стить оде́жду щёткой** тумтире́ щӗткӑпа́ таса́т; **чи́стить зу́бы** шӑл таса́т **2.** *что* шура́т, таса́т; **чи́стить карто́фель** ҫӗр улми́ шура́т; **чи́стить грибы́** кӑмпа́ таса́т

чистово́й *прил.* (*син.* белово́й; *ант.* черново́й) таса́, тасалла́; **чистово́й экземпля́р докуме́нта** ӗҫ хӳ́чӗн тасалла́ ҫы́рнӑ экземпля́рӗ

чистописа́ние (-я) *сущ. сред.* таса́

çырý, илéмлĕ çырý (*шкулти ĕç тĕсĕ*)

чистоплóтный *прил.* (*син.* опрятный; *ант.* неряшливый, нечистоплóтный), **чистоплóтно** *нареч.* типтéрлĕ, тирпéйлĕ, тасá; **чистоплóтная дéвушка** типтéрлĕ хĕр

чистотá (-ы́) *сущ. жен.* (*ант.* грязь) тасáлăх; **поддéрживать в дóме чистотý** пýртé тасá тыт

чи́стый (*кратк. ф.* чист, чистá, чи́сто, *множ.* чи́сты *и* чисты́; *сравн. ст.* чи́ще; *превосх. ст.* чистéйший) *прил.*, **чи́сто** *нареч.* **1.** (*ант.* грязный) тасá; **чи́стая посýда** тасá сáвăт-сапá; **чи́сто вы́мыть пол** урайнé çусá тасáт **2.** (*син.* свобóдный, открытый) úçă, тасá; **чи́стое нéбо** я́нкăр тасá тýпé ◆ **от чи́стого сéрдца** чун-чĕрерéн, тý́рĕ кăмăлпá; **чи́стая при́быль** тасá тýпăш; **говори́ть чи́стую прáвду** чăнниné калá

читáльный *прил.*: **читáльный зал** вулáв зáлĕ (*библиотекăра*)

читáтель (-я) *сущ. муж.*, **читáтельница** (-ы) *жен.* вулáвçă, вулакáн; **читáтели журнáла** журнáл вулавçисéм; **конферéнция читáтелей** вулаканcéн конферéнцийĕ

читáтельский *прил.* вулáвçă -ĕ, вулакáн -ĕ; **читáтельский билéт** вулáвçă билéчĕ *(библиотекăра усă курмалли)*

читáть (*наст.* -áю, -áешь, -áют; *прич. страд. прош.* чи́танный; *деепр.* -áя) *глаг. несов.* **1.** *что и без доп.* вулá; **читáть вслух** сасăпá вулá; **читáть про себя́** ăсрá вулá; **я люблю́ читáть Пýшкина** э́пĕ Пушкинá вуламá юратáтăп **2.** (*син.* угáдывать) туй, ăнкáр, ăнлáн, асăрхá; **читáть в сердцáх** чĕрерé пурринé ăнкáр; **читáть по глазáм** куçрáн асăрхá **3.** *кого-что* вулá, калá (*итлекенсем умĕнче*); **читáть стихи́ с эстрáды** эстрáда çинчĕ сắвă вулá **4.** (*син.* излагáть, выступáть) ту, калá, каласá пар (*лекци, доклад*) ◆ **читáть моráль** ăс пар, вĕрентсé калá; **читáть чертежи́** чертёжсенé тишкéр

чихáть (*наст.* -áю, -áешь, -áет, -áют) *глаг. несов.* сунаслá, апчхулáт, апчхý ту; **чихáть при нáсморке** сунаспá апчхулáт

член (-а) *сущ. муж.* **1.** (*син.* учáстник) член (*пĕрлешĕве кĕрекен çын, организаци е патшалăх*); **член профсою́за** профсоюз члéнĕ; **страны́-члéны Организáции Объединённых Нáций** Пĕрлéшнĕ Нацисéн Организациné кĕрекéн çĕршывсéм **2.** (*син.* часть) пай; **члéны тéла** ýт-пý́ пайĕсéм ◆ **члéны семьи́** кил-йышри́ çынсéм; **члéны предложéния** предложéни членĕсéм (*грамматикăра*)

чрезвычáйный *прил.* (*син.* исключи́тельный; *ант.* обы́чный, зауря́дный), **чрезвычáйно** *нареч.* **1.** пи́тĕ, çав тери́, мáйсăр, шýтсăр, áкăш-мáкăш; **чрезвычáйный успéх** пи́тĕ пысăк çитĕнý́; **я чрезвычáйно рад ви́деть вас** э́пĕ сирé курмá çав тери́ хавáс **2.** ятáрлă, васкáвлă; **чрезвычáйная комúссия** ятáрлă комúсси; **чрезвычáйное положéние** хытáрнă йĕркé (*сăм., вăрçă, çут çанталăк инкекĕ чухне тăвăканни)*

чтéние (-я) *сущ. сред.* **1.** вулáв; вулани́; **выразúтельное чтéние** илéмлĕ вулáв; **кни́га для чтéния** вулáв кĕнеки́ **2.** вулáв, вуламаллú (*кĕнеке, хайлав*); **детектúвы — занимáтельное чтéние** детективсéм — кắсăк вулáв

чтить (*наст.* чту, чтишь, чтят *и* чтут; *прич. действ. наст.* чтя́щий *и* чту́щий) *глаг. несов.*, *кого-что* (*син.* уважáть) хисеплé, юратсá áсăн; **чтить пáмять геро́ев войны́** вắрçă паттăрĕсенé юратсá áсăн

что[1] (*произн.* шт; *падежные ф.*: чего́, что, чему́, чем, о чём) **1.** *местоим. вопросит.* мĕн, мĕскéр; **Что ты сказáл?** Мĕн тéрĕн э́сĕ?; **Что здесь**

случи́лось? Мĕн пу́лчĕ кунта́? **2.** *нареч.* (*син.* ско́лько) мĕн чӳхлĕ, мĕн хак; **За что ты э́то купи́л**? Мĕн хакпа́ туя́нтăн э́сĕ куна́? **3.** *нареч.* (*син.* почему́) мĕн, мĕ ´ншĕн, мĕн пирки́; **Что ты заду́мался?** Мĕн шухăша́ ка́йрăн э́сĕ? **4.** *союзн. сл.* (*син.* кото́рый) *переводится в соответствии с контекстом:* **дом, что стои́т на углу́** кĕтесре́ ларакá́н çурт; **сказа́ли, что он бо́лен** вăл чирлéнĕ тéрĕç ◆ **что бы́ло сил** пĕ ´тĕм вăйрáн, вăй çи́тнĕ тарáн; **Что то́лку спо́рить?** Тавлашни́н мĕн уссú пур?; **в слу́чае чего́** мĕн те пули́н сиксé тухсáн; **Мне-то что!** Мана́ мĕн ĕç!; **ни к чему́** ки́рлĕ мар; **ни за что** 1) тем пулсáн та 2) нимшĕнéх, ним сăлтáвсăр; **с чего́** мĕ ´ншĕн, мĕн сăлтавпá; **Чего́ то́лько нет**! Мĕн кăна́ çук!; **Что де́лать!** Мĕн тă ´вăн!; **Чему́ быть, того́ не минова́ть** *посл.* Пулмаллú пулатéх

что[2] (*произн.* шт) *союз; переводится в соответствии с контекстом:* **Я сожале́ю, что опозда́л** Э ´пĕ кая́ ю́лнăшăн пăшăрхана́тăп; **Он так измени́лся, что его́ не узна́ть** Вăл палламалла́ мара́х улшăнса́ ка́йнă; **Что ни день, прихо́дят но́вые ве́сти** Кунсерéн çĕ ´нĕ хыпарсéм килсé тăрáççĕ

что́бы, чтоб (*произн.* шт) **1.** *союз* тесé, тесéн; -асшăн (-есшĕн); **Я хочу́, что́бы он меня́ по́нял** Вăл мана́ ăнланта́р тесé тăрăша́тăп **2.** *частица, выражает требование* пу́лтăр; **Что́бы в до́ме бы́ло чи́сто**! Пӳртре́ тап-тасá пу́лтăр!

что́-либо, что́-нибудь (*произн.* шт) *местоим. неопр.* мĕн те пули́н; **Нет ли у тебя́ что́-нибудь пое́сть?** Са́нăн мĕн те пули́н çимеллú çук-и?

что́-то (*произн.* шт) **1.** *местоим. неопр.* (*син.* не́что) тéмĕн, темскéр, темле́ япала́; **там что́-то лежи́т** унта́ темле́ япала́ выртáть **2.** *нареч.* (*син.* почему́-то) тéмшĕн, тем пирки́; **что́-то мне не спи́тся** ма́нăн тéмшĕн ы́йхă килмéст **3.** *частица, выражает сомнение* тем, тéмĕн; **Что́-то мне не ве́рится**! Тем, ма́нăн ĕненéс килмéст! **4.** *нареч.* (*син.* о́коло) я́хăн, çы́вăх, пек; **щу́ка ве́сит что́-то о́коло трёх килогра́ммов** çăрттáн ви́çĕ килограмá я́хăн таять

чува́ш (чувашá *и* чува́ша, чувашу́ *и* чува́шу, чувашо́м, о чувашé) *сущ. муж.*, **чува́шка** (-и) *жен.*; *множ.* **чуваши́** *и* **чува́ши** (чувашéй *и* чува́шей, чувашáм *и* чува́шам, чувашáми, о чувашáх *и* о чува́шах) чăва́ш; **низовы́е чуваши́** анатри́ чăвашсéм; **верховы́е чуваши́** тури́ чăвашсéм, вирьялсéм; **сама́рские чува́ши** Самáр чăвашĕсéм; **чува́ши — тю́ркский наро́д** чăвашсéм — тĕ ´рĕк халăхĕ

чува́шский *прил.* чăва́ш -ĕ; чăвашлá; **чува́шский язы́к** чăва́ш чĕлхи́; **Чува́шский край** Чăва́ш ен; **чува́шская диа́спора** чăва́ш диаспори́ (*Чăваш Республики тулашĕнче пурăнакан чăвашсем*); **чува́шские газе́ты** чăвашлá хаçатсéм

чувстви́тельный *прил.*, **чувстви́тельно** *нареч.* **1.** ту́йăмлă, сисĕмлĕ; сисĕм-ту́йăм -ĕ; **чувстви́тельный прибо́р** ту́йăмлă хáтĕр; **чувстви́тельные кле́тки те́ла** ý ´тĕн сисĕм-ту́йăм клеткисéм **2.** (*син.* значи́тельный) пы́сăк, вă ´йлă, самáй, палăрмалла́; **чувстви́тельные расхо́ды** самáй пы́сăк тăкáк **3.** (*син.* не́жный; *ант.* гру́бый, бесчу́вственный) ача́ш, çĕ́пĕç, çемçé кă ´мăллă; **чувстви́тельная де́вушка** çемçé кă ´мăллă хĕр

чу́вство (-а) *сущ. сред.*; *множ.* **чу́вства** (чувств) **1.** ту́йăм, сисĕм-ту́йăм; туйни́; **о́рганы чувств** сисĕм-ту́йăм органĕсéм; **чу́вство го́лода** выçнине туйни́ **2.** (*син.* созна́ние) ăн, тăн, ă ´нлăх, ту́йăмлăх; **лиши́ться чувств** тăна́ çухáт **3.** (*син.* осозна́ние, пони-

ма́ние) ту́йăм, ăнлану́; туйни́, ăнланнй; **чу́вство до́лга** тивĕçĕ ăнланнй; **чу́вство отве́тственности** яваплăх ту́йăмĕ

чу́вствовать (*наст.* -вую, -вуешь, -вуют; *повел. ф.* -вуй; *деепр.* -вуя) *глаг. несов., что* (*син.* ощуща́ть) туй, сис, сĕмлéн; **чу́вствовать опа́сность** хăрушлăха́ сис; **чу́вствовать ответственность** яваплăха́ туй; **я чу́вствую го́лод** ма́нăн çиéс килéт

чу́вствоваться *1 и 2 л. не употр.* (*наст.* -вуется, -вуются) *глаг. несов.* (*син.* проявля́ться) ту́йăн, си́сĕн, па́лăр; **чу́вствуется приближе́ние зимы́** хĕл çывхарни́ сисĕнéт

чугу́н (-а́) *сущ. муж.* **1.** чугу́н (*металл*); **выплавля́ть чугу́н** чугу́н шăрáт **2.** чугу́н (*чӳлмек евĕр савăт*); **вари́ть суп в чугуне́** чугунпа́ яшка́ пĕçéр

чугу́нный *прил.* чугу́н ...; чугу́н -ĕ; **чугу́нная решётка** чугу́н решеткé

чуда́к (-а́) *сущ. муж.*, **чуда́чка** (-и) *жен.* тĕлĕнтéрмĕш çын, хăйне́ май çын

чуде́сный *прил.*, **чуде́сно** *нареч.* **1.** (*син.* необыкнове́нный) аса́млă, тĕлĕнтéрмĕш, тĕлĕнмелле́; **чуде́сное спасе́ние** аса́млă майпа́ çăлăннй **2.** (*син.* замеча́тельный) хӳ́хĕм, се́лĕм, паха́, ча́плă; **мы чуде́сно отдохну́ли за Во́лгой** эпи́р А́тăл йăлăмĕнче́ пи́тĕ се́лĕм ка́нтăмăр

чу́дный *прил.* (*син.* замеча́тельный, проле́стный), **чу́дно** *нареч.* илéмлĕ, хӳ́хĕм, ча́плă, се́лĕм; **чу́дные зву́ки скри́пки** сĕрмé кӳпăсăн илéмлĕ сасси́; **чу́дный обе́д** пи́тĕ хӳ́хĕм апа́т

чу́до (-а) *сущ. сред.; множ.* **чудеса́** (-éс, -есáм) **1.** аса́м, аса́млăх, аса́млă пу́лăм; **Бог яви́л чу́до** Ту́рă аса́м туса́ кăта́ртрĕ **2.** *чего* чи пахи́, чи чаплй; **де́вушка — чу́до красоты́** илемлéре́н илéмлĕ хĕр

чудо́вище (-а) *сущ. сред.* çам, юххá, хăрушка́, тискеркké (*юмахри чĕр чун*)

чу́дом *нареч.* (*син.* случа́йно) ăнсăртра́н, телеé пула́; кĕтмéн çĕртéн; **чу́дом спасти́сь от сме́рти** телеé пула́ вилĕмре́н çăлăнса́ юл

чудотво́рный *прил.* **1.** (*син.* волше́бный) аса́млă, аса́м тăвака́н; **чудотво́рная ико́на** аса́м тăвака́н ту́рăш (*тĕн ĕненĕвĕнче*) **2.** (*син.* благотво́рный) си́плĕ, у́сăллă; **чудотво́рный кли́мат** си́плĕ кли́мат

чужда́ться (*наст.* -а́юсь, -а́ешься, -а́ются; *прич. действ. наст.* -а́ющийся; *деепр.* -а́ясь) *глаг. несов., кого-что* ю́тшăн, пă ´рăн; **чужда́ться ста́рых друзе́й** ĕлĕкхи́ туссенчéн ю́тшăн

чужезе́мный *прил.* (*син.* иностра́нный; *ант.* оте́чественный) ют çĕршы́в -ĕ; ют ха́лăх -ĕ; **чужезе́мные обы́чаи** ют ха́лăх йăли́-йĕркú

чужо́й *прил.* **1.** (*ант.* свой) çын -ĕ; ют; **чужи́е ве́щи** çын япалисéм; **жить на чужо́й стороне́** ют енчé пу́рăн **2.** (*ант.* бли́зкий) ют, ю́тшăнчăк; **вчера́шние друзья́ ста́ли чужи́ми** ĕнерхи́ туссéм пĕр-пĕринчéн ю́тшăнчĕç

чула́н (-а) *сущ. муж.* чăла́н (*çенĕкри пӳлĕм*); **вы́ставить шкаф в чула́н** шкапа́ чăлана́ кăларса́ ларт

чулки́ (чулóк) *сущ. множ.; един.* **чулóк** (чулка́) *муж.* чăлха́; **шерстяны́е чулки́** çăм чăлха́; **што́пать чулки́** чăлха́ сапла́

чума́ (-ы́) *сущ. жен.* чума́ (*сикекен хăрушă чир*) ◆ **как чумы́ боя́ться** мурта́н хăра́нă пек хăра́

чума́зый *прил.* (*син.* гря́зный) вараля́нчăк, хура́ пи́тлĕ, хура́; **чума́зый ребёнок** хура́ пи́тлĕ ача́

чурба́к (-а́), **чурба́н** (-а) *сущ. муж.* каска́, сы́пă (*йывăç вуллин*); **берёзовый чурба́н** хӳ́рăн каски́

чу́ткий (*кратк. ф.* чу́ток, чутка́, чу́тко, чу́тки; *сравн. ст.* чу́тче) *прил.*, **чу́тко** *нареч.* **1.** ту́йăмлă, си́сĕмлĕ, çи́вĕч, сирéк, ви́чкĕн; **чу́ткая соба́ка**

сирéк йы́тă; **чу́ткий прибо́р** си́сĕмлĕ ха́тĕр; **чу́тко вслу́шиваться** хăлхана́ тăратса́ итлé 2. (*син.* отзы́вчивый; *ант.* бесчу́вственный, чĕрствый) тарава́т, ти́млĕ, ы́рă кắмăллă; **чу́тко относи́ться к ветера́нам** ветерансéм тĕлĕшпé ти́млĕ пул

чуть 1. *нареч.* (*син.* едва́, éле; немно́го) кăшт, ара́н, кăшта́х, чута́х; **го́лос у него́ чуть слы́шен** сасси́ ара́н илтĕнéт; **чуть бо́льше килогра́мма** килограмра́н кăшт ытлара́х 2. *союз* (*син.* сра́зу) çийĕнчéх, çавăнта́х, ту́рéх; -санах (-сенех); **чуть рассветёт, тро́немся в путь** тул çутăлсана́х çула́ тухáтпăр

чутьё (-я́) *сущ. сред.* 1. си́сĕм, ту́йăм, си́сĕнкĕ (*чĕр чунсен*); **у охо́тничьей соба́ки хоро́шее чутьё** суна́р йыттѝ ша́ршă ла́йăх туя́ть 2. (*син.* понима́ние) ăнкару́, ăнлану́; ăнкарни́, ăнланни́; **полити́ческое чутьё** политикăна́ ăнкарни́

чу́чело (-а) *сущ. сред.; множ.* **чу́чела** (-ел) 1. кĕлетке́ (*чĕр чун тирне карса туни*); **чу́чело оле́ня** пăла́н кĕлетки́ 2. (*син.* пу́гало) катемпи́; **огоро́дное чу́чело** пахча́ катемпи́йĕ (*кайăксене хăратма лартни*)

чу́ять (*наст.* чу́ю, чу́ешь, чу́ют; *повел. ф.* чуй; *прич. действ. наст.* чу́ющий, *прош.* чу́явший; *деепр.* чу́я) *глаг. несов.* 1. *кого-что* ша́ршă туй, шăршăпа́ пĕл, сăмсапа́ сис, туй; **соба́ка чу́ет за́йца** йы́тă мулка́ч шăршине́ туя́ть 2. *что* (*син.* чу́вствовать, ощуща́ть) сис, ăнка́р, сĕмлéн; **чу́ять беду́** инкéк пуласса́ туй

Ш

шабло́н (-а) *сущ. муж.* 1. (*син.* лека́ло) ĕлкé (*чертеж тумалли, пусма тавар çĕлеме касмалли*); **крои́ть пла́тье по шабло́ну** ĕлкепé кĕпé кас 2. (*син.* трафаре́т) ка́лăп, ĕлкé, тĕ́слĕх; **сочине́ние стихо́в по шабло́ну** пĕр калăппа́ сắвă хывни́

шаг (-а, -у *и* -а́, о ша́ге, на шагу́, в шагу́) *сущ. муж.*; *множ.* **шаги́** (-о́в) 1. у́тăм, утáс; **сде́лать оди́н шаг** пĕр у́тăм ту; **идти́ широ́ким ша́гом** вắрăм утасласа́ ут; **на ка́ждом шагу́** кашни́ утăмра́х 2. (*ант.* бег) у́тă, утти́, утăмла́в; утăмлани́, утаслани́; **ло́шадь идёт ша́гом** лашá утсá пыра́ть; **приба́вить ша́гу** васкарáх ут 3. (*син.* де́йствие, посту́пок) у́тăм, ĕç, тắвăм, хăтлáнăш; **неосторо́жный шаг** асăрханмáсăр ту́нă ĕç

шага́ть (*наст.* -а́ю, -а́ешь, -а́ют) *глаг. несов.* ут, утăмла́, утсá пыр; **шага́ть по тропи́нке** сукмакпá утсá пыр; **шага́ть в но́гу** хáрăссăн пуссá ут

ша́гом *нареч.* (*ант.* бегóм) утсá, утăмпá, утăмлатсá, утаслатсá; **идти́ ша́гом** утсá пыр ◆ **Ша́гом марш!** Утмалла́! (*çар çыннисене хушса калани*)

ша́йба (-ы) *сущ. жен.* 1. ша́йба (*гайка айне хуракан шăтăклă çаврашка*) 2. ша́йба (*хоккей вăййин хатĕрĕ*); **заби́ть ша́йбу в воро́та** хапхана́ ша́йба çапсá кĕрт

ша́йка (-и) *сущ. жен.* у́шкăн, эшкéр; **банди́тская ша́йка** хура́х у́шкăнĕ

шала́ш (-а́) *сущ. муж.* хӳ́шĕ, у́плé, лупа́с; **шала́ш рыбако́в** пулăçăсéн у́плй

шали́ть (*наст.* шалю́, шали́шь, шаля́т; *прич. действ. наст.* шаля́щий, *прош.* шали́вший) *глаг. несов.* (*син.* балова́ться) а́шкăн, ас, и́ртĕх; **де́ти шаля́т** ачасéм ашкăнáççĕ ◆ **ча-**

сы́ шаля́т сехе́т тĕ´рĕс çӳреме́ст; **здоро́вье шали́т** сы́влăх çирĕпе́х мар

ша́лость (-и) *сущ. жен.* ашкăну́, иртĕхӳ´; ашкăнни́, иртĕхни́; **де́тские ша́лости** ача́-пăча́ ашкăнни́

шалу́н (-а́) *сущ. муж.*, **шалу́нья** (-ьи) *жен.* а́шкăнчăк, и́ртĕнчĕк (*ача-пăча*)

шаль (-и) *сущ. жен.* шел ту́тăр; **шаль с каймо́й** шерепе́ллĕ шел ту́тăр

шампа́нское (-ого) *сущ. сред.* шампа́нски эре́х

шампиньо́ны (-ов) *сущ. множ.*; *един.* **шампиньо́н** (-а) *муж.* çере́м кăмпи́; **жа́рить шампиньо́ны** шампиньо́н ăшала́

шампу́нь (-я) *сущ. муж.* шампу́нь, шĕ´вĕ су́пăнь; **мыть во́лосы шампу́нем** çӳçе́ шампуньпе́ çу

шанс (-а) *сущ. муж.* май, ша́нăç; **испо́льзовать благоприя́тный шанс** ы́рă майпа́ у́сă кур

шанта́ж (-а́) *сущ. муж.* хăрату́, шиклентеру́´; хăратни́, шиклентерни́; **занима́ться шантажо́м** хăратса́ пусахла́

ша́пка (-и) *сущ. жен.* çĕ´лĕк, калпа́к, пухча́; **за́ячья ша́пка** мулка́ч тир çĕ´лĕкĕ; **вя́заная ша́пка** çы́хнă калпа́к; **ша́пка-уша́нка** хăлха́ллă çĕ´лĕк, мулахха́й ◆ **газе́тная ша́пка** хаçатри́ пы́сăк заголо́вок; **ша́пками закида́ем** ним те мар парăнтара́тпăр; **дать по ша́пке** хӳтерсе́ яр

шар (-а; *с колич. числит.* -а́) *сущ. муж.*; *множ.* **шары́** (-о́в) шар, чă´мăр; **билья́рдный шар** билья́рд ша́рĕ ◆ **возду́шный шар** сы́влăш ша́рĕ (*вĕçев хатĕрĕ*); **Земно́й шар** Çĕр чă´мăрĕ; **хоть шаро́м покати́** пуш-пуша́х, ним те çук

шарж (-а) *сущ. муж.* шарж (*тăрăхлавлă, шӳтлевлĕ ӳкерчĕк*); **дру́жеский шарж** ту́слă шарж; **рисова́ть ша́ржи** шарж ӳке́р

ша́риковый *прил.*: **ша́риковая ру́чка** ша́риклă ру́чка

ша́рить (*наст.* ша́рю, ша́ришь, ша́рят) *глаг. несов.* хыпашла́, хыпашласа́ шыра́; **ша́рить в карма́не** кĕсьере́ хыпашла́ ◆ **ша́рить глаза́ми** куçла́, шыраса́ пăхкала́

шарни́р (-а) *сущ. муж.* шарни́р (*машина пайĕсене çаврăнăçлă çыхăнтаракан хатĕр*)

шарова́ры (-а́р) *сущ. множ.* (*син.* брю́ки) йĕм, шăлава́р; **спорти́вные шарова́ры** спорт шăлава́рĕ

шарф (-а) *сущ. муж.* шарф; **шерстяно́й шарф** çăм шарф; **повяза́ть ше́ю шарфо́м** мăя́ шарф çых

шасси́ *сущ. сред. нескл.* **1.** шасси́, кăшка́р; **шасси́ тра́ктора** тра́ктор кăшка́рĕ **2.** шасси́, урапасе́м; **самолёт вы́пустил шасси́** самолёт ураписене́ кăла́рчĕ (*анса ларас умĕн*)

шата́ться (*наст.* -а́юсь, -а́ешься, -а́ются) *глаг. несов.* **1.** (*син.* кача́ться) сулкала́н, сулла́н, чӳхе́н; **забо́р шата́ется** хӳме́ сулланáть **2.** (*син.* броди́ть) сĕ´тĕрĕн, сĕтĕрĕнсе́ çӳре́; сулкаланса́ çӳре́; **шата́ться по го́роду** хула́ тă´рăх сĕтĕренсе́ çӳре́

шате́н (-а) *сущ. муж.*, **шате́нка** (-и) *жен.* çы́рă çын (*хăмăртарах тĕслĕ çӳçли*)

шах (-а) *сущ. муж.* шах (*шахматра — король çине тапăнса çӳрени*); **объяви́ть шах королю́** короле́ шах ту

шахмати́ст (-а) *сущ. муж.*, **шахмати́стка** (-и) *жен.* шахмати́ст, ша́хматçă; **шахмати́ст междунаро́дного кла́сса** тĕнче́ шайĕнчи́ шахмати́ст

ша́хматный *прил.* ша́хмат -ĕ; **ша́хматная доска́** ша́хмат хăми́

ша́хматы (-ат) *сущ. множ.* ша́хмат; **игра́ть в ша́хматы** шахматла́ выля́

ша́хта (-ы) *сущ. жен.* ша́хта (*çĕр айĕнчен пуянлăх кăлармалли шăтăк*); **у́гольная ша́хта** кă´мрăк шахти́

шахтёр (-а) *сущ. муж.* шахтёр, шахтăрá ĕçлекéн; **рабóтать шахтёром** шахтёртá ĕçлé

шашúст (-а) *сущ. муж.*, **шашúстка** (-и) *жен.* шашúст, шáшкăçă; **соревновáния шашúстов** шашкăçăсéн ăˊмăртăвĕ

шáшка (-и) *сущ. жен.* хĕç; **рубúть шáшкой** хĕçпé кас

шáшки (-шек) *сущ. множ.* шáшкă (*вăйă*); **игрáть в шáшки** шашкăллá выля́

шашлы́к (-á) *сущ. муж.* шашлы́к (*йĕтĕрлесе кăвар çинче пĕçернĕ аш*); **шашлы́к из бараúны** сӳ́рăх аш шашлы́кĕ

швéйный *прил.* çĕˊвĕ -ĕ; **швéйная машúна** çĕˊвĕ машúнă; **швéйная фáбрика** çĕˊвĕ фабрúкă

швыря́ть (*наст.* -я́ю, -я́ешь, -я́ют) *глаг. несов., кого-что и чем* (*син.* бросáть) пăрáх, пер, ыткăнтáр; **швыря́ть снежкáми** юрпá перкелéш ◆ **швыря́ть дéньги** укçá тăккалá

шевели́ть (*наст.* -елю́, -ели́шь *и* -éлишь, -еля́т; *прич. страд. прош.* -елённый) *глаг. несов.* йăшăлтатáр, хускáт, выля́т; **шевели́ть пáльцами** пӳ́рнесенé выля́т

шевели́ться (*наст.* -елю́сь, -ели́шься *и* -éлишься, -éлятся) *глаг. несов.* йăшăлтáт, хускáл, хускалкалá; **в травé что́-то шевéлится** кӳ́рăк хушшинчé темскéр йăшăлтатáть

шелесте́ть *1 л. не употр.* (*наст.* -ти́шь, -тя́т) *глаг. несов.* чăшăлтáт, чăштăртáт; **травá шелести́т** кӳ́рăк чăшăлтатáть

шелухá (-и́) *сущ. жен.* (*син.* оболóчка, кожурá) хӳ́пă, хуппи́; **картóфельная шелухá** çĕр улми́ хуппи́

шепта́ть (*наст.* шепчу́, ше́пчешь, ше́пчут; *повел. ф.* шепчи́; *прич. действ. наст.* ше́пчущий; *деепр.* шепчá) *глаг. несов.* пăшăлтáт, пăшăлтатсá калá; **шепта́ть на́ ухо** хăлхарáн пăшăлтатсá калá

шепта́ться (*наст.* шепчу́сь, ше́пчешься, ше́пчутся; *повел. ф.* шепчи́сь, шепчи́тесь) *глаг. несов.* пăшăлтáт, пăшăлтатсá калáç; **шепта́ться по секре́ту** вăˊрттăн пăшăлтатсá калáç

шере́нга (-и) *сущ. жен.* шере́нга, рет (*çума-çумăн тăракансем*); **взвод постро́ился в две шере́нги** взвод ӳ́кĕ шеренгăпá тăˊнă

шерсть (-и) *сущ. жен.* **1.** (*син.* мех) çăм, тĕк (*выльăхăн*); **собáка с густóй ше́рстью** çăрá çăˊмлă йы́тă; **бить шерсть** çăм таптáр; **вязáть чулки́ из ше́рсти** çăмрáн чăлхá çых **2.** çăм пусмá; **шерсть на плáтье** кĕпе́лĕх çăм пусмá

шерстяно́й *прил.* çăм ...; çăм -ĕ; **шерстяна́я пря́жа** çăм çиппи́

шершáвый *прил.* (*син.* шероховáтый; *ант.* глáдкий) кăшăркká, кăштăркká; **шершáвые рýки** кăшăркká áлă

ше́ршень (-шня) *сущ. муж.* сăвăсла́н, măн сăпсá

шест (-á) *сущ. муж.* **1.** (*син.* жердь) шалçá, шăˊччă; **шесты́ для хме́ля** хăмлá шалçисéм **2.** шăˊччă (*спорт хатĕрĕ*); **прыжки́ с шесто́м** шăччăпá сикни́

шестна́дцать (-и) *числит. колич.* вун ýлтă, вун ýлттă; **шестна́дцать киломе́тров** вун ýлтă километ́р; **два́жды во́семь — шестна́дцать** ик хут сáккăр — вун ýлттă

шесто́й *числит. порядк.* ýлттăмĕш; **учи́ться в шесто́м кла́ссе** ýлттăмĕш класрá вĕрéн; **одна́ шеста́я** пĕрре́ ýлттăмĕш

шесть (шести́, шестью́) *числит. колич.* улт(ă), ýлттă; **прошло́ шесть лет** ýлтă çул ӳртрĕ; **шесть ми́нус три бу́дет три** улттăрáн вы́ççĕ кăларсáн вы́ççĕ пулáть

шестьдеся́т (шести́десяти, шестью́десятью) *числит. колич.* ӳтмăл; **ему́ испо́лнилось шестьдеся́т лет** вăл ӳ́тмăл çул тултáрнă

шестьсо́т (шестисо́т, шестиста́м, шестьюста́ми, о шестиста́х) *числит. колич.* улт ҫĕр; **го́роду испо́лнилось шестьсо́т лет** хула́ улт ҫĕр ҫул тулта́рчĕ

ше́стью *нареч.* улт(ă) хут (*хутланă чухне*); **ше́стью три — восемна́дцать** улт хут ви́ҫҫĕ — вун са́ккăр

шеф (-а) *сущ. муж.* **1.** (*син.* нача́льник) пу́ҫлăх, ертӳ́ҫĕ; **шеф поли́ции** поли́ци пу́ҫлăхĕ **2.** шеф (*пулăшу паракан*); **шеф шко́лы — заво́д** шкул ше́фĕ — заво́д

ше́фствовать (*наст.* -твую, -твуешь, -твуют) *глаг. несов.* шефа́ ил, шеф пул, шефла́ пу́лăш

ше́я (ше́ю, ше́ей, о ше́е) *сущ. жен.*; *множ.* **ше́и** (шей, ше́ями, о ше́ях) мăй; **гуси́ная ше́я** хур мӑ́йĕ; **вы́тянуть ше́ю** мăя тăс ◆ **на свою́ ше́ю** хама́ нушта́ курмалла́; **сиде́ть на ше́е** *у кого-либо* ҫын ĕнси́ ҫинче́ лар; **гнать в три ше́и** хăваласа́ яр, ху́терсе́ яр; **получи́ть по ше́е** ĕнсе́ чикки́ туя́н; **дать по ше́е** ĕнсе́ чикки́ пар; **свернӳ́ть себе́ ше́ю** путланса́ лар; **намы́лить ше́ю** тустар

шёлк (-а, о шёлке *и* в шелку́) *сущ. муж.*; *множ.* **шелка́** (-о́в) **1.** пу́рҫăн; **натура́льный шёлк** ҫут ҫанта́лăк пу́рҫăнĕ; **иску́сственный шёлк** хайла́влă пу́рҫăн **2.** пу́рҫăн пусма́; **купи́ть шёлка на пла́тье** кĕпе́лĕх пу́рҫăн пусма́ туя́н

шёлковый *прил.* пу́рҫăн ...; пу́рҫăн -ĕ; **шёлковая пря́жа** пу́рҫăн ҫиппи́

шёпот (-а) *сущ. муж.* пăшăлтату́; пăшăлтатни́

ши́ло (-а) *сущ. сред.*; *множ.* **ши́лья** (-ьев) аптăри́; **проколо́ть ко́жу ши́лом** сăрана́ аптăрипе́ шăта́р ◆ **Ши́ла в мешке́ не утаи́шь** *посл.* Пурри́не пытарма́ ҫук

шимпанзе́ *сущ. нескл. муж.* шимпанзе́ (*этем евĕрлĕ упăте ăрачĕ*)

ши́на (-ы) *сущ. жен.* **1.** ши́на (*урапа тукăнĕ*); **рези́новая ши́на** рези́на ши́на **2.** хытăркăч (*суран ҫыхмалли*); **наложи́ть ши́ну на ра́неную но́гу** сура́нлă урана́ хытарса́ ҫых

шине́ль (-и) *сущ. жен.* шине́ль; **солда́тская шине́ль** салта́к шине́лĕ; **ходи́ть в шине́ли** шинельпе́ ҫӳре́

шипе́ть (*син.* -плю́, -пи́шь, -пя́т) *глаг. несов.* **1.** чăшла́т, ăшла́т; **змея́ шипи́т** ҫĕле́н чăшлата́ть **2.** (*син.* брани́ться) măкăрта́т; **стару́ха всё шипи́т** ка́рчăк шав măкăртата́ть ◆ **шипя́щие зву́ки** ăшлатака́н сасăсе́м (*сăм., ш, ч*)

шипо́вник (-а) *сущ. муж.* шăла́н; **я́годы шипо́вника** шăла́н ҫырли́

ширина́ (-ы́) *сущ. жен.* (*ант.* длина́) сарла́кăш, а́нлăш; **ширина́ у́лицы** ура́м сарла́кăшĕ; **в оди́н метр ширины́** пĕр метр сарла́кăш

ши́риться *1 и 2 л. не употр.* (*наст.* -ится, -ятся) *глаг. несов.* са́рăл, анлăла́н, сарăлса́ пыр; **ши́рится эколо́гическое движе́ние** эколо́ги юхăмĕ сарăлса́ пыра́ть

широ́кий (*кратк. ф.* -о́к, -ока́, -око́ *и* -о́ко, *множ.* -оки́ *и* -о́ки; *сравн. ст.* ши́ре; *превосх. ст.* -оча́йший) **1.** (*ант.* у́зкий) сарлака́, а́нлă; **широ́кая у́лица** сарлака́ ура́м; **челове́к с широ́кой гру́дью** а́нлă ка́ҫăрлă ҫын **2.** (*син.* просто́рный; *ант.* те́сный) шалпа́р, пы́сăк, а́нлă; **пиджа́к широ́к** пинша́к шалпа́р **3.** (*син.* ма́ссовый) йы́шлă, а́нлă; **широ́кие слои́ населе́ния** ха́лăхăн йы́шлă ушкăнĕсе́м **4.** (*син.* обши́рный; *ант.* ограни́ченный) а́нлă, пуя́н; **широ́кий кругозо́р** а́нлă тавраку́рăм ◆ **широ́кая нату́ра** юма́рт ҫын, у́ҫă ка́ҫăллă ҫын; **в широ́ком смы́сле сло́ва** пĕтĕмĕшле́; **жить на широ́кую но́гу** ту́лăххăн пу́рăн; **Ши́ре шаг!** Вăрăмра́х пусса́ у́тăр! (*стройпа пыракансене хушни*)

широкопле́чий *прил.* (*син.* плечи́стый; *ант.* узкопле́чий) сарлака́ хул-

пуҫҫи́ллĕ, а́нлă хулпуҫҫи́ллĕ; **широкопле́чий мужчи́на** сарлака́ хулпуҫҫи́ллĕ арҫы́н

широта́ (-ы́) *сущ. жен.*; *множ.* **широ́ты** (-о́т, -о́там) **1.** (*син.* ширина́; *ант.* длина́) сарла́кăш, а́нлăш; **широта́ степе́й** ҫеҫе́н хир а́нлăшĕ **2.** (*ант.* долгота́) а́нлăх (*географире — экватортан паллă хушăра тăракан вырăн*); **ю́жные широ́ты** кắнтăр анлăхĕсе́м

шить (*наст.* шью, шьёшь, шьют; *повел. ф.* шей; *прич. действ. наст.* шьющий, *прош.* ши́вший, *прич. страд. прош.* ши́тый) *глаг. несов., что* **1.** ҫĕлé; **шить пла́тье** кĕпе́ ҫĕлé; **шить на рука́х** а́лă вĕ́ҫҫĕн ҫĕлé; **шить на шве́йной маши́не** ҫĕ́вĕ машинипе́ ҫĕлé **2.** (*син.* вышива́ть) тĕрлé; **шить шёлком** пурҫăнпа́ тĕрлé ◆ **шить до́ски** хăмасене́ та́чă ҫыпăҫта́р; **ши́то бе́лыми ни́тками** ултавĕ курăнсах тăра́ть

ши́фер (-а) *сущ. муж.* ши́фер (*цементпа асбест хутăшĕнчен тунă листа*); **крыть дом ши́фером** ҫуртá ши́фер вит

ши́ферный *прил.* ши́фер...; ши́фер -ĕ; **ши́ферная кры́ша сара́я** сара́йăн ши́фер тăрри́

шифонье́р (-а) *сущ. муж.* (*син.* гардеро́б) тумти́р шка́пĕ

шифр (-а) *сущ. муж.* **1.** шифр (*вăрттăн ҫыру паллисем*); **цифрово́й шифр** ци́фрăллă шифр; **ключ к ши́фру** шифр ту́пкăчĕ; **написа́ть ши́фром** шифрпа́ ҫыр **2.** шифр (*кĕнеке, ал ҫыру ҫине лартакан уйăру паллисем*); **иска́ть кни́гу по ши́фру** кĕнекене́ шифр тắрăх шыра́

шифрова́ть (*наст.* -ру́ю, -ру́ешь, -ру́ют; *прич. страд. прош.* -ро́ванный) *глаг. несов.* шифрла́, шифрпа́ ҫыр; **шифро́ванная телегра́мма** шифрла́нă телегра́мма

ши́шка (-и) *сущ. жен.* **1.** мắкăль; **на лбу вы́скочила ши́шка** ҫамкана́ мắкăль тухса́ ла́рнă **2.** йĕкé́л (*лăсăллă йывăҫсен*); пучáх (*хăмлан*); **сосно́вые ши́шки** хыр йĕкелĕсе́м

шкату́лка (-и) *сущ. жен.* арчá (*пĕчĕкки*); **шве́йная шкату́лка** йĕп-ҫи́п арчи́

шкаф (-а, в -у́) *сущ. муж.; множ.* **шкафы́** (-о́в, -а́ми) шкап; **кни́жный шкаф** кĕнекé шка́пĕ; **две́рцы шка́фа** шкап алăкĕсе́м; **несгора́емый шкаф** ҫунма́н шкап (*сейф*)

шква́рки (-рок) *сущ. множ.* кắвăрчă (*шăратнă сала тĕпĕ*)

шко́ла (-ы) *сущ. жен.* **1.** шкул; **общеобразова́тельная шко́ла** пĕтĕмĕшлé пĕлӳ́ шкулĕ; **нача́льная шко́ла** пуҫла́мăш шкул; **основна́я шко́ла** тĕп шкул; **сре́дняя шко́ла** вăта́м шкул; **специа́льная шко́ла** ята́рлă шкул; **шко́ла-интерна́т** интерна́т шкул; **око́нчить шко́лу** шкулта́н вĕренсé тух **2.** (*син.* о́пыт, вы́учка) шкул, пĕлӳ́, вĕренӳ́, хăнăхӳ; **шко́ла жи́зни** пу́рнăҫ вĕрентни́ **3.** (*син.* направле́ние) ю́хăм (*ӳнерти, ăслăлăхри*); **учёный созда́л свою́ шко́лу** ắслăхҫă хắйĕн юхăмне́ пуҫарсá я́нă

шко́льник (-а) *сущ. муж.*, **шко́льница** (-ы) *жен.* шкул ачи́; **шко́льники пошли́ на экску́рсию** шкул ачисе́м экскурси́е ка́йрĕҫ

шко́льный *прил.* шкул -ĕ; шкулти́; **шко́льное зда́ние** шкул ҫу́рчĕ; **шко́льные го́ды** шкулта́ вĕре́ннĕ ҫулсе́м

шку́ра (-ы) *сущ. жен.* тир; **во́лчья шку́ра** ка́шкăр ти́рĕ; **вы́деланная шку́ра** ту́нă тир ◆ **на свое́й шку́ре узна́ть** ху тӳ́ссé кур; **шку́ру спусти́ть** тирне́ сӳ́, хĕнесе́ пĕтéр

шку́рка (-и) *сущ. жен.* **1.** тир (*пĕчĕк чĕр чунăн*); **шку́рка бе́лки** пакша́ ти́рĕ **2.** (*син.* ко́жица) ху́пă, хуппи́; **шку́рка я́блока** пан улми́ хуппи́ **3.** хы́ркăч, яка́ткăч (*ҫирĕп хăйăр витнĕ пусма е хут*)

шлак (-а) *сущ. муж.* **1.** шлак, ҫӳнăк

(*шăратнă, çуннă хыççăн юлнă каяш*); **каменноу́гольный шлак** çĕр кắмрăк шлáкĕ **2.** каяш (*организма пухăнакан сиенлĕ япаласем*); **выводи́ть шла́ки из организ́ма** ӳт-пӳ́рен каяшсене́ кăлáр

шланг (-а) *сущ. муж.* шланг (*çемçе пăрăх*); **рези́новый шланг** рези́на шланг; **пожа́рный шланг** пушáр сӳ́нтермелли́ шланг

шлем (-а) *сущ. муж.* **1.** шлем (*ĕлĕкхи салтакăн тимĕр калпакĕ*) **2.** шлем (*пуçа хӳ́тĕлекен çĕлĕк*); **шлем танки́ста** танки́ст шлéмĕ; **шлем водола́за** водолáз шлéмĕ

шлея́ (-и́) *сущ. жен.* кӳ́тлăх (*хăмăтпа çыхăнтарнă ут таврашĕ*)

шлюз (-а) *сущ. муж.* шлюз (*карапсене пĕверен аяла антармалли е хăпартмалли камера*); **судохо́дный шлюз** карáп иртермелли́ шлюз

шлю́пка (-и) *сущ. жен.* шлю́пка (*карап палуби çинче тытакан пысăк кимĕ*); **гребна́я шлю́пка** кĕсмéнлĕ шлю́пка; **спусти́ть шлю́пки на́ воду** шлюпкăсене́ шывá антáр (*карап çинчен*)

шля́па (-ы) *сущ. жен.* шлепке́; **соло́менная шля́па** ӳлăм шлепке́ ◆ **де́ло в шля́пе** ĕç тӳ́хрĕ, ĕç ắнчĕ

шля́пка (-и) *сущ. жен.* **1.** шлепке́; **де́тская шля́пка** ачá шлепки́ **2.** шлепке́, пуç; **шля́пка гвозд́я** пăтá шлепки́; **шля́пка гриба́** кăмпá шлепки́

шмель (-я́) *сущ. муж.* тĕ́кĕл турá; **гнездо́ шмеля́** тĕ́кĕл турá йăви́

шни́цель (-я) *сущ. муж.*; *множ.* **шни́цели** (-ей) *и* **шницеля́** (-е́й) шни́цель (*котлет тĕсĕ*); **ру́бленый шни́цель** вĕтéтнĕ аш шни́целĕ

шнур (-а́) *сущ. муж.* **1.** шнур, кантрá; **шнур для занаве́ски** чӳречé карúн шнӳ́рĕ **2.** шнур, пралӳ́к (*изоляторпа витни*); **телефо́нный шнур** телефóн шнӳ́рĕ

шнурóк (-рка́) *сущ. муж.* (*син.* тесёмка) шнурóк; **шнурки́ для боти́нок** пушмáк шнурокĕсéм

шов (шва) *сущ. муж.*; *множ.* **швы** (швов, швáми, в швах) **1.** çĕ́вĕ (*çĕленĕ вырăн*); **маши́нный шов** машинăпá тӳ́нă çĕ́вĕ; **ручно́й шов** алăпá тӳ́нă çĕ́вĕ **2.** çĕвéк (*суран вырăнĕнче юлни*); **наложи́ть швы по́сле опера́ции** операци хыççăн çĕвéк хур, кáснă вырăнá çĕлесé ларт **3.** çĕ́вĕ, çĕвéк (*шăратса, чутласа сыпăнтарнă йĕр*); **сва́рочный шов** шăратсá тӳ́нă çĕ́вĕ

шовини́зм (-а) *сущ. муж.* шовини́зм (*пĕр нацие çӳле çĕклесе ыттисене ним вырăнне те хуманни*)

шовини́ст (-а) *сущ. муж.* шовини́ст (*шовинизм майлă çын*)

шокола́д (-а) *сущ. муж.* шокола́д (*какао мăйăрĕнчен тунă çимĕç*); **пли́тка шокола́да** шокола́д плитки́

шокола́дный *прил.* шокола́д ...; шокола́д -ĕ; **шокола́дные конфе́ты** шокола́д канфéт

шо́мпол (-а) *сущ. муж.*; *множ.* **шомпола́** (-о́в) шóмпол (*пăшал кĕпçине тасатмалли тимĕр хулă*)

шо́рох (-а) *сущ. муж.* (*син.* шуршáние) чăштăртатý, чăштăртатни́; **шо́рох сухи́х ли́стьев** ти́пĕ çулçăсéм чăштăртатни́

шо́рты (шорт *и* шóртов) *сущ. множ.* шóртă (*кĕске шăлавар*)

шоссé *сущ. нескл. сред.* шоссé (*чул сарнă çул*); **асфальти́рованное шоссé** асфáльтлă шоссé

шоссе́йный *прил.* шоссé -ĕ; **шоссе́йная доро́га** шоссé çӳлĕ

шо́у *сущ. нескл. сред.* шóу (*эстрада мелĕсемпе халăха килентермелли программа, концерт*); **телевизио́нное шо́у** телевиденири́ шóу

шофёр (-а) *сущ. муж.*; *множ.* **шофёры** (-ов) *и* **шофера́** (-о́в) шофёр; **шофёр такси́** таксú шофёрĕ; **рабо́тать шофёром** шофёртá ĕçлé

шпага́т (-а) *сущ. муж.* (*син.* бечёв-

ка) шпагáт (*çинçе, çирĕп кантра*); **перевязáть книги шпагáтом** кĕнекесенé шпагатпá туртсá çых

шпáла (-ы) *сущ. жен.; множ.* **шпáлы** (шпал) шпáла (*чугун çул рельсĕ айне хуракан пăрăс*); **железобетóнные шпáлы** тúмĕр-бетóн шпалăсéм

шпаргáлка (-и) *сущ. жен.* шпаргáлка (*пĕлмен ыйтăва вăрттăн вуласа пĕлмелли хут татки*); **студéнты на экзáмене пóльзовались шпаргáлками** студентсéм экзаментá шпаргалкăсемпе úсă кúрнă

шпиóн (-а) *сущ. муж.* шпиóн (*вăрттăн шыравçă*)

шпионáж (-а) *сущ.муж.* шпиóн ĕ́çĕ, шпиóнлăх; **занимáться шпионáжем** шпиóн ĕçné ту

шприц (-а) *сущ. муж.*; *множ.* **шприцы́** (-ев) *и* **шприцы́** (-óв) шприц (*ӳте эмел ямалли хатĕр*); **однорáзовый шприц** пĕррéлĕх шприц

шпрóты (-от *и* -óтов) *сущ. множ.*; *един.* **шпрóта** (-ы) *жен. и* **шпрот** (-а) *муж.* шпрот (*тĕтĕрсе консервланă пулă*)

шпýлька (-и) *сущ. жен.* пушкáр, туплашкá; **шпýлька нúток** çип пушкáрĕ

шрам (-а) *сущ. муж.* (*син.* рубéц) çĕвéк, сура́н йĕ́рĕ

шрапнéль (-и) *сущ. жен.* шрапнéль (*тимĕр татăкккисем сапалакан снаряд*)

шрифт (-а) *сущ. муж.*; *множ.* **шрифты́** (-óв) *и* **шри́фты** (-ов) шрифт (*пичетлемелли сас палли формăми*); **печáтать крýпным шри́фтом** шултрá шрифтпá пичетлé

штаб (-а) *сущ. муж.*; *множ.* **штабы́** (-óв) *и* **штáбы** (-ов) штаб (*çарсене тытса пыракан орган*); **штаб диви́зии** дивúзи штáбĕ; **генерáльный штаб** тĕп штаб

штáбель (-я) *сущ. муж.*; *множ.* **штабеля́** (-éй) *и* **штáбели** (-ей) шарша́н, купá; **штáбель дров** вýтă шарша́нĕ

штамп (-а) *сущ. муж.* **1.** штамп (*çапса, хĕссе ӳкерчĕк тумалли хатĕр*) **2.** (*син.* печáть) пичéт, штамп; **постáвить штамп на докумéнт** ĕç хýчĕ çинé штамп ларт

штáнга (-и) *сущ. жен.* **1.** штáнга (*спорт хатĕрĕ — тимĕр хурсă çине тăхăнтартнă йывăр çаврашкасем*); **поднять штáнгу** штáнга çĕклé **2.** каштá (*футбол, хоккей хапхин*); **мяч удáрился о штáнгу** мéчĕк каштанá пырсá çапăнчĕ

штангúст (-а) *сущ. муж.* штангúст, штáнгăçă (*штанга çĕклекен спортсмен*)

штаны́ (-óв) *сущ. множ.* йĕм; **вáтные штаны́** вáткăллă йĕм

штат[1] (-а) *сущ. муж.* штат, йыш (*пĕр çĕрте ĕçлекенсен*); **сокращéние штáтов** штатсенé чакарнú

штат[2] (-а) *сущ. муж.* штат (*патшалăх пайĕ*); **Соединённые Шта́ты Аме́рики** Америкăри Пĕрлешӳ́ллĕ Штатсéм

штéпсель (-я) *сущ. муж.*; *множ.* **штепселя́** (-éй) *и* **штéпсели** (-ей) штéпсель (*тĕрлĕ приборсене электричествăпа çыхăнтармалли хатĕр*)

штóпать (*наст.* -аю, -аешь, -ают; *прич. страд. прош.* -анный) *глаг. несов.* (*син.* зашивáть) саплá, çĕлé, пúтĕр; **штóпать чулкú** чăлхá саплá

штóпор (-а) *сущ. муж.* штóпор, пăрá (*кĕленче пăкки кăлармалли*)

штóра (-ы) *сущ. жен.* чýречé карри́; **раздви́нуть штóры** чýречé каррине сир

шторм (-а) *сущ. муж.; множ.* **штóрмы** (-ов) *и* **штормá** (-óв) çил-тăмăл (*тинĕс çинчи*)

штраф (-а) *сущ. муж.* штраф (*айăпа кĕнĕшĕн хунă тӳлев*); **наложúть штраф** штраф хур

штрафовáть (*наст.* -фýю, -фýешь, -фýют; *прич. страд. прош.* -фóванный) *глаг. несов., кого* штрафлá,

штраф хур; **штрафова́ть за хулига́нство** а́шкăннăшăн штрафла́

шту́ка (-и) *сущ. жен.* япала́, штук (*пĕр пек япаласенчен пĕри*); **не́сколько штук сигаре́т** темиçе́ сигаре́та ◆ **Вот так шту́ка!** Ак япала́! (*мĕлĕнсе калани*)

штукату́р (-а) *сущ. муж.*, **штукату́рщица** (-ы) *жен.* штукату́р; **рабо́тать штукату́ром** штукатурта́ ĕçлĕ

штукату́рить (*наст.* -рю, -ришь, -рят) *глаг. несов., что* штукатуркăла́, штукату́рка ту; **штукату́рить сте́ну** стенана́ штукату́рка ту

штукату́рка (-и) *сущ. жен.* штукату́рка (*стенана шăлса якатмалли çăра хутăш*)

штукату́рный *прил.* штукату́рка -ĕ; **штукату́рные рабо́ты** штукату́рка ĕçĕсе́м

штурва́л (-а) *сущ. муж.* штурва́л (*транспорт хатĕрĕн рулĕ*); **стоя́ть за штурва́лом** штурва́л тытса́ тăр

штурм (-а) *сущ. муж.* (*син.* ата́ка) тапа́ну́; тапа́нни́; **взять што́рмом** тапа́нса́ çĕнтĕр

што́рман (-а) *сущ. муж.* што́рман (*карап, самолет çулне хывакан специалист*)

штурмова́ть (*наст.* -му́ю, -му́ешь, -му́ют) *глаг. несов., кого-что* та́пăн, тапа́нса́ вăрç; **штурмова́ть го́род** хулана́ тапа́нса́ вăрç

штурмови́к (-а́) *сущ. муж.* штурмови́к (*çăр самолечĕ*)

штык (-а́) *сущ. муж.* штык (*пăшал вĕçĕнчи çĕçĕ*)

шу́ба (-ы) *сущ. жен.* кĕ´рĕк; **овчи́нная шу́ба** су́рăх тир кĕ´рĕкĕ

шум (-а) *сущ. муж.* шав, шăв-шăв; **дви́гаться без шу́ма** пĕр шăвсăр куçса́ пыр; **де́ти по́дняли шум** ачасе́м шăв-шăв çĕклĕрĕç

шуме́ть (*наст.* -млю́, -ми́шь, -мя́т) *глаг. несов.* **1.** шавла́, шав çĕкле́; **дере́вья шумя́т на ветру́** йывăçсе́м çилпе́ шавласа́ лараççĕ **2.** шавла́, кăшкăра́ш; **шуме́ть из-за пустяко́в** ки́рлĕ-ки́рлĕ ма́ршăн кăшкăра́ш

шу́мный *прил.* (*син.* гро́мкий; *ант.* ти́хий), **шу́мно** *нареч.* шăвла́, шăвшăвла́; шавлака́н; **шу́мная компа́ния** шăвла́ у́шкăн; **шу́мно вести́ себя́** хыта́ шавла́ ◆ **шу́мные согла́сные** шăвла́ хупă сасăсе́м (*б, п, г, к, з, с йышшисем*)

шу́рин (-а) хунчка́м (*арăмăн пиччĕшĕ*)

шуру́п (-а) *сущ. муж.* шуру́п (*пăрăмлă пăта*)

шурша́ть (*наст.* -шу́, -ши́шь, -ша́т) *глаг. несов.* чăштăрта́т, кăштăрта́т; **сухо́й камы́ш шурши́т от ве́тра** ти́пĕ хă´мăш çилпе́ чăштăртата́ть

шут (-а́) *сущ. муж.* (*син.* шутни́к, балагу́р) шу́´тçĕ, мыскараçă ◆ **шут горо́ховый** тăм писме́н, тăрпалта́й

шути́ть (*наст.* шучу́, шу́тишь, шу́тят) *глаг. несов.* **1.** шу́тле́, шу́т ту, шу́тлесе́ кала́ç; **он лю́бит шути́ть** вăл шу́тлеме́ юрата́ть **2.** *чем, с чем* (*син.* пренебрега́ть) выля́н, çăмăлтайла́н, ан асăрха́н; **нельзя́ шути́ть свои́м здоро́вьем** ха́рпăр сывлăхĕпе́ вылянма́ юрама́сть ◆ **шути́ть с огнём** вутпа́ выля́н (*синкере кĕтмесĕр*); **чем чёрт не шу́тит** тем те пулма́ пултара́ть

шу́тка (-и) *сущ. жен.* шу́т, шу́тле́в; шу́тлени́, шу́т туни́; **сказа́ть в шу́тку** шу́тлесе́ кала́ ◆ **кро́ме шу́ток** *вводн. сл.* чăннипе́, чăна́х; **рассуди́лся не на шу́тку** хыта́ çилленсе́ ка́йрĕ; **шу́тка сказа́ть** калама́ çă´мăл

шутли́вый *прил.* (*ант.* серьёзный), **шутли́во** *нареч.* шу́´тлĕ, шу́тле́влĕ; шу́тлесе́; **говори́ть шутли́вым то́ном** шу́тлесе́ кала́ç

шутни́к (-а́) *сущ. муж.*, **шутни́ца** (-ы) *жен.* шу́´тçĕ, шу́т ăсти́

шу́точный *прил.* шу́´тлĕ, мыскара́лла; **шу́точное стихотворе́ние** шу́´тлĕ că´вă ◆ **де́ньги не шу́точные** пĕ´чĕк укçа́ мар

Щ

щаве́ль (-я́) *сущ. муж.* кăшкáр утú; **ко́нский щаве́ль** ут кăшкáрĕ; **щи из щавеля́** кăшкáр утú яшкú

щади́ть (*наст.* щажу́, щади́шь, щадя́т; *прич. действ. наст.* щадя́щий, *прош.* щади́вший; *прич. страд. прош.* щажённый; *деепр.* щадя́) *глаг. несов., кого-что* хĕрхéн; сыхлá, упрá; **щади́ть здоро́вье** сывлăхá упрá; **нельзя́ щади́ть преда́теля** сутăнчăкá хĕрхенмé çук; **рабо́тать, не щадя́ сил** вăя́ хĕрхенмéсĕр ĕçлé

ще́бень (щéбня) *сущ. муж.*, **щебёнка** (-и) *жен.* вак чул, вакла́нчăк чул (*строительствăра, çул-йĕр тунă çĕрте усă кураканни*); **покры́ть доро́гу ще́бнем** çул çинé вак чул сар

щебета́ть (*наст.* -ечу́, -éчешь, -éчут; *повел. ф.* -ечú; *прич. действ. наст.* -éчущий; *деепр.* -ечá) *глаг. несов.* чĕвĕлтéт; **пти́цы щебе́чут** кайăксéм чĕвĕлтетéççĕ

щегол́ (щеглá) *сущ. муж.* шăкăлчú (*хитре юрлакан кайăк*)

щеголя́ть (*наст.* -я́ю, -я́ешь, -я́ют) *глаг. несов.* шукăльлéн, капăрлáн, янкăслáн; **щеголя́ть в мо́дном пла́тье** мóдăллă кĕпепé янкăсланса́ çýрé

ще́дрость (-и) *сущ. жен.* **1.** (*ант.* скýпость) юмáртлăх, тарава́тлăх, ы́рă кă´мăл **2.** (*син.* бога́тство; *ант.* скýдость) илпéклĕх, пуя́нлăх, тýлăхлăх; **ще́дрость ю́жной приро́ды** кăнтăртú çут çантáлăк илпéклĕхĕ

ще́дрый (*кратк. ф.* щедр, щедрá, ще́дро, *множ.* щедры́ *и* ще́дры) *прил.* **1.** (*син.* скупóй), **ще́дро** *нареч.* юмáрт, тарава́т, ы́рă кă´мăллă; **он ще́дро угости́л нас** вăл пирé тарава́т хăналáрĕ **2.** (*син.* бога́тый; *ант.* скýдный) илпéк, тýлăх, пуя́н, хáклă; **ще́дрый пода́рок** хáклă парнé

щека́ (щекú, щёку, на щекé) *сущ. жен.*; *множ.* **щёки** (щёк, щекáм, на щекáх) пит çăмартú, пит; **обморо́зить щёки** питé тăм илтéр

щекота́ть (*наст.* -очу́, -о́чешь, -о́чут; *прич. действ. наст.* -о́чущий; *деепр.* -оча́) *глаг. несов.* **1.** *кого-что* кăтăклá; **щекота́ть па́льцами** пӳрнесемпé кăтăклá **2.** *1 и 2 л. не употр.* (*син.* раздража́ть, зудéть) кăтăклантáр, çи; **в го́рле щеко́чет** пырá тем кăтăклантара́ть; **пыль щеко́чет глаза́** туса́н куçá çиéт

щеко́тка (-и) *сущ. жен.* кă´тăк; **боя́ться щеко́тки** кăтăкрáн хăрá

щелчо́к (-чкá) *сущ. муж.* шаккúт; шаклаттарнú; **дать щелчо́к по́ лбу** çамкарáн шаклаттáр

щель (-и) *сущ. жен.* хýшăк, çýрăк; **ще́ли в полу́** урáй хушăкĕсéм

щемúть (*наст.* щемлю́, щемúшь, щемя́т; *прич. действ. наст.* щемя́щий) *глаг. несов., кого-что* **1.** (*син.* сжимáть) хĕс, хĕстéр, чĕ´пĕт **2.** *1 и 2 л. не употр.* ыраттáр; **воспомина́ния щемя́т ду́шу** асá илни́ чуна́ ыраттара́ть

щено́к (-нкá) *сущ. муж.; множ.* **щенки́** (-óв) *и* **щеня́та** (-я́т) áнчăк, йы́тă çурú

ще́пка (-и) *сущ. жен.* турпáс, чĕ´лпĕк, çункáв ◆ **разлете́ться в ще́пки** чăл-пáр салансá кай

щепо́тка (-и), **щепо́ть** (-и) *сущ. жен.* чĕ´птĕм; **щепо́тка со́ли** пĕр чĕ´птĕм тăвáр

щети́на (-ы) *сущ. жен.* шăрт; **свина́я щети́на** сысна́ шă´рчĕ

щети́нистый *прил.* шă´ртлă; хырăнмáн; **щети́нистое лицо́** хырăнмáн сăн-пúт

щёголь (-я) *сущ. муж.*, **щеголи́ха** (-и) *жен.* шýкăль, кáпăрчăк, я́н-

кăс, хутаха́й; **Ве́ра больша́я щеголи́ха** Ве́ра шуҫăльленмĕ́ юрата́ть

щёлкать (*наст.* -аю, -аешь, -ают; *прич. действ. наст.* -ающий) *глаг. несов.* **1.** шаклатта́р, шаккӳ́т пар; **щёлкать по́ лбу** ҫамкара́н шаклатта́р

щёлок (-а *и* -у) *сущ. муж.* сĕ́лтĕ; кĕл шы́вĕ

щёлочь (-и) *сущ. жен.* сĕ́лтĕ (*ҫиекен хими пĕрлешĕвĕ*)

щётка (-и) *сущ. жен.* щётка; **сапо́жная щётка** а́тă-пушма́к щётки́; **зубна́я щётка** шăл щётки́; **платяна́я щётка** тумти́р щётки́

щи (щей, ща́ми, о щах) *сущ. множ.* купăста́ яшки́; **ки́слые щи** йӳ́ҫĕтнĕ купăста́ яшки́; **зелёные щи** си́мĕс яшка́

щи́колотка (-и) *сущ. жен.* (*син.* лодыжка) ура́ сыппи́, пакăлчắк; **грязь по щи́колотку** ура́ сыппи́ тара́н пы́лчăк

щипа́ть (*наст.* щиплю́, щи́плешь *и* щи́пешь, щи́плет *и* щи́пет, *множ.* щи́плем *и* щи́пем, щи́плете *и* щи́пете, щи́плят *и* щи́пят; *повел. ф.* щипли́ *и* щипи́; *прич. действ. наст.* щи́плющий *и* щи́пящий, *прош.* щипа́вший; *прич. страд. прош.* щи́панный; *деепр.* щипа́я) *глаг. несов.* **1.** *кого-что* (*син.* защемля́ть) чĕ́тпĕт; **щипа́ть па́льцами** пӳрнепе́ чĕ́пĕт **2.** *1 и 2 л. не употр., что* (*син.* жечь, раздража́ть) чĕ́пĕт, ҫунта́р, ҫатăртатта́р, ҫи; **пе́рец щи́плет язы́к** па́рăҫ чĕлхене́ ҫатăртаттара́ть **3.** (*син.* рвать) ҫырт, ҫи, тат; **о́вцы щи́плют траву́** сурăхсе́м курăка́ ҫắтăрт-ҫắтăрт ҫие́ҫҫĕ **4.** (*син.* дёргать, тереби́ть) турт, чĕ́пĕт; **щипа́ть стру́ны гита́ры** гита́ра хĕлĕхĕсене́ турткала́ ◆ **щипа́ть пти́чью ту́шку** ка́йăк тĕкне́ тат

щипцы́ (-о́в) *сущ. множ.* хĕ́скĕч, хы́ткăч; **вы́дернуть щипца́ми гвоздь** хыткăчпа́ пăта́ туртса́ кăла́р

щит (-а́) *сущ. муж.* **1.** хулкка́н (*ĕлĕкхи салтаксен хӳ́тĕлев хатĕрĕ*) **2.** щит, хӳ́тлĕх; **щит ору́дия** ту́пă щи́чĕ **3.** (*син.* стенд) щит, хăма́; **щит для стенгазе́ты** стена́ хаҫа́чĕ ҫакмалли́ хăма́; **щит управле́ния** йĕркелӳ́ щи́чĕ (*ĕҫе йĕркелесе пымалли приборсем вырнаҫтарни)*

щу́ка (-и) *сущ. жен.* ҫăрттан; **икряна́я щу́ка** вăлча́ллă ҫăрттан; **лови́ть щу́ку на живца́** ҫăрттана́ пĕ́чĕк пулăпа́ тыт

щу́пать (*наст.* -аю, -аешь, -ают) *глаг. несов, кого-что* хыпашла́, хыпала́; пӳрнепе́ тыт; **щу́пать па́льцами** пӳрнесемпе́ хыпашла́; **щу́пать пульс** юн таппине́ пӳрнепе́ тытса́ виҫ

щу́плый *(кратк. ф.* щупл, щупла́ *и* щу́пла, щу́пло, *множ.* щу́плы) *прил.* (*син.* слаборази́льный, худо́й) ырха́н, ырханкка́, имше́р; **щу́плый ма́льчик** имше́р арҫы́н ача́

щурёнок (-нка) *сущ. муж.; множ.* **щуря́та** (-я́т) ҫăрттан чĕппи́, пĕ́чĕк ҫăрттан

щу́рить (*наст.* -рю, -ришь, -рят; *повел. ф.* щурь, щу́рьте) *глаг. несов.* хĕстер, хĕс; **смотре́ть, щу́ря глаза́** куҫа́ хĕссе́ пăх

щу́риться (*наст.* -рюсь, -ришься, -рятся; *повел. ф.* щу́рься, щу́рьтесь) *глаг. несов.* куҫа́ хĕс; **щу́риться от со́лнца** хĕвĕ́л йăмăхтарнипе́ куҫа́ хĕс

щу́чий *прил.* ҫăрттан -ĕ; **щу́чья икра́** ҫăрттан вăлчи́

Э

эвакуа́ция (-и) *сущ. жен.* эвакуа́ци, куçарӳ; эвакуацилени́, куçарни́; **осуществля́ть эвакуа́цию населе́ния** халăха́ эвакуацилé

эвакуи́ровать (*наст.* -рую, -руешь, -руют; *прич. страд. прош.* -рованный) *глаг. сов. и несов., кого-что* эвакуацилé, куçа́р (*фронтран тыла*); **эвакуи́ровать заво́д** заводá куçа́р; **размести́ть эвакуи́рованных** эвакуацилéнĕ çынсенé вырнаçтарсá тух

эволю́ция (-и) *сущ. жен.* эволю́ци, аталанӳ; аталанни́ *(майĕпен çĕнелнипе тăрук улшăнмасăр пулаканни);* **эволю́ция жи́зни на Земле́** Çĕр çинчé пӳрнăç аталанни́

эгои́зм (-а) *сущ. муж. (син.* себялю́бие) эгои́зм, ха́рпăрçăлăх (*харпăр хăйшĕн кăна тăрăшни*); **проявле́ния эгои́зма** ха́рпăрçăлăх палăрăмĕсéм

эгои́ст (-а) *сущ. муж.*, **эгои́стка** (-и) *жен.* эгои́ст, ха́рпăрçă; **эгоисти́ческий, эгоисти́чный** *прил. (син.* себялюби́вый), **эгоисти́чно, эгоисти́чески** *нареч.* эгои́ст -ĕ; ха́рпăрçă -ĕ; эгоистлá, харпăрçăллá; **он эгоисти́чно ведёт себя́** вăл хăйнé эгоистлá тыткалáть

эква́тор (-а) *сущ. муж.* эква́тор (*Çĕр чăмăрĕн çурçĕр тата кăнтăр пайĕсене уйăракан йĕр*)

экваториа́льный *прил.* эква́тор -ĕ; экваторти́; **экваториа́льный по́яс** эква́тор тă´рăхĕ

эквивале́нтность (-и) *сущ. жен.* эквивале́нтлăх, та́нлăх, тан ха́клăх

эквивале́нтный *прил.*, **эквивале́нтно** *нареч.* (*син.* равноце́нный) эквивале́нтлă, тан ха́клă; **эквивале́нтный обме́н това́рами** тан ха́клă таварсемпе́ улăшни́

экза́мен (-а) *сущ. муж., по чему* экза́мен, тĕрĕслӳ´ (*вĕреннине ыйтса тĕрĕслени*); **сдать экза́мен по родно́му языку́** тăва́н чĕлхепе́ экза́мен пар ◆ **экза́мен на му́жество** хăюлăха́ тĕрĕслени́ *(пĕр-пĕр хăрушă ларутăрура)*

экзамена́тор (-а) *сущ. муж.* экзамена́тор, экза́мен йышăнакан

экзаменацио́нный *прил.* экза́мен -ĕ; тĕрĕсле́в -ĕ; **экзаменацио́нный биле́т** экза́мен биле́чĕ

экзаменова́ть (*наст.* -ну́ю, -ну́ешь, -ну́ют) *глаг. несов., кого* экза́мен ту, экза́мен тыттáр, тĕрĕслé; **экзаменова́ть студе́нтов** студентсенé экза́мен тыттáр

экземпля́р (-а) *сущ. муж.* экземпля́р (*пĕр йышши нумай япаларан пĕри*); **кру́пный экземпля́р ба́бочки** уйрăмáх пысăк лĕ´пĕш; **два экземпля́ра кни́ги** ике́ кĕнеке́ *(пĕр пекки)*

экипа́ж[1] (-а) *сущ. муж. (син.* колáска) çă´мăл урапá, ку́мé; **рессо́рный экипа́ж** рессо́рлă ку́мé

экипа́ж[2] (-а) *сущ. муж. (син.* кома́нда) экипа́ж (*карап, самолет е ыт. машина команди*); **экипа́ж косми́ческого корабля́** ко́смос карáпĕн экипа́жĕ

экологи́ческий *прил.*, **экологи́чески** *нареч.* эколо́ги -ĕ; **экологи́ческая ситуа́ция** эколо́ги ларӳ-тă´рăвĕ; **экологи́чески чи́стая проду́кция** эколо́ги тĕлĕшĕнчéн тасá продýкци

эколо́гия (-и) *сущ. жен.* **1.** эколо́ги (*пĕр вырăнта пурăнакан ӳсен-тăрансемпе чĕр чунсен тата çут çанталăк хутлăхĕн çыхăнуллă тăрăмĕ*); **эколо́гия ле́са** вăрмáн эколо́гийĕ; **пробле́мы эколо́гии Чува́шской Респу́блики** Чăвáш Республики́ эколо́гийĕн çи́вĕч ыйтăвĕсéм **2.** эколо́ги (*ӳсентăрансемпе чĕр чунсен çут çанта-*

лăкри çыхăнăвĕсене тĕпчекен ăслăлăх); **эколо́гия живо́тных** чĕр чунсĕн эколо́гийĕ; **эколо́гия челове́ка** этне́м эколо́гийĕ

эконо́мика (-и) *сущ. жен.* **1**. эконо́мика (*обществăри производство хутшăнăвĕсен, хуçалăхăн пĕтĕм системи*); **эконо́мика Росси́и** Раççе́й экономики́; **эконо́мика перехо́дного пери́ода** кӳçăмлă та́пхăр экономики́ **2**. эконо́мика (*производство хутшăнăвĕсене, хуçалăх ĕçĕн системине е унăн пайне тĕпчекен ăслăлăх*); **о́бщая эконо́мика** пĕтĕмĕшле́ эконо́мика; **эконо́мика трудá** ĕçле́в экономики́

экономи́ст (-а) *сущ. муж.* экономи́ст (*экономика специалисчĕ*); **рабо́тать экономи́стом** экономистра́ ĕçле́

эконо́мить (*наст.* -о́млю, -о́мишь, -о́мят; *повел. ф.* -о́мь; *деепр.* -о́мя) *глаг. несов.* (*син.* сберега́ть) перекетле́; **эконо́мить де́ньги** укçа́ перекетле́; **эконо́мить электроэне́ргию** электроэне́рги перекетле́ **2**. (*син.* выга́дывать) переке́т ту, тăкака́ чака́р, пайта́ кур; **эконо́мить на то́пливе** то́пливо тăкакне́ чака́р

экономи́ческий *прил.*, **экономи́чески** *нареч.* эконо́мика -ĕ; **экономи́ческие нау́ки** эконо́мика ăслăлăхĕсе́м; **экономи́ческий кри́зис** эконо́мика кри́сисĕ; **экономи́чески ра́звитое хозя́йство** эконо́мика тĕлĕшĕнче́н аталáннă хуçа́лăх

экономи́чный *прил.* (*син.* вы́годный) переке́тлĕ, пайта́ллă, ту́хăçлă, саха́л тăка́клă; **экономи́чный прибо́р** саха́л тăка́клă ха́тĕр

эконо́мия (-и) *сущ. жен.* переке́т, пайта́; перекетлени́; **эконо́мия сырья́** чĕр тава́р перекетлени́; **соблюда́ть эконо́мию** переке́тлĕ пул; **получи́ть большу́ю эконо́мию средств** укçа́-те́нкĕ нума́й перекетле́

эконо́мный *прил.* (*син.* бережли́вый; *ант.* расточи́тельный), **эконо́мно** *нареч.* переке́тлĕ; **эконо́мная же́нщина** переке́тлĕ хĕра́рăм; **жить эконо́мно** переке́тлĕ пу́рăн

экра́н (-а) *сущ. муж.* **1**. экра́н (*кино кăтартмалли шурă лаптăк*); **широ́кий экра́н** а́нлă экра́н **2**. экра́н (*тĕрлĕ хатĕрсен куранý пайĕ*); **экра́н телеви́зора** телеви́зор экра́нĕ

экрани́зация (-и) *сущ. жен.* экранла́в; экранлани́ (*литература хайлавĕ тăрăх фильм ӳкерни; çавăн пек фильм*); **экрани́зация по́вести** повеçе́ экранлани́

экскава́тор (-а) *сущ. муж.* экскава́тор (*çĕр чавса тиекен, тĕксе куçаракан машина*); **многоковшо́вый экскава́тор** нумáй куркáллă экскава́тор

экскурса́нт (-а) *сущ. муж.*, **экскурса́нтка** (-и) *жен.* экскурса́нт (*экскурсие хутшăнакан*); **гру́ппа экскурса́нтов** экскурсантсе́н ӳшкăнĕ

экскурсио́нный *прил.* экскӳрси -ĕ; **экскурсио́нный авто́бус** экскӳрси автóбусĕ; **экскурсио́нное обслу́живание** экскурсисе́м ирттерни́

экскурсия (-и) *сущ. жен.* экскӳрси (*музее, паллă вырăна ушкăнпа курма кайни*); **экскурсия по го́роду** хулари́ экскӳрси; **провести́ экскурсию** экскӳрси ирттéр

экспеди́ция (-и) *сущ. жен.* экспеди́ци (*шырав, тĕпчев ĕçĕ тăвакан ушкăн*); **археологи́ческая экспеди́ция** археолóги экспеди́цийĕ; **к ме́сту паде́ния самолёта напра́влена спаса́тельная экспеди́ция** самолёт ӳ́кнĕ çĕре́ хăтарӳ экспеди́цийĕ я́нă

эксперимéнт (-а) *сущ. муж.* **1**. (*син.* о́пыт) эксперимéнт, сăнáв; **хими́ческий эксперимéнт** хи́ми сăнáвĕ **2**. (*син.* попы́тка) çĕ ́нĕлĕх, пуçăнӳ; тăрăшса́ пăхни́, пуçăнни́ (*çĕнĕ ĕçе*); **вложи́ть де́ньги в риско́ванный эксперимéнт** ша́нчăксăр çĕнĕлĕхе́ укçа́ хыв

эксперимента́льный *прил. (син.* о́пытный) эксперимéнт -ĕ; сăнáв -ĕ; эксперимéнтлă, сăнáвлă; **эксперимента́льная биоло́гия** эксперимéнтлă биолóги; **в эксперимента́льном поря́дке** сăнáв шучĕпé

эксперименти́ровать (*наст.* -рую, -руешь, -руют) *глаг. несов., над кем-чем или с кем-чем* эксперимéнт ту, сăнáв ту; **эксперименти́ровать с пти́цами** кайăксемпé сăнáв ту

экспéрт (-а) *сущ. муж.* экспéрт (*кăткăс ыйтăва татса пама пултаракан ăста специалист);* **техни́ческий экспéрт** тéхника экспéрчĕ; **заключéние экспéрта** экспéрт пĕтĕмлéтĕвĕ

эксперти́за (-ы) *сущ. жен.* эксперти́за, экспéрт тĕрĕслéвĕ; **суде́бно-медици́нская эксперти́за** суд-медици́на экспертизи́; **дать материа́лы на эксперти́зу** материалсенé экспертизăнá пар

экспéртный *прил.* экспéрт -ĕ; **экспéртная комúссия** экспертсéн комúссийĕ

эксплуата́тор (-а) *сущ. муж.* эксплуатáтор, пýсмăрçă (*çын ĕçĕпе пурăнакан*)

эксплуата́ция (-и) *сущ. жен.* **1**. эксплуатáци, пýсмăр; пусмăрланú (*урăх çынна хăйшĕн ĕçлеттерни*); **эксплуата́ция трудя́щихся** ĕç çыннисенé пусмăрланú **2**. (*син.* испóльзование) ýсă курнú, ĕçлеттернú; **пра́вильная эксплуата́ция те́хники** техникáнá тĕ́рĕс ĕçлеттернú; **эксплуата́ция нефтяно́го месторожде́ния** нефть тухакáн çĕрсемпé ýсă курнú

эксплуати́ровать (*наст.* -рую, -руешь, -руют; *прич. страд. наст.* -руемый, *прош.* -рованный) *глаг. несов.* **1**. *кого-что* эксплуатациленé, пусмăрлá, ýсă кур; **эксплуати́ровать чужóй труд** çын ĕçĕпé ýсă кур **2**. (*син.* испóльзовать) ĕçлеттéр, тытклá, ýсă кур; **эксплуати́ровать маши́ны** машинăсенé ĕçлеттéр

экспози́ция (-и) *сущ. жен.* экспози́ци, кăтартý; кăтартнú (*выставкăра, витринăра*); **экспози́ция карти́н худóжника** худóжник картинисенé кăтартнú

экспона́т (-а) *сущ. муж.* экспонáт (*выставкăра кăтартакан япала*); **экспона́ты музéя** музéй экспоначĕсéм

э́кспорт (-а) *сущ. муж. (син.* вы́воз; *ант.* и́мпорт, ввоз) э́кспорт, ютá сутнú (*урăх çĕршыва товар тăратни*); **производи́ть проду́кцию на э́кспорт** ютá сутмá проду́кци тусá кăлáр

экспортёр (-а) *сущ. муж.* (*ант.* импортёр) экспортёр, ютá сутакáн; **стра́ны-экспортёры не́фти** нефть сутакáн çĕршывсéм

экспорти́ровать (*наст.* -рую, -руешь, -руют; *прич. страд. наст.* -руемый, *прош.* -рованный) *глаг. сов. и несов., кого-что (син.* вывози́ть; *ант.* импорти́ровать, ввози́ть) экспортлá, э́кспорт ту, ютá сут; **Росси́я экспорти́рует нефть и газ** Раççéй нефтьпé газ экспортлáть

э́кспортный *прил. (ант.* и́мпортный) э́кспорт -ĕ; **э́кспортные по́шлины** э́кспорт пошлинисéм

экспре́сс (-а) *сущ. муж.* экспрéсс (*сахал чарăну туса хăвăрт çýрекен транспорт*); **авто́бус-экспре́сс** экспрéсс автóбус

экстенси́вный *прил. (ант.* интенси́вный), **экстенси́вно** *нареч.* экстенси́влă *(тухăçлăха ýстернипе мар, тăкака нумайлатнипе ýсĕм тумалли*); **экстенси́вное земледе́лие** экстенси́влă çĕр ĕ́çĕ

экстéрн (-а) *сущ. муж.* экстéрн (*занятисене куллен çýремесĕр, килте вĕренсе экзамен паракан*); **он око́нчил второ́й курс экстéрном** вăл и́к-

кĕмĕш курса́ экстéрн йĕркипé пĕтéрнĕ

экстрема́льный *прил. (син.* кра́йний, труднéйший) чи çи́вĕч, чи йы́вăр, хăру́шă; **космона́вты рабо́тают в экстрема́льных усло́виях** космонавтсéм чи йы́вăр условисенчé ĕçлéççĕ

экстреми́зм (-а) *сущ. муж.* экстреми́зм (*политикăра чикĕсĕр çивĕч, хаяр мелсемпе усă курни*)

экстреми́ст (-а) *сущ. муж.* экстреми́ст (*экстремизм майлă çын*)

экстреми́стский *прил.* экстреми́зм -ĕ; экстреми́ст -ĕ; экстремистла́; **экстреми́стские мéтоды** экстремистла́ мелсéм; **экстреми́стские группиро́вки** экстремистсéн ушкăнĕсéм

э́кстренный (*кратк. ф.* -рен, -ренна, -ренны; *сравн. ст.* -реннее; *превосх. ст.* -реннейший) *прил.*, **э́кстренно** *нареч.* (*син.* сро́чный, спéшный) васка́влă, кĕтéвсĕр; **э́кстренное сообщéние** васка́влă хыпа́р; **мне ну́жно э́кстренно вы́ехать** ма́нăн пĕр тăхтаса́ тăма́сăр тухса́ кая́с пула́ть

элева́тор (-а) *сущ. муж.* элева́тор (*тырă тасатса, типĕтсе усракан предприяти*)

элега́нтный *прил. (син.* изя́щный) çéпĕç, чечéн, кĕрнéклĕ, хӳ́хĕм; **элега́нтный костю́м** хӳ́хĕм тум

электора́т (-а) *сущ. муж.* суйлавçăсéм, суйлакансéн йы́шĕ

элéктрик (-а) *сущ. муж.* элéктрик (*электротехника специалисчĕ*)

электрифика́ция (-и) *сущ. жен.* электрифика́ци; электри́чество кĕртни́; **электрифика́ция сёл** ялсенé электри́чество кĕртни́

электрифици́ровать (*наст.* -и́рую, -и́руешь, -и́руют) *глаг. сов. и несов., что* электрификацилé, электрифика́ци ту, электри́чество кĕрт; **электрифици́ровать страну́** çĕршыва́ электрификацилé

электри́ческий *прил.* электри́чество -ĕ; **электри́ческий ток** электри́чество то́кĕ; **электри́ческая ла́мпочка перегорéла** электри́чество лампочки́ çунса́ ка́йнă

электри́чество (-а) *сущ. сред.* электри́чество (*зарядлă пайсем куçнипе пулакан, пралук тăрăх парса тăракан энерги*); **провести́ в дома́ электри́чество** çуртсенé электри́чество кĕрт

электрово́з (-а) *сущ. муж.* электрово́з (*электричествăпа ĕçлекен локомотив*)

электромоби́ль (-я) *сущ. муж.* электромоби́ль (*электричествăпа ĕçлекен автомобиль*)

электромото́р (-а) *сущ. муж.* электромото́р, электри́чество мото́рĕ

электро́ника (-и) *сущ. жен.* электро́ника (*электричество тата магнит пулăмĕсемпе усă курса хатĕрленĕ приборсем*); **электро́ника косми́ческого корабля́** ко́смос кара́пĕн электроники́; **бытова́я электро́ника** кил-çуртри́ электро́ника

электро́нный *прил.* электро́ника -ĕ; **электро́нные устро́йства** электро́ника хатĕрĕсéм

электросва́рка (-и) *сущ. жен.* электросва́рка (*электричествăпа шăратса çыпăçтарни*)

электроста́нция (-и) *сущ. жен.* электроста́нци (*электричество энергийĕ туса кăларакан предприяти*); **а́томная электроста́нция** а́томлă электроста́нци; **ветрова́я электроста́нция** çил электроста́нцийĕ

электротéхника (-и) *сущ. жен.* электротéхника (*электричествăпа ĕçлекен техника хатĕрĕсем*); **бытова́я электротéхника** кил-çуртри́ электротéхника

электроэнéргия (-и) *сущ. жен.* электроэнéрги, электри́чество энéргийĕ; **эконо́мить электроэнéргию** электроэнергиé перекетлé

элеме́нт (-а) *сущ. муж.* **1.** элеме́нт *(ансатрах веществосене пайланман хими веществи)*; **периоди́ческая систе́ма элеме́нтов** элементсе́н периодлă системи́ **2.** пай, тӳпе́; **ру́сские элеме́нты в чува́шской ле́ксике** чăва́ш лексикинчи́ вы́рăс сăмахĕсе́н тӳпи́ **3.** па́ллă; **элеме́нты романти́зма в стиха́х** сăвăсенчи́ романти́зм паллисе́м **4.** вăй; **прогресси́вные элеме́нты о́бщества** обществăри́ прогресси́влă вăйсе́м

элемента́рный *прил.* **1.** (*син.* простéйший) чи ансáт, чи çă´мăл; **элементáрная задáча** чи çă´мăл задáча **2.** чи ки́рлĕ; **нет элементáрных усло́вий для рабо́ты** ĕçлеме́ чи ки́рлĕ майсе́м çук **3.** пӳрте пĕлекéн, пури́ншĕн те па́ллă; **элементáрные и́стины** пури́ншĕн те па́ллă чăнлăхсе́м

эли́та (-ы) *сущ. жен.* **1.** паха́ вă´рлăх, паха́ ăрáт (*малалла ĕрчетме усă курмалли*) **2.** эли́та (*обществăри ушкăнăн чи чаплă, витĕмлĕ пайĕ*); **полити́ческая эли́та** политикăри́ эли́та

эмалиро́ванный *прил.* эмальле́нĕ, эма́ль ви́тнĕ; **эмалиро́ванная посу́да** эмальле́нĕ са́вăт-сапа́

эма́ль (-и) *сущ. жен.* эма́ль (*йăлтăркка çирĕп сăрă*); **покры́ть эма́лью** эмальпе́ вит ◆ **зубна́я эма́ль** шăл витти́

эмбле́ма (-ы) *сущ. жен.* эмбле́ма *(символла ӳкерчĕк, значок)*; **эмбле́ма клу́ба** клуб эмблеми́

эмигра́нт (-а) *сущ. муж.*, **эмигра́нтка** (-и) *жен.* эмигра́нт (*эмиграцие кайнă çын*)

эмигра́ция (-и) *сущ. жен.* эмигра́ци (*урăх çĕршыва яланлăхах куçса кайни*); **жизнь в эмигра́ции** эмиграцире́ пурăннú

эмигри́ровать (*наст.* -ирую, -ируешь, -ируют) *глаг. сов. и несов.* эмиграци́е кай, куçсá кай (*урăх çĕршыва*)

эми́ссия (-и) *сущ. жен.* эми́сси (*хаклă хутсем, хут укçа кăларни)*

эмоциона́льный *прил.*, **эмоциона́льно** *нареч.* хĕрӳ´, хĕрӳ´ллĕ, çĕкле́нчĕк; **эмоциона́льный подъём** кă´мăл-тӳ́йăм çĕкленни́; **он говори́т эмоциона́льно** вăл хĕрӳ´ллĕн калаçа́ть

эмо́ция (-и) *сущ. жен.* (*син.* чу́вство) кă´мăл-тӳ́йăм; **находи́ться в плену́ эмо́ций** кă´мăл еккине́ яр

э́ндшпиль (-я) *сущ. муж.* вă´йă вĕ´çĕ, юлашки́ та́пхăр (*шахмат, шашка вăййисенче*)

энергети́ка (-и) *сущ. жен.* энергéтика (*халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ йышши энерги туса унпа усă курассине йĕркелекен пайĕ*); **а́томная энергéтика** а́томлă энергéтика

энергети́ческий *прил.* энергéтика -ĕ; энéрги -ĕ; **энергети́ческие ресу́рсы** энéрги çăлкуçĕсéм; **энергети́ческий кри́зис** энергéтика кри́сисĕ, энéрги çитменнú

энерги́чный *прил.* (*син.* реши́тельный, акти́вный), **энерги́чно** *нареч.* хастáр, хастáрлă, вăй-хавáллă, хĕрӳ´ллĕ; пуçарýллă; **энерги́чный руководи́тель** пуçарýллă ертӳ´çĕ; **он рабо́тает энерги́чно** вăл хастáр ĕçлéт

эне́ргия (-и) *сущ. жен.* **1.** эне́рги, вăй-хăвáт; **со́лнечная эне́ргия** хĕвéл вăй-хăвáчĕ; **электри́ческая эне́ргия** электри́чество эне́ргийĕ **2.** (*син.* реши́тельность, акти́вность) хастáрлăх, вăй-хавáл, хĕрӳ´лĕх; пуçарýлăх; **он по́лон эне́ргии** ýнăн вăй-хавáлĕ тапсá тăрáть

энтузиа́зм (-а) *сущ. муж. (син.* подъём, увлечённость) хавхаланý, хастáрлăх, çĕкленӳ´; **рабо́тать с энтузиа́змом** хавхалансá ĕçлé

энтузиа́ст (-а) *сущ. муж.*, **энтузиа́стка** (-и) *жен.* хастáр, хавхалáнчăк; **энтузиа́ст лы́жного спо́рта** йĕ´лтĕр спортнé хастáр хутшăнакáн

энциклопе́дия (-и) *сущ. жен.* эн-

циклопе́ди *(пур тӗрлӗ пӗлӳлӗхе е пӗр ӑслӑлӑх ӑнлавӗсене çырса кӑтартакан словарь)*; **медици́нская энциклопе́дия** медици́на энциклопе́дийӗ; **Кра́ткая чува́шская энциклопе́дия** Кӗскé чӑва́ш энциклопе́дийӗ

эпигра́мма (-ы) *сущ. жен.* эпигра́мма (*тӑрӑхласа çырнӑ кӗске сӑвӑ*); **дру́жеская эпигра́мма** ту́слӑ эпигра́мма

эпи́граф (-а) *сущ. муж.* эпи́граф (*хайлавӑн тӗп шухӑшне палӑртса ун умне лартнӑ цитата*); **эпи́граф к по́вести** по́весть эпи́графӗ

эпиде́мия (-и) *сущ. жен.* эпиде́ми (*сикекен чир анлӑн сарӑлни*); **эпиде́мия гри́ппа** грипп эпиде́мийӗ

эпизо́д (-а) *сущ. муж.* **1.** (*син.* слу́чай, происше́ствие) пу́лӑм, пулни́иртни́, пу́лнӑ ӗç; **эпизо́ды из мое́й жи́зни** ман пурнӑçра́ пулни́-иртниçе́м **2.** (*син.* фрагме́нт) сы́пӑк, вы́рӑн *(илемлӗ хайлавра)*

эпиле́псия (-и) *и* **эпилепси́я** (-и) *сущ. жен.* тытама́к (*çын тӑнне çухатнипе, ӳт-пӗвӗ туртӑна-туртӑна хутланнипе палӑракан чир*); **припа́док эпиле́псии** тытама́к тытни́

эпило́г (-а) *сущ. муж. (ант.* прол**о́**г) эпило́г, вӗçле́в *(литература, музыка хайлавӗн тытӑмӗнче);* **эпило́г рома́на** роман вӗçле́вӗ

эпи́тет (-а) *сущ. муж.* эпи́тет (*япала ятне ӑнлантаракан илемлӗ определени*)

эпопе́я (-и) *сущ. жен.* эпопе́я (*эпос жанрӗпе çырнӑ пысӑк калӑплӑ хайлав*); **эпопе́я Шо́лохова «Ти́хий Дон»** Шо́лоховӑн «Лӑ́пкӑ Дон» эпопейи́

э́пос (-а) *сущ. муж.* **1.** э́пос (*калуллӑ литература жанрӗ, ӑна лирикӑпа драмӑран уйӑрса çапла калаççӗ*) **2.** э́пос (*паттӑрсен чаплӑ ӗçӗсене, халӑх пурнӑçӗнчи паллӑ самантсене сӑнлакан халӑх сӑвви-юррисен пуххи*)

эпо́ха (-и) *сущ. жен.* самана́, та́пхӑр, вӑ́хӑт; **геро́ические эпо́хи ру́сской исто́рии** вы́рӑс исто́рийӗн паттӑрла́ тапхӑрӗсе́м; **совреме́нная эпо́ха** хальхи́ самана́

э́ра (-ы) *сущ. жен.* **1.** э́ра (*паллӑ самантран пуçлама йышӑннӑ çул шучӗ*); **на́ша э́ра** пи́рӗн э́ра *(Христос çуралнӑ тесе шутлакан самантран пуçланать*); **в тре́тьем ве́ке до на́шей э́ры** пи́рӗн эрӑчченхи́ ви́ççӗмӗш ӗмӗртé **2.** (*син.* эпо́ха) самана́, вӑ́хӑт; **мы живём в э́ру космона́втики** эпи́р космона́втика саманинче́ пурӑна́тпӑр

э́рзя (-и) *сущ. муж. и жен.* ирçе́ (*мордва халӑхӗн пӗр юппи*); **селе́ние э́рзи** ирçе́ ялӗсе́м

эрзя́нин (-а) *сущ. муж.*, **эрзя́нка** (-и) *жен.*; *множ.* **эрзя́не** (-я́н) ирçе́; **пра́здничный наря́д эрзя́нки** ирçе́ хӗрӑрӑмӗн уя́в ту́мӗ

эрзя́нский *прил.* ирçе́ -ӗ; **эрзя́нский язы́к** ирçе́ чӗлхи́

эро́зия (-и) *сущ. жен.* (*син.* разруше́ние) çийӗнӳ́´; çини́, çийӗнни́; **эро́зия мета́ллов** металсе́м çийӗнни́ (*сӑм., йӳçек лекнипе*); **ветрова́я эро́зия по́чвы** тӑпра́ çилпе́ çийӗнни́

эро́тика (-и) *сущ. жен.* эро́тика (*ара́рӑм хутшӑнӑвӗсене пытармасӑр кӑтартни*)

эроти́ческий *прил.* эро́тика -ӗ; эро́тикӑллӑ, ясӑ́р; **эроти́ческие фи́льмы** эро́тикӑллӑ фильмсе́м

эруди́рованный *прил.* пы́сӑк пӗлӳ́´ллӗ, эруди́циллӗ; **эруди́рованный иссле́дователь** пы́сӑк пӗлӳ́´ллӗ тӗпчӗвçӗ

эруди́ция (-и) *сущ. жен.* (*син.* позна́ния) пӗлӳ́´лӗх, та́рӑн пӗлӳ́´, эруди́ци

эска́дра (-ы) *сущ. жен.* эска́дра (*çар карапӗсен е самолечӗсен пысӑк пӗрлешӗвӗ*)

эскадри́лья (-и) *сущ. жен.; множ.* **эскадри́льи** (-лий) эскадри́лья (*çар*

самолечёсен отрячё, полк пайё); **эскадри́лья штурмовико́в** штурмовиксе́н эскадрилйи́

эскадро́н (-а) *сущ. муж.* эскадро́н (*утлă çарта — рота шайёнчи подразделени*)

эскала́тор (-а) *сущ. муж.* эскала́тор (*куçакан пусма*); **эскала́тор метро́** метро́ эскала́торĕ; **подня́ться на эскала́торе** эскалаторпа́ хăпа́р

эскала́ция (-и) *сущ. жен. (син.* рост) ӳ́сĕм, вăйлану́; ӳсни́, вăйланни́; **эскала́ция вое́нных де́йствий** вắрçă ĕçĕсе́м вăйланни́

эски́з (-а) *сущ. муж.* эски́з, ĕлке́ (*малтанлăха тунă ӳкерчĕк*)

эски́зный *прил.*, **эски́зно** *нареч.* эски́з ...; ĕлкéлĕх, малта́нлăх; **эски́зный рису́нок** малта́нлăх ӳке́рчĕк, эски́з ӳке́рчĕк

эспера́нто *сущ. нескл. муж. и сред.* эспера́нто (*пĕтĕм тĕнчере усă курма хайланă чĕлхе*); **писа́ть на эспера́нто** эсперантăллá çыр

эстафе́та (-ы) *сущ. жен.* эстафе́та (*темиçе спортсмен пĕр-пĕрин хыççăн ылмашнă чухне алран алла яп̆ала парса ăмăртни*); **лы́жная эстафе́та** йĕлтĕрçĕсе́н эстафети́

эстафе́тный *прил.* эстафе́та -ĕ; эстафе́тăллă, ылмашу́ллă; **эстафе́тный бег** ылмашса́ чупни́

эсте́тика (-и) *сущ. жен.* **1.** эсте́тика (*илемлĕхе тĕпчекен ăслăлăх*) **2.** (*син.* красота́) эсте́тика, илéм, илéмлĕх, хитрéлĕх; **эсте́тика оде́жды** тумти́р илéмлĕхĕ; **произво́дственная эсте́тика** производство эстетики́

эстети́ческий *прил.*, **эстети́чески** *нареч.* эсте́тика -ĕ; илéмлĕх -ĕ; **эстети́ческие тео́рии** эсте́тика теорийĕсе́м; **эстети́ческое воспита́ние дете́й** ачасене́ илемлĕхé ăнланмá вĕрентни́

эстра́да (-ы) *сущ. жен.* **1.** эстра́да (*артистсем тухса вылямалли çӳллĕ вырăн*); **певе́ц вы́шел на эстра́ду** юрăçă эстра́да çине́ тӳхрĕ **2.** эстра́да (*сцена çинче тĕрлĕ номерсем кăтартмалли жанр*); **арти́сты эстра́ды** эстра́да артисчĕсе́м

эстра́дный *прил.* эстра́да -ĕ; **эстра́дный конце́рт** эстра́да концéрчĕ

эта́ж (-а́) *сущ. муж.; множ.* **этажи́** (-е́й) хут (*пысăк çуртăн*); **мы живём на седьмо́м этаже́** эпи́р çи́ччĕмĕш хутра́ пурăна́тпăр

этаже́рка (-и) *сущ. жен.* этажéрка (*хутлă-хутлă сентре*); **положи́ть кни́ги на этаже́рку** кĕнекесене́ этажéрка çине́ хур

эта́п (-а) *сущ. муж.* **1.** (*син.* ста́дия) та́пхăр, пу́сăм; **эта́пы разви́тия страны́** çĕршы́в аталáнăвĕн тапхăрĕсе́м

э́тика (-и) *сущ. жен.* **1.** э́тика (*этеплĕх, мораль принципĕсемпе нормисене тĕпчекен ăслăлăх*) **2.** этéплĕх, морáль нормисéм; **врачебная э́тика** врáчăн морáль нормисéм

этике́т (-а) *сущ. муж.* этике́т, мешехе́ (*йышăннă йĕрке*); **дипломати́ческий этике́т** дипломáти этикéчĕ; **речево́й этике́т** пуплешӳ́ мешехи́

этике́тка (-и) *сущ. жен. (син.* ярлычо́к) этике́тка, тавáр хýчĕ; **этике́тка на буты́лке** кĕленчé çинчи́ этике́тка

эти́ческий *прил.* э́тика -ĕ, этéплĕх -ĕ; **эти́ческие но́рмы** этéплĕх йĕркисéм

этимологи́ческий *прил.* этимолóги -ĕ; **этимологи́ческий слова́рь ру́сского языка́** выры́ас чĕлхи́н этимолóги словáрĕ

этимоло́гия (-и) *сущ. жен.* **1.** этимолóги (*чĕлхе пĕлĕвĕн сăмахсен несĕл-пулăвне тĕпчекен пайĕ*) **2.** этимолóги, пулý, нéсĕл; **установи́ть этимоло́гию сло́ва** сăмáх пулăвне тупсá пáлăрт

этнографи́ческий *прил.* этногрáфи -ĕ; **этнографи́ческий музе́й** этногрáфи музéйĕ

этногра́фия (-и) *сущ. жен.* **1.** этно-

гра́фи (*пĕр-пĕр халăх пурнăçĕпе йăлийĕрки*) **2.** этногра́фи (*халăхăн пурлăхпа ăс-тăн культурине тĕпчекен ăслăлăх*); **чува́шская этногра́фия** чăва́ш этногра́фийĕ

э́тнос (-а) *сущ. муж.* э́тнос (*çынсен историре чăмăртанпа пĕрлĕхĕ; йăх-ăру, халăх, наци*); **чува́шский э́тнос** чăва́ш э́тносĕ

э́то 1. *частица, выделяет главное в сообщении*; **Кто э́то кричи́т?** Кам кăшкăра́ть унта́? **2.** *связка при сказуемом* вăл; **Жизнь — э́то борьба́** Пу́рнăç вăл — кĕрешӳ́

э́тот (э́того) *муж.*, **э́та** (э́той) *жен.*, **э́то** (э́того) *сред.*, **э́ти** (э́тих) *множ., местоим., указывает на находящееся вблизи или упомянутое ранее* ку, çак, çав; **мне нужна́ э́та кни́га** мана́ çак кĕнеке́ ки́рлĕ; **на э́том берегу́ Во́лги** А́тăлăн ку çыранĕнчĕ; **я об э́том не знал** э́пĕ кун çинче́н пĕлме́н

этю́д (-а) *сущ. муж.* **1.** этю́д, ĕлке́ (*пысăк хайлавăн пайĕ*); **этю́д к карти́не** карти́нăн па́йĕ (*малтанлăха хатĕрлени*) **2.** этю́д (*пĕчĕк илемлĕ хайлав*); **музыка́льные этю́ды** му́зыка этючĕсе́м

эфи́р (-а) *сущ. муж.* **1.** эфи́р (*хăвăрт пăсланакан, медицинăра усă куракан органикăллă япала*) **2.** эфи́р (*радио хумĕсем сарăлакан сывлăш хутлăхĕ*); **в эфи́ре звучи́т му́зыка** эфи́рта му́зыка янăра́ть

эфи́рный *прил.* **1.** эфи́р -ĕ; **эфи́рные масла́** эфи́р çăвĕсе́м **2.** эфирти́; **эфи́рное вре́мя** эфирти́ вắхăт (*радио е телевидени передачин*)

эффе́кт (-а) *сущ. муж.* **1.** (*син.* впечатле́ние) ви́тĕм; **произвести́ эффе́кт** ви́тĕм кӳ́р, витĕ́р, витĕмлĕ́ **2.** (*син.* результа́т) у́сă; **лека́рство име́ет большо́й эффе́кт** эмéл пы́сăк у́сă па́чĕ

эффе́ктный *прил.* кӳ́рăмлă, курăну́ллă; тĕлĕнтéрмĕш; **эффе́ктный костю́м** кӳ́рăмлă тумти́р

э́хо (-а) *сущ. сред.* а́хрăм (*сасă каялла янăраса çитни*)

эшело́н (-а) *сущ. муж.* эшело́н (*йышлă халăх е япала куçармалли транспорт*); **во́инский эшело́н** çар эшело́нĕ

Ю

юбиле́й (-я) *сущ. муж.* юбиле́й (*историри е çын пурнăçĕнчи паллă кун*); **столе́тний юбиле́й теа́тра** теа́трăн çĕр çулхи́ юбиле́йĕ; **отмеча́ть юбиле́й** юбилее́ па́ллă ту

юбиле́йный *прил.* юбиле́й -ĕ; **юбиле́йный год** юбиле́й çулта́лăкĕ; **проводи́ть юбиле́йные торжества́** юбиле́й уявĕсе́м ирттéр

юбиля́р (-а) *сущ. муж.* юбиля́р, юбиле́й тăвака́н; **че́ствовать юбиля́ра** юбиляра́ чысла́

ю́бка (-и) *сущ. жен.* ю́бка; **ю́бка в скла́дку** пĕрме́ллĕ ю́бка; **носи́ть ю́бку** юбкăпа́ çӳре́

ювели́р (-а) *сущ. муж.* ювели́р (*хаклă чулсенчен, ылтăн-кĕмĕлрен капăрлăх ăсталакан)*

ювели́рный *прил.* ювели́р -ĕ; **ювели́рные изде́лия** ювели́р таварĕсе́м ◆ **ювели́рная рабо́та** пи́тĕ ăстá ту́нă ĕç

юг (-а) *сущ. муж.* (*ант.* се́вер) кắнтăр; **на ю́ге страны́** çĕршы́вăн кắнтăр пайĕнчĕ; **пти́цы улета́ют на юг** кайăксе́м кăнтăралла́ вĕçсе́ каяççĕ

южа́нин (-а) *сущ. муж.*, **южа́нка** (-и) *жен.* кắнтăр çынни́; **на ры́нке торгу́ет мно́го южа́н** пасартá кắнтăр

çыннисе́м йы́шлăн су́тă тăва́ççĕ

ю́жный *прил.* (*ант.* се́верный) ка́нтăр -ĕ; кăнтăртӳ́; **ю́жные стра́ны** кăнтăртӳ́ çĕршывсе́м; **Ю́жный по́люс** Ка́нтăр по́люсĕ

юла́ (-ы́) *сущ. жен.* (*син.* волчо́к) кăлтăрма́ч, пе́ртĕркĕç; **запуска́ть юлу́** кăлтăрма́ч çавăрттăр

юлиа́нский *прил.*: **юлиа́нский календа́рь** юлиа́н календа́рĕ, Ю́лий календа́рĕ (*кивĕ çул шучĕ, ăна Юлий Цезарь çирĕплетнĕ пулнă*)

ю́мор (-а) *сущ. муж.* ку́лăш, шӳ́т, шӳ́тлĕв; **чу́вство ю́мора** ку́лăш тӳ́ййăмĕ; **говори́ть с ю́мором** шӳ́тлесе кала́ç

юмори́ст (-а) *сущ. муж.*, **юмори́стка** (-и) *жен.* шӳ́тçĕ, мыскара́çă, ку́лăш ăсти́; **писа́тель-юмори́ст** çыра́вçă — ку́лăш ăсти́

юмористи́ческий *прил.* (*син.* коми́ческий, смешно́й), **юмористи́чески** *нареч.* ку́лăш -ĕ, шӳ́т -ĕ; кулăшла́, шӳ́тлĕ, мыскара́ллă; **юмористи́ческий журна́л** ку́лăш журна́лĕ; **юмористи́чески расска́зывать** кулăшла́ каласа́ пар

ю́нга (-и) *сущ. муж.; множ.* **ю́нги** (юнг) ю́нга (*матрос ĕçне вĕренекен çамрăк*); **служи́ть ю́нгой на корабле́** карáп çинчĕ ю́нга пул

юнио́р (-а) *сущ. муж.*, **юнио́рка** (-и) *жен.* юнио́р (*çамрăксен ӳсĕмĕнчи спортсмен*); **соревнова́ния юнио́ров** юниорсе́н ăçмăртăвĕ

юнна́т (-а) *сущ. муж.*, **юнна́тка** (-и) *жен.* (*сокр.*: ю́ный натурали́ст) юнна́т (*çут çанталăка тĕпчес ĕçе хутшăнакан ача*); **шко́льный кружо́к юнна́тов** шкултӳ́ юннатсе́н кружо́кĕ

ю́ность (-и) *сущ. жен.* (*син.* мо́лодость; *ант.* ста́рость) çáмрăклăх, я́шлăх; çáмрăк ĕ́мĕр, яш ӳ́сĕм; **труди́ться с ю́ности** мĕн çамрăкра́н ĕçлé; **вспомина́ть ю́ность** çáмрăк ĕмĕре́ аса́ ил

ю́ноша (-и) *сущ. муж.; множ.* **ю́ноши** (-ей) çáмрăк, яш; **ю́ноши и де́вушки** яшсемпе́ хĕрсе́м, яш-кĕ́рĕм

ю́ношеский *прил.*, **ю́ношески** *нареч.* (*ант.* ста́рческий) çáмрăк -ĕ, яш -ĕ; çамрăкла́, яшла́; **ю́ношеский во́зраст** çáмрăк ӳ́сĕм; **говори́ть с ю́ношеской горя́чностью** çамрăкла́ хĕрӳ́лĕхпе́ кала́ç

ю́ный *прил.* (*син.* молодо́й; *ант.* ста́рый) çáмрăк, яш; **ю́ный певе́ц** çáмрăк ю́рăçă

юриди́ческий *прил.*, **юриди́чески** *нареч.* пра́во -ĕ, юриспруде́нци -ĕ; юриди́чески; **юриди́ческий факульте́т** юриди́чески факультéт; **юриди́ческая консульта́ция** юриспруде́нци консульта́цийĕ (*право тĕлĕшĕнчен канаш парса пулăшакан учреждени*); **юриди́чески он прав** пра́во тĕлĕшĕнче́н тĕ́рĕслĕх ун енче́

юриско́нсульт (-а) *сущ. муж.* юриско́нсульт (*учреждении право ыйтăвĕсемпе ĕçлекен специалист*)

юриспруде́нция (-и) *сущ. жен.* юриспруде́нци, пра́во ắслăхĕ

юри́ст (-а) *сущ. муж.* юри́ст (*юриспруденци специалисчĕ*); **консульти́роваться у юри́ста** юристра́н кана́ш ыйт

ю́ркий (*кратк. ф.* ю́рок, юрка́, ю́рко; *сравн. ст.* ю́рче) *прил.* (*син.* бы́стрый, увёртливый, прово́рный; *ант.* неповоро́тливый), **ю́рко** *нареч.* йа́рă, çи́вĕч, йăлтта́м, çаврăнăçу́ллă; **ю́ркие ры́бки** йа́рă пулăсе́м

ю́ркнуть (*будущ.* -ну, -нешь, -нут) *и* **юркну́ть** (*будущ.* -ну́, -нёшь, -ну́т) *глаг. сов.* кĕрсé кай, кĕрсé çухáл; **мышь ю́ркнула в нору́** шăши́ хăй шăтăкнé кĕрсé çухáлчĕ

ю́рта (-ы) *сущ. жен.* ю́рта, ӳ́плé (*вăхăтлăха пурăнма туни*); **во́йлочная ю́рта** кĕççé ю́рта

юсти́ция (-и) *сущ. жен.* юсти́ци (*суд учрежденийĕсем, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ*); **Министе́рство юсти́ции** Юсти́ци министерствй

Я

я (меня́, мне, меня́, мной и мно́ю, обо мне́) *местоим. личн.* э́пĕ, эп; **я рабо́таю на заво́де** э́пĕ заводра́ ĕçле́тĕп; **скажи́ мне, пожа́луйста** кала́-ха мана́, тархáсшăн

я́бедник (-а) *сущ. муж.*, **я́бедница** (-ы) *жен.* элéкçĕ, чӳхçă, çăхáвçă

я́бедничать *глаг. несов., на кого* элекле́, чух, çăх; эле́к пар, çăхáв пар

я́блоко (-а) *сущ. сред.* улма́, пан улми́; **ани́совые я́блоки** ани́с улма́; **сушёные я́блоки** ти́пĕтнĕ пан улми́; **ле́тние сорта́ я́блок** çуллахи́ пан улми́ сорчĕсéм ◆ **глазно́е я́блоко** куç мă´кăлĕ; **я́блоку не́где упа́сть** йĕп чикме́ те вы́рăн çук

я́блоня (-и) *сущ. жен.* улмуççи́; **я́блоня анто́новки** анто́новка улмуççи́йĕ

я́блочный *прил.* улма́ -ĕ, пан улми́ -ĕ; **я́блочный сок** пан улми́ сĕтке́нĕ

яви́ться (*будущ.* явлю́сь, я́вишься, я́вятся; *повел. ф.* яви́сь, яви́тесь; *прич. действ. прош.* яви́вшийся; *деепр.* яви́вшись) *глаг. сов.* **1.** (*син.* прибы́ть, прийти́; *ант.* отбы́ть, уйти́) кил, пыр; килсе́ çит, пырса́ çит; **яви́ться по пове́стке в суд** повесткăпа́ судá пыр; **он яви́лся домо́й по́здно** вăл киле́ каç пулсáн тин килсе́ çи́трĕ **2.** (*син.* стать, оказáться) пул, пулса́ тăр, пулса́ тух; **гололёд яви́лся причи́ной ава́рии** пăрлáк çул инке́кĕн сăлтáвĕ пу́лчĕ **3.** (*син.* возни́кнуть) кил, ту́пăн; **яви́лась уда́чная мысль** ă´нăçлă шу́хăш пуçá ки́лчĕ

я́вка (-и) *сущ. жен.* килу́´, пыру́; килни́, пыни́; **я́вка избира́телей для голосова́ния** суйлавçăсе́м сасăлама́ пыни́

явле́ние (-я) *сущ. сред.* **1.** пу́лăм; **приро́дные явле́ния** çут çанта́лăк пулăмсе́м; **социа́льные явле́ния** социáллă пулăмсе́м **2.** ĕç, пу́лăм, тĕ´слĕх; пулни́; **зага́дочное явле́ние** тĕлĕнте́рмĕш япала́

явля́ться (*наст.* -я́юсь, -я́ешься, -я́ются; *повел. ф.* -я́йся, -я́йтесь; *прич. действ. наст.* -я́ющийся, *прош.* -я́вшийся; *деепр.* -я́ясь) *глаг. несов.* **1.** *см.* **яви́ться 2.** *в знач. связки, кем-чем* пул, пулса́ тăр, шутла́н; **он явля́ется акционе́ром компа́нии** вăл — компáни акционерĕ

я́вный *прил. (кратк. ф.* я́вен, я́вна, я́вно, я́вны; *сравн. и превосх. ст. не употр.*), **я́вно** *нареч.* (*син.* откры́тый, очеви́дный; *ант.* скры́тный) ӳçă, кĕре́т, куç кĕре́т, ку́рăмлă; **я́вные и та́йные причи́ны** кĕре́т татá вă´рттăн сăлтавсе́м; **он я́вно лжёт** вăл куç умĕнче́х суя́ть

ягнёнок (-нка) *сущ. муж.; множ.* **ягня́та** (-я́т) путе́к (*сурăхăн*); **овца́ принесла́ двух ягня́т** су́рăх и́кĕ путе́к ту́рĕ

ягни́ться *1 и 2 л. не употр., глаг. несов.* пăранлá, путе́к ту (*сурăх çинчен*)

я́года (-ы) *сущ. жен.* çырлá; **гроздь я́год** çырлá çӳпкăмĕ; **я́годы рябины** пиле́ш çырли́; **пойти́ в лес по я́годы** вăрмана́ çырлá татмá кай

я́годица (-ы) *и* **ягоди́ца** (-ы) *сущ. жен.* купарчá

я́годник (-а) *сущ. муж.* çырла́лăх, çырлá пахчи́

я́годный *прил.* çырлá -ĕ; **я́годный сок** çырлá шы́вĕ, çырлá сĕтке́нĕ; **я́годные культу́ры** çырлá культурисéм

яд (-а) *сущ. муж.* (*син.* отрáва) нáркăмăш; **змейный яд** çĕлéн нáркăмăшĕ

я́дерный *прил.* я́дерлă *(атом тĕшши-пе — ядропа çыхăннă);* **я́дерное ору́жие** я́дерлă хĕç-пăшáл

ядови́тый *прил.* **1.** (*син.* токси́чный, отравля́ющий) нáркăмăшлă; **ядови́тые вещества́** нáркăмăшлă япаласéм; **ядови́тые расте́ния** нáркăмăшлă

ӳсе́н-тӑра́н **2.** *и* **ядови́то** *нареч.* (*син.* язви́тельный, зло́бный) йӗ́плӗ, вӗ́чӗх, вӗчӗрхе́нчӗк; **ядови́тые слова́** вӗчӗрхе́нчӗк сӑмахсе́м

ядохимика́ты (-ов) *сущ. множ.*; **ядохимика́т** (-а) *муж.* на́ркӑмӑшлӑ им-ҫӑ́м (*ҫум курӑксене, сиенлӗ хурткӑпшанка пӗтермелли*)

ядро́ (-а́) *сущ. сред.*; *множ.* **я́дра** (я́дер) **1.** тӗ́шӗ *(ҫимӗҫӗн)*; **ядро́ оре́ха** мӑ́йӑр тӗшши́; **ядро́ ви́шни** чиӗ тӗшши́ **2.** ва́рӑ, варри́, ядро́, тӗ́шӗ (*атомӑн*); **ядро́ древеси́ны** йы́вӑҫ варри́, тӗш йы́вӑҫ; **деле́ние а́томного ядра́** а́том тӗшши́ пайланни́ **3.** чӑ́мӑр варри́, тӗп па́йӗ; **ядро́ коллекти́ва** коллекти́в чӑ́мӑрӗ (*чи ӗҫчен те хастар пайӗ*) **4.** йӗтре́ (*спортра*); **толка́ть ядро́** йӗтре́ тӗрт

я́зва (-ы) *сущ. жен.* (*син.* ра́на) сура́н, ҫӑпа́н, шӑта́н-юха́н; **я́зва зажила́** сура́н тӳрлӗнчӗ ◆ **я́звы о́бщества** обществӑри́ ҫитменлӗхсе́м; **сиби́рская я́зва** Ҫӗ́нӗр сура́нӗ (*ерекен чир*); **я́зва желу́дка** хы́рӑмлӑх ҫӗрни́

язы́к (-а́) *сущ. муж.* **1.** чӗлхе́ (*ӳт пайӗ*); **ко́нчик языка́** чӗлхе́ вӗ́ҫӗ; **лиза́ть языко́м** чӗлхепе́ ҫула́; **отварно́й язы́к** пӗҫе́рнӗ чӗлхе́ (*апат*) **2.** чӗлхе́, калаҫу́, пуплев; **язы́к и мышле́ние** чӗлхе́ тата́ шухӑшлӑ́в; **лиши́ться языка́** чӗлхе́сӗр пул, чӗлхене́ ҫӗтӗ́р **3.** чӗлхе́ (*нӗр-нӗр халӑхӑн*); **славя́нские языки́** славя́н чӗлхисе́м; **чува́шский язы́к отно́сится к тю́ркским языка́м** чӑва́ш чӗлхи́ тӗ́рӗк чӗлхисе́н шутне́ кӗре́т; **изуча́ть иностра́нные языки́** ют ҫӗршы́в чӗлхисене́ вӗре́н **4.** чӗлхе́ (*халӑх пуплевӗн пӗр тӗсӗ*); **литерату́рный язы́к** литерату́ра чӗлхи́; **разгово́рный язы́к** калаҫу́ чӗлхи́; **язы́к Пу́шкина** Пу́шкин чӗлхи́ ◆ **держа́ть язы́к за зуба́ми** шӑла́ ҫырт, ан шарла́; **распусти́ть язы́к** чӗлхене́ ирӗке́ яр, ытлашши́ сӳ́пӗлтӗт; **с языка́ сорвало́сь** сӑма́х вӗҫерӗнсе ка́йрӗ; **язы́к без косте́й** чӗлхе́н шӑмми́ ҫук (*ытлашши сӳ́пӗлтетни ҫинчен*); **язы́к не повернётся сказа́ть** калама́ чӗлхе́ ҫаврӑнма́сть; **на языке́ ве́ртится** чӗлхе́ вӗҫӗнчӗ́х *(калас сӑмах)*; **вку́сно — язы́к прогло́тишь** пи́тӗ тӳ́тлӑ — чӗлхӳ́не ҫӑтса́ я́рӑн; **язы́к программи́рования** программа́лӑв чӗлхи́ (*компьютер ӗҫӗнче*)

языкове́д (-а) *сущ. муж.* (*син.* лингви́ст) чӗлхе́ҫӗ, чӗлхе́ тӗпчевҫи́; **чува́шские языкове́ды** чӑва́ш чӗлхеҫисе́м

языково́й *прил.* чӗлхе́ -ӗ; **языковы́е зако́ны** чӗлхе́ законӗсе́м; **языкова́я ситуа́ция** чӗлхе́ тӗлӗшӗнчи́ ларӳ-тӑрӳ

языкозна́ние (-я) *и* **языкове́дение** (-я) *сущ. сред.* чӗлхе́ пӗ́лӗвӗ; **введе́ние в языкозна́ние** чӗлхе́ пӗ́лӗвӗн кӳ́ртӗмӗ; **ру́сское языкозна́ние XX ве́ка** XX ӗмӗртӣ́ выра́с чӗлхе́ пӗ́лӗвӗ

языческий *прил.* ыр-усӑ́л -ӗ; **языческая рели́гия** ыр-усӑ́л тӗ́нӗ; **соблюде́ние языческих обря́дов** ыр-усӑ́л тӗ́нӗн йӑлисене́ тусӑ́ пыни́

язы́чество (-а) *сущ. сред.* ыр-усӑ́л тӗ́нӗ, нумӑ́й тӳ́рӑлӑх (*ҫут ҫанталӑк вӑйӗсене сума суса нумай турра пуҫҫапни*); **пережи́тки язы́чества** ырусӑ́л тӗ́нӗн юлашкисе́м

язь (-я́) *сущ. муж.* ӑ́пта (*партас евӗр пулӑ*); **начался́ не́рест язя́** ӑ́пта вӑлча́ сапма́ пуҫла́нӑ

яи́чница (-ы) *сущ. жен.* ӑшала́нӑ ҫӑмартӑ́; **пригото́вить яи́чницу с колба́сой** кӑлпассипе́ ҫӑмартӑ́ ӑшала́

яи́чный *прил.* ҫӑмартӑ́ -ӗ; **яи́чная скорлупа́** ҫӑмартӑ́ хуппи́; **яи́чный поро́шок** ҫӑмартӑ́ порошкӗ́ (*ҫӑмарта типӗтсе аввӑртни*)

яйцо́ (-а́) *сущ. сред.*; *множ.* **я́йца** (яи́ц, я́йцам) **1.** ҫӑмартӑ́ (*кайӑксен, ҫӗлен-калтан, хурт-кӑпшанкӑн*); **кури́ные я́йца** чӑх ҫӑмартӣ; **муравьи́ные я́йца** кӑ́ткӑ ҫӑмартӣ; **желто́к яйца́** ҫӑмартӑ́ сарри́; **свари́ть я́йца**

всмя́тку калеклé çăмартá пĕçéр; **кра́сить я́йца на Па́сху** Мăнкýн тĕлнé çăмартá хĕрéт ◆ **вы́еденного яйца́ не сто́ит** нимé те тăмáсть **2.** амá клéтка, амá вắрă

я́кобы *частица, выражает сомнение, неуверенность* и́мĕш, иккéн, пулáть; -мĕн; **он я́кобы там не был** вăл унтá пулмáн и́мĕш

я́корный *прил.* я́корь -ĕ; **я́корная цепь** я́корь cắнчăрĕ

я́корь (-я) *сущ. муж.; множ.* **якоря́** (-е́й) я́корь; **корабе́льный я́корь** карáп я́корĕ; **бро́сить я́корь** я́корь яр

яку́т (-а) *сущ. муж.,* **яку́тка** (-и) *жен.; множ.* **яку́ты** (-ов) якутсéм (*Раççейĕн хĕвел тухăç пайĕнче пурăнакан тĕрĕк халăхĕ*)

яку́тский *прил.* яку́т -ĕ, Яку́ти -ĕ; Якутири́; **яку́тский язы́к** яку́т чĕлхи́; **яку́тские алма́зы** Яку́ти алмазĕсéм; **яку́тские моро́зы** Якутири́ сивĕсéм

я́ловая *прил.* (*ант.* стéльная) хĕ́сĕр; **я́ловая коро́ва** хĕ́сĕр ĕнé

я́ма (-ы) *сущ. жен.* шắтăк, пу́тăк, çĕр шắтăкĕ; **си́лосная я́ма** си́лос шắтăкĕ; пу́сă (*чавни*); **заложи́ть карто́фель в я́му** çĕр улминé пуссá хыв (*хĕл каçиччен усрама*); **провали́ться в я́му** шăтăкá ансá кай

ямщи́к (-а́) *сущ. муж.* (*син.* возни́ца) я́мшăк, лáвçă

янва́рский *прил.* кăрлáч -ĕ, янвáрь -ĕ; кăрлачри́, январьти́; **янва́рские моро́зы** кăрлáч сиввисéм

янва́рь (-я́) *сущ. муж.* кăрлáч, янвáрь; **пе́рвое января́** кăрлáчăн пĕрéмĕшĕ

янта́рный *прил.* **1.** янтáрь ...; янтáрь -ĕ; **янта́рное ожере́лье** янтáрь шăрçá **2.** (*син.* жёлтый) сáрă, хăлá, янтáрь тĕ́слĕ; **янта́рный мёд** хăлá тĕ́слĕ пыл

янта́рь (-я́) *сущ. муж.* янтáрь *(йывăç сухăрĕ хытса пулнă шлемлĕ чул);* **украше́ние из янтаря́** янтарьтéн тýнă кáпăрлăх

япо́нец (-нца) *сущ. муж.,* **япо́нка** (-и) *жен.; множ.* **япо́нцы** (-цев) японсéм *(Япони халăхĕ)*

япо́нский *прил.* япóн -ĕ, Япóни -ĕ; Японири́; **япо́нский язы́к** япóн чĕлхи́; **япо́нская промы́шленность** Япóни промы́шленноçĕ

я́ркий (*кратк. ф.* я́рок, ярка́, я́рко; *множ.* я́рки *и* ярки́; *сравн. ст.* я́рче; *превосх. ст.* ярча́йший) *прил.,* **я́рко** *нареч.* **1.** (*син.* сияющий, свéтлый; *ант.* тёмный) çап-çýтă, йắмăх çýтă; **я́ркие лучи́ со́лнца** çап-çýтă хĕвéл пайăркисéм **2.** (*син.* чи́стый, свéжий; *ант.* тýсклый, блéдный) чáкăр, çýтă, йắмăх; **я́ркие цвета́** чáкăр тĕссéм **3.** (*син.* си́льный, впечатля́ющий) чáплă, пултарýллă, пáллă; ви́тĕмлĕ; **я́ркий тала́нт** чáплă талáнт; **я́ркий приме́р** ви́тĕмлĕ тĕ́слĕх

ярлы́к (-á) *сущ. муж.* (*син.* этикéтка) ярлы́к, хут; тавáр хýчĕ; **бага́жный ярлы́к** багáж хýчĕ

я́рмарка (-и) *сущ. жен.* ярмăркá, áнлă сýтă; **циви́льская я́рмарка** Çĕрпý́ ярмăркки́; **кни́жная я́рмарка** кĕнекé суттú

я́рмарочный *прил.* ярмăркá -ĕ; **я́рмарочная пло́щадь** ярмăркká вы́рăнĕ; **я́рмарочная торго́вля** ярмăркká сутý-и́лĕвĕ

яровóй *прил.* (*ант.* озúмый) çур -ĕ; çуртри́ -ĕ; çурхи́; **яровы́е хлеба́** çур тыррисéм; **яровáя пшени́ца** çурхи́ тýлă *(çуркунне акаканни);* **яровóе по́ле** çуртри́ пусси

я́ростный *прил.,* **я́ростно** *нареч.* **1.** (*син.* гнéвный) хая́р, кăрá, çи́лĕллĕ; **я́ростно руга́ться** хая́ррăн ятлáç **2.** (*син.* неудержúмый, неукротúмый) ýрăм-сýрăм, чарýсăр, алхасýллă; **я́ростные поры́вы ве́тра** ýрăм-сýрăм áвăк çил

я́рость (-и) *сущ. жен.* **1.** (*син.* гнев) хая́рлăх, кăра́ çи́лĕ, кăтăру́, тилĕру́´; **прийти́ в я́рость** тилĕрсе́ кай **2.** (*син.* напо́р, неукроти́мость) алхасу́лăх, чару́сăрлăх; **я́рость волн** хумсе́н чару́сăр вă´йĕ

я́рус (-а) *сущ. муж.* **1.** (*син.* ряд, слой) хут, рет, си; **сложи́ть мешки́ яруса́ми** михĕсене́ си́йĕн-си́йĕн купаласа́ хур **2.** я́рус, хут *(театр залĕнче);* **на́ши места́ на ве́рхнем я́русе** пи́рĕн вырăнсе́м çу́лти́ хутра́

я́сень (-я) *сущ. муж.* ка́врăç *(çулçăллă йывăç)*

я́сли[1] (-ей) *сущ. множ. (син.* корму́шка) сы́рăш (*выльăха апат памалли);* **положи́ть в я́сли се́но** сырăша́ у́тă хурса́ пар

я́сли[2] (-ей) *сущ. множ.* я́сли; **де́тские я́сли** ача́ я́слийĕ

я́сный (*кратк. ф.* я́сен, ясна́, я́сно; *множ.* ясны́ *и* я́сны) *прил.*, **я́сно** *нареч.* **1.** (*син.* я́ркий, све́тлый, сия́ющий; *ант.* тёмный) çу́тă, я́нкăр, уя́р, у́çă, таса́; **я́сное не́бо** таса́ ту́пе́; **я́сный день** я́нкăр уя́р кун; **све́тлый ме́сяц** çап-çу́тă у́йăх **2.** (*син.* чёткий, отчётливый; *ант.* нея́сный, сму́тный) у́çăмлă, ку́рăмлă, кĕре́т; у́ççăн; **отсю́да я́сно видны́ го́ры** кунта́н сăртсе́м у́ççăн курăна́ççĕ **3.** у́çăмлă, ăпланмалла́, уйăрмалла́; **я́сный по́черк** у́çăмлă çыру́; **мне всё я́сно** э́пĕ йăлта́х ăпланатăн

я́стреб (-а) *сущ. муж.; множ.* **ястреба́** (-о́в) *и* **я́стребы** (-ов) хурчка́; **я́стреб пойма́л го́лубя** хурчка́ кăвакарчăна́ ярса́ ты́трĕ

яче́йка (-и) *сущ. жен.* **1.** (*син.* ды́рочка) шă´тăк; куç; **яче́йка се́ти** тете́л ку́çĕ **2.** (*син.* подразделе́ние, часть) яче́йка, у́шкăн; сы́пăк; **семья́ — основна́я яче́йка о́бщества** çемье́ — о́бществăн тĕп сы́пăкĕ

ячме́нный *прил.* урпа́ -ĕ; **ячме́нное по́ле** урпа́ пусси́

ячме́нь (-я́) *сущ. муж.* **1.** урпа́ (*тырă*); **всхо́ды ячменя́** урпа́ калчи́; **возде́лывать ячме́нь** урпа́ акса́ ту **2.** урпа́ *(куç чирĕ)*

я́чневый *прил.*: **я́чневая крупа́** урпа́ кĕрпи́

я́щерица (-ы) *сущ. жен.* калта́; **я́щерицы гре́ются на со́лнце** калтасе́м хĕве́л çинче́ ăшăнса́ вырта́ççĕ

я́щик (-а) *сущ. муж.* е́щĕк; су́нтăх; **почто́вый я́щик** по́чта е́щĕкĕ; **положи́ть бума́ги в я́щик стола́** хутсене́ сĕте́л сунтăхне́ хур

я́щур (-а) *сущ. муж.* я́щур *(ĕне выльăхăн, сурăх-качакан ерекен чирĕ)*

Учебное издание

Скворцов Михаил Иванович
Скворцова Алевтина Васильевна

РУССКО-ЧУВАШСКИЙ СЛОВАРЬ

Редакторы *О.Г. Кульев, Р.И. Крысина*
Художник *В.Н. Гончаров*
Художественный редактор *Г.С.Самсонова*
Технический редактор *Л.Н. Кандрашкина*
Корректоры *З.И. Гаврилова, Н.П. Печникова, А.К. Шашкина, А.Г. Владимирова*
Компьютерная верстка *М.В.Филипповой, Е.Л.Карпеевой*
Компьютерный набор *Е.Ю. Ермолаевой, Р.Н.Садырга*

Изд. лиц. № 06317 от 26. 11. 01. Подписано к печати 03.12.02. Формат 60x84 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 29, 76. Учетно-изд. л. 38, 08. Тираж 5 000 экз. Заказ № К-3584 . Изд. № 16.
РГУП «Чувашское книжное издательство».
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 12 б.
РГУП «ИПК «Чувашия». 428019,
Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.